А-23



Леонид Агаков

# ШАНЧӐК

Национальная библиотека ЧР
4-014960

14960

К С(Чув)
А 23

Леонид Атаков



# ШАНЧӐК

ЧӐВАШ АССР КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1971

14960 чув



Ку кӗнекене чӑвашсен паллӑ писателӗ Леонид Яковлевич Агаков ҫырнӑ икӗ пысӑк произведени кӗнӗ.

«Пӗрре, ҫуркунне...» повеҫре автор чӑваш ялӗсенчи малтанхи коммунистсемпе комсомолецсем 1921—1922 ҫулсенче Совет влаҫне ҫирӗплетессишӗн класс тӑшманӗсене, кулак таврашӗсемпе тӗрлӗ бандитсене хирӗҫ епле паттӑррӑн кӗрешсе вӗсене ҫӗнтерсе пынине кӑтартса панӑ.

«Шанчӑк» романра Леонид Агаков, хӑй икӗ вӑрҫӑра пулнӑскер, чӑваш ҫамрӑкӗсем Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ фрончӗсенче ытти тӑванла халӑхсен ывӑлӗ-хӗрӗсемпе пӗрле Тӑван Ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗшӗн, никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн, халӑх телейӗшӗн фашистла захватчиксене хирӗҫ ним хӑрамасӑр, хӑйсен пурнӑҫне те шеллемесӗр калама ҫук хастаррӑн ҫапӑҫни ҫинчен ҫырать.

ПРОВЕРЕНО
20 ю 09 ОКТ 2017

7—3—3
40—70М

Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

(С чув.)
А 23



# Пӗрре, ҫуркунне...

Повесть



# I. САЛТАК КИЛЕ ТАВРАНАТЬ

Садсем чечекре...

Яштак чиесем, ҫӗмӗрт йывӑҫҫисем, ҫатрака туратлӑ улмуҫҫисем — пурте шап-шурӑ та ҫемҫе тумпа витӗннӗ. Аякран пӑхсан, садсем ҫине кӑпӑшка ӑшӑ юр ҫуса лартнӑ пекех туйӑнать. Вӗсем ытармалла мар тутлӑ, кӑмӑла йӑпатакан шӑршӑ сарса лараҫҫӗ. Кӑнтӑрла ку ырлӑха пит асӑрхасах каймастӑн, анчах каҫхине вара, хӗвел анса ларсан, улӑхсенчи ешерекен курӑк сывлӑмпа нӳрелме пуҫланӑ чух, кирек кам та киленет ҫурхи чечексен шӑршипе, вӗсен тутипе тулнӑ сывлӑша пӗтӗм кӑкрипе сывласа ҫӑтать.

Аван-ҫке ҫав садсем чечекленнӗ вӑхӑтра!..

Анчах та пин те тӑхӑрҫӗр ҫирӗм иккӗмӗш ҫулхи ҫуркунне чечекленнӗ садсем никама та савӑнтармарӗҫ, никам кӑмӑлне те ҫӗклентермерӗҫ, вӗсем саракан ытарма ҫук шӑршӑ килентермерӗ. Вӑл ҫуркунне ҫынсен сӑн-сӑпачӗсем ҫутӑлмарӗҫ, вӗсен ҫинче кулӑ-савӑнӑҫ курӑнмарӗ. Выҫӑллӑ-тутӑллӑ, унччен нихҫан та ҫӑвара чикмен апатсем ҫисе аран-аран хӗл каҫкаланӑ ҫынсем халӗ пушшех аптраса ҫитрӗҫ. Мӑянпа, сӗлӗпе хутӑштарса авӑртнӑ ҫӑнӑх ҫеҫ мар, кӗркунне пухнӑ йӗкел те, Сӑр хӗрринчи ҫу заводӗнчен илсе килкеленӗ турантӑ та тахҫанах пӗтнӗ, пур-ҫук выльӑха пусса ҫисе янӑ, халь урӑх нимӗн те юлман ӗнтӗ... Килрен киле вилӗм шаккаса ҫӳрет, хӑйӗн тискер те хыткан аллипе ҫынсене, ватти-вӗттине тиркемесӗрех, пӑва-пӑва пӑрахать. Юнашар ялти кивӗ йывӑҫ чиркӳре вилӗм кӗлли тумасӑр пӗр кун та иртмест, ҫурӑк чан сасси кулленех тата кам та

пулин çĕре кĕресси çинчен пĕлтерет. Чиркӳрен çĕклесе тухнă тупăксене çынсем чечекленекен садсем тĕлĕпе пуçĕсене усса, ним чĕнмесĕр, вăй çуккипе сулăна-сулăна утса, масар çине кайса чикеççĕ. Вилнисем пирки йĕрекен-макăракан та, ытлашши хуйхăракан та çук. Выçăпа аптраса халран кайнă çынсен туйăмĕсем те мăкалнă, йĕркеллĕн тавçăрса шухăшлама та пултараймаççĕ ĕнтĕ вĕсем. Кам пĕлет, тен, паян тупăк çĕклесе пыракансен ыран е тепĕр кунне хăйсен те çак çулпах масар çине кайса выртмалла пулĕ?..

Каçхине, кĕтӳ хăваласа кĕртсенех (кĕтĕвĕнче те выльăхĕ вăтăр-хĕрĕх пуçран ытла мар), ял тӳрех вилнĕ пек пулать. Каччăсемпе хĕрсем вăййа тухмаççĕ, юрă-сăвă, купăс сасси таврашĕ илтĕнмест, ниçта та ним сас-чĕвĕ те çук. Сайра хутра ăçта та пулин выçăхса çитнĕ йытă вĕрсе ярать те, ял хуралçи хăйĕн шакăрчакне ерипен шакăртаттарса илет. Чечекпе витĕннĕ садсем çеç яланхи пекех сывлăша тутлă шăршăпа тултарса лараççĕ, вĕсенче каçхи кайăксем хаваслăн чĕвĕлтетни илтĕнет. Çав кăна çĕр çинче пурнăç пурри çинчен систерет.

...Çавăн пек каçсенчен пĕринче Энтриялĕн вăта урамĕнчен çырманалла анакан тăкăрлăкри пĕчĕк пӳртре пĕр хĕрарăм, аран сывласа, пĕр вĕçĕм ахлатса выртрĕ. Тапхăр-тапхăр вăл ăнран тухсах кайрĕ, унтан майĕпе тăна кĕрсе пычĕ, кăштах вăхăт иртсен, каллех улшу калаçрĕ. Çур çĕр тĕлĕнче, таçта инçетре автансем пĕрне-пĕри сас пама тытăннă вăхăтра, вăл юлашки вăйĕпе ерипен йынăшса ячĕ:

— Ахх... Микуль... ывăлăм... шыв парсамччĕ, ăш хыпса тухать.

Стена çумĕнчи тăрăхла сак çине выртса халь çеç тĕлĕрсе кайнă вунвиç çулхи арçын ача, амăшĕн сассине илтсе, йăпăртах тăрса ларчĕ.

— Пĕрмай шыв ĕçме юрамасть пуль сана, анне! Кĕçĕр миçе хут ĕçтертĕм ĕнтĕ сана...

— Çук, ачам... Тӳсейместĕп, пар...

Микуль тĕттĕм çенĕке тухса йывăç куркапа шыв ăсса кĕчĕ. Амăшĕ ăна çавăнтах лапкăртаттарса ĕçсе ячĕ те, йынăша-йынăша, пуçне хытса ларнă минтер çине лак! хучĕ. Темиçе самантран, сывлăш çавăрам пекки туса, вăл хăй ăшĕнчен аран темиçе сăмах пăчăртаса кăларчĕ:

— Вилетĕп пуль эп кĕçĕр... Питĕ йывăр... Ĕнерсем кун пекех пулманччĕ, паян ытла та... ахх... Шел, Тараса курраймасăрах вилетĕп. Таçта ĕнтĕ вăл халь... Те вăл та вил-

нӗ? Унпа пӗрле кайнисем пурге тавӑрӑнса пӗтрӗҫ, вӑл кӑна ҫухалчӗ, ним сас-хура та ҫук... Кураймастӑпах мӑнтарӑна...

Макӑрас патнех ҫитнӗ ывӑлӗ чирлӗ амӑшне лӑплантарма тӑрӑшрӗ:

— Апла ан кала-ха, аннеҫӗм, тен, иртсе кайӗ! Авӑ, Ҫтенккисен амӑшӗ те сан пекех йывӑр чирлесе выртрӗ, анчах кайран чиперех тӳрленчӗ-иҫ? Эс те сывалатӑн акӑ...

— Ҫтенккисем ҫинчен мӗн калӑн...— ассӑн сывласа ячӗ амӑшӗ. — Вӗсем ҫимелли тупаҫҫӗ. Пирӗн иксӗмӗрӗн мӗн пур?

— Ыран столовӑйран илсе килнине хам ҫиместӗп, пӗтӗмпех сана паратӑп, анне...

— Кирлӗ мар, ывӑлӑм. Санӑн хӑвӑн пурӑнас пулать, эп хамӑнне пурӑнса ирттернӗ ӗнтӗ... Тараса курасшӑнччӗ те — пулмарӗ... Вӑл таврӑнсан, тен, чиперех пурӑнӑр-и-ха. Кӑҫал тырӑ пулать, теҫҫӗ. Пирӗн акни те ҫукпа пӗрех те... Ял ҫинче ҫын вилмест, теҫҫӗ... Кил-ҫурта юсаттарӑр, выльӑх-чӗрлӗх туянӑр. Тарас ӗҫе юратать, аллисем ылтӑн унӑн, ашшӗ пекех ӗҫчен... Кураймарӑм...

Хӗрарӑм сасси вӑйсӑрланнӑҫемӗн вӑйсӑрланса пычӗ, юлашки сӑмахӗсене вӑл таҫта шала кайнӑ сасӑпа ҫеҫ каларӗ. Унтан тата тепре йынӑшса илчӗ те шӑпах пулчӗ.

— Анне, анне, мӗн эсӗ?

Микуль амӑшне хулпуҫҫинчен тытрӗ. Питӗнчен пӑхма тӑчӗ, анчах пӳртре тӗттӗм пирки нимӗн те кураймарӗ. Лампа ҫутас — ни краҫҫын, ни шӑрпӑк ҫук...

— Анне! Анне!— хытӑраххӑн чӗнчӗ Микуль, ҫав тери хӑрама пуҫласа.— Анне тетӗп, сас пар ӗнтӗ! Анне-е!

Амӑшӗ чӗнмерӗ. Вара Микуль, амӑшӗ вилсе кайрӗ пуль тесе, шари! кӑшкӑрса макӑрса ячӗ те урама сиксе тухрӗ. Унталла пӑхрӗ, кунталла... Ним тума аптранипе, часрах анат енчи кӳршӗсем патне чупса кайса вӗсен чӳречинчен чышкӑпа шанлаттарма тытӑнчӗ:

— Павӑл пичче! Марфа аппа! Тӑрӑр-ха, атьӑр-ха пирӗн пата хӑвӑртрах, пирӗн анне вилет пулмалла!

Хӑй ҫавӑнтах килнелле ыткӑнчӗ. Амӑшӗ малтанхи пекех выртать, чӗнсе те чӗнмест. Кӗҫех кӳршӗсем чупса ҫитрӗҫ. Марфа аппа тени ним сассӑр выртакан хӗрарӑм ҫинчи ҫӗтӗк ҫивиттине сирсе пӑрахрӗ, ал тымарне тытса пӑхрӗ, чӗрине итлерӗ.

— Ҫук-ха, вилмен...— терӗ вӑл шӑппӑн.— Чӗри тапать, сывлӑшӗ те пур. Чуп-ха, Павӑл, ҫенӗкри сентре ҫинче

каç сунă сĕт пурччĕ, илсе кил, парса пăхăпăр, тен, кăштах усси пулĕ... Тата çутмалли илсе кил мĕн те пулин.

Унăн упăшки хăвăрт тухса кайрĕ. Кӳршĕ арăмĕ Микуль çине пăхрĕ те ăна йăвашшăн йăпатма пуçларĕ:

— Ан макăр, ачам, ан макăр... Хăрамалли нимех те çук. Халран кайнă çеç вăл. Акă, сĕт ĕçтеретпĕр те ăна, самайланать сан аннӳ, вăй кĕрет ăна. Лăплан...

* * *

Çав каçах Етĕрне хули енчен кăнтăралла, авалхи хурăнлă çул тăрăх, пĕр çын питĕ васкаса утрĕ. Вăл хĕрлĕ армеец тумĕ тăхăннă — çăлтăрлă шлемпа, гимнастеркăпа, атăпа. Çурăмĕ çинче — чылай пысăк кутамкка, шинельне хулĕ урлă уртса янă. Утнă май вăл шинельне пĕр аллинчен тепри çине куçарса хурать. Ниçта та чарăнса тăмарĕ, пĕрмай малалла, пĕрмай малалла утрĕ. Сайра хутра çеç чĕлĕм чĕркесе тивертмешкĕн йăпăртлăха чарăнкаласа тăчĕ, унтан каллах васкарĕ. Сăр шывĕ тăрăх çӳрекен «Чайка» ятлă пĕчĕкçеç пăрахут çинчен аннăран вăра вăл чылай ял витĕр тухрĕ, çырма-çатра урлă каçрĕ (çырмисем ку тăрăхра ытла та нумай-çке!); хыçĕнчи кутамкка самаях каялла туртрĕ ăна, тарланипе аялти кĕпи çурăмĕ çумне çыпăçсах ларчĕ, анчах вăл кун çине çаврăнса та пăхмарĕ. Хурăнлă çулпа пĕр çирĕм çухрăма яхăн пырсан, сылтăмалла пăрăнса, ыраш калчи хушшипе авкаланакан сукмакпа Энтрияль еннелле кайрĕ.

Çак çын — Энтриялĕнчи тăлăх Хветуç ывăлĕ Тарас, хут çинчи пек каласан — Тарас Николаев, вăл Хĕрлĕ Çартан демобилизаципе киле таврăнать, ватă амăшĕпе пĕчĕк шăллĕне епле пулсан та часрах çитсе курас ĕмĕтпе васкать...

Çур çул ытла ĕнтĕ Тарас вĕсем çинчен нимĕн те пĕлмест: те чĕрĕ вĕсем, те тахçанах вилнĕ! Кам калама пултартăр, тен, вилнĕ те-и. Атăл тăрăхĕнче выçлăхĕ ытла та хăрушă пулнă-çке кăçал! Килнĕ чухнех курчĕ Тарас: пристаньсенче, чугун çул станцийĕсенче халăх вĕçĕмсĕр йăшăлтатать — ватти, вĕтти, арçынĕ, хĕрарăмĕ; ахăртнех, вĕсем çăкăрлă вырăнсене, ăçта та пулин Çĕпĕрелле, Украинăналла кайма тухнă пулĕ, анчах ниçтах та çитеймен. Пăрахутсемпе пуйăссем çине ларайманăр эрни-эрнипе выртаççĕ имĕш вĕсем, çавăнтах хăйсен мĕн пур-суккине çиеççĕ, çав таврашрах тула каяççĕ, çавăнтах вилеççĕ...

«Çимелли нимĕн те пулман ĕнтĕ кăçал аннепе Микулььăн, ватăпа вĕтĕ ăçтан тупчăр?»— Çак шиклĕ шухăш Тарас пуçĕнчен пĕрре те тухма пĕлмерĕ.

Ыраш хушшипе пыракан сукмак анкартисем хыçне тухрĕ. Мĕн тери паллană вырăнсем! Акă Кĕске вар пуçĕ, кунта вăл пĕчĕк чух яланах выртмара пулнă, акă кукăр хурама — ун айĕнче текех «çĕçĕлле», «тăлă тартмалла» вылянă... Лере, сылтăмарахра, Автан çырминче, кашни кĕркуннех пĕве туса амăшĕпе пĕрле кантăр хутнă. Кунта вара, Мăрсуксен арпалăхĕ çумĕнчи кив каска çинче, пĕрремĕш хут Варука хăй юратни çинчен каласа панă та ăна çав тери хăюсăррăн ыталанă... Мĕнле-ши вăл халь? Епле пурăнать-ши? Виçĕ çул хушшинче тăват-пилĕк çыру çеç ячĕ. Тен, качча кайнă-и? Кайнах пулсан, кама-ши? Кам телейлĕ пулчĕ-ши ăна илсе? Пĕлесчĕ часрах ун çинчен те. Çав тери лайăх калаçса уйрăлсаттăмăр, вăл мана вунă çул кĕтмелле пулсан та кĕтсе илетĕпех, тенĕччĕ...

Пуçра шухăшсем, асаилӳсем пĕрин хыççăн тепри çуралаççĕ, пĕр-пĕринпе çыхăнса тăсăлаççĕ.

Тарас, сукмакпа çырмана чупса анса, тăкăрлăкалла пăрăнчĕ. Акă ĕнтĕ вăл пĕчĕкрен ӳснĕ вырăн. Миçе хутчен анса хăпарнă-ши вăл çак çырмана? Хĕллехи кунсенче çунашкапа мĕн чухлĕ ярăннă-ши çак сăрт çинчен? Эх, тăван вырăнсем, ытла та нумай аса илтеретĕр-çке эсир, пĕтĕм чун-чĕрене хускататăр!...

Ик енчен те ватă лăпсăркка йăмрасем хупласа тăнипе, тăкăрлăкра куçран чиксен те курас çук. Сăрт хĕрринчи çуртсем нĕрсĕр хура капансем пек курăнаççĕ, темле чĕрене çӳçентермелле тĕслĕ. Ăçта та пулин пĕр хăйă çути пулсанччĕ! Çук, тĕттĕм... Сас-чĕв те çук, чăннипех кунта пурте вилсе пĕтнĕ пек туйăнать. Çĕрлехи тĕттĕмлĕхпе шăплăхра чечексен шăрши çеç сисĕнет. Тарас вĕсен ырă тутипе тулнă сывлăша кăкри туличчен çăтса пычĕ.

Акă вĕсен килĕ курăнчĕ. Ыттисенченраснах, пӳртре темшĕн хăй çути пур. Мĕне пĕлтерет-ши тата ку? Часрах çитес, пĕлес... Тайăлса кайнă вĕрлĕк алăка Тарас уçса та тăмарĕ, ун урлă вăштах сиксе каçрĕ, унтан картлашкасем тăрăх чупса хăпарса алăка пĕрех туртса уçрĕ те пӳрте кĕрсе тăчĕ.

Сĕтел çинче шăши куçĕ пысăкăш çутă çеç мĕлтлетсе ларать, çавăнпа та пӳртре тĕттĕмпе пĕрех. Кутник сакки çинче тахăшĕ сывăрать — палламалла мар, пуçĕ çинченех витĕннĕ. Тăрăхла сак çинче тепĕр çын...

«Иккӗшӗ те чӗрӗ пулас-ха хуть,— савӑнӑҫлӑ шухӑш вӗҫсе илчӗ Тарас пуҫӗнче.— Чӗрӗ пулсан, урӑх нимӗн те кирлӗ мар, ытти — пулӗ».

Вӑл шинелӗпе шлемне алӑк патӗнчи йывӑҫ пӑта ҫине ҫакрӗ, кутамккине хывса малти сак ҫине хучӗ те, амӑшӗпе шӑллӗне вӑратмасӑрах, сӗтел пуҫӗнчи каска пуканӗ ҫине ларчӗ. Халь васкамалли ҫук ӗнтӗ, халь килте, тӑван килте! Курас тенӗ ҫынсем — ун умӗнче, ҫак пӳртрех, унран икӗ утӑмра ҫеҫ. Ҫывӑраҫҫӗ... Тен, ывӑннӑ пуль вӗсем, тен, хырӑм выҫҫине манас тесе, юри часрах ҫывӑрнӑ пулӗ. Тивес мар-ха, ҫывӑрччӑр.

Тарас чӗри кӑкӑртан сиксе тухас пек тапрӗ. Вӑл хӑвӑрт кӑна чӗлӗм тивертсе туртма тытӑнчӗ, анчах нумай тӳссе ларайманӗ, ҫурри таран та ҫунман чикарккине таптаса сӳнтерчӗ те, кутник патне пырса, амӑшӗн пуҫӗ ҫинчен ҫивиттине хуллен кӑна сирчӗ.

— Анне!.. аннеҫӗм...

Амӑшӗ ӑна илтмерӗ те, чӗнмерӗ те.

— Анне, анне, вӑран-ха, вӑран,— хытӑрах сас пачӗ те Тарас, ӑна хыткан хулпуҫҫийӗнчен ерипен лӑскарӗ. Лешӗ малтан йынӑшса илчӗ, тарӑннӑн ахлатса сывласа ячӗ, унтан куҫне уҫмасӑрах ыйтрӗ:

— Мӗн ара?

— Вӑрансам, анне...

— Ах, вӑй ҫук, Микуль...

— Микуль мар ку, анне, ку — эпӗ!

— Кам?

— Тарас... Тарас эпӗ!

Ҫакна илтсен, чирлӗ хӗрарӑм мӗнпур вӑйне пухса тепӗр аякӗ ҫине ҫаврӑнчӗ те тӑрса ларчӗ. Пӗр хушӑ вӑл ҫакӑн пек кӗтмен ҫӗртен килсе кӗнӗ аслӑ ывӑлӗ ҫине ӑнран тухса кайнӑ ҫын пек, куҫне час-час мӑчлаттарса пӑхрӗ. Малтанах ӑна хӑй ҫак самантра тӗлӗк курнӑ пек туйӑнчӗ пулмалла. Тарас тепре сас парсан тин вара, ӑна чӑннипех палласа илсе, вӑрӑммӑн йынӑшса ячӗ те, унӑн пуҫӗ минтер ҫине ӳкрӗ.

— А-ах, ывӑлӑ-ӑм, вилетӗп вӗ-вӗт! Сана та кураймастӑп пуль, тенӗччӗ... Сӑпаҫҫипах, пытарма та пулин ҫитрӗн хуть...

Амӑшӗ ӳлесех макӑрса янипе Микуль та вӑранса сиксе тӑчӗ. Тарас ӑна хыттӑн ыталаса чуптуса илчӗ, унтан амӑшӗ ҫумне пырса ларчӗ.

— Ан макӑр, анне, халӗ санӑн хуйху-суйху пӗтрӗ

ёнтӗ, куратӑн: эп чиперех, тӗрӗс-тӗкелех таврӑнтӑм!— амӑшне ҫурӑмӗнчен ачашла-ачашла йӑпатрӗ Тарас.—Ыранах тухтӑр чӗнетӗп сан валли. Сывалатӑн та, пит лайӑх пурӑнма пуҫлатпӑр. Халӗ ак виҫҫӗмӗр пӗрле ларса хӑна пулӑпӑр, ман кутамккара сире валли кӑштах кучченеҫ пур...

Амӑшӗ майӗпе лӑпланма пуҫларӗ. Тарас Микуле часрах хуранпа шыв вӗретме хушрӗ, хӑй ҫав хушӑрах кутамккинчен ҫӑкӑр, сухари, сахӑр кӑларчӗ. Каласма вӑйӗ ҫук пулин те, амӑшӗ Тарасран вӑл юлашки вӑхӑтсенче мӗнле пурӑнни ҫинчен ыйтса пӗлме тытӑнчӗ. Амӑшне ним чухлӗ те пӑшӑрхантарас мар тесе, Тарас пурне те хитрелетсе каласа пачӗ. Хӑй йывӑр аманса ҫур ҫула яхӑн госпитальсем тӑрӑх ҫӳрени ҫинчен те каламарӗ. «Сывалсан та калама пулӗ-ха ун ҫинчен»,— шухӑшларӗ хӑй ӑшӗнче.

Тепӗр ҫур сехетрен Хветуҫ килйышӗ чей ӗҫме ларчӗ. Выҫӑхса ҫитнӗ, тахҫантанпах чӑн-чӑн ҫӑкӑр ҫисе курман амӑшӗпе шӑллӗне Тарас хӑй илсе килнӗ ҫимӗҫсемпе хӑналарӗ. Хветуҫ хӑйӗн ывӑлӗсем — хӑйӗн телейӗ ҫине пӑхса пӗр-икӗ хутчен вӑйсӑррӑн кулса илчӗ. Унӑн хӗрелнӗ куҫӗнчен чей чашки ҫине савӑнӑҫ куҫҫулӗсем тумларӗҫ.

— Этемлех пурӑнӑпӑр-и-ха, тен, малашне...— пӑшӑлтатрӗҫ унӑн кушӑркаса пӗркеленнӗ тутисем.

## 2. АСТАВАТЬ ТАРАС...

Тул ҫутӑлнӑ чух тин выртнӑ пулин те, Тарас ирех тӑчӗ. Мӗн тӑвас тетӗн — салтак йӑли! Вӑл кӗпине хывса пилӗк таран ҫӑвӑнчӗ, алшӑллипе ӳчӗ хӗреличченех лутӑркаласа шӑлӑнчӗ, унтан тумланчӗ те ҫенӗк алӑкӗ умне тухса тӑчӗ. Ирхи хитре хӗвел йӑмра тӑррисемпе те танлашайман-мӗн-ха, кил хушшинчи кӗҫҫе пек курӑк ҫинче сывлӑм тумламӗсем ахах пӗрчисем пек курӑнаҫҫӗ. Пӗлӗт — кӑвак кантӑк пек, тап-таса. Ҫил-мӗн ҫук. Лӑпкӑ, ӑшӑ. Таҫта ҫӳлте, сенкер тӳпе айӗнче, нихҫан ывӑнма пӗлмен тӑри хӑй юррине шӑрантарать. Ытармалла мар ҫанталӑк!

Тарас тутлӑн карӑнса илчӗ те кил хушшине йӗри-таврa пӑхса ҫаврӑнчӗ. Пӗтӗмпех, пӗтӗмпех юхӑнса кайнӑ иккен кил тавраше...

Выльӑх карти тӑрри ик-виҫ ҫӗртен ишӗлсе аннӑ, тытӑнса юлнӑ ҫӗрӗк улӑм ҫийӗнче вӗлтрен, мӑян, хупах — темтепӗр ӳсет. Тахҫан хӑмаран ҫапса тунӑ алӑк тӑписенчен вӗҫерӗнсе кайнӑ та хӑяккӑн выртать, лаҫ пекки те тӳнес патнех ҫитнӗ. Кил хушши варринче кустӑрмасӑр

урапа ларать, хӳме çумне хăрах тупанлă çара çунана тайăлтарса тăратнă. Урăх нимĕн те çук.

Тарас крыльца картлашки çине ларчĕ те шухăша кайрĕ. Мĕнрен пуçламалла-ши ĕнтĕ пурнăçа юсама? Хăш кĕтесрен тытăнмалла? Пӳрчĕ те кивĕ, ăна та юсас пулать, никĕсĕсем веçех çĕрсе кайнă. Германи вăрçинче пулнă ашшĕ 1915 çул вĕçĕнче Галицире йывăр аманса госпиталь хыççăн икĕ уйăх килте пурăннă чух юсаса хăварнă кĕлет çеç йĕркеллĕ ларать.

«Эх, атте, атте!— хаштах сывласа ячĕ Тарас.— Юлашки хут куртăмăр-çке эпир сана çавăн чух! Тухса кайрăн та, урăх таврăнмарăн. Ăçти çĕршывра пуçна хутăн-ши? Мĕн чухлĕ хĕн-хур, мĕн чухлĕ асап курмарăн пуль эсĕ хăвăн вăрăмах та мар ĕмĕрӳнте! Пурне те каласа та пĕтерес çук çав! Юлашкинчен — пĕтрĕн... Мĕншĕн, камшăн?..»

...Питĕ лайăх астăвать Тарас: ытла та чухăн пурăнатчĕç вĕсем. Лаша та, ĕне те çукчĕ. Килти тырă çăварниччен те çитместчĕ. Çĕнĕ тырăччен тесе пуянсенчен кивçен илетчĕç — пĕр пăт вырăнне пăт çурă памалла. Анчах ун пек ăçтан тăранса пурăнатăн? Вара амăшĕ ăна, çичсакăр çулхи Тараса, çавăтатчĕ те, вĕсем иккĕшĕ инçетререхри ялсене ыйткалама тухса каятчĕç. Тепрер эрнерен, кăвакарма пуçланă çăкăр таткисемпе паранкă тултарнă кутамккасене çĕклесе, киле анкарти хыçĕсемпе çĕрле пырса кĕретчĕç — ял çыннисенчен намăс пуласран. Анчах çынсем пурпĕрех пĕлетчĕç çав вĕсем ыйткаласа çӳрени çинчен. Урама выляма тухсан, пуянтарах çынсен ачисем пулчĕ-пулмарĕ мăшкăллатчĕç унран:

— Эй, Тарас-карас! Христарати парать-и, кутран тапса ярать-и?

Хăйсенчен вăйлăрах пулнă Тарас вĕсене хăвалама тытăнсан, ăна аякран чулсемпе персе кăшкăратчĕç:

— Кĕлмĕçĕ! Ыйткалакан, п... хыпакан!

Нумай тарăхтарнă пуян ачисем Тараса, тепĕр чух вĕсене вăл тытса çурма та хатĕр пулнă, анчах нимĕнех те тăвайман, лешсем яланах нумаййăн пулнă.

Унтан Тарассен ашшĕ кӳршĕ ялне кĕтӳ кĕтме кĕрĕшрĕ. Виçĕ çул çӳрерĕç вĕсем Тараспа иккĕшĕ уйсем, çырмаçатра тăрăх вăрăм пушă сĕтĕрсе. Хĕвел тухнă-тухманах ăшă ыйхăран вăрататчĕ Тараса ашшĕ. Çав тери тăрас килместчĕ, анчах мĕн тăвăн-ха ĕнтĕ? Тухса утасах пулать кĕтӳ хыççăн, ир пуçласа хĕвел аниччченех çӳрес пулать. Пăрлă çумăр айĕнче те пĕрре кăна мар пулнă, кĕрхи сивĕ

çанталăкра та сахал мар шăнса кӳтнĕ, тем те курнă! Уйри тырăсене пуçтарса кĕртсе авăн çапма тытăннă вăхăтра сынсен ачисем, Тарас тантăшĕсем, шкула çӳреме тытăнатчĕç, анчах унăн çаплах-ха кĕтӳ хыççăн чупмаллаччĕ. Ытти ачасем уйăх ытла вĕренсен тин шкула çӳреме тытăнатчĕ Тарас. Çуркунне пулсан та, ыттисенчен пĕр уйăх маттан çӳреме пăрахатчĕ — каллех кĕтӳ кĕтме каймалла. Питĕ кӳрентеретчĕ ку. Унăн çав тери вĕренес килетчĕ, çав тери! Юрать-ха ун чухнехи учитель Яков Петрович питĕ лайăх çынччĕ, чухăн çын ачисене хĕрхенекенскерччĕ. Тарас кĕркунне шкула кая юлса пынăшăн та, çуркунне час тухса кайнăшăн та вăрçмастчĕ. Вăрçма мар — яланах пулăшатчĕ ăна, çулла кĕтӳре çӳренĕ чух та кĕнекесем парса яратчĕ.

— Вула, Тарас, ытларах вула, вуласан çын пулатăн, санăн ăсу-пуçу çивĕч,— тетчĕ вăл.

Тарас вара хăйĕн хутаççинче яланах е Пушкин, е Некрасов, е Лермонтов кĕнекисене илсе çӳретчĕ. Кăшт пушă вăхăт пулсанах ларать те — вулать. Ăнлансах çитменнисене кайран Яков Петровичран ыйтса пĕлет. Мĕн каламалли пур, нумай усă кӳчĕ Тараса çав учитель! Питĕ шел вăл çынна, тăрук чахоткăпа чирлесе ик-виç уйăхрах вилсе кайрĕ. Пĕтĕм ял пычĕ унăн тупăкĕ хыççăн, кайран тăпри çине сиреньсем лартса карта тытрĕç. Паян кун та чечекленеççĕ пуль-ха вăл йывăççем...

Мăшкăл та сахал мар тӳсме тӳр килнĕ кĕтӳре çӳренĕ вăхăтра. Кĕтӳçе никам та çын вырăнне хуман вĕт-ха ун чухне. Пуринчен ытла çакна лайăх астăвать Тарас: пĕррехинче, сасартăк пăрлă çумăр килсе çапсан, кĕтĕве васкасах яла хăваласа кĕртмелле пулчĕ. Каçхине, Тараспа ашшĕ хăйсем черетпе апат çимелли çын патĕнче сывăрма выртсан, унта çак ялти çĕрме пуян, Мăклă Якур тенĕскер, питĕ тĕреклĕ, хăйĕн вăйĕпе пурне те хăратса пурăнакан çын, пычĕ те шавлама тапратрĕ.

— Кĕтӳçĕ кунта-и?

— Аслăк çинче сывăраççĕ,— терĕ кил хуçи арăмĕ.

— Чĕнсе ан-ха ăна, калаçмалли пур манăн вăл эсрелĕпе!

Çакна илтсе, нимĕн ăнланман Тарас ашшĕ пусма тăрăх çĕре анчĕ. Тем ырă мар пуласса сиснĕ пекех, Тарас та унран юлмарĕ. Мăклă Якур вара тӳрех сиксе ӳкрĕ Тарас ашшĕ çине:

— Ăçта чикрĕн эсĕ ман пăрăва, кĕлмĕçĕ?

— Мĕнле пăрăва?— ыйтрĕ Тарас ашшĕ.

— Пушмак пăрăва, пĕлместĕн-им, уласкере!

— Киле пымарĕ-им?

— Пынă пулсан, килместĕп те эпĕ сан пек сысна патне! Кала тавай, ăçта чикрĕн? Пусса çиме пытартăн-и, сутса ятăн-и? Халех тупса панă пултăр, унсăрăн эп сан майна наччас каялла пăрса лартатăп!..

— Эпĕ уйра пĕр выльăх та хăварман, пурне те яла хуса кĕртнĕ,— терĕ Тарас ашшĕ чĕтреме пуçланă сасăпа.

— Ăçта-ха, эппин, ман пăру? Кала, ăçта?!— тата хытăрах çухăрчĕ Мăклă Якур.

— Эп ăçтан пĕлем-ха ăна халь... Тен, пĕр-пĕр çын патне кĕнĕ-и? Ирхине кĕтӳ хăваланă чух тупăнĕ-ха, таçтах каяс çук... Тепĕр тесен, эпĕ кашни пăрăвах хӳререн тытса çӳреместĕп вĕт, кĕтӳре нумай вĕсем!

Çакăн пек кăшт хăюллăрах калани Мăклă Якура уртарсах ячĕ курăнать.

— А-а, çын выльăхне çухататăн та, çийĕнчен тата урлă калаçатăн-и эсĕ? Шăршлă çăвар, вĕрентĕп эп сана манпа мĕнлерех калаçмаллине!— тесе, Тарас ашшĕне кăкринчен тытса пĕррех хăлха чиккинчен янлаттарчĕ вăл.

— Ма çапатăн?— йынăшса илчĕ Тарас ашшĕ.

— Çавăншăн! Сана, ухмаха, тăн кĕртме!— татах кăшкăрчĕ кулак, Тарас ашшĕн кĕпине аллинчен вĕçертмесĕрех ăна пуçĕнчен, сăмсинчен, хырăмĕнчен чыша-чыша.

Вилесле хăраса кайнă Тарас, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтресе, кăшкăрса макăрса ячĕ.

— Ан тив аттене-е!..

Çав вăхăтрах пӳртрен кил хуçи арăмĕ сиксе тухрĕ.

— Ара, Якур хăта, мĕн хăтланатăн? Ма тиветĕн сынна?— Вăл Мăклă Якур патне чупса пычĕ, анчах нимĕн те тăваймарĕ.

— Кĕлмĕçĕ, çапкаланчăк, вĕрентĕп эп сана пăрусем çухатма! Санăн хăвăн ĕмĕрне те выльăх пулас çук, йытă!..

Тарас ашшĕ малтанах «ан çап, ан çап, ан вĕлер, тархасшăн, ан вĕлер»,— тесе кăшкăркаларĕ, анчах кайран сасă та пами пулчĕ. Вара ним тума аптранă Тарас, хăйне хăй астумасăр, Мăклă Якур çине хыçалтан кушак пек ыткăнчĕ те ăна хулпуççинчен шатăрр! çыртса лартрĕ. Унăн çивĕч шăлĕсем ӳт ăшнех кĕрсе ларчĕç пулмалла. Якур çавăнтах ы-ых! терĕ те ача ашшĕ çинчен йăванса анчĕ. Шăп çав вăхăтра кил хушшине ик арçын чупса кĕчĕç — вĕсене кил хуçи арăмĕ Якура чарма чĕнсе пынă иккен...

— Эс мĕн ашкăнатăн кунта, Якур Хомич?— çилĕпе

кăшкăрчĕ пĕри, çамрăкраххи, ун патне хăвăрт пырса тăрса.— Мĕншĕн хĕнетĕн кĕтӳçе? Вăл санăн тарçу мар вĕт, ăна халăх тара тытнă!

— Ан йăсла, атту хăвна та тыттарса яратăп акă!— терĕ Якур сиввĕн. Вăл çĕртен тăчĕ те сулăнса кайрĕ. Ӳсĕр пулнă иккен, эсремет, ӳсĕрпе урса кайса ахăрнă!

— Ытла пурне те ан юна, Якур Хомич, саншăн та суд тупăнма пултарать, асту!— хăраса тăмарĕ çамрăкки.

— Су-уд?! Кĕсре хӳри мар-и?— вăкăр пек пăхса илчĕ ун çине Якур.— Мана суд тума пултаракан çын çуралман-ха, пĕлетĕн-и эс çавна? Апчхи эпĕ сирĕн пеккисем çине, манкасем!

Урăх нимĕн те каламарĕ вара, енчен енне сулланкаласа, кил хушшинчен тухса кайрĕ.

— У-у, шуйттан, урнă йытă аçи!— терĕ ун хыççăн пăхса юлнă кил хуçи арăмĕ.— Кама-кама макăртман-ши вăл хăйĕн ĕмĕрĕнче! Нихçан та шалчи тулмасть пуль çав...

— Тулатех-ха хăçан та пулин,— терĕ çамрăк арçынĕ.

— Турă чăннине куратех, теççĕ те...— ассăн сывласа илчĕ тепри, ватăраххи.

Вĕсем Тарас ашшĕне ик енчен тытса ура çине тăратрĕç те пӳрте çавăтса кĕрсе кутник сакки çине вырттарчĕç. Пӳртре кил хуçи арăмĕ лампа çутса ярсан, Тарас тата ытларах хăраса кайрĕ: ашшĕн пичĕ чĕп-чĕр юн иккен, унтан та кунтан шыçса, кăвакарса ларнă, сулахай куçĕ уçăлмиех пулнă...

— У-у, вĕреçĕлен, тискер чунилли! Çынна ним айăпсăрах çапса пăрахма хатĕр вĕт вăл! Хăйне çакăн пек тытса хĕнесчĕ пĕрре камăн та пулин! Тур куртăрах ăна, киремет тыттăрах эсреле! — ылханчĕ кил хуçи.

Тарас ашшĕ йывăррăн сывласа выртрĕ. Кил хуçи арăмĕ унăн пичĕ çинчи юна шăлса тасатрĕ, унтан таса алшăлли тупса ăна сивĕ шывпа йĕпетрĕ те аманнă çыннăн пĕтĕм питне хупласа хучĕ.

— Капла хамантарах пулаканччĕ-ха...

Ирхине вĕсем пурпĕрех кĕтӳ кĕтме тухрĕç, Тарас ашшĕн пĕтĕм шăмшакĕ ыратрĕ, пуçĕ çаврăнчĕ куранать, ахальтен мар вăл ирхи апата темиçе кашăк çеç сыпкаларĕ, анчах хăй асапланнине ывăлне кăтартасшăн пулмарĕ. Тарас ăна: «Атте, тен, эсĕ паянлăха выртăн, кĕтĕвĕпе эпĕ пĕчченех çӳрĕп», тесен, вăл ăна хирĕç: «Çук-çук, епле юратăр ун пек, манăн нимĕн те ыратмасть вĕт, иксĕмĕр те каятпăр»,— терĕ. Анчах уя тухсан хăй аран çӳрерĕ, кăшт

май пулсанах выртрĕ. Хытă асапланчĕ çав вăл, Тарас ăна питĕ лайăх сисрĕ...

Кăнтăрла хайхи кил хуçи арăмĕ вĕсене апат çитерме уя пычĕ те тĕлĕнмелле хыпар пĕлтерчĕ:

— Леш шуйттанĕн пăрушĕ килтех пулнă вĕт! Ытти выльăхсенчен уйрăм, витене кĕрсе выртнă, тет те, ăна вĕсем киле пыман тесе шутланă. Арăмĕ: «Пирĕн пăру çук-ха», тесенех, Якурĕ, ӳсĕрскер, сана хĕнеме тухса чупнă. Кун çинчен мана вĕсен пускилĕ, Макар арăмĕ, каласа пачĕ, ăна Якур арăмĕ хăй каланă. Этемсем-и ĕнтĕ вĕсем çавăн хыççăн? Чисти чуниллисемех ĕнтĕ! Ним айăпсăр сынна çапса çĕмĕрсе тăкаççĕ те... Суда пар эс ăна, явăла, тыт та суда пар! Хам та çвититлĕ пулатăп, ним те хăраса тăмастăп!

Тарас ашшĕ ăна хирĕç малтанах ним те каламарĕ, унтан, кăшт ларсан, ассăн сывласа илчĕ те:

— Айван эсĕ, тăхлачă,— терĕ.— Мĕн, эп ăна суда парса çĕнтерме пултаратăп-и? Элеклет, тесе, хамах хупса хурĕç... Уретникĕ те, старшини те, сутйисем те ĕмĕрне те кĕтӳç майлă пулас çук. Вĕсем пурте сирĕн Мăклă Якур пек пуянсемпе пĕр майлă вĕт, пурте халăх ĕнси çинче лараççĕ, халăх юнне ĕмсе пурăнаççĕ. Пирĕн ялти учитель Яков Петрович яланах çапла калатчĕ...

Ашшĕн çак хурлăхлă сăмахĕсене пĕчĕк Тарас яланлăхах астуса юлчĕ. Чухăнсене темле кӳрентерсен те, вĕлерес пек хĕнесен те, вĕсен хутне никам та кĕмест иккен. Мĕншĕн апла-ши вăл? Чухăнсем те çынсемех вĕт-ха!

...Çăвĕ-çăвĕпех кĕтӳ патĕнче çӳресе, хĕллехи вăрăм каçсенче пуянсем валли чăпта çапса, Тарассен килйышĕ малтан юпах тиха, унтан пĕр хĕл каçнă пăру туянчĕ.

— Савăнăр, ачасем, тепрер çултан пирĕн лаша та, ĕне те пулать ĕнтĕ, эсир вĕсене лайăхрах çитерме тăрăшăр, курăк ытларах татса парăр, хăвăртрах çитĕнччĕр. Лашапа ĕне пулсан вара эпир те çынсем пекех пурăнма тытăнăпăр-ха,— тетчĕ амăшĕ.

Анчах та пулаймарĕ вĕсен «çынсем пек пурăнасси». Вăрçă тапранса кайрĕ. Германи пирĕн патшалăха ним систермесĕр тапăннă, терĕç. Вăйпитти арçынсене хĕрсе ыраш вырнă çĕртенех пухса илсе кайрĕç...

Хальхи пекех астăвать Тарас: пĕр вичĕ кун хушши пĕтĕм ял, уйри ĕçсене пăрахсах, асар та писер кĕрлерĕ, çĕрĕн-кунĕн ӳсĕр çынсем чуна ыраттаракан хурлăхлă юрăсем юрларĕç, çĕтĕк купăс сассипе хуташ вĕçĕмсĕр кăшкă-

рашу та макрашу илтӗнчӗ. Ытла та пысӑк хуйхӑ пырса ҫапрӗ-ҫке ун чух халӑха!

Виҫӗ кунтан вӑрҫа каякансене ӑсатма униче карти хыҫне пӗтӗм ял халӑхӗ йӑтӑнса тухрӗ. Пуян таврашӗсем ҫеҫ пӗр ҫын та ҫукчӗ ӑсатакансем хушшинче. Темшӗн-ҫке, вӗсенчен пӗрине те салтака илмен. Кун пирки кайран тин халӑх хушшине сӑмах тухрӗ: вӗсем пурте вулӑс старшинипе воински начальникне пысӑк укҫа парса хӑтӑлса юлнӑ, терӗҫ.

Халӑхпа пӗрле ҫав кун Тарас ашшӗ те, унӑн куккӑшӗ Сар Мирун та вӑрҫа тухса кайрӗҫ. Вӗсем пӗр урапа ҫине ларнӑччӗ. Хуйха ӳкнипе Тарас ашшӗн сӑнпичӗ ҫул ҫинчи тусан тӗслӗ пулса кайнӑччӗ, вӑл ыттисем пек ӳсӗр те марччӗ, урапа ӳречинчен тытса утакан, макӑрнипе халран кайса каласайми те пулса ҫитнӗ амӑшне кӗске-кӗске сӑмахсемпе вӗрентсе пычӗ вӑл:

— Ҫӑкри-тӑварне тирпейлӗ тыт. Йывӑр килсен, тихине сут. Пӑрушне усрама тӑрӑш. Ачасене сӗт кирлӗ. Тарасне шкула ҫӳреме ан пӑрахтар. Хамӑр хӑрахла сӗмсуккӑр ҫын пек ан пултӑрччӗ...

— Юрӗ, Петӗр, юрӗ, пӗтӗмпех эс каланӑ пек туса пырӑп...— терӗ амӑшӗ, куҫҫулӗсене ҫӑта-ҫӑта. — Пирӗншӗн ан хыпӑн, эпир килте епле те пулин пурӑнкалӑпӑр, хӑвӑн пуҫна турӑ упраса хӑвартӑрччӗ кӑна... Эй, мӑнтарӑн, ӑҫтан мурӗнчен сиксе тухрӗ ку вӑрҫӑ!

Куккӑшӗ Мирун вара, тӗреклӗ, сап-сар ҫӳҫлӗ, шатра питлӗ ҫын, темиҫе ҫул хушши Атӑл ҫинче бурлакра ҫӳренипе вырӑсла самаях вӗреннӗскер, ҫав тери ӗҫсе лартнӑччӗ те, урапа ҫинче унӑн-кунӑн сулкаланса, пӗрмай пӗр юрра кӑшкӑрса юрларӗ:

Последний нынешний денече-ек
Гуляю с вами я, друзья...
А завтра, рано чуть светоче-ек
Заплачет вся моя семья-а...

Нихҫан манмалла мар йывӑр ӑсату пулчӗ вӑл. Пур лавсем ҫинче те вӑрҫа каякансем акӑш-макӑш шавларӗҫ: хӑшӗ юрлать, хӑшӗ макӑрать, тахӑшӗ такама юнать, ылханать, хӗрарӑмсем шари! шари! кӑшкӑрса яраҫҫӗ те чарӑнма пӗлмесӗр ӳлеҫҫӗ, ачисем те ҫухӑраҫҫӗ... Хӗвелӗ тӳсмелле мар хӗртет, пурте йӗп-йӗпе тара ӳкнӗ, ыраш хушшипе пыракан ҫул ҫинче тусанӗ пӗлӗт пек йӑсӑрланать, пиҫсе



49 Бо...
Чувашская Ре...

çитнĕ ырашĕ, хăйĕн хуçисемпе юлашки хут сывпуллашнă пек, тулли пучахĕсемпе çĕрелле сулăна-сулăна илет...

Хурăнлă çул çине тухсан, ял халăхĕ салтаксене лартса каякан лавсенчен уйрăлса юлчĕ, анчах вĕсем куçран çухаличченех вырăнтан хускалмарĕ, çĕр çын çĕр сасăпа макăрчĕ.

* * *

...Ашшĕнчен вĕсем пиллĕкĕн юлчĕç: амăшĕ, Тарас, унăнултă çулхи шăллĕ Микуль тата икĕ пĕчĕк йăмăкĕ, Анюкпа Раис, иккĕшĕ те виççĕрискерсем. Уйри тырпула халăхпа пĕрле чиперех пуçтаркаласа кĕртрĕç, килес çул валли те аккаласа хăварчĕç. Тарас, вунпиллĕке кайнăскер, пур арçын ĕçĕсене те туса пычĕ.

Пĕр виçĕ уйăхран вăрçа кайнисем пирки хыпарсем килме пуçларĕç — пĕринчен тепри хăрушăрах. Пĕрисем вилнĕ, теприсем ал-урасăр юлнă, виççĕмĕшĕсем ним сас-хурасăр çухалнă,— тыткăна лекнĕ пуль ĕнтĕ. Ялта хутла пĕлекенсем сахал пулнипе, салтак арăмĕсем вăрçăри упăшкисенчен килекен çырусене вулаттарма та, каялла çырусем çыртарма та вĕçĕмех Тарас патне пыратчĕç. Макăра-макăра каласа паратчĕç вĕсем мĕн-мĕн çырмаллине...

Хăйсен ашшĕ пит сайра çыратчĕ — хутла пĕлменçке-ха вăл, çыру çырса пама кашниччех çынна тархаслamалла пулнă унăн. Тарасĕ вара ун патне тăтăшах çырса тăратчĕ: пурăнатпăр-ха, выçă лармастпăр, сана ырлăхсывлăх сунатпăр, тетчĕ, ялти пур хыпарсене те пĕлтеретчĕ.

Чăн та, малтанах аптрамарĕç вĕсем, йĕркеллех хĕл каçрĕç, анчах çур енне тăрук инкек çине синкек пырса çапрĕ. Яла темле «вĕри чир» пырса кĕчĕ те, вĕсем пĕтĕм çемйипех ураран ÿкрĕç, пурте питĕ йывăр выртрĕç. Çавăн чух вара Тарасăн пĕчĕк йăмăкĕсем тÿсеймерĕç, иккĕшĕ те умлăн-хыçлăнах вилсе кайрĕç, паян пĕри, виç кунтан тепри...

Çав вăхăтрах тата ашшĕнчен çырусем килме пăрахрĕç, ик-виç уйăх пĕр хыпар та пулмарĕ унран. «Пĕтнех ĕнтĕ вăл, вилнех, мăнтарăн!»— терĕ амăшĕ, ирĕн те каçăн татăлсах макăрса. Хуйхи-суйхипе хăй типсе хăрсах ларчĕ, час та часах чирлекен пулса кайрĕ.

Кĕркунне тихана сутса ямалла пулчĕ: апат çук, ăçтан хĕл каçаратăн? Тихи çав тери ÿссе, лайăхланса кайнăччĕ, ăна ĕнтĕ кĕçех кÿлме пуçламаллаччĕ, çавăнпа та Пуян

Лявасен кĕрӳшĕ Мамун ăна тăват пăт тырăлла илсе çаватса тухса кайнă чух вĕсем пĕтĕм килйышĕпех йĕрсе юлчĕç...

Малтанхи сивĕсем пуçлансан, ашшĕнчен нумайранпа кĕтнĕ çыру тинех килчĕ. Вăл урараи йывăр аманнă та, халь темле Каменец-Подольск хулинче госпитальте выртнă. Кăшт тӳрленсен, тен, пĕр вăхăтлăха киле ярĕç-и-ха, тенĕ çырăвĕнче.

— Ал-ури çук пулсан та, киле çиттĕрччĕ мĕнле те пулин,— макăрчĕ амăшĕ, Тараса ашшĕн çырăвне темиçе хут та вулаттарса.

Сурхури иртсен, шартлама сивĕ кун, каçалапа, ашшĕ чăнах та киле çитрĕ. Шĕвĕр башлыкпа, кивĕ шинельпе, кăкăрĕ таранах ӳссе кайнă сухалĕ пăрланса ларнă, икĕ хулĕ айĕнче икĕ вăрăм туя. Пĕр ури çине аран пусать. Вăл килтисене пурне те ыталаса чуптунă хыççăн шинельне хывсанах, Тарас унăн кăкри çинче, вĕр-çĕнĕ капăр хăю вĕçĕнче, илемлĕ хĕрес çакăнса тăнине курчĕ.

— Георги хĕресĕ...— тӳрех тавçăрса илчĕ Тарас. Ун пек хĕрессене вăрçăра чи паттăр салтаксене панине вăл унчченех пĕлнĕ те халĕ уншăн питĕ хытă хĕпĕртерĕ.

— Манăн атте — паттăр! Паттăр! Ăна хĕрес панă!..

Анчах ашшĕ хăйĕн çавнашкал хĕрес пулнăшăн нимĕн чухлĕ те савăнман пек туйăнчĕ ăна. Вăл, ӳксахласа, малалла иртсе ларчĕ те салхуллăн ыйтрĕ:

— Пурăнкалатăр пулать-ха?

— Пурăнкалатпăр майĕпе...— терĕ амăшĕ, аллисене кăкăр умĕнче хĕреслесе тытса тăрса.

— Ачасене çын шутлах пытартăр-и хуть?

— Пытаркаларăмăр...

Пĕчĕккисем вилни çинчен Тарас çырса янă çырăва вăл илсе вуланă иккен.

— Мана хама та чутах пытаратчĕç. Çĕр айнех пулсаттăм та, чакаласа кăларчĕç...

Хăй кайран каласа панă тăрăх, ăна пĕр наступлени вăхăтĕнче амантнă. Вĕсен роти атакăна кайма çĕкленсен, çывăхрах йывăр снаряд ӳксе çурăлнă, темиçе çынна аяккалла ывтăнтарса çиелтен тăпрапа хупласа хунă, çав вăхăтрах пĕр мăн осколок Тарас ашшĕн çур пĕççине çурса кăларнă. Сехете яхăн çĕр айĕнче юн юхтарса выртнă вăл, унтан санитарсем асăрхаса чавса кăларнă та лазарета ăсатнă.

...Часах «салтак курма» пускилсем, пуринчен ытла

салтак арӑмӗсемпе ача-пӑчасем, пухӑнма пуҫларӗҫ. Таҫтанҫке амӑшӗ пӗр шкалькка «каҫонккӑ» тупса пычӗ. Кам пӗлет, тен, вӑл, упӑшки таврӑнасса кӗтсе, тахҫанах илсе хатӗрлесе лартнӑ пуль ӑна...

Ашшӗ кӑштах хӗрчӗ те, ҫынсем ыйтнипе, вӑрҫӑ ҫинчен каласа пама пуҫларӗ. Тем те курнӑ, тем те тӳснӗ иккен вӑл, итлесе ларнипех хӑраса каймалла! Нумай-нумай ҫапӑҫусенче пулнӑ, ҫапӑҫу хирӗнче этем виллисем тӑрӑх ҫӳренӗ, пульӑсем тивесрен вилесем хыҫӗнче те пытанса выртнӑ. Карпат тӑвӗсем умӗнче вӗсем пиллӗкӗн «чӗлхе» тытма кайсан иккӗн ҫеҫ таврӑннӑ, ҫапах та «чӗлхене» тытса килнӗ, ҫавӑншӑн ӑна «Георгий» панӑ. Тепре атакӑна кайсан, нимӗҫсен электричество токӗ янӑ йӗплӗ пралукӗ ҫине пырса тӑрӑннӑ та нумайӑшӗ ҫавӑнтах пӗтнӗ, унтан нимӗҫсем газсем ярса пирӗн салтаксене пит нумай чыхӑнтарса вӗлернӗ. Тарас ашшӗ хӑй те кӑшт ҫеҫ вилсе кайман.

Тата темӗн тӗрлӗ хӑрушӑ япаласем ҫинчен каласа пачӗ аманнӑ салтак. Итлесе ларакан хӗрарӑмсенчен нумайӑшӗ ӳлесех макӑрчӗҫ...

Тарас хӑйӗн ашшӗ ҫумӗнчех ун ҫинчен куҫ илмесӗр пӑхса ларчӗ те унӑн сулахай питҫӑмарти ҫинче, сухал айӗнче, вӑрӑм ҫӗвек пуррине асӑрхарӗ.

«Кунтан та лекнӗ пулмалла ӑна...»— шухӑшларӗ Тарас. Темшӗн кун ҫинчен тӑруках ыйтма хӑяймарӗ вӑл, ҫынсем тухса кайсан, ҫывӑрма выртас умӗн тин ыйтрӗ:

— Санӑн питне мӗн пулнӑ тата, атте? Пуля лекнӗ-и?

— Ҫук, пуля йӗрӗ мар вӑл,— терӗ те ӑна хирӗҫ ашшӗ, ассӑн сывласа илчӗ.

— Мӗн йӗрӗ, эппин, вӑл санӑн?

— Хамӑрӑн ротнӑй командир, Бугаев капитан, нухаляпа туртса ҫапрӗ мана...

— Мӗншӗн?— тӗлӗнсе, хӑраса кайрӗ Тарас.

— Ҫулпа пынӑ чух манӑн обмотка салтӑнса кайрӗ те, эп кӑштах кая юлтӑм. Вӑл юланутпа пыратчӗ. Эп юлнине асӑрхаса вӑл лашине чарса кӗтсе тӑнӑ. Эп ун тӗлне ҫитсен вара: «Ма юлатӑн, сысна?!»— тесе кӑшкӑрчӗ те тӳрех аллинчи нухалипе пит урлӑ ячӗ. Шӑпӑрах юн юхса анчӗ манӑн. Пӗр хушӑ куҫ та курми пулчӗ...

Тарас тата ытларах тӗлӗнчӗ, унӑн чӗри хыттӑн-хыттӑн тапма тытӑнса кайрӗ.

— Нивушлӗ вара хамӑрӑннисем хамӑрӑннисене хӗнеҫҫӗ?!

— Эй, ачам, епле хĕнеççĕ-ши! Хĕне-хĕне ăнран кăларсах яраççĕ!— терĕ ашшĕ. —Офицерсем вĕсем пирĕн пек хура халăх мар вĕт, пурте улпут таврашĕсем, помещиксем те дворянсем, пире выльăх выранне çеç хураççĕ! Пĕр-пĕр пĕчĕк сăлтав тупăнсанах, тепĕр чух тата ним сăлтавсăрах тем тĕрлĕ асаплантарса пĕтереççĕ пирĕн йышшисене... Пуринчен ытла вырăс мар халăхсенчен мăшкăллаççĕ — ман пек чăвашсенчен, тутарсенчен, мăкшăсенчен... Чышкăпа кăна мар, мĕн алла лекнĕ, çавăнпа тыттарса яраççĕ, чĕпчĕр юн тăваççĕ хĕнесе. «Под ружье» тăратса тăна яраççĕ тата — винтовкăран икĕ пăт туртакан хăйăр миххи çакса яраççĕ те икĕ сехет хушши ним хускалмасăр тăратаççĕ. Шутсăр йывăр вăл! Хускалсан, татах тăратаççĕ...

— Эсĕ те тăрса курнă-и вара çавăн пек?— ашшĕне хĕрхеннипе макăрас патне çитсе ыйтрĕ Тарас.

— Тăнă, темиçе те тăнă... Малтанах, запаснăй полка лексен, хамăра вăрçă вăрçма вĕрентме тытăнсан, чун тухать пуль тесеттĕм. Нимрен ытла словеснăçшăн лекетчĕ. Эпир вырăсла пĕлместпĕр те, офицерсем мĕн вуласа панине ăнланаймастпăр, каласа пама вуçех те пĕлместпĕр, çавăншăн вара тӳрех хĕнеме тытăнаççĕ. Кашни çапмассеренех: «Азиат! Свиная морда! Кишки выпущу!» тесе кăшкăрнине илтетĕн, анчах хăвна темле хĕнесен те, санăн вырăнтан хускалма юрамасть, пурпĕрех «смирно» тăрас пулать... «Дурак, баран!» теççĕ сана, эсĕ ăна хирĕç: «Так точнă!» тетĕн, хăвăн çав вăхăтра сăмсунтан та, çăварунтан та юн юхать... Хăшĕ-пĕрисем тӳсейместчĕç, пирĕн ротăра пĕр мăкшă çакăнса вилчĕ, тепĕр тутар пăшал пеме вĕренме кайсан хăйне хăй печĕ.

— Вилчĕ-и вара вăл?

— Вилчĕ çав. Хăйне çăварĕнчен пенĕ те...

— Хăйсене... офицерсене, эппин, нимĕн тума та май çукчĕ-и?

— Вăрçа пырса кĕрсен, хăшĕсене, ытла та тарăхтарса çитернисене, тавăрчĕç вара.

— Персе пăрахрĕç-и?

— Печĕç çав.

— Çав кирлĕ те вĕсене!— терĕ Тарас тулли кăмăлпа.

Майĕпе пурте çывăрса кайрĕç, анчах Тарас тахçанччен шухăша кайса выртрĕ. Ашшĕ каласа панисем пĕтĕмпех куç умне тухса тăчĕç: офицерсем ним айăпсăр салтаксене хĕненисем те, вăрçăра ашшĕпе мĕн-мĕн пулнисем те...

— Епле-ха апла,— шухăшларĕ Тарас офицерсем пирки.— хăйсем çынсене вилме хăваласа каяççĕ, хăйсемех вĕсене хĕнеççĕ... Мĕнле япала вара вăл? Хам пулсан, ун пек офицерсене эпĕ итлес те çук. Çапăçчăр хăйсем!

Тепĕр ирхине вĕсем патне татах çынсем пычĕç. Ватă тимĕрçĕ Хура Тимахви, юнашар пурăнакан Павăл — пĕчĕклех уксах юлнăскер, Çĕтĕк Якур тенĕ хăрах куçлă çын, вăрçăран çуллах сулахай аллăсăр таврăннă Платтун— пурте ялти чухăнсем, нихçан ыр пурнăç курманскерсем. Сăмах ĕнерхи пекех, каллех вăрçă çинчен, фронтри йывăрлăхсем çинчен пуçланса кайрĕ. Чăн малтан вăрçăра пулса курнă Платтун тĕпчеме тытăнчĕ:

— Мĕнле унта, халĕ те ик çын пуçне пĕр винтовка тивет-и? Халĕ те нимĕçсен вунă-вунпилĕк снарядне хирĕç пĕр снаряд яраççĕ-и пирĕннисем? Эпир çавăнпах пĕтрĕмĕр вĕт, малтан темĕн чухлĕ юн юхтарса çапăçса илнĕ Галицирен пире сурăх кĕтӳне хăваланă пек хӳтерсе ячĕç...

— Çавăн майлах çав,— терĕ Тарас ашшĕ.

— Эппин, яппун вăрçинчи манерлех? Пире унта патронсем вырăнне вакунĕ-вакунĕпе иконăсем ярса паратчĕç,— хушса хучĕ Хура Тимахви.— Патша майри хăй ярса панă тет вĕсене... Яппунсем пире тупăсемпе кисретеççĕ, пирĕн вĕсене хирĕç иконăсемпе пымалла пулнă имĕш...

— Халĕ патша майри нимĕçсене пулăшать, вĕсен шпионĕ пулса тăрать, теççĕ... Вăл хăй нимĕç хĕрарăмĕ тет те-ха...— шăппăнрах каларĕ Тарас ашшĕ.

— Пулĕ, тем те пулĕ! Çавăнпа ĕçсем ăнмаççĕ те ĕнтĕ пирĕн...

— Салтаксен кăмăлĕ мĕнлерех?— ыйтрĕ Платтун.

— Ăна эсĕ хăвах пĕлме тивĕç,— терĕ Тарас ашшĕ.— Паллах, салтаксен вăрçас килмест. Камăн-ха йĕпе окопсенче пыйтăсене кăшлаттарса, уйăхĕ-уйăхĕпе çĕрсе пурăнас, юлашкинчен вилсе выртас килтĕр? Салтаксен те куçĕ уçăлма тытăнчĕ çав, халăхшăн мар, пуян хуçасемшĕн вилетпĕр, теççĕ. Окопсенче вăрттăн хутсем вулама пуçларĕç, вăл хутсенче вăрçа хирĕç çыраççĕ, çитет кун чухлĕ халăх юнне тăкнипе, теççĕ...

— Анчах вăрçин вĕçĕ курăнмасть, тата темĕн чухлĕ халăх пĕтмелле-ха, вăл паллă мар,— ассăн сывласа илчĕ Тимахви.

Çав вăхăтра алăкран ял старости Çемен Лявонч, Пуян Лява таврашĕсенчен пĕри, утмăлтан иртнĕ пулин те, питĕ

тёреклĕ, хĕрлĕ питлĕ, самаях кăвакарнă мăн сухаллă çын, пырса кĕчĕ.

— Ыр кун пултăр пурне те!— терĕ те вăл кĕнĕкĕменех, малтан виçĕ хутчен хĕрес хурса илчĕ, унтан сĕтел пуçĕнче ларакан Тарас ашшĕне алă пырса пачĕ.—Салам патша салтакне!— Ыттисене ал пама мар, вĕсем çине пăхмарĕ те.

— Килех, Çемен Лявонч, лар...— хыçсăр пукан çине кăтартрĕ Тарас ашшĕ.

Староста ларчĕ те, кăкри умне тĕрлĕ тĕслĕ çипсемпе кукрашкасем туса илемлетнĕ вăрăм хура кĕрĕкĕн тӳмисене вĕçертсе, йывăррăн сывласа ячĕ. Тарас унран эрех шăрши кĕнине туйрĕ.

— Çитрĕн пулать-ха, Петĕр Николайччă, э? Аван, питĕ аван ку, пĕрмай çапăçса та ĕç тухмасть, килтисене те килсе курас пулать... Эпир те кунта кунĕн-çĕрĕн тенĕ пек кĕлтăватпăр, çав эсрелĕ нимĕçсене çĕнтерме турăран пулăшу ыйтса пуççапатпăр...

Тарас ашшĕ те, ыттисем те нимĕн те чĕнмерĕç. Пит те лайăх пĕлнĕ-çке вĕсем Çемен Лявонч йышши çĕрме пуянсем камшăн тата мĕншĕн кĕлтунине. Вăрçă вĕсене нимĕнле сиен те, хурлăх та кӳмен, пуйтарнă та ырă кăтартнă çеç. Çак Çемен Лявонч хăй те çар валли тырă-пулă, ашпăш, тир-сăран пухса леçсе тем териех пуйнă. Вăрçă пуçланнă хыççăн çулталăк çурă хушшинче вăл икĕ чуллă çил арманĕ, улт кĕтеслĕ çĕнĕ çурт лартрĕ, салтак арăмĕсен анисене тара илчĕ, çĕрĕ çинче хăйсенех ĕçлеттерчĕ, ял хыçĕнчи Чечек çаранне халăха вăйпа тенĕ пекех хăйне суттарчĕ. Сăвăс пекех ĕмет халăх юнне!..

— Эпĕ сан патна ырă кăмăлпа килтĕм, Петĕр Николайччă,— терĕ староста малалла.— Эсĕ сывă таврăннă ятпа çакна пушатар пулĕ...— Вăл кĕрĕк кĕсйинчен пулштух кăларса сĕтел çине лартрĕ.

— Сывви сывах мар-ха эпĕ, урана хытă çĕмĕрсе ячĕç,— терĕ Тарас ашшĕ. Анчах староста ăна илтмен пек пулчĕ.

— Пурнăç çав тери йывăрланса кайрĕ, эрех те юлмарĕ, юрать-ха ĕнер хулара паллана вырăссем тупса пачĕç...

Малтан вăл хăй тултарса ĕçрĕ те: эх, лайăх та çак шуйттан! тесе тутине сарлака ывçипе шăлса илчĕ, унтан Тарас ашшĕне тултарса пачĕ:

— Ĕссе пар, патша салтакĕ, хăвăн сывлăхушăн! Ку-

ратăп: паттăр çапăçнă эсĕ хамăрăн Христос тĕнĕшĕн, патша-аттешĕн тата хамăрăн таса Раççейшĕн. Хĕрес те туянса килнĕ авă... Ĕç, тăванăм!

— Хĕресне унта часах туянтараççĕ, сиссе те юлаймастăн!— темле шăл витĕртерех каласа хучĕ Платтун.

— Паттăр ĕç тумасăрах памаççĕ ĕнтĕ,— ун еннелле çаврăнса пăхрĕ староста.— Сана паман авă...

— Эп çакăн пек кĕмĕлтен тунă пĕчĕк хĕрессем çинчен мар, йывăçран тунисем çинчен калатăп,— ăнлантарчĕ Платтун.

— Пурте турă аллинче, шăллăм,— сассине юриех ачашлантарса каларĕ Çемен Лявонч. Унтан ăна та кăштах эрех ярса пачĕ.— Ĕç, эсĕ те патша салтакĕ пулнă çын...

Платтун ĕçрĕ, анчах тав тăвас вырăнне тӳрех темле урлăрах калаçма тытăнса кайрĕ.

— «Пулнă çын» çав!— терĕ вăл.— Тĕрĕс калатăн, этем пулнă çын эпĕ. Халь акă никам та мар, пурнăçа юрăхсăр чăлах кăна. Никама та кирлĕ мар ĕнтĕ эп урăх... Вăрçăра пĕр султалăка яхăн, пĕрмай вут ăшĕнче пултăм, алла татса пăрахрĕç, чĕркуççие ватрĕç, анчах хам мĕншĕн çапăçнине ăнланаймарăм çавăнта... Киле таврăнатăп та — куратăп: пĕри арман лартнă, тепри сутă тăвать, виççĕмĕшĕ çур ял çĕрне хăй аллине çавăрса илнĕ, ватă пуçĕпе вунсакăр çулхи хĕре арăм тунă, анчах ман çемье пур — юлашки ĕнене сутса çисе янă та выçă ларать. Турри те пулăшман ăна, патши те. Тин кăштах ăнланса илтĕм вара хам мĕншĕн çапăçнине. Тăнсăр патшапа пуянсемшĕн кăна юн юхтарнă иккен эпĕ, урăх нимшĕн те мар...

Пуçне Платтун еннелле чалăштарса итлесе ларнă староста малтан хĕрелсе пычĕ, унтан кăвакарса кайрĕ, унăн сарлака сухалĕ палăрмаллах чĕтреме тытăнчĕ.

— Эсĕ мĕн... мĕн калаçатăн, путсĕр?— сăмахĕсене шăл витĕр сăрхăнтарса кăларчĕ вăл.— Патшана хирĕç палкатăн-и?! Кун пек сăмахсемшĕн мĕн пулнине чухлатăн-и эсĕ? Эп сана... инвалит тесе пăхса тăмăп!

Староста ура çине сиксе тăрса ывçипе сĕтел çине чант! тутарчĕ.

— Пăлхавçă! Хам алăпа тытса кайса хуптаратăп, тĕрмере çĕртетĕп сана, явăл!

Анчах Платтун пĕртте хăрамарĕ. Вăл та сиксе тăчĕ те, староста умнех пырса, ăна питĕнченех кăшкăрчĕ:

— Хуптар ара! Çĕрт! Окопра çĕрнĕ çыншăн тĕрмере çĕресси ним те мар вăл! Акă, юлашки аллăма та таттар!

Анчах та эп сана тӗрӗссине калатӑп: эпир вӑрҫӑра хӗн курнӑ вӑхӑтра эсир кунта эрешменсем пек пуранна, халӑх юнне ӗмсе кӳпшесе кайнӑ! Эсӗ те, сан шӑллусем те, тӑванусем те, пурте!

— Чарӑн, Платтун!— сӗтел ҫине тата хаяртараххӑн ҫапса илчӗ староста. — Ырра мар ахӑратӑн! Асту!

— Ан юна!— парӑнмарӗ Платтун. — Маншӑн ырри халиччен те пулман, малашне те пулас ҫук, эпир ҫак тӗнчене ыр пурнӑҫ курма ҫуралман! Ҫавӑнпа та нимрен те хӑрамастӑп... Хӑрамастӑп!

Ӗҫ ытла чӗрре кӗрсе кайма пуҫланине курса, Тарас ашшӗ вӗсене майлаштарма пикенчӗ:

— Чарӑнӑр ӗнтӗ, мӗн эсир... кӗрхи автансем пек сиксе ӳкрӗр пӗр-пӗрин ҫине? Ним ҫукранах тапратса ятӑр...

Нумай хушӑ хытӑ чупнӑ лаша пек хашкама ернӗ Платтун старостӑна тата тем каласшӑнччӗ, анчах, ҫӑварне уҫнӑскерех, каламарӗ, пӗртен-пӗр аллипе сывлӑша касса: эх! терӗ те, пӳртрен хыттӑн утса тухса кайрӗ.

Староста ун хыҫӗнчен чышкипе юнаса илчӗ:

— Лекетӗнех-ха эс пӗрре!..

— Унӑн чунӗ тӑвӑнса ҫитнӗ,— терӗ ку таранччен те ҫӑвар уҫман Ҫӗтӗк Якку.— Арӑмӗ вилес пек выртать, ачисем улттӑн, ҫиме ҫӑкри ҫук, тип паранкӑпа пурӑнаҫҫӗ. Вӑл та пӗтет, терӗ-ха...

— Патша айӑплӑ-им уншӑн? Ҫуратса ан тултар! Патшана усалпа ма асӑнать вӑл?— ҫаплах лӑпланмарӗ староста.

— Ара, патши ҫинчен вӑл нимех те каламарӗ-ҫке,— терӗ Тарас ашшӗ, хӑй те староста ҫине ҫилӗпе пӑхса.

— Каламарӗ! Пӗлетӗп эпӗ унӑн шухӑшӗсене! Пӗркунне те Яккусем патӗнче темтепӗр лӑпӑртатнӑ-ха вӑл. Ухмах пуҫӗпе пирӗн янаралсемпе ахвицерсене тиркеме хӑйнӑ... Тыткалатӑпах эп ӑна пӗрре!

Староста кӗленчери эрехе хӑпӑл-хапӑл ӗҫсе ячӗ те никампа сывпуллашмасӑрах тухса кайрӗ.

— Йытӑ,— терӗ ун хыҫҫӑн Тимахви.—Патша йытти!

Старостӑпа хӑрах алӑллӑ Платтун ҫакӑн пек тытӑҫса илнине те яланлӑхах астуса юлчӗ ҫамрӑк Тарас. Пуянсем чухӑнсене ҫын вырӑнне шутламаннине, чухӑн ҫынсем вӑрҫӑра юн тӑкса, чӑлахланса килсен те, вӗсене ним хисепӗ ҫуккине тата тепӗр хут курчӗ вӑл.

...Килте пӗр уйӑх пурӑннӑ хыҫҫӑн Тарас ашшӗ хулана комиссине кайса килчӗ. Пӗҫҫинчи суранне ӳт илсе ҫитмен-

ниппе ăна тепĕр уйăх отпуск панă. Çавăн чух вара Тараспа ашшĕ хăйсен тўнсе кайма пуçланă кĕлетне сўтсе юсарĕç. Ашшĕ килте тунă юлашки ĕç пулчĕ вăл. Шыв-шур пуçланас умĕн ăна каллех вăрçа каймалла турĕç. Хăй текех киле таврăнас çуккине тĕп-тĕрĕс пĕлсе тăнă пекех, вăл кăштах ĕçсе ўсĕрĕлчĕ те выртса йăвансах макăрчĕ.

Чăнах та таврăнмарĕ вара. Кайсанах малтанхи уйăхĕнче пĕр-икĕ çыру ячĕ те унтан шăпах пулчĕ.

Вăрçи çаплах чарăнмарĕ, пурнăç йывăрланнăçемĕн йывăрланса пычĕ. Çава тухсан, пĕррехинче, Тарассем патне Хура Тимахви пычĕ те çакăн пек калаçу тапратса ячĕ:

— Пыр-ха, Тарас, ман пата тимĕрç лаççине, мана пулăшаканни пулăн,— терĕ вăл.— Пурнăçра хуть те мĕнле ĕçе хăнăхни те усăллă, вăл нихçан та сая каймасть. Аçу пирки хыпар çук авă, кам пĕлет—тем пулнă-ха унпа... Тен, санăн çемьене тăрантараканни пулма тивĕ? Пĕрле ĕçлесен, кăштах çимелли те тупăпăр, укçа та пулĕ пирĕн, выçах лармăпăр...

— Чăнах, ывăлăм, кай Тимахви мучу патне, усси пулатех...— терĕ амăшĕ те.

Тарас вара тимĕрç лаççинче ĕçлеме тытăнчĕ. Çынсем илсе пыракан ĕçсем нумаях марччĕ, çавăнпа та вĕсем кивĕ çавасенчен, тутăхнă шуç-тимĕр таткисенчен çĕçĕсем, куркасем, пĕчĕк чашкăсем туса тултаратчĕç те, Тимахви мучи вĕсене кашни шăматкун тенĕ пекех хула пасарне — Етĕрнене кайса сутатчĕ. Унтан вăл яланах çĕнĕ хыпарсем пĕлсе килетчĕ — вăрçă çинчен, çут тĕнчере мĕн-мĕн пулса иртни çинчен... Тимĕрç лаççинче каннă вăхăтра чĕлĕм туртса ларнă чух вара çав хыпарсене хăйне майлă сўтсе яватчĕ:

— Пирĕн халĕ пĕтĕм вăрçа патша хăй ертсе пырать. Верховни главнокомандующи... Пуринчен те асли ĕнтĕ, янаралсен янаралĕ... Анчах пире пур фронтсенче те хĕнеççĕ. Сăмсаран юн каймаллах, пуç çурăлмаллах тўнккеççĕ. Апла пулсан, пирĕн патши ăслах мар, эппин, вăл... Ма йĕркеллĕ вăрçма пĕлмест? Ма кермана çĕнтереймест? Лешĕсем чеерех, ăсларах... Тепĕр тесен, патшан ăсĕ кĕске пулнине эпир Порт-Артур патĕнчех пит лайăх куртăмăр та-ха...

— Патшине ăна пире турă панă тет-çке, Тимахви мучи, мĕнле-ха вăл кĕске ăслă çынна патша тума пултарнă?..— ыйтрĕ пĕррехинче Тарас.

— Юмах ку, патша таврашĕсем хăйсем шухăшласа

кăларнă халап кăна,— аллипе сулчĕ Тимахви мучи.— Порт-Артурта аманнă хыççăн лазаретра выртнă чух пĕр вырăс, студент пулнăскер, ун çинчен пит лайăх ăнлантарса пачĕ пире... Çак патша ратти вырăс çĕрне пĕрре хăй аллине çавăрса илнĕ те виççĕр çул тытса тăрать. Ашшĕ вилет— ывăлĕ патша пулать, ывăлĕ вилсен — унăн ывăлĕ, тепĕр чух арăмĕ ларать престол çине. Патша пулма нимĕн те чармасть вĕсене: сынни ăслă пулать-и, ухмах-и, пьянчук-и, аскăн-и, — пурпĕр патша! Халăх тӳсет... Халĕ те авă, халăх мĕн кăна тӳсмест пулĕ! Пĕрисем вăрçăра пинĕ-пинĕпе пĕтеççĕ, теприсем кунта асапланаççĕ. Тур çырлахтăрах! Тата темĕн курмалла-ха! Пĕрре-пĕрре, халăх ытла та пит тарăхса çитсен, унăн тӳсĕмĕ пĕтетех пулĕ те-ха...

Çак калаçу хыççăн вăхăт нумаях та иртмерĕ, Тимахви мучи пĕррехинче, яланхи пекех, хăйсем тунă япаласене сутма хулана кайрĕ те тĕлĕнсе хытса каймалла хыпар илсе килчĕ:

— Патшана сирпĕтнĕ...

Кун çинчен ялта малтанах питĕ вăрттăн, хăраса калаçрĕç, патшана престол çинчен хăваласа янине никам та ĕненесшĕн пулмарĕ, пурне те ку ытла та пулма пултарайман япала пек туйăнчĕ. Анчах кăшт тăхтасан, юнашар ялти чиркӳре ал лаппи пек сарлака сăмсаллă уксах пуп кун пирки амвон çинченех каласа парсан, пурте ĕненчĕç вара.

Унтан яла салтаксем таврăнма пуçларĕç. Хăшĕсем госпитальсенче выртса тухнă хыççăн, хăшĕсем ахалех, сыввипех. Чылайăшĕ пăшалсемпех килетчĕç. Вĕсем патшапа унăн майринчен темĕн тĕрлĕ кулăшсем каласа паратчĕç, вĕсенчен мăшкăлласа такмаклатчĕç. Тарас уйрăмах пĕр юрра астуса юлчĕ, унăн кашни сыпăкĕ:

Царь Николашка,
Жена его Машка...—

тенипе пуçланатчĕ. Малалла вара намăс сăмахсемпе юрлатчĕç.

Ялта сывлăш та темле тăруках урăхланчĕ, халăх хаваслăрах пулма пуçларĕ, хăюлланчĕ, хурал пӳртĕнчен сын таталма пĕлмерĕ — унта ялан вăрçă хăçан пĕтесси çинчен, чиркӳпе мăнастир, хутор çĕрĕсене валеçесси çинчен, малашне пурин те пĕр тан пуласси çинчен калаçрĕç, пĕрпĕринпе тавлашрĕç, пуринчен ытла вăрçăран аманса килнĕ салтаксем туйисемпе юна-юнах кăшкăрчĕç:

— Слобода! Мĕншĕн юн тăкнă эпир?!

Пĕррехинче Пуян Лявасен кĕрӳшĕ, чикан пек хура та уртмах пек вăрăм Мамун, вĕсене хирĕç калаçкаларĕ те, ăна чут çеç тытса çурса тăкмарĕç.

— Тылри йĕкехӳре!

— Сăвăс! Эсĕ çăвар уçатăн-и тата!

— Çитет халăх юнне кун чухлĕ ĕмсе пуяннипе, малашне хамăрăн пурнăçăн хуçисем эпир хамăр пулатпăр!

— Слобода!..

Анчах вăрçи çаплах пĕтмерĕ, халăх юнĕ çаплах юхрĕ. Уксах пуп турра ĕненекенсене Вăхăтлăх правительство чĕнсе каланине ăнлантарса пачĕ: «Вăрçă тăшмана çĕнтеричченех пулмалла!» Вăлах вăрçăран тарса килекенсене, халăхăн шухăш-кăмăлне пăтратакансене ылханчĕ, вĕсене Христос тĕнне сутакансем, терĕ. Çав кунсенчех килĕсене сывă пуçпах таврăннă салтаксене, староста тĕллеттернипе, икшерĕн те виççерĕн тыта-тыта тухса кайрĕç. Хăрушă хыпарсем çӳреме пуçларĕç: хăшпĕр ялсенче хресченсем чиркӳсемпе хуторсен çĕрĕсене тытса илме тапратнă тет те, пупсемпе хутор хуçисем, часрах салтаксене чĕнсе илсе, чылай çынсене пертерсе пăрахтарнă, нумайăшне саламатсемпе хĕнеттерсе, тĕрмене тыттарса янă, тет. Персе пăрахнисем хушшинче хĕрарăмсемпе ачасем те пулнă, тет, мĕншĕн тесен вĕсем те арçынсемпе пĕрле уя тухнă пулнă...

Çав кунсенче юнашар ял çынни фронтран питĕ тĕлĕнмелле çыру яни çинчен калаçма пуçларĕç: салтаксем вăрçасшăн мар, офицерсене итлемеççĕ, анчах уншăн вĕсене тыта-тыта тачка хулăсемпе хĕнеççĕ, харсăртараххисене персе вĕлереççĕ имĕш.

— Ак сана слобода!— терĕ Тимахви мучи çак хыпарсене илтнĕ хыççăн. — Ак сана тăванлăхпа пĕртанлăх!.. Çук, ачам, кунта темле йăнăш пулнă... Улталанă халăха, чавса тăршшех лартнă! Кун пеккине мар кĕтнĕччĕ эпир... Пурăнса пăхар-ха, тен, улшăнĕ пурнăç. Улшăнмаллах вăл, кун пекех пулма пултараймасть, çук! Халăх хăйĕншĕн тăратех... Самана улшăнмаллах!

Çав улшăнусем кайран чăнах та пулчĕç. Хура кĕркунне, çĕр шăнтса лартса вĕттĕн-вĕттĕн юр çума тытăнсан, пулчĕç вĕсем. Ĕççыннисем влаçа хăйсен аллине илчĕç те, пурнăç пĕтĕмпех урăхланса кайрĕ, чăннипех çĕнĕ самана пуçланчĕ.

Анчах Тарас ашшĕ çав саманана кураймарĕ.

Таврăнмарĕ вăл, пуçĕпех, ĕмĕрлĕхех çухалчĕ вăрçă хирĕнче. Нимĕнле хыпар та килмерĕ ун çинчен...

## 3. ЯЛТИ ХЫПАРСЕМ

Крыльца ҫинче чӗлӗм туртса ларакан Тарас сасартӑк хӑйне такам ятпа чӗннине илтрӗ.

— Тарас! Тарас Петровччӑ! Эсех-и ку? Хӑҫан персе ҫитме ӗлкӗртӗн?!

Ку — Павӑл пичче, хӑйсемпе юнашар пурӑнакан кӳршӗ иккен. Вӑл, хӑй лутра кӑна тата уксах пулин те, карта урлӑ вӑшт ҫеҫ сиксе каҫрӗ те Тарас патнелле хӑвӑрт утса пырса ун аллине хыттӑн чӑмӑртаса силлерӗ, унтан вара каҫса кайсах калаҫма тытӑнчӗ:

— Ай-ай-ай, пӑх-ха епле пулса кайнӑ эсӗ! Чӑн-чӑн арҫын! Ерой! Салтака тухса кайнӑ чух ачаччӗ вӗт-ха, сухал йӗрӗ те ҫукчӗ... Ну, мӗнле, чиперех-и, тӗрӗс-тӗкелех-и, ҫӗмӗрсе ямарӗҫ-и?

— Ҫӗмӗркелерӗҫ те, чӑлаха кӑлараймарӗҫ,— терӗ Тарас. — Тухтӑрсем пулӑшрӗҫ...

— Анчах эпир кунта сана кӗте-кӗте шалт хӑшкӑлтӑмӑр вӗт, Тарас Петровччӑ... Ниепле те пурнӑҫ малалла каймасть, ху куратӑн. Микулӗ сирӗн ачарах-ха, мӑн ӗҫ патнех пыраймасть, аннӳ чирлӗ ав. Кӗҫӗр пире хӑратсах пӑрахрӗ, вилсех каять пуль терӗмӗр, анчах кайран кӑшт хаманланчӗ... Ну, халь эсӗ таврӑнтӑн-ха ӗнтӗ, халь аптрамастӑр!

Калаҫнӑ май вӑл Тараспа юнашар ларчӗ те, чӗлӗмне кӑларса, шултран туранӑ килти табак тунине тултарма пикенчӗ. Ҫавна кура, Тарас галифе кӗсйинчен хӑйӗн табак хутаҫҫине кӑларчӗ.

— Ме, фабричнӑйне турт...

— А-а, ку аван вара,— терӗ Павӑл пичче.—Хапричнӑйне туртса курманни пит нумай пулать. Сӑпаҫҫипах!—Вӑл чӗлӗмне чӗртсе ячӗ те ҫӑра кӑвак тӗтӗме темиҫе хутчен ҫине-ҫине ҫӑтрӗ.— Канхвет пекех пулчӗ ку маншӑн... Тӗлӗнмелле! Табак та кӑлараймипулчӗ пирӗн патшалӑх! Хӑвах курма тивӗҫ, Тарас Петровччӑ, ытла та нимӗн те ҫук вӗт-ха пирӗн патра. Табак вырӑнне ҫӳҫе хуппи типӗтсе туртатпӑр, краҫҫын вырӑнне тахҫан авалхи пек хӑйӑ ҫунтаратпӑр, спичка вырӑнне — вутчуль ӗҫлет. Ытти таварсем пирки каламастӑп та ӗнтӗ. Мӗнле вӑл, хуласенче те ҫавӑн пекех-и?

— Халлӗхе пур ҫӗрте те ҫавӑн пекрех, Павӑл пичче.

— Тата нумайччен пурӑнӑпӑр-ши эпир капла? Кансӗр вӗт питӗ, шутсӑр кансӗр!

— Нумай мар ĕнтĕ халь. Часах пĕтĕм пурнăç юсанма пуçлать, Павăл пичче.

Çав вăхăтра Тарассен тĕлĕпе анаталла иртсе пыракан икĕ ватăрах хресчен вĕсене курчĕç те тĕлĕннипе чарăнса тăчĕç, унтан тӳрех кил хушшине кĕрсе ал тытрĕç.

— Епле çиткелерĕн, шăллăм?— ыйтрĕ пĕри, Тяпук ятлă çӳллĕ хура çын.

— Аванах çиткелерĕм-ха,— терĕ Тарас.

— Аннӳне манмарăн пулать çапах та,— хушса хучĕ тепри, урисем кукăртарах пирки Хăмăт тенĕскер.

— Ма апла калан, Энтри пичче?

— Ара, эс коммунист пуль-ха вĕт?

— Коммунист, тейĕпĕр. Мĕн вара уншăн?

— Мĕнле калас... Эпĕ коммунистсем ашшĕ-амăшне те, арăмĕсене те пăрахаççĕ тенине илтнĕччĕ те...

— Калакансем тем те калĕç вĕсем. Ун пек элексене пирĕн тăшмансем сараççĕ. Сахалтарах итлес пулать вĕсене,— терĕ Тарас ăна хирĕç.

Павăл пичче татăлнă калаçăва каллех хускатса ячĕ.

— Çапах та, хăçан тавульнă пулать-ха вăл тавар тени, Тарас Петровччă? Пире, хресченсене, ытла темех кирлĕ мар, пире краççын, тăвар, кăшт-кашт тимĕр хатĕрĕсем, тĕрлĕ ăпăр-тапăр пулсан çитетчĕ-ха халь. Атту ытла та пĕтсе çитрĕмĕр.

— Вăл çеç мар, Павăл пичче, пурте, пурте пулать,— ĕнентерӳллĕн татса пачĕ Тарас.—Халь халăха кирлĕ таварсене те майĕпе туса кăларма тытăннă ĕнтĕ... Юлашки иквиçĕ çул хушшинче мĕн пулса пынине хăвăрах пĕлетĕрçке ĕнтĕ. Пĕтĕм вăй тăшмансемпе çапăçнă çĕре кайса пычĕ. Шуткă мар вĕт — пирĕн çине пĕр харăсах вунă патшалăх ытла тапăнчĕç, анчах эпир вĕсене пурпĕр хăвалаласа ятăмăр... Пуриншĕн те — рабочисемшĕн те, хресченсемшĕн те питĕ йывăр пулчĕ вăл, эпир те фронтра сахал мар терт-нуша куртăмăр, анчах та — мĕн тăвас тетĕн? Камăн ĕлĕкхине тавăрас килтĕр, камăн каллех уретникпе страшниксен нухайккине çиесси килтĕр? Чăнах та, ĕлĕк хура халăх ĕнси çинче ларса пурăннисем вăл пурнăçа тем пекех тавăрасшăн пулчĕç, анчах та сирпĕнчĕç вĕсем... Мĕн ĕнтĕ малалла? Хамăра тапăннă тăшмансенчен тасалтăмăр, вăрçă пĕтрĕ, халь пурнăçа юсаса ярасси çеç юлчĕ. Çак выçлăх питĕ кансĕрлет те-ха пире, анчах ăна тӳсесси те нумаях юлмарĕ. Хуласенче заводсемпе фабрикăсене йĕркене кĕртеççĕ, эпир тырă ытларах тăвăпăр. Курăр акă, тепрер ик-виç çултан

пурнăç еплелле пулĕ... Унтан малашнехи çинчен каламастап та халь, вăл расна сăмах! Пирĕн пек вăйлă патшалăх та пулмĕ тĕнчере, пирĕн пек лайăх пурăнакансем те пулмĕç. Курăр акă. Ленин çапла каланă...

— Аван пуплетĕн те эс,— терĕ Хăмăт, пуçне хыççа,— анчах темле... пулассăн туйăнмасть вăл мана... Ĕненес килмест.

— Мĕншĕн ĕненес килмест?

— Ку таранччен пĕрмаях япăхса пытăмăр та-ха ара. Мĕн акса тунă тыррине патшалăха парса тăтăмăр, ялта пĕр манерлĕ выльăх юлмарĕ. Юлашкинчен çак выçлăх хавшатса çитерчĕ, халăхăн ним вăйĕ те юлмарĕ.

— Ку тĕрĕс ĕнтĕ, Тарас Петровччă,— хушса хучĕ Павăл пичче.— Чăн сăмахăн суйи çук. Шалт аптраса çитрĕмĕр вĕт. Чылайăшĕ вилчĕç, вилме патне çитнисем те сахал мар...

— Пĕтĕмпех пĕлетĕп,— терĕ Тарас. — Анчах та мĕншĕн ун пек пулнине ăнланас пулать.

Унтан, сисмесĕрех, хăй патне ăнсăртран пырса тухнă çынсене хĕрӳллĕн ăнлантарма тытăнчĕ. Патша вăрçи çĕршыва юхăнтарса яни çинчен, интервенци çинчен, ялти тăшмансем мĕнешкел чăрмантарни, çамрăк Совет республикине хăтармашкăн çĕршыври пур вăя пухма кирли, продразверстка тумалла пулни çинчен, малашне пурнăçа епле майпа юсаса пымалли çинчен каларĕ...

— Çакна ăнланăр эсир: иртнĕ йывăрлăхсем вĕсем пурте вăхăтлăх пулнă, вĕсем иртсе кайрĕç ĕнтĕ. Продразверсткăна пĕр çулталăк çурра яхăн каялла пăрахăçа кăларнă, çĕршывра суту-илӳ пуçланчĕ, заводсемпе фабрикăсем ĕçлеме тапратаççĕ... Пурнăçа çĕнĕрен пурăнма пуçлатпăр!

Вăл калаçнă хушăра кил хушшине пĕрин хыççăн тепри ял çыннисем пухăнса пычĕç. Паллă мар, такам каласа çӳренĕ, анчах та Тарас таврăнни çинчен пурте тенĕ пекех пĕлме ĕлкĕрнĕ. Арçынсем пычĕç ăна курма, хĕрарăмсем, çамрăксем. Măннисем Тараса ал пырса параççĕ те ăçта та пулин вырнаçса лараççĕ, çамрăкраххисем аяккарах тăрса măннисем сăмахланине итлеççĕ.

Пĕр пуçланнă калаçу чылай вăхăта тăсăлчĕ. Ял çыннисем пурин çинчен те пĕлесшĕн пулчĕç: вăрçă мĕнле пĕтнĕ, шуррисене епле хăваласа янă, хуласенче епле пурăнаççĕ, малашне хресченсене епле çăмăллăхсем пулмалла... Тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пачĕ Тарас, картина çине ӳкернĕ пекех кăтартса пачĕ малашне пурнăç епле пулассине. Чухăн-

сене, лашасăррисене — тĕрлĕрен çăмăллăх, кивçенле вăрлăх, машинăсем параççĕ,— ăна валли юлташлăхсем, пулăшу комитечĕсем пулаççĕ. Коопераци урлă пысăк пулăшу илмелле. Питех те тимлĕн, ним шарламасăр итлерĕç ăна пухăннă çынсем, анчах çапах та иккĕленерех ĕненсе пычĕç унăн сăмахĕсене.

Унтан Тарас хăй ыйтса пĕлме пуçларĕ.

— Хăвăр мĕнле пурăнкалатăр кунта эсир? Мĕнле уйрăмах çĕнĕ хыпарсем пур? Эп нимĕн те пĕлместĕп вĕт-ха.

— Мĕн çĕн хыпарĕ пирĕн...— терĕ Павăл пичче, чĕлĕмне кукăртнă пăхăр пралукпа чакаласа. — Выçă ĕнтĕ пурте, мĕн тата урăх... Куратăн, пĕрин те çын сăнĕ çук.

— Вăл паллă-ха,— килĕшрĕ Тарас.— Ну, ытти енчен мĕнле? Пурнăç лăпкă-и халь? Пĕринче ман пата ку тăрăхра бандитсем алхасаççĕ, тесе çырнăччĕ. Халь епле? Илтĕнмест-и?

— Халь те пур çав,— хулăн сасăпа мăкăртатса илчĕ Тяпук.— Çав Кăрмăш пăлхавĕ вăхăтĕнче пăшал-патрон тавраша туянса юлчĕç те, тек ашкăнаççĕ унпа.

— Хытах-и вара?

— Хытах çав. Час-часах илтĕнет: кунта лаша вăрланă, лере ĕне пуснă, кĕлет çаратнă. Хĕрарăмсем вăрман çывăхне те кайма хăраççĕ ĕнтĕ.

— Епле-ха апла? Чаракансем çук-и-мĕн?

— Кам чартăр? Милицисем хăйсем те вăрмантан аяккарах пăрăнса çӳреме тăрăшаççĕ, тенĕ хыпар пур та...

— Бандичĕсен нимрен хăраман утаманĕ пур, тет, Махорка ятлăскер, темле капкăна лексен те хăтăлса тухса тарать, тет...

— Пур халăхпа тăрсан, тытма пулать те-ха ăна, халăхĕ хăрать-çке,— хушса хучĕ Тарасран инçетре те мар тăракан пĕр çамрăк йĕкĕт.

— Хăрăн!— кăшкăрса пăрахрĕ ăна Хăмăт.— Авă, Матякассинчи Совет председателĕ халăха облава тума пухса илсе кайнă та, кайран вара Махорка ăна мĕн туса хунă, пĕлетĕн-и?

— Мĕн?— ыйтрĕ Тарас.

— Тепĕр каçхинех пĕтĕм çемйипе пусса тухнă. Алăкĕ çине хут çырса çапса хăварнă, тет: «Кам пире хирĕç пырать, пурне те çапла тăватпăр». Çавăн хыççăн кам килĕштĕр-ха облавсене çӳреме? Пурин те пурăнас килет мар-и!

— Вĕсен кашни ялтах хăйсен çыннисем пур, тет. Ça-

ванпа тытма йывăр. Кăшт сас-хура пулсанах, кайса пĕлтереççĕ, тет те...

— Агентăсем ĕнтĕ.

— Ара çав...

Çынсем калаçнă хушăрах Тарас шухăшласа ларчĕ... Паллах, вăл бандитсем ним хӳтлĕхсĕр, хĕçпăшалсăр çынсене чылаях сиенлеме, вĕсене сăтăр тума пултараççĕ. Пухăннă ĕнтĕ тĕрлĕрен дезертир пулнисем, уголовниксем, тахçан офицер пекки пулнисем, пĕр сăмахпа каласан, пурнăç картинчен тухса ӳкнĕ этемсем. Ялсенче вĕсене кулак таврашĕсем пулăшаççĕ, Совета хирĕç пăлхав-мĕн пулас пулсан, кирлĕ пулĕç, тесе шутлаççĕ вĕсене...

Çавăнтах киле таврăннă чух çул çинче пулса иртнĕ ĕçе аса илчĕ. Хусана çитесси пĕр аллă-утмăл çухрăм юлсан, пуйăс темле пĕчĕк полустанокра чарăнса тăчĕ. Çĕрлеччĕ ун чух, пăч-тĕттĕмччĕ. Сасартăк вакунра шăри-шари, шăй-шай! кăшкăрни илтĕнчĕ.

— Хура-ах! Çаратаççĕ!

— Çăлăр, япаласене туртса илеççĕ!— çухăрса ячĕç хĕрарăмсем. Тĕттĕм вакунра тĕпĕртетме, кĕрешме тапратрĕç. Тахăшĕ ӳкрĕ, тахăшĕ ыратнипе йынăшса ячĕ.

Вакуна темиçе бандит сиксе кĕрсе çаратма тапратнă иккен...

Ним юлмичченех çаратса тухатчĕç пулĕ çынсене, юрать вăл вакунра Тарас пек киле таврăнакан хĕрлĕ армеецсем чылайăнччĕ. Вĕсем сиксе тăрсанах бандитсем каялла туха-туха тарчĕç. Шел, вакунра ахаль халăх нумайăйипе нихăшне те тытма пулмарĕ. Тахăшĕ спичка çутса янă вăхăтра Тарас вĕсенчен пĕрине çеç курса юлчĕ: сарă кăтра çӳçлĕ, тăрăхларах питлĕ, пысăк кăвак куçлă, çамки çинче, сулахай енче, пысăк çĕвĕк пур. Çав тери тискеррĕн пăхса илчĕ вăл хăйне çанăран ярса тытнă Тарас çине, унтан ăна пуçĕпе янахĕнчен çапрĕ те, вĕçерĕнсе, çĕре ӳкнĕ çынсем çиййĕпе чупса тухса кайрĕ...

Çавăн пеккисем çӳреççĕ ĕнтĕ кунта та! Пĕтерес пулать вĕсене, епле пулсан та часрах тĕп тăвас пулать!

— Тем пек вăйлă ют патшалăх çарĕсене çĕннĕскер, килти вăрă-хурахсенченех хăраса тăмăпăр-çке,— терĕ вăл юлашкинчен, халăх майĕпе саланма пуçласан.— Еçлеме, хамăр пурнăçа юсама кансĕрлеттермĕпĕр!

...Каçалапа, амăшне çитеркелесе чей ĕçтернĕ хыççăн (çинĕ пирки пулас, вăл паян кăштах самайланчĕ), Тарас унтан-кунтан пĕр вунă пăта тупса килкарти алăкне тӳр-

лётме тухрĕ. Вăл ĕçленĕ çĕре икĕ çамрăк йĕкĕт — Микишпа Исай пырса тăчĕç. Вĕсем иккĕшĕ те пĕр çулсенче, Тарас Хĕрлĕ Çара кайнă чухне вунтăват-вунпилĕк çулхи ачасем çеçчĕ, анчах ку хушăра нумай ÿснĕ, тĕрекленнĕ, мăн çын сăнĕ кĕнĕ. Ют çĕрте курсан, паллас та çук.

— Вăй патăр...

— Спаççипă.

— Тÿрлетес терĕн-и?

— Ара, ытла та юхăнса выртать-çке...

Çамрăксем Тараса ал пачĕç те, ун çывăхнерех пырса, курăк çине ларчĕç.

— Эпир сан патна пĕр ĕç пирки ятарласа килтĕмĕр. Чăрмантарнăшăн каçар та-ха эс пире...

— Мĕн чăрмавĕ? Эсир килни пит аван-ха вăл! Ман хамăн та каçхине кам патне те пулин калаçма кайса ларас шут пурччĕ-ха...

— Акă мĕн, Тарас,— терĕ Микиш ятлă çамрăкĕ, кăшт тăхтасан.— Эп паян вулăсра пултăм. Манпа волкомри Арасланов, леш Треньккасси ачи, калаçрĕ. Тин çеç хуларан вĕренсе килнĕ вăл. Ялта пурнăç мĕнле пыни, çамрăксем мĕн туни çинчен ыйтса пĕлчĕ. РКСМ* ячейки тумашкăн çамрăксене пухмалла, ытти ялсенче РКСМра таракан нумай, сирĕн кăна çук, терĕ... Çĕнĕ пурнăç тунă çĕрте комсомол пысăк вăй пулмалла. çавăнпа та чухăнсемпе вăтамсен ывăлĕ-хĕрĕсене комсомола пĕрлештерсе пыма тытăнмалла, терĕ. Паян эс килни çинчен пĕлтĕм те, малтан санпа сăмахласа пăхас, терĕм... Хамăр эпир пит чухласах каймастпăр-çке-ха, çав касать. Мĕнле шутлатăн эс, май килĕ-ши пирĕн?

Тарас алăка тăратса лартрĕ те кĕпи-йĕмне çыпăçнă тусан-турпаса силлесе тасатрĕ. Унтан шлемне тÿрлетсе тăхăнчĕ те:

— Питĕ кирлĕ ĕç тапрататăр, юлташсем,— терĕ.—Кун çинчен тĕплĕн калаçас пулать. Айтăр-ха, кĕрер...

Пÿртре вара вăл Микишпа Исая комсомол мĕн иккенне, вăл мĕн тума кирли, унăн мĕн-мĕн тумалли, уйрăммăнах ялта мĕн ĕçлемелли çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе ăнлантарса пачĕ. Микишпа Исай ăна çав тери тимлĕн итлесе ларчĕç.

— Çамрăксене пухма пулать-и сирĕн шутпа?— ыйтрĕ Тарас юлашкинчен.— Малтанлăха пĕр çич-сакăр çын пулсан та çитет пире.

---

*Российский Коммунистический Союз Молодежи.

— Ун чухлĕ тупăнать пулĕ,— терĕ Исай,— вăл нумай мар...

— Тата çакна астăвас пулать, юлташсем,— асăрхаттарчĕ Тарас.— Пули-пулми, унталла-кунталла сулăнакансене пухма юрамасть. Пирĕн халь чăн малтан чухăн ачисене пĕрлештерме тăрăшас пулать. Шанчăклă çынсем, хамăр çынсем, пуянсен танатине лекменнисем пулччăр... Эпир ача вăййи мар, çирĕп ушкăн тăватпăр, унăн пĕтĕм ял пурнăçне ертсе пымалла пулать.

— Пире ертсе пыраканĕ эс пулатăн ĕнтĕ...

— Унта курăнĕ, туман тиха пилĕкне малтанах хуçмаççĕ. Малтан ячейкине тăвас пулать. Ну, кам-кам пур-ха сирĕн шутпа?

Микиш шутлама тытăнчĕ:

— Калăпăр, эпĕ — пĕрре, Исай — иккĕ... Унтан Арçукпа Шăнкăрч кĕме пултараççĕ...

— Леш енчи Риван,— хушса хучĕ Исай.

— Тĕрĕс, Риван...

— Антун...

— Çук, унпа ĕç тухас çук, ытла хăравçă...

— Малтанлăха çитет те,— чарчĕ Тарас.— Тăруках нумая хапсăнмăпăр. Кайран хăйсемех килме пуçлĕç. Пĕрик хĕрача тупăнсан, пит аван пулмалла та ĕнтĕ...

Микишпа Исай пĕрне-пĕри куçран пăхса илчĕç. Микиш пуçне пăркаларĕ.

— Хĕрсем тупăнмаççĕ пуль... Хăюсăр халăх. Сăмахюмах тухасран хăрĕç, тем...

— Халь тăруках май килмесен те, малашне хутшăнтарасах пулать вĕсене. Пĕлетĕр-и, Ленин хĕрарăмсем çинчен мĕн каланă? Кашни кухаркăн патшалăха тытса тăма пĕлмелле, тенĕ. Халăх хушшинчи ĕçе хутшăнтарса пымасан, ăçта вĕренччĕр вĕсем?

— Пĕрре пур та ĕнтĕ...— сас пачĕ Исай.

— Кам?

— Учительница, Катя.

— Э-э,—ал сулчĕ Микиш.— Тем тумалла пуль вăл пуп тавращĕпе! Халăх хушшине тухса та курмасть вăл, кунĕ-кунĕпе пахчара кĕнеке вуласа выртать, мĕн усси пултăр унтан? Кирлĕ мар...

— Чим-ха, чим,— терĕ Тарас, шĕвĕр пӳрнине çĕклесе.— Астăватăп эп ăна... Пуп хĕрĕ мар вĕт вăл, унăн тарçин, няньկин ачи! Чăн-чăн трудовой класс! Пуп хĕрĕсемпе пĕрле ӳснипе кăна вĕренме ерсе кайнă, гимназие

лекнĕ. Тепĕр енчен, вĕреннĕ çынсем пире малашне питĕ кирлĕ пулаççĕ-ха. Хăçан пухăнса калаçăпăр? Еçе тытăнас пулсан, вăраха ярас марччĕ...

— Ыранах пухма пулать. Каçхине.

— Ăçта?

— Хуть те ăçта. Шкулта та юрать.

— Систерĕр, эппин. Кусемпе калаçса татăлсан, кайран пур çамрăксене те пухăпăр.

Сăмах татăлчĕ. Микишпа Исай тухса кайма ура çине тăчĕç.

— Чимĕр-ха, ан васкăр,— каллех ларма сĕнсе пуçĕпе сак еннелле сулчĕ Тарас,— манăн сирĕнтен ыйтса пĕлмелли пур-ха. Микульрен ыйткаларăм та, йĕркине тупаймарăм. Советра кам-кам халь?

— Советра пит чаплă халăх-ха унта,— терĕ Микиш.— Председателĕ — Каçăр Куçма, секретарĕ — Иливан. Кирлĕ чух нихçан та тупма çук вара вĕсене. Таçта çӳреççĕ...

Тарас тĕлĕнсе пуçне пăркаласа илчĕ.

— Ну, тупнă та вара халăх! Мĕнле пуçпа, кам суйланă вара вĕсене? Каçăр Куçма ĕлĕк уретник пулнă мар-и вăл?

— Илтмен...

— А Иливанĕ тахçантанпах уесĕпе паллă жулик. Кам кăна пулман пуль вăл, судпа-темпе муталашса мĕн чухлĕ çынна макăртнă пуль! Революци хыççăнах ялта Совета хирĕç кăшкăрашаканни самăй çавăччĕ вĕт, çавăншăн ăна пĕр хушă тĕрмере те лартрĕç, анчах халь — пăх та кур!— хăй влаç пулса ларнă. Ай-ай... Ăнран тухса каймалли ĕçсем пулса иртеççĕ иккен сирĕн кунта!

— Мĕн тăвас тетĕн, пĕлекен çынсем çук та, пуç тăрне хăпарса лараççĕ çав...

Тарас каллĕ-маллĕ уткалама тытăнчĕ.

— Кун пек «власть» пулсан, ял пурнăçĕ нихçан та малалла каяс çук. Мĕн, вĕсем халăхшăн тăрăшакан çынсем-и? Вĕсемшĕн пулсан, хуть те паян пурте вилсе пĕтчĕр.

— Ку тĕрĕс вара,— терĕ Микиш.— Акă, ытти ялсенче выççисем валли тунă столовăйсем чиперех ĕçлеççĕ, йĕркеллех çитереççĕ, пирĕн пур — кашни кун харкашу. Чип-чипер çăнăхранах тем шуйттанла çăкăр туса параççĕ. Апачĕ те ним майĕ çук — темскер, măшкăлтăк шывĕ...

— Кам асли унта?

— Мамун, Лявасен кĕрӳшĕ...

Тарас лач! сурчĕ.

— Хысна паракан апата та пуянсемсĕр пĕçерсе çиеймеççĕ, эппин! Эх, шереметсем!

— Халăха апат çитерме унăн пӳрчĕ аслă, терĕç пулас пухура...

— Вĕсен пӳрчĕ аслă та — пырĕ те аслă çав! Мăннăн çăтаççĕ! Столовăйĕ уçăлнăран вара ăна пĕрре те пулин тĕрĕслесе пăхнă-ши?

— Илтмен ăна. Ахаль халăх питĕ кăмăлсăр...

Тарас сĕтел пуçне пырса ларчĕ.

— Итлĕр, юлташсем. Пирĕн, чăнах та, часрах пĕр çĕрелле чăмăртанас пулать. Унсăрăн пурнăçа юсаймастпăр эпир. Каçăр Куçмасемпе, Иливансемпе нумаях малалла шăваймăпăр. Тем тесен те, вĕсем пирĕн çынсем мар, пире пулăшас çук, чăрмантарма çеç пултараççĕ.

— Эпир хамăр та çапла шутлатпăр çав,— терĕ Микиш.— Вĕсем халăха ĕлĕкхи пекех хăйсен аллинче пăчăртаса усрасси çинчен çеç ĕмĕтленеççĕ...

— Тĕрĕс калатăн. Çавăнпаваскас пулать те ĕнтĕ пирĕн, Каçăр Куçмасене хăйсен пуçĕсене ытлашши каçăртма парас пулмасть!

Микишпа Исай тухса кайрĕç.

«Ку каччăсемпе ĕç тума пулать, тĕрĕс çул кăтартса памалла çеç вĕсене,— шухăшларĕ Тарас. — Пуянсем илĕртнĕ хыççăн каяс çук кусем, тутлине йӳççинчен уйăрма пĕлеççĕ курăнать...»

Ял пурнăçне тĕпренех улăштарма, çĕнетме, чухăнсене ĕлĕкхи пек выçлăн-тутлăн мар, этем шутлах пурăнакан тума питĕ нумай ĕçлемеллине, кĕрешмеллине, çав кĕрешӳ çăмăл пулас çуккине Тарас халĕ питĕ лайăх курса тăчĕ. Анчах ку ăна пĕртте шиклентермерĕ. Çав тери пысăк нушара пурăнса, пуянсен мăшкăлне тӳссе ӳснĕ, нумай çапăçусенче пулса вилĕме хирĕç ним хăрамасăр пынă, вутçулăмра пиçнĕ, вăрçăрах партине кĕнĕ çын, вăл халĕ мĕншĕн кĕрешмеллине, кама хӳтĕлесе кама хирĕç пымаллине лайăх чухланă. Умра тăракан ĕçсене тума унăн ăс та, вăй та çителĕклĕ пулнă. Çав ĕçсене пĕр-пĕччен тума çуккине те пĕлнĕ вăл: ăна валли чухăнсене хăйсене çĕклемелле, вăтам хресченсемпе таччăн çыхăнса тăмалла, вĕсене кулаксем майлă çаврăнса кайма памалла мар. Кун çинчен Ленин мĕн каланине киле тухса килес умĕн вĕсене полк комиссарĕ питĕ лайăх ăнлантарса панăччĕ...

Кĕрешĕве Тарас çамрăклах хутшăннă.

Октябрьти революци пулни, Питĕрте Вăхăтлăх правительствăна арестленĕ хыççăн çĕршыври пĕтĕм власть Советсен аллине куçни çинчен яла хыпар çитсенех, Тарас хăйне майлă агитатор пулса тăчĕ. Ăна кашни каçах хурал пӳртĕнче хаçатсем вулаттараççĕ, вуланă чух çынсем ăнланайманнине вăл, хăй пĕлнĕ таран, ăнлантарса парать.

Халăха ытла та хĕпĕртеттерекен хыпарсем пĕлтерчĕ Тарас çав хаçатсене вуласа: вăрçа халех пĕтермелле, мир тумалла, заводсене — рабочисен аллине, пĕтĕм çĕре — хресченсене памалла, хĕрарăмсем арçынсемпе пĕр тан пулмалла...

Çĕр хут та каласа пачĕ пуль çаксем çинчен Тарас ял çыннисене!

1918 çулта, çур тыррисем вырнă вăхăтра, Тарасăн куккăшĕ Сар Мирун киле таврăнчĕ. Вăрçă пуçлансанах вăл Тарас ашшĕпе пĕрле тухса кайнăччĕ те унтанпа киле пĕрре те килсе курманччĕ. Малтанхи каçах Тарассем патне пычĕ те питĕ нумай каласа кăтартрĕ хăй çинчен. Вăл Питĕрти Хĕллехи двореца штурмланă çĕрте пулнă иккен. Тепĕр виç уйăхран, нимĕçсен кайзерĕ * Вильгельм çарĕсем Питĕр еннелле çĕмĕрсе пыма тапратсан, вăл Нарва хули патĕнчи хăватлă çапăçура пулнă. Çав çапăçура хĕрлĕ гвардеецсем, хăйсен хĕçпăшал çителĕксĕр пулнă пулин те, нимĕç полкĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкнă, анчах çавăнтах Тарас куккăшĕ темиçе çĕртен — хулпуççирен, ураран, хулран аманнă. Вара вăл нумай хушă госпитальте выртнă. Халĕ те тӳрленсех çитейменччĕ-ха, сылтăм ури çине çирĕппĕн пусайманнипе шĕвĕр вĕçлĕ тимĕр туяя çине ыткăнарах таянса çӳретчĕ.

Вăл коммунист пулнă. Вăрçăран таврăнакан ытти хăшпĕр çынсем пек эрех те ĕçместчĕ, нихçан та ытлашши вĕриленместчĕ, калаçасса та питĕ йĕркеллĕ калаçатчĕ, сăпайлă, лăпкă. Унăн кашни сăмахĕ вырăнлăччĕ.

Сар Мирун таврăннă хыççăн темиçе кунтанах яла сăран пиншак тăхăннă икĕ çын пычĕç те — пĕри вулăсран, тепри хуларанах терĕç — ялти пур чухăнсене шкула пуçтарчĕç. Тарас та пулчĕ çав пухура. Хуларан килни питĕ хаяррăн, хĕрӳллĕн калаçрĕ унта.

— Республикăна унтан та кунтан тăшмансем тапăнаççĕ, тĕнчери мул хуçисемпе хамăр çĕршыври тăшмансем

*Нимĕçсен императорне (патшине) кайзер тенĕ.

пире каллех пыртан ярса тытасшăн, пăвса пăрахасшăн, пире каллех, ĕлĕкхи пекех, чурасем, чĕлхесĕр выльăхсем туса, пирĕн юнпа, пирĕн тарпа пуйса, ыр курса пурăнасшăн... Çавăнпа та пирĕн халĕ питĕ çирĕп чăмăртанас, хамăрăн пĕтĕм вăя пĕр çĕре пухас пулать. Хуласенче рабочисем выçă ĕçлеççĕ, кунне пĕр воçмушкă çăкăр илеççĕ, пирĕн Хĕрлĕ Çар та выçлă-тутлă çапăçать. Анчах ялсенчи пуянсем, пирĕн килти тăшмансем, тырă памаççĕ, ăна пытараççĕ, çĕртеççĕ, хăшĕсем çунтарса яма та хатĕр. Чарас пулать вĕсене пирĕн, çăварлăхлас пулать! Кулаксен пĕтĕм ытлашши тыррине, укçине рабочисем валли, Хĕрлĕ Çар валли ямалла, чухăнсен вăйĕпе тунă ытлашши пурлăхне чухăнсенех валеçсе памалла...

— Тĕрĕс!

— Тахçанах çапла тумалла!

— Лайăх саккун ку!.. Тĕрĕс саккун!..— кăшкăрчĕç пухăва пынисем.

Тахçанчченех кĕрлерĕ пуху. Юлашкинчен чухăнсен комитетне суйларĕç. Унта Сар Мируна, вăрçăран урасăр таврăннă Платтуна, Çĕтĕк Яккăва, ватă тимĕрçĕ Хура Тимахвие, хĕрарăмсенчен пӳрт тулли вĕт-шак ачасемпе тертленсе пурăнакан салтак арăмĕ Кулинене, вĕсемсĕр пуçне тата виç-тăватă çынна кĕртрĕç. Тарассен куккăшне, Сар Мируна, председатель тума килĕшрĕç.

Пуху автансем иккĕмĕш хут авăтсан тин пĕтнĕ, анчах комитета суйланисене хуларан килнĕ çын пуху хыççăн та киле яман-ха, ĕçе мĕнрен тытăнасси, малашне мĕн тăвасси çинчен калаçса татăлма хăварнă. Ирччене́х ларнă вара унта вĕсем: пуян таврашĕсенчен патшалăх валли камран миçе пăт тырă тытса илмеллине, мĕн чухлĕ укçа тӳлеттермеллине, хăшинне мĕнле ытлашши выльăхĕсене, çуртйĕрĕсене чухăнсене илсе памаллине палăртнă.

Кун çинчен Тарас тепĕр кунне пĕлчĕ. Акă мĕнле пулчĕ вăл. Куккăшĕ вĕсем патне ирхине ирех пычĕ те:

— Тарас, манăн сана хамăн писарь тăвас шухăш пур, килĕшетĕн-и?—терĕ.

— Мĕнле писарь?— тĕлĕнчĕ Тарас.

— Секретарь ара. Чухăнсен комитечĕн секретарĕ, пурне те çырса пыраканни. Шалу пулать сана уншăн, уйăхне пĕр пăт çăнăх паратпăр.

— Темле-çке..-— иккĕленчĕ Тарас.

— Темле мар, çаплах!— çилленнĕ пек пулсах туйипе урайне шаккаса илчĕ куккăшĕ.— Ан кутăнланса тăр!

Пĕлетĕн-и, комитетра пирĕн секретарь пулма пултаракан пĕр çын та çук. Анчах çырмалли нумай пулать. Кам патне кайса тархаслас-ха манăн? Эс — чухăн ачи, хутла лайăх пĕлетĕн. Акă, çак ĕнерхи протокола халех тепĕр хут çине куçарса çырмалла. Лар та — çыр!

Çапла, кĕтмен-туман çĕртенех, Тарас ялти комбед секретарĕ пулса тăчĕ. Вара малтанхи протокола çырнă чухнех пуянсене малашне еплерех хĕссе лартасси çинчен пĕлчĕ...

Ой, мĕн тери вĕри çанталăк пуçланса кайрĕ ялта комбед туса хунă хыççăн! Вăрçăринчен те кая мар çав!

Таçтан-çке, пуянсем хăйсемпе мĕн пулассине пĕтĕмпех пĕлнĕ. Чухăнсен пуххи пулнă каçах вĕсем хăйсен тырри-пуллине, хаклăрах япалисене, укçа-тенкине питĕ тĕплĕн, никам шыраса тупмалла мар пытарма, май килнĕ таран тĕрлĕ çĕрелле ăсатма тытăннă.

— Пĕр пĕрчĕ тырă та, пĕр пус укçа та памастпăр кĕлмĕçсене!— тенĕ вĕсем...

Кулăшла япаласем те пулса иртрĕç. Кăркка Иванĕ тенĕ арман хуçи, пурлăхне çăлас тесе, тепĕр куннех хăйĕн тăмсайрах хĕрне мунча пек пӳртре пĕр-пĕччен пурăнакан ватă урçана, Чакак Муççине качча пама тытăннă. Комбеда пырса: «Кĕрĕве пахчари пӳрте, кĕлете, тимĕр витнĕ шур лаçça, çӳрен лашапа ула ĕнене, виçĕ сурăха, ик сыснана халалласа паратăп», тесе евит тунă.

Ахăлтатсах кулчĕç ял çыннисем:

— Юмахри пекех, пĕр кун хушшинчех пуйса кайрĕ пирĕн Чакак! Акă ăçта вăл телей!..

Пуян Лявасен кĕрӳшĕ Мамун та пĕр лашипе ĕнине хăйне хирĕç пурăнакан Макар арăмĕ патне çавăтса каçнă:

— Совет влаçĕ чухăнсене пулăшма хушать пулсан, хам ирĕкпе, ыр кăмăлпа паратăп!

Ытти хăшпĕр пуянсем те çавăн пек чылай тукаланă, хăйсен пурлăхне, выльăх-чĕрлĕхне чухăнсене «валеçсе» пама тытăннă. Паллах, çакă вăл чееленни кăна пулнă. Кайран, комбедсен вăхăчĕ иртсен, çав «ырă кăмăлпа» панă пурлăха пĕтĕмпех каялла илнĕ, выльăхсене е япаласене тавăрса памасăр хирĕçсе тăнисенчен хăшпĕрисене хĕнесех илсе тухса кайнă. Чакак Муççи те каллех ялти чи мĕскĕн урçа пулса юлнă: Кăркка Иванĕ хăйĕн тăрри шăтăк хĕрне те, лашипе ĕнине те ун патĕнчен çавăтса тухса кайнă, пуян хуçа çурт-йĕрĕсем те Чакакшăн телейлĕ тĕлĕк кăна пулса юлнă...

Анчах çакăн пек хăтланни те пулăшаймарĕ пуянсене. Чухăнсен комитечĕ вĕсене хĕрхенсе тăмарĕ, пытарма ĕлкĕрнĕ тыррисене те, выльăхĕсене те, тĕрлĕ хаклă япаласене те нумай тупса илсе тухрĕ, укçан та сахал мар тӳлеттерчĕ. Тарăхса çурăлса каяс патнех çитрĕç пуянсем, комбед членĕсем хăйсем патне пырса кĕрсенех вĕсене çурса тăкма хатĕр пулчĕç, анчах нимех те тăваймарĕç. Пĕр Кăркка Иванĕн аслă ывăлĕ çеç, комбед председателĕ Сар Мирун вĕсен пахчари улмуççисем айне алтса пытарнă тыррине тупсан, ун çинелле пуртăпа ыткăнчĕ. Кассах пăрахатчĕ пулĕ, юрать-ха, Тарас çакна вăхăтра асăрхарĕ, унăн пуртă тытнă аллине каялла пăрса лартрĕ. Кăркка ывăлне вара çав кунах вулăса ăсатрĕç...

Паллах ĕнтĕ, ялта яланах пуçпулса, пурне те хăратса пурăнма хăнăхнă кулаксем хăйсене çакăн пек «силленĕшĕн» ниепле те каçарма пултарайман. Вĕсем чухăнсен комитетĕнче ĕçлекенсене кăна мар, хăйсене хирĕç пыракан ахаль çынсене те пур майсемпе те тавăрма тăрăшнă.

Тем те хăтланчĕç çав вĕсем!..

Кулаксен тыррине пирвайхи хут пухса хулана тиесе ярсан икĕ-виç кунтанах, тĕттĕм пулсан, Тарас куккăшĕн çемйи каçхи апат çисе ларнă чух тахăшĕ чӳречерен пăшалпа пенĕ. Бандитсем комбед председательне тĕлленĕ ĕнтĕ, анчах перекеннин алли чĕтренĕ курăнать, пули Мируна хăйне мар, унпа юнашар лараканултă çулхи ывăлне пырса тивнĕ. Ача сак çинчен урайне йăванса кайнă, ашшĕпе амăшĕ ăна вилчĕ пулĕ, тенĕ, анчах вăл вилмен иккен — пуля сулахай хулпуççине çеç шăтарса кайнă. Суранне çавăнтах çыхса лартса, çав каçах хулари больницăна илсе кайса çеç çăлкаласа хăварнă ачана.

Темиçе кунтанах комитетăн тепĕр членне, Çĕтĕк Яккăва тĕттĕм урамра хупăрласа илсе хĕнесе тăкнă. Уйăх ытла чирлесе выртрĕ вăл.

Шăп çав вăхăтра яла Питĕрти рабочисем пырса çитрĕç, каллех кашни каç тенĕ пекех пухусем пулчĕç. Çав пухусенче кулаксен сассисем питех илтĕнеймерĕç вара— Совет йĕркисене хирĕç уççăнах тăма шикленчĕç пулмалла...

Анчах каярахпа, çĕршывра граждан вăрçи пуçланса кайсан, унтан та кунтан тăшмансем тапăнни çинчен хыпарсем киле пуçласан, вĕсем каллех хăюлланма тытăнчĕç.

...1919 çулхи çуркунне ялти ытти çамрăксемпе пĕрле Тарас та Хĕрлĕ Çара тухса кайрĕ. Малтанах вăл Колчак çарĕсемпе çапăçрĕ, вĕсене Çĕпĕрелле хăваланă çĕрте пулчĕ,

унта аманса пĕр хушă госпитальте выртнă хыççăн Деникинпа Врангеле хирĕç çапăçма тиврĕ ăна, Перекопа илнĕ чух Сиваш шывĕнче путассинчен аран хăтăлса юлчĕ. Унтан вăл Инçетри Хĕвелтухăçне, Японии интервенчĕсене хирĕç çапăçнă çĕре лекрĕ. Чи юлашки çапăçусенчен пĕринче хытă аманнипе çур çул ытла госпитальте выртрĕ. Вăрçă пĕтсен тин киле çитрĕ вăл...

Халĕ ĕнтĕ пĕтĕм пурнăça йĕркене кĕртме тытăнмалла. Авланас та пулать пулĕ, çемьеллĕ пулма та вăхăт ĕнтĕ. Амăшĕн сывлăхĕ те начар, нумаях ĕçлеме пултараймĕ, хуçалăха тытса пыраяс çук...

Варука курасчĕ... Мĕнле-ши вăл? Манман-ши?

...Тарас вĕсен тĕлнелле кайса курма шут турĕ. Шăп çак вăхăтра урамран Микуль хашкаса чупса кĕчĕ.

— Пичче, сана валли çыру илсе килтĕм эпĕ!

— Мĕнле çыру тата?

— Курăн унта... Акă...

Микуль Тараса лутăрканса пĕтнĕ хут татки тыттарчĕ. Пӳртре самаях тĕттĕмленнĕ пирки ку тĕлĕнмелле çырăва вулама Тарас чӳрече патнерех пычĕ. Хут çине чалăштĕлĕш саспаллисемпе темиçе сăмах çеç çырнă иккен:

«Ман сана каламаллисем нумай. Кĕçĕр пирĕн тĕле пыр. Варук».

Тарас çемçен кулса илчĕ те алăк патĕнче ура салтса ларакан Микуль еннелле çаврăнчĕ:

— Кам пачĕ сана ку хута?

— Хăех... Эс пĕлместĕн пуль-ха, пичче, эс вăрçăра пулнă чухне вăл манран пĕрмаях ыйтатчĕ: пиччӳ çыру ямарĕ-и, мĕн çырать, хăçан килет, тетчĕ. Вăл сана качча тухасшăн пулмалла.

— Ытлашши калаçатăн!— чарчĕ ăна Тарас.— Ав, анне валли шыв вĕрет те çитер.

— Мĕн пулать вара апла каланăшăн?— кăмăлсăр пулчĕ Микуль.— Эп анчах мар, пурте çапла калаççĕ. Пĕрре анне те каларĕ...

— Ну, юрĕ, юрĕ. Ту мĕн хушнине.

Тарас çиййĕнчи тумне тӳрлетсе пиçиххине хытăрах çыхрĕ те килĕнчен тухрĕ.

## 4. КАШКĂРСЕМ

Энтриялъне сарлака та тарăн çырма икке уйăрать. Çав çырман сулахай енче, ял вĕçнерех, икĕ хутлă пысăк

çурт сарăлса ларать. Аялти хутне кирпĕчрен тунă, çӳлтине — çын ытамне кĕмен шултра хыр пĕренесенчен, хӳмесене варринчен çурнă юман пĕренесемпе тытнă, вĕсем çӳллĕ, йăпăр-япăрах никам та сиксе каçас çук. Иртенçӳренсем яланах тĕлĕнсе, темшĕн кăшт харанă пекрех пăхса иртеççĕ çак «хула пек» кил-çурт çине.

— Лява таврашĕсен ку...

Ĕмĕртен пуян пурăннă çак килĕн хуçисем, уесĕпех пĕлсе тăнă вĕсене. Ляви хăй темиçе арман тытнă, чăпта çаптарнă, çăмарта, панулми, çăм, çĕтĕк-çатăк — темĕн те пĕр пухнă, килĕнче унăн пысăк лавкка пулнă. Ватă çынсем каланă тăрăх, вăл темле сасартăк, тĕлĕнмелле хăвăрт пуйнă: çамрăк чухне ялтан тухса кайса пĕр çулталăк çурă таçта аякра çӳренĕ те, киле таврăнсанах лавкка уçнă. Çавăнпа та ун пирки халăх хушшинче тĕрлĕ сăмахсем çӳренĕ. Пĕрисем çак Лява мăн çул çинчи хурахсемпе пĕрле почтăна çаратса пуйнă, тенĕ, теприсем вăл тахăш хулара пĕр ватă купца патĕнче тарçăра пурăнса унăн çамрăк майрипе явăçса кайнă та, лешĕ ăна укçа нумай тыттарса янă, тенĕ. Те тĕрĕс пулнă çав сăмахсем, те суя — ăна никам та пĕлмен, анчах та Лява кĕске вăхăтрах лавкка уçмалăх укçа ĕçлесе илме пултарайманни пуриншĕн те паллă пулнă.

Майсăр хытă та чеескер, Лява кунран-кун пуйса пынă. Ытларах та ытларах пуйма тăрăшса, вăл мĕн тĕрлĕ ултавлă ĕçсем туни, çынсене мĕн чухлĕ тарăхтарни, макăртни çинчен халăх хушшинче çав тери хăрушă сăмахсем çӳренĕ.

— Çын мар çав, чăн кашкăр, тискер кайăк!..

Ляван виçĕ ывăл пулнă: асли — Çемен, вăталăххĕ — Уртем, кĕçĕнни — Матви. Вĕсем пурте упа çурисем пекех тĕреклĕ ӳснĕ, кăмăлĕсемпе вара ашшĕ евĕрлех, кашкăрласкерсем пулнă. Ашшĕ хăех вĕрентсе пынă ĕнтĕ вĕсене çавăн пек пулма.

Ывăлĕсене Лява çине тăрсах хутла вĕрентнĕ, мĕншĕн тесен хăй вулама та, çырма та пĕлменни пурнăçра ăна питĕ тарăхтарнă, хутла пĕлменнипе пĕрре кăна мар улталанса шар курнă вăл. Ачисем кăшт ураланма пуçласанах, вĕсене оуту-илӳ ĕçне хăнăхтарма тытăннă. Ӳссе çитсен вара вĕсем Атăл тăрăх тăвалла — Чулхулапа Рыбинска çити, анаталла— Аçтăрхана çити, чугун çулпа Мускавпа Питĕр таран çӳреме пуçланă. Темиçе пар лаша, карта тулли выльăх, кайăк-кĕшĕк усранă Лява, виç-тăват тарçă

ĕçлесе пуранна ун патĕнче. Энтриялъ çыннисем çеç мар, таврари ялсем те ăна курсан инçетренех пуç тайса иртнĕ. Уесри пуçлăхсем уншăн çывăх тăвансем пекех пулнă, тем тусан та, Лявана хирĕç пыман, ун патĕнче, кирек те хăçан пырсан та, çăвартан каялла тухиччĕнех ĕçсе çинĕ...

Çав тери пуйса кайсан, Лява «кĕçех чăваш патши пулатăп», теме пуçланă, дворян ятне сутăн илме тăрăшнă. Государство Думине лекесси çинчен ĕмĕтленсе пурăннă. Анчах ĕмĕчĕ çитеймен унăн: тĕнче вăрçи тухиччен шăп пĕр çулталăк малтан вилсе кайнă. Питĕ хăвăрт пуçтарăннă вăл: каçхине тасти ярмаркăран таврăннă та ирччен хытса та выртнă. Ялти халап тăрăх, Лява çав ярмаркăра ватă пуçĕпех темле вырăс улшуçĕсен ăйăрне вăрланă пулнă. Лешсем, çакна сиссе, ăна хăваласа çитнĕ, питĕ хытă хĕненĕ, юлашкинчен, ăнран кайнăскере, хыçалтан вăрăм хулăпа йăкăрланă та хăйĕн тăрантасĕ çине пăрахса янă.

Ăна никам та хĕрхенмен, мĕншĕн тесен хăй пурнăçĕнче вăл кашнинех мĕнпе те пулин кӳрентернĕ.

— Çавă кирлĕ ăна, эсреле, ытла та тăранма пĕлместчĕ-ха, тинех шалчи тулчĕ явăлăн! — тенĕ нумайăшĕ, çăмăллăн сывласа ярса.

Анчах «улми улмуççинчен инçе ӳкмест», халăха çаратма ашшĕнчен пит ăста вĕренсе юлса, унăн ывăлĕсем çав çулпах пынă, темĕн тĕрлĕ май та тупса, улталаса, çынсене макăртса, пуйнăçемпĕн пуйнă, пĕр тенкĕрен çиĕнчех вунă тенкĕ тунă. Кĕçех аслă ывăлĕ — Çемен Лявонч — ял старости пулса тăнă, ăна пулах кĕçĕннисем, Уртемпе Матви, вăрçа каяссинчен укçапа хăтăлнă, вара хĕрарăмсемпе пур ватă та вĕтĕ çеç тăрса юлнă ялта хăйсене чăн патшасем пекех тыткалама пуçланă. Пурте вĕсен аллинче пулнă-çке-ха! Камран хăрас?...

Старостăна кĕнĕ Çемен, ыттисенчен ытларах ĕçме юратаканскер, кашни ӳсĕрĕлмессеренех урам тăрăх кăкрине чышкипе çапса кăшкăрса çӳренĕ:

— Я хто-о?.. Ял патши-и!.. Çыхланăр-ха эсир манпа! Вĕлере-еп! Тыттарса яра-ап! Тĕрмере çĕрте-еп!..

Мĕн чухлĕ куççулĕ тăктарнă пуль вĕсем талăх арăмсене, мĕн чухлĕ ĕçлеттернĕ пуль... Çур ял çĕрĕ вĕсен аллинче пулнă, обозĕ-обозĕпе тырă ăсатнă. Нумай пуйтарнă çав вĕсене вăрçă!

Февральти революцие вĕсем часах ăнланса илнĕ; Матвийĕ кăкри çине хĕрлĕ бантик çаксах кайнă вулăсри «хресченсен пуххине», мĕншĕн тесен Лява тавраш пекки-

сен пурнаҫе ун чухне нимĕн чухлĕ те улшанман. Ҫав пухӳра та кулаксемпе вĕсене майлисем ҫеҫ пулнă.

Анчах та Октябрь тăвăлĕ хытă силлене вара Лявасене. Чăнах, вĕсем нумай япала пытарма ĕлкĕрнĕ, ҫапах та комбед вăхăтĕнче вĕсенне ҫĕр лава яхăн тырă, темĕн чухлĕ хаклă япаласем тиесе тухнă, икĕ кĕлет турттарса кайнă, выльăх-чĕрлĕхсене чухăнсене салатса панă, ҫиелтен пысăк контрибуци хурса тӳлеттернĕ. Кашкăрсем пекех шатăртаттарнă вĕсем хăйсен шăлĕсене, анчах нимĕн те тăвайман, ҫилле ирĕксĕрех шăнарма тивнĕ...

Тепрер ҫултан, Кăрмăш тăрăхĕнче кулакла-эсерла пăлхав тапрансан, Лява ывăлĕсем кашни самантрах обрезсем тытса сиксе тухма хатĕр тăнă, пупа чиркӳре амвон ҫинчен Совета хирĕҫле проповедьсем калаттарнă, хăйсем тарăхса пурăннă ҫынсене уҫҫăнах юнама тытăннă, анчах ĕмĕчĕ каллех татăлнă вĕсен: пăлхав нумая пыман, ăна хытă путарса лартнă. Каллех шăла ҫыртса пусăрăнма тӳр килнĕ кусен.

Унтан вĕсен сасартăк инкек ҫине синкек пырса тухнă. Асли, Ҫеменĕ, пĕрре шартлама сивĕре таҫти тăванĕсем патĕнчен питĕ ӳсĕр таврăннă та, Кашкăр варĕ тенĕ ҫырмари сулăнкăра ҫуна ҫинчен ӳксе юлса, ирччен шăнса хытнă.

Ҫав хĕлтех Матвийĕ те пĕтнĕ. Вăл, юнашар ялти кулак таврашĕсемпе пĕрле, продотряд хулари рабочисем валли илсе каякан тырă обозне туртса илме тапăннă. Продотрядчиксемпе кулаксем хушшинче самаях вăйлă перкелешӳ пуҫланса кайнă. Обоза тапăнакансенчен виҫҫĕшне вĕлернĕ, вĕсенчен пĕри — Лява Матвийĕ пулнă.

— Йытта — йытă вилĕмĕ,— тенĕ ҫеҫ ун пирки ял ҫыннисем. Ăна пытарма та никам та кайман.

Ҫапла Пуян Лявн виҫĕ ывăлĕнчен вăталăхĕ — Уртем ҫеҫ тăрса юлнă. Вăл вара чăн-чăн кашкăрлах пурăнма тытăннă, никампа та хутшăнман, калаҫман, анчах унăн чĕринче чи хаяр тарăху вĕресе тăнă. Вăл ҫаплах-ха Советсем пĕтессе кĕтнĕ.

Вăхăт шунă; уйăх хыҫҫăн уйăх, унтан ҫулталăксем те иртнĕ. Советсем пĕтмен, республика хăйĕн тăшманĕсене аякран аякка хăваласа пынă, унтан пуҫĕпех аркатса тăкнă. Лява Уртемĕпе унăн тăванĕсене ку хытă кӳрентернĕ, анчах 1921 ҫулта хăрушла выҫлăх ҫитсе пуссан, чунĕсем каллех ҫĕкленнĕ вĕсен. Сӳнме пуҫланă шанчăк тепĕр хут ҫунатланса хăпарнă:

— Пурпӗр выҫса вилсе пӗтеҫҫӗ...

Ҫур енне, хирсенче ҫулсем хуралса шывланма пуҫланӑ вӑхӑтра, Уртем патне кӗтмен ҫӗртен унӑн арӑмӗн шӑллӗ Василий Разумов пырса тухнӑ. Вӑл этем тӗнче вӑрҫи вӑхӑтӗнче прапорщик пулнӑ, Февральти революци хыҫҫӑн кулаксен ҫӗрӗсемпе чиркӳ ҫӗрӗсене тытса илнӗ хресченсене перҫе вӗлерсе ҫӳренӗ. Октябрь хыҫҫӑн ӑна пурте ҫухалнӑ тесе шутланӑ пулнӑ, анчах вӑл бандитсен шайккипе ҫыхӑнса тӗрлӗ ҫӗрте ҫаратса ҫӳренӗ иккен, хӑш чух вӗсем пуйӑссене те тапӑннӑ, пассажирсене, пӑшалсемпе хӑратса, ним юлмиччен ҫарамаслантарнӑ. Юлашкинчен, пӗр ҫар складне ҫаратма тӑрсан, вӗсем пурте тенӗ пекех тӗрмене лекнӗ. Чылай ларнӑ унта ҫак прапорщик пулнӑ вӑрӑ. Анчах халӗ, хӑйне пӗр хуларан тепӗр хулана илсе кайнӑ чух, конвойран тарнӑ та йыснӑшӗсем патне ҫитсе ӳкнӗ.

Пӗр четвӗрт сӑмакунпа ҫур витре кӑрчама кутӗнче вӗсем тахҫанчченех сын илтмелле мар мӑкӑртатса ларчӗҫ. Иртнӗ вӑхӑтсене шеллесе аса илчӗҫ, хальхи ҫинчен шӑл витӗр каласрӗҫ... Иртни ҫинчен каласнӑ чух чылаях ӳсӗрӗлнӗ офицер-бандит шӑнса пӑсӑлнӑ сассипе юрласа ячӗ:

— Эх, на плечах погоны,
На грудях кресты...

Уртем ӑна малалла юрлама памарӗ, ӑнсӑртран сынсем илтесрен чарса лартрӗ, вара вӑл сиксе тӑчӗ те кӑкрине ҫапса кӑшкӑрма тапратрӗ:

— Василий Разумова пӗтертӗмӗр, терӗҫ пуль вӗсем! Нет, шалишь, брат, ӑна часах пӗтерейменӗ!.. Вӑл чӗрӗ-ха, пурӑнать, так вашу эдак! Кӑтартӗ-ха вӑл хӑйне! Тавӑратӑп, пуриншӗн те тавӑратӑп!... Хама чинсӑр хӑварнӑшӑн та, тӗрмере хупса усранӑшӑн та, аттен пӗтӗм пурлӑхне туртса илнӗшӗн те... Пирӗн пеккисем нумай-ха Раҫҫейре. Эпир пухӑнатпӑрах, пухӑнса никам ҫӗнейми ҫар тӑватпӑр!.. Часах акӑ вӗсене пурне те касма, ҫакма, вӗлерме, ҫунтарма пуҫлатпӑр... Манӑн хамӑн ҫар пулать... полк! Пуҫ касакансен, ятарласа коммунистсене вӗлерме вӗреннисен полкӗ! А эп — полковник пулатӑп... Полковник Разумов! Анчах та эп халь Разумов мар ҫав, эп халь — Махорка...

Прапорщик тата темле ӑнланмалла мар сӑмахсем кӑшкӑрса, ҫил арманӗ пек хӑлаҫланчӗ, пӗр енчен тепӗр енне сулӑнма пуҫларӗ те—тӳнчӗ. Уртемпе арӑмӗ ӑна аллипе уринчен тытса алӑк патӗнчи сак ҫине кайса пӑрахрӗҫ.

...Махорка полковник пулаймарӗ, анчах та çӗршыв типе пуçласан, Уртемпе унӑн кӗрӳшӗ Мамун кӑтартнипе унта-кунта çӳресе, хайӗн тавра пӗр ушкӑн вӑрӑ-хурах пухрӗ. Вара вӑл Сӑр вӑрманӗнче, этем çӳремен вырӑнта «штаб» туса, таврари халӑха терроρлама тытӑнчӗ. Малтан иртен-çӳренсене çаратрӗ, выльӑхсене тыта-тыта пусрӗ, унтан унӑн «молодчикӗсем» кашни каçах таврари ялсене пыра-пыра тапӑнма тытӑнчӗç. Çыхӑнусем кулленех вӑйланса пычӗç вӗсен: Советсене хирӗç шӑл хайракансем кашни ялтах пур-мӗн... Çаратасса та çавсем кӑтартса панӑ тӑрӑх çаратнӑ Махорка банди: пуринчен ытларах коммунистсене, Советра ӗçлекенсене, халӑха çутта кӑларасшӑн пур вӑя хурса ӗçлекен учительсене...

Пӗр икӗ уйӑх хушшинче унран пӗтӗм тавралӑх хӑракан пулса çитнӗ. Бандӑна хирӗç янӑ милици отрячӗ те ним те тӑвайман, вӗсенчен темиçе çыннине бандитсем персе пӑрахнӑ, ыттисем аран хӑтӑлнӑ. Пӗррехинче çывӑхри ялсем облава тума тытӑннӑ-мӗн, анчах бандитсем пӗр-икӗ граната пӑрахсанах, хӗçпӑшалсӑр халӑх пӑрça пекех саланнӑ.

Нумай кӗлетсем пушатрӗ Махорка, темӗн чухлӗ лаша вӑрласа тарса, тӗрлӗ çӗрелле ӑсатрӗ, нумай выльӑх пусса çирӗ, иртен-çӳренсене çаратрӗ, хӗрарӑмсене пусмӑрларӗ. Анчах ялсенче çынсем Махоркӑран шар курни, вӗри кусçуль юхтарни çине теприсем савӑнса пӑхса тӑчӗç.

— Çапла кирлӗ-ха сире, кӗлмӗçсене... Чимӗр акӑ, ку çеç те мар пулӗ-ха!

Анчах вӗсем нумаях савӑнса пурӑнаймарӗç. Милицисен отрячӗ тарса килнӗ хыççӑн тепӗр вунӑ кунтан, бандӑна тытмашкӑн уесран лайӑх хӗçпӑшалланнӑ рота янӑ. Вара çав рота пӗр-икӗ кун хушши вӑрман тӑрӑх çӳресе, банда йӑви тӗлнех пырса тухнӑ та ӑна пуçӗпех аркатнӑ. Бандӑн пысӑк пайне патӗнчех вӗлернӗ, нумайӑшне çавӑрса илнӗ, «штабран» сутма ӑсатайман темӗн тӗрлӗ пурлӑх тупса турттарса кайнӑ.

Анчах Махоркине хӑйне тытайман...

* * *

...Çур çӗр çитеспе çенӗк алӑкне хуллен кӑна шаккани илтӗнчӗ. Нумаях та пулмасть çывӑрма выртнӑ Лява Уртемӗ минтер çинчен пуçне çӗклерӗ те пӗр хушӑ сывламан пек пулса итлерӗ. Алӑкран каллех шӑкӑртаттарчӗç.

Уртем çенӗкелле шӑппӑн утса тухрӗ те хуллен кӑна ыйтрӗ:

— Кам унта?

— Эпĕ, уç-ха часрах,—илтĕнчĕ алăк хыçĕнчен.
— Кам эсĕ?
— Махорка сынни...
— Ятна кала?
— Пăшатан... Нивушлĕ паллаймастăн, Уртем Лявонч?

Уртем, чĕтреме тытăннă аллисемпе алăка уçса, кĕтмен хăнана çенĕке кĕртрĕ. Сентре çинчен шăрпăк тупса çутса пăхрĕ. Ку чăнах та Пăшатан иккен — Махорка помощникĕ. Çара пуçăн, хура çӳçĕ арпашса кайнă, кĕпи тăр лапра, сылтăм пĕççи çинче шăлаварĕ тăршшипех çурăлса тухнă.

— Ма килтĕн?— кăмăлсăр ыйтрĕ Уртем, тем ырă маррине туйса.

— Махорка ячĕ...
— Атя, кĕр, эппин, пӳрте.

Пӳрте кĕрсен Уртем лампа çутрĕ те, сĕтел çине чавсаланса ларса, Махорка сынни çине каллех сиввĕн, шăтарасла пăхрĕ. Тĕрĕссипе каласан, йăлăхтара пуçларĕç ăна бандитсем: чăрмавĕ нумай, усси сахал.

— Мĕн ĕçпе килтĕн?
— Пĕтрĕмĕр ача, эпир, Уртем Лявонч,— куçне мăчлаттарса кала пуçларĕ Пăшатан.— Кĕтмен çĕртенех аркатса тăкрĕç...

— Епле апла тата?— кăртах сикрĕ Уртем.
— Çаплах вăт... Аркатрĕç. Виçĕмкун каçхине эпир виççĕн — Махорка, эпĕ тата Чалăшкуç Мăн Хатнара тухса кайсаттăмăр. Унта Хветле ятлă пĕр хусах арăм пур. Ну ĕнтĕ, чиперех çитрĕмĕр, ĕçрĕмĕр, çирĕмĕр. Хветле пире валли тата ик арăм илсе пычĕ. Пит виççолăй çĕр каçрăмăр. Ун пек, кун пек пуласси асра та çукчĕ.

Пăшатан чарăнчĕ те пырне тытрĕ.
— Итле-ха, Уртем Лявонч, турă пул — пĕр стакан пар, шутсăр ăш çунать...

Уртем чăлантан пуçланă пулштухпа чей стаканĕ тата хăпарту татăкĕ илсе тухрĕ.
— Ĕç.

Пăшатан пĕр стакан туллиех ярса ĕçрĕ те малалла калама тытăнчĕ.

— Тул çутăлас умĕн лашасем çине утлантăмăр та каялла вĕçтертĕмĕр. Вăрмана çитсен, ерипен юрлакаласа уттартăмăр. Хамăр пата çитесси нумаях та юлманччĕ — сасартăк пăшал сассисем илтĕнме пуçларĕç. Чухласа та илме çук —таçтан переççĕ... Малта та, кайра та, пур ен-

чен те... Манпа юнашар пыракан Махорка ним шутласа тămасăрах чĕлпĕрне туртрĕ те ăйăрне пĕррех малалла сиктерчĕ. Эпир — ун хыççăн. Пĕр уçланкăна ыткăнса тухрăмăр кăна — тăруках йывăççем хушшинчен пирĕн еннелле ручной пулемет шатăртаттарма тапратрĕ, тĕмĕсен хыçĕпе салтаксем чупни курăнчĕ. Махорка ăйăра тăрук чарса лартса ик ура çине тăратрĕ те каялла çаврăнса пĕрĕхтерчĕ. Эпир те ун хыççăн вĕçтертĕмĕр. Ну, тартăмăр та вара... Пульăсем хăлха çуммипе вжи! вжи-и!.. туса иртесçĕ, кĕç лекет, кĕç вилетпĕр, тесе пыратпăр. Темле майпа, ни мана, ни Чалăшкуçа лекмерĕ, анчах та Махоркăна сулахай уринчен хытах лекнĕ иккен... Çапах та — çирĕп вĕт! — пĕр-ик çухрăм ытла ларса пынă вăл, унтан тин, юн нумай юхнипе халран кайма пуçласа, пĕр шĕшкĕ тĕми ăшне кĕрсе ӳкрĕ. Ăйăрĕ малалла тĕпĕртеттерчĕ. Эпир, хамăрăн вĕриленсе кайнă лашасене аран чаркаласа сиксе антăмăр та, ун патне чупса пытăмăр. Вăл вилнĕ çын тĕслех пулса кайнă, аран сывласа выртать...

Пăшатан типсе ларнă пырне йĕпетме тата тепĕр çур стакан тултарса ĕçрĕ.

— Часрах кĕпе аркине çурса, çакăн суранне çыхкаларăмăр та, аллисемпе урисенчен тытса, чăтлăх ăшнелле çĕклесе кĕрсе кайрăмăр...

— Унтан мĕн пулчĕ?

— Нумай утрăмăр... Пăшал сассисем çаплах чарăнмаççĕ. Чун юлмарĕ, пирĕн пата пырса тухассăнах туйăнчĕ. Ну, тупнах пулсан, чĕррĕнех парăнмастăмăр çав пурпĕрех... Унтан ик талăка яхăн ниçта хускалмасăр выртрăмăр чăтлăхра. Хветле патĕнчен Чалăшкуç виç пулштух чиксе тухнă-мĕн те, Махоркăна çавăнпа çеç усрарăмăр. Темиçе çăвар сыпать те пĕлми пулса çывăрать, сыпать те çывăрать. Ыйхă витĕр аташать хăй, тем те каласа вăрçать, командăсем парать. Унтан вара...

Пăшатан куçне час-час мĕлтлеттерсе илчĕ.

— Хам та хĕрхентĕм...

— Мĕн апла? Вилчĕ-и?

— Çук, вилмен... Ĕнер ирпе юлашки эрехе ĕçрĕ те урсах кайрĕ. Пурпĕр вилетĕп, халех хĕрарăм тупса килсе парăр мана, хĕрарăмпа ачашланса вилем, тет. Эпир тытăнса тăтăмăр, а вăл маузерне* кăларса юнама тапратрĕ. Халех хĕрарăм илсе килĕр, унсăрăн сире те, хама та вĕлеретĕп, тет... Карăмăр вара шырама, мĕн тăвас тетĕн?

*Пысăк револьвер.

Куç харши айĕпе сиввĕн пăхса ларакан Уртемĕн сăнĕ татах тĕксĕмленчĕ. Пăшатан пĕр самантлăха чарăнчĕ те каллех ĕçрĕ.

— Чутай çулĕ çине тухрăмăр та, пĕр çухрăм та çурă пек кайсан, канав хĕррипе пĕр хĕрача ĕне çитерсе çӳренине куртăмăр. Так, пĕчĕкскер, çап-çаврака питлĕ, тем тесен те, пĕр вунултă çултан ытла мар. Çатан карта çумне тайăннă та хуллен кăна юрласа тăрать... Пире курсан, кăртах сикрĕ çак. Патнерех пырсан шуралсах кайрĕ, тути хĕррисем сикме пуçларĕç, куçне чарса пăрахрĕ. Сисрĕ пулас мĕскĕн. Хамăн та чĕре темле сăрлатса кайрĕ... Чăннипех калатăп, хĕрхентĕм. Чалăшкуç мĕн каламаллине малтанах шухăшласа хунă пулмалла: пынă-пыман кăшкăрса пăрахрĕ ун çине. «Кам çитерме хушрĕ сана кунта?»— «Юрамасть-и вара?»— чĕтрекен сасăпа ыйтрĕ хĕрача, пирĕн çине макăрас пек пăхса. — «Юрамасть, конешнă! Атяха лесник патне, унта каласăпăр!» Хĕрачана çавăнтах хулĕнчен тытса карт! туртрĕ те канав урлă сиктерчĕ. Лешĕ макăрса ячĕ. «Хăлха чикки çиес килмест пулсан — шăп пул! Атту халех тыттаратăп!»— терĕ ăна Чалăшкуç шăл витĕр. Хулĕнчен çирĕппрех тытрĕ те, ни вилĕ, ни чĕрĕ хĕрачана вăрман ăшнелле илсе кĕртсе, йывăç тĕмисем хушшипе хăвăрт уттарчĕ. Эп хыçалтан пытăм. Тыткăна лекнĕ хĕр чĕлхесĕр пекех пулчĕ, хушăран çеç нăшăклатса илчĕ...

Çитрĕмĕр Махорка патне: пĕр урине теприн çине хунă та, кашкăр пек пăхса, чĕлĕм мăкăрлантарса, хăяккăн выртать. Чалăшкуç хĕре ун еннелле тĕксе ячĕ. Хĕр темрен такăнчĕ те ӳкрĕ.

— Твой приказ сполнял!— терĕ Чалăшкуç, хĕрача еннелле куç хĕссе илсе. Махорка ним те чĕнмерĕ, пирĕн çине пăхса, пуçĕпе аяккалла сулчĕ çеç. Эпир ăнлантăмăр та вăрманалла кĕрсе кайрăмăр. Пĕр хушă шăпах пулчĕ... Унтан хĕрача сасартăк икĕ хутчен кăшкăрса ячĕ, самантранах пăшал сасси кĕрслетрĕ. Эпир часрах чупса тухрăмăр... Пĕчĕкçеç уçланкă варринче хайхи хĕрача хăрăлтатса, халь çеç пуснă чĕпĕ пек тапкаланса выртать, унăн пичĕ тărăх, çăварĕнчен çăра юн юхать. Махорка ун патнелле çурăмĕпе çаврăнса тăнă, хăрах аллипе питне тытнă, тепĕр аллинче— йăсăрланакан маузер. Эпир пырса тухнине илтсен, каялла çаврăнса пăхмасăрах револьверĕпе малалла кăтартрĕ: «Айтăр».— «Кунпа мĕн тумалла?»— ыйтрĕ Чалăшкуç.

«Вырттăр, сволочь». Çапла каларĕ те вăрманалла уксахласа кĕрсе кайрĕ.

— Ма вĕлернĕ-ха ăна вăл?— ыйтмасăр чăтаймарĕ Уртем, хăйне валли те стакан тултарса.

— Парăнман курăнать лешĕ. Кĕрешнĕ чух питне çыртса татнă та, пӳрнипе куçĕнчен чикнĕ. Махоркăн куçĕ халь те çара какаях, тӳрленмест те пуль...

— Кайран ăçта кайрăр?

— Каç пуличчен вăрман хĕррине тухса выртрăмăр. Çĕрле Махорка кунта çитсе ӳкесшĕнччĕ, анчах, аманнă ури ытла ыратнипе, кивĕ утар пӳртне вырнаçмалла пулчĕ. Вара мана сан патна ячĕ. Патрон парса яма хушрĕ тата укçа... Кам пĕлет, тен, урăх çĕрелле тармалла пулать-и, терĕ. Эс пĕркун килсе панă япаласене сутрăн пуль вĕт, Уртем Лявонч?

— Сутайман-ха.

— Эх, халь пирĕн тупра та нумайччĕ! Мĕн чухлĕ пуянлăхчĕ! Илсе кайрĕç пуль ĕнтĕ шуйттан отрячĕсем... Шутсăр хĕрхенмелле!

Уртем стакана пушатса лартрĕ.

— Апла иккен-ха сирĕн пурнăçсем...

— Çапларах çав.

— Ни унталла, ни кунталла, эппин? Хăй мĕн тума шутлать-ха малашне?

— Парăнмастăп, тет. Çĕнĕрен вăй пухатăп та каллех çĕмĕрме пуçлатăп, тет. Анчах...— Пăшатан пуçне усрĕ.— Усси те пулать, тем... Эп хам та... пустуй çыхлантăм пулмалла. Хама мĕн чухлĕ суд тунине лармаллачĕ те çур çултан тухаттăмччĕ... Халь каялла таврăнма та май çук ĕнтĕ...

— Но! Кун пек калаçас йăлана пăрахас пулать,— сасартăк сассине хăпартрĕ Уртем.— Хамăра шар кăтартса кӳрентернисене тавăрса пĕтермен-ха эпир! Чим, вăхăт килĕ...

— Мана никам та кӳрентермен. Эп хам...

— Çитĕ!— сĕтел çине çапса илчĕ Уртем.— Атя, вĕçтер каялла. Патрон мĕн чухлĕ кирлĕ?..

— Пĕр виççĕр штук.

— Укçа тата?

— Ытларах пар.

— Çимелли илсе каймастăн-и?

— Вăл та кирлĕ...

Пурне те хатĕрлесе çитерсе çурăм хыçне кутамккала-

са ҫаксан, Пăшатан пулштухри юлашки сăмакуна ярса ёҫрĕ те татах ларчĕ.

— Итле-ха, Уртем Лявонч,—терĕ вăл кăштах ҫыхланакан чĕлхепе.— Манăн каймалли инҫе-ха, сахалтан та пĕр вун-вуник ҫухрăм пур. Пĕр-пĕр лаша тупса пулмасть-ши, э?

— Лаша? Мĕн тума?

— Лаша ҫав, утланса кайма... Наччас ҫитеттĕмччĕ эп унпа. Тата халĕ халăхĕ те усалланса кайрĕ, нисашто тытма пултараҫҫĕ. Калама мантăм эп сана: халь кунта килнĕ чух та Мăнъял ыраш пуссинче иккĕн чупрĕҫ ман хыҫҫăн. Волĕ-неволĕ икĕ хутчен персе хăвармалла пулчĕ... Аҫта тупса утланас-ши?

Уртем пĕр вăхăт шухăша кайса тăчĕ. Унтан пуҫĕпе урам еннелле кăтартрĕ:

— Ҫырма леш енче, уй хапхинчен анатарах, виҫҫĕмĕш киле кĕрсе пăх-ха... Ҫавсен лаши килтех пулмалла, арăмĕ каҫ пулсан тин таҫтан таврăнчĕ. Кил хушшине кĕме анкарти енчен алăк пур унта. Анчах та асту, асăрханарах хăтлан. Тем пулсан — эп сана курман, илтмен, палламастăп. Хăвах пĕлетĕн...

— Ну, каларĕ тата!— терĕ хĕрсе кайнă Пăшатан, аллипе сулса.

— Махоркине кала: ҫанталăк лăпланиччен ан шавлатăр, ку яхăнта пурăнма хамăр патра та вырăн тупăпăр.

— Юрĕ.

## 5. ВАРУК

Тарас урам тăрăх тăвалла хуллен кăна шăхăркаласа утрĕ...

Киле таврăннă каҫхи пекех, кĕҫĕр те урамра питĕ шăп, ним сас-чĕвĕ те ҫук. Ҫынсем каҫ пулнă-пулманах ҫывăрма кĕрсе выртнă курăнать. Тарас, хурал пӳрчĕ тĕлĕпе иртнĕ чух, аташса юлнă путекне хăваласа каякан пĕр хĕрарăма ҫеҫ курчĕ.

«Мĕн калать-ши ĕнтĕ ку мана?»— шухăшласа пычĕ вăл Варук ҫинчен.

Варуксен килĕ — ял хĕрринчех, уничерен виҫҫĕмĕш, лупашкаллăрах вырăнта ларать. Пӳрчĕ умĕнче пĕчĕкҫеҫ сад, унта Варукăн ĕҫчен ашшĕ-амăшĕ чие йывăҫҫисем, акаци, сирень лартса тултарнă. Урам хапхи, хӳмисем, ҫурт-йĕрĕ — пурте йĕркеллĕ вĕсен, пурне те лайăх шу-

хăшласа, тирпейлĕ тунă. Варуксен ашшĕне хуçалăха тытса пыма пĕлнĕшĕн ял çыннисем яланах ырлатчĕç...

Тарас юриех урамăн сылтăм енĕпе пычĕ. Виç-тăват кил урлах вăл Варуксен лаçĕ пуçĕнче такам ларнине курчĕ.

«Кĕтет пулас...»

Ку чăнах та Варук пулчĕ. Тутрине майралла, каялла çавăрса çыхнă, хулпуççинчен сăхман уртса янă, мăйăр катса ларать.

— Ырă каç пултăр, Варук,—ал пачĕ ăна Тарас.

— Килех... Васкамастăн пулсан, лар.

— Васкамаллиех çук-ха...

Тарас каска çине Варукпа юнашар ларчĕ.

— Мăйăр çиетĕн-и?— ывăçласа пачĕ Варук.

— Çисе пăхас...

Пĕр-ик минут хушши ним те шарламарĕç вĕсем. Пĕрне-пĕри нумай вăхăт курмасăр пурăнсан, яланах çапла пулать вăл: каламалли нумай, анчах та нимрен пуçлама пĕлместĕн...

— Ну, Варук, каласа кăтарт, мĕнле пурăнтăн çак çулсенче?— аран пуçларĕ Тарас, епле те пулин сăмах хускатас тесе.

— Мĕнле пурăннă пултăр? Хуллен, майĕпе... Унта-кунта питех тухса çӳремен, çынсемпе те пит хутшăнсах кайман.

— Çыру çырма ма пăрахрăн?

— Ара, ху текех пĕр çĕртен тепĕр çĕре куçса çӳрерĕн те, адрессене пăтратса ятăм эп . Çынсенчен ыйтма аван мар пулчĕ.

— Эп сана качча кайнă тесе.

— Теме кирлĕ пуль пит... Ыйткалакансем ку чухне ахаль те нумай. Пĕччен хырăма та тăрантараймастпăр та...

— А вăл яланах апла пулмасть вĕт. Тăхта акă пăртак, пурнăç епле юсанса кайĕ...

— Юсансан тем пекехчĕ. Атту шалт йăлăхтарса çитерчĕ ку çити-çитми пурнăç. Эсир таçта аякра çӳресе ăна сиссех те каймарăр-и, тен, анчах кунта пит те сисĕнчĕ вăл.

— Эпир сиртен те ытларах тӳсрĕмĕр пуль, тусăм,— терĕ Тарас, хăй сисмесĕрех Варук аллисене тытса.— Виç-шер кун çимесĕр те, икшер уйăх кĕпе-йĕм улăштармасăр та, эрни-эрнипе ура типĕтмесĕр те пурăннă. Кашни кун вилĕм куçĕнчен пăхнă, вилĕм пирĕнпе юнашарах çӳренĕ...

— Ара, вăл апла пуль те-ха...

— Çавăн пек чухне вара килти пурнăç шутсăр аса килетчĕ. Ашă пӳрт, вĕри апат, тăвансем, паллана çынсем... Сана та аса илеттĕм час-часах...

Тарас Варук аллине чăмăртарĕ те ун куçĕнчен пăхрĕ.

— Чăн калатăп.

Варук нимле мар пулса кайрĕ, çĕрелле пăхрĕ.

— Эп те яланах аса илнĕ...— терĕ вăл хуллен.

— Уйрăлнă чух калаçнисене манмарăн-и?

— Ма манас... Эпĕ çавна асра тытса çеç пурăнтăм. Леш хĕлте çураçсах çитернĕччĕ мана аттесем, анчах эпĕ ним тусан та каймастăп терĕм те, вара тинех тупкăчсем килме пăрахрĕç...

Вăл пуçне Тарас еннелле çаврчĕ. Тарас сылтăм аллине унăн пилĕкĕ çине хучĕ. Нимĕн те шарламарĕç, ма тесессĕн сăмахсăрах пĕтĕмпех паллă пулчĕ. Виçĕ çул иртнĕ, вăл хушăра нумай шыв юхнă, темĕн тĕрлĕ улшăну та пулма пултарнă, анчах вĕсем хушшинче нимĕн те улшăнман иккен. Виçĕ çул каялла, çакнашкалах çурхи кас, вĕсем çак каска çинчех пĕр-пĕрин ăшшине туйса, алăран ал тытса ларнăччĕ, пĕрне-пĕри манас çукки çинчен калаçнăччĕ, ак халь каллех пĕрле, юнашар, ун чухнехи пек кăмăлсемпех, пĕр кунлăх та уйрăлман пекех...

— Аннӳ мĕнле?— ыйтрĕ Варук, чылай чĕнмесĕр ларсан.

— Паян кăшт самайланчĕ пулас-ха.

— Эп ăна тем пекех кая-кая пулăшасшăнччĕ те, çынсем куласран хăраса тăтăм. Пĕлетĕн вĕт, ялта çав тери усал чĕлхесем пур...

...Сăмах хыççăн — сăмах; Тараспа Варук нумайччен ларчĕç шăкăл-шăкăл калаçса, пĕрне-пĕри харпăр хăй çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех каласа кăтартрĕç. Таврара ним хускалми шăплăх тăчĕ, улăх енчен майĕпе ирхи нӳрлĕх туртăна пуçларĕ, анчах вĕсем çаплах калаçрĕç... Варука хăй çумнерех тайăнтарса, Тарас пулас пурнăç çинчен, хăйĕн ĕмĕчĕсем, шухăшĕсем çинчен каларĕ, унăн пур сăмахĕсем те Варука тем пекех кăмăла кайрĕç, чĕри патнех пырса вырнаçрĕç. Çак касхине вăл ăна ĕлĕкхинчен те вăйлăрах, темле ăшă, тăванла юратупа юратрĕ.

—Епле аван, ăслă вăл...

Варуксен çенĕк алăкĕ чĕриклетрĕ. Тахăшĕ тула тухрĕ пулас.

— Кĕрес пулать, нумай пулчĕ,— терĕ Варук.

— Кăштах лар ĕнтĕ,— хулĕнчен тытрĕ ăна Тарас.

— Ыран та ларма пулать вёт...

— Ыранхи — ыран валли вăл...

Çав вăхăтра кил хушшинче сасартăк Варук ашшĕн сасси илтĕнчĕ.

— Кам ку? Мĕн тăватăн эс кунта?!

Ана хирĕç чĕнекен пулмарĕ, анкартинелле тухмалли алăк халтлатса хупăнчĕ çеç.

— Стой!.. Хурах! Караву-ул!— кăшкăрса ячĕ Варук ашшĕ. — Тытă-ăр!..

Таçта йытă вĕрсе ячĕ. Хурах кăшкăрнине илтнĕ-илтмен, Тарас каска çинчен вăшт кăна тăчĕ те, хӳме урлă пĕррех сиксе каçса, уçă алăкпа Варуксен анкартине чупса тухрĕ. Самантранах вăл паранкă кассисем хушшипе чупакан Варук ашшĕпе танлашрĕ те:

— Аçта?— тесе кăшкăрчĕ.

— Ав, çырманалла тарчĕ...

Урăх нимĕн те чĕнмерĕ Тарас, арăслан пекех малалла ыткăнчĕ. Варук ашшĕ таçта хыçалта хурах кăшкăрса юлчĕ...

Çырма хĕррине çитеспе Тарас карта урлă темле мĕлке йăванса каçнине курчĕ.

«Çавă! Пурпĕр тытатăп!»— шухăшларĕ те вăл, çырманалла сикрĕ. «Куçран вĕçертес марччĕ кăна...» Карта урлă каçсан, хытăран хытă чупма тапратрĕ вăрă хыççăн. Анчах лешĕ те вăйлă чупать иккен, ниепле те çывăха ямасть. Акă, вăл картаран сылтăмалла пăрăнчĕ те çырма тĕпĕпе ыткăнчĕ. Унтан сăрталла хăпарма пуçларĕ. Каçĕ çутă, курăнать...

Тарас сăрталла темиçе утăм тунăччĕ çеç — çӳлтен револьвер сасси шартлатрĕ. «Кунпах хăратаймăн»,— шухăшларĕ те Тарас хăй ăшĕнче, самантлăха чарăнса тăнăскер, каллех малалла ăнтăлчĕ. Вăрă хирелле тухса, ыраш хушшинелле кĕрсе кайрĕ, анчах ырашĕ лутра пирки — пытанаймарĕ, пилĕк таранах курăнса пычĕ. Пĕр аллă чалăш кайсан чарăнчĕ те каллех печĕ Тарас çинелле, анчах каллех сиен тăваймарĕ, тарма тытăнчĕ. Чылай вăхăт пычĕ Тараспа вăрă хушшинчи хăрушă ăмăрту. Пĕрин епле пулсан та тарса хăтăлас килет, тепри тем пулсан та ăна çитсе çапса ӳкересшĕн... Вăрри çурăм хыçĕнчи кутамккине те пăçăрах калча ăшнелле вăркăнтарса хăварчĕ, вăл татах чарăнса пересшĕн пулчĕ, анчах револьверĕнче пулисем пĕтнĕ пулмалла, çавăнпа унăн пĕр хăйĕн урисем çине çеç шанмалли юлчĕ.

Вĕсем шăлĕсене ҫыртса, антăхас патне ҫитсе чупнă хушăра пĕтĕм ял ура ҫине сиксе тăчĕ. Пур урамсенче те кăшкăрашаҫҫĕ, ҫуйăхашаҫҫĕ, йытăсем вĕреҫҫĕ, алăксем уҫăлса хупăнни илтĕнет. Аҫта мĕн пулнине ăнланайманнипе, ҫынсем урамран урама чупаҫҫĕ, пĕр-пĕринчен ыйтаҫҫĕ, анчах ретлĕн никам та каласа параймаи пирки татах чупаҫҫĕ.

Автан ҫырми патнелле ҫывхарнă чух вăрă вăйсăрланса пыни сисĕне пуҫларĕ. Вăрăпа Тарас хушши пĕчĕкленнĕҫемĕн пĕчĕкленсе пычĕ. Ак ĕнтĕ ҫывăх, темиҫе чалăш ҫеҫ... Тарас мĕнпур вăйне пухрĕ. Унтан минут та иртмерĕ пуль — вăрра ĕнсинчен чышса антарчĕ те хăй те тирĕнсе кайрĕ... Анчах вĕсем иккĕшĕ те харăсах сиксе тăчĕҫ, пĕр-пĕринпе тытăҫса ӳксе, ҫырма хĕрринелле йăванма тапратрĕҫ. Хăрушла кĕрешӳ пуҫланса кайрĕ вĕсем хушшинче... Иккĕшĕ те ывăннă ĕнтĕ, аран сывлаҫҫĕ, анчах нихăшĕ те парăнасшăн мар, кашниннех пурăнас килет. Пĕрре пĕри ҫиеле тухать, тепре — тепри, аллисем пĕр-пĕрин пырĕсем патнелле туртăнаҫҫĕ.

— Килĕр!.. Пулăшă-ăр!..— вăрăммăн кăшкăрса ячĕ Тарас.— А-а-а!..

Унччен те пулмарĕ, вĕсем хăйсем сисмесĕрех ҫырма хĕрринелле йăванса пычĕҫ те чăнкă ҫĕртен кутăн-пуҫăн чикеленсе анса кайрĕҫ.

Хире чупса тухнă халăх, Тарас кăшкăрнине илтсе, Автан ҫырми еннелле ыткăнчĕ. Ҫынсем ҫырмана чупса аннă ҫĕре Тарас бандита, ӳппĕн пăрахса, унăн аллисене хыҫалалла пăрса лартма ĕлкĕрнĕччĕ те ĕнтĕ.

## 6. ЧАНЛАХ ҪИЕЛЕ ТУХАТЬ

Калама та ҫук пăлханса кайнă ҫынсем бандита ялалла ҫав тери кăшкăрашса, ҫухăрса, ним ăнланмалла мар шавласа илсе пычĕҫ.

— Вĕлерес ăна халех!

— Ҫакăнтах ҫапса пăрахас!

— Пилĕкне хуҫас, вырăнтан та ан хускалтăр!..

— Кутăн ҫакас, пĕтĕм пырши-пакарти йăтăнса тухтăр эсрелĕн!..

— Пăркăҫлас пулать...

— Мĕн кĕтсе тăмалли пур — тӳпелес тавай!

Юнашар пыракансем бандита сисмен хушăрах ăҫтан тивнĕ унтан паркаласа илме пуҫларĕҫ. Хăщĕ чышкăпа,

хăшĕ çĕçĕ аврипе, хăшĕ алла тытнă рычаг вĕçĕпе. Лешĕ, ним тума пĕлмесĕр унталла та кунталла çаврăнкаласа, йăлăнма пуçларĕ:

— Тархасшăн, ан тивĕр... Тархасшăн, ан вĕлерĕр...

Кун пек йăлăнни халăха тата ытларах хускатса ячĕ, вăл тарăхнине татах вăйлатрĕ.

— А-а, тархасшăн-и? Эсир хăвăр, мур пуçĕсем, тархасланине пăхатăр-и? Шеллетĕр-и çынсене?

— Миçе айăпсăр чуна пĕтертĕр?

— Мĕн чул çынна макăртрăр?

— Ы-ых, чунилли!..

Бандита малтанхинчен те хытăрах чышкалама тапратрĕç. Тахăшĕ çурăмĕнчен пысăк лаптак чулпа хаплаттарчĕ. Капла ырă ĕç пулас çуккине кура, Тарас халăха лăплантарма пикенчĕ:

— Ан çапкалашăр, юлташсем! Совет влаçĕ ун пек тума хушмасть. Хăвăрах япăх пулма пултарать уншăн.

— Мĕншĕн? Вăрра хĕненĕшĕн-и?— кĕрлесе кайрĕ халăх.

— Вĕсемшĕн тем тума та юрать те, пире мĕншĕн юрамасть?

— Закон тăрăх ответ тыттаратпăр ăна, чышкăпа мар!— кăшкăрчĕ Тарас.— Никам та пўрнепе те тĕкĕннĕ ан пултăр!

Ял патнелле çывхарсан, бандита çавăтса пыракан халăха хирĕç Иливан — ял Совет секретарĕ — мăн çăматăпа лăпăстатса çитрĕ. Халăх чарăнчĕ.

— Ăçта вăрри? Хăшĕ?— ыйтрĕ те вăл сăмси витĕр, хăрах аллипе тимĕр кăшăллă куçлăхне тытса, халăх хушшинелле кĕрсе кайрĕ.— Çакă-и? Мĕн вăрланă вăл, прохвост эдăки?

— Назарăнне лаша илсе тарма тăнă,—терĕ тахăшĕ.

— Ах, подлец, ах, подлеццă!.. Ну, айтăр ман хыççăн!

Тул çутăлса килчĕ. Бандита хурал пўрчĕ патне илсе пычĕç. Темле чарма тăрăшсан та, халăх лăпланма пĕлмерĕ (ытла пурте тарăхса çитнĕ-мĕн хурахсем çине!). Асăрхаса пынă çĕртех, бандитăн пуçне çапса шăтарса пăрахрĕç, пичĕсене тăрмаласа пĕтерчĕç, кĕпине çурса тăкрĕç...

— Председатель ăçта?— ыйтрĕ Иливанран Тарас.

— Виçĕмкунах Вăратин пасарне кайнă.

— Милицие патне ярас пулать.

— Ёлкĕрĕпĕр-ха, малтан хамăр килти майпа допрос тăватпăр.

— Допроса следстви органĕсем тăваççĕ...

Иливан, куçлăхне сăмси вĕçнерех антарса лартса, Тарас çине пăхса илчĕ. Хăрах куçне хĕсрĕ.

— А эс мĕн? Учитель-и? Хамăрах лайăх пĕлетпĕр, салтак юлташ. Ялта эпир власть! Санăн тăхтас пулать-ха пире вĕрентме!

Вăл хăварт çавранчĕ те, хурал пӳрчĕ умне илсе тухнă сĕтел хушшине кĕрсе ларса, папкине салтма тытăнчĕ. Халăх çаплах шавларĕ, бандит çинелле кĕпĕрленсе пычĕ, çĕр тĕрлĕ ыйту парса кăшкăрашрĕ. Тарас, халăх хушшинчен Исая чĕнсе илсе, пӳрт хыçнелле илсе кайрĕ.

— Итле, тусăм, паян кунта ĕç ытлашши пулса кайма пултарать. Иливан темшĕн милицие чĕнтересшĕн мар. Тавай, лашуна утлан та халех вулăса вĕçтер. Милици яччăр. Хут ма çырса паман тесен, ял Советсем килте çук, тесе кала. Атя, халех яра пар...

Исай килĕшсе пуçĕпе сулчĕ те çавăнтах килне чупрĕ. Тарас сĕтел патнерех кайса тăчĕ. Иливан хăйĕн папки ăшĕнче чакалансан-чакалансан темле сар хутсем кăларса хучĕ, куçлăхне тасатса тăхăнчĕ, сайра хĕрлĕ сухалне якаткаласа илчĕ.

— Ну, ристанне кунтарах илсе килĕр-ха!— терĕ вăл юлашкинчен, ик аллипе сĕтел пуçĕнчен тытса. Бандита харăсах темиçе çын çурăмĕнчен чышса, сĕтел умнелле тĕртсе кăларчĕç. Вăл Иливан çине куç илмесĕр пăхма тытăнчĕ.

— Кала тӳррипе, кам эс?— хыттăн пуçларĕ Иливан, мăйне пăркаласа. — Тĕрĕссипе кала, атту эпир сана халех йăмра тăрринчен туртса çакма пултаратпăр. Илтрĕн-и?

Бандит чĕнмерĕ. Вăл ответ парасса пĕр çур минут пек кĕтсе тăнă хыççăн Иливан тепĕр хут, тата хытăраххăн ыйтрĕ:

— Ну, калатăн-и? Кам эс? Аçти арçури?

Бандит каллех ответ памарĕ, Иливан çине çав тери сивĕ, курайман куçĕпе шăтараса пăхса тăчĕ çеç.

— Кала, теççĕ сана!— кăшкăрчĕ Иливан, сĕтел çине çапса.— Е халех вилессӳ килет-и?

Бандит пĕр утăм малалла ярса пусрĕ те, ывăннă лаша пек хашкаса, шăл витĕр:

— Мĕн ыйтатăн, палламан пек?—терĕ.

Иливан кăпăр-капăр ура çине сиксе тăчĕ.

— Мĕн терĕн эс?

— Палламастӑн-и-мӗн, терӗм. Лайӑхрах пӑх, эппин: Пӑшатан эпӗ!

— Какой-такой Пӑшатан?

— Ҫапласкерех. Эс мана пит лайӑх пӗлетӗн.

— Ах, йытӑ вилли!—ҫухӑрса ячӗ Иливан, сӗтел хушшинчен чупса тухса. Сӑмси темле сасартӑк хӗрелсе кайрӗ унӑн, аллисем чӗтреме тапратрӗҫ.— Ӑҫтан паллам эп сана? Эс мӗншӗн мана халӑх умӗнче пустуйран намӑс кӑтартатӑн!? Ах...— вӑл виҫӗ хутлӑ намӑс сӑмах лаплаттарчӗ те, Пӑшатан ҫине сиксе, пӗрре пӗр енчен, тепре тепӗр енчен пӗтӗм вӑйӗпе ҫапрӗ.

— Ан ҫап, Иливан!— кӑшкӑрчӗ кун хыҫҫӑн Пӑшатан та, янах шӑммине тытса.— Ай, пӗрле ӗҫсе-ҫинисене мантӑн-и? Эс пире суя лаша хучӗсем туса панӑшӑн эпир сана мӗльюнсем тыттарнӑ чух ыталансах юрлаттӑмӑрччӗҫке?! Эх, сысна!.. Килсе тӑр халӑх умне манпа юнашар!

Иливан хӑйне такам пуҫран тукмакпа ҫапнӑ пекех каялла сулӑнса кайса ларчӗ. Чарӑлса кайнӑ куҫӗпе халӑха ухмаха ернӗ ҫын пек пӑхса ҫаврӑнчӗ, унтан аллипе Пӑшатан ҫине тӗллесе, ҫинҫе сасӑпа ҫухӑрма тапратрӗ:

— Суять вӑл! Юри калать! Эп нихӑҫан та тӗл пулман унпа! Мана вараласа хӑй хӑтӑласшӑн. Вӗлерес пулать ӑна халех! Тытӑр, ҫапса пӑрахӑр!..

— Мӑнъялта пӗркун виҫӗ мӗльюн илнине мантӑн-и?— кӑшкӑрчӗ Пӑшатан каллех.— Хам алӑпа тыттартӑм, астумастӑн-и?!

— Суять! Суять...— малтанхинчен те хытӑрах ҫухӑрса ячӗ Иливан.

Вӑл тата темскер каласшӑн пулчӗ, анчах та Пӑшатан сӑмахӗсем хыҫҫӑнах юпа пек хытса тӑнӑ халӑх халь мӗн пулнине тавҫӑрса илчӗ те, пӗр харӑс ӗрлесе ярса, унӑн сассине путарса лартрӗ.

— Ах, Иуда!..

— Намӑссӑр, кӗҫҫе пит!

— Вӑт, шуйттан!

— Пирӗн юна сутса пурӑннӑ...

— Ҫыхас ӑна!

— Иккӗшне те пӗрле ҫакас!..

Халӑх Иливан ҫине кӗпӗрленсе пыма тапратрӗ. Иливан стена ҫумӗнчи сак ҫине хӑпарса кайса, кӗтесе йӑпшӑнчӗ:

— Эп мар! Эп айӑплӑ мар! Элеклет вӑл!..

Ун пуҫӗнчен кӑшт аяккарах ҫеҫ хӳмене ҫур кирпӗч

пырса çапăнчĕ. Кирпĕчрен пăрăнма ĕлкĕрчĕ кăна — ун еннелле ал туйии вăркăнчĕ.

— А-а-а!..

— Чарăнăр! Шăпланăр!— кăшкăрса сак çине тăчĕ Тарас.— Чакăр каялла! Халех милицисем килеççĕ!

Пĕр вăхăтлăха халăх лăпланкаларĕ. Унтан каллех шавлама пуçларĕç, ним ăнланмалла мар пулса тăчĕ.

— Давай, допрос ту, Тарас!

— Халăх умĕнче каласа кăтартчăр!

— Каламасан, халех пăркăçлас...

Милицисем килсе çитиччен халăха епле те пулин чарса тăрас тесе, Тарас допрос пекки тума тытăнчĕ. Малтан Пăшатанран пуçларĕ.

— Ăçтан килтĕн эс кунта?

— Килтен...

— Килӳ ăçта сан?

— Вăрманта, кашни тĕмĕ айĕнче.

— Пит те шутник пулас эсĕ... Махорка бандинче çӳретĕн-и?..

— Çавăнта.

— Хăй ăçта вăл халь?

— Пĕлместĕп.

— Ан суй. Хăвна япăх пулать. Кала тӳррипе: ăçта Махорка?

Пăшатан кăштах тытăнса тăчĕ, унтан темскер каласшăн пулса çăварне уçрĕ çеç — сасартăк тахăшĕ сăнчăр вĕçне çыхнă кĕренке пуканĕпе ăна пуç тӳпинчен туртса çапрĕ. Кăкран каснă юман пекех лаплатрĕ çĕрелле бандит, йынăшаймарĕ те...

Халăх кăрах каялла чакрĕ.

— Кам çапрĕ? Кам çапрĕ?— сиксе тăчĕ Тарас.— Халех калăр, кам çапрĕ?

Никам та ответ памарĕ. Çынсем çăвара шыв сыпнă пекех тăчĕç. Халăх хушшинчен Лява Уртемĕ майĕпе чакса тухса тăкăрлăкалла пăрăннине Тарас кураймарĕ.

Çынсем Пăшатан кĕлеткине çĕртен илсе сак çине вырнаçтарса хунă вăхăтра икĕ милиционер çитсе тухрĕç.

* * *

Пăшатана вĕлерекеннине тупайманнипе тата Иливан пачах тунса лартнă пирки милицисем Энтриялĕнчен çĕрлеччченех каяймарĕç. Нумайăшне допрос турĕç, Иливан килне кайса ухтарчĕç — усси пулмарĕ. Каçалапа тухтăра

илсе килчěç, вăл Пăшатан ўтне касса пăхрě, пуç мимине аркатнă пирки вилнě, терě, унтан пытарма хушрě. Тěттěмленнě вăхăтра милицисем Иливана урапа çине лартрěç те, Совет членěсемпе Тараса ыран ирпе вулăса пыма хушса, тухса кайрěç.

Килне Тарас çур çěр тěлнелле çеç таврăнчě. Вăл пыриччен Микуль амăшне пěтěмпех каласа панă иккен.

— Асту, ывăлăм, асăрханарах çўре, тем туса хурěç тата. Халăхě пит усалланса кайрě халь,— терě амăшě Тарас çине кăмăллă куçěпе пăхса.

— Ан кулян, ним те пулмасть пире!—ал сулчě Тарас.— Ху мěнле? Паян килсе курма та вăхăт пулмарě.

— Çăмăлланать пек-ха. Халь эс килтěн те, вилес те килмест...

— Эп таврăниччен вилес килетчě-им вара?— кăшт куларах ыйтрě Тарас.

— Ун чух — пурпěр пěтмелле, теттěм çав...

— Çук, анне, халě пирěн пěтесси иртрě ěнтě. Курăн акă, çěр çула çитсен те вилес килмě!

— Темле-çке... Пурнăç юлашкине те пулин этемле пурăнса ирттерсен аванччě те...

Тарас çенěке тухса выртрě. Икě талăка яхăн çывăрман пулин те, пуçра темěн тěрлě шухăш явăннипе, вăл нумайччен куç хупмарě, ир еннелле тин тěлěрсе кайрě, анчах нумай та çывăрмарě — кěтў хăваланă вăхăтра сиксе те тăчě. Шăмшакне çемçетме гимнастика туса илчě, пилěк таран сив шыпа çăвăнчě те, амăшěн сывлăхě çинчен ыйтса пěлчě. Йăпăр-япăр чей věретсе ěçтерчě ăна, хăй те пěр-ик стакан ěçрě, унтан вулăсалла тухса утрě.

Вăл пынă чух кантурта никам та çукчě-ха; Тарас, кунта ěçлекенсене кěтсе, хаçат тытса ларчě. Тěнчери лару-тăру çинчен çырнисене пăхса тухрě. Республика пурнăçě çинчен пěлтерекен хыпарсене вуларě. Аван хыпарсем... Лере завод ěçле пуçланă, кунта фабрика тўрлетсе çитернě, çěнě кěпер хывнă.

Урамран сăран пиншаклă, хул хушшине брезент портфель хěстернě, сухалне нумайранпа хырман лутраках çын кěчě. «Волком РКП(б)» тесе çырнă алăк патне çитсен, вăл чарăнса тăчě те Тарасран ыйтрě:

— Хăш ялтан килнě эсě, юлташ?

— Энтриялěнчен.

— Николаев Тарас мар пуль те?

— Шăпах çавă.

— Илтнĕччĕ сан ҫинчен. Атя, кĕр...

Тарас сăран пиншаклă ҫын хыҫҫăн пĕр чӳречеллĕ пĕчĕк пӳлĕме кĕрсе, ҫĕмрĕк хыҫлă пукан ҫине ларчĕ.

— Камран илтме пултарнă вара эсир ман ҫинчен, эп киле таврăнни те виҫĕ кун кăна-ҫке?— ыйтрĕ вăл волком секретарьне куҫĕнчен пăхса.

— А эп укомра пултăм, мана унта каларĕҫ. Эс учета тăнă вĕт?

— Тăнă.

— Ну, вот... Сана халех ĕҫе кӳлме хушрĕҫ. Пĕлетĕн-и, ҫынсем ҫитмеҫҫĕ. Ĕҫĕ — темĕн чухлех, ним туса ҫитерме те ĕлкĕрейместпĕр...

Вăл портфелĕнче тем шырама тытăнчĕ. Тарас секретарĕн пӳлĕмне йĕри-тавра пăхса ҫаврăнчĕ. Стенасем ҫинче Карл Маркспа Ленин сăнĕсем тата тахҫанхи кивĕ плакатсем ҫакăнса тăраҫҫĕ: «Пролетарий, на коня!», «Все на Врангеля!», «Долой попов и кулаков!» Стенисем те, маччисем те тĕтĕмпе хуралса ларнă. Урайĕнче — ҫӳп-ҫап...

«Тасатма та вăхăт тупаймаҫҫĕ пулас»,— шухăшларĕ Тарас.

Волком секретарĕ хăйне кирлĕ хута тупса сĕтел ҫине хучĕ, вăраммăн сывласа ярса, ҫамкине шăлкаларĕ.

— Манăн питĕ пысăк хуйхă-ха паян, Николаев юлташ,— терĕ вăл.— Бандитсем ман йăмăка персе пăрахнă... Вăрмана ĕне ҫитерме кайнă-мĕн те вăл, пачах ҫухалнă. Килтисем ăна икĕ кун шыранă, тупайман. Ĕнер хамăр ялти пĕр ҫын пушăт касма кайнă та ăнсăртран унăн виллине курнă... Халь ҫеҫ илсе таврăнтăмăр. Шутсăр шел, хĕрачи пит лайăхчĕ, ҫамрăк, вунултă ҫул кăна тултарнăччĕ. Ним сăлтавсăрах пĕтрĕ. Тăнлавĕнчен пенĕ...

— Хăҫан пĕтерсе ҫитерĕпĕр эпир вăл тискер кайăксене?— терĕ ку хăрушă хыпара шăл ҫыртса итлесе ларнă Тарас.

— Пĕтĕмĕшпе илсен, Махорка бандине пĕр-икĕ эрне каялла аркатрăмăр ĕнтĕ эпир. Анчах та хăй тарса ӳкнĕ. Унпа пĕрле тата темиҫе ҫын пулмалла-ха.

— Ĕнер пирĕн патра пĕрне тирпейлерĕҫ...

— Епле? Аҫта тытнă?

Тарас ялта мĕн пулнине йĕркипе каласа пачĕ.

— Н-да... Тĕлĕнмелле ку,— терĕ волком секретарĕ, сăмахсене тăсса.— Бандита хыҫалтан пырса вĕлерни — питĕ иккĕлентерекен япала. Ахальтен пулман ку, тусăм, унта темскер пурах...

— Хам та çапла шутлатап.

— Вăл каласа кăтартма пуçласан вĕлерчĕç тĕтĕн-и-ха?

— Çапла.

— Ну, эппин, иккĕленмелли çук: ăна хăйсен шайккинчи çынах тунă.

— Ма ун пек шутлатăн?

— Нивушлĕ ăнланаймастăн , чăннине каласа парса ыттисене тыттарасран!

— Кам пĕлет вĕсене, тен, чăнах та çапла-и?— терĕ Тарас, аллисене ик еннелле сарса.

— Çаплах вăл, çаплах. Итле эс чекист пулнă çынна... А леш сирĕн килти чиновникĕнчен епле пулсан та сведенисем ытларах пăчăртаса кăларма тăрăшас пулать. Тен, татах çыхăнусем палăрĕç.

— Председатель таçта кайса кĕнĕ-ха пирĕн.

— Ăна та хытă хыпашласа пăхмалла. Секретарь вăл ĕçсене тунах пулсан — пĕччен туман. Иккĕшĕ пĕрле пулнă вĕсем. Тепĕр енчен, председатель хăй хутшăнман пулсан та — айăплă. Пичетсем ун аллинче пулма тивĕçлĕ, Иливан суя хутсене пичетсĕр тăвайман...

— Тĕрĕс.

— Кун хыççăн сирĕн ял Совечĕн пĕтĕм ĕçне тĕпренех тĕрĕслеме тивет. Эпир юри комисси туса ярăпăр сирĕн пата. Май пулсан, хам та пырăп. Эс мĕнле унта, чухăнсемпе ĕçлесси çинчен шухăшласа пăхрăн-и? Çамрăксене пухса пĕрлешетересси пирки епле?

— Çук-ха, вăхăт пулмарĕ. Тин çеç килтĕм те-ха.

— Ĕçлеме тытăнас пулать...

Волком секретарĕпе Тарас хушшинче пит те кирлĕ, ĕçлĕ калаçу пуçланса кайрĕ. Пĕр ыйтуран тепĕр ыйту патне куçса, хальхи вăхăтра ялта ĕç мĕнле пулса пымалли, яла мĕнле çулпа илсе пымалли çинчен пĕр-ик сехет ытла калаçрĕç вĕсем.

— Революцие эпир ахальтен мар, пĕтĕм пурнăçа тĕпрен улăштарса, социализм патне илсе пымашкăн тунă. Анчах та социализм —хăйне хăй пулакан япала мар, ăна тумашкăн куллен пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле...

Пӳлĕме пĕр вуник çулхи арçын ача чупса кĕчĕ. Хашкама ернĕскер, вăл сăмси айне кĕпе çанни вĕçĕпе шăлса типĕтрĕ те:

— Иван пичче, мĕн çав... Сана почтăна пыма каларĕç. Халех килтĕр, терĕç. Хуларан кĕлихвонпа чĕнеççĕ, тет...

Волком секретарĕ, сĕтел хушшинчен хавăрт тарса, карттусне тăхăнчĕ.

— Чуп, кайса кала, халех пыратăп,— терĕ вăл ачана. Унтан Тарас еннелле çаврăнчĕ.— Çапла, Николаев юлташ. Пырса тĕрĕслĕпĕр, тасатăпăр, шанчăклă çынсене лартăпăр. Анчах эсир те ан сывăрăр унта, витĕмлĕрех пăхăр. Çамрăксем çинчен ан ман. Сывпул!

* * *

Махоркăпа Чалăшкуç хăйсен юлташĕ таврăнасса вăрманти пĕр çырмари кивĕ утар пӳртĕнче кĕтсе выртрĕç. Вăл Энтрияльне Лява Уртемĕ патне кайнă каçах, ир енне те пулин килмеллёччĕ, анчах хĕвел те тухрĕ, кăнтăрла та çитрĕ, каç та пулчĕ — Пăшатан çаплах таврăнмарĕ. Ури ыратнипе, хырăмĕ выçнипе, Махорка тискер кайăкран та ытларах усалланса кайрĕ.

— Ну, килтĕр кăна, тыллатăп эп ăна пĕрре! Йĕксĕк, пĕлмест-и-мĕн вăл кунта çын асапланнине!

— Пăрахса тармарĕ-ши пире?— сăмах хушрĕ Чалăшкуç, ним тума аптранă май çĕççипе сак хĕррине касса.

— Пулма пултараймасть, ăçта кайтăр вăл ухмах?

— Тен, лекрĕ пуль.

— Мур пĕлет...

Çав вăхăтра сасартăк пӳрт çумĕнче такам ерипен пусса утни илтĕнчĕ. Махоркăпа Чалăшкуç, йăпăртах револьверĕсене туртса кăларса, алăкăн ик енне тăчĕç.

«Вăл-ши, вăл мар-ши?...»

Çын çенĕке кĕчĕ, хуллен кăна пӳрт алăкне туртса уçрĕ те пĕр урине шалалла ярса пусрĕ. Тĕттĕм пирки çыннăн сăнĕ курăнмарĕ, анчах та ку Пăшатан марри паллă пулчĕ, вăл пулсан, сас памалла. Çавăнпа та Чалăшкуç, çав çын пĕр утăм ярса пуссанах, ăна ĕнсинчен револьвер аврипе çапса ӳкерчĕ те ун çине хăпарса выртрĕ.

— Пĕр сас та ан кăлар!..

Махорка шăрпăк çутрĕ. Чалăшкуç айĕнче хăйсен юлташех, бандăра пĕрле çӳренĕ Шишка тенĕ этем иккен.

— Аçтан килсе лекрĕн эс кунта?— сиввĕн ыйтрĕ унтан Махорка.

— Хам та пĕлместĕп,— терĕ Шишка, кĕпи-йĕмне тӳрлеткелесе.— Ах, ытла хытă çапрăн-çке...— вăл ĕнсине хыпашласа илчĕ. — Эпĕ виçĕ кун вăрман тăрăх хырăмпа шуса çӳрерĕм. Наган та таçта тухса ӳксе юлнă, шуйттан! Çимелли пур-и сирĕн мĕн те пулин?

— Çук.
— Турттарăр апла пулсан.
— Ав, мăк тăпăлтарса турт.
— Çветтуя тухрăмăр, эппин.
— Чим акă, тен, Пăшатан илсе килĕ,— терĕ Чалăшкуç.— Ăна кĕтетпĕр-ха эпир...
Анчах тем чул кĕтсен те Пăшатан таврăнмарĕ...
— Кĕтсе усси çук, кайрăмăр!— терĕ юлашкинчен Махорка,— лекнĕ вăл ăçта та пулин...
— Ăçта кайăпăр?— ыйтрĕ Шишка.
— Пырсан — курăн.
Вĕсем пӳртрен тухса сăртран анчĕç те çырма тăрăх утрĕç. Махорка, ури питĕ ыратнă пирки, пĕтĕм тĕнчене ылханса пычĕ. Ирччен вăл Энтрияльне çитесшĕнччĕ, анчах хытă утайманнипе вĕсем çур çула çитсенех тул çутăла пуçларĕ. Ирĕксĕрех пĕр ял хĕрĕнчи пуш арпалăха пытанса, тепĕр каçчен кĕтмелле пулчĕ вĕсен. Махорка ним чĕнмесĕр, вăхăтран вăхăта шăлне шатăртаттарса, намăс сăмахсемпе вăрçса кăна выртрĕ.
Каçхине, ялти сасăсем лăплансан, бандитсем каллех малалла утрĕç. Автансем иккĕмĕш хут аватнă тĕле Энтрияльне çитсе, Лява Уртемĕ патне анкартти енчен пырса кĕчĕç. Уртем вĕсене тахçантанпах кĕтнĕ пекех йышăнчĕ, тӳрех çӳлти хутри чăлана — никам курас çук çĕре илсе кайса вырнаçтарчĕ.
— Ĕçмелли пар та, çитер мĕн те пулин,— терĕ нимрен малтан Махорка, шалтах халтан кайнăскер.
Уртем мĕн кирлине илсе пычĕ. Махорка никам çине пăхмасăрах пĕр стакан тултарса ĕçрĕ те:
— Пăшатан килчĕ-и сан пата?— тесе ыйтрĕ.
— Килчĕ те, усси пулмарĕ,— терĕ Уртем, куç харши айĕпе пăхса.
— Мĕн апла?..
— Тытрĕç те тирпейлерĕç.
— Эх, тăм пуç!— сурчĕ Махорка.— Таврара мĕн илтĕнет? Пирĕн çинчен пĕлеççĕ-и?
— Пĕлеççĕ. Пурте савăннă.
— Ытла час савăнаççĕ. Чим-ха, ура тӳрлентĕр, çĕнĕрен пуçлатăп акă! Савăнĕç вара...
Тата тепĕр стакан тултарса ĕçсен, сĕтел çинчи апата уйăхĕпе выçă çӳренĕ кашкăр пек хыпма тытăнчĕ.
...Бандитсем ĕçсе-çисе тăрансан, Уртем Махоркăна куç хĕссе пӳрте чĕнсе кĕртрĕ те Пăшатанпа ĕç мĕнле

пулни çинчен, хăй ăна мĕншĕн вĕлерни çинчен каласа пачĕ.

— Аван тупă апла пулсан,— терĕ Махорка, ним хĕрхенмесĕр.— Ăна кам тытнă терĕн-ха эс?

— Тăлăх Хветуç ывăлĕ, Тарас, анчахрах салтакран таврăннăскер,— пĕлтерчĕ Уртем.

— Тытса шаккас пулать ăна...

## 7. ÇАМРĂКСЕМ ЧĂМĂРТАНАÇÇĔ

Вулăсран таврăнсан тепĕр кунне Тарас Микишпа тĕл пулса калаçрĕ те, вĕсем каçалапа çамрăксене пухма шут турĕç.

Самаях иккĕленсе, хăюсăртараххăн пычĕç шкула çамрăксем. Никам та пĕлмерĕ: мĕн тума чĕннĕ вĕсене? Мĕншĕн кирлĕ пулнă ку пуху? Мĕн çинчен калаçассĕ-ши ĕнтĕ?

Çапах та, шкула пĕр вăтăр çынна яхăн пухăнчĕç. Хĕрсене те чылайăшне чĕнтернĕччĕ, анчах пурĕ те иккĕн çеç пычĕç вĕсем: Варукпа унăн юлташĕ Марине. Хăшĕсем — çăмăлтарах чĕлхеллисем — вĕсенчен тăрăхлама та пăхрĕç, анчах Варук çавăнтах хирĕç касса хучĕ:

— Эпир те сирĕн пекех çăкăр çиместпĕр-и-мĕн?

Кăштах тăхтасан, сĕтел хушшинче ларакан Тарас, ура çине тăрса, пухăннисене пăхса çаврăнчĕ те:

— Пуçлатпăр пуль, тăвансем,— терĕ.

Çамрăксем шăпах пулчĕç.

— Эпир сире паян хамăрăн пурнăç çинчен калаçса пăхма пухрăмăр... Ытти нумай ялсенче çамрăксем тахçанах çакнашкал пухусем туса ирттереççĕ, пĕрле пуçтарăнса, тĕрлĕ ĕçсем пирки сӳтсе яваççĕ. Пирĕн ун пеккисем пулман-ха, паян пĕрремĕш хут... Çавăнпа та паян ытларах калаçма тивет пулĕ.

Тарас хăйĕн сăмахне аякран пуçласа, васкамасăр, майĕпе илсе пычĕ. Вăл патша вăхăтĕнчи хăрушă пурнăç çинчен, вунçиччĕмĕш çулта Российăри рабочи класс — ĕçхресченĕсемпе пĕрле — мĕншĕн революци туни, революци хыççăн çамрăк Совет республики çине тапăннă интервентсемпе шалти тăшмансене епле аркатса тăкни çинчен, малашне пурнăç епле пулса пымалли, пурнăçа юсаса аванлатма хальхи вăхăтра вăя хĕрхенмесĕр нумай ĕçлемелли, кĕрешмелли çинчен каларĕ. Çамрăксем ăна шăппăн, ним хускалмасăр, пĕр-пĕр халап итленĕ пекех интересленсе

итлесе ларчӗç. Анчах унӑн сӑмахӗ мӗнпе вӗçленессине никам та тавçӑрса илеймерӗ-ха.

— Пирӗн çӗршыва, пирӗн пӗтӗм пурнӑçа, ӑна юсаса малалла ярассине хальхи вӑхӑтра Коммунистсен партийӗ ертсе пырать,— терӗ Тарас малалла.— Коммунистсен партийӗ вӑл рабочи класӑн малта пыракан отрячӗ пулса тӑрать. Коммунистсен партийӗсӗр пуçне пирӗн тата çамрӑксен коммунистла союзӗ пур, ӑна кӗскен РКСМ теççӗ. РКСМра малта пыракан ӗç çамрӑкӗсем пӗрлешсе тӑраççӗ. Илтнӗ-и эсир ун çинчен?

— Илтнӗ,— сас пачӗç пӗр-иккӗшӗ.

— Çамрӑксен коммунистла союзӗ, урӑхла каласан— РКСМ, Коммунистен партин пӗрремӗш помощникӗ пулса тӑрать, вӑл ертсе пынипе ӗçлет, ӑна пур ӗçре те хӗрӳллӗн пулӑшать...

Тарас малалла комсомол ӗçӗсем çинчен кала пуçларӗ. Вӑл ку чухнехи çамрӑксен хӑйсен пӗлӗвӗсене сарса пырасси, тӗн сӗрӗмӗпе, тӗттӗмлӗхпе кӗрешсе культурлӑха хӑпартасси, ялхуçалӑхне çӗнетесси, пур ӗçре те малта пырасси, ӗççыннисен пур тӗрлӗ тӑшманӗсемпе кӗрешесси çинчен тӗпӗ-йӗрӗпе каласа пачӗ.

— Пӗр сӑмахпа, юлташсем, комсомолӑн çӗнӗ ялшӑн, çӗнӗ пурнӑçшӑн кӗрешмелле...

Вӑл, самантлӑха чарӑнса, класра ларакансене тепре пӑхса çаврӑнчӗ те малалла каларӗ:

— Хальхи вӑхӑтра нумай ялсенче РКСМ ячейкисем тунӑ ӗнтӗ. Ак, сӑмахран, Уйкасрах пур вӑл. Вӗсем эпӗ халь çеç каланӑ ӗçсене тӑрӑшсах туса пыраççӗ. Эпир те хамӑр ялта çавӑн пек ячейка туса ӗçлеме тытӑнас тетпӗр... Малтанах калатӑп: ку пӗтӗмпех ирӗклӗ япала. Комсомола никам та ирӗксӗрлесе çырма пултараймасть, унта çамрӑксем хӑйсен кӑмӑлӗ пулнипе çеç кӗреççӗ. Кам çырӑнас тет, çав çырӑнать... Çавӑн пек çеç. Ыйтса пӗлмеллисем пулсан, ыйтӑр, хам мӗн пӗлнине ӑнлантарса парӑп.

Класра ларакансем пӗри те чӗнмерӗç. Вӗсем пӗр-пӗрин çине пӑхкаласа илчӗç çеç. Пӗр-ик минут пек иртсен тин хыçалтан пӗр сасӑ:

— Унта çырӑннӑшӑн пире мӗн тухать?— терӗ.

Пурте каялла çаврӑнса пӑхрӗç. Ку ыйтӑва параканни — ялта кӑрчама пит ӑста тӑвакан пӗр хусах арӑм ывӑлӗ, тӑрри кӑшт шӑтӑкрах Микстур Михали тенӗскер пулчӗ.

— Шалу параççӗ сана, кунне çӗр тенкӗ,— тӑрӑхларӗ тахӑшӗ.

Çамрăксем лахăлтатса кулса ячĕç.

— Кулса мар, эп чăнах ыйтатăп,— ура çине тăчĕ Микстур.— Ман вăт тăхăнма ним те çук, мана шăлавар парсан тем пекчĕ...

Каллех кулчĕç. Тарас шавлама пуçланă çамрăксене шăплантарса, кун пирки ăнлантарса пачĕ, унтан татах ыйтусем пама сĕнчĕ. Ыйтусем ытла тăруках пулмарĕç, анчах та майĕпе çамрăксем хускала пуçларĕç-пуçларĕçех. Тĕрлĕрен япаласем çинчен пĕлесшĕн пулчĕç вĕсем. Тарас пурин кăмăлне те тултарчĕ. Ыйтусем пĕтсен, вăл:

— Ну, юлташсем, калаçса çитертĕмĕр пулас, урăх ыйтса пĕлес текенсем çук курăнать... Халь çырма пуçлăпăр,— терĕ.— Калăр, камăн çырăнас кăмăл пур? Вăтанса ан тăрăр...

Каллех, паçăрхи пекех, никам та чĕнмерĕ, партăсем хушшинче ларакан çамрăксем каллех пĕр-пĕрин çине пăхапăха илчĕç çеç.

Тарас тепĕр хут каларĕ:

— Кам çырăнас тет? Калăр, хăраса тăмалли нимĕн те çук кунта. Ма нихăшĕ те чĕнместĕр?

Татах пĕр хушă шăп пулчĕ. Унтан вăта çĕрте ларакан Микиш аллине çĕклесе сасă пачĕ:

— Çыр мана...

Тарас çырса хучĕ.

— Тата кам?

— Эпĕ,— терĕ Микишпа юнашар ларакан Исай.

— Тата?

— Эпĕ... Петров Арсений.

— Аха, пăр тапранчĕ!— кулса илчĕ хăй ăссĕн Тарас.— Халь каять ĕнтĕ. Тата кама çырас?

— Мана... Скворцов Иван.

— Мулгачев Николай...

— Ильмаков Петр.

— Тата кам?

Урăх çырăнакансем пулмарĕç. Тарас çамрăксене татах хавхалантара пуçларĕ.

— Мĕн тери йышлăрах пулатпăр, çавăн чухлĕ ĕçлеме авантарах пулать...

— Хĕрсене çырас пулать,— терĕ Арçук.— Ма çыранмаççĕ вĕсем? Варук, Марине, мĕн шăлсене çыртса ларатăр?

— Эпир тăхтар-ха пăртак,— терĕ Марине, хăмла çырли тĕслĕ пулса кайса.

— Çырăнăр ĕнтĕ, çырăнăр,— ӳкĕтлеме тытăнчĕç малтан çырăннисем ыттисене. Çавăн хыççăн тата темиçе çын алă çĕклерĕç. Пурĕ вара вунпĕр çын пухăнчĕ.

— Урăх çук-и ĕнтĕ?— ыйтрĕ Тарас, вунпĕрмĕшне çырсан.— Ну, малтанлăха ку та çитет...

— Хăвна çыртăн-и?— сас пачĕ тахăшĕ.

— Ах, чăнах та, хама мансах кайнă,— кулса ячĕ Тарас. — Çакăнта, аялтан та пулин çырса хурам-ха, эппин... Халь ĕнтĕ ячейка ĕçне ертсе пыма виçĕ çынран бюро суйласа хăварăпăр... Кама суйлас тетĕр? Калăр,— анчах çырăннисем çеç калама пултараççĕ.

— Микиша!

— Сана хăвна!

— Коляна! Арçука!

— Исая!

— Çитĕ... Ан çыр урăх!

Сасăланă хыççăн бюрона Микиш, Коля, Тарас суйланчĕç. Тарас çитес пуху тепĕр пилĕк-ултă кунтан, ячейкăна вулăсра çирĕплетнĕ хыççăн, пуласси çинчен каларĕ те пухăва хупрĕ. Çамрăксем шавлăн калаçса, шӳт туса, урамалла тухма пуçларĕç. Анчах тула тухсанах, калаçу-кулă шăпланса ларчĕ: вĕсем урам тăрăх икĕ милиционер Касăр Куçмана — ял Совет председательне — илсе пынине курчĕç. Ялан пуçне çĕклесе, çынсем çине йăлт та ялт пăхса çӳрекенскер, халĕ çамрăксен тĕлĕпе вăл темле хутланса, çĕрелле пăхса иртсе кайрĕ.

— Куна та лектерчĕç иккен,— терĕ Микиш.— Шалçи тулчĕ пулать...

— Иливан пирки пуль-ха.

— Ăçтан пĕлен, тен, хăех ĕçлесе тупнă?

— Ара, иккĕш те пĕрлех пулнă ĕнтĕ. Пĕр урапа çинче ларнă!

— Çав кирлĕ!

* * *

Çамрăксен пуххи пулни çинчен хыпар çав кунах пĕтĕм ялĕпе сарăлчĕ. Пур çĕрте те Хветуç Тарасĕ çамрăксене «комуна çырни» çинчен калаçма тапратрĕç. Кам мĕнле пĕлет, çавна палкать, илтнĕ сăмах çумне хăйĕнчен хушса калать...

Лява Уртемĕ те илтрĕ кун çинчен. Çавăнтах Махоркăна каласа пачĕ. Лешĕ ăна тӳрех ял хушшинче сăмах ытларах сарма хушрĕ.

— Ун пек ячейкăсем вĕсем пире те нумай чăрмантарма пултараççĕ, сан йышшисене те хĕсме тытăнаççĕ. Тымар яриччен кĕтсе тăма юрамасть, çийĕнчех таптаса тăкмалла. Пупа систер: вырсарникун калатăр вăл мĕн те пулин. Аступар ăна: вăл шайккă чăн малтан чиркĕве пĕтерме тапратать, те.

Еçле пуçларĕ вара кулаксен «агитпропĕ»... Темĕн тĕрлĕ сăмах-халап та, темĕн тĕрлĕ элек те сарма тытăнчĕç ялта комсомол çинчен, унта çырăннисем пирки. Комсомола çырăннинчен хăрушши те çук иккен çĕр çинче!

Пĕр çăл кутĕнче хĕрарăмсем калаçаççĕ:

— Илтнĕ-и эсир, çамрăксем антихрист партине çырăннă, тет.

— Улталаса çырнă, тет, вĕсене.

— Турăран уйрăлтăм, тесе тупа тутарнă, тет, пурне те...

— Кайран вĕсене таçта илсе каяççĕ, тет.

— Кашни çинех темле паллă çакаççĕ пулать...

— Хĕрсем те пулнă, теççĕ, унта...

— Камсем-ши?

— Варукпа Марине, теççĕ...

— Ах, кĕписене уçса вĕлтренпе пĕçертесчĕ пĕрре!

Килте ашшĕпе амăшĕ калаçаççĕ:

— Ванюк килмерĕ-и?

— Çук-ха, иртенпех таçта çÿрет.

— Çав арçури партине çырăнма кайман-ши вăл?

— Ах, тур çырлахтăрах...

— Пĕр те пĕр çырăннă пулсан, эп ăна паянах килтен хăваласа яратăп. Ун шăрши те ан пултăр ман килте! Кăтартăп эпĕ ăна комун...

Тепĕр ирхине ирех Тарас патне Антун ятлă йĕкĕт чупса çитрĕ. Пăлханса кайнă, такамран тарса килнĕ пек хашкать хăй.

— Итле-ха, Тарас... Чĕрсе пăрах, тархасшăн, ман ята,— терĕ вăл макăрас пек сасăпа.

— Ма апла?

— Ахалех.

— Епле ахаль? Кала, мĕн пулнă?

— Килте вăрçаççĕ... Атте каçхине çапса пăрахмах тапратрĕ, киле те кĕртместĕп, тет. Аçта каям эп, килтен хăваласа ярсан? Тархасшăн, хурат...

— Юрĕ, эппин, питех тухассу килет пулсан, хуратăп,— терĕ Тарас. — Пĕлетĕп мĕншĕн кун пек пулнине,

элек сараççĕ пирĕн çинчен, анчах пурăна киле вăл тĕрĕс марри курăнĕ акă. Ун чухне эсĕ те каялла çырăнăн, тата çĕнĕрен кĕрекенсем те нумай пулĕç. Астăвăн ман сăмаха.

— Тен, апла та пулĕ те, эс çапах ман ята хуратса хур...

Антун тухса кайрĕ çеç, Тарас патне тата иккĕн пырса кĕчĕç. Вĕсем те хăйсен ячĕсене хуратма ыйтаççĕ, вĕсене те çавнашкалах ашшĕ-амăшĕсем вăрçса ăнран кăларнă иккен, килтен ним памасăр хăваласа ярассипе, çиелтен ĕмĕрлĕх ылханассипе хăратса пĕтернĕ.

— Пултараймастпăр комсомолта тăма, тем тусан та...

— Эпир сире ним тума та хатĕрленместпĕр-ха, анчах та эсир, ман шутпа, пустуй хăраса ӳкнĕ...

Тарас вĕсене татах ăнлантарма, ӳкĕтлеме тытăнчĕ, анчах лешсем итлесшĕн те пулмарĕç:

— Халех чĕрсе пăрах...

Список çинче хăйсен ятне хуратнине курсанах, вĕсем питĕ хăвăрт тухса кайрĕç.

— Ну, пулать те çав халăх,— терĕ Тарас вĕсем хыççăн кӳренӳпе пăхса юлса,—пасар кун çур пус тăмаççĕ...

Çав вăхăтрах Микиш пырса кĕчĕ...

— Ман килес,— терĕ вăл, сĕтел патне пырса.— Ыр кун пултăр.

— Пит ырах мар-ха çав паянхи кун...—ал пачĕ Тарас.— Ниме юрăхсăр, темелле.

— Мĕн тата?

— Эс пĕлместĕн-и? Ĕнер комсомола çырăннисем пĕрин хыççăн тепри каялла тапса сикеççĕ...

— Э-э... Ăна пĕлетĕп. Илтрĕм.

— Эсĕ те, ăнсăртран, ятна хураттарма килмерĕн пуль те? Яра пар, чаракан çук.

Ку сăмахсем хыççăн Микиш аллинчи карттусне аяккалла хучĕ те Тарас куçĕнчен кăмăлсăр пăхрĕ.

— Ан мăшкăлла, Тарас. Манран нихçан та пулас çук вăл. Эс ман атте мĕнле вилнине пĕлетĕн-и?

— Ну?

— Вăл продразверстка вăхăтĕнче Янашвар куштанĕсем хĕненипе вилчĕ. Сывлăшĕ тухиччен темиçе сăмах çеç каласа хăварчĕ мана: темле йывăр килсен те хам пек пул, халăхшăн тăрăш, терĕ. Çав сăмахсене эп нихçан та манас çук. Ман атте пуян-куштансемпе кĕрешсе вилнĕ, эпĕ те çав йĕрпех каятăп... Нимрен те хăрамастăп!

Халь çеç ача çулĕнчен тухнă вунçиччĕри йĕкĕт çак-

нашкал хёрӳллӗ калаҫни, калаҫнӑ чух унӑн куҫӗ хастарлӑхпа ҫутӑлса тӑни Тараса пит те кӑмӑла кайрӗ. Вӑл ҫемҫеп кӑна кулса илчӗ те, Микиш патне пырса, ӑна хулпуҫҫинчен лӑпкаса илчӗ:

— Ан кӳрен, эп ахаль каларӑм...

Юлташсем пӗр вӑхӑт чӗнмерӗҫ. Унтан сӑмаха Микиш пуҫларӗ.

— Ҫапах та, мӗн тӑвӑпӑр-ха ӗнтӗ халь?

— Мӗнле мӗн тӑвӑпӑр? Ӗҫлетпӗр!— терӗ Тарас.— Тепре каласан, нимех те пулман ытлашши. Хавшаккисем сирӗлчӗҫ ҫеҫ. Паян куна вӗсенчен усси те питех пулмастчӗ пуль. Анчах та, курӑн акӑ, майӗпе каллех килеҫҫӗ вӗсем пирӗн пата!

Тулта урам алӑкӗ хыттӑн уҫӑлса хупӑнчӗ те, чӳрече тӗлӗпе Хӑмӑт Энтри чупнӑ пекех иртни курӑнчӗ.

— Ку мӗн сӑлтавпа килет-ши тата?— шухӑшларӗ Тарас.— Ывӑлӗ пирки мар-ши?

Унӑн шухӑшӗ тӗрӗсех пулнӑ. Хӑмӑт пӳрте кӗрсенех паллӑ пулчӗ вӑл: ырӑ та сунмарӗ, ал та памарӗ, тӳрех кутник ҫине ларса, Тараспа Микиш ҫине куҫ харши айӗпе пӑхрӗ те йывӑррӑн сывласа илчӗ.

— Мӗнле ыр хыпар пур, Энтри пичче?—ыйтрӗ Тарас, ҫав хушӑрах хӑрах куҫӗпе Микиш ҫине пӑхса илсе.

— Ытлашши нимех те ҫук,— терӗ хулӑн сасӑпа Хӑмӑт,— эпӗ хам ача пирки килтӗм.

— Ача пирки? Тем пулнӑ-и-мӗн?— юриех сисмӗш пулчӗ Тарас.

— Пуласси пулман та, пулма пултарать... хӑшпӗрисене итлесе, вӗсем хыҫҫӑн кайсан... Хӑйсем ухмаха ерни ҫитмест, тата ыттисене ертесшӗн хӑйсемпе пӗрле!

— Мӗн ҫинчен апла эс?

— Ҫавӑн ҫинченех!— сасартӑк сиксе тӑчӗ Хӑмӑт.— Сирӗн ҫинчен! Мӗн эсремет ушкӑнне ҫырса хунӑ эсир ман ывӑла? Как имел право ҫамрӑка улталама?

— Чим-ха, Энтри пичче, йӗркипе калаҫ...

— Эп сан пиччӳ мар, эс ман шӑллӑм мар, неччу пирӗн нумай калаҫса тӑма. Ман сӑмахӑм кӗске: халех чӗрсе хур ман ывӑл ятне! Не имеш права ун пек тума!

— Ара, ӑна никам та вӑйпа ҫырман вӗт,— хутшӑнчӗ Микиш.

— «Вӑйпа ҫырман!» Мӗн пӗлет вӑл тӑнсӑр сурӑх? Эсир темтепӗр тыттарса тултарнӑ та — ал йӑтнӑ ӗнтӗ вӑл. Сирӗн чӗлхесем ҫуллӑ вӗт...

— Эс вара пире ултавçăсем вырăнне хуратăн-и?

— Чорт вырăнне хуратăп, ним вырăнне те хумастăп! Çыхланмастăп та, калаçмастăп та! Хуратăр ман ывăл ятне, пĕтĕм ĕçĕ те çавă çеç! А ешĕл тепре çавнашкал тусан, сирĕнпе урăхла та калаçĕç...

— Мĕн тусан?

— Ачасене ашшĕсенчен уйăрса, вĕсене хирĕç тăратсан, вăт мĕн!

— Анчах кам апла тунă-ха? Итле-ха эс, Энтри пичче...

— Ним те итлеместĕп! Ан калăр эсир мана ним те! Хуратăр тетĕп, халех!

Хăмăт вĕриленнĕçемĕн вĕриленме пуçларĕ, сак çинчен сиксе тăчĕ, кăшкăрнăçемĕн сĕтел патне çывхарса пычĕ. Унăн куçĕ темле улшăнса кайрĕ, тутисем кăвакарса чĕтреме тапратрĕç. Вăл кăшкăрни, сăмахсене суйласа тăмасăрах лаплаттарни Тараса самаях тарăхтарма пуçларĕ, пĕр вăхăтра вăл ăна хирĕç кăшкăрса ярасси патнех çитрĕ, анчах та хăйне хăй тытса чарчĕ. Хăмăта текех пӳлмерĕ, пĕтĕмпех каласа пĕтерме пачĕ, унтан чĕлĕм чĕркесе тивертрĕ те лăпкăн кăна:

— Эс çапах та лар-ха, Энтри пичче,— терĕ.—Ура çинче чăнлăх çук, теççĕ. Йĕркеллĕн, пĕрне-пĕри хăратмасăр калаçăпăр. Кăшкăрас тесен, эпĕ те кăшкăрма пĕлетĕп, анчах мĕн усси унтан? Эпир кунта нумаййăн мар, хуллен каласан та илтетпĕр пĕр-пĕрне. Ме, чĕлĕм туртса яр...

Тарас çав тери пăлханмасăр, ним пулман пекех лăпкăн калаçнипе, Хăмăт нимле мар пулса кайса, каллех сак хĕррине ларчĕ. Тарас панă табака чĕлĕмне тултарчĕ.

— Акă мĕн, Энтри пичче, чăн малтанах манăн хампа сана танлаштарас килет,— пуçларĕ Тарас, чикарккине мăкăрлантарса. — Эпĕ кам та — эс кам...

Çĕрелле пăхса, пăхăнуллăн сывласа ларакан Хăмăт пуçне кăштах пăрса, Тарас çине ăнланман куçпа пăхрĕ.

— Мĕн каласшăн вара эс?— ыйтрĕ вăл.

— Çакна каласшăн... Эп сана питĕ аван пĕлетĕп ĕнтĕ, Энтри пичче. Эс хăвăн ĕмĕрӳнте яланах лаша пек ĕçленĕ пулин те, нихçан та çителĕклĕ пурнăçпа пурăнса курман. Ку çитмен те—леш çитмен... Теприсем пек ĕçкĕçикĕ тума мар — праçниксенче те сĕт-çупа аш-какай тăраниччен çимен, çура тухичченех кивçене кайнă. Çапла-и?

— Çапла пултăр,— терĕ Хăмăт, Тарас хăй сăмахне ăçталла пăрнине ăнланаймасăр.

— Эпир те çавнашкалах: нихçан та ыр пурнăçпа пурăнман, пирĕн кашни çулах çимелли çитмен. Ана пĕлетĕн ĕнтĕ эс.

— Пĕлетĕп...

— Ялти «ырă çын» тенисем, Лява тавраш̆ĕ пеккисем, пире нихçан та этем вырăнне шутламан, выльăх вырăнне тунă. Вĕсем урамваррипе утнă, эпир вĕсене курсан сапур çумне йăпшăннă. Çапла вĕт?

— Çапла та-ха вăл, анчах мĕн тума калатăн эс мана кун çинчен?

— Эпир иксĕмĕр те пĕрешкел çынсем, ялти чухăнсем пулнине кăтартса парас тетĕп.

— Ăна эп ахаль те пĕлетĕп...

— Пĕлни сахал, Энтри пичче, ăнланас пулать тата ăна... Эп те чухăн пулсан, эс те чухăн пулсан, пирĕн мĕн пирки пĕр-пĕрне хирĕç пымалла-ха? Сăлтав пур-и ăна валли?

— Сăлтав? Мĕн сăлтавĕ пултăр...

— Тĕрĕс! Пирĕн, чухăнсен, пĕр-пĕрне хирĕç пымалла мар, пирĕн пĕр-пĕринпе пĕрлешмелле, пĕр шухăшлă пулса, пĕр-пĕрне пулăшса пыма тăрăшмалла. Пире Ленин çапла вĕрентет. Совет влаçĕ çавăн пек пурăнма хушать... Сан шутпа мĕнле пек?

— Ара, пĕр шухăшлă пулни аван ĕнтĕ вăл. Ваттисем калашле, пĕччен сурать — типсех пырать, халăх сурать — кӳлĕ пулать...

— Çапла çав. Халь шутласа пăх ĕнтĕ: манăн сана усал тăвас шухăш пулма пултарать-и, çук-и?

— Çук пек те...

— Эс тӳррипе кала мĕн шутланине.

Тараспа Хăмăт куçĕсем тĕл пулчĕç те, вĕсем пĕр-пĕрин çине пĕр минут пек пăхса тăчĕç.

— Ăнланмастăп эп,— терĕ Хăмăт,— тем кирлĕ сана...

— Эс мана ывăлу пирки айăпларăн, çавăн пирки калатăп. Апла та капла улталанă, темскер эсремет ушкăнне çырнă, терĕн. Сан сăмахусем тăрăх, эп ĕнтĕ сан ывăлушăн сиенлĕ япала туса хунă. Анчах та апла мар вăл, Энтри пичче, эс çав сăмахсене тивĕçлипе шухăшламасăр каларăн. Çавăн пек туйăнмасть-и сана хăвна?

Хăмăт чĕнмерĕ. Çунса пĕтнĕ чĕлĕмне тепĕр хут тултарчĕ те каллех мăкăрлантарма пуçларĕ. Пăлханни халĕ унăн пĕтĕмпех иртсе кайрĕ.

— Сан сăмахусене тепĕр çын калană пулсан, эп ăна

тахçанах хулĕнчен çавăтса пӳртрен кăларса ямалла,— терĕ Тарас, Хăмăт сăнĕ епле улшăннине сăнаса.— Анчах сана ун пек тăвас килмерĕ, мĕншĕн тесен эс ăнланма пултаратăн пуль, тетĕп. Эпир çамрăксене пĕр ушкăна пухнăшăн хăрамалли те, ăна тиркемелли те çук, пире хирĕç пыма та кирлĕ мар. Мĕншĕнне каласа кăтартăп эп сана...

...Тараспа Хăмăт хушшинче лăпкă кăна калаçу пуçланса кайрĕ. Микиш та хутшăнчĕ. Хăмăт вара вăл кун ниçхан илтмен тĕлĕнмелле япаласем çинчен пĕлчĕ. Тараспа Микиш пуçĕнче чăнах та аван шухăшсем иккен, ялта сарăлнă сăмахсем суя пулнă-мĕн!

Кăнтăрла çитеспе, килне тухса кайнă чух, вăл ырă кăмăлпах чăмăртарĕ икĕ йĕкĕт аллине:

— Ну, ан ятлăр, эппин, ушипкă пулчĕ паян. Ывăла та пустуйранах урхалăхпа пĕр-ик хут çурăм урлă туртса илтĕм. Эсир калани пекех пулсан, валяй, ĕçлĕр. Чармастăп. Ялта хускатаканни кирлех вăл. Эсир çамрăк-ха, юн вĕри сирĕн, эсир пултармалла...

## 8. ЫРĂ ĔМĔТСЕМ

...Хирти калчасем, улăхсенчи курăксем çав тери сĕткенлĕ симĕсленсе хăпарчĕç, пахчасенче акнă çимĕçсем те тикĕс ӳсрĕç, кăçалхи çул кĕлет пурисем те, нӳхрепсемпе пусăсем те самаях тулли пуласси аванах курăна пуçларĕ. Анчах та çĕнĕ тырă пулас вăхăт пит вăраххăн çывхарса пычĕ, пурнăç йывăрланнăçемĕн йывăрланчĕ, мĕншĕн тесен ял çыннисен çимеллисем йăлт пĕтсе çитрĕç ĕнтĕ. Çынсене выçлăх кунран-кун хытăрах пăчăртарĕ.

Тарас яла таврăннăранпа виçĕ çын — старикпе карчăк тата пĕр тăлăх арăмăн вуник çулхи хĕрачи выçăпа вилсе кайрĕç. Старикпе карчăка унччен малтан вилнĕ чылай çынсене пытарнă пекех, ытлашши хĕрхенмесĕрех, куççулĕсĕрех кайса пытарчĕç. Вĕсем вилни ял хушшинче палăрсах та каймарĕ, анчах тăлăх арăмăн хĕрачи вилнĕ кыççăн чылай хушă калаçрĕç.

Вăл акă мĕншĕн пулчĕ. Хĕрĕ выçă пирки чирлесе ӳксенех, çав арăм, ăна ытла та питĕ юратнă пирки, кунĕнçĕрĕн хуйхăрса, макăрса пурăннă, тет. Ăна епле те пулин сыватма ĕмĕтленсе, кăшт та пулин çимелли тупас тесе, нумай çынсем патне çитнĕ, анчах та никамран та нимĕн те тупайман. Юлашкинчен, Лява Уртемне малтанах парăмлă пулнă пулин те, çавăн патне кайса ыйтнă. Ун умне

чёркуçленсех темиçе кӗренке çăнăх пама тархасланă, тет, анчах лешӗ унпа калаçса та тăман, хăваласа янă. Çавăн хыççăн çак арăм хӗрӗн пуç вӗçӗнчен уйрăлмасăрах ларнă, хăй татти-сыпписӗр, чарăна пӗлмесӗр макăрнă. Тепрер кунтан хӗрӗ вилнӗ, вара арăм çавăнтах ăнран кайса ӳкнӗ. Юрать — кăнтăрла пулнă вăл, ун патне кӳршӗ арăмӗсем пынă-мӗн, атту пулсан хăй те вилсе кайнă пулӗччӗ-и...

Тупăка масар çине илсе кайнă чух çав хӗрарăма ик енчен ик арçын çавăтса пынă, вăл пӗтӗм ăшчиккине тавăрса кăлармалла çухăрнă, пуçӗнчи çӳçне тăпăлтарнă. Тупăк çине çиелтен тăпра сапма пуçласан, вăл çынсен аллинчен вӗçерӗнсе шăтăка сикнӗ, мана та пӗрле пытарăр, тесе кăшкăрнă, ăна аран-аран туртса кăларнă, анчах та вăл çавăнтах улшу каласма пуçланă, çынсенчен аяккалла тарма тапратнă. Килне илсе пырсан, пӗр вăхăт лăпланнă пек пулнă, унтан сасартăк туй юрри юрласа янă, унччен те пулман — турăшсем çине пăхса сăхсăхма тытăннă, анчах темиçе самантранах кӗтеселле сиксе пырса, усал сăмахсемпе вăрçса, турăшсене çӳпӗ шăтăкнелле пеме тытăннă. Тепӗр ирхине ăна урапа çине çыхса хурса хулана ăсатнă.

Ку хыпара илтни Тараса шутсăр йывăр шухăша ячӗ.

— Мӗнле чăткаласа ирттерӗ-ши халăх ку выçлăха? Патшалăх паракан çимӗçсенчен пӗçерсе çитерекен столовăй пур ӗнтӗ, анчах вăл ачасем валли çеç, вӗсене те çителӗксӗр, тата — çитменнине — пит начар ӗçлет тесе вăрçаççӗ ăна. Анне сывлăхӗ самайланчӗ, анчах малашне ăна та темле усрамалла-ха...

Каçхине, тен, Варука тӗл пулăп-и, тесе вăл тăвалла тухса утрӗ. Анчах ун патне çитеймерӗ,— вăта урамра, пӗр пӳрт умӗнче, темиçе çын ларнине курчӗ те вӗсем патӗнче чарăнчӗ. Çынсенчен пӗри хайхи ухмаха ернӗ арăм çинчен каласа парать-мӗн:

— Ним пӗлмиех аташса пычӗ, Йăвана та палламарӗ, тет...

— Аçтан паллатăр ӗнтӗ вăл, ăсӗ картран тухса кайнă пулсан...

— Пӗр вăхăт текех: Уртем Лявонч, тархасшăн, турă пул, çăл мана!..— тесе кăшкăрчӗ пулать.

— Шел, аван çынччӗ. Такки пурнăç ăнмарӗ мӗскӗнӗн... Малтан упăшки хӗн курнă пирки асапланчӗ, халь хăй капла пулчӗ.

— Уртеме асăннă, эппин... Леш, çăнăх ыйтма кайнă

май пулĕ-ха вăл. Асту, Лява таврашĕнчен пулăшу илĕн! Раштавра юр памĕ.

Калаçу татăлчĕ. Çынсем шухăша кайса ним чĕнмесĕр ларчĕç. Каçхи нӳрлĕрех сывлăшра чĕлĕм тĕтĕмĕ йăсăрланчĕ çеç. Çав хушăра ту енчен Варуксен ашшĕ — Назар пырса тăчĕ. Пухăнса ларнисене ыр сунчĕ те, вĕсене кура хăй те чĕлĕмне майлаштарма тытăнчĕ.

— Пĕлме çук, хамăра та тем пулмалла-ха,— терĕ чылай вăхăт иртсен пĕри, Çĕтĕк Якку.— Питĕ йывăр вĕт... Эх, халь пĕр ик-виçĕ пăт тырă пулсассăнччĕ! Епле телей пулĕччĕ.

— Ăна ан та асăн ĕнтĕ,—терĕ куна хирĕç Назар.

— Малашне ăслăрах пулас пулать пирĕн, епле пулсан та тырă ытларах тума тăрăшмалла,—сăмах хушрĕ Тарас, пĕрене пуçне ларса.

— Çĕрĕ чăх çӳремелĕх çеç пулсан, ăçтан нумай тăватăн ăна?— кăмăлсăр ыйтрĕ Çĕтĕк Якку.—Мачча çине акаймастăн вĕт-ха!

— Ют çĕршывсенче сахал çĕр çинчех нумай тырă тăваççĕ...

— Ха! Ют çĕрсенче! Эс кайса куртăн-и-мĕн унта?

— Ун çинчен çыраççĕ, Якку пичче.

— Çыраççĕ! Çырма пулать ăна, эс мана туса кăтарт! Тет хыççăн кайма çук. Тепĕр чух шутсăр яка тытгарса хăвараççĕ.

— Чăнпа суяна уйăрма пĕлес пулать. Ют çĕршывсенче тырă-пулă пирĕннинчен темиçе хут лайăх акса туни çинчен эпир кĕнекесенчен çеç мар, пленра пулнисенчен те пĕлетпĕр.

Калаçăва Назар та хутшăнчĕ:

— Ку тĕрĕс ĕнтĕ, Якку... Тарас чăн калать. Эп хам куçпах курнă ĕнтĕ ăна, мана суймалли çук. Анчах та унта ĕçлессе те пирĕн пек ĕçлемеççĕ çав, шатах машинăсемпе ĕçлеççĕ те, çĕрне темĕн тĕрлĕ майпа та юсаса пыраççĕ.

— Пирĕн çук-ха вĕт вăл!

— Пурăна киле — пулать.

— Хăçан пулать-ха?

— Тепĕр тесен,—терĕ Назар малалла,— нумай çĕрсене ахаль сая яратпăр эпир, ни ĕçленĕ — ни ĕçлемен...

— Ун пекки çук пирĕн,—хăй шухăшĕ çинех тăчĕ Якку.

— Епле çук?— тĕлĕннĕ пек ыйтрĕ Назар.—Суккăр мар пуль эсĕ? «Пиçен уйне» ăçта хуратăн?

— Мĕн вара?

— Сая каймасть-и-мĕн вăл? Çĕр аллă теçеттина яхăн сая каять!

— Епле сая каять, акатпăр-иç? Инçерех пирки акман анасем юлкалаççĕ те ĕнтĕ...

— Кăçал кайса курнă-и эс унта?

— Кайман.

— Кайман пулсан ан та калаç. Çурри ытла ахаль выртать, акнисене те пиçен пусса илнĕ.

— Пĕлтĕр вăрлăх пулмарĕ те ара...

— Вăрлăх пулнă çул та çав манерлех ĕнтĕ, мĕн калăн! Çĕртен мăшкăллатпăр çеç.

Яккупа Назар хушшинчи тавлашу хĕрмех пуçларĕ, вĕсен тавлашăвне ыттисем те хутшăнса пычĕç.

Чăнах та, Энтриялĕн ялтан вуникĕ çухрăмра пĕр 150 теçеттина яхăн çĕр пулнă. Германи вăрçи умĕн темиçе çул малтан юлашки хут вунвиçĕ ял хушшинче çĕр йĕркеленĕ чухне сутăнчăк мишавайсем юри туса хăварнă, тет, çавна. Инçе пирки, вăл çĕрпе Энтрияльсем кирлĕ пек усă курайман. Ни вăхăтра çĕртме туман, ни тивĕçлипе сухаласа сӳрелеймен, çавăнпа та унти анасем çинче ялан пиçен чашкăрса ларнă, çавăн пиркиех вăл çĕре «Пиçен уйĕ» тесе ят панă. Пуринчен малтан унти çĕр чухăнсене, лашасăррисене усă сахал кӳнĕ. Вĕсем хăйсен анисене е вуçех акмасăр хăварнă, е пуянсене тара панă... Пуянсем кунти çĕре хапăл тусах тара илнĕ, мĕншĕн тесен çĕрĕ ку тутă пулнă, лайăх ĕçлесен, пархатарне те нумай кӳнĕ...

Вăрçă тухиччен ялти хăшпĕр çынсем — вăл шутра Варуксен ашшĕ Назар та — кунта выçелкă тăвасси çинчен те калаçкаланă-мĕн, анчах та вăрçă пуçланнă пирки ку ĕç пулса çитеймен.

...Тавлашура Çĕтĕк Яккăва путарса лартрĕç. Пурте пĕр шухăшпах килĕшрĕç:

— «Пиçен уйĕнчи» çĕр пĕртте начар мар, анчах усă сахал парать, мĕншĕн тесен ăна кирлĕ пек ĕçлени çук. Пуянсем çеç ыр кураççĕ вăл çĕрпе.

— Пысăк тупăш илеççĕ çав!

Варуксен ашшĕ хăйĕн тахçанхи шухăшне хушса хучĕ:

— Унта пурăнма куçас пулать, унсăрăн май тухмастех, кирек мĕн калăр. Пĕрре тапранса каймалла та çав, эпир вырăнтан хускалма пит хăратпăр-çке! Унта акмалли çĕрĕ çеç мар, вăрманĕ те, çаранĕ те, шывĕ те пур... Эсĕ вăт юриех ман пата пыр-ха,— терĕ вăл Тарас еннелле

çавранса,— эп сана планттине кăтартăп... Пĕр çирĕмвăтăр килтеп çав тери лайăх выселкă тума пулать!

Çавăнтах вăл выселка çурчĕсене хăш вырăна лартсан, епле тусан аван пуласси çинчен калама тытăнчĕ. Кун çинчен Назар нумай шухăшланă иккен, пĕтĕмпех палăртса хунă. Унăн сăмахĕсемпе пурте килĕшрĕç, пĕр Çĕтĕк Якку çеç хăй иккĕленнине палăртрĕ.

— Тем-çке... Пиртен пулас çук пуль вăл. Ахаль те вăйсăр пурăнатпăр та, вырăнтан тапрансан пуçĕпех арканса кайăпăр.

— Вăл ĕçе пĕрле тăвас пулать, пĕр-пĕрне пулăшса,— терĕ ăна хирĕç Тарас.— Пурте пĕр шухăшлă пулсан, нимрен те хăрамалли çук. Ленин виçĕмçулах хресченсен эртельсем туса ĕçлемелли çинчен каланă. Эртельпе ĕçлекенсене патшалăх та пулăшать, кивçен машинсем парать...

— Эпир пĕрле ĕçлеме пĕлместпĕр-çке, пирĕн кашни хăйшĕн çеç çунать...

— Майĕпе хăнăхаççĕ! Çынпа çыннăн ĕмĕчĕсем пĕрешкел пулсан, вĕсем кирек хăçан та калаçса татăлма пултараççĕ.

— Тĕрĕс сан сăмаху,— çирĕплетрĕ Назар.

Килсене саланас умĕн вăл Тараса тепĕр хут чĕнчĕ:

— Эс, чăнах та, пыр-ха пĕрре ман пата, планттине кăтартăп эп сана...

— Юрĕ, пырăп,— терĕ Тарас.

...Çĕрле ăшă çумăр çурĕ, анчах ирччен иртсе кайрĕ вăл. Пĕлĕт яланхи пекех тап-таса пулчĕ, хĕвел питĕ илемлĕн шуса тухса сарăлчĕ, çумăрпа йĕпеннĕ йывăççем темле çамрăкланнă пек курăнчĕç, унта та кунта кайăксем чĕвĕлтетрĕç.

Тарас пит лайăх кăмăлпа вăранчĕ те тӳрех каçхи калаçăва аса илчĕ. Пĕр вăхăт шухăшласа выртрĕ:

— Тулкăллă калаçрĕç... Ку «Пиçен уйĕ» пирки тĕплĕрех сӳтсе явас пулать. Чăнах та, пĕр 20—25 килпе куçса ларсан, хуçалăха тĕпренех çĕнĕлле туса пыма пулать... Пĕтĕм тавралăхшăн пример пултăр. Варуксен ашшĕ план пур, терĕ, халех кайса пăхас çавăн патне...

Çапла шухăшсемпе хăвăрт сиксе тăчĕ те тумланма тытăнчĕ.

* * *

Варукăн ашшĕ-амăшĕ çинчен эпир каласа кăтартнăччĕ ĕнтĕ. Питĕ ĕçчен, тăрăшакан, тирпейлĕ çынсем пулнă вĕсем. Ачи-пăчине те лайăх пăхса ӳстернĕ, йĕркеллĕ те

ёҫчен пулма хăнăхтарнă; вĕсен ачисем, хăшпĕрисен пек, ял тăрăх йытă хăвалаҫа чупман, ҫапăҫса, ашкăнса ҫӳремен, кӳршĕсене тарăхтарман. Ҫавăн пиркиех Назар ҫемйи ҫинчен ялта ырăпа ҫеҫ асăннă. Ҫавăн пиркиех Варук хĕр ҫулне ҫитсен, ăна илес текенсем нумай пулнă, евчĕсем вуншар ҫухрăмран та пынă. Анчах та Варук — Тарас ҫара кайнă чух ăна ҫирĕп сăмах панăскер — каясшăн пулман, сăлтавне амăшне каласа панă. Назар кун ҫинчен пĕлсен хăйĕн хĕрĕн кăмăлне хуҫас темен, темиҫе сăмах ҫеҫ каланă ăна:

— Ну, асту, хăвăн кăмăлу, кайран пире ан ӳпкеленĕ пултăр...

Тарас яла таврăнсанах, Назар ăна сăнама тытăннă, хутран-ситрен арăмĕпе те калаҫса илнĕ ун ҫинчен. Вăл коммунист пулнине пĕлсен, Назарăн шухăшĕсем ик еннелле кайма пуҫланă, анчах Тарас унăн лашине вăрлама пынă бандита тытсан, ял хушшинче ялан сăпайлă та йĕркеллĕ пулнине курсан, иккĕленме пăрахнă. Хăй ăшĕнче вăл Варук Тараспа пĕрлешсен телейлĕ пуласса ĕмĕтленнĕ. Ҫав сăлтавпах, Варук ҫамрăксен пуххинче пулни ҫинчен пĕлсен те хĕрне сив сăмахпа чĕнмен. «Хĕрарăм ĕҫĕ мар вăл пуху-сем тăрăх ҫӳресси»,— тенĕ ҫеҫ.

...Вĕсем патне Тарас кĕтмен ҫĕртен пырса кĕчĕ. Пырса кĕчĕ те, пӳртре никам та ҫуккине кура, алăк патĕнчех чарăнса тăчĕ. Анчах чăланта такам кăштăртатнине илтсен:

— Ман килес, ыр кун пултăр,— тесе сас пачĕ.

Чăлантан Варук пуҫĕ курăнчĕ. Вăл тутăрсăрах, ҫара пуҫăнах, ҫӳҫ пĕрчисем куҫĕ ҫине аннă, пичĕ хĕрелсе кайнă. Тараса палласан, вăл пуҫне чаррах шалалла илчĕ.

— Иртсе лар... Эп пуҫтарăнаймарăм-ха паян, пӳртре те ним латти те ҫук, ан тирке ĕнтĕ...

— Юрĕ-ҫке, эп хăна мар,—терĕ Тарас, тăрăхла сак ҫине пырса ларса.— Мана аҫу кирлĕччĕ.

— Вĕсем аннепе иккĕш пахчана тухрĕҫ, халех кĕрет пуль.

Тарас пӳрт ăшчиккине пăхса ҫаврăнчĕ, унтан чӳрече ҫинче выртакан кĕнекене уҫкалама тытăнчĕ. Темиҫе страница уҫсанах:

— Ку «Нарспие» кам вулать сирĕн?— тесе ыйтрĕ.

— Петюк шкултан илсе килнĕччĕ те... эп те вуларăм.

— Епле, кăмăла кайрĕ-и?

— Кăмăла кайма ҫеҫ мар, Маринепе иксĕмĕр вуланă чух куҫҫулĕпех макăртăмăр, ачам.

— Ҫав териех-и вара?

— Çав териех пулмасăр?.. Мĕнле кăна çырма пĕлнĕ пуль!

— Ма?

— Ара, ытла та пурнăçри пек каласа панă. Сăмахĕсем те шутсăр чĕре çумне пырса çыпăçаççĕ.

— Сирĕн те Нарспи пек пулас килчĕ пуль?—кулса илчĕ Тарас.

— Çук... Малтан хăюллă та вăл, кайран хăйне хăй пĕтерет. Эп апла тăвассăм çук, темле йывăр пулсан та, хăтăлма тăрăшмалла. Пурнăçа мĕншĕн пĕтерес? Этемĕн пĕрре анчах вĕт вăл...

Варук чăлантан тухрĕ. Хĕр тумланма та ĕлкĕрнĕ. Пуçĕнче сарă тутăр, умĕнче илемлĕ кĕрен саппун, питĕ килĕшуллĕ! Киленсех пăхрĕ Тарас ун çине:

«Аван та-çке эс... Нарспирен пĕртте кая мар...»

Тултан ашшĕ кĕчĕ, вăл пĕрре Тарас çине, тепре хĕрĕ çине пăхса, вĕсене куçĕпе виçсе илчĕ.

— Хăна пур-çке...

— Эп ĕнерхи пирки килтĕм,—терĕ Тарас.

— Леш планттă пирки-и?

— Ия çав.

— Юрать, юрать... Çиччас пăхăпăр.

Варук пӳртрен кил хушшинелле тухрĕ. Назар, сентре çинчен пушăтран тунă пештĕр илсе, ун ăшĕнчен тăрăхла чĕркенĕ сарă хут туртса кăларчĕ те сĕтел çине сарса хучĕ.

— Акă вăл... Кур. Çак юпаран пуçласа мăн çул патне çитиччен, унтан хысна вăрманĕ таран — пĕтĕмпех пирĕн ял çĕрĕ,— ăнлантарса пама тытăнчĕ Назар, шĕвĕр пӳрнине хут тăрăх шутарса.— Кунта акă вĕтлĕх, ку — çаран, ку леш Çутшыв... Калăпăр, выселкине çак тĕле, çырма хĕрнерех лартсан, пит аван пулать. Шывĕ те çывăх, выльăхсене кăларма та вырăн пур, тата кĕрхи-хĕллехи çилсенчен те хӳтĕ. Ку вĕтĕ вăрманлă çырмара темиçе уçланкă пур, унта утар тума стайлă вырăн. Ак çак тĕле пĕве тусан, кашни пахча хысĕнчех шыв пулать...

Назарăн пур шухăшĕсемпе те Тарас килĕшсе пычĕ. Вăл килĕшнине кура, Назар пушшех хĕрӳллĕн каласа пачĕ хăйĕн шухăшĕсене.

— Тăвас пулать çавна, тусассăн, тупата, майсăр хӳхĕм пулать! Çынсем çĕнĕ çĕр шыраççĕ, анчах та вăл пирĕн çывăхрах пур, шырама та кирлĕ мар, пĕр-ик çул çине тăрса ĕçлемелле çеç... Мĕнле шутлатăн?

— Сан пекех шутлатăп...

— Апла пулсан, хускатас пулать вăл ĕçе. Мĕнрен пуçлассине пĕлетĕн ĕнтĕ эсĕ. Тусах çитерсен, пит чаплă ĕç пулĕччĕ!

— Юрĕ, Назар пичче, эпĕ кун пирки кирлĕ çĕрте калаçăп,— терĕ Тарас.— Анчах та, пуринчен малтан, çыннисемпе килĕшес пулать. Нумайăшĕ хирĕç тăма пултараççĕ.

— Камсем хирĕç тăччăр?

— Чухламастăн-и? Ĕлĕк вăл çĕртен ыр курса пурăннисем. Курăн акă, мĕн пулĕ...

Назар аллипе сулчĕ:

— Халăха хирĕç ним те тăваймаççĕ вĕсем! Çĕр — пирĕн, халăхăн, Совет саккунĕ пур ун пирки. Çитет ĕнтĕ вĕсене ĕлĕк ашкăнни те.

...Тата чылай вăхăт сăмах вакласа ларсан, Тарас киле кайма ура çине тăчĕ. Назарпа вĕсем пĕр шухăшлă пулчĕç ĕнтĕ: «Писçен уйне» куçас ыйтăва халех хускатмалла, çынсен кăмăлне çавна майлă çавăрмалла. Çенĕкре Тарас тултан кĕрекен Варука тĕл пулчĕ. Вĕсем пĕр-пĕрине куçран пăхса илчĕç те Тарас Варука хулĕнчен хуллен кăна тытса чăмăртарĕ:

— Каçхине тух...

— Юрĕ,— терĕ Варук, килтисенчен кам та пулин курасран часрах шалалла кĕрсе.

## 9. ТУСМЕ ÇУК МĂШКĂЛ

Урампа аналалла аннă чухне Тарас пĕр кил хушшинче ачасем йышлăн шавланине илтрĕ. Сахалтан та хĕрĕхаллă ача пухăннă та çĕмĕрлеççĕ çеç... Кун чухлĕ ача-пăча мĕншĕн пухăннине малтанах ăнланаймарĕ вăл, унтан, ку Мамун килĕ пулнине асăрхаса, тавçăрса илчĕ: ачасем столовăйне пынă иккен.

«Кĕрсе пăхас-ха юриех, мĕнле çитеркелеççĕ вĕсене?»— тесе шухăшларĕ те вăл, ачасем патне пычĕ.

— Апат çиме килтĕр-и, шăнкăрчсем?

— Апат çиме-е...

— Ăçта çитереççĕ сире?

— Пӳртре-е.

— Ма кĕместĕр, эппин?

— Инки кӳртмест те, халех мар, тет те...

— Епле, апачĕ тутлă пулать-и?

— Тутлă-ă...

— Тăранма çитет-и?

— Çитмест ça-ав...

Пӳрт алăкĕ умне Мамун матки — хыткан, тăсланкă хĕрарăм тухрĕ те ачасем çинелле:

— Кĕрĕр, катăршни полкки!— тесе кăшкăрчĕ. Ачасем харăсах пӳрт патнелле ыткăнчĕç, тăрук пырса тулнипе алăкра хĕсĕнсе ларчĕç, пĕр-иккĕшĕ çухăрса яма та ĕлкĕрчĕç. Мамун арăмĕ татах кăшкăрчĕ:

— Э-э, шуйттан ачи-пăчи! Акă, çапă илĕп те пĕрре!..

Çавăнтах ик-виç ачана çурăмĕсенчен чышкаласа та илчĕ.

Ачасене кун пек туни Тараса питĕ тĕлĕнтерчĕ: вĕсем пӳрте кĕрсе пĕтсен, шалта мĕнлине курас тесе, вăл та хыççăн кĕчĕ. Пӳртре саваламан хăмасенчен тукаланă темиçе ансăр та вăрăм сĕтел ларать иккен, вĕсем тавра сак пеккисем тунă, анчах саккисем питĕ лутра, ачасем ларсан, сĕтел хĕрри вĕсен янахĕсем тĕлĕнче пулать. Урайĕнче тахçанхи çӳп-çап, таса мар, нихçан çуман пекех. Кусем татах тĕлĕнтерчĕç Тараса.

— Нивушлĕ никам та килсе пăхмасть çакна? Вăт, пулать те-мĕн халăх!..

Мамун арăмĕ пысăк хура витререн ачасем умĕнчи тăм чашăксене пĕрер çăпала шӳрпе ярса, кашнин умне пĕрер пĕчĕк татăк çăкăр хурса пачĕ те, Тарас çине темшĕн сиввĕн пăхса илсе, тулалла тухрĕ. Выçă ачасем каçса кайсах çиме тытăнчĕç. Тарас, сĕтел патнерех пырса, чашăксенчи апат çине пăхрĕ: унта темле кăвакрах пăтранчăк шыв янă, шывра хура чăмăрккасем ярăнса çӳреççĕ.

— Хури мĕн вăл?— ыйтрĕ Тарас пĕр ачинчен.

— Хури-и? Кăмпа. Типĕтнĕ кăмпа!

— Тата мĕн янă?

— Тата... пăрçа янă.

Ача, чашăкра пăрçа тупма хăтланса, кашăкĕпе чылай ухтарчĕ, аран-аран темиçе пĕрчĕ тытса кăларкаларĕ.

— Акă...

— Ну, çиех, çиех...

Тарас пуçне сулса тарăннăн сывласа илчĕ те алăк патнелле пĕр-ик утăм ярса пусрĕ çеç — сасартăк ачасенчен пĕри шариех кăшкăрса ячĕ:

— А-а-а!

— Кушакайăк!— кăшкăрчĕ тепри.

— Шăши!..

Тарас хăвăрт кăна каялла çаврăнса пычĕ.

— Мĕн пулчĕ, ачасем?

— Уçăп чашкинчен шăши тухрĕ!

— Чăнах-и?

— Ав выртать...

Ачасем кашăксене пăрахсах, шăши тупса кăларнă ача тавра пухăнчĕç. Тарас калама та çук тарăхса кайрĕ. Часрах çенĕке тухрĕ те, кĕлет умĕнче тем туса тăракан Мамун арăмне чĕнсе илчĕ:

— Инке! Кĕр-ха наччас.

— Мĕн тума?

— Кĕр-ха, кĕр. Ĕç пур.

Мамун арăмĕ кĕчĕ, Тарас ăна тӳрех сĕтел çинче выртакан йĕпе шăши вилли çине тĕллесе кăтартрĕ:

— Мĕн çак?

— Ăçтан тупрăр кăна?— сив куçпа пăхрĕ Мамун арăмĕ.— Ачасем сĕтĕрсе килнĕ пуль ĕнтĕ...

— Ачасем мар çав, какай вырăнне ярса пĕçернĕ эсир ăна!

— Эс пустуй ан калаçса тăр кунта, суккăр тетĕн-и мĕн мана?

— Ăна пĕлместĕп эпĕ, анчах та шăши çак ача чашкинчен тухрĕ! Акă, пурте курчĕç... Тунса тăмалли çук!— татса хучĕ Тарас.— Мĕн хăтланатăр эсир? Тӳсме çук мăшкăл вĕт ку! Темле пулсан та, ку япалана ахаль ирттерсе ямастпăр, калаçатпăрах халăх çинче.

Мамун арăмĕ, çак сăмахсене илтсен, сасартăках кăшкăрса пăрахрĕ Тараса:

— Эс мана ан хăрат! Çакăн чухлĕ салаттуй каманди валли ху пĕçерсе пăх-ха эс малтан, курăн вара!

— Пултараймастăн пулсан, çыхланма кирлĕ мар.

— Эпир мĕн, вăйпа çыхланнă-и? Пире халăх хушнă!

— Халăх хушнă пулсан, ĕçе лайăх тăвас пулать...

— Санран пырса вĕренмеллеччĕ пуль... Ай, столовăя хăвăн аллуна çавăрса илес килет-и? Çавăнпа лаккаса килтĕн пуль-ха? Пĕлетпĕр эпир сирĕн пеккисене!

— Мĕн пеккисене?

Кунта калаçса тăнинчен усси пулас çуккине кура, Тарас Мамун арăмне кĕскен кăна:

— Пухура, халăх умĕнче ответ тытăн!— терĕ те тухса утрĕ. Лешĕ ун хыççăн ним майсăр усал сăмахсемпе вăрçса, çĕтĕлсе юлчĕ.

«Епле ирсĕр япала! Халех тĕрĕслес пулать ку ĕçе...»— тарăхса пычĕ Тарас.

Килте Микуль столовăй пирки тата тепĕр япала каласа кăтартрĕ. Иккĕмĕш черетри ачасем çинĕ чух пĕр арăм пычĕ, тет те, ман хĕрачана мĕншĕн улталаса ятăн, çăнăх ултă кĕренке вырăнне — пиллĕк те тухмарĕ, тесе каларĕ, тет. Мамун арăмĕ ун çине кăшкăрма, ăна темтепĕр калама пуçларĕ, тет. Юлашкинчен çапăççах кайрĕç, тет, иккĕшĕ. Леш çăнăх хутаççипе çапрĕ, тет. Мамун арăмĕ алтуйипе тӳпелеме тапратрĕ, тет. Çынсем чупса пырса чарчĕç, тет, вара...

* * *

Столовăйĕнче мĕн пулса иртни çинчен часах пĕтĕм ял пĕлчĕ, мĕншĕн тесен киле таврăннă хыççăн ачасем кашниех хăйсен ашшĕ-амăшĕсене каласа панă, тата ун пек усал хыпар ахаль те пит час сарăлать. Пур çĕрте те кун пирки хаяррăн калаçрĕç.

Тарас чĕнтернипе, каç кӳлĕмпе ун патне — пĕрин хыççăн тепри — комсомола çыраннă çамрăксем пухăнчĕç. Сăмах каллех паянхи истори тавра çаврăнчĕ, çамрăксем столовăйĕнче унччен малтан пулнă ирсĕрлĕхсем çинчен каласа пачĕç. Тĕрĕссипе каласан, столовăй мĕн уçăлнăранпах ним латтисĕр ĕçлесе пынă иккен, ун пирки час-часах харкашусем пулса иртнĕ. Пурне итлесе сăмах вакланă хыççăн Тарас çапла шут туса хучĕ:

— Текех кун пеккине тӳссе пурăнма юрамасть, ку ĕçе шанчăклă çын аллине парас пулать. Халĕ пĕтĕм шанчăк— столовăй çинче, вăл йĕркеллĕн ĕçлесен çеç ачасене çĕнĕ тырăччен усракалама май пулать.

Ку шухăшпа пурте килĕшрĕç.

— Кама шанса пама юрать-ши?— ыйтрĕ çамрăксенчен пĕри.— Каллех кукăр аллă çынна парас марччĕ...

— Ана тупăпăр,— терĕ Тарас,— нивушлĕ вара пирĕн ялта тӳрĕ кăмăллă çын пĕрре те çук?!

Сăмах ялти урăх ĕçсем çине куçрĕ. Пуринчен малтан, ял Совечĕ пирки хускатрĕç.

— Иливанпа Каçăр Куçмана тытса кайнăранпа эрне те иртрĕ, анчах мĕншĕн-ха вĕсем çинчен нимĕнле сас-хура та илтĕнмест? Ялта хуçасăр пурăннă пек пулса тухать вĕтха капла,— терĕ Исай.

— Вăл-ку кирлĕ пулсан, никам патне те кайма çук.

— Кусене хупса лартнă-тăк, çĕнĕрен суйлас пулать...

— Ялĕнче ĕçĕ тем чухлех халь. Хĕллех каласса татăлнăччĕ: Мăн çырмапа Хăямат кĕперĕсене халех юсама-

лла. Тулли лавпа пырса кӗме те хӑрушӑ вӗсем ҫине, кӗлте кӳртнӗ чух тем курмалла пулать-ха...

— Униче картисем те юхӑнса выртаҫҫӗ.

Тарассен кил хушшинче ҫынсем калаҫнине илтсен, Павӑл пичче йӑкӑшт кӑна карта урлӑ пӑхса илчӗ. Кунта пӗтӗмпех ҫамрӑксем пухӑннине курсан, юриех интересленчӗ вӑл: «Ку ӗне чӗрни пусман халӑх мӗн ҫинчен калаҫать-ши?». Анчах та ҫамрӑксем кирлӗ ӗҫсем ҫинчен калаҫнине кура — тӳсеймерӗ, сӑмах хушрӗ:

— Тарас Петровччӑ, мана — ват ҫынна — калама юрать-и?

— Ма юрамасть, каласам,— терӗ Тарас, ытти пур ҫамрӑксемпе пӗрлех ун еннелле ҫаврӑнса пӑхса.

— А вӑт эсир ҫӗр валеҫес пирки мӗн шутлатӑр? Ҫӗртме умӗн ҫӗр валеҫес пулать пирӗн, мӗншӗн тесен вилекенсем те, ҫуралакансем те пулчӗҫ...

— Ку та тӗрӗс,— хушса хучӗ Микиш.

— Ӑна та ял Совечӗсӗр тума ҫук.

— Тата шкула та юсамалла,— терӗ малалла Павӑл пичче,— унта пӗр юрӑхлӑ кӑмака та ҫук, пӗренесем хушшипе хӗлле ҫил ачисем чупаҫҫӗ. Ӗҫҫине тухса кайиччен тӑвас пулать ҫавна...

Калаҫнӑҫемӗн палӑрса пычӗҫ ялта халех тумалли ӗҫсем. Пӗрне те вӑраха яма юрамасть, вӗсене вӑхӑтра тумасан, ялти пурнӑҫ каллех йӗркеллӗ пулмасть. Пур ӗҫсене те пуҫарса яракан, ертсе пыракан кирлӗ, анчах та вӑл ҫук-ха паян кун...

— Ыран эсӗ мӗн тӑватӑн?— ыйтрӗ Тарас Микишран, калаҫусем пӗтсен.— Ерҫетӗн-и?

— Ерҫетӗп, ытлашши нимех те ҫук.

— Апла пулсан, эпир иксӗмӗр вулӑса кайӑпӑр. Тен, хуланах ҫитӗпӗр. Хускатса васкатас пулать унта та. Каплла май килмест.

— Эсир вара унта пӗтӗмпех каласа парӑр,— терӗ Павӑл пичче.— Ҫӗр пирки те ан манӑр.

* * *

...Тӗттӗмленсен, Тарас Варук патне тухса утрӗ. Варук ӑна яланхи вырӑнтах, лаҫ пуҫӗнчи каска ҫинче кӗтсе ларать-мӗн. Пӗркунхи пек мар, халӗ вӑл Тарас аллине хӑюллӑн тытса чӑмӑртарӗ те тӳрех хӑйпе юнашар ларма сӗнчӗ. Тарас та, ҫаварӗнчи чикарккине туртса пӗтерсенех,

сылтăм аллине унăн çурăмĕ хыçнелле ячĕ. Калаçмалли сăмахсем часах тупăнчĕç.

— Ай, паян ирхине хăратса пăрахрăн-çке эс мана!— терĕ Варук.

— Мĕнпе?— тĕлĕнерех ыйтрĕ Тарас.— Нивушлĕ эп çав териех хăрушă? Кашкăр пекех-и?

— Ара, тăрук пырса кĕтĕн те...

— Мана аçу ĕçпе чĕннĕччĕ.

— Сисрĕм.

— А эс мана ма пынă пулль терĕн?

— Ним шутлама та пĕлмерĕм...

— Хăвна çураçма пынă, темерĕн-и?

— Çу-ук...

Тарас кулса ячĕ:

— Ун пек пулма пултараймасть-и-мĕн?

— Эп ăçтан пĕлем... Сан пуçăнта тем шухăш...—Варук Тарас çине чеереххĕн пăхса илчĕ те куларах каларĕ:
— Кам пĕлет, тен... тен, санăн тахçанах тĕллесе хуни пур... пĕр-пĕр çӳлĕ пушмаклăскер, кĕске сарапанлăскер...

— Тĕрĕс калатăн, тĕллесе хуни пур çав манăн, тунмастăп,—терĕ куна хирĕç Тарас сăмахĕсене тăсарах, Варука хăй çумнерех тайăлтарса.— Пĕлетĕн-и эс çавна?

— Çук, пĕлместĕп...

— Итле, эппин. Тахçанах тĕллесе хунă эп ăна, çара кайиччене... Анчах вăл çӳллĕ пушмак та, кĕске сараппан та тăхăнмасть, ăна сарă тутăрпа кĕрен саппун питĕ килĕшет...

Варук хăй çинчен каланине сисрĕ те Тараса хулпуççийĕнчен хуллен кăна тĕртрĕ.

— Ан кулса лар...

— Пĕртте кулмастăп.

— Ĕненес килмест ман сана...

— Мĕншĕн?

— Арçынсене пурне те ултавçă, теççĕ.

— Мĕнле арçын вĕт... Пур çынна та пĕр виçепе виçме юрамасть.

— Апла та... Кам пĕлет...

Варук хулĕнчен Тарасăн айăкне ăшă çапрĕ. Вăл ăшă майĕпе пĕтĕм шăмшака саралса, ăна темле çав тери тутлăн ӳсĕртнĕ пек тăва пуçларĕ. Пĕр вăхăтлăха Тарас пуçĕнчен пур шухăшсем те вĕçсе тухрĕç, вăл хăй савни ăшшине çеç туйрĕ. Сисмесĕрех, вăл сасартăк Варука майĕнчен ыталаса илчĕ те, унăн питне хăй еннелле çавăрса, вĕри тутинчен

хыттӑн чуптурӗ. Темиҫе самант хушши сывламарӗҫ вӗсем, хӗрӳленсе кайнӑ чӗрисем ҫеҫ час-часах тапрӗҫ...

— Яр...— терӗ Варук, сывлӑш пӗтсе ҫитнипе пуҫне аяккалла пӑрса.— Вӗлеретӗн...

Унтан вӗсем пӗр хушӑ шарламасӑр ларчӗҫ. Тикӗс сывлама пуҫласан, малтан Варук сӑмах хушрӗ.

— Лаша пекех вӑйлӑ-ҫке эсӗ...

— Пулма пултарать,— терӗ Тарас.— Ҫамрӑк чух ик алӑпа икшер пӑт пуканӗ ҫӗклеттӗмччӗ. Ахальтен мар тимӗрҫ лаҫҫинче ӗҫленӗ пуль.

— Халь ватӑ ӗнтӗ,— кулса ячӗ те Варук, ӑна питӗнчен ачашшӑн лӑпкаса илчӗ.— Ӑҫтан килсе тухрӑн эс ман тӗле...

Пӗркунхи пекех, вӗсем нумайччен пит кӑмӑллӑн калаҫса, чӗрисене йӑпатса ларчӗҫ. Пӗркунхи пекех вӗсен пӗр-пӗринчен уйрӑласси килмерӗ, хӗвелтухӑҫӗ хӗрелме пуҫласан тин вӗсем пӗр-пӗрин аллине хыттӑн чӑмӑртаса:

— Тепреччен,— терӗҫ.

## 10. ТӐШМАНСЕМ ПАРАНАСШӐН МАР

Икӗ кун ҫухалса пурӑнчӗҫ Тараспа Микиш. Виҫҫӗмӗш кунне кӑнтӑрлапа тин таврӑнчӗҫ яла, анчах иккӗшӗ кӑна мар, вӗсемпе пӗрле икӗ лавпа темле палламан ҫынсем килчӗҫ те тӳрех шкула кӗрсе вырнаҫрӗҫ. Кӑштах тӑхтасан, яла тата тепӗр лав пырса кӗчӗ, ун ҫинче ик енче икӗ милиционер, варринче Иливанпа Каҫӑр Куҫма вырнаҫнӑччӗ.

Кун пек ҫынсем килсе тулнинчен тӗлӗнсе, шкул тавра малтан вӗт-шакӑр ачасем, унтан пысӑкраххисем те, ваттисем те пухӑна пуҫларӗҫ. Тӗрлӗрен калаҫрӗҫ кун пирки, вулӑсри (кам пӗлет, тен, уесри?) ҫынсем кун пек йышлӑн мӗн тума килни тата Иливанпа Каҫӑр Куҫмана мӗншӗн яла илсе килни ҫинчен апла та капла шухӑшласа пӑхрӗҫ.

— Ӗлӗк пулсан, халӑх умне сарса хурса юн пӗрӗхиччене пӗҫертетчӗҫ ӗнтӗ вӗсене,— терӗ ҫитмӗл ҫула ҫитнӗ Тимахви мучи, ҫамрӑкраххисем калаҫнине итлесе.

— Эс кам пирки калатӑн?

— Иливанпа Куҫма пирки ара...

Тараспа пӗрле килнӗ ҫынсем — партин вулӑсри комитечӗпе вулӗҫтӑвком—Энтриялӗнчи пурнӑҫа, чӑн малтан ял Совет ӗҫне пур енчен те тӗрӗслеме янӑ комисси пулнӑ. Теплӗн тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн айӑплисене патӗнчех, ял халӑхӗ

умĕнчех суд тума хушнă. Çул çинчи тусанран тасалсанах, комисси членĕсем ушкăнĕпех Мамун столовайне кайрĕç. Унта вĕсем шăпах ачасене апат çитернĕ тĕле пычĕç, хăшĕсем апатне те, çăкрине те тутанса пăхрĕç, ăçта епле пĕçернине сăнарĕç, унтан Мамуна халех шкула пыма хушса хăварчĕç.

— Асту, приход-расхудсене çырнине манса ан хăвар,— асăрхаттарчĕ ăна Тарас, ыттисенчен каярах юлнă-скер.

— Сансăрах пĕлетĕп,— шур куçпа пăхса илчĕ ун çине Мамун. Унтан ăна хулĕнчен тытса самантлăха чарчĕ те: — Пирĕн çула урлă тăтăн, эппин? Курăпăр-ха малашне, тен, тĕттĕмрех çĕрте те тĕл пулма тӳр килĕ!— терĕ.

— Ан хăрат, Мамун пичче, эп ытлашши хăравçах мар, куркаланă,— татса хучĕ Тарас.

Вăл тухса кайсан, Мамун, сĕтел ещĕкĕнчен тĕрлĕ хутсем кăларса, чылайччен вĕсене майлаштарса ларчĕ. Унтан урамалла тухрĕ, анчах та малтан шкула мар, хăйĕн хунчăкăшĕ — Лява Уртемĕ — патне кайрĕ, унпа пĕр çур сехет пек калаçса ларсан тин хăйне чĕннĕ çĕре утрĕ.

Шкула таврăнсанах, комисси председателĕ — типшĕм кăна сарă çын, кăшт сăмса витĕртерех калаçаканскер— Тараса каç валли пуху пухтарма хушрĕ. Хăй, комиссин ытти членĕсемпе пĕрле, Мамун илсе пынă хутсене тĕрĕслеме тепĕр пӳлĕме кĕрсе ларчĕ те каçченех, халăх пуханиччченех, тухмарĕ унтан. Пӳлĕмрен ăнланмалла мар калаçу тата шут шăрçисем шаклатни çеç илтĕнчĕ.

Пухăва халăх вăхăтра пухăнчĕ: ытти чухнехинчен раснах, паян çынсем пуху пуçланасса шавламасăр кĕтрĕç, пĕрне-пĕри хăйсен шухăшĕсене шăппăн пĕлтерчĕç. Ытти чухнехи пек нумай кĕтсе тăма та тӳр килмерĕ, шкул класĕ тулсанах, вулăсран килнĕ комисси председателĕ пухăва пуçласа ячĕ. Павăл пиччене, Хăмăт Энтрине, комсомолецсенчен Исая президиума суйланă хыççăн вăл сăмах калама пуçларĕ.

— Эпир сирĕн пата пит пысăк ĕçпе килнĕ, юлташсем... Сирĕн ялти Совет председателĕпе секретарĕ — халь хыçалти пӳлĕмре ларакан Каçăр Куçмапа Иливан — икĕ çул хушши вĕçĕмсĕр сăтăр туса пурăннă. Халăхшăн тăрăшас вырăнне, вĕсем халăха çаратса, хăйсен кĕсйисене тултарнă, тӳсме çук преступленисем тунă... Следстви ăна пĕтĕмпех кăтартса пачĕ. Халь эпир вĕсене, суд умне тăратса, совет законĕсем тăрăх айăплатпăр, вĕсене пысăк на-

казани пама тивеçлĕ. Анчах та, суд тавиччен малтан, вĕсен ирсĕр сăн-сăпатне тата лайăхрах палăртас тесе, эпир сирĕнпе калаçас терĕмĕр. Тен, вĕсен тата нумай айăпĕсем, путсĕр ĕçĕсем палăрмасăр юлнă пулĕ. Эпир сирĕнтен паян çакăнта вĕсем çинчен мĕн пĕлнине ним пытармасăр каласа парасса кĕтетпĕр. Хăраса тăмалли нимĕн те çук кунта, преступниксене тără шыв çине кăларма пулăшни — хисеплĕ ĕç вăл...

— Эс малтан хăвăр мĕн пĕлнине каласа кăтарт,— терĕ хыçалтан пĕр сасă.— Кайран вара эпир те хушса калăпăр, тен.

Пурте çак сасă еннелле çаврăнса пăхрĕç. Ку сăмахсене Çĕтĕк Якку каланă иккен. Ял Советĕнче пулнисем ăна пит те тарăхтарнă пулас, çавăнпа та вĕсем çинчен вăл халь çирĕппĕн калама ĕмĕтленнĕ.

— Эпир пĕлни акă мĕн,— терĕ комисси председателĕ.— Вĕсем тĕрлĕ вăрă-хурахсемпе, бандитсемпе çыхланнă, вĕсене пулăшнă... Вăрланă лашасене сутма суя хутсем туса панă, Совет влаçĕ чухăнсене пулăшма паракан вăрлăхсене, тĕрлĕ таварсенеултавлă майсемпе хăйсем валли çавăрса илнĕ тата хăйсен çывăх çыннисене валеçсе панă.

Итлесе ларакан халăх сĕрлеме пуçларĕ:

— Вăт, шуйттан пуçĕсем!

— Хура юнсем...

— Эпир çапах та ним шарламасăр пурăнатпăр.

— Персех пăрахас пулать вĕсене...

Комисси председателĕ, пĕр хушă чарăнса тăнăскер, малалла калама пуçларĕ.

— Мĕнле çитменлĕхсем, кăлтăксем, йĕркесĕрлĕхсем çинчен пĕлетĕр, пĕтĕмпех каласа парăр. Вĕсене пĕтерес тесен, вĕсем çинчен пĕлес пулать. Сăмахран, столовăй пирки каласа кăтартма пултаратăр, унта та ĕçсем йĕркеллех мар пулас...

— Ачасен тӳпине вĕсем пĕрле çисе пурăнчĕç!—илтĕнчĕ хыçалтан.

— Какай вырăнне шăши пĕçерессĕ!..

— Пĕр сăмахпа,— терĕ комисси председателĕ,— каллех калатăп: хăвăра çаратса, кӳрентерсе пурăннă çынсене хĕрхенсе ан тăрăр, вĕсем сире хĕрхенмен...

...Шкулта пуху пуласси çинчен пĕлсен, Лява Уртемĕ те шкула кайрĕ. Унта пырсан шала кĕмерĕ вăл, çынсем мĕн калаçнине çенĕкри алăк хыçне хĕсĕнсе тăрса итлерĕ. Шалтан илтĕнекен кашни сăмах ун чĕрине пырса касрĕ,

пырĕ патне темскер капланса пычĕ. Ирĕк пулсан, унта ларакансене вăл çавăнтах темтепĕр каласа, пĕрерĕн-пĕрерĕн лапчăтма хатĕр пулчĕ, анчах халĕ ним тума та çуккипе хытăран хытă тарăхса тăчĕ.

Комисси председателĕ чĕнсе калани пустуй пулмарĕ, Каçăр Куçмапа Иливан ирсĕрлĕхĕсем çинчен пĕрин хыççăн тепри калама пуçларĕç. Чăн малтан паçăрах сас панă Çĕтĕк Якку сăмах илчĕ, вăл ял Совет председателĕпе секретарĕ хăйсене ĕçтерменшĕн çуркунне ăна вăрлăхсăр хăварни, ун тӳпине кайран сутса ĕçни çинчен каласа пачĕ. Ун хыççăн Кулине ятлă тăлăх арăм тăчĕ.

— Эп те калам-ха,— терĕ вăл чĕтрекен сасăпа, халăх умĕнче калаçма хăнăхманнипе пăлханса.— Эп ĕнтĕ тăлăх арăм, ман старик Хĕрлĕ гвардинче вилчĕ... Ман виç ача. Мана пĕччен пуçпа вĕсене пăхса ӳстерме питĕ йывăр, çавăнпа та, иртнĕ кĕркунне ачасене тыră пулнă вырăнсене яраççĕ тенине илтсен, пĕрине те пулин вырнаçтарма пулмасть-ши, тесе шутларăм. Хай эпир тĕттĕм çынсем те, йĕркине-мĕнне пĕлместпĕр те, ыйтса пĕлес тесе Иливан патне кайрăм. Çапла, çапла, терĕм, пĕр ачине те пулин ярасчĕ, терĕм. Атту выçă-çке... Иливан мана: май кӳрĕпĕр, терĕ, анчах ытла тӳрех ним те калаймастăп-ха, председательпе пуплесе пăхмалла, терĕ. Эс халь киле кай, каçхине хамах пырса калăп, терĕ. Ну ĕнтĕ, савăнсах кайрăм киле. Темле пулсан та, тăван ачасем-çке, усрас килет епле те пулин... Хайхискер каçхине пычĕ. Сисрĕм куна — хĕрĕнкĕ. Ун çинчен калаçать, кун çинчен — ман ĕçе асăнмасть те. Унтан çулăхма тапратрĕ çак мана, сысна аçи пек ăрăхлатма пуçларĕ!..

Халăх кулса ячĕ.

— Кулса мар, чăнах!— терĕ Кулине. — Ним тунмасăрах калатăп: асăнмалăх пĕрре çывăрар та — пурте пулĕ, тесе ыталамах тытăнчĕ, йĕксĕк! Çурăмĕнчен чышса кăларса ятăм вара... Тепĕр кунне канцелере каллех кайрăм та, манпа çак калаçмасть те. Темиçе ыйтсан тин: вырăн çук сан ачу валли, тесе хучĕ. Юрать-ха çавăнтах хуларан килнĕ çын пулчĕ, эп унпа калаçрăм та, вăл ман ачана пĕр сăмахсăрах çырса хучĕ. Ак ку шуйттанĕ пулсан — такки ямастчĕ... Мĕн каласси пур, яланах çаплаччĕ вĕсем: пĕр пĕчĕк ĕçшĕнех виç кун уттаратчĕç те тата ялан хăйсене тутаран çу сĕртерме хăтланатчĕç. Тав турра, шалçисем тулчĕç! Хытăрах тыткалас пулать вĕсене! Емĕр асăнмалла пултăр!

Кулине каласа пĕтерчĕ те ларчĕ.

— Тĕрĕс каларăн, Кулине!

— Маттур!

— Çапла кирлĕ!— илтĕнчĕç ырлакан сасăсем.

Комисси председателĕ халăха шăпланса, шавламасăр ларма чĕнчĕ те:

— Тата кам калас тет?— тесе ыйтрĕ.

Халăх хушшинче харăсах темиçе алă çĕкленчĕç. Ку ĕнтĕ пухăва пынисем малашне Каçăр Куçмапа Иливан тата вĕсемпе пĕр майлă пулнă çынсем çинчен нумай калассине пĕлтерчĕ. Итленĕ çĕртех хăвăрт шухăшласа тăнă Лява Уртемĕ çавна сисрĕ те шкултан часрах тухса шурĕ. Килне çитсенех, вăл садри мунча çенĕкĕнче çывăракан Махоркăна вăратса, ăна шкулта мĕн пулса пыни çинчен каласа пачĕ.

Паян ир енне тин таврăнса, кунĕпех çывăрнă Махорка тăруках нимĕн те каламарĕ, арпашса кайнă çӳçне пӳрнисемпе чавса, пĕр хушă йывăррăн сывласа ларчĕ. Унтан мухмăрпа, нумай çывăрнипе какай пекех пулса ларнă пăтранчăк куçне Уртем еннелле çавăрса:

— Лешсем килчĕç-и?— тесе ыйтрĕ.

— Камсем?

— Кам пултăр... Шишкăпа Чалăшкуç.

— Килмен.

— Ну, апла пулсан, хамах тăватăп.

Уртем ун çине ăнланмасăртарах пăхрĕ.

— Мĕн тăватăн?

— Вĕсен пуххине халех салатса яратăп.

— Пухха пырас тетĕн-и?— тĕлĕнчĕ Уртем.— Ан хăтланах. Вара хăвна та, мана та...

Анчах та Махорка ăна каласа пĕтерме памарĕ, аллине çĕклесе чарчĕ.

— Пухăва эс пĕчченех кайăн, ман унта ĕç çук. Эп акă мĕн тăватăп... Кил кунтарах.

...Вĕсем пичĕсене пĕр-пĕрин çывăхне илсе пычĕç. Махорка никама илтмелле мар шăппăн, хăрушă вăрттăнлăхпа темскер çинчен калама тытăнчĕ. Унăн сăмахĕсене итленĕ хушăрах Уртем темиçе хутчен пур еннелле те пăха-пăха илчĕ, кам та пулин пырса курасран, мĕн те пулин илтесрен сыхланчĕ курăнать. Махорка каласа пĕтерсен, вăл тутине çыртса, пуçĕпе сулчĕ:

— Юрĕ...

Çавăнтах вара, карттусне лайăхрах пусса лартса,

садран пысăккăн яра-яра пусса утса тухрĕ те каллех шкула кайрĕ. Кунта халĕ пуху питех те хĕрсе кайнă-мĕн. Çынсем, пĕрин хыççăн тепри тăра-тăра, ялти йĕркесĕрлĕхсем, Каçăр Куçмапа Иливанăн ирсĕр ĕçĕсем çинчен, вĕсен хӳттипе пуян таврашĕсем иртĕнни çинчен калаççĕ... Уртем, шкул умне пырса тăрсанах, Исай комсомолец сассине илтрĕ:

— Пирĕн ялта çав Иливансене пула Совет влаçĕ çукпа пĕрех пулма пуçларĕ. Ăçта пыр — пур çĕрте те пуянсем çавăрса илме тапратрĕç... Илĕр акă столовăйнех: мĕншĕн-ха эпир ăна пуян Уртемсен кĕрӳшĕ Мамун аллине панă?..

Хăй ятне асăннине илтсенех, Уртем шăлне çыртрĕ.

«Лачакари шапа,— шухăшларĕ вăл Исай çинчен,— тытса пăчăртатăп-ха эп сана пĕрре...»

Столовăй çинчен каласа пĕтерсен, Исай иртнĕ хĕлте Совет ялти чухăнсем валли панă вăрман çурри ытла пуянсен аллине кĕрсе ӳкни çинчен калама пуçларĕ.

— Лява Уртемĕпе кĕрӳшĕ хĕлĕпе вăрман турттарчĕç, сахалтан та пилĕкшер çуллăх вутă хатĕрлерĕç, анчах пирĕн пеккисене ик-виçшер лав çеç тиврĕ. Мĕнле пулма пултарнă çав япала? Каçăр Куçмапа Иливан тунă çавна! Ахальтен мар Лява тавраşĕсен кашни ĕçкинчех упаленеççĕ вĕсем...

— Тĕрĕс!

— Чăн сăмах!

— Нумай мăшкăлларĕç ĕнтĕ...— илтĕнчĕ халăх хушшинчен темиçе сасă.

Çав тери хĕрсе, пĕтĕм чĕринчен калаçакан имшертерех шăмшаклă, кăвак куçлă Исая та, унăн сăмахĕсемпе килĕшсе кăшкăракансене те Уртемĕн çавăнтах çапса ӳкерес, пĕрерĕн-пĕрерĕн кăларса ывăтасси килсе тăчĕ, вăл пĕтĕм мăн сассипе питĕ усал сăмахсем кăшкăрса ярасси патнех çитрĕ, çапах та хăйне хăй чарчĕ. Халь ун пек тума май килменнине лайăх ăнланчĕ вăл.

Исай хыççăн председатель Тараса сăмах пачĕ.

«Ку ĕнтĕ тата... тепĕр кĕлмĕçи... мĕн калать-ши?— шухăшларĕ Уртем.— Паллах, пире хирĕç ĕнтĕ, тупнă пульха чакаланса...»

Кăштах шавлама пуçланă халăх, Тарас ура çине тăрсанах, шăп пулчĕ. Тарас хуллен кăна ӳсĕрсе пырне тасатрĕ, аллинчи хут татки çине пăхса илчĕ, анчах та пĕр сăмах та калама ĕлкĕреймерĕ...

Урамра сасартăк такам калама çук тискер, хăрушă сасăпа кăшкăрни илтĕнчĕ:

— Пуша-ар!.. Çуна-ать!..

Пурте харăсах урамалла пăхрĕç. Чăнах та, ялăн анат вĕçĕнче çунать иккен... Лăпкă сывлăшра çулăм çӳлелле юпа пек тапса хăпарать, çулăм юпинчен пур еннелле хĕм сирпĕнет...

Пушара курни шкулти халăх хушшине бомба пăрахнă пекех пулчĕ. Çынсем алăк патнелле ним йĕркесĕр ыткăнчĕç, алăк ансăррипе хĕсĕнсе ларчĕç, унтан час тухма çуккине кура нумайăшĕ чӳречесенчен сикме тапратрĕç. Темиçе самантран шкулта никам та юлмарĕ, пурте пушар патнелле чупрĕç, ял урамĕсем çынсем кăшкăрнипе, шавланипе, чупакансен ура сассисемпе тулса ларчĕç. Пĕр Лява Уртемĕ çеç каймарĕ пушар сӳнтерме. Шкулти халăх тулалла ыткăннă чух вăл çенĕк алăкĕ хыçне тăрса юлчĕ те, çынсен сассисем инçетелле кайсанах, шалалла чупса кĕрсе, хыçалти пĕчĕк пӳлĕмĕн алăкне пĕтĕм вăйĕпе пырса тĕкрĕ.

— Куçма хăта! Иливан!— тесе кăшкăрчĕ вăл.—Тухăр часрах, никам та çук!.. Тарăр!

Анчах шалта çав самантрах винтовка затворне шакăлтаттарса илни илтĕнчĕ.

— Кам унта?! Перетĕп!— терĕ Уртеме палламан сасă. Вăл Каçăр Куçмапа Иливана хураллакан милиционер сасси пулнă. Ана илтсенех, хăйне паллатарас мар тесе тата тытасран хăраса, Уртем часрах шкултан чупса тухрĕ те пахчаналла чăмрĕ...

* * *

Сасартăк сиксе тухнă пушар, çитменнине тата ял хĕрринчи никам пурăнман кивĕ пӳрт çунни, пурне те питĕ тĕлĕнтерчĕ. Темĕн тĕрлĕ те шухăшласа пăхрĕç ял çыннисем ун пирки, çапах нимĕнле ответ та тупаймарĕç. Анчах Энтриялĕнчи ĕçсене тĕрĕслеме пынă комисси председателĕ, Каçăр Куçмапа Иливана хураллакан милиционер пушар вăхăтĕнче шкула такам пырса преступниксене ирĕке кăларма тăни çинчен каласа парсанах, пушар сăлтавне тавçăрса илчĕ.

— Сисстĕн-и, ĕç ăçталла каять?— терĕ вăл пушара сӳнтернĕ хыççăн ирчченех киле кайман Тараса.— Ку пушар вăл — юри, çак çăхансене тартас шутпа тунăскер.

Епле чее шухăшласа хунă: халăх пушар сӳнтерме чупать те, кусем хăтăлаççĕ... Халь ĕнтĕ паллă: ялта Куçмапа Иливансен тымарĕ тарăн, вĕсен çывăх çыннисем пур. Çавсене епле пулсан та тупса кăклас пулать... Эс паянах çамрăксене пухса калаç çавăн çинчен. Пурин куçĕсем те çивĕч пулччăр!

— Юрĕ,— терĕ ăна хирĕç Тарас.— Пĕтĕм вăя хурсах тăрăшăпăр. Эпир те пĕлетпĕр вĕт: хамăр çул çинчи тумхахсене пĕтермесĕр, пирĕн пурнăç малалла тикĕссĕн каяс çук...

Пушар хыççăн следстви тата икĕ кун хушши пычĕ. Ялти нумай çынсене чĕнсе тĕпчерĕ комисси, пур вак ĕçсем çинчен те пĕлме тăрăшрĕ. Анчах çĕнĕ сведенисем нумаях тупăнмарĕç. Пушар пирки вара нимĕнех те палăрмарĕ. Каçăр Куçмапа Иливанран пушар пулнă каçхине шкула кам пыни çинчен темле тĕпчесе ыйтсан та — вĕсем Уртем сассине ун чухне лайăхах уйăрса илнĕ пулин те — нимĕн те каламарĕç.

— Эпир илтмен... Никам та пыман, пĕлместпĕр. Милицине хăранипе ахаль çавăн пек туйăннă пуль,— терĕç...

Лява Уртемĕ, хăйĕн çумне пырса çыпăçма нимĕнле сăлтав та ан пултăр тесе, бандитсем вăрласа пынă япаласенчен ку таранччен вырнаçтарайманнисене тепĕр кунне пухса тиерĕ те инçетри пĕр пасара кайса сутрĕ. Пуху пулнă каçхине кивĕ çурта вут тĕртсе тарнă хыççăн тăваттăмĕш кунĕнче Махорка каялла пырса тухрĕ. Уртем ăна та «çанталăк лăпланиччен» аякра çӳреме хушрĕ.

Кунтан-кун сăнсăрланса, тискерленсе пынă Махорка çав каçхине пушшех те хăрушă сăнлă пулчĕ. Куçĕ шыçса тухнă, янах шăммисем тата ытларах тулалла тухса палăракан пулнă, ӳчĕ темле çĕр тĕслĕ пулса кайнă. Стакан хыççăн стакан тултарса ĕçрĕ вăл, анчах эрех те ӳсĕртмерĕ ăна, куçĕ тата ытларах пăтранчĕ çеç...

— Шишкăпа Чалăшкуç килмерĕç, эппин?— ыйтрĕ вăл, нумайччен чĕнмесĕр ларнă хыççăн.

— Çук.

— Ăçта çухалчĕç вăл шуйттансем?..

— Пĕлместĕп çав.

Махорка урăх ыйтмарĕ. Сĕтел урлă ним тĕлсĕр пăхса, вăрахчен сăмах хушмарĕ. Вăл шухăша кайрĕ... Унăн ӳсĕрĕлме пуçланă, шавласа тăракан пуçĕнче пĕрин хыççăн тепри асилӳсем çуралма пуçларĕç... Акă вăл çамрăк, вунсаккăр-

ти качча, «пыл та çу пек» пурнăçпа пурăнать. Унăн ашшĕ пуян, вăл никамран та хăрамасть, мĕнле хĕре çавăрас тет, çавна çавăрать; хĕр ун еннелле çаврăнмасан, вăйпах парăнтарать. Праçниксенче ун пек чаплă тумланакан никам та çук, çимĕксенче пурте ун çине пŷрнепе кăтартса: «Разумăх ачи», теççĕ шăппăн... Çăварниччен темиçе эрне малтан хура ăйăра сĕлĕ çитерсе тăратнă, çăварни çитсен вара ăна кŷлсе ялсем тăрăх çил-тăман пек çŷренĕ, сынсен çунисене çаклатса, вĕсене тŷнтере-тŷнтере хăварнă... «Кур пире, палла пире!..» Кам та пулин кăмăла каймасан е ăна хирĕç сăмах чĕнсен, çав сынна хĕнемешкĕн тара тытмалăх кĕсъере укçа яланах пур... Унтан вăл—рекрут, пĕр эрне ытла çĕр çĕмĕрттерсе çŷрет, çапăçать, кантăксене çапса ватать, икĕ хĕре тытса пусмăрлать... Станцие сынсем çурран утаççĕ, вăл тройкăпа... Пенза, Ростов, Одесса... Вăл ĕнтĕ унтер-офицер... Ансăр, кукăр-макăр тăкăрлăк, унта, çŷлти хутра, проститутка Элла... Пĕринче, эрех кŷпсе тултарсан, ŷсĕр «кĕсĕн чинсем» хушшинче çапăçу пуçланса каять, ăна çŷлти хутран пусма тăрăх кутăн антарса яраççĕ... Кайран — фронт, вăл— прапорщик, хăрушă та тискер кунсем пуçланаççĕ, хуласенче тăнă чух — каллех ŷсĕр каçсем, каллех сутăнчăк хĕрарăмсем... Революци, митингсем, «война до победного конца», вăл мирлĕ хресченсене персе вĕлерет... Нумаях та вăхăт иртмест — тепĕр революци пулать, ун хыççăн шăпланма тивет, граждан вăрçи пуçлансан — тылра юлать. Укçа кирлĕ... Ăна темле вăрттăн пурăнакан, çухисене тăратса çŷрекен сынсемпе, паллаштараççĕ, вăл çар хатĕрĕсене сутма тытăнать, каллех «сарлака пурнăç» пуçланса каять... Унтан сасартăк — тĕрме. Шăрш, пăчă, тĕттĕм, хăсăк килет... Кунтан тарса хăтăлсан, килсĕр йытă пурнăçĕ тапранать... Таттисĕр çаратусем, айăпсăр сынсен юнĕ, ĕçкĕ; пĕрмай, кашни кун, кашни самантра сыхланса, тытасран хăраса, тарса пурăнмалла... Анчах — хăçанччен? Малашне ăçта каймалла? Пĕтĕмпех арканать, ĕмĕтсем сŷнеççĕ, çулсем татăлчĕç... Иртни ĕнтĕ пурпĕр таврăнас çук, вăл пĕтрĕ, яланлăхах, ĕмĕрлĕхех путрĕ... Таврара пурте пурнăç тума тăрăшаççĕ, пурин те ĕмĕт, тĕллев пур... Унăн вара мĕн пур? Нимĕн те çук, пушă, тĕттĕм...

«И я подохну где-нибудь
В канаве, под заборо-ом»,—

юрласа ячĕ Махорка хуллен, çĕтсе ларнă сасăпа. Унăн пaçăрхинчен те ытларах пăтранса кайнă куçĕсем вăйсăр-

ран хупанчӗҫ... Пӗр-ик минут пек вӑхӑт иртсен, вӑл пуҫне йӑлт ҫӗклерӗ те пӗтӗм вӑйӗпе сӗтеле чышкӑпа ҫапрӗ.

— Пурпӗрех асӑнтаратӑп-ха хам ҫинчен!.. Парӑнмастӑп-ха халех! Ман вилӗм хакла ларать вӗсене!..

Унтан хӑвӑрт пуҫтарӑнчӗ те Уртеме ал пачӗ.

— Сывпул.

— Ӑҫта каятӑн ӗнтӗ халь?— ыйтрӗ Уртем.

— Хусана. Унта манӑн пӗр тус пурччӗ. Ҫавна тупас.

— Килетӗн-и?

— Мӗнле пулӗ...

— Пӗр-ик эрнерен килсе пӑхсан юратчӗ. Лӑпланать унччен...

— Курӑнӗ унта. Эс ҫыру ҫыр.

Махорка Уртеме хут татки ҫине темле адрес ҫырса пачӗ те тухса кайрӗ. Ун хыҫҫӑн алӑка питӗрсе кӗрсен, Уртем нумайччен ҫывӑрса каяймарӗ. Вӑл, тек-текех пӗр енчен тепӗр еннелле ҫаврӑнкаласа, малашнехи ҫинчен, епле майпа ӗлӗкхи пек пурӑнасси, хӑйне чӑрмантаракансене путарса лартасси, каллех хӑйне пӑхӑнмалла тӑвасси ҫинчен шухӑшласа выртрӗ... Анчах темле шухӑшласан та, хӑйӗн ӗмӗчӗсене тултарма тӳрӗ, шанчӑклӑ мел шухӑшласа тупаймарӗ.

— Нивушлӗ ҫавсене пӑхӑнса пурӑнмалла пулать? Нивушлӗ ялта ҫав Тарас пеккисемех, Ҫӗтӗк Яккусемех пуҫпулса тӑрӗҫ? Ҫук, темле пулсан та, вӑй илме май пама юрамасть вӗсене... Пуҫӗпех пӗтереҫҫӗ вара...

## 11. ҪАМХА СУТӐЛЕТ

Тӗлӗкре Уртеме темле пысӑк хура йытӑсем, йӗкехӳресем — тем мурӗ те курӑнчӗ. Вӗсем пурте, Уртеме сырса илсе, ӑна ҫурса тӑкма хӑтланчӗҫ. Уртем тем пысӑкӑш чукмар тытса ҫапӑҫрӗ вӗсемпе. Ҫав вӑхӑтрах ун умне нумаях пулмасть ухмаха ернӗ тӑлӑх арӑм хӑйӗн хӗрачине ҫавӑтса тухрӗ те унтан ахӑлтатсах кулма тапратрӗ. Унччен те пулмарӗ — ҫав хӗрарӑм ӑна тӑпрапа сапма, чул таткисемпе печме тытӑнчӗ. Таҫта параппан ҫапма тапратрӗҫ. Уртем ҫав тери хӑраса вӑранса кайрӗ.

Кил хушшинелле тухакан чӳречерен шаккаҫҫӗ-мӗн. Вӑл кӑкри ҫинелле пухӑнса ларнӑ утиялне ҫилӗпе аяккалла ывӑтса ячӗ те, вырӑн ҫинчен тӑрса, чӳрече патне пычӗ. Кил хушши енчен Мамун кӗрӗвӗн ывӑл ачи шакканӑ иккен.

«Ырра мар ку... Ахальтен килес сук кун пек ирхи вăхăтра...»— шухăшларĕ те Уртем, ҫенĕк алăкне тухса уҫрĕ.

— Ма килтĕн?— ыйтрĕ вăл ачаран.

— Аттене... тытса кайрĕҫ...— терĕ лешĕ, йĕрсе яма хатĕрленсе. — Анне сана пыма хушрĕ...

— Камсем? Хăҫан?!— кăшкăрса ячĕ Уртем, тăрукках пĕтĕм шăмшакĕ сивĕннине туйса.

— Ара, судьясем... Шкула килнисем... Пычĕҫ, тет те, кĕлете уҫтарса хăйсен ҫăраҫҫипе питĕрчĕҫ, тет, унтан аттене илсе кайрĕҫ, тет... Эп хам курман, анне калать. Атяха пирĕн пата...

Уртем хулпуҫҫинчен йăпăр-япăр сăхман уртса ярса, йăмăкĕ патне кайрĕ те ĕҫ мĕнле пулнине тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлчĕ. Чăнах та, ĕҫ ача каласа пана пекех пулнă иккен. Яла килнĕ комисси председателĕ паян хĕвел тухнă чух Тараспа тата яла темле ҫĕнĕрен килнĕ ҫынпа пĕрле пынă та, патшалăх выҫҫисене пулăшма панă ҫимĕҫсене усракан кĕлет алăкĕ ҫине пломба хунă хыҫҫăн, Мамуна арестленĕ...

Ку хыпар Уртеме калама та ҫук пăлхатса тата хаярлатса ячĕ. Ним тума пĕлменнипе хăйĕн аллине хăй ҫыртса илчĕ. Унтан пĕр вăхăт ним шухăшлама та пĕлмерĕ, унăн пуҫĕнче пĕтĕмпех пăтрашса кайрĕ. Мамун арăмне те йĕркеллĕн нимех те калаймарĕ вăл, ниепле канаш та параймарĕ. Шăлне ҫыртрĕ те, алăка хыттăн уҫса хупса, тухса утрĕ.

«Мĕншĕн-ши? Мĕн пĕлчĕҫ-ши? Пĕтĕмпех яп-яка тунăччĕ-ҫке, нимĕн те палăрмалла мар пекчĕ... Мĕн тумалла-ши халь? Махорка та кайрĕ, эсрелĕ...»— шухăшсем ҫавăрăнчĕҫ унăн пуҫĕнче.

Анчах та пуҫра ҫуралакан ыйтусем ҫине ответ тупаймарĕ.

Отвстне тупма чăнах та йывăр пулнă.

...Мамуна малтанах арестлеме ҫителĕклĕ сăлтав пулман. Комисси унăн пур хучĕсене те тĕрĕслесе тухнă хыҫҫăн, пĕтĕмĕшпе илсен, патшалăх панă ҫимĕҫсене кирлĕ пекех расхутланă пек курăннă. Ҫавăн чухлĕ илнĕ — ҫавăн чухлĕ ҫитерсе пĕтернĕ. «Балансне» чиперех туса пынă вăл, «шито-крыто». Мамун ҫимĕҫсене вăрланине, ĕҫсем приход-расход кĕнекинче кăтартнă пек пулса пыманнине комисси аванах туйнă, анчах тӳррипех айăплама май килмен.

«Ним тума та ҫук вĕт, шывран типпĕнех тухать прохвост»,— тенĕ ун пирки комисси председателĕ, тарăхса.

Анчах сасартăк ĕç урăх майлă çаврăнса кайнă...

Шăпах çав кунсенче уезд хулинчи пасарта пĕр ватă-рах майра пит те тутлă сăнлă шурă булкăсем сутса ларнă. Кашни булкинех вăл икĕ пин тенкĕпе панă. Илекенни авантарах тумланнă пулсан, укçаллă çын пек туйăнсан, майра ăна шăппăн кăна маргарин, сахăр, песок, какао сĕннĕ... Çын илме килĕшсен, майра таçтан, хăйĕн майсăр сарлака юбки ăшĕнчен ăна та, куна та туртса кăларнă.

Пасарта сăнаса çӳрекен çамрăк чекист çакна асăрха-нă та ыйтма тытăннă: кун пек лайăх çăнăх ăçтан тупрăн эс, мĕнле сахăр сутрăн? Майра ăна хирĕç çав тери илĕрт-се юптарма тытăннă: ывăл Мускавра пурăнать, çав ярса пачĕ, укçа кирлĕ пирки сутатăп, тенĕ. Чекист ĕненмен. Майра тем пекех турра асăнса, сăхсăхса, ашшĕ-амăшĕ ячĕ-пе тупа тунă пулин те, чекист ăна хăйпе пĕрле илсе кай-нă. Унтан, тепĕр юлташне чĕнсе, сад варринчи беседкăн урайĕ айĕнче темĕн тĕрлĕ çимĕçсем те — шур çăнăх, сахăр, маргарин, банкăри «çăралатнă сĕт» — тупнă...

Майран тек тунса тăма май килмен, ăна ĕнтĕ куçкĕ-ретĕнех тытнă. Допросра тĕпчеме тытăнсан, вăл ку япала-сене ăçтан тупни çинчен каласшăн пулман, анчах та сле-дователь çине тăрсах «стена çумне» хĕсме тапратсан, ту-найман вара, çимĕçсене Энтриялĕнчи Мамунран илни çин-чен, вăл кашни ик эрнерех, столовăй валли çимĕçсем илме килсен, ăна сутă тума парса хăварни çинчен каласа панă. Çав кунах ку ĕçе малалла тĕрĕслемешкĕн Энтрияльне çын янă, вăл унта çĕрле çитнĕ те комисси председательне ка-ласа панă, ирпе вара Мамуна арестлемелле тунă. Ăна мĕн-шĕн хупнине урăх никам та пĕлмен...

Виçĕ кунтан Каçăр Куçмапа Иливан сучĕ пулчĕ. Айăплисен тенкелĕ çинче вĕсемпе пĕрле Уртемĕн кĕрӳшĕ Мамун та ларчĕ.

Суд тунине курма-итлеме Энтриялĕнчи çынсем çеç мар, таврари çывăх ялсенчен те йышлăн пухăнчĕç, шкул çуртне халăх савăлпа çапса хĕснĕ пекех тулчĕ. Нумай вă-хăт хушши халăх пурлăхне салатса, халăхран мăшкăлла-са, выçă çынсен юлашки татăкне туртса илсе, ыр курса пурăннă тискер чĕреллĕ этемсем халăх куçĕ умĕнче юлаш-ки хут мĕн калассине пурин те итлесе пăхас килнĕ çав!

Вĕсем виççĕшĕ те палламалла мар улшăннă иккен. Елĕкхи çивĕч, вăшт та вашт кăна çаврăнкалакан, çынсем çине яланах çиелтен, мăнкăмăллăн пăхакан этемсем халĕ пачах пусăрăнса ларнă-мĕн, ваттисем калашле — «пăкки

шаннă» вĕсен. Калаçасса та ерипен, айăпсăрах суда лекнĕ пек туйăнма тăрăшса калаçççĕ. Вĕсем пĕр усал ĕç те туман имĕш, яланах, пур чухне те халăхшăн тăрăшнă, çĕр çывăрмасăр ĕçленĕ. Пуринчен ытла ку тĕлĕшпе Иливан пит ăста хăтланчĕ: пурнăçра нумай асап курнă çын пек çинçе сасăпа, сăмахсене тăсса калаçрĕ, хăй айăплă марри-не кăтартма аллипе пĕрмай хăйне чĕринчен тытрĕ, час-часах турра асăнса сăхсăха-сăхсăха илчĕ. Малтанах халăх ăна шăппăн, тĕлĕнерех итлесе ларчĕ, анчах майĕпе унта та кунта тăрăхланисем илтĕнме пуçларĕç:

— Ай-уй, ку турра пит ĕненекен çын иккен...

— Кулине патне те çапла сăхсăхсах пынă-ши вăл?

— Кам пĕлет, тен, кашни лаша вăрлаттарнă хыççă-нах чиркĕве кайса çурта лартнă пуль...

— Епле, çветтуй жулик!

Иливан çине тăрсах турă ячĕпе витĕнме тăрăшни, пулчĕ-пулмарĕ хĕрес хывни судья вырăнĕнче ларакан ко-мисси председательне те култарса ячĕ.

— Итле-ха, подсудимый Иливанов,— терĕ вăл ăна,— кунта сăхсăхса чăрманма та кирлех мар пулĕ. Суд — чир-кӳ мар, эпĕ—пуп мар.

Преступниксем виççĕшĕ те хăйсен сăмахĕсемпе судья-сен чĕрисене çемçетме, халăха — хĕрхентерме, унăн кăмăл-не хăйсене майлă çавăрма тăрăшрĕç, анчах никамăн куçĕн-че те вĕсене шеллени курăнмарĕ, вĕсем майлă пулни па-лăрмарĕ...

Свидетельсем — пĕрин хыççăн тепри — пурте вĕсене хирĕçле, мĕн курни-илтни, мĕн пулни-тӳсни çинчен ним пытармасăр каларĕç. Лăпкăн ларма пултарайман Иливан, судья асăрхаттарни çине пăхмасăрах, малтанхи вăхăтра свидетельсене хирĕç калаçма, вĕсемпе тавлашма тăрăшрĕ, анчах та — суда пынă халăх пĕтĕмпех преступниксене хи-рĕçле пулнине кура — шăпланчĕ, тĕлĕннĕ пек пулса, пĕр-маях пуçĕпе сулкаларĕ, пит час тарлакан куçлăхне хыва-хыва шăлчĕ. Куçмапа Мамун никама хирĕç те чĕнмерĕç, пачах чĕлхесĕр çынсем пек урайнелле пăхса ларчĕç.

Суд пĕр кунта пĕтмерĕ. Чылай свидетельсене — вăл шутрах хуларан юри кайса илсе килнĕ хайхи пасарта бул-кăсемпе сутă тунă мăнтăр майрана — тепĕр кунне ыйтрĕç. Ку та — те хăранипе, те хăй айăпран хăтăласса шанса— пĕтĕмпех каласа пачĕ. Мамуна вăл революцичченех пал-ланă иккен, вăл çав майран упăшки патĕнче пĕр вăхăт приказчик та пулнă. Выçă çынсене çитермелли çимĕççене

Мамун ăна хăй пырса сĕннĕ, сутса илнĕ тупăшсем пирки калаçнă чух мăкăриччи пит вăйлă ĕçнĕ...

— Сăмакунне те хăех илсе пычĕ, эп закуска валли какай ăшаларăм çеç...— терĕ майра.

Ун сăмахĕсем ку таранччен самаях йĕркеллĕ ларнă халăха сасартăках пăлхатса ячĕç, çынсем харăсах хускалма, калаçма, сĕрлеме тапратрĕç...

— Вăт, шуйттан пукани!

— Хăйне ăшаласчĕ ăна... вĕри хулăпа!

— Ĕлĕк халăх ĕнси çинче пурăннă та, халь те çаплах пурăнасшăн...

— Мамунĕ... Мамунĕ мĕн хăтланнă!

— Пулать те çав намăссăр!

— Çынсем выçса вилеççĕ, анчах вăл, йытă, халăхăн юлашки çăкăр татăкне сутса, майрасемпе ашкăнса çӳренĕ...

Судья — комисси председателĕ — сĕтелĕ çине шаккаса халăха шăплантарчĕ те майрана тата темиçе ыйту панă хыççăн свидетельсене ыйтса пĕтерни çинчен пĕлтерчĕ.

— Айăплисене юлашки сăмах паратăп,— терĕ вăл унтан.— Хăшĕн мĕн каламалли пур — калăр.

Каçăр Куçмапа Мамун пуçĕсене те çĕклемерĕç, анчах та Иливан тӳрех сиксе тăчĕ.

— Эп калатăп! Ман пур...

— Кала.

— Эпĕ... эпĕ, граждан судьясем, айăплă... Чăнласах калатăп: айăплă...— пуçларĕ Иливан, чĕтрекен аллипе куçлăхне хывса.

— Ăна эпир ху каламасăрах пĕлетпĕр,— пӳлчĕ Иливана хыçалта ларакансенчен пĕри.

Судья кăранташĕпе шаккаса илчĕ. Иливан малалла калама тытăнчĕ:

— Хам айăплине тинех ăнланса илтĕм эпĕ... Туршăн та... (вăл хĕрес хучĕ) ăнлантăм ĕнтĕ...

Халăх хушшинче такам кулса ячĕ:

— Тур пулăштăр, эппин!

— Чăнах калатăп,— терĕ Иливан тепĕр хут, çамки çинчи тарне шăлса.— Ĕненĕр мана... Эпĕ... эпĕ урăх нихçан та апла хăтланмăп... Каçарăр мана... Хĕрхенĕр!..

— Эсĕ ху нумай хĕрхеннĕ-и халăха?

— Эккей, кашкăр сурăх тирĕпе витĕнме пуçларĕ!— илтĕнчĕ каллех халăх хушшинчен.

— Малашне эп те хĕрхенĕп... Туршăн та...

— Сан хӗрхенӳсӗр те пурӑнма пӗлӗпӗр-ҫке!
— Пӗтӗм чуна парӑп...
— Шуйттана кайса пар чунна!
Судьян каллех халӑха шӑп ларма хушмалла пулчӗ. Шав чарӑнсан, Иливана ҫӗнӗрен сӑмах пачӗ.
— Кала малалла.
— Мӗн калам ӗнтӗ эп?— терӗ ӑна хирӗҫ вӑйсӑрлансах ларнӑ сасӑпа Иливан, темле чӗрӗп пек хутланса.—Пӗтрӗм витнӑ... Никам та ман майлӑ каламасть... Хӗрхенмеҫҫӗ мана, старике...
Ҫав самантрах такам арӑмӗн сасси янраса кайрӗ:
— Чӗчӗ памалла мар-и тата сана, сар шуйттана? Эккей, тупӑннӑ! Хупасчӗ карланкуна, намӑссӑр!
— Вӑт, ку тӗрӗс!— ҫирӗплетрӗ тепри.
Судья Иливанран татах ыйтрӗ:
— Ну, тек каламастӑн-и, эппин?
Иливан пуҫне пӑркаларӗ.
— Эсир тата?— терӗ судья Каҫӑр Куҫмапа Мамуна.
Кусем те чӗнмерӗҫ.
— Апла пулсан, суд умне тӑратнӑ ҫынсене халӑх ячӗпе тухса айӑплама сӑмах Тарас Николаев юлташа паратӑп...
Сылтӑм енчи чӳрече патӗнче ҫак таранччченех ним чӗнмесӗр, аллинчи хут ҫине пӗрмай кӗттӗн-кӗттӗн ҫырса ларнӑ Тарас ура ҫине тӑчӗ те, кӑкӑр туллин сывласа илсе, хӑйӗн сӑмахне майӗпе пуҫларӗ.
— Юлташсем, эп калас тенисене нумайӑшне свидетельсем каларӗҫ ӗнтӗ,— терӗ вӑл лӑпкӑн,— ҫак хӑрушӑ ҫынсен (Тарас преступниксем ҫине кӑтартрӗ) пур тискер ӗҫӗсене те, вӗсен ирсӗр сӑн-сӑпатне пур енчен те пит аван кӑтартса пачӗҫ, ҫавӑнпа та ман калаҫмалли те нумай мар. Ҫапах та, кӑшт каласах пулать... Кама суд тӑватпӑр эпир паян? Халӑхӑн чи хӑрушӑ тӑшманӗсене суд тӑватпӑр...
Тарасӑн сасси кунта тӑруках хӑпарса кайрӗ. Унтан сӑнӗ те улшӑнчӗ: пичӗ хӗрелчӗ, куҫӗсем сарӑлса, ытларах ялтӑртатма пуҫларӗҫ.
— Халӑх чи йывӑр самантсене пурӑнса ирттернӗ чух, халӑх выҫӑпа аптранӑ вӑхӑтра, пур юлашки вӑйсене пухса тытӑнса тӑнӑ кунсенче вӗсем, ҫак виҫӗ кашкӑр, этем сӑнсӑпатне ҫухатнӑскерсем, халӑх юнне тискер кайӑксем пекех ӗҫсе пурӑннӑ! Вӗсем халӑхӑн куҫҫулӗпе, тарӗпе, халӑхӑн пурнӑҫӗпе сутӑ тунӑ!.. Акӑ мӗнле ҫӑхансем лараҫҫӗ пирӗн умра...

Тарас сывлăш çавăрса илчĕ те, Каçăр Куçмапа Иливанăн тата Мамунăн преступленийĕсене пĕрин хыççăн теприне, йĕркипе, васкамасăр тишкĕрме тытăнчĕ. Суда итлеме пынă халăх ăна пит те тимлĕн, шăппăн, пĕр сăмахне те сиктермесĕр итлерĕ. Алăк патнерех хĕсĕнсе тăнă Варук, Тарас сăмахĕсене итленĕ май, сывламан пекех пулчĕ.

«Ах, лайăх калать-çке... Аçтан кăна тупать сăмаххисене, кĕнеке çинчен вуланă пек вĕт... Çитменнине, пĕтĕмпех тĕрĕс тата...»

Нумай каларĕ Тарас. Унăн сăмахĕ сахалтан та пĕр сехете пычĕ. Çав хушăра ун çăварĕнчен пĕр пуш сăмах та тухмарĕ, пурте выранлă, сыпăçуллă, ĕнентерӳллĕ пулчĕ. Вăл каланăçемĕн суда пынă халăх хăй умĕнче ларакан преступниксене тата ытларах курайми пулса пычĕ...

— Пуçĕпех, яланлăхах тĕп тумалла çакăн пек çынсене, вĕсен тĕсĕ мар, шăрши те ан пултăр пирĕн хушăра! Халăха вĕсем ним выранне те хуман... Эпир те хĕрхенсе тăма пултараймастпăр вĕсене. Совет судĕнчен эпир çак хăрушă преступниксене персе пăрахма ыйтатпăр! — тесе пĕтерчĕ те Тарас, хăйĕн малтанхи выранне ларчĕ.

— Чăн калать...

— Пире хĕрхенмен вĕсем...

— Йытта йытă вилĕмĕ пулмалла та çав, — пăшăлтатса илчĕç халăх хушшинче.

Суд хыçалти пӳлĕме канашлама кайсан, çынсем нумайăшĕ кил хушшинелле, урамалла тухрĕç. Шалта юлнисем те, тула тухнисем те — приговор епле пуласси, мĕнле тусан авантарах пуласси, преступниксем мĕнешкел наказание тивĕçли çинчен калаçма, сӳтсе явма тапратрĕç. Калаçакансем хушшинче вĕсене хĕрхенекенсем тупăнмарĕç...

Каçăр Куçмапа Иливана суд сакăршар çуллăха, Мамуна пилĕк çула хупмалла турĕ. Çав кунах, каçхи кӳлĕмпе, вĕсене ялтан илсе кайрĕç. Асатма Энтрияль çыннисем пит нумайăн тухрĕç, анчах та, паçăхри пекех, хĕрхенсе-туса калаçни пулмарĕ, çынсем ахальтен, «интересшăн» çеç тухнă иккен. Каçăр Куçмапа Мамун арăмĕсем çеç юри пĕтĕм халăха илттерме тăрăшса çухăрчĕç, хăйсен упăшкисене халь «курайласăр саванса тăракансене» темĕн те пĕр каласа, ал-урасăр пулма, ача-пăчасăр юлма, хăйсене те çавнашкалах тĕрмене кайса ларма сĕнсе ылханчĕç. Иливана кăрчама ăсти, Микстур Кĕтеринĕ, тутăрпа çыхса пашалу-

сем пырса тыттарчĕ те, куççулĕсене шăлкаласа, ал пачĕ. Куна курсан, чылайăшĕ кула-кула илчĕç:

— Çўпçи хупăлчине хĕрхенет...

— Ара, лешĕ ăна нумай ыр кăтартнă-çке!

Суд вăхăтĕнче халăх хушшинче палăрмасăр ларма тăрăшнă Лява Уртемĕ халĕ те хăйне ытлашшиех палăртмарĕ. Мамун кĕрўшĕ патне пырса:

— Ытлах ан хуйхăр,— терĕ сиввĕн. — Кама кирлине — тавăрăпăр. Çемьешĕн — ан пăшăрхан, выçă лартмăпăр...

Урăх нимĕн те каламарĕ, аяккалла пăрăнчĕ.

Преступниксене лартнă лавсем тапранса кайрĕç. Пĕр пилĕк минутран вĕсем уй хапхинчен тухса курăнми те пулчĕç, çул çинчи тусан çеç чылай хушă мăкăрланса тăчĕ...

## 12. СЫВЛĂШ ТАСАЛАТЬ

Çав каçхинех Энтриялĕнчи комсомолецсемпе чухăнсен пĕрлешўллĕ пухăвĕ, тепĕр кунне пур ял çыннисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта та, кунта та вулăсран килнĕ комисси председателĕ ялти пурнăç малашне мĕнле пулса пымалли çинчен, ăна халь епле майсемпе юсаса пырасси çинчен нумай калаçрĕ. Ун хыççăн комсомолецсем хăйсем те, ял сыннисем те паянхи нушасем, мĕн-мĕн тума кирлисем çинчен туха-туха каларĕç. Президиумра ларнă Тараса пурин сăмахĕсем те савăнтарчĕç.

«Аван халăх... Чипер ертсе пырсан, пит лайăх ĕçлеме пулать вĕсемпе. Ĕçлетпĕрех ĕнтĕ!..»

Кăнтăрла иртсен суйлавсем пуçланчĕç. Ытлашши кирлĕ мар шавсăр, кăшкăрашусăр, йĕркеллĕн пулса иртрĕ вăл ĕç. Пурте тенĕ пекех пĕр канашлă пулса, ял Советне Тараса, Назара, Çĕтĕк Яккăва, Павăл пиччене, Микиша, Хăмăт Энтрине, Кулинене суйласа лартрĕç. Суйлав хыççын комисси председателĕ, каллех сăмах илсе, çĕнĕ ял Советне тивĕçлĕн, ăнăçлăн ĕçлесе пыма, ялан чухăнсемпе вăтамсен интересĕсемшĕн тăрăшма, куллен-кун хуçалăха, культурăна вăйлатасшăн кĕрешме, çав хушăрах тăшмансенчен сыхă пулма сĕнчĕ...

Пуху хыççăнах пулнă çĕнĕ Совет ларăвĕнче председателе пĕр сасăпах Тараса суйларĕç, столовăйне Назар аллине пачĕç, «эс тĕплĕ, тирпейлĕ çын», терĕç ăна. Микиша секретарь турĕç... Нумайччен шăкăлтатса калаçса лар-

чĕҫ ҫĕнĕ Совет членĕсем хăйсен малашнехи ĕҫĕсем ҫинчен. Пурне те темле йывăр сывлăш усăлса тасалнă пек, кăкăра сывлама ҫăмăлтарах пулнă пек, ҫанталăкра та темле ăнланмалла мар пысăк улшăну пулнă пек туйăнчĕ...

Шăпах Совет членĕсем килĕсене саланма хатĕрленнĕ вăхăтра ашшĕне апат ҫиме чĕнме Варук пырса тухрĕ. Тарас ăна кĕҫĕр урама тухмашкăн систерме ĕлкĕрчĕ. Вара, киле кайса апатланнă хыҫҫăн, вĕсем, яланхи пекех, Варуксен лаҫҫи умĕнче курнăҫрĕҫ.

Каҫĕ пит те ырă пулчĕ, пĕркунхи пекех пур енчен те каҫхи нӳрлĕхпе пĕрле ырă шăршăсем туртăнчĕҫ, пахчасенче кайăксем юрларĕҫ. Пĕркунхи пекех, Тараспа Варук нумайччен, кăмăллăн, иккĕшĕ пĕр чĕререн калаҫнă пек калаҫса, пĕр-пĕрин ăшшине туйса ларчĕҫ.

Варук суд ҫинчен сăмах хушрĕ, Тарас судра ăста каланинчен тĕлĕнни ҫинчен аса илчĕ.

— Кĕнеке ҫинчен вуланă пекех каларăн...

— Э-э, ун пек калаҫҫĕ-и ҫынсем!

— Камсем?

— Вĕреннĕ ҫынсем... Пирĕн иксĕмĕрĕн те нумай вĕренес пулать-ха.

— Мĕнле... «иксĕмĕрĕн»?

— Ҫаплах. Сан вĕренес кăмăл ҫук-и вара?

— Вăхăт иртрĕ пуль ĕнтĕ манăн...

— Пĕртте иртмен. Вĕренме нихҫан та кая мар. Курăн вăт, епле вĕренме пуҫлăпăр, тăхта пăртак...

Тарас ҫавăнтах ял культурине епле хăпартма тытăнасси, хĕллехи вăхăтсенче епле вĕренӳ пуласси, ҫынсене хуласене ярасси ҫинчен калаҫма тытăнчĕ.

— Пĕлессӳ килет пулсан, пурăна киле хулапа ял хушшинче ним уйрăмĕ те пулмасть... Асăнăн ман сăмахсене хăҫан та пулин!

Паллах, Варук Тарас каланисене ĕненмесĕр тăма пултараймасть. Итленĕҫемĕн итлес килчĕ унăн сăмахĕсене. Хăй сисмесĕрех, пуҫне Тарас хулпуҫҫийĕ ҫине хучĕ вăл.

— Пирĕн ачасем хамăр пек мар, телейлĕ пулĕҫ, эппин...

— Эпир те телейлĕ пулатпăр, чунăм. Анчах вăл телейлĕ пурнăҫа ҫитме нумай ĕҫлемелле-ха пирĕн, телей хăйне тĕллĕн пуҫ ҫине татăлса анмасть. Ҫапах та, пулатех вăл телейлĕ, ырă пурнăҫ!

Калаҫса ларнă май, пĕркунхи пекех, вĕсем тул ҫутăлма пуҫланине те сиссе юлаймарĕҫ. Тарас хăйĕн каламалли

вăрттăн сăмахне кĕçĕр те калаймарĕ, уйрăлса каймалла пулчĕ...

Ирхине, Варук çенĕк урайне çунă вăхăтра, вĕсем патне Тарас шăллĕ Микуль чупса пычĕ те:

— Сана шкула чĕнеççĕ,— терĕ.

— Кам чĕнет?

— Пичче темшĕн халех пыма хушрĕ.

Варук тĕлĕннипе ним калама аптрарĕ.

— Чăнах-и, ай ахаль... суятăн-и эс?

— Суйнăшăн мана шалу тухать-и-мĕн?— терĕ Микуль, таçта такамран илтнĕ сăмаха.— Сана анчах мар, Маринене те чĕнме хушрĕ. Пыр часрах! — Çапла каларĕ те тухса вĕçрĕ. «Маринене те чĕнеççĕ», тени Варука тата ытларах тĕлĕнтерчĕ.

«Епле-ха... каçхине кăна пĕрле пултăмăр-çке, нимĕн те шарламарĕ...» Апла та, капла та шухăшласа пăхрĕ—пурпĕр усси пулмарĕ. Çавăнпа та пусма картлашкисене васкасах çуса пĕтерсе, Маринесем патне кайрĕ.

— Килте çук вăл, ăна Тăлăх Хветуç ачи тем тума шкула чĕнсе кайрĕ,— хуравларĕ Марине амăшĕ, ун çинчен ыйтсан. Варук та вара шкулалла утрĕ.

Кунта ăна чăнах та кĕтеççĕ-мĕн. Алăкран кĕнĕ-кĕменех сĕтел хушшинче ларакан Тарас хăй патнелле пыма кăчăк туртрĕ ăна:

— Часрах, часрах кил-ха кунта...

— Мĕн пулнă ара, эп ним те пĕлместĕп,— терĕ Варук, пĕрре Тарас çине, тепре сĕтел пуçĕнче ларакан Кулинепе Марине çине тĕлĕнерех пăхса.

— Нимех те пулман,— терĕ ăна хирĕç Кулине, кăшт куларах.—Сана качча парас тетпĕр...

Варук хăлха таранах хĕрелсе кайрĕ.

— Каччине ăна урăххисем кайччăр-ха. Чăнах, ма чĕнтертĕр?

— Хулана каймалла сирĕн,— терĕ Тарас.

— Камăн?

— Ак, виççĕрĕн...

— Мĕн тума?

— Паян хут килсе пачĕç. Хулара хамăр уесри хĕрарăмсен пуххи пулать. Пирĕн ялтан виçĕ çын яма хушнă. Çавăнта кайма эпир сире уйăртăмăр.

— Мĕн тумалла вара унта?

— Нимех те тăвас çук... Мĕн-мĕн калanисене итлеме-

ĂАе те, кайран, киле килсен, хăвăра мĕн хушса янисене ялта тума тытăнмалла.

Варук пуçĕпе сулчĕ:

— Манран пулмастех вăл... Урăххине ярăр. Кулса тăна кăларĕç тата.

— Чипер калаç, Варук!— калаçăва хутшăнчĕ Марине.— Мĕнрен хăрамалли пур? Кайса курар ĕнтĕ...

— Эп сирĕн пек мар вата та, итту каяс тетĕп,—хушса хучĕ Кулине.

— Ара, эс халь — Совет, сан каяс пулать.

— Каймастăн, эппин?— Варук куçĕнчен хыттăн пăхрĕ Тарас.— Ĕнер эпир урăхла калаçрăмăр-çке... Вĕренес тени çакăнтан пуçланать те ĕнтĕ вăл, Варук.

— Апла пуль те...

— Мĕн тата?

— Темле...

Варук çаплах тытăнса тăчĕ. Чăнах та ĕнтĕ, хулана делегатка пулса каясси уншăн ытла та кĕтмен çĕртен пулса тухрĕ, кун пекки çинчен ĕмĕрте те шухăшламан вăл! Çапах та, Тарас çине тăрсах ӳкĕтлеме тытăннипе тата Кулинепе Марине хулана кайма çăмăллăнах килĕшнине кура, иккĕлене-иккĕленех килĕшрĕ вăл.

— Юрĕ, эппин... Анчах атте темле-çке...

— Ун пирки ан хăра,— терĕ Тарас.— Хирĕçет пулсан, эп унпа хам калаçăп. Эс кайса хатĕрлен, часрах тухса каяс пулать вĕт: кăнтăрла иртсен тăват сехет тĕлне сирĕн хулана çитмелле!

Ашшĕ Варука кайма чармарĕ. Варукпа Марине ăна кун çинчен каласан, Назар пĕр вăхăт иккĕленнĕ пек пулса ларчĕ, çапах та хирĕç нимĕн те каламарĕ. Кăнтăрла тĕлĕнче вара Энтриялĕн ту вĕçĕнчи хапхинчен виçĕ хĕрарăм тухса, хĕвеланăç еннелле, хула çулĕпе утрĕç.

## 13. ĔÇСЕМ АНМА ПУÇЛАÇÇĔ

Çĕнĕрен суйланă ял Совет пирвайхи кунсенчех ĕçе хĕрӳллĕн тытăнчĕ. Чăн малтан, хирти ĕçсем çывхарса килнине шута илсе, Тарас Совет членĕсемпе ялти кĕперсене, çулсене, уй хапхисене, униче картисене тӳрлетсе йĕркене кĕртесси çинчен калаçса татăлчĕ. Варуксене хулана ăсатнă кунах вăл, халăха пухтарса, тепĕр ирхине ĕçлеме пултаракансене пурне те пуртăсемпе, кĕреçесемпе, пăчкăсемпе, ка-

ман мĕнле ĕç хатĕрĕ пур — çавсене илсе шкул умне тухма хушрĕ.

— Хамăр тумасан, пирĕншĕн никам та килсе тăвас çук, çавăнпа та çине тăрсах ĕçлер-ха. Хамăршăн вĕт!..

Хуласенче рабочисем юхăнса ларакан заводсене, тĕрлĕ мастерскойсене, депосене тӳрлетсе ĕçе ямашкăн туса ирттернĕ коммунизмла субботниксем çинчен Тарас аван пĕлнĕ, хăй те пулкаланă вĕсенче, çавăнпа та кун пек халăхпа тумалли ĕçе йĕркелесси уншăн çĕнĕ япалах пулман. Малтанах вăл, ял çыннисен списокне илсе, камăн ăçта ĕçлемеллине паллă туса хучĕ, халăх пухăнсан вара пурне те хăйсен вырăнне кăтартса пачĕ. Пĕтĕм ял халăхне вăл виçĕ ушкăна уйăрнăччĕ: пĕрисем Мăнçырма кĕперĕ патне каяççĕ, теприсем Хăямат кĕперĕ патне, виççĕмĕшĕсем — униче картисемпе уй хапхисене юсаççĕ, кашни ушкăннех ял Совет членĕ ертсе пырать. Хăйне валли Тарас Хăямат кĕперне илчĕ, ма тесессĕн кунта халăх пуринчен те ытларах ĕçлемелле пулнă.

Плана ял çыннисем ырласах йышăнчĕç.

— Кирлĕ ĕç ку, кирлĕ...

— Аслă тунă.

— Пит маттур пуçлать-ха çĕнĕ Совет...— текелесе саланчĕç çынсем хăйсен килĕсене.

Тепĕр ирхине вара виçĕ çĕрте те калама çук хĕрӳллĕ ĕç тапранса кайрĕ. Çырмасенчи ватă йăмрасем йывăррăн ӳкни, пуртăсемпе касни, шаккани, пăчкăсем юрлани, çынсем пĕр-пĕринпе шавлăн калаçни, мăннисем ĕçленĕ çĕрте чупса çӳрекен ачасем çуйхашни кунĕпех илтĕнчĕ Энтриялĕнче. Никам та ĕççĕр тăмарĕ, шкул çулне çитнĕ ачасем те пулăшрĕç. Тарас хăй те лачкам тарличченех ĕçлерĕ. Вăл Микишпа тата ытти темиçе çамрăкпа пĕрле Хăямат кĕперĕн юрăхсăра тухнă юписем вырăнне çĕнĕ сăвайсем çапрĕ... Сăвайсене çапса пĕтерсен, çамрăксем чĕлĕм туртмалла канма ларчĕç; Тарас çав вăхăтрах такам ун ятне кăшкăрсах чĕннине илтрĕ те, сăрт хĕрринче тăракан Хăмăт Энтрине курса, ун патне чупса хăпарчĕ.

— Мĕн каласшăн, Энтри пичче?

— Мăнçырмара пирĕн ĕç пĕтет ĕнтĕ, çынсемпе мĕн тăвас? Киле ярас-и е кунта илсе килес-и?

— Кунта илсе кил, ĕç тупса парăпăр... Анчах та епле пит час пĕтет-ха унта?

— Ара, тĕлĕнмелле хастарлă ĕçлеççĕ вĕт,— сухалне

шăлса илчĕ Хăмăт,— хăйсем выççине кура мар... Хам та хăвалатăп та ĕнтĕ...

— Юрать, эппин, аван. Тӳрех илсе кил.

Хăмăт каялла кайсан, Тарас çырманалла пăхрĕ. Сахалтан та çĕр çын ĕçе юратакан кăткăсем пекех йăшăлтатаççĕ унта... Пĕрисем çĕр чаваççĕ, тăпра, хăма турттараççĕ, теприсем вартаççĕ, якатаççĕ, хăшĕсем кĕперне сараççĕ, карлăксем хатĕрлеççĕ. Çак пĕтĕм ĕç шавĕ Тарас кăмăлне тата ытларах уçса ячĕ, унăн çав самантра çырмара ĕçлекенсене пурне те ал тытса тав тăвас килсе кайрĕ... Май пулсан, Тарас паян ĕç хыççăн çак пĕтĕм халăха пĕр сĕтел хушшине лартса хăна тунă пулĕччĕ.

— Аван ĕçлерĕр, аван тăрăшрăр, çавăншăн çиййĕр, ĕçĕр,— тенĕ пулĕччĕ вăл. Анчах çав самантрах халь ун пек тума май килменнине, Тарасăн хăйĕн те, ыттисен те тăраниччен çимелĕх паранкă та çуккине аса илни ун чĕрине йĕп пекех чиксе илчĕ...

Çывăхрах — пĕр вунă утăмра — ача макăрни илтĕнчĕ. Тарас çав еннелле çаврăнчĕ те кукăртарах ураллă пĕчĕк ача çыран хĕррипех хăй патнелле макăрса утнине курчĕ. Ача ӳкесрен хăраса, вăл ăна йăпăр-япăр чупса пырса алла тытрĕ.

— Ма макăран, герой?— терĕ вăл, ачана сиктеркелесе.— Кӳр-ха, нăш-нăшне тасатар...

Ачана те хăйĕн сăмсине шăлса яни килĕшмерĕ, те ют çынран хăрарĕ — вăл тата хытăрах çухăрса ячĕ.

— Ну, мĕн пулчĕ ĕнтĕ тата?.. Мĕн пулчĕ, шăнкăрч? Çынсем ĕç тăваççĕ, савăнас пулать, эс пур — кăшкăратăн...

— Мемме...— терĕ ача, шывлă куçне мăчлаттарса.

— Çиес килет-и? Паçăрах çапла калас пулатчĕ...

Тарас ирпех кĕсйине чикнĕ турантăпа хутăш пĕçернĕ пăри пашалу татăкне кăларчĕ те çуррине ачана хуçса пачĕ. Леш вара шăпах пулчĕ.

— Вăт, аван... Çи те, урăх нимĕн те ан шарла,— мăн çынна калаçнă пекех калаçма тытăнчĕ унпа Тарас.—Тӳсес пулать пăртак. Тăхта акă, кулач та çиййĕпĕр эпир санпа.

Ачана урăх ним те кирлĕ пулмарĕ, вăл Тарас сăмахĕсене те итлемерĕ, пур вăйĕпе пашалу татăкне кăтăртаттарса кăшларĕ çеç. Тарас вăл мĕнле хыпаланса çинине тата кăштах пăхса тăчĕ те, ачана çĕре тăратса, çырманалла, ĕçлекенсем патнелле чупса анчĕ.

Тепĕр сехетрен Хăмăт Энтри хăйĕн çыннисене илсе пычĕ. Тарас вĕсене савăнтах кĕпер патĕнчен хирелле кая-

кан çула тўрлетме таратрĕ. Ĕç татах хĕрўленсе кайрĕ, ĕç шавĕ малтанхинчен те вăйланса, хĕвел инçетри Сăр вăрманĕсем çинелле анма пуçличченех чарăнмарĕ. Хиртен кĕтў кĕртнĕ вăхăтра вара, пĕтĕм ĕçе туса çитерсе, çынсем çырмаран хăпарчĕç.

Ку тĕлĕнмелле пысăк çĕнтерў пулчĕ...

— Тĕрĕссипе каласан, ĕç кун пекех ăнăçлă пуласса шанманччĕ эп,— терĕ Тарас Павăл пиччене, ĕç хыççăн тăкăрлăк тăрăх килелле пĕрле утса пынă чух.— Сахалтан та ик-виçĕ хут пухăнмалла пулĕ, тенĕччĕ. Шуткă мар вĕт, пĕр кун хушшинче мĕнешкел ĕçе çавăрса хутăмăр!

— А мĕн тетĕн эс... Халăх вăл çавăн пек. Ăна чипер йĕркелесе вырăнтан хускатса яма пĕлсен, вăл тем тума та пултарать.

— Çапла çав.

— Халь тата, ĕç çине тухса кайиччен, çак шкула тытса юсас пулать пирĕн. Астăватăн пуль, пĕркуннех, хăвăн патна çамрăксем пухăнса ларнă чухнех, каларăм эп сана ун çинчен. Атту ачасем иртнĕ хĕлте те ĕретлĕ вĕренеймерĕç, кăçал та çавăн пек ан пултăрччĕ.

— Тăватпăр, Павăл пичче! Хамăрăн пурнăçа юсасси хамăртан килет. Йĕркипе пурне те тăвăпăр, пурте пулĕ...

Çак каçхине Тарас вырăн çине выртсанах çывăрса кайрĕ те ирчченех питĕ лăпкăн çывăрчĕ. Çартан таврăннăранпа та кун пек канлĕн çывăрманччĕ вăл...

* * *

Кирек епле ĕçе те яланах тĕплĕ, тăрăшса, тирпейлĕ тума вĕреннĕскер, Назар, ялти столовăя хăйĕн аллине илсенех, пĕтĕм чунне парса ĕçлеме тытăнчĕ. Ним калаçса-туса тăмасăрах вăл, хăйĕн лаç пуçĕнчи лупас айне юпасем çапса, çиелтен сарлака хăмасем сарса, вăрăм сĕтелсем турĕ, вĕсем тавра çавнашкалах вăрăм тенкелсем лартса çирĕплетрĕ. Апатне лаçра пĕçермелле пулнă пирки, унтан пур кирлĕ мар япаласене те кăларчĕ, арăмне лаç ăшчиккине çуса тасаттарчĕ, юлашкинчен пурпа шуратса лартрĕ. Çаксене пурне те туса çитерсен, вăл Тараса хăйĕн ĕçне пăхма чĕнсе пычĕ.

— Çапла юрать пуль вĕт, Тарас Петровччă?

— Аван, питĕ аван,— ырларĕ Тарас.— Нимĕнле чăкăлтăш санитар та хурлас çук. Чăнах та питĕ лайăх тунă, Назар пичче. Юлашки кунсенче те пулин йĕркеллĕ çитеретпĕр ĕнтĕ ачасене...

— Тусан — кули ĕç пулмасть,— хавасланчĕ Назар ку сăмахсем хыççăн.

Çав кунах Назар виçĕ лавпа хулана кайрĕ те тепĕр кунне кăнтăрлапа Энтриялье тивĕçлĕ çимĕçсене тиесе таврăнчĕ.

— Юлашки, тет, ку,— пĕлтерчĕ вăл Тараса, лавсене кил хушшине кĕртсе тăратсан.

— Урăх вуçех те памаççĕ-и вара?

— Çук, тет. Перекетлеме тăрăшăр, терĕç.

— Вăл каламасăрах паллă-ха, çапах та — пĕр пĕрчĕрен икĕ пĕрчĕ тума çук-çке.

— Тӳсес пулать ĕнтĕ...

Тарас, пĕр хушă шухăша кайса, аллинчи хулă таткине çавăркаласа тăчĕ.

— Варуксене курмарăн-и тата?

— Çук, курмарăм.

— Паян таврăнмалла ĕнтĕ вĕсем, виçĕ кун иртрĕ...

— Еçĕсем пĕтсен килĕç-ха.

Лавсене пушатнă чух Назар кил хушшине пĕрерĕн-пĕрерĕн темиçе çын пухăнчĕç, пурте, сăмах майĕн, паян кӳрсе килнĕ çимĕçсем çинчен ыйтрĕç, малашне мĕнле пуласси çинчен пĕлме тăрăшрĕç. Яланхи пекех, вăл калаçусенче çынсем выçăпа питех те аптрани, пĕтĕм шанчăка патшалăх пулăшăвĕ çине çеç хуни палăрчĕ. Çынсем калаçнă çĕре хайхи кăрчама ăстин ывăлĕ — Микстур Михали пырса кĕчĕ. Вăл калама çук сарлака галифине хулпуççи урлă подтяжкăпа çакса янине асăрхасанах, Тарас çамрăксен пĕркунхи пухуне аса илчĕ. Ирĕксĕрех кулас килсе кайрĕ унăн.

— Э-э, Михал Михалч, ара, эс пит чаплă йĕм тупса тăхăннă-çке!— терĕ вăл. — Чисти генерал! Ăçтан тупрăн ара, анчахрах шăлавар çук, теттĕн-çке?

— Эпир тупăпăр,— темле сиввĕн татса хучĕ те куна хирĕç Микстур, шăл витĕр чăрт! сурчĕ.— Пирĕнпе нумай ан калаç.

— О-о, эсĕ ытла та мăнкăмăлланса кайнă иккен,— асăрхаттарчĕ Назар патне пынисенчен пĕри.—Ансăртранах пуйса каймарăн пулĕ те?

— Ара, мĕн тетĕн,— куçне хĕсрĕ тепри,— кун пек йĕмпе те мăнкăмăлланмасан... Пăх-ха эс, кашни йĕм пĕççине пĕрер четвĕрт кăрчама чиксен те палăрас çук та...

Пурте кулса ячĕç. Хайне кăрчама çинчен калаканни çине Микстур хĕсĕк куçĕпе пăхса илчĕ те сасартăк ăна:

— Ослы!— терӗ. Унтан каллех шӑл витӗр сурса, ерипен урамалла утса тухса кайрӗ.

— Уй тӑмани!..— кулса юлчӗҫ кил хушшинче.

Каҫ пулма пуҫларӗ. Пушатнӑ лавсем кил хушшинчен тухса кайрӗҫ, ҫынсем те, калаҫкаласа, чӗлӗм турткаласа, хапхаран тухрӗҫ. Уйчен те пулмарӗ, Назар кӗлет алӑкне мӑн ҫӑраҫҫипе епле питӗрнине пӑхса тӑракан Тарас урамра тахӑшӗ хыттӑн кӑшкӑрнине илтрӗ:

— Килеҫҫӗ хайхисем! Пирӗн тиликатсем килеҫҫӗ!..

— Варуксем таврӑнаҫҫӗ пулас,— терӗ вӑл Назара.— Тухса пӑхас-ха...

Хир енчен, чӑнах та, Кулине, Варук, Марине тата майралла тумланнӑ тепӗр хӗрарӑм утса анаҫҫӗ. Майрине Тарас тӑруках паллаймарӗ, ҫывӑхарах пырсан тин уйӑрса илчӗ— вӑл ялти ҫамрӑк учительница Екатерина Васильевна-мӗн. Ял ҫыннисем ӑна пурте Катя тесе чӗнеҫҫӗ. Тарас вӑл хӗрачана мӗн пӗчӗкренпех пӗлет— ача чух шкулта унпа пӗр вӑхӑтра вӗреннӗ.

Хӑйсене ҫынсем кӗтсе тӑнине курсан, хӗрарӑмсем пӗрпӗрин ҫине пӑхса кулса ячӗҫ, ҫапла вара, кулма чарӑнмасӑрах, вӗсем Варуксен умне пырса тӑчӗҫ.

— А-а, таврӑнтӑр-и, ҫухалнӑскерсем?— терӗ Тарас шӳтлӗн, хӗрарӑмсене пӗрин хыҫҫӑн теприне ал парса.— Эпир ӗнтӗ сире шырама ярасшӑнччӗ...

— Вуҫех таврӑнас мар тенӗччӗ те, кайран килес терӗмӗр тата...— кулса илчӗ Варук.

— Питех кӑмӑла кайрӗ-и-мӗн?

— Ара, мӗн калӑн ӗнтӗ...

— Курманнине куртӑмӑр ҫав!— хушса хучӗ Кулине.

— Аплах-и?

— Ҫапла пулмасӑр...

— Но-о... Аплах пулсан, ларӑр-ха, эппин, каласа кӑтартӑр пире те пӑртак...

Тарас урамри каска ҫине ларчӗ, унпа пӗрле халь ҫеҫ таврӑннӑ хӗрарӑмсем те, паҫӑр Назар кил хушшинче пулнӑ ҫынсем те вырнаҫрӗҫ. Назар хӑй те тухса тӑчӗ, тата урампа иртсе пыракан пӗр-ик ҫын чарӑнчӗҫ.

— Ну, Кулине аппа, эс аслӑрах, пуҫла тавай...—терӗ Тарас.

Кулине, хӑйӗн ӗнси ҫинелле анса кайнӑ масмакне тӳрлетсе, ҫӳҫне ывҫипе якатрӗ те, хӗрсем ҫине куларах пӑхса илчӗ.

— Мӗнрен пуҫлам-ши?..

— Йĕркипе кала ара,— терĕ Варук.

— Ну, йĕркипе калам, эппин...— пуçларĕ те Кулине, каллех чаранса, Варукпа Марине çине пăхрĕ.—Тупата, пĕлместĕп...

— Хулана мĕнле çитрĕр, çавăнтан тытăн,— пулăшрĕ Тарас.

— Юрĕ, эппин... Хулана каç пуласпа çитрĕмĕр те, эсĕ тĕллеттерсе янă çурта тупрăмăр, хайхи... мĕнлеччĕ-ха çав, Варук?

— Уком.

— Ия çав, укома. Хамăр хутсене пĕр кĕске çӳçлĕ майрана патăмăр. Вăл пире тӳрех: «Апат çинĕ-и эсир паян?»— терĕ. — Çинĕ, — тетпĕр. — «Хăçан?» — Ирпе. —«Апла пулсан, малтан столовăйне айтăр»,— терĕ. Карăмăр пасар пулнă çĕре... Леш кĕтесри мăн çурта кĕрсе, çӳлти хута хăпартăмăр та пире чиччасах апат пырса пачĕç...

— Авăртрăр пуль пĕрре?— терĕ тахăшĕ.

— Пана апата ма çиес мар?.. Ну, çирĕмĕр те, майра пире хула хĕррине, леш реальни теççĕ-и çав... çавăнта илсе кайрĕ. Пырса кĕтĕмĕр те — айтурух! Тăп-тулли хĕрарăм! Катка пек. Таçтан та пынă курăнать. Сахалтан та пĕр виççĕр çын пулĕ çав... Сасартăк, ман пуç çийĕнчех шăнкăрав сасси вăрăммăн янраса кайрĕ. Хĕрарăмсем пурте çӳлти хута хăпарма пуçларĕç. Эпир те хăпартăмăр, халăхпа пĕрлех пысăк пӳлĕме пырса кĕтĕмĕр. Хайхи çамрăк майра, пире маларах илсе кайса, пукансем çине лартрĕ. Пирĕн ĕнтĕ куçпуç салансах кайрĕ, ним çине пăхма та пĕлместпĕр! Халăхĕ пĕр йăшăлтатать, пур çĕрте те калаçаççĕ, шавлаççĕ, пӳлĕмне темĕн тĕрлĕ те илемлетсе пĕтернĕ... Туршăн та, пĕр çĕр аршăн хĕрлĕ çитсă пĕтернĕ пуль стенасем çине каркаласа... Çитси çине веçех çырса тултарнă тата...

— Мĕн çырнă?— Кулинене пӳлсе ыйтрĕ халĕ çеç пырса тăнă Исай.

— Эп хам вулаймастăп та, каламах пĕлместĕп ăна... Ак, кусем (Кулине пуçĕпе Варук еннелле сулчĕ) веçех вуларĕç пулас... Мĕнччĕ çав, Варук?

— Пĕтĕмпех хĕрарăмсем çинчен çырнă.

— Мĕн тенĕ-ха вара?

— Хĕрарăм халĕ арçынпа танах, тет, унăн та патшалăха тытса тăма пĕлмелле, тет...

— Пит хăватлă каланă-çке, май мар,— мăкăртатса илчĕ Кулине калавне итлесе тăракансенчен пĕри, суккăртарах çын, Шĕвĕрпуç Хоми тенĕскер. — Апла, малашне

упăшкисем арăмĕсене мар, арăмĕсем упăшкисене хĕнеççĕ пуль?

— Хĕрарăма текех эс хĕненĕ пек хĕнеме юрамасть, терĕç çав,— татса хучĕ ăна Кулине,— уншăн суда памалла, терĕç. Асту акă, лекетĕн пĕрре шур çурта кирпĕч шутлама.

— Эс йĕркипе, Кулине, йĕркипе,— чарчĕ ăна Тарас.

— Халь те йĕркипех ара... Нумаях та лармарăмăр— шăнкăрав татах янратса илчĕ те, пирĕн умри тем пысăкăш хулăн чаршав уçăлчĕ кайрĕ. Ун хыçне вăрăм сĕтел лартнă пулнă, сĕтелне симĕс пуставпа витнĕ... Сĕтел умĕнче пĕр чылаях ватă хĕрарăм тăрать. Малтан хурт вĕлли пекех сĕрлекен халăх шăпах пулчĕ. Вара çав хĕрарăм калама тапратрĕ. Тĕлĕнсе каймалла! Эпир ăна вырăс пуль тенĕччĕ, анчах вăл пирĕн пек чăвашах иккен, тӳрех чăвашла калама тытăнчĕ.

— Мĕн каларĕ-ха?

— Мĕн çав... Чăваш хĕрарăмĕ ĕмĕр-ĕмĕрĕпех тĕттĕмре пурăннă, кун çути курман, тет, унăн пурнăçĕ тĕпел кукринче иртнĕ, вăл выльăх пек ĕçлесе, асаппа мăшкăл тӳссе çеç пурăннă, тет, малашне апла пулмалла мар ĕнтĕ, чăваш хĕрарăмне те çутта кăлармa тытăнмалла, халăх ĕçне хутшăнтармалла, тет... Нумай каларĕ вăл, пурне те астуса илейместĕп ĕнтĕ, çапах та вăл каланине пĕтĕмпех ăнлантăмăр... Хамăр пурнăçа епле юсасси çинчен канашлама пухрăмăр эпир сире, терĕ вăл. Çапла каласанах — çурăм хыçĕнче, таçта çӳлте, темскер этем майсăр вăйлă, аслати пек кĕрлесе, янраса кайрĕ. Шартах сикрĕм çав, хăрасах кайрăм!

— Мĕн пулнă-ха вăл апла?

— Музăк теççĕ-и... Пӳлĕмĕнче унта, хыçалта, çӳллĕ вырăн тунă, çавăнта пĕр çирĕм çын темле çутă трубасене вĕрсе лараççĕ-мĕн...

— Духовой оркестр,— терĕ Исай.

— Çав тухови пулмалла çав... Ана-кăна эпир нимĕн те пĕлмен-çке, ялтан ниçта тухман çынна мĕн тетĕн эс?

— Ку тĕрĕс ĕнтĕ. Малалла мĕн пулчĕ?— васкатрĕ Тарас. Çав вăхăтра Назар тĕлне Павăл пичче, Хăмăт Энтри тата темиçе çын пырса тăчĕç.

— Унтан вара пĕрин хыççăн тепри туха-туха калама пуçларĕç. Тем çинчен те вĕрентсе каларĕç. Халь пурне астуса та çитерес çук. Хĕрарăм пурнăçĕ малашне пĕтĕмпех улшăнмалла, терĕç. Хĕрарăмсен пур çĕрте те арçынсемпе пĕрлех пулмалла, вĕсене пур çĕре те суйламалла, вĕрентмелле, теççĕ. Унтан... мĕн пулчĕ çав, Варук?

— Чирсем ҫинчен...

— Ҫӑнах та-ҫке! Пӗр мӑн куҫлӑхлӑ хытҫан тухтӑр чирсем ҫинчен ӑнлантарчӗ. Пирӗн хушӑри чирсем нимрен ытла эпир таса мар пурӑннинчен пулаҫҫӗ, тет. Кил-ҫурта, ҫипуҫа таса тытсан, чирсем те сахалланаҫҫӗ, тет. Ун хыҫҫӑн тепӗр майра-тухтӑр ачасене мӗнле пӑхмалли ҫинчен каласа кӑтартрӗ... Юлашкинчен пире ҫаксем ҫинчен ялти хӗрарӑмсене пӗтӗмпех ӑнлантарса пама хушрӗҫ. Авӑ, тем чухлӗ хутсем парса ячӗҫ, вӗсене пурне те вуласа пӗлмелле, тет.

— Мӗнле хутсем?

— Кӑтарт, Марине...

Марине хул хушшине хӗстернӗ хут тӗркине салтрӗ. Хуларан тӗрлӗ тӗслӗ агитациллӗ плакатсем парса янӑ иккен: ялхуҫалӑхӗ ҫинчен, чирсем ҫинчен, ачасене епле пӑхса ӳстересси ҫинчен... Пухӑннӑ ҫынсем вӗсене каҫса кайсах пӑхма тытӑнчӗҫ.

— Тата мӗн куртӑр хулара? — ыйтрӗ ҫав хушӑра Исай, Марине патнелле ҫаврӑнса.

Вӗсем ӗнтӗ хӗллеренпех пӗрне-пӗри кӑмӑлласа пурӑнаҫҫӗ, ӑна ҫынсем те сисеҫҫӗ, анчах та, иккӗшӗ те ҫамрӑк пирки хӑюсӑр пулнипе, кун ҫинчен пӗр-пӗрне каласа параймаҫҫӗ, ӑнсӑртран тӗл пулса калаҫма тӳр килсен, вӑтанса ӳкеҫҫӗ. Ҫавӑнпа халӗ те, Исай сӑмах хушсан, Марине хӗрелсе кайрӗ.

— Пынӑ каҫах шивой картин кӑтартрӗҫ, — терӗ вӑл, Исай ҫине тӳррӗн пӑхма хӑяймасӑр.

— Мӗнле шивой картин?

— Стена ҫине ҫакнӑ шӑналӑк ҫинче чупаҫҫӗ ара... Кина теҫҫӗ-и...

— А-а, пӗлетӗп! Кино. Кинематограф. Урӑхла каласан, электричествӑпа ӗҫлет...

— Тиятӑр кӑтартрӗҫ тата, — терӗ вӗсен калаҫуне итленӗ Варук. — Ачам, питӗ тӗлӗнмелле пулчӗ. Кининчен те ытларах кӑмӑла кайрӗ мана. Ҫӗр улпучӗсем хресченсене епле асаплантарнине куртӑмӑр. Хресчен ывӑлӗ пӗр хӗре юратнӑ, ӑна качча илесшӗн пулнӑ, анчах та улпут ывӑлӗ ҫав хӗр ҫине хӑй куҫ хывнӑ-мӗн. Иккӗшӗ тавлашма тапратрӗҫ те, улпучӗ хресчене ҫупса ячӗ. Ку та тӳссе тӑраймарӗ, лешне пӗррех персе антарчӗ, лешӗ чутах вилсе каятчӗ. Ҫавӑншӑн хресчен ывӑлне тыттарса ячӗҫ, улпучӗ хӗре пусмӑрлама тапратрӗ... Хӗрӗ хӑюллӑскер пулчӗ, парӑнмарӗ ҫавна, улпут пӳлӗмӗнче ҫакӑнса тӑракан хӗҫпе пӗррех ярӑнтарчӗ ҫакна пуҫ урлӑ. Анчах та хӑтӑлаймарӗ

хӑй, пырса тытрӗҫ. Юлашкинчен хӗр ҫав тери хурлӑхлӑн юрларӗ... Куҫҫулӗсем шӑпӑртатсах анчӗҫ пирӗн...

— Питӗ шеллерӗмӗр ҫав,— хушса хучӗ Марине.

— Унтан тата музей кӑтартрӗҫ... Мӗн кӑна ҫук пуль унта! Пӗчӗк хурт-кӑпшанкӑсенчен пуҫласа упасем таранах... Таҫти темле кайӑксем те...

— Чӑнах та ҫав, нихҫан курманнине куртӑмӑр.

— Эппин, куҫ уҫӑлчӗ пӑртак? Епле пек, хӗрсем?—терӗ Варука куҫӗнчен пӑхса ларнӑ Тарас.— Ӳкӗнместӗр пуль кайнӑшӑн, э?

— Мӗн ӳкӗнмелли...

— Вӑл ҫапла пулассине эпӗ малтанах пӗлнӗ, ҫавӑнпа ҫине тӑрсах хӑваларӑм сире... Халь ӗнтӗ, ыран-виҫминесенех, пур хӗрарӑмсене те пухатпӑр та, сирӗн ҫаксем ҫинчен пӗтӗмпех каласа кӑтартмалла пулать.

— Ху куҫпа курса, ху хӑлхупа илтнӗ япала ҫинчен каласа пама пулӗ-ҫке ӑна,— терӗ Кулине, каска ҫинчен тӑрса.— Ну, хӗрупраҫ, киле каймалла пуль, каҫ та пулса килет... Ачасем темле пурӑнкаларӗҫ ӗнтӗ хамсӑр...

Кулинепе Марине анаталла утрӗҫ, Варук киле кӗчӗ, вӗсем хыҫҫӑн ытти ҫынсем те чылайӑшӗ саланчӗҫ.

Вӗсемпе пӗрле Екатерина Васильевна та кайма тӑчӗ, анчах Тарас ӑна тытса чарчӗ.

— Епле пурӑнкалатӑн, Катя, мӗн ӗҫлекелетӗн? Курманни нумай пулать...

— Пурӑнкалатӑп хама май,— терӗ учительница.—Халӗ каникул вӑхӑчӗ те, нимех те ӗҫлеместӗп-ха. Хулари хӗртантӑшсем патне курма кайсаттӑм, унта делегаткӑсен канашлуне кӗрсе тухрӑм, хамӑр ялсене тӗл пултӑм...

— Хӗрарӑмсемпе малашне сана ӗҫлеттермелле пулать пулӗ, Катя. Хутла та вӗрентмелле вӗсене, чир-чӗртен сыхланма та...

— Ӗҫлекеленӗччӗ те-ха эпир, ҫак выҫлӑх пуҫлансан пӑрахмалла пулчӗ. Выҫӑ халӑхпа мӗн тӑвӑн?

— Ку тӗрӗс, анчах малашне ун пек пулмасть пуль ӗнтӗ, ҫӗнӗрен тытӑнма тивет.

— Маншӑн пулсан, ӗҫ тытӑнса тӑрас ҫук, Тарас Петрович!

— Юрать, эппин. Тӗл пулӑпӑр-ха, калаҫса татӑлӑпӑр...

Учительница пуҫӗпе сулса сывпуллашрӗ те урампа анса кайрӗ. Варуксен тӗлӗнче, унӑн ашшӗсӗр пуҫне, Тарас, Павӑл пиччепе Хӑмӑт Энтри тата Исай ҫеҫ тӑрса юлчӗҫ.

Кантăр енчен вĕрекен çил, кас пулна май, хĕвеланăç еннерех куçрĕ, кăшт сивĕрех пулма пуçларĕ, тӳпери пĕлĕт таткисем хăмăрланма тытăнни курăнчĕ.

— Кĕлет патне хурал тăратас пулать пуль, Назар пичче,— терĕ Тарас.— Темрен тем пулса тухĕ тата. Юлашки вăхăтра таврара нимех те илтĕнмест пек те, пурпĕр сыхланас пулать...

— Сыхланни нихçан та кансĕрлемест ĕнтĕ вăл,— килĕшрĕ Павăл пичче.

— Вăхăчĕ çавăн пекрех-ха çав. Бандитсен юлашкисем пĕтĕмпех пĕтнĕ теме çук. Унта-кунта çӳреççĕ-ха выçă кашкăрсем евĕр...

— Шуйттан пĕлет-и вĕсене, тен, хамăр ялтах пулĕ кам та пулин,— терĕ Хăмăт.

— Кама тăратăпăр?

— Хамах хураллатăп пуль,— терĕ Назар.— Кĕлет умне тухса вырттăл та...

Тарас унпа килĕшмерĕ:

— Ун пек май килмест, Назар пичче... Эс иртнĕ кас та путлĕ çывăрман, анчах санăн ыран ĕç май таранах пулать. Урăххине тупăпăр.

— Акă, Исая хушас, эппин...

— Чăнах та, хурал тăр кĕçĕр,—Исая айăкĕнчен чавсипе тĕкрĕ Тарас.— Ыран санăн нимех те тăвас çук пуль?

— Юрĕ ара,— килĕшрĕ Исай.

— Эп сана хам пăшала авăрласа парăп,— терĕ Павăл пичче.— Чăн-чăн часовой пекех пулатăн.

— Вăл та юрать...

— Тĕрĕс, ку чухне пăшал кансĕрлемест!

Кун хыççăн татах чылай хушă каласса ларчĕç вĕсем Назар умĕнчи каскасем çинче. Хĕрарăмсем хулана кайса килнине асăнчĕç. Тарас вăл питĕ усăллă ĕç пулни çинчен каларĕ («мĕншĕн тесен пирĕн çур пурнăç хĕрарăмсем çинче тытăнса тăрать...»), унтан хирти тырпулсем çине куçрĕç, Назар каллех «Пиçен уйĕ» пирки тапратрĕ, унта куçса ларсан аван пуласси çинчен тата тепĕр хут ĕнентерме тытăнчĕ. Ун шухăшĕпе пурте килĕшрĕç.

— Эп хам та пĕрмаях шухăшлатăп-ха ун пирки,— терĕ Тарас,—анчах та ĕçе эс каланă пек мар, кăшт урăхларах тăвас пулать пулĕ.

— Мĕнле тата?

— Эпĕ унта çĕр ĕçне пурĕ пĕрле ĕçлемелли юлташлăх тума май çук-ши, тетĕп.

* * *

Киле таврӑнсан, Тарасӑн темшӗн ҫывӑрас килмерӗ. Амӑшӗпе шӑллӗне вӑратас мар тесе, вӑл хуллен кӑна хыпашлакаласа «шӑши куҫне» тупса ҫутрӗ, сентре ҫинчен темле хутсем илчӗ те сӗтел хушшине ларчӗ. Хутсене суйланӑ хушӑра унӑн аллине пӗр сӑнӳкерчӗк кӗрех кайрӗ. Малтанах ӑна вӑл ытти хутсемпе пӗрле аяккалла хума тӑчӗ, анчах та хумарӗ, лампа патнерех илсе пырса тинкерсех пӑхма тытӑнчӗ.

Ку — Тарас пӗлтӗр ҫак вӑхӑтра Ҫӗпӗрти пӗр хулара хӑйӗн икӗ юлташӗпе пӗрле ӳкерттернӗ карточка пулчӗ. Пӗри — Саранск ҫывӑхӗнчи мӑкшӑ каччи, тепри Чулхула вырӑсӗ, Сормово заводӗнчи рабочи. Вӗсем икӗ ҫулталӑка яхӑн пӗрле пурӑнчӗҫ, нумай ҫапӑҫусенче пулчӗҫ, пӗр хуйхӑпа хуйхӑрчӗҫ, пӗр савӑнӑҫпа савӑнчӗҫ. Мӑкшӑ ҫак карточкӑна ӳкерттернӗ хыҫҫӑнах пӗр ҫапӑҫура вилчӗ, вырӑсӗ тепӗр ҫулталӑкран Тараспа пӗрлех киле таврӑнчӗ. Атӑл тӑрӑх Васильсурска ҫитсен, вӗсем пӗр-пӗринпе ӑшшӑн, тӑвансем пекех уйрӑлчӗҫ, пӗр-пӗринпе яланах ҫыхӑну тытма, ҫырусем ҫырма сӑмах пачӗҫ.

Карточка ҫине пӑхса ларнӑ май Тарас пуҫӗнче нумай асаилӳсем ҫуралса шуса иртрӗҫ...

«Мӗнле пурӑнать-ши вӑл халь? Ҫыру ҫырас-ха...»— шухӑшларӗ вӑл юлашкинчен. Ҫавӑнтах хутпа кӑранташ илчӗ те ҫырма тытӑнчӗ.

«Тусӑм Потап — ҫырчӗ вӑл,— иксӗмӗр уйрӑлнӑранпа чылай вӑхӑт иртрӗ ӗнтӗ, анчах эпӗ вуҫех те сисмерӗм ӑна, кунсем ҫав тери хӑвӑрт иртсе пыраҫҫӗ... Киле ҫитсенех ӗҫе кӳлӗнтӗм те (ним пысӑклатмасӑрах калатӑп сана!) артиллери лаши пекех ӗҫлетӗп. Пирӗн ялти пурнӑҫ питех те начар-мӗн, Советра жуликсем, мародерсем, тӑшмансем ларнӑ, пурнӑҫа юхӑнтарсах янӑ, манӑн вара, ҫӗнӗ шӑпӑр вырӑнне пулса, чӑн малтан ҫав шӑршлӑ ҫӳп-ҫапа тасатма тӳр килчӗ. Халь ӗнтӗ ӗҫсем юсанма пуҫларӗҫ, темелле, ҫамрӑксене пӗрлештертӗмӗр — ячейка ӗҫлеме тытӑнчӗ, актив пур, хӗрарӑмсене те вырӑнтан тапратрӑмӑр... Пӗр пысӑк субботник ирттертӗм, ҫак кунсенче тата тепре тума шут пур-ха. Пуҫра питӗ пысӑк плансем ҫуралаҫҫӗ, тусӑм! Ял пурнӑҫне епле улӑштарса, ҫӗнетсе пымаллине тӗкӗр ҫинчи пекех куратӑп... Халь эпир ӗҫе тин ҫеҫ пуҫӑнатпӑр-ха вӗт, чӑн-чӑн пысӑк ӗҫсем, татӑклӑ ҫапӑҫусем пӗтӗмпех малта. Анчах та хӑратмаҫҫӗ вӗсем мана, пӗртте шиклентермеҫҫӗ! Ҫав ӗҫсем

витĕр чечеклĕ, телейлĕ, илемлĕ пурнăç курăнать, тусăм, çав хавасланттарать мана, чĕрене çĕклет, малалла туртать. Çулсем иртĕç, хамăра чăрмантаракан тăшмансене пуçĕпех аркатăпăр, тӳснĕ йывăрлăхсем манăç пулĕç, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем çитĕç... Çавăншăн, хамăрăн пуласлăхшăн, малашнехи телейлĕ пурнăçшăн ĕçлетпĕр те вĕт халь! Астăватăн-и, киле тухса килес умĕн военком мĕнле калаçрĕ пирĕнпе? Вăл пирĕн çĕршыв вунă-вунпилĕк çултан мĕнешкел пуласси çинчен каларĕ... Пулатех вăл калани! Нумаях та вăхăт иртмĕ—пирĕн çĕршыв пек вăйлă çĕршыв та пулмĕ тĕнчере. Эсир хулара ĕçлĕр, эпир — ялта, хуçалăх кунтан-кун çирĕпленсе хăпарĕ, культура сарăлĕ, хулапа ял хушшинчи уйрăмлăх пĕтсе пырĕ... Хамăртан килет-çке вăл, хамăр вăйран, хамăр тăрăшса ĕçлениннчен! Аса илĕпĕр вара иртнĕ кунсене... тĕлĕкри пек... Çапах та, хамăр пурнăçа усăсăр пурăнса ирттермерĕмĕр, теме тивĕçлĕ пулăпăр. Çапла мар-и, тусăм?

Хамăн пурнăçра улшăнусем çук-ха. Елĕкхи пекех каччă. Леш хĕр... (астăватăн-и, Варук тенĕскерне асăнаттăм?) уллталаман мана, таврăнасса кĕтнĕ. Час-часах тĕл пулкалатпăр, майĕпе халăх хушшинчи ĕçе хутшăнтарма тăрăшатăп ăна. Аван çын. Асĕ те пур, кăмăлĕ те аван. Тен, кĕркунне туя чĕнĕп сана... А эс мĕнле? Леш хут фабрикинчи Таня сана кĕтнĕ-и?

Анне питĕ чирлĕ пулнă та — сывалчĕ, халь чиперех çӳрет, шăллăм арçури пекех çивĕчленсе кайнă... Ыран акă пĕр пысăк ĕç хускататăп-ха: пĕр çирĕм-вăтăр хуçалăхран çĕре пĕрле ĕçлемелли юлташлăх тăвасшăн. Планĕ пит аван та-ха, мĕнле пулĕ ĕнтĕ. Кайран çырăп. Эсĕ те çыр!

Халлĕхе сывă пулса юл. Çĕр хут салам!»

Мĕн çырнине Тарас çĕнĕрен вуласа тухрĕ те хăйĕнчен хăй тĕлĕнчĕ.

«Çырма пултаратăп иккен эпĕ... Пăх-ха! Кун пекех пулсан, таçта сăвăсем те çырма тытăнăп тата!»— кăмăллăн кулса илчĕ вăл хăй ăшĕнче.

Тулта çав вăхăтра çанталăк чăннипех пăсălма пуçларĕ. Çил вăйланнăçемĕн вăйланчĕ, йывăçсем кĕркуннехи пек кашларĕç... Тарас çырăва пуçтарса хучĕ те тула тухрĕ. Тӳпене пĕтĕмпех хăвăрт шăвакан çăра пĕлĕтсем хупласа илнĕ иккен, пăч-тĕттĕм пулса тăнă. «Исай мĕнле тăрать-ши унта? Çывăрса ан кайтăр тата... Кун пек каçсем усал вĕсем...»— шухăшларĕ вăл. Çавăнтах, пӳрте кĕрсе, пиншак тăхăнчĕ те васкаса тавалла утрĕ...

## 14. ÇАРАТУ

Çĕрле, пĕтĕм ял çывăрса кайсан, Лява Уртемĕн кайри пӳртĕнче кивĕ лутра сĕтел тавра тăватă арçынпа пĕр хĕрарăм тем çинчен пит те вăрттăн, çав тери асăрханса калаçса ларчĕç. Кил хуçи ĕçмелли те, çимелли те кăларса хунăмĕн, анчах çынсем вĕсем çине çаврăнса та пăхмарĕç, нимрен ытла турăшсем айĕнче ларакан Махорка сăмахĕсене итлерĕç...

Пĕркунне, Уртемпе сывпуллашса тухса кайсан, Махорка Хусана çитсе тухнă, анчах унта хăйĕн тусĕсене тупайман: вĕсенчен хăшне хупса лартнă иккен, хăшĕсем таçта мурне тарса çухалнă. Ют хулара икĕ кун çапкаланса çӳренĕ хыççăн вăл выçăпа аптра пуçланă. Атăл пристанĕнчи билет сутакан касса умĕнче пĕр тутар арăмĕн аллинченех укçа туртса илсе тарнă, ăна хăваласа çитсе хĕнеме тапратнă, анчах та ку, темле майпа вĕçерĕнсе, пристаньрен хускалса кайма пуçланă пăрахут çине сикме ĕлкĕрнĕ. Козьмодемьянскка çитсен, вăл малтанах сăнаса пынă икĕ чăматана вăрласа çырана тухнă та, унти япаласене çав кунах пасарта сутса, Энтрияльнелле утнă.

Лява Уртемĕ, пĕркунне Махоркăна сиввĕнтерех ăсатса янă пулин те, халь ăна хапăл тусах йышăнчĕ.

— Пит аван пулчĕ-ха эс килни,— терĕ вăл.— Кĕтсех тăраттăм.

— Мĕн апла?

— Ĕç пур, тăванăм. Пысăк ĕç...

Четвĕртри сăмакуна ĕçсе ларнă чух Уртем Махоркăна хăй шухăшласа хуни çинчен каласа пачĕ. Питĕ вăрттăн, пӳртре çын пулнă пулсан—вăл та нимĕн те илтмелле мар каларĕ.

— Çынсем кирлĕ,— терĕ Махорка, Уртем калама чарăнсан.— Шанчăклă çынсем тупма пултаратăн-и?

— Миçе кирлĕ?

— Виç-тăват çын.

— Пĕрре пур...

— Кам?

— Çынни тăмсайрах ĕнтĕ, анчах та кумсумулсене юратмасть, Микстур Михали, тенĕскер...

— Калаçса пăх. Урăх çук-и?

— Хамăр пулăпăр, эппин... Питех кирлĕ пулсан, хĕрарăмсем пур...

...Вĕсен телейне, пачах та кĕтмен çĕртен, тепĕр каçхине

Уртем пўрт алăкне Чалăшкуç пырса шаккарĕ. Ку бандит çак хушăра нумай çапкаланса çўренĕ иккен, пĕр вăхăт тăван ялĕнче те пурăннă, анчах та ялти активистсем вăл камне чухласа илсе ăна тытса пама хатĕрленнине сиссен, часах тухса шунă. Ниçта кайма çуккипе, вăл каллех Уртем патне пырса тухнă.

Махорка ăна тўрех пулас «ĕç» çинчен ăнлантарса пачĕ. Чалăшкуç пĕр сăмахсăрах килĕшрĕ:

— Майлатпăр! Пĕрремĕш хут мар...

Микстур Михалине вара Уртем пит ăста çавăрса илчĕ. Вăл сыпма юратнине астуса, кĕсйине çур пулштух чикрĕ те, ун патне çăраççи юсаттарас сăлтавпа пычĕ. (Микстур тимĕр хатĕрсемпе кăшт-кашт аппаланкалать.) Сăмах хыççăн сăмах.. Пурнăç начарри, ялта халь комсомолецсем пуçпулса тăни, Михалана вĕсем хисеплеменни çине кĕрсе кайрĕ Уртем. Пĕр сехет хушшинче ĕç пулса та тăчĕ, Микстур комсомолецсене хирĕç кирек мĕн тума та хатĕр иккенни курăнчĕ. Уртем ăна тумланма пулăшасси çинчен каласан, вăл антăхсах кайрĕ вара.

— Шалавар çук-и сан?— ыйтрĕ тўрех.

— Ма çук пултăр? Пур... Халь тесен, халь пама пултаратăп.

— Пар, эппин!— сиксе тăчĕ Микстур, пурин çинчен те манса кайса.

— Кăшт тăхтасан пыр. Шалавар анчах мар, тен, тата мĕн те пулин тупăпăр,— юри савăнăçлă пек пулса, куçне хĕссе илчĕ Уртем.— Манпа туслă пурăнсан, нихçан та аптрас çук эс!

Хавасланса кайнă Микстур тепĕр çур сехетренех персе çитрĕ Уртем патне. Ку ăна чăлантан темле кивĕ галифе (бандитсем вăрласа килнĕ япаласен юлашкине) тата çавнашкалах кивĕ сенкер подтяжка тупса пачĕ. Микстур вĕсене йăпăр-япăр тăхăнса ячĕ те, хăйне тăрăх пăхкаласа, пўртре каллĕ-маллĕ уткалама тытăнчĕ. Ун кăмăлне çĕклентерме Уртем юриех мухтарĕ ăна:

— Э-э, ку сана калама та çук килĕшет-çке! Шутсăр лайăх, ахвицер пекех!— терĕ вăл, Микстурăн çинçе те хыткан пĕççисем çинче галифе пуш михĕ пекех çакăнса тăнă пулин те. Çавăнтах чăлантан тата пиншак çĕклесе тухрĕ.

— Çакна тăхăнсан, татах капмар пулмалла та эсĕ, анчах куна пама кăшт тăхтам-ха... Ĕçне тăвар малтан, вара пурте пулĕ...

— Кала, Уртем пичче, хуть те мĕн тăватăп!— кашкăрса илчĕ халь ĕнтĕ пуçне пĕтĕмпех çухатнă Микстур.

— Чăнах-и? Турра асăн, эппин.

— Туршăн та, хĕвелшĕн те!

— Нимрен те хăрамастăн-и?

— Шуйттанран та хăрамастăп!

— Сăхсăх!

Микстур вăльт та вальт çеç хĕрес хурса илчĕ.

— Çĕр çăттăр мана!

— Апла пулсан, акă мĕн, шăллăм...

Уртем Микстура кайри пӳрте кĕртсе сĕтел хушшине лартрĕ те, иккĕшĕ те пĕрер стакан сăмакун ĕçнĕ хыççăн, ăна «ĕç» çинчен ăнлантарма тытăнчĕ. Нумай ăнлантарчĕ... Вĕсем калаçнине çĕр çинче пĕр чун та илтмерĕ. Уртемĕн сăмахĕсене Микстур малтан тĕлĕнсе, унтан хăраса тăнласа ларчĕ, анчах Уртем ăна паттăрлатма тата тепĕр стакан пачĕ те, вăл паçăрхи пекех хăй тем тума та пултарни çинчен калама тапратрĕ...

— Никам та нимĕн те пĕлмест, пĕлес те çук... Анчах эсĕ хăвна пысăк усă кӳретĕн, сана ахаль тăвас çук эпир. Укçа та, çипуç та пулать. Сан пек маттур качча мĕн кирлĕ тата?— тесе пĕтерчĕ Уртем хăйĕн сăмахне.

Анчах Микстур сасартăк чĕнми пулчĕ.

— Ма ним те шарламастăн?— ыйтрĕ Уртем, хăйĕн çăмламас питне Микстурăн пичĕ патнех илсе пырса.—Ай, кумсумулсене хĕрхенетĕн-и? Асту, халь тин каялла чакма юрамасть ĕнтĕ. Ăçта та пулин пĕр сăмах персе ярсан, пирĕнпе пĕрле эс ху та пĕтетĕн!

— Юрать,— пăчăртанса тухрĕ Микстур пырĕнчен.

— Пар аллуна!

— Ме...

— Халь ĕнтĕ Назар таврашнелле кайса çӳре... Каçхине вăл хулана тавар тиеме кайнă. Пĕлме тăрăш: мĕн илсе килнĕ, ăçта хураççĕ...

Микстур итлерĕ, Уртем хушнине кайса пĕлчĕ. Çĕрле пулсан вара вăл Уртемпе, Махоркăпа, Чалăшкуçпа, Мамун арăмĕпе пĕрле каллех çав сĕтел хушшинче ларчĕ, Махорка вĕсене Уртем тахçанах шухăшласа хунă «ĕçе» мĕнле тумаллине вĕрентрĕ. Тĕрĕссипе каласан, кулаксемпе бандитсен шайки çак каçхине этем майсăр хăрушă, тискер çарату тума хатĕрленчĕ. Çур çĕр иртсен пĕр сехетре вĕсем Уртем пӳртĕнчен умлăн-хыçлăн тухрĕç те тĕттĕмре çухалчĕç. Никам куçĕ те курмарĕ вĕсене, пĕр чĕрчун та асăрхамарĕ.

Энтриялĕ лăпкăн кăна çывăрчĕ, хĕвеланăç енчен çаплах чуна çӳçентерекен çил вĕрчĕ, урамри ватă йăмрасем теме сиснĕ пек шавлăн кашларĕç...

* * *

Павăл пиччерен пăшал илсе хăпарсан, Исай йăпăртлăха киле кĕрсе тухрĕ те Варуксем патне каялла пычĕ.

— Ну, эс çывăрах ĕнтĕ, эп хурала тăратăп,— терĕ вăл Назара.— Пĕр-пĕр кашкăр тытăп-и-ха кĕçĕр...

— Асту, хăвна тытса ан çиччĕр,— кулчĕ Варук, крыльца çинче аллине çуса тăраканскер.

— А мĕн? Макăракан пулас çук вĕт, пурпĕр,—çавнашкалах кулса тавăрчĕ Исай.

— Ăçтан пĕлес, тен, пулĕ?

— Никам та çук...

— Марине çинчен мантăн-и-мĕн?

Капла калани Исая тӳрех такăнтарчĕ.

— Ан калаç кирлĕ мара...— аллипе сулчĕ те вăл, урамалла тухрĕ.

Малтанах вăл лаç пуçĕнчи каска çине ларчĕ. Ытахальтен чĕлĕм чĕркесе чĕртрĕ (туртасса — туртсах каймасть вăл), Павăл пиччен берданкине çавăркаласа, гильзине кăларса, кĕпçи витĕр пăхрĕ, унтан каллех авăрларĕ. Çав вăхăтра тĕттĕмленсе çитрĕ, тӳпере пĕр çутă та курăнми пулчĕ, çил татах вăйланчĕ. Исай вара лаç кĕтессинчен сулахаялла пăрăнчĕ те, хӳттерех кайса, кĕлет çумĕнчи каска çине вырнаçрĕ.

Этем пĕччен юлсан, никампа калаçмалли те çук чухне, унăн пуçĕнче яланах тĕрлĕрен-тĕрлĕ шухăшсем, асаилӳсем çуралаççĕ, вăл хăйпе хăй калаçма тытăнать. Исайăн та çавнашкалах пулчĕ. Вăл, хуллен кăна темле юрă кĕвви шăхăркаласа ларнă май, шухăша кайрĕ...

Малтанах паян Маринепе калаçнине, сăмах хушсанах Марине епле именсе хĕрелсе кайнине, ăна куçран пăхма хăяйманнине аса илчĕ. Чăн та çав, Марине питĕ аван хĕр... Сăнĕ-пичĕ хитре, кĕлетки — пĕчĕкрех пулин те — илемлĕ, ăсĕ-пуçĕ те лайăх, хут пĕлет, ял хушшинче — ыр ятлă... Ун кăмăлне çавăрса, унпа пĕрле ăçта та пулин вĕренме кайсан, мĕнешкел аван пулĕччĕ! Çамрăк вĕт-ха вăл, вĕренме пĕртте кая мар... Унтан, вĕренсе пĕтерсен, пĕрлешес те киле таврăнас... Вĕренессине—вĕренмеллех, епле пулсан та вĕренмелле, нумай пĕлекен çын пулмалла. Ун çинчен икĕ çул шухăшласа пурăннă ĕнтĕ, анчах ку таранччен май килмерĕ-

ха. Малашне пуранма кун пек йывăр пулмасть ĕнтĕ, халь кайма май пулать. Тырпулсене пуçтарса кĕртсен, кăçал кĕркуннех каясчĕ... Маринене те илсе каясчĕ, вăл яланах çывăхра пултăрччĕ.

Исай çапла шухăшланă май хăйĕн ĕмĕчĕсем епле пурнăçа кĕнине те кура пуçларĕ. Акă ĕнтĕ кĕркунне те пулнă. Маринепе калаçса татăлнă вĕсем, пĕр сывлăмлă ирхине, хĕвел тин çеç тухса сарăлма пуçланă чух, çурăмĕсем хыçне кутамккасем çакса, ялтан тухса каяççĕ, унтан хуранлă çул тăрăх хуланалла утаççĕ. Исай темĕн çинчен каласа кăтартать. Марине ăна итлесе чунтан кулать, çул çинче тĕл пулакансем вĕсем çине кăмăллăн пăхса юлаççĕ. Епле аван!

— Исай! Ăçта эс?— тени илтĕнчĕ çав вăхăтра лаç кĕтессинчен.— Эй, хуралçă!

— Кунта! — сас пачĕ Исай.— Кам ку?

Ун патне Тарас пырса тăчĕ.

— Эп ятарласах килтĕм сан патна,— терĕ вăл.—Темшĕн ыйхă вĕççе кайрĕ те сана килсе курас терĕм.

— Юрать ара... Лар.

— Çывăрас килмест-и?

— Çук. Шухăшласа лартăм...

— Мĕн çинчен вара ун пекех?

— Вĕренме каяс килет.

— Аван шухăш. Эпĕ те вĕренесшĕн-ха та, анчах манăн кăçалах пулмасть пуль, малтан пурнăçа йĕркене кĕртес пулать пăртак...

Туссем чылай вăхăт калаçса ларчĕç. Сăмах-юмах каллех пулас пурнăç, пулас ĕçсем тавра çаврăнчĕ. Тарас Исая кăçал вĕренме кайма сĕнчĕ.

— Ялти пурнăçа çĕнетме пире вĕреннĕ çынсем нумай кирлĕ... Агрономсем, учительсем, тухтăрсем — пурте хамăр çынсем пулмалла...

— Паллах ĕнтĕ,— килĕшрĕ Исай.

— Анчах та... Каясах пулсан, Маринене епле пăрахса хăваратăн-ха? Шел вĕт хĕрачана?— чавсипе айăкĕнчен тĕкрĕ ăна Тарас.

Тусĕ кулнине сиссе, Исай та кулса ячĕ.

— А мĕн... Арăм мар вĕт вăл ман.

— Çапах ара! Урăххисем тытса илме пултараççĕ. Эс мана ним те пĕлмест, тетĕн пуль. Ăна курсанах вилсе каятăн-çке! Паçăр та асăрхарăм-ха... Ну, хлынсем, терĕм çав. Тен, иксĕр те каятăр вĕренме?

— Апла та юратчĕ.

— Во, ку аван пулать! Çавăр эс ăна.

— Хам та шухăшлатăп-ха...

— Шутла-шутла. Эп те пулăшăп.

Тата пăртак ларкаланă хыççăн Тарас каска çинчен тăчĕ те вăйлăн карăнса илчĕ.

— Ну юрĕ... Каям-ха киле. Эс вара тул çутăличчен тӳскеле, ан çывăр. Тем курса ларăпăр тата — пĕри килсе вут тĕксен. Хăвах пĕлетĕн, пире курайманнисем нумай-ха...

— Çук, çук, çывăрмастăп...

— Асту çав. Сивĕ мар-и? Акă, хам пиншака парса хăварам...

Исай пиншака илесшĕн пулмарĕ, анчах Тарас ăна вăйпах тăхăнтарса хăварчĕ. Вăл кайсан, Исайăн пуçĕнче каллех пaçăрхи шухăшсем çуралчĕç, Тараспа калаçнă хыççăн вĕсем тикĕсрех, йĕркеллĕрех пулчĕç, вăл хăйĕн пулас пурнăçне уççăнах кура пуçларĕ...

Çанталăк çаплах пăсăлса пычĕ, халĕ ĕнтĕ пăч-тĕттĕм пулса тăчĕ, çил татах вăйланчĕ, таврари йывăççем кашланисĕр пуçне урăх нимĕн те илтĕнмерĕ. Исай аллинчи берданкине çурăм хыçне çакрĕ те, ыйхă ан килтĕр тесе, майĕпе каллĕ-маллĕ уткалама тытăнчĕ. Хăйĕн пуçĕнче çаплах шухăшсем, савăнăçлă, хаваслă, чĕрепе тата вăйлăрах ĕçлеттерекен шухăш-ĕмĕтсем шурĕç, вăл хуллен кăна кĕвĕ шăхăрма пуçларĕ. Лаç пуçне çитрĕ те самантлăха чарăнса тăчĕ, унтан каллех каялла çаврăнса утрĕ. Анчах виçĕ утăм та тăваймарĕ вăл, сасартăк хыçалтан такам сиксе пычĕ те, ун пуçне михĕпе хупласа лартса, малалла тирĕнтерсе ячĕ. Пĕрре сывласа та илеймерĕ Исай, çав самантрах ăна пуçран темле йывăр япалапа çапрĕç. Урăх пĕр сас та пулмарĕ, кĕлет хыçĕнче этем кĕлеткине çĕр тăрăх кăштăртаттарса сĕтĕрсе кайни çеç илтĕнчĕ пĕр хушă...

Пĕлĕтсем малтанхи пекех таçта хăяматалла васкаса шурĕç, çил çаплах вĕрчĕ, йывăççем кашларĕç.

Энтриялĕ лăпкăн çывăрчĕ...

* * *

...Тул çутăлнă чух вăраннă Назар нимрен малтан кĕлете хураллакан çинчен аса илчĕ те, хулпуççинчен сăхман уртса ярса, тула тухрĕ.

— Исай!— чĕнчĕ вăл крыльца çинчен анмасăрах.

Ăна хирĕç никам та сас памарĕ.

«Киле кайнă-ши вара ку?»— шухăшларĕ Назар. Картлашкасем тăрăх чупса анса кил хушши урлă каçрĕ, кĕлет алăкĕ патне пырса çăраççине тытса пăхрĕ. Çăраççи каçхине питĕрнĕ пекех çакăнса тăнине курсан, вăл каллех Исай киле кайнă пуль, тесе шухăшларĕ.

«Çапах та, урама тухса пăхас-ха, каска çинче çывăрса кайман-и...»

Васкамасăр, ирхи сивĕ пирки çӳçенкелесе, вăл хапхаран тухрĕ те, лаç кĕтессинчен пăранса, кĕлет хыçнелле пăхрĕ. Вара çавăнтах ăна чĕререн такам çĕçĕпе чикнĕ пек пулчĕ... Кĕлет хыçĕнче пĕр купа улăм сапаланса выртать иккен, çав тĕлтех кĕлет çине пусма тăратнă... Самантрах вилнĕ çын пек шурса кайса Назар пусма патне чупса пырса ун тăрăх хăпарчĕ те кĕлет тăрринче çын кĕмелĕх шăтăк пуррине курчĕ. Çавăнтах:

— О-ахх!— тесе, темле тискер сасăпа йынăшса ярса, пусма çинчен тӳрех çĕрелле татăлса анчĕ.

— Пĕтрĕм! Пĕтрĕ-ĕм!..

Чĕтрекен аллисемпе пусмаран тыткаласа ура çине тăчĕ, унтан, пӳрте чупса кĕрсе, ăнран тухса кайнă çын пек кăшкăрма тытăнчĕ:

— Пĕтрĕмĕр! Пĕтрĕмĕр!.. Çаратнă!.. Карчăк, Варук, тухăр часрах, пĕтрĕмĕр!.. Чупăр часрах, чĕнĕр! Совета чĕнĕр, Тараса!.. О-о!.. Вĕлерчĕç!..

Хăй, кăмака çумнелле тайăнса кайса, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтресе, темле ăнланмалла мар сăмахсем кăшкăрса макăрма тапратрĕ:

— Пĕтерчĕç... Пусса хучĕç... Тĕрмене лартрĕç... О-ох!.. Ма сыхлантăм-ши!..

Вилес пек хăраса ӳкнĕ Варукпа амăшĕ çара уранах кил хушшине сиксе тухрĕç. Кĕлет çăраççине уçса шалалла пăхрĕç. Енер хуларан илсе килнĕ çимĕçсенчен унта пĕр типĕтнĕ кăмпа çыххисем çеç юлнă, ыттисене такамăн тискер алли пĕтĕмпех шăлса тухса кайнă...

## 15. АЙАПСĂР АЙАПЛИСЕМ

Урам енчи чӳречерен питĕ хытă кĕмсĕртеттерсе шаккарĕç. Тарас вырăн çинчен вăштах сиксе тăрса пăхрĕ те — кантăк витĕр Варукăн калама çук пăлханса кайнă сăнне, чарăлса кайнă куçĕсене курчĕ.

«Темскер пулнах!»— шухăш çиçĕм пек вĕçсе илчĕ ун пуçĕнче.

— Тух-ха часрах! Пыр пирĕн пата!—кăшкăрчĕ Варук.
— Мĕн пулнă?—çавăн пекех кăшкăрса ыйтрĕ Тарас.

Анчах Варук мĕн тавăрса каланине илтеймерĕ, йапăр-япăр аттине тăхăнса ярса, урама сиксе тухрĕ. Варук çара уран иккенне, çӳçне-пуçне те пуçтарманнине курсан, вĕсен килĕнче мĕнле те пулин хăрушă ĕç пулнине тата лайăхрах тавçарса илчĕ вăл. Варукĕ, ун патнелле чупса, макăрса ячĕ:

— Çаратса кайнă пире... Ним те хăварман!..

Ку хыпар Тарасшăн пуçран темпе çапнă пекех пулчĕ. Калас тенĕ сăмахĕ пыра пӳлĕнчĕ, тăнлавĕсене сасартăк юн тулчĕ.

— Ним те хăварман, тĕппипех шăлса тухнă,— терĕ Варук татах, куççулĕпе чыхăнса.— Атя часрах... Ним тума та пĕлместпĕр!

Вĕсем тăвалла чупрĕç...

— Исай ăçта?— хыттăн ыйтрĕ Тарас.

— Пĕлместĕп. Çук вăл...

— Хурала пăрахса кайнă-и-мĕн?

— Кайнă пулас çав... Пĕлместĕп...

— Каларăм вĕт хăйне!.. Çĕрле юри кайса асăрхаттарттăм! Ну, пулать те халăх!

...Варуксем патне çынсем пухăнма пуçланă та-мĕн ĕнтĕ. Ниçта кайса кĕме пĕлмен Назар арăмĕ кӳршĕсене тăратса пынă, вĕсем кил хушшинче шавлăн калаçнă, кĕлет тавра пăхса çӳренĕ, шала та кĕрсе пăхнă, анчах нихăшĕ те нимĕнле лăплантаракан сăмах та калама пĕлмен. Тарас çитсе кĕрсенех, чăн малтан çынсене кĕлет патĕнчен сирсе, текех ун çывăхне пыма чарчĕ. Унтан, хăй пăлханнине пусарма тăрăшса, пухăннă çынсенчен хăшĕ-хăшĕсене ял Совет членĕсене чĕнме, хăшĕсене комсомолецсене хăвăрт пухма хушрĕ, пĕр шур пуçлă ачана Исайсем патне чуптарчĕç. Хăвăрт, татăклă çапăçу умĕнхи командăсем пек илтĕнсе тăчĕç унăн сăмахĕсем.

Кусем тухса кайсанах, вăл кил хушшине хăйĕн шăллĕ Микуль пырса кĕнине курчĕ. (Тарас тухса кайнă чух вăраннă амăшĕ ăна юриех Варук мĕн пирки ир-ирех чĕнсе кайнине пĕлме янă-мĕн.)

— Атя-ха манпа,—терĕ те вăл шăллĕне, пӳртелле чупса кĕчĕ. Кунта вăл хут татки тупса хăвăрт кăна темскер çырчĕ, унтан çавăнтах Микуле тыттарчĕ.

— Ак сана çыру,— терĕ вăл,— Назар пичче лашине утлан та çил пек вĕçтер вулăса! Çитсен тӳрех çак хута е

волком секретарьне Петрухина, е милици начальникне Скворцова тупса пар... Асту, ҫынсем урлă ан пар, хăвăн аллупах тыттар. Сăмахпа та кала: халăха ҫитермелли ҫимĕҫсене кĕҫĕр пĕтĕмпех ҫаратса кайнă, те. Халех пыма чĕнеҫҫĕ, те... Анлантăн-и?

— Анлантăм,— пуҫĕпе сулчĕ Микуль.

— Яра пар хăвăртрах!

Темиҫе минутран Микуль ялтан тухса, пучах кăлармa пуҫланă ыраш хушшипе авкаланса выртакан ҫул тăрăх сиккипе ыткăнтарса пычĕ, хĕвĕнчи ҫырăва епле те пулсан часрах ҫитерсе парас ĕмĕтпе Назарăн лашине ним хĕрхенмесĕр, таттисĕр хăваларĕ...

Лайăх хыпар — ҫуран ҫӳрет, усал хыпар — утпа чупать, теҫҫĕ. Ҫур сехет те иртмерĕ пуль, Назар кил хушшине халăх лăках тулчĕ. Тата кăшт тăхтасан, халăх кил хушшине те вырнаҫайми пулчĕ, ҫынсем урамра та, лаҫ хыҫĕнчи тăкăрлăкра та кĕпĕрленчĕҫ. Ҫĕр тĕрлĕ калаҫрĕҫ, кашни хăйĕн шухăшне пĕлтерме васкарĕ, хĕрарăмсем ахлатрĕҫ, иртнĕ вăхăтсенче пулнă ҫаратусене асăнчĕҫ, татах хуйхăрчĕҫ. Совет членĕсем те, комсомолецсем те часах пухăнчĕҫ, анчах та Исая чĕнме янă ача таврăнчĕ те: вăл килте ҫук, тесе пĕлтерчĕ.

— Кам каларĕ сана?— ыйтрĕ Тарас, ку хыпара илтсен тата ытларах пăлханма пуҫласа.

— Амăшĕ каларĕ. Каҫхине кунта хурал тăма килнĕренпе киле таврăнман, тет...

«Ку мĕне пĕлтерет-ши тата?.. Аҫта кайма пултарнă вăл?.. Нивушлĕ вĕлернĕ ăна?..»—вĕлтлетрĕ те Тарас пуҫĕнче, унăн чĕри ҫав тери пăчăртанса илчĕ.

Кĕлет тавра халăх пухăннăҫемĕн пухăнса пынине кура, палăрса юлма пултарнă йĕрсене ҫынсем таптаса пĕтересрен, Тарас вĕсене тăкăрлăкран кăларма, кĕлет ҫывăхне пымашкăн чарма хушрĕ.

— Эпĕ милицисем патне ятăм, вĕсем киличчен ним тума та юрамасть, мĕнле пулнă, ҫапла пултăр...

Совет членĕсем — Хăмăт Энтри, Павăл пичче, вĕсемпе пĕрле комсомолецсем те Тарас хушнипе халăха урамалла чакарма тытăнчĕҫ.

— Тухăр, урамалла тухăр, аяккарах кайса тăрăр!

— Ним курмалли те ҫук кунта!

— Милицисем киличчен кĕлет ҫывăхне пыма юрамасть!

Халăх ерипен каялла чакса, тăкăрлăкран та, кил хуш-

шинчен те урамалла тухма пуҫларӗ. Анчах ҫав хушӑрах унта та, кунта та кӑмӑлсӑр сасӑсем илтӗнчӗҫ.

— Кӑшкӑрма анчах пӗлеҫҫӗ вӗсем... Сыхлама пӗлмен!

— Ачасене пачах выҫӑ хӑварчӗҫ халь, усалсем...

— Ытла та час пуҫ пулса тӑчӗҫ...

Унтан тӑруках тахӑшӗ хыттӑн, хаяррӑн кӑшкӑрса ячӗ:

— Хӑйсем ҫаратнӑ вӗсем! Ҫавӑнпа пытарма хӑтланаҫҫӗ, никама та ҫывӑха ярасшӑн мар!

— Паллах, хӑйсем тунӑ! Кам пултӑр тата?— янраса кайрӗ тепӗр сасӑ.

— Ухтарас пулать вӗсен килӗсенче!..

Халӑх тӑпах чарӑнчӗ. Ҫак темиҫе сӑмах ҫынсене иккӗлентерсе, вӗсен ӑсне-пуҫне пӑтраштарса яма пуҫларӗ... Кам пӗлет, тен, тискер ӗҫе вӗсем чӑнах та хӑйсем тунӑ? Ҫыннӑн шухӑшне-кӑмӑлне ӑҫтан пӗлетӗн? Каҫӑр Куҫмапа Иливана та шанса пурӑннӑччӗ те, кайран авӑ вӗсем чи усал хурахсем пулни курӑнчӗ... Ҫитменнине, ытла час пулнӑ-ҫке ку: таварне ӗнер каҫалапа ҫеҫ илсе килнӗ, анчах кӗҫӗр ҫаратма та ӗлкӗрнӗ. Ютран килсе туман куна! Ют ҫын ӑҫтан тӑруках пӗлтӗр?

Ҫавнашкал шухӑшсем ҫуралчӗҫ халӑхра. Юлашки ҫулталӑк хушшинче тем тӗрлӗ тертленсе, нушаланса, путсӗр ҫынсен ултавне тӳссе пурӑннӑ ҫынсен ун пек шухӑшлама та май пулнӑ ҫав!

Малашнехи ӗҫсем пит те хӑвӑрт сарӑлса пычӗҫ. Шухӑшсем вӗҫленме те ӗлкӗрейменччӗ — урам варринчи ҫӑл енчен тепӗр ҫын кӑшкӑрни сывлӑша ҫурса кайрӗ:

— Халӑх!.. Мӗн пӑхса тӑратӑр?!.

Пурте ҫав сасӑ еннелле ҫаврӑнчӗҫ. Ҫӑл пури ҫине мӑн галифеллӗ Микстур Михали хӑпарса тӑнӑ иккен, ку сӑмахсене вӑл кӑшкӑрнӑ.

— Улталаҫҫӗ сире, куҫкӗретӗнех улталаҫҫӗ, неуштӑ сисместӗр ҫавна?!— кӑшкӑрма тытӑнчӗ кӑвак хут пек кӑвакарса кайнӑ Микстур, сарлака ҫӑварӗнчен сурчӑк сирпӗтсе.— Ҫак ӗҫе никам та мар, советрисемпе комсомолсем хӑйсем тунӑ!.. Апат-ҫимӗҫе хӑйсем вӑрласа валеҫнӗ! Кам килсе вӑрлатӑр тата ҫак хушӑра? Шухӑшлӑр-ха эсир лайӑхрах! Хӑйсем пулмасан, вӗсем паҫӑрах йӗрлесе шырамалла, атту вӗт вырӑнтан та хускалмаҫҫӗ!.. Хӑйсем валеҫнӗ те — ӑҫта шырас? Айтӑр, халех ухтарма тытӑнар вӗсене!..

Микстур сиккелекен куҫӗпе урамри халӑх ҫине сунарҫӑсенчен тарса хӑтӑлнӑ кашкӑр пек пӑхса илчӗ те ҫӗре сик-

сё анчĕ. Анчах ун выранне çав самантрах Шĕвĕрпуç Хоми хăпарса тăчĕ, Микстуртан та хытă çухăрма тапратрĕ.

— Мĕншĕн ним те чĕнместĕр? Чăн калаççĕ сире: Тарас шайкки тунă çакна! Урăх никам та мар! Часрах веç ухтарас пулать...

Вăл каласа пĕтереймерĕ — халăх хушшипе хĕсĕнсе тухса, Микиш ăна çăл пури çинчен пĕррех туртса антарчĕ.

— Юлташсем! Лăпланăр, юлташсем!— аллине çĕклесе пур вăйпа кăшкăрчĕ вăл.— Микстурпа Шĕвĕрпуç суя сăмах каларĕç... Эпир бандитсем мар! Кун пек элеклесе каланăшăн суда паратпăр эпир вĕсене!

Анчах та Микиш сăмахĕсене итлекенсем сахал пулчĕç, халăх пăлханса кайрĕ, шавлама тытăнчĕ, унта та кунта хытăран хытă кăшкăрма тапратрĕç...

— Эсир пурне те судпа хăрататăр!..

— Ыр çынсене хуптартăр та, халь хăвăр çаратма тытăнтăр, эппин?

— Кулач çиес килчĕ пуль?

— Халăх çăкрине!

— Солотой ротăсем!..

— Тытса çунтарас пулать вĕсене...

—Кăтартăпăр сире суд!

— Айтăр, айтăр! Ухтара-ас!..

Халăха чарма Микиш татах кăшкăрчĕ, анчах усси пулмарĕ, пăлханса кайнă çынсем ăна итлемерĕç. Вĕсем, Микстур Михалипе Шĕвĕрпуç кăшкăрса чĕннипе вырантан хусканса, Назар кил хушшийĕ еннелле сулăнчĕç. Шăп çав вăхăтра хапхаран Тараспа пĕрле ял Совет членĕсем тухрĕç, анчах халăх вĕсем тĕлĕнче чарăнса тăмарĕ, малтисем вĕсене темскер кăшкăрчĕç те шалалла кĕпĕрленсе кĕрсе кайрĕç. Микиш та, халăх хушшине хĕсĕнсе кĕрсе, хулпуççийĕпе хăйне валли çул уçма тытăнчĕ...

Кил хушшине кĕрсен, Микстур каллех кăшкăрма тытăнчĕ.

— Ухтарас! Пур çĕрте те ухтарас!— çухăрчĕ ун хыççăн Шĕвĕрпуç.

Микстур крыльца патнелле ыткăнчĕ, анчах картлашка умĕнче ăна такамăн вăйлă алли ĕнсерен тытса чарчĕ. Ку Тарас пулнă.

— Ухтарма кам право панă сана? Халăха мĕншĕн пăлхататăн?— хĕмленекен куçĕпе çисе ярас пек пăхса, хăвăрт ыйтрĕ вăл.

— Хам панă!— терĕ те Микстур, сасартăк Тараса

пур вайпа кăкринчен чышса, çенĕкелле чупса кĕчĕ. Сулăнса кайнă Тарас ун хыççăн чупма ĕлкĕриччен картлашкасем çине çынсем тулчĕç те, унăн çулĕ картланчĕ.

Пуçланчĕ вара ухтару... Çынсем кĕрсе пăлхатман вырăн та юлмарĕ Назар килĕнче. Пӳртре, тĕпсакайĕнче, мачча çинче, çенĕкри чăланра—пур çĕрте те çын йăшăлтатрĕ; Варукăн арчине, амăшĕн çӳпçине ним йĕркесĕр арпаштарчĕç, тулта та ухтарман кĕтес хăвармарĕç, выльăх картинче, витере, аслăк çинче, нӳхрепре — таçта та чакаланчĕç, çухалнă çимĕçсене шырарĕç... Пĕр уйăх малтан Тарас хăваласа çитсе тытнă бандита яла илсе пынă чухнехи пекех шавларĕ халăх.. Назар хăй пачах çухалса кайса, пур çĕрелле те сапаланчăк куçĕпе пăхса, хушшăн-хушшăн ахлатса кăна çӳрерĕ çынсем хушшинче.

— Шырăр... Лайăх шырăр, тăвансем... Пур çĕрте те...— терĕ вăл сӳрĕк сасăпа.

Унăн арăмĕ кĕлет умĕнче ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр макăрса ларчĕ. Варукпа Марине тата учительница Катя—хăйсем те макăрас патнех çитнĕскерсем — ăна чунтан лăплантарма тăрăшрĕç. Сасартăк вĕсем патне калама çук хаяр сăнланса кайнă Мамун арăмĕ пырса тăчĕ.

— Мĕн ухмаха супса ларатăр тата?— сăмахĕсене шăл витĕр сăрхăнтарса кăларчĕ вăл,— малтан çарататăр та, кайран хăвăрах макăратăр пулать?.. Намăса пĕлесчĕ, кĕççепитсем! Тьху! Тьху сире!..

Лач! сурчĕ Мамун арăмĕ Назар арăмĕн пуçĕ çине...

— Кай кунтан, инке!— пĕтĕм вĕчĕхсе çитнĕ чĕринчен кăшкăрса ячĕ Варук.

— Эс мĕн тата, сучка!— шăлне йĕрчĕ Мамун арăмĕ.—Сучка вĕт эс, кĕрт ами! Кăмсамулсемпе явăçса çӳрерĕн-çӳрерĕн те халь тата çынпа калаçатăн-и? Хырăму хăпарма пуçланă курăнать-ха...

Ку сăмахсем хыççăн вара ялан йăваш пулнă Катя та тӳссе тăраймарĕ, пĕррех Мамун арăмĕ умнелле сиксе пырса тăчĕ.

— Çăварна хуп, бандит хăраххи!.. Хăвна пĕл эс малтан!

Вăл çавăнтах Мамун арăмĕ çине кушак пек сиксе ларма хатĕр пулчĕ, анчах вĕсем патне Микиш пырса тухрĕ.

— Мĕн калаçатăр унпа пустуй!— терĕ вăл хĕрсене.— Пӳрте кĕрĕр...

— Исай пирки мĕнле? Исай тупăннă-и?— ыйтрĕ Марине, Микиша çаннинчен савăрса тытса.

— Нимĕн те паллă мар. Ниçта та çук,— таръннăн сывласа илчĕ Микиш.— Ним калама та, ним шутлама та пĕлместпĕр ĕнтĕ...

Хĕрсем çине салхуллă куçĕпе пăхса илчĕ те, аллипе сулса, выльăх карти еннелле кайрĕ. Хĕрсем Назарăн халран кайса çитнĕ арăмне ик енчен çавăтса пӳрте илсе кĕчĕç.

...Кил таврашĕнче нимĕн те тупăнмарĕ. Вара Микстурпа Шĕвĕрпуç, вĕсем хыççăн пăлханса кайнă ытти çынсем те анкартине кĕпĕрленсе тухрĕç. Чипер çумласа, купаласа лартнă çĕрулми кассисене те, Варук аллипе тунă тирпейлĕ купăста-хăяр йăранĕсене те хĕрхенсе тăмарĕç, ĕрĕхсе кайнă выльăх кĕтĕвĕ пекех таптаса иртрĕç вĕсене.

Анкарти вĕçĕнче, вату çĕмĕрт йывăççисем хушшинче, Варуксен мунча пур. Микстур Михали, ун патне никамран малтан чупса çитсе, çенĕк алăкне пĕррех урипе тапса уçса ячĕ.

— Айтăр-ха, çакăнта тĕрĕслесе пăхар тата!— кăшкăрчĕ те вăл халăх еннелле, çавăнтах шалалла кĕрсе çухалчĕ. Темиçе самантран тата пилĕк-ултă çын чупса çитрĕç, унтан юлашкисем те. Микстур ним тăхтамасăрах мунча урайне хăпăтма тытăнчĕ. Хăма пуçĕсене çĕкле-çĕкле, аяккалла пăрса хучĕ вăл. Унтан аллине шалалла чикрĕ те, сасартăк çăварне мĕн тери карăннă таран карăнтарса, кăшкăрса ячĕ:

— Тупрă-ăм! Тупрă-ăм...

Халăхшăн ку сăмах «пушар» тесе кăшкăрнă пекех пулчĕ... Кар-р! пухăнчĕç мунча патне. Виççĕн-тăваттăн мунча урайне хăвăрт кăна сӳтсе пăрахрĕç. Хăмасем айне чăнахах та такам алли пĕр михĕ шур çăнăхпа тепĕр михĕ сахăр пырса чикнĕ иккен. Микстурпа тепĕр çын вĕсене йăпăртах тулалла çĕклесе тухса пăрахрĕç.

— Халăх! Курăр ĕнтĕ, мĕн хăтланаççĕ вĕсем!..— паçăрхинчен те хытăрах çухăрса ячĕ Шĕвĕрпуç.— Акă ăçта вăл чăн-чăн бандитсем! Пăхăр, курăр!..— аллипе михĕсем çине тĕллерĕ вăл.

Калама çук тĕлĕнсе, пĕр вăхăт хытнă пек тăнă халăх каллех ним майсăр пăлханса, шавласа, кĕрлесе кайрĕ...

— А-а, шуйттан пуçĕсем!..

— Хăйсем бандит иккен! Хăйсемех тунă!

— Çакас пулать вĕсене...

— Çынсене тиркеççĕ тата!

— Ах, йытăсем...

Анкартинчи асар-писер шава илтнипе унта Назарпа Тарас, вĕсем хыççăн Хăмăт Энтрипе Микиш чупса пычĕç.

Мунчаран тупса кăларнă михĕсене курсан, вĕсем те ытти çынсенчен кая мар тĕлĕнчĕç, анчах нихăшне те сăмах чĕнме памарĕç. Чăн малтан вĕсем тавра Микстурпа Шĕвĕрпуç, шуйттансем пек сиккелесе, чи усал сăмахсемпе вăрçма тапратрĕç, каламаннине хăвармарĕç, унтан ыттисем те кăшкăрма тапратрĕç вĕсем çине.

— Бандитсем, намăссăрсем!

— Мĕнле куçпа пăхатăр халăх çине?..

— Çапса пăрахас пулать сире!..

— Чимĕр-ха, ыттисем патĕнче ухтарар!

— Айтăр Тарасĕ патне!

— Айтă-ăр!..

Лăплантарма тăнинчен усси пулас çуккине кура, халăха хирĕç Тарас хăй те нимĕн те каламарĕ, Микиша та чарчĕ.

«Питĕ чее хăтланнă... Малтанах тĕплĕн шухăшласа тунă ку ĕçе...»— терĕ вăл хăй ăшĕнче, тутине çыртса. Çавăнтах Исая аса илчĕ. «Ăçта кайса кĕме пултарнă-ха вăл, ăна мĕн тунă-ши вĕсем? Ах, вулăсрисем часрах килччĕрччĕ!»

Микстурпа Шĕвĕрпуç чĕннипе анкартинчи çынсем çав вăхăтра картасем урлă сике-сике урамалла тухрĕç те Тарассем патне чупрĕç. Халăх пĕтĕм урам анлăшĕпех çурхи шыв юххи пек йăванса пычĕ. Назар патĕнче Тараспа Микиш, Хăмăт Энтри, Павăл пичче тата ик-виç çамрăк çеç юлчĕç.

— Мĕн тăвăпăр ĕнтĕ, Тарас Петровччă?— ун çывăхнерех пырса, ăна куçĕнчен пăхрĕ Павăл пичче.

— Кĕтес пулать вулăсран килессе...

— Санăн килне каяс пулатчĕ,— хушса хучĕ Хăмăт Энтри,— тем туса хурĕç тата.

— Ытлашшиех мĕн тума пултарччăр вĕсем?

— Назара туса хунă вĕт...

— Ним те мар... Лăпкăрах пулăр. Паллă-çке, çак пĕтĕм ĕçе çав çухăракансем хăйсем тунă. Кĕтĕр пăртак, лекеççĕ...

Чăнах та, Хăмăт Энтрийĕ йăнăшман. Тарассен килне çил-тăвăл пек чупса çитсенех, Микстурпа Шĕвĕрпуç тата Мамун арăмĕ хĕтĕртсе пынипе пăлханса кайнă çынсем вĕсем патĕнче урнă пек арпаштарма тытăнчĕç. Малтан пӳрте кĕрсе пĕтĕм хатĕрсене кутăн-пуçăн çавăрттарчĕç, унтан, кĕлете çĕмĕрсе кĕрсе, пур катка-пичкесене тӳнтерсе йăвантарчĕç, тĕк хутаççисене салтса силлерĕç, çĕмĕрлекен япаласене çĕмĕрсе, ватса тухрĕç... Тарас амăшĕ малтанах тĕлĕннипе чĕлхесĕр пулса ларчĕ, çынсем çине ним ăнланмасăр

пăхрĕ. Мĕн пирки, мĕн сăлтавпа çавăрттарать ун килне халăх — нимĕн те пĕлмерĕ вăл, ним шухăшлама та аптрарĕ... Ун патне тăрук Мамун арăмĕ сиксе пычĕ.

— Каланă пултăр часрах, вăрланă апат-çимĕçе ăçта пытартăр?!— кăшкăрса ячĕ вăл.

— Мĕнле апат-çимĕçе?— чĕтрекен сасăпа ыйтрĕ Тарас амăшĕ.

— Ха! Пĕлмĕш пулать тата!.. Çăнăха ăçта пытартăр? Сахăр! Çу!

— Ним те пĕлместĕп эп...

— Епле пĕлместĕн пулать? Сан ывăлу халăх кĕлетне çаратнă-иç кĕçĕр!

— Чипер калаç... Вăл килте çывăрчĕ...

— Курăпăр акă!— Мамун арăмĕ ăна чышкипе юнарĕ те, ун çине хăрушла усал куçпа пăхса илсе, лупас айнелле, халăх уйрăмах хытă шавланă çĕрелле чупса кайрĕ. Вăл Тарас амăшĕпе ятлаçнă вăхăтра çынсем пахчари пусă шăтăкĕнчен икĕ михĕ çăнăх туртса кăларнă та иккен... Назар патĕнче тупнă михĕсем пекех — пысăк кăвак пичетлĕ, ĕнер хуларан илсе килнĕскерсем пулнă вĕсем. Михĕсене кил хушши варринелле йăтса тухрĕç, халăх вĕсем тавра пухăнса тăчĕ, халь ĕнтĕ паçăрхинчен те вăйлăрах тарăхса кăшкăрма тапратрĕ... Анчах пуринчен те ытла каллех Микстур сасси янрарĕ:

— Куртăр-и ĕнтĕ, халăх, куртăр-и, мĕн хăтланаççĕ çĕнĕ советсем? Кĕлете хăйсемех çаратса валеçнĕ, ачасене выçă вĕлересшĕн!.. Мĕн тăвас пулать ĕнтĕ вĕсене куншăн?! Калăр!

— Пуçĕсене çапса салатас!— кăшкăрчĕ тахăшĕ.

Тапранса кайрĕ вара...

— Халех тытса пăвас!

— Çăнăхне çĕклеттерсе, урам тăрăх питлĕх çапса уттарас!

— Мĕн пăхса тăмалли пур? Хĕнес тытса!

— Вĕлерес!..

— Пĕри те ан юлтăр!

Урнă пекех пулса кайнă çынсем урам тăрăх каялла, Назар патне ыткăнчĕç. Çенĕк умĕнчи картлашка çинче пĕтĕм кĕлеткипе чĕтресе ларакан Тарас амăшĕ аялалла анма тăчĕ, анчах та тăрук сулăнса кайрĕ те кил хушшинелле йăванса анчĕ... Ун çине никам та çаврăнса пăхакан пулмарĕ, вăл пусма вĕçĕнче пĕр-пĕчченех выртса юлчĕ, унăн ӳкнĕ чух аманнă янахĕнчен юн сăрхăнчĕ...

* * *

Халăх ним йĕркесĕр шавласа, кашкăрашса хăпарни ин-çетренех илтĕнчĕ. Варуксен кил хушшинче тăракансем хапхаран тухса анаталла пăхрĕç.

— Пушшех урса кайнă пулас,— терĕ Павăл пичче.— Темскер туса ан хуччăр, Тарас Петровччă. Вулăсран киличчен пăрăнмалла мар-ши?

— Эсĕ мĕн, ухмаха ертĕн-и?— тавăрчĕ ăна хирĕç Тарас.— Мĕншĕн пăрăнмалла? Эп айăплă мар пулсан, ма пытанас манăн?

— Ана-кăна пăхса тăмĕç, тетĕп-çке...

— А-а, ним те мар... Тепĕр тесен, пуçа чиксех тăмăпăр, ун пеккине мар курнă. Кил хушшине кĕрĕр те лăпкăрах пулăр...

Халăх хумĕ çывхарсах пычĕ. Микстурпа Шĕвĕрпуç, пуринчен малта чупаканскерсем, халăха çаплах хĕтĕртрĕç, çынсене тата ытларах хумхатма, вĕсене пăлхатма тă-рăшрĕç...

— Выçă çынсен юлашки татăкне вăрлаççĕ!

— Ав мĕнле вăл коммунистсем!

— Лайăхрах тыткалас пулать вĕсене!

Çаплах усал сăмахсем кăшкăрса, алăсене сулкаласа, халăх темиçе самантран Назар тĕлне кĕрлесе çитрĕ те кил хушшинелле кĕрсе кайрĕ. Совет членĕсемпе комсомолецсем кĕлет умне пĕр çĕрелле пухăнса, пĕр ушкăн пулса тăнă-мĕн. Халăх ултава пула пăлханса кайнипе халь хуть те мĕн туса тăкма хатĕр пулнине пĕлсе, вĕсем, хăйсене хÿтĕлеме хатĕр пулса, куç харшисем айĕпе пăхса кĕтсе илчĕç.

«Мĕн хăтланатăр эсир? Пирĕнте нимĕнле айăп та çук вĕт, ултав хыççăн каятăр!»— тенĕ пек пулчĕ вĕсем пăхни...

Малтисем тăпах чарăнчĕç. Çавăн пирки кайрисен те чарăнмалла пулчĕ. Темиçе самантлăха шăпах пулчĕ. Анчах та халь ĕнтĕ калама çук вĕриленсе çитнĕ Микстур маларах хĕсĕнсе тухрĕ те тăруках кăшкăрса ячĕ:

— Акă вăл бандитсем! Тытăр вĕсене, çыхăр!..

Хăй çавăнтах, аллипе ял Совет членĕсемпе комсомолецсем еннелле сулса, пĕр-ик утăм малалла утрĕ. Халăх каллех хумханма пуçларĕ, хыçалта хĕтĕртекен темиçе сасă илтĕнчĕ. Микстур хыççăн тата темиçе çын малалла тухрĕç. Ĕнтĕ кĕлет умĕнчи пĕчĕк ушкăна халăх кĕç-вĕç тытса лутăркас, таптаса такас пекех туйăнчĕ...

— Шăпланăр!..— янраса кайрĕ çав вăхăтра Тарас сас-

си.— Мĕн тавас шут пур? Кама хăратас тетĕр?—Тарас ик утăм малалла ярса пусрĕ.— Ай пуçсене пĕтĕмпех çухатрăр-и? Чăнах та пире вăрăсем тесе шутлатăр-и? Хăш енчен вăрă пулнă-ши эпир? Çапла намăс курмашкăн виçĕ çул хушши Совет влаçĕшĕн, халăхшăн çапăçса юн юхтарнă-ши эпĕ? Шутласа пăхăр-ха пăртак!..

— Мĕн шухăшламалли пур, хамăр куçпа куртăмăр, вăрласа валеçнĕ вĕт!— илтĕнчĕ Шĕвĕрпуç сасси.

— Куçран тусан сапас тетĕн-и тата?— терĕ тепри.

— Ан итлĕр ăна!

— Пăх-ха, куçкĕретĕн тытсан та тунасшăн!

— Çап ăна!

— Хĕне-ес!..

Халăх каллех йĕркерен тухса кайрĕ... Халĕ ĕнтĕ ăна чарасси çинчен шухăшламалли те пулмарĕ. Таçтан, хыçалти ретсенчен илсе пенĕ чул пĕрех Тарас тăнлавĕнчен пырса тиврĕ, ун хыççăнах кĕлет умĕнче тăракансем еннелле чул катăкĕсем, хытă панкрасем, патаксем вăркăнма тапратрĕç.

— Халăх! Юлташсем! Чарăнăр! Хăвăрах пĕтеретĕр!— пĕтĕм ӳпке вăйĕпе кăшкăрчĕ Тарас юлашки хут, анчах çав самантрах ăна пуçĕнчен темле йывăр япала пырса тиврĕ, тахăшĕ хыçалтан çапса малалла тирĕнтерсе ӳкерчĕ.

— Хĕнĕр!

— Вăрăсене вĕлерсен те нимĕн те пулмасть!— Микстур сасси пырса кĕчĕ Тарасăн хăлхине. Пĕр хушă вăл пичĕпе çĕр çине тăрăнса выртрĕ, унтан сиксе тăчĕ те, Совет членĕсемпе комсомолецсене кĕлет умне хупăрласа лартса хĕнеме тытăннине курса, çавăнталла ыткăнчĕ. Хăйĕн çулĕ çинчи çынсене хулпуççисемпе сирсе пырса кĕлет умнерех çитсен, çапăçакансене пĕрерĕн-пĕрерĕн аяккалла ывăтма тытăнчĕ. Хăйне тек-текех чулпа патаксем пырса тивни çине те, такам аллисем çурăмĕнчен кӳпкени çине те пăхмарĕ вăл, пĕрмай аяккалла сирпĕтрĕ çынсене... Вилес пек хăраса ӳкнĕ Варукпа Марине, вĕсем хыççăн учительницăпа Кулине те пӳртрен крыльца çине чупса тухрĕç, анчах çав самантрах вĕсем çинелле те чулсемпе патакасем вăркăнма тапратрĕç

— Сучкасем!

— Кĕрт амисем!..

— Туртса антарăр вĕсене!..

Кил хушши енчи чӳрече кантăкĕсем чăнкăртатса сирпĕнчĕç. Халăх пĕтĕмпех пăтранса кайрĕ. Сывлăшра тем тĕрлĕ ылханни, намăс сăмахсем, ыратнипе кăшкăрни илтĕн-

се тăчĕ, çынсем пĕр-пĕрин çинелле сикрĕç, ӳкрĕç, пĕрне-пĕри таптарĕç, каллех сиксе тăрса çапăçма тытăнчĕç... Тарас чылай вăхăт парăнмарĕ, хăйĕн çинелле пыракансене ывăта-ывăта ячĕ, унпа юнашар тăракан Микиш та унран кая мар ĕçлерĕ ал-урипе, Хăмăт Энтри те, пысăк куçне ял-кăштарса, çынсене çĕрелле пуса-пуса антарчĕ. Анчах çын-сем хаярланнăçемĕн хаярланса, урнăçемĕн урса пычĕç... Тарас хăй тавра хăрушă та тискер сăнсем çеç курчĕ... Ака Микстур темле мăн патакпа Микиша хыçалтан пырса çап-рĕ те, леш тайăлса кайса ӳкрĕ. Сылтăм енче Лява Уртемĕн чĕрĕ какай пек сăмсипе кăпăклă çăварĕ курăнчĕ. Вăл, хăру-шă сасăпа темскер кăшкăрса, Тарас çинелле пысăк чукмар-па сулса ячĕ. Малалла мĕн пулнине вара леш курмарĕ те, илтмерĕ те...

Сасартăк çак самантра тахăш кĕрарăм, урамран чупса кĕрсе, хăлхана çуракан çинçе сасăпа хыттăн çухăрса ячĕ:

— Милици!.. Утлă милици килет! Чарăнăр!..

Вăл кăшкăрни кил хушшинчи пĕтĕм халăх пуçĕ çине кĕтмен çĕртен пăрлă шывпа сапнă пекех пулчĕ. Çапма çĕк-леннĕ алăсем аялалла усăнчĕç, алла тытнă чулсемпе алту-йисем çĕрелле ӳкрĕç, унта та кунта çынсем хашлатса, тарăннăн сывласа яни илтĕнчĕ... Хумханнипе чĕтремех ернĕ çынсем, куçĕсене тискеррĕн çаврăкаласа, хăйсем çĕмĕрсе тăкнă ял Совет членĕсем патĕнчен каялла чакма тытăнчĕç. Пурте куçĕсемпе хапха еннелле тăрăнчĕç; хĕнекенсенчен хăшпĕрисем кунтан часрах тухса тарас шутпа ик енчи хӳ-месем çинелле пăха-пăха илчĕç. Микстур Михали, халăх хушшинелле пуринчен ытларах чакса, Шĕвĕрпуçăн ашлан-са кайнă шывак куçĕпе тĕл пулчĕ.

— Шăвăнас пулать!— терĕ вăл ăна шăл витĕр.

— Амма?

— Ырри пулас çук...

Çавăнтах ун умне таçтан Лява Уртемĕ тухса тăчĕ те ăна аллинчен çавăрса тытрĕ:

— Ним те пулмасть, эпир анчах мар... Тарсан, хăвăра пушшех палăртатăр. Тăрăр выранта!

Çакăнта калани пĕтĕмпех питĕ хăвăрт, пĕр çур минут хушшинче пулса иртрĕ. Лява Уртемĕ юлашки сăмахĕсене каласа пĕтерне-пĕтерменех, Назар хапхи умне икĕ мили-ционерпа Тарас шăллĕ Микуль юланутсемпе çитсе чарăн-чĕç. Вĕсем хыççăнах çӳрен лаша кӳлнĕ тăрантас пырса тăчĕ. Ун çинче, ямшăксăр пуçне, волком секретарĕ Иван Петру-хин — тăваткалтарах питлĕ лутрарах чăваш — тата пысăк

уссиллĕ, хура типшĕм çын килнĕ. Хура çыннăн чĕркуççисем хушшинчен кашкăр тĕслĕ пысăк йытă пăхса ларать.

## 16. ЙĔР ТАРАХ

...Петрухин милиционерсене лашасем çинчен анма хушрĕ, унтан, типшĕм çынна пуçĕпе сулса, кил хушшинелле чупса кĕчĕ. Типшĕмми, тăрантас çинчен сиксе анса, йыттине сăнчăрĕнчен туртрĕ:

— Альма, за мной!

Хапхаран кĕрсе ик утăм ярса пуссанах, Петрухин чарăнса тăчĕ. Выльăх карти еннелле сулăнса тăнă çынсем ун çине ним чĕнмесĕр, хăшĕ куç харшисем айĕпе хаяррăн, хăшĕ куçĕсене мăчлаттарса, шиклĕн пăхни, кил хушши варринче виçĕ çын алли-урисене саркаласа, ним хускалмасăр выртни, унта та кунта чул катăкĕсем, патаксем сапаланни, пÿрт чÿречине рами-мĕнĕпех ватса тăкни кунта мĕн пулса иртнине самантрах ăнланса илме май пачĕ ăна. Вăл çавăнтах 1918 çулхи кĕркунне, кулаксен пытарнă тыррисене ухтарса çÿренĕ чухне, хăйсене пĕр ялта çакнашкалах вĕлерме тăнине аса илчĕ. Кулаксен, бандитла этемсен ĕçĕ пулмасан, камăн ĕçĕ пултăр ĕнтĕ ку?..

Вăл, хăйĕн пырĕ темле тулса ларнине туйса, хуллен кăна ÿсĕрсе илчĕ те тата виçĕ утăм малалла ярса пусрĕ. Куçĕпе пăрапа шăтарнă пек тепĕр хут пăхса çаврăнчĕ кил хушшинчи халăха... Унтан пурне те илтĕнмелле, хыттăн ыйтрĕ:

— Мĕн хăтланатăр, тăвансем?..

Никам та пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Ун умĕнче икçĕр çын ытла тăнă пулин те, кил хушшинче тупăкри пекех шăп пулчĕ. Темиçе çĕр куç Петрухинпа ун хыçĕнчи йытăллă çынна витĕр курма тăрăшнă пек, вĕсем мĕн тума шутланине пĕлесшĕн пулса пăхса тăчĕç.

Пĕр-ик минут иртрĕ çапла.

— Ну, мĕн тăвăпăр ĕнтĕ?— ыйтрĕ Петрухин татах.

Халăх каллех нимĕн те чĕнмерĕ, вăл халĕ вулăсран килнисем мĕн каласса кĕтрĕ. Петрухин, чăнах та, тем каласшăн пулчĕ, анчах сасартăк кил хушши варринче, тусан çинче выртакансенчен пĕри хускалма пуçланине курчĕ. Ун патĕнчерехре таракан çынсем, вăл каллех сиксе тăрса тем тăвасран хăранă пек, тата каялла чакрĕç...

— Нихăшĕ те вырăнтан ан хускалăр!— хаяррăн кăшкăрчĕ Петрухин.— Ларăр! Ăçта тăнă, çавăнтах ла-

ăр!— Вăл милицисем еннелле çаврăнса аллипе сулчĕ.— Никама та ан кăларăр, никама та ан кĕртĕр!..

Халăх хускалкалама, пĕр-пĕрне тĕрткелеме тытăнчĕ. Темиçе кăмăлсăр сасă илтĕнчĕ:

— Мĕнле апла вăл?

— Пурте айăплă мар вĕт...

— Айăплисене тупас пулать...

— Ан пăшăрханăр!— терĕ волком секретарĕ, халăх çывăхнерех пырса.— Айăплисем тупăнĕç! Никам та тарса хăтăлаймĕ! Ларăр тавай, ларăр!

Майĕпе, пĕр-пĕринпе кăмăлсăртараххăн калаçса, кил хушшинчи çынсем ларма пуçларĕç. Петрухин çĕрте выртакансем патне пычĕ. Хускалма пуçлани — Тарас пулчĕ. Тата иккĕш — Назарпа Микиш иккен. Вĕсем виççĕшĕ те палламалла мар пулса кайнă, пичĕ-куçĕсем шыçса ларнă, суранĕсенчен сăрхăннă юн тусанпа хутăшса сăнĕ-пичĕсене хупласа лартнă... Петрухин Тарасăн пуçне çĕклесенех, ун патне Микуль шариех кăшкăрса макăрса чупса пычĕ:

— Пичче-е!

— Килĕр кунта!— аллипе хăй еннелле туртрĕ Петрухин.— Пўрте çĕклесе кĕрĕр! Ак кусене те!— Вăл Тарас пекех аран йынăшса выртакан Назарпа Микиш çине кăтартрĕ.— Ну! Хăвăртрах! Эх, тăнсăр халăх! Туссене тăшмансенчен уйăрса илме пĕлместĕр!..

Крыльца çине хăпарсан, çынсене татах асăрхаттарчĕ:

— Астăвăр, нихăшĕ те тухса кайма ан шутлăр! Хăвăрах япăх пулать атту...

Пўртре вăл чăн-чăн тухтăр пекех ĕçлеме тытăнчĕ: суранлисен тумтирĕсене хывтарчĕ, халь çеç лăпланма пуçланă Варукпа тата учительницăпа пĕрле сурансене çыхма тапратрĕ.

— Эх, эмел çук... Халех тухтăр патне ярас пулать! Калăр кама та пулин!

— Юрать,— терĕ халь çеç тултан кĕнĕ Хăмăт Энтри,— хам ывăла хушатăп!

— Часрах!

Микуль çавăнтах, сак çинче выртакан Тарас патĕнчен пĕр шит те уйрăлмасăр, ним тума пĕлмесĕр хыпкаланса, пĕрмай нăшăклатса, куçне çаннипе шăлса тăчĕ.

— Ан макăр, ачам, ан макăр, хăрамаллиех çук,—лăплантарчĕ ăна Петрухин.

Чăнах та, питне сив шывпа çуса тасатса сурансене çыхсан, Тарас пĕр вăхăт шăппăн выртрĕ те хуллен кăна

куçне уçрĕ. Волком секретарьне курни ăна тăруках тĕлĕнтерчĕ, анчах вăл çавăнтах астуса илчĕ курăнать.

— Килтĕр-и?— ыйтрĕ вăраххăн.

— Килтĕмĕр, Тарас Петрович... Вăхăтра çитрĕмĕр пулас.

— Никама та... вĕлермен-и?

— Çук. Ĕлкĕреймен.

— Вĕсем... ăçта?

Тарас кам çинчен ыйтнине Петрухин тӳрех ăнланчĕ те пуçĕпе кил хушши еннелле сулчĕ.

— Пурте кунта, эпир киличчен тарса пĕтмен пулсан... Кĕтеççĕ,— терĕ вăл Тарас çине пăхса. Кăштах шарламасăрларнă хыççăн çапла хушса хучĕ:— Пĕтĕм халăха тытса тăма аван мар, эс кама-кама тытса юлмаллине каласа пар... Паллах, çапакансене çеç мар, вĕсен аллисене çĕклеттернисене те...

Тарас хăй асăрхама ĕлкĕрнисене йĕркипе каласа тухрĕ.

— Тата çав Мамун арăмне те тытас пулать, вăл та шуйттан пекех сикрĕ паян,—хушса хучĕ Варук, Тараспа Петрухин калаçăвне итлесе тăнăскер.

— Тĕрĕс, тĕрĕс,— терĕç Маринепе Катя.

— Ну, эс канса вырт-ха халлĕхе, эпир ĕçе тытăнатпăр,— терĕ Петрухин, бандитла тискер ĕçе тăвакансен ячĕсене çырса пĕтерсен.— Халĕ сирĕн ялти сывлăша пĕтĕмпех тасатса çитеретпĕр пуль ĕнтĕ.

— А эсир пĕлетĕр-и тата...—пуçларĕ Тарас, волком секретарьне Исай çухални çинчен калас шутпа, анчах кил хушшинче тăрук шавлама пуçлани илтĕнчĕ.

— Стой! Ăçта каятăн?— кăшкăрчĕ тахăшĕ.

— Пăрăн унтан!

— Каланă сире — юрамасть!

— Назад!..

Петрухин чӳречерен пăхса илчĕ те, пиçиххийĕ çинчи кобурне тӳрлетсе, тулалла чупса тухрĕ.

— Мĕн унта?— ыйтрĕ Тарас хăй пуçĕ вĕçĕнче нăшăклатса тăракан Микульрен.

— Такамсем сапур урлă каçма тăчĕç...

— Хăтăласшăн пулас, йытăсем...— мăкăртатса илчĕ Тарас. Унтан шăллĕ çине пăхса, сасартăк амăшĕ çинчен аса илчĕ.

— Килте пултăн-и эс?

— Пулман,— терĕ Микуль.

— Апла акă мĕн... Кунта сăмса юхтарса тăриччен киле кайса кил-ха часрах. Анне мĕнле унта...

— Чăнах, кай,— терĕ Варук, вĕсем патнелле пырса.— Сирĕн патра та пулчĕç паçăр... Аннӳне тем туман-и?

Микуль хăвăрт кăна тухса чупрĕ. Пӳртре, Тарассăр пуçне, кутник çинче выртакан Назар тата Варук çеç юлчĕç. (Микиша çенĕкри вырăн çине хунă). Назар, хушшăн-хушшăн тарăннăн сывласа, йынăша-йынăша илчĕ, Варук, пĕрахмай ун патне пыра-пыра, ăна канлĕрех вырнаçтарма тăрăшрĕ. Урам енчи чӳречесем витĕр урайне хĕвел çути ӳкрĕ, ку ĕнтĕ кăнтăрла çитнине пĕлтерчĕ. Чӳрече умĕнчи акаци турачĕсем çинче салакайăксем хăйсен чĕвĕлти чĕлхипе калаçса сиккелеме тытăнчĕç. Тарасăн темшĕн вĕсем çине пăхас килсе кайрĕ, вăл пуçне çĕклеме тăчĕ, анчах ăшчикĕ пăтранса килнĕ пирки çĕклеймерĕ, минтер çине каялла ӳкрĕ...

Кантăк çумĕнче таçтан килсе лекнĕ пыл хурчĕ нăйлатма тапратрĕ. Вăл Тараса тарăхтармаллах йăлăхтарчĕ, унтан хурт сасси такам пĕр майлăн шăпăр каланă пек туйăнчĕ, кунпа пĕрлех пӳрт маччи темшĕн хускалчĕ, çаврăнма тапратрĕ, юлашкинчен таçта хăямата кайса путрĕ...

— Тарас, Тарас... Мĕн эс? Вăран-ха...— илтрĕ вăл тĕлĕк витĕр такамăн çепĕç сассине.

— Мĕн?— ыйтрĕ Тарас, куçне уçса.

Ун умĕнче Варук тăрать иккен.

Тарас çавăнтах мĕн пулнине, хăй ăçта выртнине аса илчĕ те, шăмшакĕ ыратни çине пăхмасăрах, тăрса ларчĕ.

— Çынсем ăçта?— ыйтрĕ вăл, чӳречерен пăхса илсе.— Мĕн пулчĕ унта кайран?

— Тытса хупрĕç,— терĕ Варук.

— Кама-кама?

— Микстурпа Шĕвĕрпуçа, Уртеме, Мамун арăмне тата темиçе çынна — вĕсене асăрхаймарăм... Ку, вулăсран килни, пӳртрен тухсанах, вĕсене ятпа чĕнсе пухрĕ. Халăх хушшинчен тухасшăн пулмарĕç лешсем, анчах та çынсем кăтартса пачĕç вĕсене...

— Камсем?

— Павăл пичче унта, Кулине...

— Хăюлăх çитрĕ пулать?

— Çапла пулас çав. Вара милицисем пурне те хурал пӳртне илсе кайса хупрĕç...

— Вулăсрисем ăçта халь?

— Çавсене ăсатсанах, вĕсем йыттипе йĕр йĕрлеме тух-

са кайрĕç. Çынсем те пит нумаййăн чупрĕç вĕсемпе. Эп те каясшăнччĕ те, сире пăхакан çук, тесе юлтăм.

— Аçталла кайрĕç-ши?

— Çырма тăрăх, анаталла...

Тарас ура çине тăчĕ. Варук унăн куçĕ хĕмленнине асăрхарĕ.

— Эс... каяс теместĕн пуль те?— ыйтрĕ вăл.

— Каяс пулать!

— Чипер калаç... Вăйсăр вĕт эс, ан кай. Тем пулĕ тата...— терĕ Варук, ун çине шелленĕн пăхса.

— Нимĕн те пулмасть,— терĕ Тарас, гимнастерка çухине тӳмелесе. Чӳрече витĕр пăхрĕ те, урамра Варуксен лаши çӳренине курсан, хуллен кăна ыйтрĕ:

— Сирĕн лашăра утланса каям-и?

— Пултаратăн пулсан, кай ара. Анчах, каймасан авантарах пулатчĕ пуль те...

Варук сассинче, чĕререн ыйтнисĕр пуçне, калама çук пысăк юрату янраса тăчĕ. Тарас ăна уççăнах сисрĕ.

— Ан хăра... Эс хăвăн аçупа Микиша лайăхрах пăх кунта.

Вăл кил хушшине тухсан, хапхаран ăна хирĕç хашкама ернĕ Микуль чупса кĕчĕ.

— Пичче,— терĕ вăл кĕç-вĕç макăрса ярас пек.— Анне хĕнесе пĕтерне, атя киле часрах!..

Тарас нимĕн те каламарĕ, Варуксен лашине тытса утланчĕ те урам тăрăх анаталла чуптарса анса кайрĕ...

* * *

Волком секретарĕ Иван Петрухин Тараса «сирĕн ялти сывлăша пĕтĕмпех тасатса çитеретпĕр» тесе ахальтен каламан. Юлашки икĕ эрне хушшинче вулăсри бандитла ушкăнсене икĕ çĕрте хупăрласа тытма май килнĕ, уголовнăй розыск сотрудникĕсен аллине тавраш ял çыннисене куллен хăратса пурăннă шултра «çăрттансемех» лекнĕ. Анчах та вĕсен хушшинче Махорка пулман. Петрухина Махорка кирлĕ пулнă: вăл, тĕрлĕ майсемпе йĕрлесе, хăйĕн йăмăкне Махорка персе пăрахнине чухланă, çавăнпа та ку бандита епле пулсан та хам алăпах тытатăп, тесе сăмах панă. Аçта та пулин вăрă-хурахсем алхасни çинчен хыпар илтсенех, Петрухин унта хăй кайнă.

Çӳлте тăракан органсем бандитсен юлашкийĕсемпе çине тăрсах кĕрешме хушнине пурнăçа кĕртесси Петрухиншăн хăйĕн интересĕсемпе çыхăнса пынă.

...Паян ирпе Тарас çырăвне илсен те, вăл нумай шухăшласа тăмарĕ. Угрозыск начальникĕпе, типшĕм питлĕ украинец Челомбитько юлташпа, темиçе сăмах калаçсанах, вĕсем икĕ милиционер илчĕç те Энтрияльне тухса кайрĕç. Çул çинче Петрухин Челомбитькăна хăйĕн шухăшĕсене каласа пачĕ.

— Махорка яланах çак таврара çÿренĕ... Эп пĕлнĕ юлашки сведенисем тăрăх, унăн Энтриялĕнче темле тăван пур. Унпа çыхăннах вăл. Çитменнине, пĕр виçĕ эрне каялла унта Махоркăн пĕр çыннине тытнăччĕ, анчах та вĕсем ку «чĕлхене» пит хăвăрт тирпейлесе хунă. Ман шутпа, кĕçĕрхи ĕç те Махоркăсăр пулман... Эс мĕн тейĕн, э?

Украинец, сăмах-юмах питех ваклама юратманскер, ăна хирĕç нимех те каламарĕ, чĕркуççисем хушшине лартнă йыттине пуçĕнчен ачашласа илчĕ çеç.

— Н-да... Це дило треба разжуваты...— терĕ вăл пĕр çур çухрăм пек кайсан тин.— Побачимо, як вин будэ. Пошукаемо...

Энтриялĕ патнелле çывхарнăçемĕн Петрухин ытларах та ытларах пăлханса пычĕ. Унăн пуçĕ пĕр чарăнмасăр ĕçлерĕ, вăл бандитсене тытмалли тĕрлĕрен тĕрлĕ меслетсем çинчен шухăшларĕ...

«Вăхăт ĕнтĕ, вăхăт!.. Яланлăхах, ĕмĕр тапранаймиех кăклас пулать вăл хура юнсене... Эпир тĕнчере пулман чаплă та пысăк ĕçе тытăнтăмăр... Пĕтĕм пурнăçа тĕпрен çĕнетсе юсама тапрататтăр, мĕнпур ĕççыннисен телейĕшĕн... Анчах вĕсем, тискер çĕленсем пек, сисмен çĕртен пырса сăхаççĕ пире, кашни утăмрах такăнтарасшăн, пирĕн ал-урана çыхасшăн... Пĕлетпĕр эпир вĕсен ĕмĕчĕсене, пит лайăх чухлатпăр...»

— Що такэ?— ыйтрĕ украинец, Петрухин темскер мăкăртатнине илтсе.

— Нимех те мар...— терĕ ку.— План тăватăп.

— А ну, який вин?

Челомбитько юлташ та ним шухăшламасăр пыман. Вăл хăйĕн практикинче тĕл пулнă ĕçсене аса илнĕ. Революци пулнăранпах розыск органĕсенче ĕçленипе унăн тĕрлĕ бандитсемпе кĕрешес тĕлĕшпе пысăк опыт пухăннă, халь те вăл паянхи преступленин çăмхине епле майпа авантарах сÿтсе, вĕçне тупассине ăсĕнче виççе пынă. Петрухин планне итлесен, вăл та хăйĕн шухăшĕсене каласа пачĕ. Калаçса пынă май вĕсем Энтрияльне пырса çитнине сиссе те юлаймарĕç.

— Пире эсӗ тӳрех леш ҫаратнӑ кӗлет патне илсе кай, ачам,— терӗ Петрухин милиционерсенчен пӗр шит те юлмасӑр пыракан Микуле.

— Акӑ вӑл, кунтах, икӗ кил урлӑ кӑна,—аллинчи хулӑпа малалла кӑтартрӗ Микуль.

— Атя! Хӑвӑртрах!— ямшӑка ҫурӑмӗнчен пӳрнипе тӗртрӗ волком секретарӗ.— Илтетӗн-и, епле шавлаҫҫӗ. Мур пӗлет, тем хӑтланаҫҫӗ унта...

Тепӗр минутран вӗсем Назар хапхи умне пырса чарӑнчӗҫ. Ку истори кулаксен провокацийӗ пулнине вӗсем пӗр сӑмахсӑрах ӑнланчӗҫ.

Вара хӑйсем шутласа хунине тума тытӑнчӗҫ.

Суранланнисене майласан, Тарас кӑтартса панӑ ҫынсене арестлесен («ан тив, вӗсем хушшинче айӑпсӑррисем те пулччӑр, кайран палӑртатпӑр», терӗ Петрухин), Челомбитько хӑйӗн йыттине йӗр шыраттарма пуҫларӗ.

— Шукай! Шукай*, Альма!..

Альма питӗ опытлӑ ищейка пулнӑ, ӑна пула Челомбитько ниепле те тытма май ҫук пек туйӑннӑ преступниксенех йӗрлесе тупнӑ. Ахальтен мар вӑл йытта такамсем пӗрикӗ хут та вӗлерме тӑнӑ, наркӑмӑшпа йӗплӗ ҫӑкӑр та ларса пӑхнӑ, пӗрре пӑшалпа персе те суранлатнӑ. Унӑн хуҫи паян та вӑл пысӑк ӗҫ тӑвасса шаннӑ.

...Кӗлет патӗнче шӑршласа чупкаласан, Альма пӗр вырӑнта чарӑнса нӑйкӑшма тапратрӗ, малти урисемпе ҫӗре чавса илчӗ.

— Стой, нельзя!— кӑшкӑрчӗ ун ҫине Челомбитько. Унтан йӑпӑр-япӑр кӑкӑрӗ ҫинчи кӗсйинчен ҫаврака кантӑк кӑларчӗ те йытӑ чавма тӑнӑ вырӑна пӑхса упаленме тытӑнчӗ. Тӗлӗннӗ халӑх, сасартӑк чӗлхесӗр пулнӑ пекех, унран темиҫе чалӑшра ним чӗнмесӗр, шӑппӑн сывласа пӑхса тӑчӗ.

— Юн,— терӗ Челомбитько Петрухина.

Йытӑ анаталла туртӑнма пуҫларӗ.

— Шукай!— терӗ те ӑна хуҫи каллех, хӑй ун хыҫҫӑн чупнӑ пекех утса кайрӗ. Юпа пек тӑнӑ халӑх та хускалчӗ, шавлама тапратрӗ.

— Ан шавлӑр! Ҫывӑха ан килӗр!— кӑшкӑрчӗ халӑх еннелле Петрухин, Челомбитькӑпа юнашар утса. Вӑл малтанхинчен те хытӑрах пӑлханса кайрӗ халь: куҫӗ темле

---

*Шыра (украинла.)

пит хӑварт ҫаврӑнкаларӗ, ҫамки ҫине шултӑра тар пӗрчисем пӑчӑртанса тухрӗҫ, сылтӑм аллипе тек-текех кобурине тыта-тыта тӳрлетрӗ. Пӑлханма сӑлтавӗ те пулчӗ ҫав: Альма преступниксен йӗрне тупни уҫҫӑнах курӑнчӗ... Анчах та вӗҫне ҫитиччен илсе пырӗ-ши вӑл?

Акӑ Альма, ҫырманалла анса, Карас кӳлли патнелле чупрӗ, унтан сӗвек сӑрт ҫинелле хӑпарчӗ, ванчӑк ҫатан карта урлӑ сиксе каҫса, ыраш ӑшнелле кӗрсе кайрӗ. Ансӑр йӑран тӑрӑх пӗр ана пӗвӗ пек кайсан, тӑрук сылтӑмалла пӑрӑнса, анасен пуҫӗпе каллех анаталла, Юрпаш шывӗ еннелле, ыткӑнчӗ...

Янкӑр уяр тӳпери хӗвел ним хӗрхенмесӗр пӗҫертрӗ, таҫта ҫӳлте, вӗри сывлӑшра, тӑрисем каҫса кайсах юрларӗҫ, ыраш ӑшӗнче шӑрчӑксем чӗриклетни илтӗнчӗ...

Челомбитькӑпа Петрухин йытӑ хыҫҫӑн аран ӗлкӗрсе пычӗҫ. Вӑл ҫаплах малалла туртӑнчӗ. Хыҫалтан пыракан халӑх та юлмарӗ вӗсенчен. Чӑн малтан — йытӑран пӗр-ик чалӑшра ҫеҫ — Павӑл пичче, Хӑмӑт Энтри, Кулинепе Марине, Катя, темиҫе комсомолец утрӗҫ, вӗсем хыҫҫӑн — Назар кил хушшинче пулнӑ пӗтӗм халӑх, ватти-вӗтти мӗнӗпех... Вӗсем пурте кӗҫ-вӗҫех пит те пысӑк, тӗлӗнмелле ӗҫ пуласса кӗтрӗҫ, чӑн-чӑн вӑрӑсем, выҫӑ ҫынсен юлашки ҫӑкӑр татӑкне туртса илекенсем, тупӑнасса шанчӗҫ. Шанчӗҫ те, ҫав хушӑрах ӗненмерӗҫ те... Сасартӑк, ку таранччен лупашкаллӑ йӑран тӑрӑх пынӑ Альма сулахаялла пӑрӑнса, анасем урлӑ, тӳрӗрен тӳрӗ, Качака варӗ пуҫнелле чупса кайрӗ. Хушӑран вӑл йӑпӑртлӑх чарӑнса тӑчӗ, пӗр-ик хут вӗрсе илчӗ, унтан каллех чупрӗ. Йытӑ кун пек хӑтланни ҫынсене тата ытларах тӗлӗнтерсе пӑлхатрӗ, вӗсем хытӑран хытӑ малалла пычӗҫ.

Альма, ыраш хушшинчен ухӑ йӗппи пек сиксе тухса, Качака варӗ хӗррине ҫитсе тӑчӗ те тӳрех хаяррӑн вӗрме тапратрӗ. Петрухинпа Челомбитько пӗрре пӗр-пӗрин ҫине, тепре ҫырма тӗпнелле пӑхса илчӗҫ. Иккӗшӗ те вӗриленсе ҫитрӗҫ вӗсем, йывӑррӑн хашкаса сывларӗҫ, пичӗсем тӑрӑх шултра тар юхса тӑчӗ...

— Треба пошукаты!— терӗ те украинец, вӗтӗ ҫӳҫе тӗмисем ӳсекен ҫырма тӗпне, унтан ҫыр хупаххисемпе витӗннӗ чӑнкӑ ҫырансене куҫӗпе сӑнама тытӑнчӗ. Альма вӑл хушӑра чарӑнма пӗлмесӗр, ҫаплах вӗрчӗ. Унтан ҫур минут та иртмерӗ пуль, Челомбитько пӗр вырӑнта ҫыранти хупахсем лутӑрканнине асӑрхарӗ те, ним шухӑшласа тӑмасӑрах, аялалла сикрӗ. Альма йынӑша-йынӑша ун хыҫҫӑн анса

кайрĕ. Çыран хĕррине çитсе тăнă çынсем: «Ай, айтурух! пĕтрĕ ку!»— теме анчах ĕлкĕрчĕç, украинецпа йытă çырма тĕпĕнчи çӳçе тĕмисем хушшинче çухалчĕç. Тепĕр самантрах аялтан, йытă вĕрнипе пĕрле, хыттăн кăшкăрни илтĕнчĕ:

— Петрухин! Сюда-а!.. До менэ!

Çӳлте тăракансем ăнланчĕç: украинец темскер тупнă унта. Малтан Петрухин, ун хыççăн ыттисем те çырманалла пăрçа пек тăкăнчĕç. Вĕсем çырма тĕпне çитиччен Челомбитько çӳçе тĕмисем хушшинчи лупашкаран темле этем кĕлеткине çĕклесе тухса курăк çине хучĕ те унăн пуçĕ çине тăхăнтарнă миххе хывма тытăнчĕ.

Михĕпе хупласа çырмана ывăтнă çын — Исай пулчĕ. Унăн сăнпичĕ, кăвакарса, çĕр тĕслĕ пулса ларнă, куçĕ хупăннă, чăн-чăн вилнĕ çын пекех...

Çынсен кăкрисенчен пĕр харăс хăрушă сас пăчăртанса тухрĕ:

— А-ахх!..

— Тур çырлахтăрах! Вĕлернĕ!..

— Исая!

— Эх, мĕскĕн...

— Кам-ши? Кам тискерĕ-ши?

— Аçа çапасчĕ...

— Куртăр-и ĕнтĕ кам айăплине?— хулăн сасăпа кăшкăрса ячĕ халăх çине Хăмăт Энтри, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе илсе. Советсем тунă-и çакна? Комсомолсем-и? Эх, çынсем мар çав эсир..

Вăл каласа та пĕтереймерĕ — халăх хушшинче пĕр хĕрарăм калама çук хыттăн, ăнран тухса кайнă пек:

— А-ай!— тесе кăшкăрса ячĕ...

Ку Марине сасси пулчĕ; хăйĕн савнийĕ вилнĕ пек выртнине курсан, чĕри тӳсеймерĕ унăн, ăспуçĕ пăтраннă пек пулса кайрĕ... Вăл пĕр утăм малалла ярса пусрĕ те, Исай кĕлетки патне ӳксе, ăна хулпуççинчен ыталаса илчĕ, пур халăх илтмелле, пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе чĕтренсе макăрма тапратрĕ:

— Вĕлернĕ-ĕ!.. Вĕлернĕ сана... Пире курайман çынсем вĕлернĕ. Чунăм!..

Татах та тĕрлĕрен тĕрлĕ ачаш сăмахсем каласа йĕчĕ вăл, хăйĕн таса çамрăк чĕринче ку таранччен мĕн пухăннине пĕтĕмпех каласа пачĕ, унтан çавăнтах ăнран кайрĕ... Пăхса тăракан çынсенчен никам та пĕр сасă кăларма хăяймарĕ. Хыçалта темиçе хĕрарăм нăшăклатса илчĕç... Пурнăçра темĕн тĕрлĕ хăрушлăх курнă Челобитько та тӳсеймерĕ,

çамрăк хĕр асапланнине кура, унăн пысăк кăвак куçĕсем шывланчĕç.

— Обморок,— терĕ вăл Петрухина.— До дому треба...

Хăй çавăнтах Исай патне чĕркуçленсе, унăн юн тымарне тытрĕ. Унтан, пуçне ун кăкри çине хурса, чĕри таппине итлесе пăхрĕ.

— Сывлать. Халех тухтăр кирлĕ...

— Тухтăр патне янă,— терĕ Петрухин.

## 17. ХУРАЛ ПЎРТĔНЧЕ

Хурал пӳртне хупса лартнă Лява Уртемĕпе Мамун арăмĕ, Микстур Михалипе Шĕвĕрпуç хăйсен пурнăçĕ кун пек çаврăнса килессе ниепле те кĕтменччĕ. Пĕр сехет каялла кăна ялти активистсем çине урса кайнă йытăсем пек сикнĕскерсем, халь вĕсем тăрукках шăпланчĕç, хастарлăхĕ таçта хăямата кайса кĕчĕ. Пурин те ăшчиккисем вăркама тытăнчĕç, вĕсем пăлханчĕç, пурте харпăр тĕллĕн шухăша кайрĕç...

Пуринчен ытла Микстур пăлханчĕ. Вăл, пурнăçра яланах хăравçă пулнăскер, ĕнерпе паян Лява Уртемĕн сăмахĕсене суккăр çын пек ĕненнипе çеç хавхаланнăскер, халь, тĕксĕм хурал пӳрчĕ алăкне тул енчен шанчăклă çăрапа питĕрнине илтсен, кăшт çеç макăрса ямарĕ. Малти кĕтеселле утса иртрĕ те, чĕлĕм чĕркесе, çăра тĕтĕме çăтма тытăнчĕ. Пӳртре куçа çиекен аван мар йӳçек шăрш кĕчĕ, темле навус шăнисем нăйлатрĕç...

— Тĕрме пулчĕ-çке ку, Уртем пичче,— терĕ Микстур хăраса ӳкнĕ сасăпа, чылай вăхăт ним чĕнмесĕр ларнă хыççăн.

— Тĕрме çав! Эсĕ мĕн, сана советсем пуçран ачашласа тăрĕç, терĕн-и?— татса хучĕ Уртем сиввĕн.

— Мĕнле-ха апла... Эс ним те пулмасть, терĕн-çке...

— Мĕн пултăр? Айăпсăр çынна мĕн туччăр?— терĕ Мамун арăмĕ, «айăпсăр» сăмаха юриех палăртса. Хăй çавăнтах урай варрине тăсăлса выртнă Пакарта Çеменĕпе Автан Упрамĕ çине пăхса илчĕ. Кусем иккĕшĕ те нимĕн те пĕлмен, вĕсем, ахаль чух та çапăçма юратаканскерсем, паян активистсене чăнласах айăплă пуль тесе хĕненĕ, хăйсем халь чи айăплă çынсемпе ларнине те чухламан...

— Вĕсен пире винават тума ниепле право та çук, эпир анчах мар, пĕтĕм халăх хĕнерĕ...— мăкăртатса илчĕ Шĕвĕр-

пуç, Микстуртан чĕлĕм тĕпне илсе хыпса.— Рас вăрă— сначăт вăрă, ĕçĕ те çав кăна!

— Çапах та, айăпламах тапратсан, мĕн тăвăпăр-ха эпир?— Уртем патнерех пырса ыйтрĕ Микстур.

— Сĕлекўне ан юхтар ĕнтĕ!— тăрук кăшкăрса пăрахрĕ лешĕ, Микстур çине шур куçпа пăхса.— Мĕн... чĕчĕ ачи пек! Эс ним те курман, илтмен, ним те пĕлместĕн... Ăнлантăн-и? Миçе хут каламалла сана?!

— А... а... а тупсан тата?— мăкăртатса илчĕ куна хирĕç Микстур, асăрханасси-мĕнне манса кайса.

Ку вара ытлашши пулчĕ.

— Мĕн тупсан?— кăшкăрса пăрахрĕ те Уртем, ответ кĕтсе тăракан Микстура сасартăк çупса ячĕ. Микстурăн питçăмартийĕ вут пек пĕçерсе кайрĕ, вăл ăна ывçипе хупласа лартрĕ.

— Мĕншĕн ку?

— Çавăншăн! Мĕн кирлĕ мара лăркатăн? Тепре çăварна уçсан, эп сана çакăнтах пăвса пăрахатăп! Ухмах!

— Чĕлхене ăна шăлпа çыртма пĕлес пулать!— хушса хучĕ Мамун арăмĕ, ĕç малалла та кун пекех пырсассăн Микстур темтепĕр каласран хăраса.— Вăрăм чĕлхе çынна нихçан та ыр тумасть!

— Эп... эп нимех те каламарăм-çке, ма çапрĕ вăл мана?— мăкăртатса илчĕ Микстур.— Пăх-ха, юн тухиччен çапрĕ!..

— Татах палкасан, чунна кăларатăп,— тепĕр хут юнарĕ Уртем.

Урайĕнчи Пакарта Çеменĕпе Автан Упрамĕ, пуçĕсене çĕклесе, вĕсем çине ним ăнланмасăр пăхса выртрĕç... Çав вăхăтра пўртри сасăсене илтнĕ милиционер чўрече тĕлĕнче чарăнса кантăкран шаккарĕ.

— Шăп ларăр! Шавлама юрамасть!

— Çук, эпир шавламастпăр, шăпах ларатпăр, юлташ начальник,— терĕ ăна хирĕç Шĕвĕрпуç, кантăк витĕр милиционер çине айăпа кĕнĕ йытă пек пăхса.

— Астăвăр çав!

Пўртре каллех шăп пулчĕ, шăнасем нăйлатса вĕçсе çўрени çеç илтĕнчĕ. Лява Уртемĕ алăк патĕнчи сак çине месерле выртрĕ те ним тĕлсĕр хура маччана пăхма тытăнчĕ. Унăн пуçĕнче тăхлан пек йывăр шухăшсем çаврăнчĕç.

«Йытă илсе килчĕç... Нивушлĕ тупĕ вăл? Армана кайса пăхма пултараймаççĕ-ха вĕсем. Никамăн та ăс çитес çук, арманĕ темиçе çул ĕçлемест ĕнтĕ... Махорка унтах выртать-

ши? Тарнă пулсан аванччĕ. Ну, вăл парăнасах çук-ха. Леш сарă туталли... Исай тени... вилмеллипех вилчĕ-ши? Ăна çеç мар, ыттисене те тирпейлесе хумаллаччĕ. Шел, ĕлкĕреймерĕмĕр. Мĕн хăтланаççĕ-ши халь? Йытăпа йĕрлеççĕ пулĕ-ха... Шуйттан пĕлет... Ку ухмах Микстурне пустуй çапрăм. Пĕр те пĕр темскер персе ярсан — пĕтерчĕ вара. Ытлашши вĕрилентĕм... Вăл, тăм пуç, пире малашне те кирлĕ пулать-ха. Йăпатас пулать...»

Сехете яхăн тĕрлĕ шухăшсемпе пăтранса выртрĕ Уртем. Урайĕнчи Пакарта Çеменĕпе Автан Упрамĕ хăрлаттарма пуçларĕç. Мамун арăмĕ те, Шĕвĕрпуç та тĕлĕрсе кайнă, пĕр Микстур çеç, чӳрече янахĕ çине чавсаланса, чикарккă хыççăн чикарккă йăсăрлантарса ларать.

Вăл та халĕ малалла мĕн пуласси çинчен шухăшлать... Пĕр енчен, ăна Уртем çупса яни кӳрентерет. Малтанах вăл, урамри милиционера чĕнсе илсе, ĕнертенпе мĕн-мĕн пулса иртнине пĕтĕмпех каласа парас патнех çитрĕ. «Мĕн тивĕçпе çапрĕ вăл мана? Хăй темĕн тĕрлĕ илĕртрĕ те, халь хĕнеме пуçларĕ! Мăшкăллать манран». Анчах темиçе самантранах пусăранчĕ.

«Апла тусан хам та пĕтетĕп... Епле те пулин хăтăлас пулать...»

Лява Уртемĕ ун çумне шăппăн кăна пырса ларчĕ те хулпуççинчен тĕкрĕ.

— Туртмалли пур-и сан?

Вăл чĕлĕм туртманнине пĕлсе, Микстур ун çине тĕлĕнерех пăхса илчĕ, анчах çапах та кĕсйинчен чăвашла евангели листипе пĕр чĕптĕм килти табак кăларса пачĕ.

— Ăш çунать,— терĕ Уртем. Чĕлĕм чĕркесе чĕртсен, Микстур хăлхинчен васкавлăн пăшăлтатса калама тытăнчĕ:

— Эс каçар мана, Михали... Ăнсăртран пулчĕ ку, сана кӳрентерес тесе мар. Хăвах ăнланатăн: пирĕн халь пĕрпĕринпе харкашмалла мар, пĕрне-пĕри пулăшса пырас пулать. Унсăрăн пĕтереççĕ пире... Мана та, сана та, хамăрăн ытти çынсене те... Турра асăнса калатăп: çакăнтан хăтăлса юлсан, эп сана улпут пекех тумлантаратăп, сан пек капăр çӳрекен каччă та пулмĕ. Хĕл каçнă пăру парăп... Мĕн кирлĕ, çавна ил... Тулькким эс халлĕхе çирĕп пул, халăх умĕнче хăвна тыткалама пĕл... Ăнлантăн-и? Маншăн çеç мар вĕт, хăвăншăн та вăл...

Микстур унăн сăмахĕсене чăнласах ĕненчĕ.

— Ан шиклен, Уртем пичче, эп саншăн шанчăклă

ҫын... Пуҫхӗрлӗ ҫаксан та, манран вӗсем пӗр сӑмах та пӗлеӗ ҫук!

Урамри милиционер каллех чӳрече тӗлне пырса тӑчӗ. Пӳртрисем шӑп пулчӗҫ.

## 18. ХАЯР ТЫТАҪУ

...Исая ҫӳҫе тураттисенчен тунӑ наҫилкка ҫине хурса яла ӑсатрӗҫ. Пуҫне шывпа йӗпетсе, питне ҫунӑ хыҫҫӑн куҫне уҫса тӑна кӗнӗ Маринене те Кулинепе Катя киле ҫавӑтса кайрӗҫ. Челомбитькӑпа Петрухин, вӗсене ӑсатсан, чӑн малтан Исайӑн пуҫӗ ҫинчен хывса илнӗ миххе пур енчен те пӑхса тухрӗҫ. Миххи, икӗ ҫӗртен ҫӗтӗлнӗ пулин те, ҫирӗп лапрашки пиртен ҫӗленӗскер, унӑн пӗр енче тахҫан тикӗтпе ҫырнӑ икӗ саспалли: «Л» тата «А» кӑшт ҫеҫ палӑрса тӑнӑ.

— Це гарно!— куҫне ялкӑштарса илчӗ Челомбитько.— Це же карты в руки!

Петрухин йӗри-тавра пухӑннӑ ҫынсем ҫине пӑхса ыйтрӗ:

— Камӑн ячӗпе хушамачӗ пуҫланать сирӗн ялта ҫак буквӑсемпе?

Ҫынсем пӗр хушӑ чӗнмесӗр тӑчӗҫ. Унтан пӗр комсомолец Петрухин патнерех пычӗ те:

— Львов Артемий вӑл, Лява Уртемӗ пулать,— терӗ.

— Тӗрӗс, ҫавӑн миххи ку!— терӗҫ ыттисем те.

— Питӗ аван!— хӗпӗртесех кайрӗ Петрухин.— Халь тин нимӗн тунаймасть вӑл!

Ҫавӑнтах миххе хуҫлатса хул хушшине хӗстерчӗ.

Унтан вӗсем, ҫырана улӑхса, паҫӑр сикнӗ вырӑна тухрӗҫ. Хыҫҫӑн пыракан ҫынсем те вӗсенчен юлмарӗҫ.

— Кунтан бандитсем хӑш еннелле кайма пултарнӑ?

Ҫак ыйту ҫине ответ тупма тӑрӑшса, вӗсем ҫырма хӗррипе аналла, Юрпаш шывӗ еннелле утрӗҫ. Альма каллех пӑлханма пуҫларӗ, йӗр ҫухалнипе вӑл тек-текех йынӑшрӗ, ыраш ӑшнелле те кӗрсе пӑхрӗ, ҫырманалла та туртӑнчӗ. Челомбитько ӑна пӗрмай лӑплантарса, хуллен кӑна: «Шукай, Альма, шукай!»— тесе пычӗ. Пӗр ҫирӗм-вӑтӑр чалӑш кайсан, вӗсем пӳрт лаптӑкӗ пысӑкӑш лупашкана анчӗҫ. Альма кунта тата хытӑрах пӑлханса чупкалама тытӑнчӗ. Петрухин пӗр вырӑнта курӑк лутӑрканнине асӑрхарӗ. Челомбитько, ҫавӑнтах чӗркуҫленсе ларса, курӑк ӑшӗнче темскер шырама тытӑнчӗ...

Халăх каллех, çăвара шыв сыпнă пек пулса, пăхса тăчĕ ун çине...

— Курили, холеры!— терĕ Челомбитько, курăк ăшĕнчен икĕ çунăк спичка тата пĕр чикарккă чĕркемелĕх хут татăкĕ тупса кăларса.— Во! Нам и це пригодится... А ну Альма, пошукаемо еще трошки!

Унăн куçĕ каллех савăнăçлăн çутăлса илчĕ,— украинец каллех преступниксен йĕрĕ çине ӳкнине Петрухин сăмахсăрах ăнланчĕ. Вăл çеç те мар, куна ыттисем те сисрĕç. Çырма хĕррипе пĕр çур ана пĕвĕ пек чупса ансан, Петрухин чавсинчен Хăмăт Энтри çитсе тытрĕ.

— Мĕнле-ши, юлташ, тупăпăр-ши?

— Тупатпăр!

— Мĕн терĕ вăл?— ыйтрĕ Энтрипе танлашнă Павăл пичче.

— Тупатпăр, тет...

...Çав вăхăтра ялăн анатри хапхинчен Тарас юланутпа сиктерсе тухрĕ. Килĕнче ӳксе çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ амăшне чипер вырнаçтарса, ăна пăхмашкăн Павăл пичче арăмне, Марфа инкене хушса хăварсан, вăл чаcрах йытăпа йĕрлекенсене тупас тесе тухрĕ. Унăн пĕтĕм шăмшакĕ ыратать, хушшăнхушшăн ăшĕ пăтранса, пуçĕ çавранса килет. Анчах тăшмансене тупса тытас кăмăл ăна халь ним тусан та килте лартма пултараймасть... Ытла мăшкăлларĕ-çке тăшман, ытла та тӳсме çук ирсĕр ĕç туса хучĕ, ăçтан каçаран ăна? Тем пулсан та, тăшман темле чееленсен те, ăна тупса тĕппипех вăкăлас пулать! Тымарĕ мар, шăрши те ан юлтăр, ан варалатăр вăл пирĕн сывлăша, ĕçлеме çеç мар, сывлама та çăмăл пултăр! Курăпăр — кам çиеле тухĕ!

Хапхаран тухсанах, Тарас лашана сулахаялла, Лява таврашĕсен кивĕ шыв арманĕ патнелле каякан çулпа тытрĕ. Лаша сиккипе ыткăнчĕ, çаран çинче ӳсекен сарă, хĕрлĕ, кăвак чечексем вĕлтлетсе кăна юлаççĕ.

Хурама кукринелле пăрăнсан, Тарас хăйне хирĕç икĕ арçын ача мĕнпур вăйран чупса пынине курчĕ.

— Çаксенчен ыйтас-ха, йĕрлекенсене курман-и вĕсем,— шухăшларĕ Тарас. Анчах та ачасемпе танлашсан, вĕсем хăйсемех кăшкăрса ячĕç:

— Тарас пичче! Тарас пичче!

— Мĕн?— ыйтрĕ Тарас, лашине тăпах чарса тăратса.

— Мĕн çав... Мĕн çав... çавăнта, арманта...— сывлăш çавăраймасăр, хашка-хашка, аллипе шыв арманĕ еннелле кăтартрĕ пĕр ачи.

— Таркăн куртăмăр!— персе ячĕ тепри.

— Мĕнле таркăн?— чĕри кăртах турĕ Тарасăн. Ачасен кăвакарса кайнă сăнĕсемпе сиксе тухас пекех чарăлса кайнă куçĕсене курсан, вăл ку ачасем чăнах та темскертен хăранине ăнланчĕ.— Мĕнле таркăн, ăçта?

— Арманта!— персе ячĕ малтан калама пуçланă ачи.— Эпир Митюкпа Наснартан, пирĕн кукамайсем патĕнчен, таврăнаттăмăр та арман пĕви пуçне пулă тытма антăмăр... Чулсем айĕнче йăмпăлтăк пулă нумай унта, алăпах тытма пулать...

— Пĕлетĕп, пĕлетĕп, эс кама курни çинчен кала! Йĕркипе кала!

— Калатăп-çке... Пулă тытрăмăр-тытрăмăр та киле килес терĕмĕр. Арман кĕлечĕ патне хăпартăмăр та кайăк чĕпписем чĕриклетнине илтрĕмĕр. Митюкпа иксĕмĕр те çӳлелле пăхрăмăр...

— Вара мĕн?— васкатрĕ Тарас.— Часрах кала!

— Пăхрăм та, кĕлет пуçĕнчи шăтăкран... хай çӳлте, мачча патĕнче, кăвакарчăн шăтăкĕ тăваççĕ вĕт... çав шăтăкран тĕтĕм тухнине куртăм... Митюка «пăх-ха!» тесе айăкĕнчен тĕкрĕм çеç... унччен те пулмарĕ, çав шăтăкра сар уссиллĕ çын курăнчĕ. Курăнчĕ те самантранах пытанчĕ! Чĕлĕм туртрĕ пулмалла... Митюка эпĕ: ку çын никам та мар — таркăн, терĕм те часрах кунталла чупрăмăр...

— Вăл хăй сире курчĕ-и?— ыйтрĕ Тарас, ниçта кайса кĕрейми хумханса.

— Пĕлместĕп... Кураймарĕ пуль, эпир тӳрех тартăмăр.

— А эсир тата ку таврара çынсем нумаййăн çӳренине курмарăр-и?

— Мĕнле çынсем?

— Хамăр ялсем те, ют çынсем те... йытăпа.

— Çук, курман,— пуçĕсене пăркаларĕç ачасем.

— Ну, юрать, эппин!..

Тарас урăх нимĕн те каламарĕ, лашана чĕлпĕртен карт! туртрĕ те, ик урипе ик енчен харăс тапса, çул тăрăх малалла тăпăртаттарчĕ, тусан çеç мăкăрланса юлчĕ ун хыçĕнчен. Ачасем ун çине тĕлĕнсе кăна пăхса юлчĕç...

Арман патне çитесси пĕр çĕр чалăш пек юлсан, Тарас сулахай енчи сăртран улăхалла ыраш хушшипе аллă-утмăл çынлă ушкăн кĕпĕрленсе аннине курчĕ, вара лашине çул çинчен пăрса, ыраш урлă тӳрех вĕсем çинелле тытрĕ. Пĕр-ик минутран çитсе те тухрĕ вĕсем патне.

— Чимĕр-ха!— лаша çинчен сиксе анчĕ вăл,

Хирĕç анакан халăх тăпах чарăнчĕ. Петрухинпа Челомбитько ун патнелле чупса пычĕç.

— Мĕн тата?

— Хыпар пур.

Ытти çынсенчен темиçе утăм аяккалла кайса тăрса, Тарас вĕсене ачасенчен халь çеç илтнине васкавлăн каласа пачĕ.

— Унтанпа пĕр çирĕм минут кăна иртнĕ. Тен, вăл халь те унтах-ха, каç пуласса кĕтет пулĕ...

— Пит аван! Ку питĕ аван!..— чышкисене чăмăртарĕ Петрухин. — Эппин, пире Альма тĕрĕс илсе килнĕ!..

— Зараз треба окружить мельницу!— терĕ Челомбитько, Юрпаш хĕрринче курăнакан арман çурчĕсем çине пăхса.— С флангов и с тылу. А мы с Альмой побежимо прямо, в лоб!.. Не спасеться!

Ку шухăшпа Петрухин та килĕшрĕ.

— Тĕрĕс! Пур енчен те çавăрса илес, эпир ăна чĕррĕн тытатпăр!

Çавăнтах хăвăрттăн, вăхăта пĕр минут та çухатмасăр, вăл кун çинчен халăха пĕлтерчĕ те мĕн тумаллине хушма тытăнчĕ.

— Эсĕ пĕр çирĕм çынпа сулахай енчен, ав çав çырма хĕррипе çаврăнса пыр,— терĕ вăл Хăмăт Энтрине.— Эсĕ, Павăл пичче, тепĕр çирĕм çынпа сылтăмран, ав çав йывăçсем патĕнчен çавăрса ил. Тарас, эс халех леш енчи сăрт çине кайса тăр, наблюдатель пул. Хăвпа пĕрле пĕр-икĕ çын илсе кай. Эпир кунтан тӳррĕн пырăпăр... Ăнсăртран пире курсан, вăл леш еннелле çеç тарма пултарать, вара эпир ун хыççăн йытă яратпăр... Ăнлантăр-и?

— Ăнлантăмăр!

— Вĕçтерĕр!

Халăх чупрĕ... Пĕрисем пĕр еннелле, теприсем тепĕр еннелле. Çак самантра хирти çынсен пурин те пĕр шухăш, пĕр кăмăл пулчĕ: епле пулсан та тытасахчĕ ку бандитсене! Пасăр ирхине Варуксен кил хушшинче нумайăшĕ иккĕленчĕç, кĕçĕрхи тискер ĕçе чăнах та Совет членĕсемпе комсомолецсем хăйсем тунă пулĕ, тесе шутларĕç, анчах халĕ, Качака варĕ тĕпĕнче Исай вилнĕ пек выртнине курсан, шухăшĕсем пачах улшăнчĕç, халь ĕнтĕ кашниех ку ĕçе бандитсемпе вĕсен майлисем тунине ăнланса, вĕсене пĕр çын юлмиччен тытса пĕтерес ĕмĕтпе çунчĕç.

Тарас, лаши çине утланса, халăхран уйрăлчĕ те, Петрухин хушнă пек, Юрпаш леш енчи сăрт патнелле ыткăнчĕ.

Арман патёнчен куранмалла ан пултар тесе, унтан чылай тăварахра ӳсекен пĕр ушкăн йăмрасем хыçĕпе пăрăнса каçрĕ. Ун хыççăн икĕ çамрăк каччă чупса пычĕç.

...Юрпаш урлă каçса, сăрт çине çурри таран хăпарсан, Тарас хашкакан пулнă лашине чарса тăратса, улăхалла пăхрĕ. Армантан анатарах та, тăварах та, арман патнелле пыракан çулпа та тарăн курăк ăшĕнче, лупашкапа тĕмеске-сем хыçне пытана-пытана, çынсем шуса пыраççĕ иккен.

— Фронтри пекех!— шухăшларĕ те Тарас, тавралăха тата лайăхрах курмалла вырăна йышăнас шутпа, лашине хускатрĕ.

Çакăн хыççăн вăхăт нумай та иртмерĕ — сасартăк сулахай енче, Хăмăт Энтри ертсе пыракан ушкăнта, тахăшĕ пур вăйран кăшкăрса ячĕ:

— Таратъ! Таратъ! Авă, пăхăр!

— Тытă-ă-ăр!— илтĕнчĕ çав самантрах теприн сасси.

— Сто-ой!

— Тытă-ăр!

— А-а-а...—янраса кайрĕç сасăсем çырма тăрăх.

Сăрта хыпарса çитнĕ Тарас лашине тепĕр еннелле карт! туртса çавăрчĕ те, аллинчи хулăпа ăна урлă та пирлĕ туртса çапса, сăрт хĕррипе, ним çине пăхмасăр, сасăсем илтĕннĕ çĕрелле ыткăнчĕ. Анчах çав вăхăтра арманăн сылтăм енче те — Павăл пичче ушкăнĕнче — çавнашкалах кăшкăрни илтĕнчĕ:

— Эхе-хе-эй!

— Сто-ой!

— Ан яр!..

— Тытă-ăр!..

«Урăххи пуль унта... Пĕрнех хăвалас пулать...—шухăшласа илчĕ те Тарас, малаллах вĕçтерчĕ.— Икке хăвала-сан, пĕрне те тытаймăн...»

Тепĕр минутран вăл хăйĕнчен пĕр аллă чалăшра, çырма тĕпĕнче, Хăмăт Энтрипе унăн ушкăнĕ чупнине, вĕсенчен аллă-утмăл чалăш малта — темле симĕс пиншаклă, атăллă çын каялла пăха-пăха ыткăнса пынине курчĕ. Тарасăн чĕри тата пăлханулларах тапма тапратрĕ...

«Çавă! Çавă! Бандит!»

Лашине таттисĕр хăвалама тытăнчĕ...

Акă ĕнтĕ, бандитпа Тарас хушши çирĕм чалăшран ытла юлмарĕ. Çыранран çырманалла анмалла çеç, вара ăна çитсе таптать вăл...

— Сто-ой! Ан тар!— кăшкăрса ячĕ Тарас. Анчах

кăшкăрма кирлĕ мар-мĕн. Бандит, ăна курсан, тăпах чарăнса тăчĕ те, револьверне кăларса, икĕ хутчен печĕ... Пульăсем Тарас çумĕпех шăхăрсе иртсе кайрĕç.

— А-а-а!.. Эс капла-и? Çавах тытатпăр!— кăшкăрчĕ Тарас татах, лашине çырманалла пăрса.— Тараймăн!

Самантран вăл çырма тĕпне анса, лашине шыв урлă сиктерчĕ. Бандит, çав хушăра тепĕр еннелле хăпарса, Шемертен вăрманĕ патнелле чупрĕ. Тарас та ун хыççăнах сиктерсе хăпарчĕ... Бандит пăшал пеме тытăнсан, тăруках чарăнса тăнă Хăмăт Энтри ушкăнĕ, Тарас бандита ним шиксĕр хăваланине кура, каллех чупма пуçларĕ.

— Тытă-ăр!..

— Ан тартă-ăр!..— янраса тăчĕ таврара.

Бандитпа Тарас хушши кĕскелсех пычĕ. Çирĕм чалăш, вунпилĕк, вуннă... Çывăх ĕнтĕ, çывăх! Халех, халех çитсе таптать ăна вăл... Анчах бандит вăрт! каялла çаврăнчĕ те, хăвăрт чĕркуçленсе, хăйĕн çинех пырса кĕме тапратнă Тараса револьверпа тĕллесе, икĕ хут печĕ. Тарас айĕнчи лаша тăрук кайри урисем çине тăрса аяккалла сикрĕ. Тарас, çав самантрах хăлаçланса илсе, çĕрелле татăлса анчĕ... Çакна кура, бандит ун патне хăвăрт чупса пычĕ те ăна ĕнсинчен тытса çĕр çумне пăчăртаса лартрĕ... Анчах унăн вĕри пӳрнисем Тарас карланки патне çитиччен ку пĕтĕм кĕлеткипе çĕкленчĕ те ăна хăйĕн çийĕнчен сирсе пăрахма ĕлкĕрчĕ. Бандит ăна çавăнтах çухинчен ярса тытрĕ... Вара вĕсем урса кайнă аça кашкăрсем пекех йăваланма тапратрĕç вăрăм курăк ăшĕнче...

— А-а-а!..

— Э-э-эй!.. Ан я-яр!..— паçăрхинчен те вăйлăрах кăшкăрма тапратрĕç хыçалта чупакансем, вĕсем патне часрах çитме тăрăшса.

Никамран малтан Петрухин чупса çитрĕ. (Вăл, малтанхи сасса илтсенех, Челомбитькăна арман патĕнче хăварса, хăй Юрпаш хĕррипе Хăмăт Энтри ушкăнĕ хыççăн чупнă иккен.) Чупса çитрĕ те, Тарас аллине çыртса лартнă бандита пĕрех тапса ывăтса, ун çине хăпарса выртрĕ.

— Сволочь!..— пăчăртарĕ вăл ăна пырĕнчен.

— Яр...— хăрăлтатрĕ бандит.

— Кам эс?—ун çине çисе ярас пек пăхса ыйтрĕ Петрухин.— Кала, кам? Халех вĕлеретĕп...

— Махорка...

Ытти халăх та чупса çитрĕ. Петрухин сиксе тăчĕ те çынсене пуçĕпе сĕлтрĕ:

— Çыхăр!

Унтан Тарас патнелле çаврăнчĕ:

— Сана суранланă-и вăл?

— Çук пулас,— терĕ Тарас.— Сисĕнмест...

Чăнах та, бандит пулисем ăна тивеймен иккен, пĕри унăн пиншак аркине шăтарнă та, тепри Варуксен лаши пĕççине шăйăрнă çеç. Револьверте урăх пуля пулман. (Кун çинчен çынсем кайран пĕлчĕç.) Арман енчен çав вăхăтра Павăл пичче ушкăнĕ çывхарса килни курăнчĕ. Çынсем хăвăрт утни, аллисемпе сулкаласа шавлăн калаçни тăрăх вĕсем савăнни палăрчĕ...

— Тытнă!

— Кусем те тытнă!..

— Илсе килеççĕ!—çĕкленнĕ кăмăлпа шавлама тапратса ячĕç Хăмăт Энтри ушкăнĕнчисем.

Ку тĕрĕс пулнă. Арман хыçĕнчен тухса, Юрпаш тăрăх анаталла тарма тапратнă тепĕр бандита курсанах, Альма Челомбитько аллинчен вĕçерĕннĕ те ăна вăтăр-хĕрĕх чалăшран ытла та тарма паман, лешĕн ĕнси çине сиксе ларса, çĕре пусса антарнă.

— Ну, пурте пирĕн алăра пулас!— терĕ Петрухин, йывăррăн сывласа тăракан Тараса чавсинчен чăмăртаса.

Тарас, хăй тытнă бандит умне пырса тăрса, ăна çисе ярас пек пăхрĕ. Тăрăхларах питлĕ, сарă çӳçлĕ, кăвак куçлă, кăшт усăнчăкрах сăмсаллă этем иккен. Чим-ха, чим... Ăçта курнă вăл ăна? Ăçта тĕл пулнă çак тискеррĕн çиçекен куçа?..

Унтан тӳрех аса илчĕ: Хĕрлĕ Çартан таврăннă чух, Хусан çывăхĕнче, çĕрле, вĕсен вакунне хурахсем пырса кĕрсе çынсене çаратма тапратсан курнă! Ун чухне Тарас ăна аллинчен çавăрса тытнăччĕ, анчах та вăл унран вĕçерĕнсе тарма ĕлкĕрчĕ. Авă кам пулнă иккен Махорка текен тискер кайăк! Каллех тĕл пулма тӳр килчĕ!

— Паллатăп эп сана, сволочь!— терĕ вăл Махоркăна.— Пĕрре вĕçерĕнтĕн манран, анчах текех хăтăлаймăн, çук!..

## 19. САВĂНĂÇ

Ялта çаплах шавларĕç...

Тарас тухса кайсанах, Варуксем патне çынсем татах пыма тытăнчĕç те татăлма та пĕлмерĕç, пĕрисем тухса кайна çĕре теприсем пычĕç, çынсем унта кинематографри

пекех улшăнса тăчĕç. Кашниех Назарпа Микиш пирки ыйтса пĕлчĕç, ахлатрĕç, хĕрхенчĕç, пуçĕсемпе сулчĕç, çак тискер ĕçе тăвакансене ылханчĕç. Кăнтăрла иртсен çывăхри ялсенчен те йышлă ушкăнсемпе пыма пуçларĕç, хыпар пур çĕре те çитме ĕлкĕрнĕ иккен. Урамра, кил хушшинче, пӳрт умĕсенче, ăçта иккĕн-виççĕн пухăннă, çавăнта таттисĕр сăмах вакланчĕ, кашни хăй мĕн пĕлнине теприсене каласа пама васкарĕ.

— Эс илтнĕ-и?.. Тарасĕ епле маттур вĕт, э? Пĕр сехет те выртмарĕ, ут утланса йĕр йĕрленĕ çĕре кайрĕ, тет... Мана Варук каларĕ.

— Лешсем мĕнле-ши тата?

— Кам çинчен çак эс?

— Назарпа Микишĕн пуçĕсене çапса çурнă, темеççĕ-и?

— Çу-ук, апла мар... Назарĕ тăна кĕчĕ, тет, ĕнтĕ, калаçать, тет, Микишĕ йывăр-ха...

— Исайне халь те тупайман-ши вара?

— Пĕлмеççĕ.

— Ăçта кайса кĕнĕ-ши вăл? Ачи çав тери аванччĕ...

— Питĕ шел!

— Милицисене кам чĕнсе килнĕ-ши?

— Микуль, теççĕ...

— Тарас шăллĕ-и? Пăх-ха эс ăна! Пиччĕшĕ пекех çивĕч пулать, эппин...

— Вĕсен амăшне те çĕмĕрсе тăкнă, темеççĕ-и?

— Хăрушах мар, тет, Павăл хăта арăмĕ каларĕ.

— Эх, мĕскĕн хĕрарăм! Ăнмасть унăн пурнăçĕ, йĕпе çине сапа тупăнсах пырать ăна валли!

— Хупнисем мĕнле-ши тата?

— Лараççĕ ĕнтĕ... Никама та çывăха ямаççĕ, тет, вĕсем патне.

— Çав кирлĕ-ха вĕсене. Çав кирлĕ!

...Исая яла илсе пырсан, ăна ăçта тата мĕнле тупни çинчен пĕлсен, çынсем тата шавлăрах калаçма тапратса ячĕç. Халĕ ĕнтĕ Варуксен пӳртĕнче çеç мар, кил хушшинче те тăварланса çитрĕ. Активист-арçынсенчен никам та çуккипе кунта халĕ Кулинепе Варук хуçа пулчĕç. Исайăн пуç вĕçĕнче амăшĕ, кăшт çеç куракан пĕчĕк карчăк, хăйĕн ĕмĕрĕ тăршшипех нушапа асапланса пурăннăскер, пĕтĕм вата чĕрипе хурланса йĕрсе ларчĕ. Чăланта Варук ниепле те лăпланса çитеймен Маринене ӳкĕтлерĕ.

— Ан тарăхтар ĕнтĕ хăвна ху, мĕн усси пур? Авă, пирĕн атте те çавăн пекехчĕ те, калаçа пуçларĕ вĕт.. Исай

та çаплах пулать акă, курăн. Часах тухтăр килмелле, паçăрах кайрĕç хулана.

— Çук ĕнтĕ, сывалас çук вăл...

— Сывалать, тетĕп сана. Асăнăн ман сăмаха!

Çав вăхăтра Варуксем патне çиçĕм пек хыпар çитсе тухрĕ:

— Икĕ бандита тытнă!

Ку хыпар кунта пухăннă халăха вăйлă тăвăл Атăл шывне хумхантарнă пекех хумхантарса, çĕклентерсе, урам тăрăх анаталла, хурал пӳрчĕ патнелле ыткăнтарчĕ...

— Тытнă!..— çак сăмах кашнин хăлхинчех чан сасси пек янраса тăчĕ. Кашниййĕн вĕсене хăйĕн куçĕпе курас, май пулсан хăйĕн аллипех тытса пăвас килчĕ... Халăхран çакăн чухлĕ мăшкăллана, айăпсăр çынсене асаплантарнă хыççăн епле тӳссе тăратăн вĕсене вырăнтах çапса пăрахмасăр? Халех, халех çакас пулать вĕсене е çакăнтах, халăх умĕнчех, персе пăрахас пулать!..

Анчах Петрухинпа Челомбитько бандитсене çурса тăкма мар — пӳрнепе тĕкме те памарĕç. Халăх вĕсене курса çеç юлчĕ: иккĕшне те шкула илсе кайса хупрĕç. Кĕçех хурал пӳртĕнче ларакансене те унта илсе кайрĕç.

— Допрос тăваççĕ, тет...

— Япалисене тупман-ха вĕт...

— Пурпĕрех туптараççĕ ĕнтĕ!— терĕç халăх хушшинче.

Халь, чăнах та, каçхине Назар кĕлетĕнчен çаратса кайнă çимĕçсене тупасси çеç юлнă. Бандитсене тытнă хыççăнах Петрухинпа Челомбитько Юрпаш çинчи армана, çимĕçсене унта пытарнă пуль тесе, пит тĕплĕн ухтарнă, анчах нимĕн те тупайман. Ăçта кайса хунă вăл çимĕçсене бандитсем? Ăçта ăсатнă? Вĕсене тупса, Энтриялль халăхне каялла тавăрса пама пулĕ-ши? Çак ыйтусем ыраттарнă çынсен пуçĕсене, çак ыйтусене епле пулсан та татса памалла пулнă Петрухинпа Челомбитькăн.

— Эс ялтисене допрос ту, а эп ку «гастролерсене» «хыпашлам». Манăн Махоркăпа куçа-куçăн калаçмаллаха...— терĕ Петрухин.

— Юрать,— килĕшрĕ Челомбитько.

Вăл яланах çăмха пек пăтранса ларнă ĕçсене тĕрĕслеме юратнă. Тем тĕрлĕ меслетпе те шыранă вăл преступлени йĕрĕсене, анчах çапах та, ĕç темле пăтраннă пулин те, вĕçне яланах шыраса тупнă. Çавăнпа та халь вăл хапăл тусах тытăнчĕ Лява Уртемĕн ушкăнне пĕрерĕн-пĕрерĕн чĕнсе кăлар-

са тĕпчеме... Петрухин, тепĕр пӳлĕме питĕрĕнсе ларса, Махоркăпа калаçу пуçласа ячĕ. Питĕ вăрăм пулчĕ вăл калаçу, пĕрре хĕрсе, тепре сӳнсе, унтан каллех хăпарса пычĕ, анчах патĕнчи милиционер икĕ хутчен чейникпе шыв илсе пырса пачĕ. Анчах вĕсен калаçуне никам та илтмерĕ...

Халăх кĕтрĕ...

Питĕ вăраххăн шурĕ вăхăт. Минутсем сехетсем пек туйăнчĕç. Çапах та шкул патĕнчен никам та кайма шутламарĕ. Çынсем, шкул тавра ушкăнăн-ушкăнăн вырнаçса, шакăл-шакăл сăмах вакласа ларчĕç. Пĕр сехет пек иртсен, тахăшĕ пырса пуриншĕн те савăнăçлă хыпар пĕлтерчĕ:

— Хăмăт Энтри ачи хуларан тухтăр илсе килнĕ... Пурне те пăхрĕ тет вăл, хăрамалли нимĕн те çук тесе каларĕ, тет...

— Исай... Исай мĕнле-ши тата?

— Исай та аптрамасть, тет, сывалать, тесе каларĕ, тет. Анран анчах кайнă, тет, вăл, унăн нимĕнех те çĕмĕрĕлмен, тет.

— Тур патăрччĕ!..

— Тен, вăл хăйне кам çапнине астăвать пуль...

— Тем-çке...

— Вăл тарам-ха, хăй пурăнтăрччĕ!

Калаçу татах ăнса кайрĕ. Вăхăт шурĕ...

Тата тепĕр сехет иртрĕ. Иккĕ иртрĕ. Виççĕ...

Халăх çаплах кĕтрĕ, шкулта çаплах допрос пычĕ, унта Челомбитькăпа Петрухин, тăшмансене хĕснĕçемĕн хĕссе, утăм хыççăн утăм каялла чакарса, преступленисен çăмхине сӳтрĕç...

...Кун каçипе ĕшеннĕ хĕвел Сăр вăрманĕсем еннелле сулăнсан, шкултан Челомбитькăпа пĕр милиционер, Тарас тата Хăмăт Энтри Микстур Михалине илсе тухрĕç. Никама ним каламасăрах, вĕсем халăх хушшинчен ик-виç çынна чĕнсе илчĕç те шкул çумĕнчи тăкăрлăкалла кĕрсе кайрĕç. Аçта кайрĕç вĕсем, мĕн тума—ăна никам та пĕлмерĕ. Каллех тĕрлĕрен шутласа калаçмалли тупăнчĕ шкул патĕнче кĕтсе ларакан çынсем валли.

— Вулăсах илсе кайрĕç-ши?

— Анчах мĕншĕн ăна çеç? Ыттисене тата?

— Килĕнче мĕн те пулин пур-ши?..

— Амăшĕ патне пуль...

— Вăл килте çук, таçта кайнă...

— Мур пĕлет! Ним те ăнланмалла мар...

Анчах та çак ыйтусем çине ответ часах тупăнчĕ. Çур

сехет ытларах çеç иртрĕ пуль — шкул тĕлне михĕсем, ещĕксем тиенĕ тулли лав пырса чаранчĕ...

— Ака вăл, пирĕн çăкăр!— кăшкăрса ячĕ лав çинче тăрса килнĕ Хăмăт Энтри.— Тупăнчĕ!..

Карр! сырса илчĕ халăх лава...

— Ăçта тупрăр?!

— Кам патĕнче?

— Аçа çаптăрах!..— хавасланса кайнă хурсем пек какăлтатма тытăнчĕ халăх, ниепле те вырăнта тăма пĕлмесĕр.

— Ак çак шуйттан нӳхрепĕнче!— пушă аврипе тĕллерĕ Хăмăт Энтри çынсем çине пăхма хăяймасăр тăракан Микстур çине.— Самăй çакă, никамран хытă сикекенни патĕнчен тиесе тухрăмăр!

Темĕн тĕрлĕ ылхану, темĕн тĕрлĕ хаяр сăмах сирпĕнчĕ Микстур еннелле... Ирĕк панă пулсан, халăх ăна çавăнтах татăкăн-татăкăн çурса тăкма пултарĕччĕ, унăн çӳç пĕрчисене те тупма пулмастчĕ пулĕ.

— У-у, çĕлен!..

— Хура юн эс, этем мар!— тесе юлчĕç çынсем, ăна шалалла илсе кĕнĕ чух хыçалтан пăхса.

Кун хыççăн татах чылай вăхăт иртрĕ...

Халăх çаплах саланманнине кура, малтанхи допроса пĕтернĕ Петрухин урама тухрĕ.

— Ну, тăвансем, куртăр-и, ĕçсем епле?— ыйтрĕ вăл, халăха пăхса çаврăнса. Унăн сăнĕ çинче йăваш кулă палăрса тăчĕ.— Халь кам айăплине пĕлтĕр-и ĕнтĕ?

— Ара, пĕлетпĕр çав ĕнтĕ...— терĕ тахăшĕ.

— Анчах эпĕ ăна малтанах пĕлнĕ! Мĕншĕн тесен кун пек тискер ĕçсене Махорка пек бандитсемпе сирĕн Лява Уртемĕ пек кулаксем çеç тума пултараççĕ.

Халăх шăп тăчĕ...

— Тĕрĕссипе, ĕç мĕнле пулнине пĕлес килет-и?

— Килет! Пĕлес килет!— харăссăн илтĕнчĕ çирĕмвăтăр сасă.

— Каласа кăтартма пултаратăп сире...

Петрухин пĕрене купи çине çӳлерех хăпарса ларчĕ те чĕлĕм чĕркесе чĕртрĕ. Ăна кура ыттисем те вырнаçа-вырнаçа ларчĕç, кĕçех чĕлĕмсем йăсăрланма тапратрĕç. Каллех шăп пулчĕ.

Вара Петрухин юлташ каласа пама пуçларĕ...

Халĕ хупса лартнă çынсем кам иккенни, вĕсем ку таранччен мĕн-мĕн туни, ĕлĕкхи Совет председателĕпе секре-

таре — Каçăр Куçмапа Иливан — вĕсене мĕнле пулашса пыни, иртнĕ каçхи çаратăва мĕнле хатĕрленни — пĕтĕмпех, пĕтĕмпех тухса тăчĕ Энтрияль çыннисен куçĕ умне. Петрухин каланăçемĕн вĕсен тĕлĕннипе куçĕсем чарăлчĕç, чĕрисенче çилĕ хăпарчĕ, унта та кунта ылханса илни илтĕнчĕ. Пит те усал, этем сăнне çухатнă хăрушă тăшмансем пурăннă иккен вĕсем хушшинче!

— Мĕншĕн пулаççĕ-ха çакăн пек япаласем?— терĕ Петрухин юлташ.— Мĕншĕн тесен Лява Уртемĕ пек этемсем пире пĕтĕм чĕререн, чунтан кураймаççĕ... Совет влаçĕ вĕсен çунаттисене çапса хуçрĕ, чухăнсен юнĕпе, тарĕпе пурăнса пуйма чарчĕ, малти вырăна ĕлĕкхи пек кулак эрешменĕсем мар, чухăнсем, хăйсен ĕçĕпе тăранса пурăнакансем, йышăнчĕç! Çавăн пирки вĕсем кашни утăмрах çапса хуçасшăн пире... Анчах та вĕсен ĕмĕрĕ иртрĕ ĕнтĕ, малашне темле чееленсен те, темле тискерленсен те, пирĕн ĕнсе çине утланса лараяс çук!..

Татах нумай каларĕ Петрухин юлташ.

Хĕрӳллĕ каларĕ...

Унăн сăмахĕсем çав тери ăшă, сывăх, ăнланмалла, чĕре патне вырнаçса лармалли сăмахсем пулчĕç. Вăл калама чарăнсан, ăна ыйтусем нумай пачĕç. Петрухин юлташ пурне те ответлерĕ. Махорка мĕнле-мĕнле тискер ĕçсем туни çинчен ыйтсан, сăмах майĕн вăл хăйĕн хуйхине те аса илчĕ.

— Мана та хытă кӳрентерчĕ вăл кашкăр... Пĕр вичтăват эрне каялла, вăрманта, вăл манăн йăмăка персе вĕлернĕ... Каласа пачĕ халь... Ним айăпсăр çамрăк çынна пĕтерчĕ!

— Эх, мăнтарăн...— хуйхăллăн сывласа илчĕç хĕрарăмсем.

— Мĕн тăвас тетĕн! Тавăрма çук... Анчах та текех асаймаççĕ ĕнтĕ, çулĕ татăлчĕ, шăпи тулчĕ вĕсен... Хамăра валли телейлĕ çĕнĕ пурнăç тума пире халь тин никам та чарма пултарас çук, чăрмантарасшăннисем пулсан, эпир вĕсене çавăнтах çапса аркатăпăр. Çыхланччăр кăна! Вăй кĕчĕ ĕнтĕ пире халь...

Итлесе ларакансене Петрухин юлташ каланисем питĕ кăмăла кайрĕç. Сисĕнмесĕрех хĕвел анчĕ...

— Ну, кайса çывăрар ĕнтĕ,—терĕ вăл юлашкинчен.—Ыран пирĕн сирĕнпе каласмалли татах пулать-ха. Юрататăп эпĕ пурнăç çинчен калаçма!

Çынсем лăпкă кăмăлсемпе килĕсене саланчĕç...

## 20. ЭПИЛОГ

Паллах ёнтĕ, вулаканăн малалла мĕн пулни çинчен пĕлесси килет...

Кĕскен кăна калаласа пама пултаратăп.

Итлĕр акă.

Тепĕр кунне бандитсене хулана ăсатнă. Пĕр-икĕ эрнерен суд тунă вĕсене. Махоркăна персе пăрахнă, ыттисене тĕрлĕ сроклăх хупса лартнă. Пакарта Çеменĕпе Автан Упрамне хытă ятланă та киле янă.

...Ваттисем астăваççĕ ёнтĕ — выçлăх хыççăн тепĕр çулхине тырă самаях лайăх пулчĕ те, ял çыннисем сывлăш çавăрса ячĕç. Çавăн хыççăн вара халăх пурнăçĕ юсаннăçемĕн юсанса пыма пуçларĕ.

Çав çулах, авăнсем çапса пĕтерсен, кĕр вăйĕпе, пирĕн тусăмăр Тарас туй турĕ, нумайранпа юратса пурăннă Варука хăй патне илсе пычĕ. Анчах вĕсен туйĕ таврари пĕтĕм халăха тĕлĕнтерчĕ: Тараспа Варук ыттисем пек чиркĕве кайса венчет тумарĕç, вĕсем кăнтăрла вулăсра хут уйăрттарчĕç те, каçхине вара «халăх çуртĕнче», хальхи пек каласан, клубра, ку тăрăхри пĕрремĕш «хĕрлĕ туй» пулса иртрĕ. Пĕтĕм вулăсри комсомолецсем пухăнчĕç унта, ытти çамрăксем те, ваттисем те курма сахал мар пычĕç. Çамрăк мăшăра сцена çинчи хĕрлĕ хăмачпа витнĕ сĕтел хушшине лартрĕç, малтан вĕсене укомран пынă кĕске çӳçлĕ хĕрарăм, унтан волком секретарĕ Петрухин юлташ, ял çыннисен ачĕпе учительница Катя саламласа хĕрӳллĕ сăмахсем каларĕç, Тараспа Варука ырлăх-сывлăх, телейлĕ пурнăç сунчĕç, парнесем нумай пачĕç, парнисем хушшинче ача ёмкĕчисем те пулчĕç (ай, кунтан кулчĕç вара!..), юлашкинчен пысăк концерт пулчĕ: «халăх çурчĕ» çумĕнчи çамрăксен хорĕ юрларĕ, хĕлсхлĕ оркестр янратрĕ, ушкăнăн-ушкăнăн та, пĕчченшерĕн те ташларĕç. Унччен малтан кунта çакăн пек чаплă концерт пĕрре те пулманччĕ-ха, ятарласа «хĕрлĕ туй» валли хатĕрленĕ пулмалла ăна...

Кунта тĕлĕнмеллисем сиксе тухрĕç: уголовнăй розыскра ĕçлекен Челомбитько артист пулма пултарать тесе никам та шутламан, анчах та вăл усси йĕсене пĕтĕркелесе сцена çине тухрĕ те украинецсен темиçе юррине çав тери чĕре патне пымалла юрласа пачĕ, сасси калама та çук çемçе те вăйлă иккен хăйĕн. Ун хыççăн Петрухин юлташ тухса «Бурлак» сăвва чăвашла питĕ ăста вуларĕ:

Эх, тăванăм! Эсĕ те
Хурлăх курна пулмалла,
Савăнăçлă юрăран
Макăратăн пулсассăн...

Чăнах та, макăртсах яратчĕ ку сăвă итлесе ларакансене: унта ĕлĕкхи вăхăтри чухăн çамрăксен телейсĕр юратăвĕ, вĕсен нимĕнпе виçме çук хурлăхĕ çинчен каланă.

Тахçанччененех кĕрлерĕ «халăх çурчĕ», ир енне тин саланчĕç çамрăксем çак «хĕрлĕ туйран».

Халăх хушшинче ун çинчен чылайччен аса илсе пурăнчĕç, нумайăшĕ — пуринчен ытла кинемейсем — питĕ тиркерĕç, сура-сурах ятлаçрĕç, антихрист туйĕ пулнă вăл, терĕç, венчет туман мăшăрăн ĕмĕрне те телей пулас çук, ачи-пăчи те пулмасть акă вĕсен, çуралсан та турă усрамасть вĕсене çĕр çинче, терĕç. Анчах тепĕр çулталăкран Варук калама та çук паттăр ывăл çуратса пачĕ. Тарас пекех хуп-хура та çивĕч куçлăскер. Вилме мар, чирлеме те шутламарĕ вăл, упа çури пекех тĕреклĕ ӳсрĕ. Ывăл хыççăн хĕр çуралчĕ, каснă-лартнă Варук...

Ыттисем çинчен мĕн калас? Паллах, пурте, хăйсем мĕн шутланине, мĕн ĕмĕтленнине туса пыма тытăнчĕç. Исай ик уйăха яхăн чирлесе пурăннă хыççăн ура çине чиперех тăчĕ те хĕл каçа ялти вулав çуртĕнче ĕçлерĕ, тепĕр кĕркунне вара вĕсем Маринепе иккĕшĕ те Шупашкара вĕренме тухса кайрĕç. Микиша çĕнĕ çул умĕн укомола суйларĕç те, ĕç нумаййипе вăл киле час-час пыраймарĕ, унтан вăл та вĕренме кайнă, терĕç.

Варук ашшĕ Назар та хăй ĕмĕтне пăрахмарĕ, «Пиçен уйĕ» пирки текех сăмах хускатрĕ, çав сăлтавпа хăйĕн кĕрӳшне, Тараса, пĕр канăç та памарĕ:

— Хăçанччен усăсăр выртттаратпăр вăл çĕре? Çылăх вĕт, тупата, çылăх! Миçе теçеттин сая каять...

Ку ĕçе тăруках тума май килмерĕ, анчах виçĕ çултан, çынсем вăй илсен, пурнăç йĕркене кĕрсе çитсен, çирĕм пилĕк хуçалăх пухăнса, çав «Пиçен уйне» куçса кайрĕç. Уйрăммăн-уйрăммăн мар, çĕрĕçне пĕрле туса пурăнмалли юлташлăх пулса кайрĕç вĕсем унта. Лайăх ĕçлерĕç, аванах пурăнчĕç, патшалăх та пулăшрĕ вĕсене. Темиçе çултан вара, пĕтĕм çĕршывĕпех колхозсем тума тытăнсан, вĕсем кӳршĕри тепĕр ялпа пĕрлешрĕç те пысăк хуçалăх туса хучĕç. Ана ертсе пыма та Тарасах шанса пачĕç...

Пытармалли çук, сахал мар тумхахсемпе чăрмавсем пулчĕç çĕнĕ пурнăç тунă чух, тăшмансем нумай хутчен

такăнтарма тăрăшрĕç. Тараса та, унăн çывăх юлташĕсене те хытă юнарĕç, пăшалпа та персе пăхрĕç, пĕррехинче колхоз тыррине çунтарса ячĕç, анчах юлашкинчен хăйсемех пĕтсе ларчĕç, вĕсен ĕмĕрĕ путланчĕ.

...Эхер те сирĕн хăçан та пулин çак тăрăхалла лекме тӳр килсен, эсир:

— Ленин колхозне епле каймалла?— тесе ыйтăр кăна.

Вара сире тăхăрвун çулхи старик те, вунă çулхи пионер та тĕп-тĕрĕс çул кăтартса ярĕ.

1938—1939,
Ленинград.



# Шанчăк

**Роман**



...Кӗт мана, эп таврӑнап,
Анчах хытӑ кӗт!

(Вӑрҫӑри сӑвӑ).

# I

Ҫӗр варринче пуйӑс хулленрех чупа пуҫларӗ, унтан буферсемпе чӑнкӑртатса илчӗ те тӑп чарӑнчӗ. Вакун каллӗ-маллӗ лӑканнипе, Риммӑн аманнӑ хулӗ, стенана ҫапӑнса, ҫӗҫӗпе тирнӗ пекех ыратса кайрӗ. Римма, хӑй те сисмесӗр, хуллен йынӑшса, сывмар аллине тепринпе ярса тытрӗ те куҫӗсене уҫрӗ.

Вакунра пӑч-тӗттӗм. Шӑп. Пурте ҫывӑраҫҫӗ ёнтӗ. Аялти сак ҫинче выртакан кӑкӑртан аманнӑ салтак йывӑррӑн сывлани ҫеҫ илтӗнет.

«Ӑҫта ҫитрӗмӗр-ши?— шухӑшларӗ Римма.— Станцишн ку е каллех уй варринче чарӑнса тӑтӑмӑр-ши?»

Вӑл хуллен ҫӗкленчӗ те, сывӑ аллипе чӳрече каррине кӑшт ҫеҫ сирсе, тулалла пӑхрӗ. Тулта аллисене хунар тытнӑ ҫынсем унталла-кунталла утни курӑнчӗ. Унтан вакун алӑкӗ чакӑртатса уҫӑлчӗ, ура сассисем илтӗнчӗҫ.

— Пушӑ вырӑн миҫе сирӗн?— ыйтрӗ темле арҫын хулӑн сасӑпа.—Миҫе ҫын йышӑнма пултаратӑр?

— Пӗр вуннӑ пур пулмалла, унтан ытла мар,— терӗ ӑна хирӗҫ хӗрарӑм. Ку проводница сасси пулчӗ, Римма уйӑрса илчӗ ӑна — ҫул ҫинче шӑнса пӑсӑлнипе, унӑн сасси ҫӗтсех ларнӑ, аран калаҫать.

— Тӗрӗсрех каласан — вунтӑваттӑ,—илтӗнчӗ ун хыҫҫӑнах тепӗр хӗрарӑм сасси. Ӑна та палларӗ Римма: ку вӑл

аманнисене пăхакан медсестрасенчен пĕри, Фая, пуске пек чăмăркка, хуп-хура сăнпитлĕ ҫивĕч пике.

— Эппин, сире халех вунă ҫын паратпăр,— терĕ арҫын. — Вырăн хатĕрлĕр. Ҫынсем халран кайса ҫитрĕҫ, сире эпир талăкĕпех кĕтетпĕр ĕнтĕ. Мĕншĕн ҫав тери час килмерĕр?

— Ик-виҫĕ хут та уй варринче чарăнса тăма тиврĕ, ҫул юсавлă марччĕ. Ку ҫула нимĕҫсем пĕрмай ҫĕмĕрнине пĕлетĕн пуль?

— Хамăр та ҫапла шутларăмăр ҫав. Юрать-ха хăвăра тапăнман. Леш эрнере пĕр санитарнăй пуйăсăн вунă вакунĕнчен тăваттăшĕ ҫеҫ юлнăччĕ. Аманнисем ҫĕр ҫын ытла пĕтнĕ...

— Хальхинче тур сыхларĕ пулас. Аманнисем мĕнлисем кунта сирĕн? Пит йывăррисем те пур-и?

— Яланхи пекех, тĕрлĕрен пур. Ура, алă, кăкăр. Ан шикленĕр, пурте транспортабельнăй*. Ытла йывăррисене эпир паян ирхине самолетсемпе ăсатрăмăр.

— Илсе килĕр, эппин...

Римма выртса килекен купере, вакун маччи айĕнче, пĕчĕкҫеҫ электричество лампочки ҫутăлчĕ. Тĕрĕссипе, ҫутăлчĕ темелле те мар — хĕрелчĕ, лампочка ăшĕнчи кашни ҫиппи палăрса тăрать. Ҫав ҫипсем пĕрре ытларах хĕрелеҫҫĕ, тепре кăшт ҫеҫ палăракан пулаҫҫĕ. Ҫапах та ҫутă параҫҫĕ пек пăртак.

Вакун ăшчикки ҫутăлнă пирки пулмалла, ҫынсем вăрана пуҫларĕҫ. Тахăшĕ, туя ҫине тайăнса, вакун вĕҫнелле кĕпсĕртетрĕ, тепри чĕлĕм тивертсе ячĕ те ҫав тери хытă ӳсĕрме тытăнчĕ, сывлăшне ниепле те ҫавăрса ярайманнипе тарăхса, турă амăшне асăнсах вăрҫса илчĕ, виҫҫĕмĕшĕ шыв ыйтрĕ.

Аманнисенчен пĕри ĕҫме ыйтнине илтсен, Римма тĕлĕпе вакунри иккĕмĕш медсестра, питĕ тĕреклĕ, арҫынларах сăнлă Клава, чейник ҫĕклесе иртрĕ. (Тахăшĕ ун пирки ĕнер: «Хĕрарăм мар вăл, Илья Муромец», терĕ; аманнисем хушшинче те шӳт тума юратакансем сахал мар пулаҫҫĕ ҫав.)

— Тавтапуҫ, йăмăкăм...— арҫын сассине илтрĕ Римма пĕртакран.—Стакан тĕпне пĕр ҫĕр грамм пек спиритус янă пулсан, татах та авантарах пулатчĕ те...

---

*Турттарса кайма юранисем.

— Питĕ ăслă-çке эсĕ, пĕлмен!— терĕ ăна хирĕç Клава.

— Спиритуспа эпĕ тата ытларах ăслăланатăп, йăмăкăм.

— Юрĕ, юрĕ, вырт лăпланса! Çĕрле халь, ик сехет те çитмен, çывăрас пулать,— пÿлчĕ салтака Клава.

Вăл каялла килнĕ чух ăна Римма чарчĕ:

— Мĕнле станци пулчĕ ку, Клава?

— Брянск, терĕç.

— Унтан мĕнле станци пулать?

— Пĕлместĕп.

— Пире халь Мускава илсе каяççĕ-ши е унтан та аяккарах?— ыйтрĕ юнашар куперен пĕри.

— Пĕлместĕп, нимĕн те пĕлместĕп.

Аманнисене хăйсене хăш çулпа, ăçта çити илсе кайни çинчен юриех каламаççĕ, атту: «Эп ку тăрăхри çын, мана кунти госпитале хăварăр, тăвансем çывăхĕнче эп хăвăртрах сывалса çын пулатăп!» тесе йăлăнакансем нумай. Ку çеç те мар: малтанхи рейссем вăхăтĕнче хăшпĕр аманнă салтаксемпе офицерсем пысăкрах хуласенче туха-туха тарни те пулнă. Сестрасемпе санитарсене уншăн питĕ хытă лекнĕ, аманнисем çухалнăшăн трибуналпах хăратнă...

Медсестрасем, вĕсемпе пĕрле проводница та, вакунри пушă саксем çине васкасах вырăнсем сарчĕç. Римма выртса пыракан купере те пĕр енчи икĕ сак — аялти те, çÿлти те— пушăччĕ. Вашават Фая вĕсем çине самантранах пит хитре вырăнсем майласа хучĕ.

— Мĕнле çынсене хураççĕ-ши ĕнтĕ кунта?— шухăшласа выртрĕ Римма, Фая мĕн тери çыпăçуллă ĕçленине кăмăллăн пăхса.— Найкăшакансем ан лекчĕрех, пĕтес пулать вара...

Пĕлет-çке вăл, икĕ çул хушшинче сахал мар курнă: пĕрисен алли-ури хуçăлсан та, чĕрĕ ÿтрен чăх çăмарти пысăкăш осколоксем туртса кăлармалла пулсан та тÿсеççĕ, шăлĕсене çыртса лартаççĕ те йĕп-йĕпе тарласа çеç выртаççĕ, теприсем вара кача пÿрни татăлсан та е пуля шăмма тивмесĕр витĕр тухса кайсан та вилесле çухăраççĕ, госпитале лексен те медперсонал тăнне кăлараççĕ, пĕр канăç памаççĕ. Ун пеккисен суранĕсем те час тÿрленмеççĕ тата!..

Кĕçех санитарсем аманнисене илсе кĕме пуçларĕç— хăшне çĕклесе, хăшне çавăтса, хул айĕнчен тытса. Аллисем, хулпуççийĕсем аманнисене çÿлти саксем çине вырнаçтарчĕç, кăкăртан, уран лекнисене аяла хучĕç. Акă, Римма

выртакан купене те икĕ çын илсе пычĕç: малтан сулахай алли аманнă сарлака питлĕ те хĕсĕкрех куçлă, лутрарах пÿллĕ çамрăк салтака, унтан — хура сухалне чылайранпа хырман, пĕр урине гипс ăшне пытарнă çÿллĕ çынна; ăна аялти сак çине выртма пулăшрĕç. Вĕсен кĕрĕкĕсемпе çĕлĕкĕсене, çăматтисене çÿле хучĕç.

— Чĕлĕм туртасчĕ,— терĕ хура сухал выртнă-выртман.— Кĕрĕк кĕсйинче пурччĕ манăн...

Салтак-санитар ун кĕрĕк кĕсйинчен табак енчĕкĕ, пĕчĕккĕн хутлатнă хаçат, шăрпăк кăларчĕ.

— Тен, сана чĕркесе парас, лейтенант юлташ?— ыйтрĕ вăл.

— Тавтапуç, папаша. Эс мана юрăхлă чĕркейместĕн пуль. Пирĕн, разведчиксен, йăли хамăр майлă,— терĕ лешĕ.

Вăл темиçе самантранах пÿрне тачкăш, пĕр çур шит тăршшĕ чикаркка чĕркерĕ.

— Куртăн-и? Задание тухса каяс умĕн эпир çакăн пеккине пĕрре туртатпăр та, кайран икшер-виçшер талăк çăвара та хыпмастпăр — май çук. Заданире чух шăрпăк сутма мар, тĕтĕм шăрши те кăларма юрамасть. Мĕншĕн тесен, эс ăçта пытанса ларнине тăшман ун шăршипе те сисме пултарать.

— Анланатăп...

— Анчах халь эсĕ заданире мар-çке, пĕчĕкреххĕн те туртма юрать,— терĕ тепĕр ватăрах санитарĕ.

— Хăнăхнă. Çакна туртатăп та, ыранччен те кирлĕ мар мана.

Купере çăра йÿçĕ тĕтĕм пĕлĕт пек мăкăрланма тытăнчĕ.

— Кай, ытла та хаяр-çке сан махорку,— тĕтĕме сирме аллипе сулкаласа илчĕ санитар. Вăл хăй туртманскерччĕ пулмалла.— Епле ĕмес килет-ши çакăн пек пакăçа!

— «Смерть немецким оккупантам!» ятлă ку табак, папаша,— терĕ ăна хирĕç лейтенант, чикарккине çине-çинех пашлаттарса.

— Оккупантсене мар, хăвăра вĕлерет-ха вăл!

— Ним те вĕлермест, кăкăра уçса ярать çеç.

Палкаса хăпаракан тĕтĕм çÿлти сак çинчи Римма сăмсине кăтăклама тытăнчĕ. Тÿсеймерĕ вара хĕр, чыхăнсах кайрĕ.

— Чимĕр-ха, каçарăр...— пуçне кăштах çÿлелле çĕклесе пăхрĕ лейтенант.— Хамăн хăлхасем мана улталамаççĕ

пулсан... ку вакун-салонра пирĕн пек солдафонсем çеç мар, фейăсем* те пур мар-и çак? Е йăнăшатăп-и эпĕ?

Çав вăхăтра Римма татах ачху турĕ.

— Ытла та тӳсме çук туртса тултартăр!— сас пачĕ вăл унтан.

— Касарăр... пĕлмен! Хам йăнăша халех тӳрлететĕп,— терĕ те ăна хирĕç лейтенант, çунакан чикарккине чĕлхипе йĕпетнĕ пӳрнисемпе пусса сӳнтерчĕ, тĕтĕмне сирсе яма аллисемпе сулкаларĕ.

Санитарсем ăна çитес çĕре лайăх çитме сунса тухса кайрĕç. Анчах тепĕр минутранах купене медсестрасемпе пĕрле санитари пуйăсĕн начальникĕ, медицина службин подполковникĕ Крутогоров — кӳпшекрех питлĕ, кăвакара пуçланă шĕвĕр сухаллă, вăтам пӳллĕ арçын — кĕрсе тăчĕ. Пуйăса çĕнĕ çынсем йышăнсан, вĕсене вăл яланах — кăнтăрла-и, çĕр варринче-и, пурĕпĕр — чи малтан хăй тĕрĕслесе тухнă-мĕн. Аманнисемпе пĕрле парса янă хутсене— «эвакокарточкăсене»** вуланă, çыннисемпе калаçнă, сестрасемпе фельдшерсене вĕсене мĕнле пăхмаллине, мĕн çитермеллине каланă. Кирлĕ чух аманнисене лăплантармалли, хавхалантармалли сăмахсем те тупăннă унăн, шӳтлесе илме те пĕлнĕ вăл.

Фая ĕнер Риммăна ун çинчен кĕскен кăна çапла каласа пачĕ. Крутогоровăн пĕтĕм çемйи — арăмĕпе икĕ хĕрачи— вăрçă пуçлансанах Винница хулинче бомба айне пулса пĕтнĕ иккен. Халĕ унăн никам та пулман, анчах хăйĕн хуйхине, хăйĕн чунĕ мĕн тери ыратнине военврач никама та палăртман. Кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ те çынсене те ĕçлеттерме пĕлнĕ.

— Астăвăр, самантлăха та ан манăр, Гитлер пуçне хăвăртрах çапса аркатасси пирĕнтен те нумай килет!— тенĕ вăл час-часах.

Пĕр-ик эрне каялла, аманнисене илсе таврăннă чух, Новозыбковра хĕвелтухăçĕнчен килекен çар эшелонĕсене фронт еннелле ирттерсе яма чылай вăхăтлăха чарăнса тăма тивсен, станци çине сасартăк темиçе «юнкерс» бомба тăкма тытăннă. Санитари пуйăсĕ станцирен кăшт аяккарах, запасла çул çинче тăнипе, ăна нимех те пулман, анчах фронт валли маршевăй батальон, тупăсем, боеприпассем илсе

---

*Юмахсенчи çав тери илемлĕ, асамлă хĕрарăм.

**Эвакокарточка — аманнисене тыла ăсатнă чух вĕсен суранĕ мĕнлерех пулни çинчен çырнă хут.

килекен эшелона темиçе бомба лекнĕ. Самантранах пушар пуçланнă, салтаксем, вакунсенчен сике-сике тухса, тĕрлĕ çĕрелле тарма пуçланă. «Юнкерссем» вĕсене пулеметсенчен сапнă, вилекенсем, аманнисем нумай пулнă...

Çавăн чух вара медицина подполковникĕ Крутогоров хăйĕн паттăрлăхĕпе пурне те тĕлĕнтернĕ. Санитари пуйăсĕнчи пĕтĕм персонала илсе тухса, тин çеç аманнă çынсене пулăшма ертсе кайнă, хăй те санитарсемпе танах ĕçленĕ. Эшелонри боеприпассем çурăлма тытăнсан, вăл çынсене вут-çулăм ăшĕнчен çăла-çăла кăларнă, хăйĕн пуйăсĕ çине тултнă. Бомбăсем çурăлма чарăнсан, аманнисене, çĕр çывăрмасăр, тем чухлĕ операци тунă...

Пуйăсри врачсем те, фельдшерсемпе сестрасем те, санитарсемпе ыттисем те Крутогорова çав тери хисеплени-не, ăна турă вырăннех хунине çак иртнĕ талăк çурăра Римма хăй те аванах курчĕ.

Халĕ военврач ури аманнă разведчик патне пырса тăчĕ те, куçлăхне çамки çинелле хăпартса, ун çине тимлĕн пăхрĕ.

— Сывлăх сунатăп, çамрăк çын...

— Тавтапуç, подполковник юлташ,— пуçĕпе сулчĕ лейтенант.

— Хăвăрăн эвакокарточкуна парăр-ха,— аллине тăсрĕ Крутогоров.

— Тархасшăн...— Лейтенант гимнастерка кĕсйинчен хуçлатнă хут кăларчĕ.

— Тэк-с, тэк-с...— Крутогоров ун çумне ларчĕ те хут çине мĕн çырнине хăвăрт кăна вуласа тухрĕ.— Хăçан амантрĕç сире?

— Шăп виçĕ кун çитрĕ. Февралĕн вуннăмĕшĕнче, ир енне, «чĕлхе» тытса хамăр траншейăсем патнелле пынă чух. Кайса çӳренинчен усси те пулмарĕ вара—фрицĕ те чунне турра пачĕ, хамăрăнне те ик çын çухатрăмăр, виççĕшĕ аманчĕç, эп хам та урасăр юлтăм.

— Куна пустуй калатăр-ха, лейтенант: урасăр юлман эсир, юлма та пултараймастăр,— хут çине тепре пăхса илчĕ Крутогоров.— Сирĕн суран пĕртте хăрушă мар, Кованый юлташ.

— Шăмă хуçăлнă вĕт-ха!

— Вара мĕн-ха уншăн? Сыпăнмасть-им вăл? Тата, хушаматăра шута илсен, эсир питĕ çирĕп çын пулма кирлĕ, тимĕртен туптаса тунăскер. Çапла-и?

— Ку вăрçăра тимĕр мар — хурçă та тӳсеймест, под-

полковник юлташ. Танксем те шăрпăк курупкисем пекех çунаççĕ...

— Хурçă тӳсмест, анчах эпир, совет çыннисем, тӳсетпĕр! Ним чухлĕ те ан пăшăрханăр, ик уйăхранах ташлакан пулатăр.

— Ташласси тарамччĕ-ха вăл, епле те пулсан фронта часрах таврăнасчĕ. Манăн фрицсене тавăрмалли нумай. Вĕсем ман аттепе аннене çакса вĕлерне, йăмăка Неметчинăна хуса кайнă...

— Тавăрмалли вăл пурин те нумай-ха. Сирĕн те, манăн та, ыттисен те. Анчах халь ун çинчен калаçмăпăр.— Крутогоров ассăн сывласа ячĕ.— Пĕтĕмĕшпе мĕнлерех туятăр хăвăра?

— Урасăр пуçне ним те ыратмасть.

— Пит аван, апла пулсан. Сире халех тутлă чей ĕçтереççĕ те — канăр. Ирхине сухал хырма ан манăр. Парикмахер пур пирĕн. Аван мар кун пек — хăй çамрăк çын, каччă пулĕ-ха, анчах сухалĕ сысна шăртĕнчен те кая мар. Кама килĕшет вăл? Астăвăр, пирĕн кунта хĕрсем те пур, тиркеме пултараççĕ...— кулам пекки турĕ Крутогоров.— Çав фактора та шута илес пулать сирĕн.

— Хĕрсем сыввисене çеç юратаççĕ, ман йышши чăлахсем кирлĕ мар вĕсене,— юри юнтарнă пек турĕ Ко-ваный.

— Ну-ну, ку сăмаха пăрахнă пултăр!— подполковник пӳрнипе юнаса илчĕ. — Юншăхлама кирлĕ мар. Тата эпĕ пессимистсене тӳсме пултараймастăп!

Вăл тăчĕ те çӳлти сак çинчи салтак çине пăхрĕ. Лешĕ пичĕпе стена еннелле çаврăнса выртнă-мĕн.

— Эй, герой, кунталла пăх-ха!— ик пӳрнипе хулпуççинчен тĕртрĕ ăна подполковник.— Çывăрса кайма та ĕлкĕртĕн-и?

Салтак хускалмарĕ, сас та памарĕ.

— Вăран-ха, тусăм, калаçса илер пăртак!

Салтак каллех чĕнмерĕ.

— Çывăрма ĕлкĕрĕн-ха, çĕр вăрăм!— Крутогоров ăна хулпуççинчен тытса ерипен лăскарĕ. Салтак тин йăшаланса илчĕ, хуллен çаврăнса выртрĕ. Ун пăтранчăк куçĕсем ним курман пек пăхаççĕ, вĕсене уçнипех çывăрать, тейĕн.

— Мĕнле пурăнатăн, каччă? Кăмăлсем мĕнлерех?— ыйтрĕ упран Крутогоров.

Салтак шарламарĕ.

— Чĕлхесĕр мар пулĕ-çке эсĕ? Пар-ха карточкуна. Ак

çакăн пек хут пур-и санăн?— Крутогоров ăна лейтенант эвакокарточкине кăтартрĕ.

Салтак йывăррăн сывласа тăрса ларчĕ те, малтанхи пекех ним чĕнмесĕр, гимнастерка кĕсйинче сывă аллипе ухтаркаланă хыççăн хытă хут татки туртса кăларчĕ.

— Тэк-с, тэк-с... Сарьялов Тимофей Ананьевич, сержант...—Подполковник хута хăвăрт вуласа тухрĕ.— Ну, пĕтĕмпех паллă... Операцие ăçта турĕç? Медсанбатра-и?

— Нимĕнле операци те туман мана,— терĕ салтак çĕтсе ларнă сасăпа.— Пӳрнесене шăтăр-шатăр татрĕç те таз çине пăрахрĕç.— Вăл бинтласа лартнă сулахай аллине хускатрĕ.— Пуç пӳрнепе шĕвĕр пӳрнене çеç хăварчĕç.

— Çавах операци ĕнтĕ вăл, тусăм.

— Сиссе те юлаймарăм эпĕ! Мана ним те каламарĕç вĕсем. Каланă пулсан — тем тусан та ламастăмччĕ татма! Тен, сыпăнатчĕç-ха пӳрнисем?

— Урăхла май килмен пуль çав, сыватма май пулнă пулсан, ун пек туман пулĕччĕç. Эс мĕн, тухтăрсене хăвăн тăшманусем тесе шутлатăн-им?—Крутогоров лăпкăн, анчах пит ĕнентеремелле каларĕ.

— Вĕсемшĕн пулсан — мĕн?— хăйĕннех çаптарчĕ аманни.—Мясниксем вĕт вĕсем! Татнă та ывăтнă, ĕçĕ те пĕтнĕ! Анчах манăн мĕнле пурăнмалла халь? Мĕн тумалла?— Салтак тăрук ĕсĕклесе илчĕ те унăн питçăмартисем тăрăх шултра куççуль тумламĕсем кусса анчĕç.— Вăл шуйттан осколокĕн аларан мар, çамкаран пырса тивмелле пулнă пĕрех хут! Ĕçĕ-пуçĕ те пĕтетчĕ... Хуйхи-суйхи те пулмастчĕ!

Салтак пуçне аманнă сулахай алли çине хучĕ те çав тери хурланса макăрма тытăнчĕ.

— Эс тăхта-ха, тусăм... Лăплан, çирĕпрех пул!— салтак хулпуççинчен лăпкарĕ подполковник.— Пĕр алăра виçĕ пӳрне çукки темех мар вăл, санăн сылтăм аллу та, урусем те йĕркеллех. Пуçу çинчен каламастăп та ĕнтĕ. Чиперех пурăнса ирттеретĕн пурнăçна, халăхшăн та усăллă çын пулатăн...

— Çук çав, пурнăç пулмасть манăн, пĕтрĕ вăл, пĕтрĕ!— пĕтĕм чĕререн кăшкăрса ячĕ салтак.— Халăхшăн та усăллă çын пулаймастăп эпĕ, халех вакунран сиксе тухса рельс урлă выртмалли çеç юлчĕ, урăх ним те мар!

— Айван ачалла ан калаç-ха эсĕ, тусăм. Салтак пек пул. Салтак та мар, сержант вĕт-ха эсĕ, командир...

— Мĕн командирĕ пултăр халь тин ман çумра!

— Эс тăхта-ха, итле аслисем мĕн каланине... Теприсем сан пек те мар аманса пĕтеççĕ, алсăр-урасăр тăрса юлаççĕ, суккăр пулаççĕ, анчах пурĕпĕр парăнмаççĕ, пурнăç çинчен ĕмĕтленеççĕ! Вĕсемпе танлаштарсан — эсĕ çĕр хут телейлĕрех-ха, тусăм! Пурнăçра эс тем те тума пултаратăн, çавăнпа ытлашши пăлханма та кирлĕ мар санăн!

Подполковник хăй те пăлханма пуçларĕ, анчах аманнин сăмахĕсене хăлхана пĕртте чикмен пекех пулчĕ, ăна хирĕç кăшкăрсах ячĕ:

— Телейлĕ!.. Калама та çук телейлĕ мар-и эпĕ! Эхх!..— Вăл татах макăрма пуçларĕ.— Пĕлместĕр çав эсир нимĕн те, нимĕн те ăнланмастăр! Ман пек телейсĕр, мĕскĕн, никама кирлĕ мар çын халь тĕнчере те çук пуль!

— Мĕншĕн? Çав сулахай алăри виç пӳрнене çухатнăшăн-и? Эс ан та шутла вĕсем çинчен...

— Ан шутла!.. Калама çăмăл сире! Анчах пĕлетĕр-и эсир, манăн пĕтĕм пурнăç, пĕтĕм телей çав виçĕ пӳрнере пулнă! Вăл пӳрнесемпе пĕрле ман пур ĕмĕт татăлчĕ. Апла пулсан, мĕн тума пурăнмалла-ха манăн?

Аманнă çын ытла та пăлханса ӳкнипе йĕркерен туха пуçланине курса, Крутогоров пĕр сестрине часрах лăплантаракан эмел илсе килме хушрĕ, хăй сержант çывăхнерех пырса тăчĕ те питĕ лăпкăн:

— Чим-ха, тусăм, ăнлансах çитейместĕп-ха сана, мĕнле вăл çыннăн виç пӳрнешĕнех пурнăçри пур ĕмĕчĕ те çухалма пултарать?— тесе ыйтрĕ.

— Пултарать кăна мар, çухалчĕ ĕнтĕ, тĕп пулчĕ, нихçан пухăнмалла мар арканса кайрĕ!— куççулĕ витĕр кăшкăрчĕ Сарьялов.

— Епле-ха апла? Ĕненместĕп, пулма пултараймасть ун пек! Эс ытлашширех каласнă пек туйăнать...

— Пĕртте ытлашши мар çав!— Сарьялов пуçне усрĕ те темиçе самант чĕнмесĕр ларчĕ. Унтан Крутогоров куçĕнчен çав тери хурлăхлăн пăхрĕ.— Пĕлетĕр-и... Эп — музыкант! Скрипач! Тĕрĕсрех каласан — скрипач пулнă çын! Халь хăвăрах шутлăр ĕнтĕ, пӳрнесĕр скрипач — мĕн вăл, кам?!

— Ах, авă мĕн иккен...— Подполковник йывăррăн сывласа ярса аяккалла пăхрĕ. Тупаймарĕ вăл Сарьялова лăплантармалли сăмахсем. Пулма та пултарайман çав вĕсем...

Медсестра Фая эмел илсе пычĕ.

— Çакна ĕçсе лăплан-ха пăртак, сержант,— терĕ

Крутогоров, сестра кашăк çине янă эмеле Сарьялова парса.— Вăл сана çывăрма та пулăшĕ.

— Эсир мана валерьянка мар, спирт парăр луччă! Спирт е пĕр стакан эрех!— терĕ Сарьялов.

— Юрамасть сана спирт тавраша, вăл тата ытларах пăлхатса ярать,— сăмах хушрĕ Фая.— Эпир сана лăплантарасшăн...

— Çук ĕнтĕ, мана халь тин никам та, нимĕн те лăплантараймĕ,— пуçне пăркаласа илчĕ Сарьялов.— Масар шăтăкĕ çеç лăплантарĕ... Çавă çеç!

— Çапах та ĕç-ха эс эмелне, усăллă пулĕ.

— Тархасшăн ара, сирĕн кăмăла тултарма пултаратăп, анчах усси... çук, пустуй сăмах вăл.

Сарьялов эмеле ĕçрĕ, унтан шыв сыпрĕ те пуçне çытар çине хучĕ.

— Лăпланса вырт ĕнтĕ халь, ним çинчен те ан шухăшла, — терĕ Крутогоров. — Эпир сан патна татах килĕпĕр-ха, халь пирĕн ыттисене кайса пăхас пулать.

— Тавтапуç ыр сăмахшăн,— мăкăртатса илчĕ те Сарьялов, куçĕсене хупрĕ.

Унпа хирĕç сак çинче выртакан Римма çак калаçăва малтан пуçласа вĕçне çитиччченех илтрĕ. Питĕ пăлхатса ячĕ ăна ку. Вăл хăй аманнине те, хăйĕн алли ыратнине те манса кайрĕ, унăн пĕтĕм шухăшĕ çав пӳрнесĕр тăрса юлнă музыкант çинче пулчĕ. Чăнах та, трагеди-çке ку, çав тери пысăк трагеди! Çук ĕнтĕ, халь тин музыкант мар вăл, пулма та пултараймасть, хăйĕн специальноçне, юратнă ĕçне ĕмĕрлĕхех çухатнă! Мĕн тери йывăр пуль ăна çавăн çинчен пĕлме!.. Лайăх музыкант пулас тесен, нумай вĕренес, питĕ нумай ĕçлес пулать... Çак сержант та сахал мар вĕреннĕ, пĕтĕм чунне парса тăрăшнă ĕнтĕ. Унсăр епле пултăр-ха? Халь вара пĕртен-пĕр осколок, вĕри тимĕр чăмăркки, пĕрре куç хупса илнĕ хушăрах çавсене пĕтĕмпех пĕтерсе хунă! Эх, вăрçă, вăрçă! Чип-чипер пурăнас çынсене мĕн чухлĕ пĕтеретĕн эсĕ, мĕн чухлĕ хурлăх кӳретĕн, пин-пин çынна ĕмĕрлĕх чăлах та телейсĕр туса хăваратăн! Тăшмана пуçĕпех çĕнтериччен, ăна çапса аркатиччен тата мĕн чухлĕ пулĕ-ха ун пекки!

Риммăн аманнă музыкантпа калаçас, ăна ăшă сăмахсем каласа йăпатас килчĕ, анчах ку шухăша çавăнтах пăрахрĕ.

«Ахаль те тӳсме çук хуйхăракан, ăшĕ хыпса тухакан çынна тата ытларах пăлхатса яма пултаратăп çеç. Кирлĕ мар...»

Çав вăхăтрах аялта выртакан лейтенант-разведчик сасси илтĕнчĕ:

— Сержант! Сержант, тетĕп... Итле-ха...

Сарьялов сас памарĕ.

— Сержант, илтместĕн-и эс?— татах чĕнчĕ Кованый.

— Вăл сывăрса кайрĕ пулмалла, лейтенант юлташ, вăратас мар ăна,— пуçне çӳлти сак çинчен аялалла усса каларĕ Римма.

— Эсир ман пирки калаçатăр-и?— сăмах хушрĕ вара Сарьялов.— Эп кама та пулин урăххине чĕнетĕр пуль, терĕм.

— Çывăрмастăн, эппин?— ыйтрĕ лейтенант.

— Çук, çывăрмастăп. Тĕрĕссипе, çывăрма та хăратăп, тӳрех куçа тем шуйттанĕ те курăнма пуçлать.

— Нервă вăл, сержант юлташ, лăпланма тăрăшас пулать сирĕн,— калаçăва хуллен хутшăнчĕ Римма.

— Ăна хам та пĕлетĕп,— терĕ Сарьялов,— анчах лăпланасси пулмасть ĕнтĕ манăн. Майĕ çук...

— Вăрçăччен ăçта ĕçленĕ эс, сержант? — Куна Кованый ыйтрĕ.

— Ĕçлеменпе пĕрех эпĕ...

— Епле апла? Мĕнле пурăннă, эппин?

— Вĕреннĕ эпĕ. Шăп вăрçă пуçланас умĕн Хусанти консерваторинчен вĕренсе тухрăм та киле, Шупашкара таврăнтăм...

— Чимĕр-ха, чимĕр!—тӳрех пӳлчĕ ăна Римма.—Эсир... эсир Шупашкарсем, эппин?

— Шупашкарсем. Эсир те унтан-и мĕн? — Сержант хăвăрт кăна тăрса ларчĕ.

— Унтан-çке!

— Эппин, земляксем эсир? Э-эй, ку питĕ аван!—кăшт çеç кăшкăрса ямарĕ Кованый.— Телейлĕ эсир! А эпĕ вăт виçĕ çула яхăн тĕрлĕ фронтсем тăрăх çапкаланса çӳретĕп пулин те, хамăр енчи пĕр чуна та тĕл пулаймарăм-ха. Телей, тем тесен те телей пулчĕ ку сирĕн! Паллă тăвас пулать кун пек савăнăçлă тĕлпулăва!

— Мана халь ним те савăнтармасть çав,—тăрук пуçне усрĕ Сарьялов.— Ытти чух кун пекки пулнă пулсан...

## 2

Калаçу çакăнпа пĕтрĕ, анчах Кованăйăн халь Сарьялов çинчен пĕтĕмпех пĕлес килчĕ курăнать.

— Вĕренсе таврăнсан, пурнăç мĕнле çулпа кайрĕ вара санăн?— ыйтрĕ вăл.

— Мана тӳрех хамăр филармонин симфониллĕ оркестрне илчĕç,— тăсарах каларĕ сержант.— Пĕрремĕш скрипка. Оклад лайăх. Çав хушăрах радиокомитетра музыка редакторĕ турĕç. Еç мăй таран. Кашни кун репетици, çĕнĕ программа хатĕрлетпĕр. Оркестрта каланисĕр пусне эп солист тата. Манăн хамăн номерсене хатĕрлемелле. Радиора та ĕç çителĕклĕ. Анчах пĕр концертра та пулаймарăм эпĕ, пĕр передача та тăваймарăм...

— Вăрçă пусланчĕ пуль ĕнтĕ,— терĕ Кованый.

— Вăрçă. Виç кунтанах — шире шаг! Пĕр хулара эрне пек усрасан, пире фронта илсе кайрĕç. Смоленск патне çитеспе нимĕç пикировщикĕсем пирĕн эшелонран турпас турĕç. Халăх пит нумай пĕтрĕ. Мана ураран амантрĕç. Хăрушах марччĕ суранĕ, бомба ванчăкĕ пĕççе çурса кайнăччĕ, шăмма тивмесĕр. Госпитальре Муромра выртрăм. Пĕр уйăх çурă. Унтан запасри бригадăна ячĕç. Музыкантран штабри писарь пулса тăтăм. Анчах нумайлăха мар. Хусан чугун çулĕ çинчи пĕр станцире — юханшывран инçе те мар — резерври дивизи тăнă та, ноябрь пуçламăшĕнче çавăнта лекрĕм. Рядовой стрелок. Кунĕн-çĕрĕн вĕрентрĕç пире — тактикăллă занятисем, опытлă тревогăсем, вăтăр-хĕрĕх километрлă походсем. Окопсем, траншейăсем чаватпăр, пăшал-пулеметран пеме вĕренетпĕр. Ялан пĕр сăмах илтетпĕр: тяжело в ученьи, легко в бою...

— Суворов сăмахĕ,— терĕ Кованый.

— Пĕлетĕп... Нимĕçсем Мускав патнех çитсе пынă кунсенче пирĕн патра Климент Ефремович Ворошилов пулчĕ,— эпир çапăçăва мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслерĕ. Виçĕ талăк лăш курмарăмăр! Музыка çинчен пуçĕпех мантăм ĕнтĕ. Хăш чух радиопа илтсен вара чун хурланса килетчĕ: мĕн тума вунă çул вĕреннĕ-ши эпĕ çав музыкăна? Кама кирлĕ пулнă вăл? Мĕн тума асаплантарнă эп хама?.. Унтан сасартăк манăн пурнăç улшăнчĕ. Пĕрре, ирхи поверкăра, рота политрукĕ строй умне тухрĕ те:

— Сирĕн хушăра, ăнсăртран, музыкантсем çук-и?— тесе ыйтрĕ.

— Пур,— терĕм эпĕ; урăх никам та чĕнмерĕ.

— Мĕн калама пĕлетĕн?

— Сĕрме купăс.

— Ун пекки кирлĕ мар,— ал сулчĕ политрук.

— Мĕн пекки кирлĕ вара сире?

— Духовой музыкантсем. Трубапа вӗрсе калакансем.

— Ана та пултаратӑп. Духовой оркестрта пулнӑ эпӗ. (Чӑнах та, Шупашкарти музыка техникумӗнче вӗреннӗ чух шкулти оркестрта флейта каланӑччӗ эпӗ.)

— Ӑҫта вӗреннӗ эс музыкӑна?

— Консерватори пӗтернӗ.

— Консерватори?!— Политрук ман ҫине шанмасӑртарах пӑхса илчӗ: начар тумланнӑччӗ эпӗ — виҫҫӗмӗш срокри брюкипе гимнастерка, тем пысӑкӑш кив пушмак, сӳсленсе пӗтнӗ обмотка...

— Тух, эппин, стройран!— терӗ вӑл ҫапах та.

Вӑл мана политотдела илсе кайрӗ. Дивизие тин ҫеҫ капельмейстер* ярса панӑ-мӗн те, вӑл васкасах оркестр йӗркеленӗ, анчах квалификациллӗ музыкантсем пулман. Эп вара музыка аслӑ шкулӗнчен вӗренсе тухнине пӗлсен, вӑл питӗ хӗпӗртерӗ.

— Оркестр тӑватпӑрах, хутла ытларах пӗлекен, музыкӑна ӑнланакан ҫамрӑксене тупса вӗрентетпӗр,—терӗ капельмейстер. Ҫынни питӗ лайӑхскерччӗ вӑл, вӑрҫӑччен Минск филармонийӗнче ӗҫленӗ, Калинович хушаматлӑ белорус.

Пӗр виҫӗ эрне хушшинче пирӗн оркестр пула та пуҫларӗ. Хамӑр та кунӗ-кунӗпе, лӑш курмасӑр ӗҫлеттӗмӗр ӗнтӗ. Каҫчен ҫынсем аран сывлакан пулса ҫитетчӗҫ. Политотдел начальникӗ тӗрӗслесех тӑратчӗ пире.

— Кӗҫех фронта каятпӑр, ҫапӑҫава музыкӑпа кӗмелле пултӑр!

— Вилсен те музыкӑпа вилмелле пултӑр-и?— шӳтлетчӗ ӑна хирӗҫ капельмейстер.

Хальхи пекех астӑватӑп — декабрӗн виҫҫӗмӗшӗнче поселокри клубра салтаксем валли пысӑк вечер пулчӗ. Малтан фронтри лару-тӑру ҫинчен доклад, унтан художествӑллӑ пултарулӑх. Ҫав каҫхине эпир хамӑрӑн оркестрпа пӗрремӗш хут халӑх умне тухрӑмӑр. Репертуар пуян марччӗ ӗнтӗ пирӗн — «Интернационал», «Смело, товарищи», «Провожание», «Три танкиста» тата «Священная война»... Юлашки юррине эпир клуб ҫумӗнчи хорпа пӗрле янратрӑмӑр. Пурне те питӗ килӗшрӗ курӑнать вал. Политотдел начальникӗ ӑна икӗ хут та калаттарчӗ... Концерт пӗтсен вара сцена ҫине тухсах тав турӗ вал пире.

— Маттур ачасем! Кун пек оркестрпа эпир никам

---

*Духовой оркестра ертсе пыракане, дирижер.

умĕнче те намас курас çук! Соединенири мĕнпур боецсемпе командирсен ячĕпе тавтапуç!

Унтан кашнинех ал парса тухрĕ.

Эпир нимĕн те пĕлмен: ку вăл пирĕн юлашки каç, уйрăлу касĕ пулнă. Ирхине дивизи эшелонсем çине тиенчĕ. Пире урăх йышши концертсем кĕтнĕ, урăх музыка...

Тепĕр талăкран эпир Мускав çывăхĕнчи Сходня станцинче чарăнтăмăр. Эшелонсене пушатса та çитерейменччĕ — темиçе «юнкерс» пырса тапăнчĕç. Вĕсем пысăк сиенех тăваймарĕç, сасартăк хамăрăн истребительсем çиçĕм пек вирхĕнсе çитрĕç те ик «юнкерсне» çапса антарчĕç, ыттисем, бомбисене унта-кунта ывăткаласа, каялла тарчĕç.

Анчах çав станцире маншăн питĕ пысăк хуйхă пулчĕ: «юнкерссем» ашкăнма тытăнсан, дивизи клубĕн автофургонне çăлса хăварас тесе, пирĕн капельмейстер Калинович кабинăна кĕрсе ларнă та, ăна хăех аяккалла, хӳтĕрех вырăна илсе кайма пикеннĕ. Анчах çĕр метр та каяйман, юнашарах бомба ӳкнĕ те машинран нимĕн те юлман. Калинович та пĕтнĕ вара, пирĕн оркестр та...

Мускав çывăхĕнче ун чух мĕн тери йывăр çапăçусем пулнине эсир хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ. Музыка çинчен шухăшлама вăхăт пулмарĕ унта. Анчах начподив * оркестрантсене салатса ямарĕ, пире пĕр çĕре пухрĕ те — ан хуйхăрăр, пурăна киле оркестр пулатех пирĕн, халлĕхе медсанбат çумĕнче пулатăр, сестрасемпе санитарсене пулăшатăр, ĕç çителĕклĕ унта, терĕ.

Еçĕ чăнах та ытлашшипех пулчĕ. Çапăçу кунĕн-çĕрĕн кĕрлет, кашни ялшăн, тĕрĕссипе — кашни метр çĕршĕн юн тăкăнать, нимĕçсене ăçтан та пулин çапса кăларсан, вĕсем, çавна каялла тавăрасшăн, кунне темиçе контратака тăваççĕ. Медсанбат аманнисене йышăнма та, вĕсен суранĕсене тасатса, сиплесе, çыхса, тыла ăсатма та ĕлкĕреймест. Чылайăшĕ çапăçу хирĕнчен кунта илсе çитерсен те вилеççĕ — вĕсене пытарас пулать...

Хытă ĕçлерĕмĕр, каламалли те çук. Малти линире санитарсем çитменнипе, пире унта та яма пуçларĕç. Чăн та, çапăçу вăхăтĕнчех кайман эпир, çапăçу хыççăн, çĕрле, вилнисене пуçтарса тухма каяттăмăр. Малтанах питĕ тискер пек туйăнатчĕ вăл ĕç: йĕлтĕрсенчен тунă çунашка— волокуша — çине виле хыççăн виле, виле хыççăн виле хуратăн та тылалла туртса килетĕн... Пĕтĕм ăш пăтранатчĕ!

* Дивизи политотделĕн начальникĕ.

Анчах этем тени теме те хăнăхать — эпир те хăнăхрăмăр. Вилесене турттарса тухса, пĕр çĕре шаршан пек купалатăн та, çавăнтах ларса чĕлĕм туртатăн, хырăм выçнă пулсан— кĕсъерен сухари кăларса кăшлатăн. Ним те мар!

Тепĕр чух эпир пуçтаракан вилесем хушшинче чĕррисем те тупăнкалатчĕç. Амансан тăнсăр пулса выртнă та вăл, санитарсем ăна вилнĕ, тесе шутланă — пулăшу та паман, тыла та илсе тухман. Вилнĕ — вилнĕ, вилесене пуçтарма урăххисем пур, санитарăн чĕррисене çăлмалла. Выртнă май вара лешĕ юн юхтарса, халран кайса çитнĕ, тăна кĕрсен те хускалайман. Çавăн пек чĕррисем тупăнсан питĕ савăнаттăмăр, вĕсене часрах çывăхри БПМа е ППМа* çитерме тăрăшаттăмăрччĕ. Ик-виç çынна çăлса хăварни те теме тăрать!

Хăш чух вара питĕ тĕлĕнмелли, пачах кĕтмен япаласем те пулатчĕç. Пĕррехинче эпир ытти вилесем хушшинче санитар виллине тупрăмăр. Хĕрлĕ хĕреслĕ сумкăпа, пăшал тавраш çук. Паллах, çапăçу вăхăтĕнче аманнисене пулăшса çӳренĕ вăл, анчах хăй те вилсе выртнă — йывăр осколок унăн çур пуç шăммине катса илнĕ. Пĕтĕм пуç мими сирпĕнсе тухнă. Эпир ăна тул çутăласпа тупса тыла, вилнисене пытарма хатĕрленĕ пысăк шăтăк патне илсе тухрăмăр. Питĕ хĕрхентĕмĕр ĕнтĕ: сахал мар боецсемпе командирсен пурнăçне çăлса хăварнă пуль, мăнтарăн, хăйĕн пурнăçне вара упрайман... Анчах тепĕр темиçе минутранах калама çук йĕрĕнтĕмĕр эпир унтан, пĕтĕм чĕререн курайми пултăмăр ăна! Мĕншĕн, тетĕр-и? Итлĕр акă... Вилнисене пытарас умĕн вĕсем çумĕнче мĕн пуррине пĕтĕмпех тĕрĕслесе кăларса илмелле-çке: документсем, орденсемпе медальсем, çырусем, фотографисем... Хăшĕсен дневник пеккисем те тĕл пулаççĕ. Çак санитар кĕсйисене те тĕрĕслерĕмĕр. Вара... тĕлĕнсе хытсах кайрăмăр: гимнастеркин шал енне вăл вунçичĕ пин тенкĕ укçа, кĕсъере чиксе çӳремелли тăватă сехет çĕлесе хунă, шуйттан! Ал тунинче тата тепĕр сехет пур.

— Ах, сволочь!— вăрçса илмесĕр тӳсеймерĕ лейтенант-разведчик Кованый çакна илтсен.

— Аманнисене пулăшма, вĕсене çăлма çӳремен вăл çапăçу хирĕнче, хăй валли «трофейсем» шыранă, сатана! Вилнисен шучĕпе пуйма ĕмĕтленнĕ, паразит!— терĕ Сарьялов.

---

*Батальон, полк медпункчĕсем.

— Сирен ун виллине те ытти салтаксемпе пӗрле пытармалла пулман, кайса пӑрахмалла пулнӑ пӗр-пӗр ҫырмана, туллаччӑр тискер кайӑксем!

— Мӗн тӑвас тетӗн, пӗрлех хума тиврӗ. Урӑх май пулман пирӗн.

— Анчах килне, тӑванӗсем патне «Тӑван ҫӗршыва хӳтӗлесе, паттӑрсен вилӗмӗпе вилчӗ», тесе ҫырчӗҫ пулӗ-ха, мать честная, пенси те пачӗҫ пуль ҫемйине!— ҫаплах лӑпланаймарӗ Кованый.

— Ҫук пуль. Кайран медсанбатра кун пирки ятарласа пуху ирттерчӗҫ. Начсандив* питӗ хытӑ питлерӗ вӑл санитара. Пӗтӗм медработниксен ячӗпе ылханчӗ ӑна. Кам та пулин тата ҫавӑн пек мародерла хӑтланнине пӗлсен, тӳрех персе пӑрахатпӑр, терӗ.

— Тӗрӗс! Пӑх-ха эс ӑна: ҫынсем юлашки сывлӑшӗ тухми пуличчен ҫапӑҫса вилеҫҫӗ, вӑл пуять! Ун пек путсӗр этем Тӑван ҫӗршыва та пӗрре куҫ хупса илмесӗр сутма пултарать, тӑшмана парӑнать те хамӑр ҫынсене пӗтерме тытӑнать... Ӑҫтан кӑна пулаҫҫӗ ҫавӑн пек ҫӗлен-калтасем!..

Вӗсем ҫапла калаҫнӑ хушӑра пуйӑс майӗпен тапранса кайрӗ. Вакун кӑштах кисренсе илчӗ. Медсестра Фая лейтенантпа сержанта вӗри чейпе шур сухари пырса пачӗ. Ҫӳлти сак ҫинчи Римма та сывӑрманнине асӑрхаса, ӑна та сӗнчӗ.

— Ҫук, манӑн ӗҫес те, ҫиес те килмест,— пуҫне пӑркаларӗ Римма.

— Пирӗнпе пӗрле, компанишӗн ӗҫӗр ӗнтӗ пӗр стакан,— терӗ Кованый, ҫӳлелле пӑхса.— Паллашмалӑх... Пӗр сехет ытла пӗр купере ларатпӑр, анчах пӗр-пӗрне пӗлместпӗр...

— Ӗҫ, ӗҫ, Римма, ме, тыт!—Фая ӑна ирӗксӗрленӗ пекех тимӗр подстаканник ҫине лартнӑ чей стаканӗ тыттарчӗ.— Ак сана сухари, ҫи тавай!

— Тавтапуҫ, вӑл кирлӗ мар,—каллех пуҫне пӑркаларӗ Римма.

— Сӑмахран каласан, эп ӗнтӗ ҫирӗм виҫӗ ҫул Андрей Кованый. Эсир мӗн ятлӑ... секрет мар пулсан?— ыйтрӗ лейтенант, кӑкри ҫине вырнаҫтарнӑ стаканне кашӑкпа пӑтратса.

— Мӗн секречӗ пултӑр... Римма Сурская теҫҫӗ мана.

— Пит хитре ят. Хушамачӗ те пит янравлӑ: Сурская. Кун пек хушаматпа артистка ҫеҫ пулмалла.

---

*Дивизири санитари службин начальнике.

— Анчах эп артистка мар ҫав, пулса ҫитеймен педагог кăна.

— Епле... пулса ҫитеймен?

— Фронта эпĕ пединститутăн иккĕмĕш курсĕнчен кайрăм.

— Хăвăр ирĕкпе пуль ĕнтĕ?

— Хам ирĕкпе...

Пĕр хушă нихăшĕ те чĕнмерĕҫ. Стаканĕсем ҫине вĕре-вĕре чей ĕҫрĕҫ.

— Сурская... Сурская... Таҫта Пенза патĕнче ҫав ятлă юханшыв пурччĕ пулас?— ыйтрĕ унтан лейтенант.

— Пензăран вăл пирĕн пата анать. Унтан — Атăла,— терĕ Римма.

— Отпуска килетĕр-и?

— Вăл манран килмест. Госпиталь хыҫҫăн мĕн калĕҫ.

— Эсир те аманнă-им?

— Санитарнăй поездпа сыввисене илсе ҫӳремеҫҫĕ пуль?

— Ку тĕрĕс ĕнтĕ... Аҫтан тивнĕ сире?

— Сулахай хул ҫĕмрĕлчĕ.

— Пуля-и?

— Осколок. «Фердинандран».

— Эп мина нушине куратăп...

— Мана та ҫавах пĕтерчĕ,—сас пачĕ музыкант ҫӳлтен.

— Э, ху мĕнле аманнине каласа памарăн-ҫке-ха эсĕ! Мĕнле пулчĕ вăл санăн?— ыйтрĕ Кованый.

— Ҫапăҫу хирĕнче вилнисене пуҫтарнă чухнех,— терĕ Сарьялов.— Пĕр юлташпа иксĕмĕр волокуша туртса пыраттăмăр. Каҫĕ ҫутăччĕ, уйăх тулнă вăхăт. Фрицсем асăрханă пулмалла пире. Тытăнчĕҫ вара минăсем ывăтма. Эпир юр ăшне, волокуша хӳттине выртрăмăр... Йывăр килсен, вилнĕ ҫын ҫумне те выртатăн вĕт! Пĕр хушă фрицсем пеме пăрахрĕҫ, пире тирпейлерĕмĕр, терĕҫ пулмалла. Эпир сиксе тăтăмăр та волокушăна малалла сĕтĕрме тытăнтăмăр. Мĕн вăй ҫитнĕ таран чупатпăр, инҫетре те мар — вăрман. Унччен те пулмарĕ — ман енне мина пырса ӳкрĕ. Самантранах вара алла темскер питĕ хытă пырса ҫапрĕ. Сулахай хул кăкланнă пекех туйăнчĕ. Ӳкрĕм. Ăнлантăм мĕн пулнине. Юлташ алла ҫыхса мăйран ҫакса ячĕ. Вăрмана мĕнле ҫитсе ӳкнине астумастăп... Унтан — ППМ, медсанбат... Хам курман эпĕ, пăхма та пултарайман ал ҫине, тухтăрсем каланă тăрăх, ман пӳрнесем тир ҫинче ҫеҫ ҫакăнса тănă...

— Мĕнле-ха вара... Сире пĕрмаях санитар вырăнĕнче

ĕçлеттерчĕç-им? Оркестр пулаймарĕ-им сирĕн урăх?—кăмăлсăр пулса ыйтрĕ лейтенант.

— Пулнă. Фрицсене Мускав патĕнчен хуса ярсанах, хĕрĕх иккĕмĕш çулхи çуркуннех çĕнĕ инструментсем туянтарчĕç пире. Вăхăтлăха капельмейстер вырăнĕнче хам ĕçлерĕм, унтан специалист ярса пачĕç. Репертуар пуянлансах пычĕ пирĕн. Эп хам валли сĕрме купăс тупрăм та, концертсенче сольнăй номерсемпе тухаттăм. Çулла, дивизи çулталăк тултарнине уявланă чух, пирĕн пата арми штабĕнчен аслă офицерсем — генералсем таранах — пычĕç те, концертра эпĕ Чайковский, Бах, Глиэр произведенийĕсене каларăм. Тĕлĕнчĕç пулмалла обмоткăллă салтакран. Концерт хыççăн мана командарм* чĕнтерсе ыйтса пĕлчĕ: кам эпĕ, ăçтан, мĕн... Ырларĕ. Тепĕр куннех штадива** чĕнчĕç, мана сержант званийĕ пани çинчен пĕлтерчĕç, çĕнĕ обмундировани илме хут çырса пачĕç.

— Командарма килĕшнĕ ĕнтĕ эсĕ, çавăнпа пулнă ку,— терĕ Кованый.— Начальство тем тума та пултарать. Анчах епле-ха сана çавăн хыççăн та вилесем пуçтарма янă?

— Ну, вăл ĕнтĕ йĕрки çавăн пек, унта ним тума та çук,— ассăн сывласа илчĕ Сарьялов.— Çапăçусем вăхăтĕнче, уйрăмах наступлени пуçлансан, никамшăн та льгота пулмасть. Музвзвод ун чухне похороннăй команда пулса тăрать...

Купене медсестра Фая таврăнчĕ.

— Чей тата кирлĕ мар-и?

— Çывăрас умĕн çитет пуль, йăмăкăм, тавтапуç, тек ан чăрман,— хуравларĕ лейтенант пуриншĕн те.

— Эппин, ыр каç пултăр. Çывăрăр. Эп çуттине сÿнтеретĕп, ан кансĕрлетĕр сире...

## 3

Лейтенантпа сержант часах çывăрса кайрĕç, Римма ăна вĕсем пĕр майлăн, вăрăммăн сывлама тытăннинченех ăнланчĕ, анчах хăй вăл ниепле те çывăраймарĕ. Унччен малтан, Брянска çитиччен, çывăрнăшăн та мар, халь çак икĕ каччăпа калаçни пăлхатса янипе пулчĕ ку. Вăл тăтăшах çак

---

*Арми командующийĕ.

**Дивизи штабĕ.

Сарьялов сержант, харушла аманна музыкант, ҫинчен шухӑшларӗ...

Мӗнле пулӗ-ши ӗнтӗ унӑн малашнехи шӑпи? Музыкант... скрипач... Сӗрме купӑса тек алла та тытаймасть... Мӗн тӑвӗ вӑл, мӗнле пурӑнӗ? Музыкӑна вӗрентекен учитель те пулма пултараймасть вӗт, мӗншӗн тесен учителӗн хӑйӗн вӗренекенӗсене инструментпа — хуть пианино пултӑр вӑл, хуть сӗрме купӑс е мӗн те пулин урӑххи—мӗнле каламаллине кӑтартмалла. Сарьяловӑн ун пек тума та май ҫук. Кӗскен каласан, музыка тӗнчи хупӑннӑ уншӑн. Паллах, аслӑ шкулта вӗренсе тухнӑ ҫын, вӑл канцеляри таврашӗнче ӗҫлеме пултарать — сылтӑм алли тӗрӗс-тӗкелех унӑн, анчах ачаранпа музыкӑна юратса пурӑннӑ, ҫав ӗҫе вунӑ ҫул таран вӗреннӗ, юлашкинчен чӑн-чӑн музыкант пулса тӑнӑ ҫынна ҫырлахтарма пултарать-и-ха канцеляринче «кӗрекен-тухакан» хутсемпе лӑпӑртатса ларни? Чӑн та, кӑмӑлӗ пулсан, вӑл урӑх йышши институтран вӗренсе тухма пултарать, анчах ун валли каллех тӑват-пилӗк ҫул кирлӗ-ҫке!

Тепӗр енчен тата... Ҫынни авланмах ӗлкӗреймен пулас-ха, анчах ҫавӑн пек кӑмӑллӑ, хитре, ӑслӑ, пысӑк специалист пулса тӑнӑ каччӑн савнӑ хӗрӗ пурах ӗнтӗ. Тен, ӑна куҫ пек кӗтет вӑл... Ку чӑлах пулса юлнине, вӑл текех музыкант пулма пултарайманнине пӗлсен, вӗсем хушшинче ӗҫсем йӗркеллех пулӗҫ-ши-ха? Хӗрӗ ӑна чӑн-чӑнах юратать пулсан, кӗске ӑслӑ, ҫӑмӑл телей шыраканни мар пулсан— каччи аманни ҫине пӑхмасть ӗнтӗ. Пӑрахмасть ӑна. Вӗсем, пӗрлешсе, пит телейлӗ пурӑнма пултараҫҫӗ. Темле-ҫке ҫав... Вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа сахал мар ҫемье арканнӑ, ун ҫинчен Римма нумай илтнӗ ӗнтӗ. Пӗр йышши хӗрарӑмсем хӑйсен упӑшкисем вӑрҫӑра темтепӗр тӳснӗ вӑхӑтрах «броньлӑ» арҫынсемпе иртӗннӗ, Риммӑсен медсанбачӗн командирне те — ҫав тери лайӑх ҫынна! — арӑмӗ пӑрахса тылри пӗр полковника качча кайнӑ, терӗҫ. Теприсем унтан та тискертерех хӑтланаҫҫӗ имӗш. Аманса пӗтнӗ, чӑлаха юлнӑ упӑшкисем патне пӗртен-пӗр ҫыру яраҫҫӗ: «Пирӗн пӗр-пӗрине манас пулать...» Римма юлташӗ, Мускав хӗрӗ Оля Маркова, нумай пулмасть отпуска кайса килчӗ те ҫав тери тарӑхмалла, тӳсме ҫук ирсӗр истори каласа пачӗ. Унӑн тӑван пиччӗшӗ, инженер, саперсен уйрӑм батальонӗн командирӗ, фронтра пӗр урипе аллине, хӑрах куҫне ҫухатнӑ. Госпитале Мускавах лекнӗ. Арӑмӗ ҫавӑн патне пӗрререн пӗрре пынӑ та урӑх куҫа та курӑнман...

Мĕн тери ылханчĕç вăл хĕрарăма Риммăпа унăн хĕртусĕсем!

— Персе пăрахмалла ун пеккисене!

— Çук, персе пăрахни сахал, вĕсене ерипен, асаплантарса вĕлерес пулать!..

Саккунлă арăмсем çавăн пек хăтланаççĕ пулсан, хĕрсем çинчен мĕн калаçмалли пур? Аманнă çынпа нихăш енчен те çыхăнман-ха вĕсем. Ирĕклĕ. Юрату пулнă пулсан та... вăл теприсен çăмăллăнах, ирхи тĕтре пекех сирĕлет... Пăрăннă та кайнă, темиçе кунтан пĕтĕмпех маннă...

Риммăна фронтра час-часах кула-кула юрлакан пародилле юрă аса килчĕ:

На позицию девушка
Провожала бойца,
Темной ночью простилася
На ступеньках крыльца...

Ку — Исаковский поэт çырнă «Огонек» ятлă çав тери лайăх, чĕренех кĕрсе ларакан сăвă пуçламăшĕ. Ăна фронтра пурте, салтакран пуçласа генералсем таранах юратса юрлатчĕç. Анчах малаллине вара тахăшĕ йăлт урăхла, тăрăхламалла çырса кайнă:

Не прошло и полмесяца.
Парень пишет письмо:
«Оторвало мне ноженьку
И разбило лицо. .

Если любишь по-прежнему
И горит огонек—
Приезжай, забери меня,
Мой любимый дружок...»

Не прошло и полмесяца,
Получает ответ:
«Не пиши мне, пожалуйста,
И скорей позабудь,
Ковыляй потихонечку —
Проживешь как-нибудь...»

Ирсĕр юрă ĕнтĕ. Çапах та унта тĕрĕсси те пур çав. Тен, ăна çыраканни хăй тӳссе ирттернĕ кун пеккине, тарăхнипе çырнă вăл?

Римма пĕлет, пур хĕрарăмсем те ун пек çăмăл ăслă мар. Çĕр хĕрарăмран тăхăрвун тăххăрăшĕ хăйсен чысне çирĕп тытса усраççĕ, упăшкисене, савнă каччисене кĕтеççĕ,

çĕрĕн-кунĕн, ырми-канми ĕçлесе, вĕсене тăшмана часрах çĕнтерме пулăшаççĕ. Вĕсем хăйсен вăрçăри упăшкисемпе каччисене никампа та улăштарас çук. Нихçан та, тем пулсан та. Сăмахран, Римма хăйĕн юратнă Сергейне вăрçăра тем тĕрлĕ амантса пĕтерне пулсан та пăрахман пулĕччĕ. Анчах Сергей, вăрçă умĕн пĕр çулталăк хушши Брест крепоçĕнче тăнăскер, вăрçăн виççĕмĕш кунĕнчех пĕтнĕ. Ун çинчен унпа пĕрле пулнă, анчах крепоçран çăлăнса тухма пултарнă юлташĕ çырса пĕлтерчĕ. Çавăн хыççăн институтра вĕренме пăрахсах медсестрасен курсне кайса кĕчĕ те ĕнтĕ Римма. Виç уйăх çеç вĕрентрĕç вĕсене, унтан вăл салтак шинельне тăхăнчĕ...

Малтан Римма пĕр хушă запасри полкăн санчаçĕнче пулчĕ. Пĕртте вăрçă вăхăтĕнчи пек марччĕ унта. Пĕри тактикăллă занятире аллине тăм илтерет, тепри — хăлхине, тахăшĕ тата «полоса препятствий» тăрăх чупнă чух ӳксе урине мăкăлтать, вĕсене сиплемелле. Кам пĕлет, тен, юри те тăваççĕ-и? Пурччĕ симулянтсем. Пĕрин хăлхи илтмест имĕш, теприн чăхкуç пулнă... Йăлăхтарчĕ ку. Анчах пуринчен ытла ăна санчасть начальникĕн заместителĕ, хĕрĕхе çитнĕ алиментщик, хăйĕн «юратăвĕпе» тарăхтарса çитерчĕ. Римма ăна пĕррехинче çутăлтарса ярсан вара хĕсĕрлемех тытăнчĕ, ун çинчен элек сарма тапратрĕ. Хăй хĕрарăмсемпе ашкăнма санчаçрен пĕр литр спирт илсе кайнă та, айăпне Римма çине яма пикеннĕ: вăл «хăйĕн кăтра çӳçлĕ лейтенанчĕсем» валли вăрланă имĕш. Суйи тухсан, ăна маршевăй ротăпа пĕрле фронта ямалла турĕç, анчах ыран тухса каяс тенĕ чух, каçхине, таçта ĕçсе лартнă та вăл, чугун çул линийĕ урлă каçма тăрсан станцири маневровăй паравус айне пулнă.

Маршевăй ротăпа ун вырăнне Римма кайрĕ. Кун çинчен вăл тахçанах ĕмĕтленсе пурăнатчĕ, ик-виç хутчен командованине рапорт та çырса панăччĕ.

— Эс кунта кирлĕ-ха, хĕрĕм, полкра чăвашсем нумай, пополнени те Чăвашран килет, вырăсла пĕлсех каймаççĕ, сансăр вĕсемпе ĕçлеме йывăр пулать...— терĕç ăна.

Çапăçура амансан пĕрне-пĕри пирвайхи пулăшу мĕнле парасси çинчен кăна миçе калаçу ирттеретчĕ пуль Римма, тĕрлĕ ялсенче вырнаçнă батальонсемпе ротăсем тăрăх çӳресе! Халăх йышлă пурăнакан вырăнсенче сарăлма пултаракан чир-чĕрсем çинчен те сахал мар каласа кăтартнă салтаксене. Пур чух та, пур çĕрте те ăна çав тери хапăл туса кĕтсе илетчĕç;

— А-а, сестричка! Татах ҫитрĕн-и? Паян мĕн ҫинчен каласа тăн кĕртетĕн-ха пире?

Каҫ пулса кайсан, пĕр-пĕринпе ăмăртсах станцие ҫити ăсатса яратчĕҫ.

— Тата пыр, сестричка! Кĕтетпĕр!

Юрататчĕҫ ҫав ăна салтаксем. Начар марччĕ запасри полкри пурнăҫ. Анчах Римма чунĕ лĕрмай фронталла туртăнатчĕ.

«Эп медсестрасен курсне тылра, фронтран пин километрта ларса пурăнас ĕмĕтпе кайман. Манăн чăн-чăн ĕҫре пулас килет, вут-ҫулăм ăшĕнче. Аманнисене пулăшмалли, вĕсен пурнăҫне ҫăлмалли ҫĕрте!..»

Риммăн ашшĕ-амăшĕ ҫук, вĕсем вăл ҫур ҫулта чухнех тифпа чирлесе вилнĕ. Ăна вара амăшĕн аппăшĕ, хăй ĕмĕрне Сăр хĕрринчи пĕр ялта учительницăра ĕҫлесе ирттернĕ тăлăх хĕрарăм пăхса ӳстерчĕ. Упăшки, хĕрлĕ гвардеец, 1918 ҫулта шуррисене Хусантан ҫапса кăларнă чух вилсен, урăх качча каяс темен вăл. Хăйĕн ачи-пăчи пулманнипе, Риммăна ачи выраннех хучĕ, унрап хальхи саманана тивĕҫлĕ ҫын тума тăрăшрĕ. Римма фронта кайма хатĕрленни ҫинчен пĕлтерсен те, ватă хĕрарăм ним чухлĕ те хирĕҫ пулмарĕ. Кĕске ҫыруне пысăк саспаллисемпе, аялтан чĕрсех, ҫак сăмахсемпе пĕтернĕччĕ:

«Тĕрĕс шут тытнă эсĕ, хĕрĕм, часрах ҫиттĕр сан таса ĕмĕтӳ...»

Фронта тăрук тухса каймалла пулнипе, Римма ун патне темиҫе сăмахлă открытка ҫеҫ ҫырса пăрахма ĕлкĕрчĕ...

Ҫул ҫинче Римма, рота командирĕпе тата политрукĕпе пĕрле, вакун вĕҫĕнчи пĕр купере пычĕ. Иккĕшне те пит палласах кайман вăл, лешсем запасри полка пыни нумай та пулмасть иккен. Паллашсан вара хытă тĕлĕнчĕ: рота командирĕ чăвашсен паллă писателĕсенчен пĕри иккен. Римма ун кĕнекисене чылай вуланă, ялти вăтам шкултан вĕренсе тухнă чух экзаменра шăпах унăн «Тумхахлă ҫул» романĕ пирки ыйтнăччĕ...

— Писательсене те вăрҫа яраҫҫĕ-и вара?—тĕлĕнерех, хăюсăртарах ыйтрĕ Римма.

— Вĕсем мĕн, совет ҫыннисем мар-им, вĕсемшĕн Тăван ҫĕршыв хаклă мар-им?—терĕ ăна хирĕҫ писатель.

— Апла та-ха вăл... Анчах вĕсене вĕлерсе пĕтерсен, кайран халăх валли кĕнекесем кам ҫырĕ?

— Эпир халь сирĕнпе вилес шухăшпа мар, тăшмана ҫĕнтерсе таврăнас ĕмĕтпе каятпăр пуль? Эс темле те, анчах

эпĕ пурăнасшăн-ха, йăмăкăм. Кам пĕлет, тен, вăрçă хыççăн сан çинчен те кĕнеке çырăп?

Римма именсе, хĕрелсех кайрĕ.

— Ан кулăр-ха эсир...

Калаçăва политрук хутшăнчĕ:

— Шутла-ха эс тата, Римма: писательсем фронтра пулмасан, кайран çак халиччен тĕнче курман хаяр вăрçă çинчен, пирĕн халăх паттăрлăхĕ çинчен пулас ăрусем валли çĕнĕ «Война и мир» кам çырĕ? Эпир иртнĕ вăхăтсенчи вăрçăсем çинчен вулакан пур лайăх кĕнекесене те вăрçăра пулнă писательсем çырнă-çке: Лев Толстой, Алексей Толстой, Серафимович, Фурманов, Шолохов...

— Эсир хăвăр та писатель мар пуль те?— ăна куçран пăхса ыйтрĕ Римма.

— Çук çав, йăмăкăм, эп çынсем çырнине вулама çеç юрататăп. Ыттисене те юратма вĕрентетĕп. Учитель эпĕ.

Рота командирĕпе политрук — иккĕшĕ те пит лайăх çынсем пулчĕç. Иккĕшĕ те фронтра пулнă ĕнтĕ, запасри полка госпитальтен пынă. Мускава çитиччен вĕсем Риммăшăн чи çывăх тăвансем пекех пулса тăчĕç. Вĕсемпе ик талăк мар, ĕмĕр тăршшĕпех пĕрле пулнă пек.

Римма хальхи, вăрçă вăхăтĕнчи, Мускава куç хĕррипе те пулин курса юласшăнччĕ, анчах эшелон унта сĕм-çĕрле пырса çитрĕ, ним те курăнмарĕ. Ниçта пĕр çутă çук, тĕп-тĕттĕм. Пуйăс ăçта пырса чарăннине те пĕлме пулмарĕ. Ăнсăртран çеç илтрĕ Римма:

— Окружной çул çинче тăратпăр...

Рота командирĕпе политрук, вакунран тухса, таçта кайса килчĕç те кĕçĕн командирсене хăйсен çыннисене перрон çине кăларса строя тăратма хушрĕç.

— Мĕн вара, малалла каймастпăр-им?— тĕлĕнсе ыйтрĕ Римма.

— Боецсене вĕри апат çитеретпĕр çеç, унтан каятпăр. Санăн çынсем мĕнле çинине тĕрĕслес пулать, никам та выçă ан юлтăр,— терĕ политрук.

— Лайăхрах çиччĕр, тепре вĕри апат курасси тахçан пулать-ха,— хушса хучĕ командир.

Унтан, политрукпа пĕрле ытти вакунсене кайма пикеннĕскерех, каялла çаврăнчĕ:

— Асту, ху та çиме ан ман... Вăтанса ан тăр, салтак пек пул!

— Юрĕ-çке, маншăн ан пăшăрханăр,— терĕ Римма.

Аслисем хăй пирки тăрăшни ăна питĕ килĕшрĕ...

...Мускавран эшелон ир енне тухса кайрĕ. Кăшт тул çутăлма пуçласанах, Римма чӳрече витĕр пăхма тытăнчĕ. Чăн та вăйлă хатĕрленнĕ-мĕн столица ĕççыннисем тăшманран хӳтĕленме! Пур çĕрте те хулăн рельсăсене çĕре çапса кĕртсе тунă темиçешер ретлĕ хурçă картасем курăнаççĕ — нимĕнле машина та каçса каяс çук вĕсем урлă; танксен çулне пӳлме тем тарăнăш сарлака канавсем алтнă, унта та кунта халь юрпа витĕннĕ тĕмескесем палăраççĕ—ДОТсем* пулнă ĕнтĕ вĕсем...

Пĕр сехет пек кайсан, чугун çулăн ик енче те çунтарса янă ялсем курăна пуçларĕç. Хăшĕсем тĕппипех, ним юлмиччен çунса кайнă, теприсенче темле майпа пилĕк-ултă кил упранкаласа юлнă. Эппин, кунта нумаях та пулмасть вăрçă кĕрленĕ, вут-çулăм ашкăннă...

— Çанталăк лайăх паян,— терĕ Римма хыçне пырса тăнă политрук.— Çав тери аван...

Римма тĕлĕнчĕ: кулса калать-и ку? Çанталăкĕ пĕртте лайăх мар-çке: пĕлĕтлĕ, кăштах юр ӳкколет, юрпа хутăш çумăр та пур пек, çил вĕрет...

— Хăш енчен килĕшет вара сире ку çанталăк?— пуçне ун еннелле пăрса ыйтрĕ Римма.

— Пĕлĕтлĕ пулнăшăн. Юр çунăшăн. Кун пек çанталăкра фашистсем вĕçеймеççĕ, çавăнпа та пирĕншĕн нимĕнле хăрушлăх та çук. Уяр пулнă пулсан, пире килсе тапăнатчĕçех-ха вĕсем. Фронт патнелле пыракан кашни эшелонах аркатса тăкма тăрăшаççĕ вĕт!

Поезд Дорохово станцине çитсе чарăнчĕ. Станци таврашĕнчи çуртсем йăлтах çунса кайнă, йывăççем те кăмрăкланса ларнă, анчах станци çуртне нимĕçсем тухса тарнă чух ишĕлтерме ĕлкĕреймен курăнать.

Чӳрече умĕнче тăракан Риммăпа политрук патне рота командирĕ те пычĕ.

— Вăрçăччен пĕр çулталăк малтан кунта пулнăччĕ эпĕ,— терĕ вăл.

— Мĕн сăлтавпа?— ыйтрĕ политрук.

— Станцинчен инçе те мар, вăрман варринче, писательсен творчество çуртĕ пурччĕ. Серафимович ятне панăскер. Пит лайăх ĕçлерĕм унта, пьеса çырса пĕтертĕм. Анчах нимĕçсем халь çунтарса янă, тет, ăна...

— Мĕнрен кансĕрленĕ-ши вĕсене писательсен çурчĕ?— терĕ Римма тарăхнă сасăпа.

---

*Долговременная огневая точка.

— Канишбалсем мар-и вĕсем! Ку чухнехи ҫынҫиенсем. Пирĕн халăхăн ăҫта мĕн лайăххи, хакли пур — чакса кайнă чух пĕтĕмпех пĕтерсе хăвараҫҫĕ. Ясная Полянара Лев Николаевич Толстой музей-усадьбине ишĕлтернĕ, Клинра Чайковский музейне аркатнă. Мĕн чухлĕ архитектура памятникĕсене тĕп тăваҫҫĕ тата!

Пуйăс нумай тăмарĕ, майĕпе хускалса, малалла, хĕвеланăҫнелле кайрĕ. Халь ĕнтĕ вăрҫă йĕрĕсем ытларах та ытларах курăна пуҫларĕҫ. Римма чӳречерен уйрăлмасăр пăхса пычĕ. Унта та кунта ҫунтарса янă танксем, ҫĕмрĕк тупăсем, хăяккăн выртакан автомашинăсем, фургонсем, лаша виллисем, тем те пур...

— Ку мĕн, ку мĕн?— ыйтрĕ сасартăк Римма, чугун ҫултан инҫе те мар вăрман хĕррине ретĕн-ретĕн лартса тухнă шурă хĕрессене асăрхаса.

— Гитлер бандичĕсен масарĕ,— ăнлантарчĕ политрук.— Вĕсем пирĕн пата «пурнăҫ пространстви» шыраса килнĕ те, куран — тупнă. Кашниех икшер метр йышăннă!

— Боецсене кăтартас пулать куна,— терĕ рота командирĕ.

Анчах боецсем хăйсемех чӳречесем умне тăраннă иккен, пурте ҫав масар ҫине пăхаҫҫĕ.

— Хĕресĕсем тăрне мĕнле хура япаласем лартса янă тата?— каллех ыйтрĕ Римма.

— Ҫĕр айĕнче выртаканнисен тимĕр каскисем вĕсем. Йăли ҫапла нимĕҫсен.

Тăшмансен масарĕ курăнми пуличченех пăхса пычĕ ун ҫине Римма. Эпир ҫĕнтерме пуҫланине кăтартать-ҫке вăл масар...

Пĕр сакăр сехет тĕлĕнче пуйăс Можайска ҫитрĕ. Ку ĕнтĕ юлашки станци, терĕҫ. Малта вăрҫă кĕрленĕ...

Кунта вара Римма нихҫан курманнине, ĕмĕрлĕх асра юлмаллине курчĕ. Питĕ вăйлă ҫапăҫусем пулнă-мĕн хулара. Ишĕлмесĕр, ҫунмасăр упранса юлнă ҫуртсем ҫукпа пĕрех. Урамсенче вĕҫĕ-хĕррисĕр ҫĕмрĕк ҫар техники выртать. Тем чухлĕ танк, бронетранспортер, грузовик, ҫăмăл машина, тупă... Ахăртнех, гитлеровецсем кунтан тухса тарма тытăнсан, пирĕн самолетсем килсе ҫитсе тӳнĕ пулмалла. Питĕ нумай пĕтернĕ, пуҫтарса та пĕтерес ҫук! Хула урамĕсем тăрăх стройпа утакан салтаксем вĕсем ҫине тулли кăмăлпа пăхкаласа пычĕҫ: эппин, нимĕҫсен мухтавлă техникине те аркатма, ҫĕнтерме пулать!

Ротăна хула хĕррине, вăрҫăччен ҫĕрулми хурса усра-

нă подвалсене, вырнаçтарчĕç. Унтан меллĕрех выран пулман хулара. Шалта ик енĕпе вăрăм нарсем тунă, вĕсем çине улăм сарнă, подвал варринче, икĕ çĕрте, тимĕр пичкесенчен тунă кăмакасем çунаççĕ.

Виçĕ талăк тытрĕç вĕсене Можайскра. Риммăсен роти-сĕр пуçне кунта салтаксем татах нумайччĕ. Çынсене лайăх çитерчĕç, взводăн-взводăн мунчана илсе кайса çăвăнтарчĕç, тăраниччен çывăрттарчĕç. Малтанрах пынисене кашни кунах, кăç пулас умĕн, грузовиксем çине лартса, фронта илсе кайрĕç, анчах халăх чакмарĕ, кайнисем выранне урăххисем çитсе тăчĕç...

Можайскра пĕр кăç выртсан, салтаксене ирхи апат çитерсен, рота командирĕ Васильев Риммăна хулана тухса çӳреме чĕнчĕ.

— Атя-ха, йăмăкăм, вăрçă юлашкийĕсене курса çаврăнар,— терĕ вăл.— Ротăра политрук юлать, темшĕн пуç ыратать-ха унăн паян. Хула вĕçĕнче пирĕннисем çапса антарнă нимĕç самолечĕ выртать, теççĕ...

Римма хапăл тусах килĕшрĕ.

Чăнах та, хулан юлашки çурчĕсенчен пĕр икçĕр-виççĕр метрта тем пысăкăш çĕмрĕк самолет выртать иккен. Малти пайĕ çунса кайнă,— çĕре сăмсипе тирĕннĕ курăнать. Çуначĕсем иккĕшĕ те хуçăлнă, вĕсем çинче—пысăк хура хĕрессем, шуйттан палли...

— Пурăна киле Гитлерăн пур самолечĕсем те çакăн пек выртĕç-ха,— терĕ аслă лейтенант.— Анчах халех мар çав-ха, нумай тертленмелле пулать вĕсемпе...

Самолетран инçе те мар летчиксен виллисем выртаççĕ. Вĕсене самолет ăшĕнчен туртса кăларнă пулмалла ĕнтĕ. Сăнĕ-пичĕсем хуп-хура. Çуннă. Комбинезонĕсем те унтан та кунтан çунса шăтнă. Пăхма хăрушă. Уйрăмах пĕри, варринче выртаканни, тискер. Хăй вăрăм, ырханкка, куçĕсем уçă, шăлĕсене йĕрнĕ, халех сиксе тăрса сана кăшлама тытăнас пек... Вĕлерме, çунтарма, ишĕлтерме килнĕ вĕсем çакăнта çити, анчах хăйсем вилĕм тупнă!

— Каяр, пăхма пултараймастăп,— терĕ Римма. Вăл, чăнах та, темле çӳçенме, вĕттĕн чĕтреме тытăнчĕ.

— Хăнăхас пулать, йăмăкăм,— терĕ рота командирĕ, хуллен кулса илсе.— Часах акă вилнисемпе çеç мар, чĕррисемпе те куçа-куçăн тĕл пулма тивĕ-ха!

Сасартăк хула варринче тупăсем пени илтĕнсе кайрĕ. Кĕрст те кĕрст, кĕрст те кĕрст! Питĕ хăвăрт, çине-çинех переççĕ.

— Мĕне пĕлтерет ку?— Римма утнă çĕртех тăп чарăнса тăчĕ те хăй сисмесĕрех командира хулĕнчен пăчăртаса тытрĕ.

— Авă, кур...— аллипе пĕлĕтелле тĕллерĕ лешĕ.

Тӳпере снарядсем çурăлаççĕ. Унта кашни самантра тенĕ пекех тĕксĕм кăвак тĕтĕм чăмăрккисем пулса тăраççĕ. Çав чăмăрккасем хушшинче икĕ фюзеляжлă самолет ярăнать. Темле шыв хумĕсем çинче вылянакан турпас пек.

— Фокке-вульф, фашистсен разведчикĕ,— терĕ аслă лейтенант,— питĕ сиенлĕ япала, станцире мĕн пуррине пĕлме килнĕ ĕнтĕ, путсĕр! Бомба пăрахма тĕл шырать...

— Персе ӳкерĕç-ши ăна? Ах, ӳкересчĕ-çке!—урисемпе тăпăртатсах илчĕ пăлханса кайнă Римма.

— Ăна лектерме йывăр çав, пит çӳлте вĕçет, тата куран — епле чӳхенет вăл, шуйттан!

Тен, пĕр икçĕр снаряд та кăларса ячĕç-и зенитчиксем, анчах «фокке-вульф» тĕрĕс-тĕкелех каялла вĕçсе кайрĕ.

— Тарчĕ вĕт, çăхан! Çăлăнчĕ, аça çапманскер!— чышкисене чăмăртасах ятлаçрĕ Римма.— Юрать-ха, тата хамăра нимле сиен те тăваймарĕ...

— Станцире мĕн те пулин курчĕ пулсан, хăйсенне радиопа пĕлтерчĕ пулĕ-ха! Ун пек «рама» килсе кайсан яланах мĕн те пулин пулать — хыççăнах бомбардировщиксем йăтăнса килеççĕ те, тӳссе кăна тăр вара!

Римма фронтри йĕркесене, тăшман йăлисене, мĕн пулсан мĕн тумаллисене пĕртте пĕлмест-ха, çавăнпа та аслă лейтенант, ку вăрçăччен малтан Финлянди вăрçинче те пулса курнăскер, ерçнĕ вăхăтра ăна «çутта кăлармa» тăрăшрĕ.

— Нимĕçсен халлĕхе авиаци вăйлă-ха. Пирĕн малти линире çапăçакансене кăна мар, тылсене те киле-киле тапăнаççĕ вĕсен самолечĕсем. Пуринчен ытла пикировщиксем—«юнкерссем»—пит усал. Çĕр çинче пĕр-пĕр объект тĕллесе курсан, ун çывăхнерех пыраççĕ те, выçă хурчкасем пек чăмаççĕ аялалла... Пикировщик хăвăн еннелле чăмма пуçласан, мĕн тумалла сан шутпа?

— Пĕлместĕп. Тармалла пуль,— терĕ Римма.

— Ăçта тармалла? Нивушлĕ этем самолетран тарса ӳкме пултарать, тесе шутлатăн эсĕ?

— Мĕн, эппин?

— Сан çинелле чăмакан самолета хирĕç чупмалла, ун айнелле кĕрсе кайма тăрăшмалла. Вара унăн бомбисем те, пулеметран перет пулсан — пулисем те санран кая кайса

лекессĕ. Паллах, çав вăхăтрах пĕр-пĕр шăтăк, лупашка тупса йăпшăнма тăрăшмалла — хăвна осколоксем лекесрен. Ним çук пулсан та çĕре вырт, çĕр çумне хытăрах лăпчăн. Тăван çĕр салтака яланах çăлать!

Унтан рота командирĕ тăшман минăсем ыватма тытăнсан «вилкăран» мĕнле çăлăнмалли çинчен каларĕ.

— Вăрçăра чи кирли вăл — темле йывăрлăха лексен те çухалса кайманни, ăстăна арканма паманни, çак самантра мĕн тусан тĕрĕсрех пулассине тавçăрса илме пĕлни. Вăрçăри салтакăн пурнăçĕ — кăткăс, кашни самантрах тем те сиксе тухма пултарать, çавăнпа та унăн питĕ тавçăруллă пулмалла. Тата — ку пуринчен те ытларах кирлĕ — нихçан та шанчăка çухатма юрамасть. Ах, пулмарĕ, ах, пĕтрĕм, тесен вара чăнах та пĕтетĕн. Паникăна ерсе кайнă салтак пурăнаймасть вăл...

Вĕсем хула варринчи площаде тухрĕç. Кунта каллех тăшман техникин «масарне» курчĕç: мĕн кăна йăваланса выртмасть пуль, мĕн çĕмрĕк-ванчăкĕ çук пуль!

— Ай-ай, хытă кисретнĕ-çке!— терĕ Римма хавассăн, йĕри-тавралла пăхса.— Мĕн чухлĕ тимĕр, хурçă... Мĕн тери хăватлă вăй кирлĕ пулнă вĕсене çакăн пек аркатма!..

— Малашне фашистсем чакса каякан çулсем çинче кун пеккине сахал мар курăпăр-ха эпир,— терĕ аслă лейтенант.

Утнă май, пĕр чул хӳме çинче нумай тĕслĕ сăрсемпе ӳкернĕ афиша пекки курăнса кайрĕ.

— Мĕскер çав, пырса пăхар-ха,— терĕ Римма. Унăн нимĕçсенчен тин çеç тасатнă хулара мĕн пуррине пĕтĕмпех курас, пурне те пĕлес килчĕ.

Аякранах курăнса кайрĕ — пысăк хура саспаллисемпе «Окно ТАСС» тесе çырнă. Агитплакат, эппин, ку, граждан вăрçи вăхăтĕнче Владимир Маяковскипе унăн юлташĕсем кăларса тăнă «Окно РОСТА» пекки. Филфак* студентки Римма пĕлнĕ вĕсем çинчен.

Тем пысăкăш хут листи çине тĕксĕмрех кăвак сăрпа Наполеон мĕлкине ӳкерсе хунă. Çав мĕлке тĕлĕпе çăмне тăпăлтарса пĕтернĕ йытă çури тĕслĕ Гитлер хăйне тĕлленĕ хĕрлĕ штыксем еннелле пăха-пăха тарать...

Ӳкерчĕк айĕнче — сăвă:

— Лети, Адольф, отныне вспять,
Как я в двенадцатом когда-то.
Теперь твоя настала дата:
Можайск освобожден опять

---

*Филфак — чĕлхепе литература факультечĕ.

Штыком российского солдата!
Удары русские грозны:
Не ждать пощады вашей своре!
И твой конец настанет вскоре,
Дождешься ты Березины!*

— Пит лайăх плакат,— терĕ те аслă лейтенант, çавăнтах полевой сумкинчен тетрадь кăларса, çав сăвва çырса илме тытăнчĕ.— Пурнăçра хăçан та пулин кирлĕ пулма пултарать...

— Пулас кĕнеке валли-и, Иван Васильевич?— ыйтрĕ Римма.

— Ун çинчен калама йывăр. Ахальтен çеç, яланхи йăлапа çырса хуратăп.

— Вăрçăра сирĕн ун пек çырса хумаллисем пит нумай пулаççĕ ĕнтĕ. Темиçе кĕнекелĕх те пухăнĕ.

— Пуç сывă юлсан...

Çакăн хыççăн вĕсем тӳрех ротăна таврăнчĕç.

Тăваттăмĕш кунĕнче вĕсене те фронта каймалли черет çитрĕ. Каçхи апат хыççăн ротăна бараксенчен кăларса строя тăратрĕç, список тăрăх тĕрĕслерĕç, унтан темиçе грузовик çине лартрĕç те пăч-тĕттĕмре Уварово станцийĕ еннелле илсе кайрĕç. Вĕсемпе пĕрле тата ик-виç рота тиенсе пычĕ.

Уйра витĕрех витекен çил вĕрчĕ, уçă машинăсем çинче ларса пыма питĕ сивĕ пулчĕ. Шăнсах каяс мар тесе, салтаксем пĕр-пĕрин çумне тачăрах йăпшăнса, пуçĕсене чиксе, ним чĕнмесĕр пычĕç. Çулĕ кукăр-макăр, шăтăклă-путăклă пирки машинăсем хăвăрт пыраймаççĕ, вăхăт-вăхăт тата тем пирки чарăна-чарăна тăраççĕ. Малти пĕр-пĕр машини лакса ларать пулмалла та, вара пĕтĕм колонна чарăнать.

Римма кабинăра ларса пычĕ, анчах ăна та ăшă пулмарĕ — кабинăн ун айккинчи кантăкĕ çĕмрĕк, тата çилĕ те шăпах вăл енчен вĕрет. Ун вырăнне Римма тулалла пăхма пултарчĕ, ытла суккăр пекех пымарĕ. Вĕсене темиçе хут та фронт енчен килекен грузовиксемпе тĕл пулма тиврĕ. Тĕттĕм пулин те, Римма çав грузовиксем çинчи сынсен питне-куçне сыхса пĕтернине, аллисене бинтласа, мăйран çакса янине уйăрса илчĕ.

---

*1812 çулта, Наполеон Мускав патĕнчен чакса кайнă чух, Березина шывĕ патĕнче хăйĕн салтакĕсене пит нумай çухатнă. Çавăн хыççăн вăл наступлени туса пыракан вырăс çарне хирĕс пачах та тăрайман.

— Аманнисем нумай пулмалла,— сăмах хушрĕ вăл ку таранччен те ним чĕнмесĕр пыракан пысăк уссиллĕ шофера.

— Конца-краю нема...— терĕ лешĕ; украинец иккен.— Як зверюга дереться немчура проклята, не хочеть обратно отдавать нашу землю, чорт ему батька! Ну и наши ничего лупят... Бачил я туточки, после боя... Видимо-невидимо було их, побитых! Як тараканы мороженые лежать у поли!

Колонна каллех чарăнса тăчĕ. Пилĕк минут, вунă минут... Вăхăт шурĕ, анчах машинăсем хускалмарĕç. Шофер, кабинăран тухса, мĕн пулнине пĕлме малалла кайса çÿрерĕ, вара таврăнчĕ те, кабина алăкне уçса:

— Усё. Приехалы. Дальше нема дороги,— терĕ.

Унччен те пулмарĕ командăсем илтĕнчĕç:

— Слезай с машин! Быстро! Строиться!

— По четыре становись!

— Третья рота, ко мне!

— Пятая рота!

Пĕр-ик минутранах машинăсем пушанса юлчĕç. Ыйхăланă, шăннă çынсем йăшаланкаласа, винтовкăсене, çурăм хыçĕнчи кутамккисене тÿрлеткелесе, çĕлĕкĕсене лайăхрах пусса, чĕркуççи таран кăпăш юр ăшне путса, йĕркеленсе тăма тытăнчĕç.

— Командиры взводов! Проверьте своих людей!

Римма пĕр хушă малалла, хĕвеланăçнелле пăхса тăчĕ. Инçетре хура пĕлĕтелле тек-текех çутатакан ракетăсем вĕçсе хăпараççĕ те пĕрер минутран сÿнеççĕ. Пĕрисем сÿннĕ тĕле теприсем çĕкленеççĕ. Çав хушăра пулеметсем лăкăртатса илеççĕ. Йытă вĕрнĕ пек. Акă, таçта снаряд ÿксе çурăлчĕ. Пĕрре, тепре тата тепре. Мĕне курса переççĕ-ши çакăн пек тĕттĕмре?

Фронт çывăхрах апла...

Фронтра çĕрле те шăп пулмасть иккен. Çĕрле те вĕлереççĕ, амантаççĕ, сиен кÿреççĕ. Вăрçăн хăрушă пырĕ нихçан та тăранмасть çав. Пĕрмай çăтать...

Ротăсем йĕркеленсе çитрĕç те хускалчĕç. Шăппăн утрĕç салтаксем. Шăнса хытнă çăматă тĕпĕсем айĕнче юр нăтăртатни тата хушăран камăн та пулин винтовка ложине çапăннă котелокĕ чăнклатни çеç илтĕнет. Чĕлĕм туртакан çук, юрамасть.

Утнă май çынсем ăшăнчĕç. Римма та çĕлĕк хăлхисене салтса ячĕ. Вăл халь рота пуçĕнче, командирпа политрук

хушшинче пырать. Вĕсем те вăрахчен чĕнмерĕç, вăхăтран вăхăта рота мĕнлерех пыни çине çаврăнса пăхкаларĕç кăна.

Пĕр километр, иккĕ... Малти линири пулемет сассисем хытăрах, уçăмлăрах илтĕне пуçларĕç. Ракетăсен çути те паçăрхинчен вăйлăрах ĕнтĕ. Ялт та ялт тăваççĕ.

— Кам пĕрмай вĕçтерет ку ракетăсене? Пирĕннисем-и е нимĕçсем?— ыйтрĕ Римма, пĕр ракети уйрăмах хытă çуталса кайсан.

— Нимĕçсем,— терĕ политрук.— Хăраççĕ вĕсем. Тĕттĕмре пирĕн боецсем хăйсем патне çывхарасран шикленеççĕ, çавăнпа пĕрмай çутатса тăраççĕ. Çав хушарах вара ним тĕлсĕр-мĕнсĕр переççĕ.

— Анлантăм...

Сасартăк тӳпере самолет моторĕ ӳлени илтĕнсе кайрĕ: у-уу, у-уу, у-уу... Выçă кашкăр пек. Хăй тахăш тĕлте вĕçет, курăнмасть. Таçталла каять — вăл та паллă мар.

— Фашистсен çĕрлехи бомбардировщикĕ ухутана тухнă,— терĕ рота командирĕ.— Хăй валли тĕл шырать, çăхан.

Унччен те пулмарĕ сылтăм енче — инçетре те мар — бомба ӳксе çурăлчĕ. Çĕрлехи сивĕ сывлăшра питĕ хытă, хăрушла кĕрлесе илчĕ ун сасси. Кĕçех тепри. Унтан тата...

Никам команда памасăрах, çулпа пыракан рота сапаланса кайрĕ. Пĕрисем юр ăшне чăмрĕç, теприсем аяккаллах тарма тытăнчĕç. Стройра пĕр вунă-вунпилĕк çын çеç юлчĕ пулмалла.

— Çакă вăл паника тени пулать те ĕнтĕ,— терĕ рота командирĕ Римма еннелле çаврăнса.— Питĕ сиенлĕ психически чир! Ик-виç хăравçă тăнĕсене çухатса тарма тытăнаççĕ те, ыттисем — вĕсем хыççăн. Çапăçу вăхăтĕнче тăшмана çав çеç кирлĕ!

— Тар шăршласа курманнисем нумай, çавăнпа вăл,— терĕ политрук.— Сахал ĕçлеме тиврĕ çынсемпе... Анчах кун пирки паянах калаçатпăр-ха, вырăна çитсен. Памастпăр урăх ун пек тума.

Самолет сасси çухалчĕ, рота вара, йĕркеленсе, каллех малалла утрĕ.

Тул çутăласпа самаях ывăннă рота Дубинино ятлă чиркӳллĕ яла пырса çитрĕ. Ялĕ ку пысăк, икçĕр кил те ытла, çурт-йĕрĕсем пурте тенĕ пекех лайăх. Гитлеровецсем чакса кайнă чух ăна ытти ялсем пек çунтарса ярайман, тăшман тылне тухнă Доватор генерал кавалерисчĕсем сĕмçĕрле ик енчен пĕр харăс вăркăнса кĕнипе, хăйсем те аран-

аран тухкаласа тарнă. Кун ҫинчен Римма каярахпа, ҫак ялта чылай хушă пурăнма тивсен пĕлчĕ.

Ротăна сăрт енчи пысăк пӳртсене вырнаҫтарчĕҫ — кашни ик пӳртре пĕрер отделени.

Римма, яланхи пекех, рота командирĕпе, политрукĕпе тата вĕсен связнойĕпе — ҫав тери ҫивĕч, лара-тăра пĕлмен Хĕрлĕ Чутай каччи Володя Аруткинпа пĕрле — пĕр уйрăм пӳртре пулчĕ.

Дубининăра малти линире ҫапăҫакан Н-ски дивизи валли тылран яракан пополнение йышăнакан пункт пулнă иккен. Связной, кил хуҫи арăмĕпе калаҫса татăлса, шыв вĕретнĕ хыҫҫăн Риммăсем сĕтел хушшине ларнăччĕ кăна, пӳрте икĕ офицер пырса кĕчĕҫ. Самаях вараланнă шур кĕрĕксемпе хăйсем, кăкăрĕсем умĕнче — нимĕҫ автомачĕсем, сăнĕ-пичĕсем ҫил ҫинче кушăркаса кайнă, тиртен ҫĕленĕ алсишĕсене кантрапа мăйран ҫакса янă.

— Эпир дивизи штабĕнчен, пополнени пирки,— пĕлтерчĕ пĕри, аслăраххи.— Мĕнле халăх илсе килтĕр? Вăрҫăра пулнисем пур-и? Коммунистсем, комсомолецсем тата?

Командирпа политрук вĕсене рота списокĕпе паллаштарчĕҫ.

— Чăвашсем нумай иккен сирĕн,— терĕ аслăрах офицерĕ, списока каялла тавăрса панă май.— Аван! Чăвашсем маттур, лайăх ҫапăҫаҫҫĕ. Пирĕн пĕр полкра штаб начальникĕ те чăваш, хастарлă каччă...

— Халь мĕн тумалла пулать ĕнтĕ пирĕн?— ыйтрĕ рота командирĕ.

— Ҫынсене лайăхрах ҫитермелле те кунĕпех кантармалла. Каҫхине сире полка илсе каяҫҫĕ. Кĕтĕр.

— Есть.

Штаб офицерĕ, Риммăна тин ҫеҫ курнă пек, ун ҫине пăхрĕ.

— Эсир те ку ротăпа килнĕ-и?— ыйтрĕ вăл.

— Пирĕн санинструктор,— Римма вырăнне тавăрчĕ политрук.

— Апла-ха, эппин...— Офицер шухăша кайнă пек пулчĕ.— Сирĕн вара кунтах, медсанбатра, юлмалла пулать, юлташ...— терĕ унтан.

— Мĕншĕн?— тĕлĕнсех кайрĕ Римма.— Эп вĕсемпе пĕрле килнĕ, малашне те вĕсемпе пĕрлех пулатăп!—Хăй ҫав самантрах хĕп-хĕрлĕ пулчĕ, пăлханнипе сăмса ҫунатгисем сиккелеме тытăнчĕҫ.

— Ку пирĕнтен килмест, юлташ. Комдив приказĕ пур:

тылран тин çеç килнĕ хĕр-санинструкторсене тӳрех çапăçу хирне ямалла мар, малтан иккĕмĕш эшелонра усраса хăнăхтармалла пăртак...

— Мĕне хăнăхтармалла? Эп ятарласа вĕреннĕ, запасри полкра чылай хушă ĕçленĕ, опытсăрах мар,— хирĕç пулчĕ Римма.

Штаб офицерĕ, ун çине кăмăллăн пăхса, кулам пекки туса илчĕ.

— Мĕне хăнăхтармалла, тетĕр-и?.. Юн курма хăнăхтармалла. Пăшал-пулемет, тупă пенине илтме, снаряд-бомба мĕнле çурăлнине илтме. Бомбежка айĕнче пĕрре те пулин пулса курнă-и эсир?

— Тӳр килмен-ха...

— Çапла пуль çав. Салтак тĕнне кĕмен-ха, эппин. Запасри полкра пулни ниме те пĕлтермест вăл. Акă, кăштах пурăнатăр та кунта — тĕне кĕретĕр. Хăнăхатăр. Каярахпа курăнĕ унта. Вăрçă паян-ыранах пĕтес çук. Эп халех медсанбатрисене калăп, вĕсем сире илсе кайса вырнаçтарĕç. Анланмалла пуль?

... Çапла, кĕтмен çĕртен, Риммăн хăй хăнăхса çитме ĕлкĕрнĕ çысемпе уйрăлмалла пулчĕ.

Тепĕр сехетренех медсанбатран икĕ хĕр — пĕри сарă та çӳллĕ, типшĕмрех, тепри лутра та хурарахскер — пычĕç те ăна хăйсемпе пĕрле илсе кайрĕç. Вĕçĕмсĕр ыйтса пĕлме тытăнчĕç унран:

— Мĕнле пурăнаççĕ халь унта, тылра?

— Çамрăксем вăхăта мĕнле ирттереççĕ? Вечерсем, танцисем халь те пулаççĕ-и?

— Каччăсем юлман та пуль?

— Пурте кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ, урăх ним тума та вăхăт çук. Каччисем... вунулт-вунçич çултисем кăна,— терĕ вĕсене хирĕç Римма.— Тылра та çăмăлах мар халь...

Çак хĕрсем — Верăпа Ирина — малтан ăна медсанбат командирĕ патне илсе пычĕç. Лешĕ ун çинчен кăшт ыйткаласа пĕлчĕ те Риммăна вĕсемпе пĕрле пурăнма хушрĕ.

— Ĕçлессе те вĕсемпе пĕрлех, сортировочнăйĕнче ĕçлĕн...

Хăйсен роти кĕçĕр малти линие каяссине астуса, каç пуласпа Римма тусĕсем патне чупрĕ.

— Сывпуллашса юлас хуть, кам пĕлет — те курайăп вĕсене урăх, те кураймăп...

Вăл пынă чух лешсем виççĕшĕ пĕрле — рота командирĕ, политрук тата Володя Аруткин — похода тухса каяс

умен апат çиме ларнăччĕ. Сĕтел çинче «çул курки»— çур литр эрех те пур.

Римма пырса кĕнĕшĕн вĕсем питĕ кăмăллă пулчĕç, ăна тӳрех сĕтел хушшине ларма йыхăрчĕç.

— Тавтапуç, тутă эпĕ, тин çеç хĕрсемпе çисе тухрă-мăр,— пуçне пăркаласа илчĕ Римма.

— Таçта çисе çӳрени ниме те пĕлтермест, пурпĕрех санăн пирĕнпе лармалла,—терĕ те ăна хирĕç Аруткин, вăй-пах сĕтел хушшине, хăйĕнпе юнашар лартрĕ.—Эпир çапă-çăва кайнă ятпа санăн пирĕнпе шаклатса çул курки ĕçес пулать!— Çавăнтах пушă кружка çине эрех ячĕ.

— Еçместĕп-çке эп ăна, ĕçмен нихçан та...—пуçне пăр-каларĕ Римма.

— Нимех те мар, туссемпе сывпуллашнă чух юрать,— терĕ рота командирĕ, хăйĕн кружкине ун патнелле тăс-са.— Çапăçури ĕçсем ăнăçлă пулччăр тесе ыр сун пире..

Политрукпа Аруткин та кружкисене Римма кружкипе шаклатрĕç.

— Телей пултăр, эппин, пурсăра та!—Римма хăйне ирĕксĕрлесех кружкăра мĕн пуррине ĕçсе ячĕ.

Çав вăхăтра пӳрте рота старшини кĕрсе тăчĕ.

— Аслă лейтенант юлташ! Ротăна строя тăратнă. Çынсем пурте хăйсен вырăнĕнче. Полкран килнĕ провод-ник* кĕтет.

— Пит аван!

Тепĕр виçĕ минутран пурте урама тухрĕç. Тулта тĕт-тĕмленнĕ ĕнтĕ. Кăштах çил вĕрет, юр ӳккелет. Çанталăк пăсăлать пулмалла. Инçетрен пулемет сассисем илтĕнеççĕ...

— Ну, чипер юл, йăмăкăм,— Риммăна ал пачĕ рота командирĕ.— Ан ман пире.— Унтан шăппăнтарах кала-рĕ: — Енчен те... манпа тем пулни çинчен илтсен... Шупаш-кара, писательсен союзне çырса яр.

Римма ăна, ыталаса илсе, питçăмартинчен чуптурĕ.

— Нимех те пулмĕ-ха, тен, Иван Васильевич...

Унтан политрукпа та çавăн пекех сывпуллашрĕ.

Юлашкинчен Аруткина ал пачĕ.

— Асту эс унта, Володя, Иван Васильевич упрама тăрăш, хамăр чăваш халăхĕшĕн питĕ хаклă çын вăл!

— Итлетĕп, Римма! Эс те чипер пурăн кунта, вăрçă пĕтсен тепĕр куннех сан патна евчĕсем яратăп, çавна ан

---

*Пĕлмен çулпа ертсе каяканни.

ман!— шӳтлесе илчӗ те Аруткин, хӗре ҫатӑрах ыталаса илсе тутинченех чуптурӗ.

...Рота хускалса ял вӗҫнелле утрӗ. Урамра Римма пӗччененех тӑрса юлчӗ. Питӗ кичем, салху пулса кайрӗ ӑна. Сасартӑк пӗтӗм тӗнчере пӗр-пӗччен, тӑлӑха тӑрса юлнӑ пек туйӑнчӗ. Макӑрас килчӗ.

Инҫетрен ҫаплах пулемет сассисем илтӗнеҫҫӗ. Хушӑран снарядсем хаплата-хаплата ҫурӑлаҫҫӗ. Риммӑсен роти халь шӑпах ҫавӑнта, вут-ҫулӑм ӑшне кайрӗ. Римма юратса вуланӑ кӗнекесене ҫырнӑ Иван Васильевич, ырӑ кӑмӑллӑ политрук, ҫамрӑк кӑна каччӑ Володя Аруткин, вӗсемпе пӗрле тата ҫӗр ҫынна яхӑн,— пуринчен ытларах Чӑваш ҫӗршывӗнче ҫуралса ӳснӗ вӑйпитти арҫынсем...

Мӗн пулӗ-ши вӗсемпе? Хӑшне вилме, хӑшне чӗрӗ юлма пӳрнӗ? Телейлисем нумай-ши вӗсем хушшинче?

## 4

Медсанбат ялӑн анат вӗҫне, ватӑ ҫӑкасем айне, пытаннӑ вӑтам шкулӑн икӗ хутлӑ ҫуртне вырнаҫнӑ. Аялти хутра аманнисене йышӑнмалли, операцисем тумалли, сурансене ҫыхмалли, хӑвӑртрах тыла ӑсатмаллисене вырттармалли уйрӑмсем пур, ҫӳлти пӳлӗмсенче вара ҫӑмӑлтарах аманнисем, тыла ӑсатмасӑрах сыватмаллисем выртаҫҫӗ. Шкул картишӗнчи пӗр сарайӗнче ҫутӑ паракан движок тӳнклетет, тепӗр пӗчӗкрех чул ҫуртра — кухня. Риммӑн ҫӗнӗ юлташӗсем, Иринӑпа Пӗчӗк Вера — пӗвӗпе лутра пулнӑшӑн ҫапла ят панӑ ку хӗре — Риммӑна ӑҫта мӗн пуррине тепӗр ирхинех кӑтартса тухрӗҫ.

Вӗсем иккӗшӗ те пӗр вырӑнтан, Пенза хулинчен иккен. Шкулта та пӗрле вӗреннӗ, фронта та пӗрле килнӗ. Вӑрҫӑ пуҫланас умӗн хӗрсем медицина техникумӗн юлашки курсне куҫнӑ, анчах вӑрҫӑ тапрансанах комсомол райкомне кайнӑ та хӑйсене фронта яма ыйтнӑ. Шӑпах ҫав вӑхӑтра Пенза ҫывӑхӗнчи пӗр хулараваскасах ҫӗнӗ дивизи йӗркеленӗ-мӗн, унта пур йышши специалистсем те нумай кирлӗ пулнӑ, вара хӗрсене тӳрех ҫав дивизие ӑсатнӑ. Дивизи темиҫе уйӑх резервра тӑнӑ, пулас ҫапӑҫусене хатӗрленнӗ, хура кӗркунне вара, Мускав патне килсе, вӑрҫа кӗнӗ.

— Пирӗнпе хамӑр енчи хӗрсем нумайччӗ те, сахалланса юлчӗҫ ҫав халь,— терӗ Ирина каҫхине, хӑйсен пӗчӗк пӳлӗмне таврӑнсан, чӑматанӗнчен самаях пысӑк фотографи кӑларса.— Акӑ, эпир фронта тухса килес умӗн ӳкерттер-

ни...— Вăл фотографи çинчи хĕрсен сăнĕсене пӳрнипе тĕллесе кăтарта пуçларĕ.— Ак кусем — Феня Долгова, Аня Кирьянова, Маруся Кукушкина, Лиля Пастырева... тĕрлĕ вăхăтра аманса тыла кайрĕç, кусем вара — Катя Бубнова, Нина Шестеркина, Мая Белова, Лиза Синичкина... вилчĕç. Хăшĕ бомбежка айне пулса, хăшĕ артналет вăхăтĕнче, тĕрлĕрен. Полксенчи санротăсенче пĕтекенсем тата ытларах пулнă.

— Бомба е снаряд никама та тиркесе тăмасть-çке,— ассăн сывласа ячĕ Вера.— Анчах эпир пурăнатпăр-ха. Фронта килни кĕçех тăватă уйăх çитет, ним те пулмарĕ пире.

— Телейлĕ, эппин, эсир,— терĕ Римма.

— Телейĕ-мĕнĕ... Пĕлме çук ăна: халь сывă та эсĕ, тепĕр сехетренех тем пулать,— терĕ Ирина.

— Ман шутпа, вăрçăра вилĕм çинчен шутлама юрамасть, чĕрере шанчăк пулмалла: çук, пĕтместĕп эпĕ, мана ним те тивмест! Кун пирки мана пĕр лайăх командир каларĕ...

— Тем пек шутлас марччĕ те çав, анчах кашни кун вуншар вилĕм курса тăнă çĕртех хăвна ху улталаймастăн,— терĕ ăна хирĕç Вера.— Ак, ĕнер кăна операци сĕтелĕ çинче лейтенант вилсе кайрĕ. Çап-çамрăк хăй, çирĕме те çитмен пуль, çав тери хитрескер, ытармалла мар, такам та юратса пăрахмалла. Осколок хырăмĕнчен лекнĕ. Ăна туртса кăларчĕç, пысăк тампон хурса çыхрĕç, каччи пĕр хушă тăна кĕнĕ пек те пулчĕ, унтан икĕ хутчен: «Анне! анне!» теме çеç ĕлкĕрчĕ... Куççуль шăпăрах юхса анчĕ.

— Ну, çитĕ вилĕм çинчен калаçма!— пӳлчĕ ăна Ирина.— Çывăрас пулать, ыран аманнисем нумай пулма пултараççĕ, терĕç.

— Мĕншĕн нумай пулмалла вĕсем?— ыйтрĕ Римма.

— Наступлени пуçланать, тет...

— Ăна эпĕ те илтрĕм-ха,—терĕ Пĕчĕк Вера.

Дивизи пĕр эрне ĕнтĕ малалла каяйман, ун умĕнче тăшманăн пит вăйлă çирĕплетнĕ, минăсем лартса тултарнă, темиçе рет йĕплĕ пралук карнă опорнăй пункчĕ пулнă. Çитменнине, тăшман çавăн пек вăйлă çирĕплетнĕ Воробьевка ялĕ сăрт çинче ларнă. Тăшман унтан пирĕн енчине пĕтĕмпех курнă, хуть те ăçталла та, темрен те тĕл пеме пултарнă, анчах пирĕн ун патнелле айлăмран, тикĕс вырăнпа пыма тивнĕ. Дивизин сылтăмрипе сулахайри кӳршисем чылай мала кайнă ĕнтĕ, çавăнпа арми командованийĕ ăна, халех

çав опорнăй пункта çĕмĕрсе, кӳршĕсемпе танлашма çирĕп приказ панă-мĕн.

Тул çутăлас умĕн, пилĕк сехетре, артиллери çĕр кисретсе кĕрлеме тытăнчĕ. Римма, çавна илтсе, хăраса вăранса кайрĕ...

Пĕр çичĕ сехет тĕлнелле вара медсанбата аманнисене илсе пыма пуçларĕç. Лав хыççăн лав, лав хыççăн лав. Хăшĕсене «сортировкăна» наçилккасемпе çĕклесе кĕртсе хураççĕ, хăшĕсене ахаль йăтса кĕреççĕ, теприсене—çавăтса. Хăйсем тĕллĕн кĕрекенсем те нумай. Малти линире, санротăсенче, васкаса çыхса янă бинтсем витĕр юн сăрхăнать. Çынсем йынăшаççĕ, ахлатаççĕ, ниçта кайса кĕрейми асапланаççĕ. Вунă сехетсенче «сортировка» пӳлĕмĕ çеç мар, шкул коридорĕ те тулса ларчĕ. Анчах малти лини енчен аманнисене тиенĕ лавсем çаплах килчĕç...

Юн... Çынсен пичĕ-куçĕсем, алли-урисем çинче, çĕлĕкĕсем, кĕрĕкĕсем, шинелĕсем çинче, купипе выртакан бинтсем çинче, урайĕнче — пур çĕрте те юн.

«Юн курма хăнăхмалла»,— тенĕччĕ штаб офицерĕ Риммăна виçĕмкун.

Акă ĕнтĕ вăл, хăнăхмалли вырăн. Кун чухлĕ этем юнĕ çине пăхсан ăш та пăтранмалла, пуç та çаврăнса каймалла. Хăрушă!..

Медсанбат çыннисем сывлăш çавăрса илме ĕлкĕреймесĕр тенĕ пек, апат çинчен те, ыйхă çинчен те манса кайса ĕçлерĕç. Санитарсем аманнисене çĕклеççĕ, сестрасем вĕсен тумтирĕсене хывса илеççĕ, юнлă бинтсене салтаççĕ, врачсем операци тăваççĕ. Теприсем операци тунă вырăнсене çыхаççĕ, коридор вĕçĕнчи «эвако» тесе çырнă пӳлĕмрен йывăртарах аманнисене илсе тухса, машинăсем çине хураççĕ...

Икĕ талăк пĕрре канса лармасăр, пĕрре куç хупмасăр ăшталанчĕç медсанбатра. Çынсем утнă çĕртех такăнакан, куç хупсассăнах сывăрса каякан пулчĕç. Виççĕмĕш кунĕнче тин ĕç кăшт сахалланчĕ те сестрасене черетпе сывăрма ирĕк пачĕç.

Çав вăхăтрах ырă хыпар сарăлчĕ:

— Пирĕннисем нимĕссен опорнăй пунктне çĕмĕрнĕ, Воробьевкăна илнĕ, халь тăшмана пĕрре чарăнса тăма памасăр хăвалаççĕ...

«Эппин, кун чухлĕ юн тăкни сая кайман-ха, пит аван»,— шухăшларĕ Римма çакна илтсен.

Ирпе хăйсен пӳлĕмне таврăнсан, апат та çимерĕ вăл, çăматтине хывса пăрахрĕ те ним пĕлми сывăрса кайрĕ.

Римма халь талăкĕпех ним хускалмасăр çывăрма пултарнă, анчах пĕр виç-тăват сехет кăна канма тиврĕ ăна: кăнтăрла çитеспе Ирина хулпуççинчен силле-силлех вăратрĕ:

— Тăр-ха, Римма, тăр часрах! Аманнисене каллех нумай илсе килнĕ, тет. Главврач халех пурне те пухма хушнă. Питне-куçна çукала та, атя хăвăртрах!

Йывăр пулчĕ тăма, анчах мĕн тăвас тетĕн? Килти мар кунта: приказ. Тата ахальтен хушман ĕнтĕ пурне те пухма, кирлĕ, эппин!

— Эс паян мĕн те пулин çинĕ-и?—ыйтрĕ унран Ирина.

— Çиес килмест манăн,—терĕ Римма,васкасах çӳçне тураса.

— Ме, сахăр ярса пĕр стакан çăра чей ĕç хуть, халь кăна кухньăран илсе килтĕм. Вăй кĕртет вăл.

— Юрать, халех...

Виç минутран вĕсем шкула çитрĕç. «Сортировкăра», чăнах та, аманнисем тем чухлех иккен. Хăшĕ урайĕнчех выртаççĕ, хăшĕ лараççĕ, стенасем çумне тĕренсе тăнисем те пур. Пӳлĕме чĕлĕм тĕтĕмĕ тулнă. Юнашар пӳлĕмре, ик сĕтел çинче пĕр харăс, хирургсем операци тăваççĕ, теприне сурансене çыхаççĕ. Пĕр сестра çынсене чей ĕçтерет, çитерет.

Риммăпа Ирина тӳрех ĕçе тытăнчĕç. Аманнисене хывăнтарчĕç, юнланнă бинтсене салтрĕç, операцие хатĕрлерĕç.

Сасартăк коридорта тахăшĕ питĕ хытă кăшкрăса йынăшни илтĕнсе кайрĕ. Çине-çине, пĕр чарăнмасăр йынăшать...

— Хĕрарăм мар-и ку?— ыйтрĕ Римма, хăйпе юнашарах ĕçлекен Ирина çине пăхса.— Граждански-ши?

— Пулма пултарать, гражданскисем хушшинче те аманнисем сахал мар. Анчах та, тен, хамăрăнниех-и?—терĕ Ирина.

Фронта килнĕренпе Римма аманнă хĕрарăмсене пĕрре те курманччĕ-ха. Халь вара «сортировкăна» икĕ санитар çĕклесе кĕнĕ наçилкка çинче хĕрарăм выртать. Çар çынниех тата. Риммăпа Ирина пекех çамрăк хĕр. Пичĕ простынь пекех шурса кайнă, ун кĕлеткинче пĕр тумлам юн та юлман, тейĕн. Куçĕсем кăшт уçăлаççĕ те хупăнаççĕ, уçăлаççĕ те хупăнаççĕ. Вăйĕ пачах пĕтсе çитнĕ пулмалла.

— Татьяна! Таня!..— хĕре палласа илсе, шари! кăшкăрса ячĕ Ирина.— Мĕн пулчĕ? Ăçтан лекнĕ сана?— Вăл ун умне кукленсе ларчĕ. Унтан çавăнтах Римма енне çав-

ранчӗ:— Пирӗн хӗрача ку, Пензӑран, фронта пӗрле килнӗччӗ...— Каллех аманнӑ хӗртен ыйтма тытӑнчӗ:—Таня! Танечка! Мӗн пулчӗ, ӑҫтан тиврӗ сана? Каласам!

Наҫилкка ҫинчи хӗр вӑрӑммӑн йынӑшса ячӗ.

— Пӗтрӗм эпӗ... Хырӑмран... мина...— Ун тӑнлавӗсем тӑрӑх куҫуль тумламӗсем йӑрӑлтатса анчӗҫ.— А-ах, йывӑр... Сывлаймастӑп!

— Тӳс ӗнтӗ епле те пулсан, Танечка...— Иринӑн хӑйӗн те шӑпӑрах куҫҫулӗсем тухрӗҫ.— Халех тухтӑрсем пӑхаҫҫӗ, кирлӗ пулсан операци тӑваҫҫӗ, ҫӑлаҫҫӗ вӗсем сана, ҫӑлаҫҫӗ, пӗтме памаҫҫӗ!..

Ирина чӗтрекен аллисемпе Таньӑн юнланса пӗтнӗ кӗрӗкне вӗҫертме тытӑнчӗ.

— Римма, пулӑш-ха хывса илме...

Таньӑн хырӑмӗ тӗлӗнчи гимнастерки талккишпех юнпа йӗпенсе, хуралса ларнӑ. Эппин, суранӗ питӗ пысӑк унӑн. Хӗр питӗ йывӑррӑн, йынӑша-йынӑша сывлать.

— Халех, халех, Танечка... Эс ним те ан шутла, сывалатӑн... Ҫӑлаҫҫӗ сана...— лӑплантарма тӑрӑшрӗ ӑна Ирина.

— Ҫӑлаймаҫҫӗ-ӗ! Ан йӑпа-ат!..— юлашки вӑйне пухса, йынӑшса кӑшкӑрчӗ ӑна хирӗҫ Таня.— Эп хам та... медик! Пӗлетӗп хырӑмран амансан мӗн пулнине-е! Пӗтерчӗҫ мана, явӑлсем... Иришка... тархасшӑн... аннене пӗлтер... эп мӗнле вилни ҫинчен... А-ах, анне-е!..

Хӗрарӑм кӑшкӑрнине илтсе операци тӑвакан пӳлӗмрен харӑсах виҫҫӗн-тӑваттӑн тухрӗҫ — аслӑ хирург Басов, сестрасем. Вӗсем халь кӑна тахӑшне операци туса пӗтернӗ курӑнать — тутисене ҫыхнӑ марлӗсене те илмен, тухтӑрӗ резина перчеткине те хывман.

— Кам ку?— ыйтрӗ Басов, куҫлӑхне ҫамки ҫине хӑпартса.

— Таня Лаврова, санинструктор, 182-мӗш полкран...— хӑвӑрт хуравларӗ Ирина.— Осколокпа... хырӑмран...

— Илсе кӗрӗр часрах!

Таньӑна операци тӑвакан пӳлӗме ҫӗклесе кӗрсе сӗтел ҫине хучӗҫ. Ыттисемпе пӗрле унта Римма та кӗчӗ. Сестрасем хӑйӗн хырӑмне ҫыхнӑ бинтсене салтнӑ чух Таня тухтӑр ҫине ҫав тери хурлӑхлӑн пӑхса, куҫҫулӗпе чыхӑна-чыхӑна пӑшӑлтатрӗ:

— Ҫӑлӑр мана... тархасшӑн ҫӑлӑр! Ман пурӑнас килет... Эп вуҫех те пурӑнса курман вӗт-ха... Ҫӑлӑр... ҫӑлӑр!

— Эс вырт, вырт, сан калаҫма юрамасть. Тата ан хӑ-

ра, пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать,— мăн сассипе мăкăртатса илчĕ Басов, унтан сĕтелĕн тепĕр енче тăракан сестрана хушрĕ:— Наркоз! Хăвăртрах!

Таня, майĕпен лăпланса, çывăрса кайрĕ. Басов операци тума тытăнчĕ. Сĕтел тавра пухăннă хĕрсем пурте сывламан пек шăплăн пăхса тăчĕç. Таня хырăмне касса уçсанах Риммăн пуçĕ çаврăнса кайнă пек пулчĕ. Шалта чĕп-чĕр юн иккен. Вăл ĕнтĕ кĕвĕлсе ларма та пуçланă...

Таня операци сĕтелĕ çинчех вилсе кайрĕ. Нимле хирург та çăлма пултарайман пулĕ çав ĕнтĕ ăна: пысăк осколок унăн ăшчиккине пĕтĕмпех çĕмĕрсе пĕтернĕ...

Ирина операци пӳлĕмĕнчен суккăр çын пек утса тухрĕ те стена çумне тайăнса тăчĕ. Куçĕсем хупăнчĕç унăн. Кăшт тăрсан, вăл çурăмĕпе стенана сăтăрăнса анма пуçларĕ, анчах Римма ăна ӳкме памарĕ, часрах ыталаса илсе, операци пӳлĕмне каялла илсе кĕртрĕ. Кунта вара хĕр тӳрех сак çине ӳкрĕ, ниçта кайса кĕрейми, татăлса макăрма тапратрĕ. Ăна эмел пара-пара лăплантарчĕç те, аслă врач хушнипе, киле илсе кайса вырттарчĕç.

Полкри санинструктор Таня çавăн пек вилни Риммăна та калама çук пăлхантарса ячĕ. Кайран пĕлчĕç вĕсем: Таня тепĕр хĕр-санинструкторпа пĕрле аманнисене тиенĕ икĕ лава медсанбата илсе килме тухнă-мĕн. Хĕрсем лавсенчен кăшт каярах утса пынă. Сасартăк çывăхрах минăсем ӳкме пуçланă та Таня ездовойсене хыттăн кăшкăрса приказ панă:

— Хăвалăр лашăрсене, обстрел айĕнчен тухма тăрăшăр!

Лавсем сиккипех малалла кайнă, хĕрсем татăлса юлнă. Минăсем çаплах ӳкнĕ, хĕрсем иккĕшĕ те юр çине выртнă,— кăшт пытанмалăх та шăтăк-путăк пулман таврара,—анчах минăсем çурăлма чарăнсан ура çине вĕсенчен пĕри çеç тăма пултарнă: Таня аманнă. Тепĕр хĕрĕ вара ун суранне уй варринчех аран-аран çыхкаланă та, ытти аманнисемпе пĕрле хурса, медсанбата илсе килнĕ...

Таньăна тепĕр ирхине шкул картишĕнчех, сиреньсем ӳсекен улах кĕтесе, пытарчĕç.

— Çуркунне ун çийĕнче чечексем пулĕç хуть...

Вилтăпри çине пуртăпа çеç якаткаланă юман юпа лартрĕç. Ватăрах арçын-санитар, çĕçĕ вĕçĕпе чакаласа, темиçе сăмах çырчĕ: «Паттăр патриотка Таня Лаврова. 1923—1942». Хĕрсем пурте хытă макăрчĕç, Иринăна вара каллех, ик енчен çавăтса кĕрсе, эмелсем памалла пулчĕ.

Каçхине Риммăсен пĕчĕк пӳлĕмне хĕрсем çиччĕн-сиккăрăн пухăнчĕç. Сăмах çаплах сарăмсăр аманса вилнĕ Таня çинчен пулчĕ.

— Хамăр праçник кунĕ пытартăмăр-çке-ха ăна! Савăнас вырăнне — хуйхă...— ассăн сывласа ячĕ тахăшĕ.

— Мĕнле хамăр праçник?— ыйтрĕ тепри.

— Ара, паян мĕнле кунне пĕлместĕн-и? Мартăн саккăрмăшĕ вĕт...

— Чăнах та-çке, хĕрсем!— сиксе тăчĕ Риммăпа пĕрле пурăнакан Пĕчĕк Вера.— Епле манса кайнă вара эпир ăна, тăнсăрсем!

— Тĕлĕнмелли çук, ку пурнăçпа пурăнса часах хамăрăн ятсене те манса кайăпăр-ха,— терĕ аманнисемпе чирлисем выртакан палатăра ĕçлекен пысăк кăвак куçлă, мăнтăркка, хĕп-хĕрлĕ çӳçпуçлă Женя.— Вăрçа киличчен эпĕ тĕлĕкре ялан хама килĕшекен каччăсене куратăм, халь аманнисем, алсăр-урасăррисем çеç курăнаççĕ. Пĕррехинче хамăн урасене татнине те куртăм...

— Хĕрачасем! Паян чăнах та пирĕн праçник пулсан... манăн НЗ* пур!— пӳлĕм варрине тухса, пурне те çивĕч куçĕсемпе пăхса çаврăнчĕ Пĕчĕк Вера.

— Мĕнле НЗ?— ыйтрĕ Женя.— Спирт-и?

— Спирт мар, ахаль эрех кăна. Старшина тахçанах парсаччĕ: пытарса усра, кирлĕ кунта кирлĕ пулĕ, терĕ, анчах хăй манса кайрĕ пулмалла ун çинчен, ыйтмасть те...

— Кăлар, эппин, ăна! Таньăна та асăнăпăр, праçник те пулĕ...

Ку шухăшпа пурте килĕшрĕç. Пӳлĕм варрине туртса кăларнă сĕтел çине Вера эрех кĕленчи лартрĕ. Çыртмалли те тупăнчĕ, черккесем çеç пулмарĕç. Анчах Женя çавăнтах мензуркăсем тупса пычĕ.

— Ресторанти пекех хăналанма пулать кусемпе!

Малтан хĕрсем Таньăна асăнса ĕçрĕç, иккĕмĕш мензуркăпа вара пĕрне-пĕри хĕрарăм праçникĕ ячĕпе саламларĕç, хăйсен телейĕшĕн, пулас çĕнтерӳсемшĕн ĕçрĕç. Хăнăхманнипе, хăшĕсем ĕçнĕ чух чыхăна-чыхăна кайрĕç, ытах ĕçме пĕлменнисенчен кулчĕç, сĕтел çинче мĕн пуррине шавла-шавла çиме тытăнчĕç. Çамрăк хĕрсене нумай кирлĕ-им? Пăртак ĕçнипех пичĕсем хĕрелчĕç вĕсен, куçĕсем йăлтăртатма пуçларĕç.

---

*НЗ — (вырăсла—неприкосновенный запас) тĕкĕнме юраман япала (çимĕç).

— Маттур та иккен пирӗн Вера, пӗчӗк пулин те маттур!— терӗ ыттисенчен кӑшт аслӑрах Женя.— Кӗтмен ҫӗртенех праҫник туса пачӗ пире! Кӳр-ха, эп сана чуптӑвам пӗрре...

Вӑл Верӑна хӑй патнелле туртса илсе ыталарӗ те питӗнчен ик-виҫӗ хут чаплаттарчӗ.

— Ярр... Вӗлеретӗн, упа хӑраххи!— аран вӗҫерӗнчӗ ун ытамӗнчен Пӗчӗк Вера.

— Килӗшмест-им?— юри тӗлӗннӗ пек ыйтрӗ Женя. — Апла пулсан, сана ку таранччен никам та ыталаман, ӑнланмастӑн эсӗ нимӗн те! Кала тӗрӗссипе, ыталаман-и?

— Мӗн тума кирлӗ вӑл...

— Кирлӗ-и, кирлӗ мар-и, пурпӗрех пире, хӗрарӑмсене, ыталама туса янӑ. Юратма! Анчах кам юратать халь пире? Кам чуптӑвать? Тӑшман пулисем ҫеҫ чуптӑваҫҫӗ... Эх, хӗрсем, хӗрсем! Пур-ши ҫӗр ҫинче пирӗн телей, ҫук-ши?

— Вӑрҫӑ пӗтсен тин паллӑ пулать вӑл,— терӗ ку таранччен чӗнмесӗр ларнӑ Римма, ыттисем пекех кӑшт хӗрнӗскер.— Вӑрҫӑ пӗтнӗ тӗле кам чӗрӗ юлать — ҫав телейлӗ пулать.

— Хӑҫан пӗтет-ха вӑрҫи! Унччен пирӗнтен нумайӑшӗ Таня пек ҫӗре кӗрӗҫ. Эс те, эп те, пире паян хӑна тунӑ ак ҫак Пӗчӗк Вера та... Тӗрӗс мар-им?

— Кун пек калаҫса праҫнике ан пӑс-ха эсӗ, Женя! Пурнӑҫра усала мар, лайӑххине кӗтмелле.

— Эп мӗн, усалли ҫинчен ӗмӗтленетӗп-им? Манӑн пурӑнас килмест-и-мӗн? Чӗрене уҫса каласан, манӑн пурӑнас килет ҫеҫ те мар-ха, манӑн ача амӑшӗ те, мӑнуксен асламӑшӗ те пулассӑм килет. Пӗр кӗтӳ мӑнук чупкалатӑр ман тавра! Ҫав мӑнуксемшӗн ҫапӑҫатӑп та эп кунта!

Хӗрсем ахӑлтатса кулса ячӗҫ.

— Вӗсем ҫураличченех-и?

— Ай-ай, пит инҫе каять-ҫке сан ӗмӗтӳ!

— Халь кӑна вилӗм ҫинчен каларӑн-ҫке?

— Мана вӗлерсен — вӗсем ҫуралма пултараймаҫҫӗ,— сассине хӑпартрӗ Женя,— ҫавӑнпа та манӑн вилме юрамасть. Ҫавӑнпа та эпӗ пурӑнатӑпах! Сире те пурӑнма ыр сунатӑп. Пурӑнӑр, хӗрсем, вӑрҫӑ хыҫҫӑн пурте киле таврӑнӑр, юратӑр, лайӑх ҫынсене качча кайса, ачаллӑ-пӑчаллӑ пулӑр... Асаннесем пуличченех пурӑнӑр!

— Вӑт, ку тӗрӗс сӑмах! Куншӑн тата тепрер мензурка типӗтме те юрать!

Пӗчӗк Вера кӗленчери юлашки эрехе валеҫсе пачӗ.

Женя стена çинче çакăнса тăракан кивĕ гитарăна вĕçертсе илчĕ те — ăна Вера пĕр-икĕ уйăх каялла таçтан тупнă та халĕ хăйпех илсе çӳрет,—хĕлĕхĕсене кăшт тĕрĕслекеленĕ хыççăн хулăнрах сасăпа юрласа ячĕ:

Вспомни ночь метельную, шальную,
Вспомни домик на краю села...
Как в семью знакомую, родную
Ты в блиндаж к разведчикам пришла...

Унпа пĕрле ыттисем те — малтан хуллен, унтан хытăрах та янравлăрах — юрлама тытăнчĕç:

Ты вошла уверенно и просто
В круг армейской дружбы фронтовой,
Девушка в шинели не по росту,
Дорогой товарищ боевой...

Женя, пуçне ухса, кăтралатнă хĕрлĕ çӳçне каялла ывăтнă пек турĕ, гитара хĕлĕхĕсене пурне те пĕр харăс çапса янратса илчĕ. Хĕрсем унпа пĕрле тата хĕрӳллĕрех, пĕтĕм чĕререн, малалла юрларĕç:

Нас метель несла на крыльях белых
По полям заснеженным вперед...
Ты среди отчаянных и смелых
Шла с гранатой смело на врага...

Хĕрсен юрри вăйланнăçемĕн вăйланчĕ. Фронта нумай пулмасть кăна çитнĕ, анчах пурин кăмăлне те кайнă юрă сăмахĕсем хĕрсен чĕрине хускатрĕç. Юрăра темле урăх хĕр çинчен мар, хăйсем çинчен каланă пекех туйăнчĕ вĕсене:

Ты проходишь, плечи не сутуля,
Самым смелым равная в бою,
Не посмеет вражеская пуля
Посягнуть на молодость твою...

Долго будут помнить нашу поступь
Снеговые дали под Москвой,
Девушка в шинели не по росту,
Дорогой товарищ боевой!

Юрă пĕтрĕ, хĕрсем пĕр хушă шăп ларчĕç. Унтан Женя гитара хĕлĕхĕсене татах хускаткаласа илчĕ, фронтовиксен тепĕр юратнă юррине юрласа ячĕ:

Темная ночь, только пули свистят по степи,
Только ветер гудит в проводах...

Унпа пĕрле ĕнтĕ ыттисем те юрлама тытăнасшăнччĕ, анчах çав самантра пÿлĕме паçăр Таня вилтăпри çинчи юпа çине ун ятне çырнă ватăрах салтак-санитар васкаса пырса кĕчĕ.

— Сортировка, операционнăй, перевязочнăй! Халех хăвăр вырăнсене кайăр!— терĕ вăл, сывлăшне аран çавăрса ярса.

— Каллех аманнисене илсе килчĕç-им?— ыйтрĕ та-хăшĕ.

— Туллиех. Йывăррисем нумай...

Тек юрласси пулмарĕ вара.

## 5

Чăваш çĕршывĕнчен фронта пĕрле килнĕ юлташĕсене — рота командирне, политрука, вĕсен связнойне Володя Аруткина — медсанбатра ĕçлесе ирттернĕ çак йывăр кунсенче Римма тăтăшах аса илчĕ. Мĕнле-ши вĕсем унта, чиперех-ши, сывах-ши? Малти линирен илсе килсех тăракан аманнă салтаксем хушшинче вăл хăйсен ротинчи темиçе салтака палларĕ, хăшĕсем ăна хăйсем паллаттарчĕç («сестричка, эп сирĕн маршевăй ротăран, Канашран пĕрле килтĕмĕр...»). Вара Римма кашнинчех хăй сывăх туслашнă сынсем çинчен ыйтса пĕлме тăрăшрĕ:

— Рота командирĕ мĕнле унта? Сывах-и? Политрук тата? Связнойĕ, кĕçĕн сержант, Володя?

Ответсем тĕрлĕрен пулчĕç:

— Енер сывахчĕ, паян курман. Пирĕн взводнăя вĕлерчĕç, ăна вара хамах куртăм...

— Политрук аманнă, тенине илтсеттĕм, командирпа связной çинчен пĕлместĕп.

— Унта урлă-пирлĕ пăхса выртма вăхăт çук, хĕрĕм!

Юлашки икĕ кун хушшинче, пирĕннисем тăшманăн Воробьевкăри опорнăй пунктне çĕмĕрсе малалла кайнăранпа, Римма хăйсен ротинчи пĕр çынна та тĕл пулмарĕ. Хăй ăшĕнче вăл тусĕсене халлĕхе ним те пулманнине, вĕсем сыввине чĕререн ĕненсе пурăнчĕ. Политрук аманнă, терĕç ĕнтĕ, анчах, тен, суранĕ пысăках пулман та, вăл медсанбата та килмен, полкри санротăрах юлнă? Ун пеккисем те пулаççĕ. Теприсем тата амансан та стройран тухмаççĕ...

...Санитар пырса чĕнсен, Римма, ытти хĕрсемпе пĕрле, шкул суртне чупрĕ. Вĕсен «сортировкинче» чăнах та тин çеç илсе килнĕ аманнă салтаксем чылай иккен. Выртаççĕ,

ларассĕ. Нихăшинне те тумтирĕсене хывман-ха. Хăшĕсен çĕлĕкĕсем, шинелĕсем çинчи юр та ирĕлсе пĕтмен. Пурте питĕ шăннă курăнать — тулта сивĕ-çке, çил, тăман вĕçтерет. Çулĕ те сывăх мар — малти линирен кунта çитме халь çич-сакăр километр килмелле, теççĕ, çар малалла каять, çапах та медсанбата фронт сывăхнерех куçма приказ пулман, мĕншĕн тесен чакакан гитлеровецсем хăйсем хыççăн ял мар, пĕр пӳрт те хăвармаççĕ: ятарласа, пире кансĕр пултăр тесе.

Риммăпа Ирина аманнисене, яланхи пекех, васкаса хывăнтарма тытăнчĕç. Çав хушăрах вĕсене хăвăртрах ăшăтас шутпа пĕр санитар мăн чейникрен тутлă вĕри чей ĕçтерчĕ. Кăштах вăхăт иртсен, аманнисене татах илсе кĕме пуçларĕç. Акă, пĕрне носилкăпа çĕклесе кĕртрĕç те операци тăвакан пӳлĕм алăкĕ сывăхнерех пырса хучĕç.

— Ку — йывăр аманни,— терĕ çĕклесе кĕрекенсенчен пĕри.— Çур çула çитиччен йынăшкаларĕ, унтан шăп пулчĕ. Тăнне çухатрĕ пулмалла. Вилсех кайрĕ пуль тесе хăрарăм, анчах юн тымарне тыткаласа пăхрăм та — тапатчĕ-ха...

Римма, ун патне пырса, çиелтен витсе янă ăшă утияла пичĕ çинчен сирчĕ. Вара аманнă çын çине пĕрре пăхсанах унăн чĕри яштах турĕ те сывлăшĕ сасартăк пӳлĕнсе ларнă пек пулчĕ.

Носилка çинче Володя Аруткин выртнă-мĕн...

Сăнĕ шап-шурă унăн. Вилнĕ пекех, ним хускалмасăр выртать, сывлани те кăшт çеç сисĕнет. Кам пĕлет, тен, тепĕр темиçе самантранах пач сывлами пулать вăл?

— Турăçăм... Володя!— пăшăлтатса илчĕ те Римма, кукленсе, ун ал тымарне тытрĕ.—Володя, мĕнле-ха капла?! Володя, тетĕп! Аруткин, тусăм!

— Палланăскер-им?— ыйтрĕ ун çумне пырса тăнă Ирина.

— Палламасăр! Пирĕн вăл, чăваш каччи, пĕрле, пĕр ротăпа килнĕ эпир! Ах, Володя...

Унăн юн тымарĕ кăшт тапнине туйса илсенех, Римма операци пӳлĕмне чупса кĕчĕ.

— Военврач юлташ... Арефий Петрович! Питĕ йывăр аманнине илсе килчĕç, пирĕн ротăран... Тăнсăр... Пулăшасчĕ часрах, вилсе кайма пултарать!— хăвăрт каласа тăкрĕ вăл операцие хатĕрленсе тăракан хирурга.

...Темиçе минутран Володьăна операци сĕтелĕ çине выртарчĕç. Ăна кăкăртан амантнă иккен. Осколок шăп кăкăр варринчен пырса çапнă, шăммине çĕмĕрнĕ, анчах ша-

лалла кёреймен. Юн питё нумай кайнă пулмалла, çавăнпа унăн сăнĕ çеç мар, кĕлетки те хут пекех шурса кайнă...

Хирург Володя кăкри тĕлĕнче тĕрлĕ инструментсемпе мĕн-мĕн туни çине Римма пăхса тăма пултараймарĕ. Капланса килнĕ куççульне чарас тесе, куçне хупрĕ, тутисене çыртса ларса, аяккалла пăрăнчĕ. Хăй сивчир тытнă пек чĕтреме пуçларĕ.

— Мĕн пулĕ-ши ĕнтĕ халь? Çăлĕç-ши Володьăна? Ах, çăласчĕ-çке, çăласчĕ мĕнле те пулин!..

Вăхăт мĕн чухлĕ иртнине тавçăрса илме пултараймарĕ Римма. Те çур сехет, те пĕр сехет, те унтан та ытларах...

— Юн ямалли аппарат хатĕрлĕр!

Хирург çапла каланине илтсен тин Римма пĕтĕм кĕлеткипе картах сикрĕ те операци сĕтелĕ еннелле çавăрăнса тăчĕ. Эппин, хирург операци туса пĕтернĕ, халь, аманнине вăй кĕртме, пурнăç пама унăн юн тымарĕсене часрах юн ярас пулать. Халех, çак самантрах...

— Пĕрремĕш группа юнĕ, хăвăртрах!— терĕ хирург тепĕр хут.

— Пĕрремĕш группа юнĕ çук, Арефий Петрович...— сас пачĕ ăна хирĕç сестра.

— Епле çук?!

— Пĕтнĕ.

— Епле пĕтнĕ?

— Хăвăрах шутласа пăхăр, ĕнерпе паян мĕн чухлĕ юн кайрĕ. Паян илсе килеймерĕç...

— Мĕн тумалла, эппин? Ку качча халех юн ямалла, унсăрăн пĕтет вăл, ăнланатăр-и?

Вара çав самантрах, ним шухăшласа тăмасăрах, Римма хирург патнелле икĕ утăм ярса пусса аллине çĕклерĕ:

— Арефий Петрович, ман пĕрремĕш группа, илĕр манне!

Хирургпа ăна пулăшакан сестрасем пурте ун çине тĕлĕннĕ пекрех пăхрĕç.

— Эс ухмаха ернĕ пуль, Римма!—терĕ хирурги сестри, ватăрах хĕрарăм.— Эс ахаль те ырханкка, мĕнле юн пама пултаратăн?

— Юнĕ нумай кирлĕ-çке, хĕрĕм, питĕ нумай кирлĕ!— терĕ хирург та иккĕленерех.— Йывăр пулать сана...

— Пулин! Тӳсетĕп! Ку çыншăн эпĕ тем тӳсме те хатĕр!— хăюллăн хуравларĕ Римма.

Çавăнтах халатпа гимнастерка çаннисене пĕрле тавăрса хул кăкĕ патнелле хăпартма тытăнчĕ.

— Хăвăртрах, эппин, тăхтама вăхăт çук! Кая юлма пултаратпăр!— Хирург сассинче вăл пăлханма, пăшăрханма тытăнни сисĕнчĕ.

Римма операци сĕтелĕ çумне лартнă, клеенка сарнă сарлака сак çине выртрĕ. Хирург ассистенчĕ, çамрăк хĕрарăм-врач, юн ямалли аппарата ĕçлеттерме хатĕрлесе çитерчĕ, аппаратран тухакан пĕр резина трубкăна ним хускалмасăр, вилнĕ пекех выртакан Володя Аруткин алли патне, теприне Риммăнни патне çывхартрĕ...

Малтанах Римма сĕтел çинчи Володьăн çара хулне, унăн тăруках типшĕмленнĕ янахне курса выртрĕ, анчах хăйĕн юнĕ трубка тăрăх юхма пуçласан хăй сисмесĕрех куçĕсене хупрĕ.

«Усси пултăрах... усси пултăрах... çăласчĕ... çăласчĕ...»— Çак шухăш çеç вăркарĕ ун пуçĕнче.

Пӳлĕмре чылай хушă шăп пулчĕ. Çав тери шăп...

Унтан сасартăк таçта сывăхрах снаряд çурăлчĕ, кантăксем тăр-тăр-тăр! чĕтренсе илчĕç. Римма картах сикрĕ, анчах тахăш сестра ăна хулпуççинчен пусрĕ.

— Вырт, вырт, Римма... Сан хускалма юрамасть халь...

Тата тепĕр снаряд çурăлчĕ. Ку сывăхрах ӳкрĕ пулмалла, кантăксем хытăрах тăнкăртатрĕç.

Унтан тата тепĕр снаряд...

— Нивушлĕ ятарласах пирĕн медсанбата лектересшĕн пересçĕ? Çынçиенсем...

Римма тĕлĕрсе кайнă пек пула пуçларĕ.

— Çук, çук, юрамасть кун пек... Вăй пур-ха манăн...

Вăл йывăрланнă куç хупаххисене уçрĕ. Анчах нумайлăха мар.

— Арефий Петрович, тен, çитĕ? Хĕрачине ытла йывăр пулмĕ-ши?— хирурги сестрин сассине илтрĕ Римма.

— Çамрăк-ха, тӳсет,— терĕ ăна хирĕç хирург.— Нумай мар, тепĕр çĕр кубик çеç илетпĕр...

Римма сăнĕ шуралнăçемĕн шуралса пычĕ. Çак самантра вăл хăйне курас пулсан, хăй те хăраса каймаллаччĕ. Анчах пуçĕ чиперех ĕçлерĕ унăн.

«Усси пултăрах...»

— Çитет! Аппарата чарăр!— илтĕнчĕ унтан хирург сасси. Тепĕр самантран вăл Римма хăлхи патне пĕшкĕнчĕ:— Маттур, Римма, тупата, маттур! Çăлтăн эсĕ ун пурнăçне! Илтетĕн-и?

— Илтетĕп...

Тулта каллех снаряд çуралчĕ. Кантаксем чĕтренсе илчĕç. Римма çĕкленме пикенчĕ — пултараймарĕ. Вăй пĕртте юлман иккен. Ал-урана хутран тунă пек: ним те туймаççĕ.

— Хăвăртрах, палатăна! — хушрĕ хирург.

Хăйне носилка çине илсе хунă чух Римма сĕтел çинчи Володьăна курма ĕлкĕрчĕ. Ăна чĕрĕ çын сăнĕ кĕме пуçланă иккен. Питçăмартисем кăшт кăна хĕрелнĕ. Римма ун çине пăхнине хирург асăрхарĕ пулас та, хуллен кăна хулпуççинчен лăпкарĕ:

— Пурăнать халь вăл, пурăнать! Пăшăрханмалли çук!

Римма çăмăллăн сывласа ячĕ...

Аманнă салтака çăлма çакăн пек нумай юн панă хыççăн Риммăна пĕр эрне хăйсен пÿлĕмĕнче ним ĕçлеттермесĕр усрарĕç.

— Выртас, вăй илес пулать унăн...

Риммăн выртас килмерĕ, анчах тухтăрсем хушнине итлесех пулать. Пĕрле пурăнакан Иринăпа Пĕчĕк Верăсăр пуçне ун патне ытти сестрасем те пĕрмай пычĕç, часрах вăй илсе ура çине тăма ырă сунчĕç. Тухтăрсем те кĕре-кĕре курчĕç, ăна тутлăрах çитерме, лайăхрах пăхма хушрĕç. Çамрăк организм аптрамарĕ, Риммăн вăй хутшăнсах пычĕ.

Виççĕмĕш кунĕнче, каçалапа, ун патне хĕрлĕ çÿçпуçлă мăнтăрkка Женя чупса пычĕ.

— Итле-ха, героиня, сана пĕр аманнă лейтенант курасшăн! — кĕнĕ-кĕмен персе ячĕ вăл. — Малти линирен паян çаç илсе килнĕскер...

— Мĕнле лейтенант тата? — питĕ тĕлĕнсе тăрса ларчĕ Римма.

— Пехота. Хăй çамрăках мар, анчах аптрамасть, юратма пулать. Сăмахран каласан, хам эпĕ аслăраххисене ытларах кăмăллатăп. Тепĕр çамрăккипе шалт аптăратăн: ни лайăххăн ыталама, ни чуптума пĕлмест, пăру пек...

— Хăçан та пулин эсĕ çав хăвăн юратуна пулах пĕтетĕн акă, Женя! Эс ĕç çинчен кала — кам вăл, мĕнле çын?

— Мĕнле çын... Çавраka питлĕ, çырă çÿçлĕ, куçĕсем хураччĕ пулас... Пирĕн пата пырса выртнă-выртман вулама кĕнеке ыйтрĕ. Нумай вĕреннĕскер пулмалла.

— Хушамачĕ пур-и унăн? Хушамачĕ мĕнле?

— Çавна ыйтма пĕлмерĕм вара...

— Ну, эсĕ те çав! Çÿçне курнă, куçне астуса юлнă, хушаматне ыйтман! — Римма аса илме тытăнчĕ: кам пулма пултарать-ха ку? Мĕнле лейтенант? Фронта хăйпе пĕрле килнĕ маршевăй рота командирĕ мар-ши? Анчах вăл лей-

тенант мар, аслă лейтенант. Политрукăн та виçĕ кубик... Тĕлĕнмелле!

— Мĕн пирки курасшăн-ха вăл мана?— каллех ыйта пуçларĕ Римма.

— Ăçтан пĕлеп ара эп сирĕнне? Тен, вăл санăн тахçанхи савни!

— Çук манăн никам та, ан лăпăртат! Пулнă та — вăрçăн виççĕмĕш кунĕнчех пуçне хунă.

— Сана пит лайăх паллатăп, терĕ вăл... Кунта манпа тавлашса лариччен эс, тавай, тумлан та, çитсе кур ăна хăвăн куçупа! Эп сана савăнтарма ĕç пăрахса чупса килетĕп, эс пур — мана вăрçса ларатăн...— Женя алăк хăлăпĕнчен тытрĕ.

— Тăхта, эппин...

Женя ăна тумланма пулăшрĕ те вĕсем ерипен шкул çуртне тухса утрĕç. Риммăн вăй сахалтарах-ха, çавăнпа вăл Женьăран уртăнсах пычĕ.

— Çапах та, хăвна кам шырама пултарнине кăшт та пулин чухлатăн пулĕ ĕнтĕ?—ыйтрĕ пĕлес килнипе хальРиммăран та ытларах ăшталанакан Женя.

— Пĕлместĕп, Женя, пус, кас, çапах пĕлместĕп! Çук манăн нимĕнле паллана лейтенант та! Ним пытармасăр калатăп сана...

Шкул çурчĕн иккĕмĕш хутне хăпарса коридор тăрăх кăшт кайсан, вĕсем «терапия» тесе çырнă алăк умĕнче сывлăш çавăрма чарăнса тăчĕç.

— Çӳçпуçна кăштах тирпейлесем, ытла упăте пек пырса ан кĕр каччă умне! Ме, тыт!— Женя ватник кĕсйинчен пĕчĕк çаврака тĕкĕрпе тура кăларса пачĕ.

— Мĕн каччи пултăр? Палкатăн кирлĕ мара!— терĕ ăна хирĕç Римма. Хăй çапах та, çĕлĕкне хывса, çӳçне туракаласа илчĕ.

Шала кĕрсен, Женя ăна тӳрех хыçалти стена çумĕнчи, чи кĕтесри койка патне илсе пычĕ. Койка çинче выртакан çын кĕнеке вулатчĕ.

— Лейтенант юлташ! Эсир ыйтнипе Римма Сурская медсестрана чĕнсе килтĕм!— рапорт пана пекех янраса илчĕ Женя, аллине тăнлавĕ патне çĕклесе.

— Тĕрĕсрех каласан, лейтенант мар, аслă лейтенант,— терĕ те ăна хирĕç койка çинчи çын, кĕнекине çытар айне хурса, тăрса ларчĕ.

Женя йăнăшнă иккен: командир петлицисем çинче виçĕ кубик пулнă-мĕн, иккĕ мар. Мĕнле асăрхайман вара çавна

питех те вичкĕн куçлĕ хĕр? Ирĕксĕрех каçару ыйтмалла пулчĕ унăн, ним тума та çук.

— Салам, землячка!

Римма чутах тăнран тухса каятчĕ: койка çинче хăйсен ротин командирĕ Васильев лара парать! Авă кам пулнă иккен ăна курасшăнни!..

— Иван Васильевич! Эсир-и ку? Сывлăх сунатăп!..— Римма, Женьăна аяккалла тĕртсех, ун патнелле ыткăнчĕ те командир аллине тытса чăмăртарĕ.— Мĕншĕн кунта эсир, Иван Васильевич?!

— Мĕншĕнни паллă ĕнтĕ, Римма... Лектерчĕç партак!— Васильев хĕре, аллинчен туртса, койка çине хăйпе юнашар лартрĕ, хулпуççинчен лăпкаса илчĕ.

— Хытах-и? Ăçтан тиврĕ?— васкаса, пăлханса ыйтрĕ Римма.

— Хытах мар...— Иван Васильевич сылтăм ури çине кăтартрĕ.— Пуля анчах тивнĕ, тата шăмма та лекмен.

— Çапах суран-çке вăл...

— Эрнерен ытла выртмастăп. Эс ху мĕнле пурăнатăн? Уйрăлса кайнăранпа сан çинчен нимĕн те пĕлместĕп. Хăнăхрăн-и?

— Вăл маттур-ха пирĕн, чăн-чăн героиня!— калаçăва хутшăнчĕ халь те ура çинчех тăракан Женя. Калаçмасăр тăма питĕ кичем пулчĕ пулмалла ăна.

— Эс чар-ха чĕлхӳне,— пӳлчĕ ăна Римма,— чипер калаç!

— Чăннине ма каламалла мар?— парăнмарĕ Женя.

— Мĕн пулнă вара? Ман пĕлме юрамасть-и?—Римма куçĕнчен пăхрĕ Васильев.— Секрет мар пуль те?

— Мĕн секречĕ пултăр!— Женя çывăхарах пырса тăчĕ.— Ун çинчен дивизи хаçатĕнче те çырса кăларчĕç пулать те! Пĕр аманнă боеца уптçĕр кубик юн парса вилĕмрен çăлса хăварчĕ! Çавăнпа имшертерех вăл халь, анчах иртсе каять ĕнтĕ, тӳрленет.

— Кам ыйтать санран кун çинчен калаçма, Женя!— юлташĕ çине кăмăлсăр пăхрĕ Римма.

— Тĕрĕссех, эппин, ку, землячка?— Иван Васильевич аллине хĕр хулпуççийĕ çине хучĕ.

— Пулчĕ çав ун пекки... Медсанбатра пĕрремĕш группа юн пĕтнĕ те... сынни йывăр та...— тем аййăпа кĕнĕ пекех, çĕрелле пăхса каларĕ Римма.

— Кама патăн вара эс хăвăн çамрăк юнна, тусăм?

— Володьăна ара...

— Володьăна? Аруткина-и?— Васильев пĕтĕм кĕлеткипе ун еннелле çаврăнса ларчĕ.— Эс пулнă-и вара вăл?! Пăх-ха, ĕçсем мĕнлерех пулса пыраççĕ...

— Мĕнле ĕçсем?

— Ара, эп паян хама кунта илсе килсенех ыйтса пĕлтĕм ун çинчен: çав числара кăкăртан йывăр аманнă кĕçĕн сержант Аруткина илсе килнĕччĕ, мĕн пулчĕ-ши унпа, сываласса шанма пулать-и? Пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать, пĕр сестра хăйĕн юнне парса çăлчĕ ăна, терĕç мана. Сестрин ятне каламарĕç. Ну, маттур, маттур, Римма! Тавтапуç сана куншăн!— Васильев, ун пуçне хăй патне сывхартса, питĕнчен чуптурĕ.

— Мĕн тавĕ...— именсе кайрĕ Римма— Çавăн пек йывăр самант килсе тухрĕ те... Эп юн паман пулсан, хăшĕ те пулин урăххи паратчĕ пуль. Çынна çăлмалла-çке!

— Пирĕн ун пеккисем пулкалаççĕ,—терĕ Женя.—Мускав патĕнчи çапăçусем вăхăтĕнче кашниех юн панă эпир...

— Хăй, Аруткин, ун çинчен пĕлет-ши?

— Ăçтан пĕлтĕр? Вăл тăна кĕменччĕ ун чух. Эп ун кĕсйине çыру çырса чикесшĕнччĕ, анчах ĕлкĕреймерĕм. Тепĕр кунне вара ăна тыла илсе кайнă...

— Ну, нимех те мар ку. Кун çинчен эпир ăна пурĕпĕр пĕлтерĕпĕр-ха. Кăшт тӳрленсенех çырать ак вăл пирĕн пата, хуть те таçта пулсан та çырать. Адресне илсенех иксĕмĕр çырăпăр вара ун патне... Юрать-и?

— Юрать ара... Эсир хăвăр мĕнле, Иван Васильевич? Йывăр пулчĕ пуль унта?— Римма пуçĕпе хĕвеланăç еннелле сулса илчĕ.— Аманнисене ку кунсенче пит нумай илсе килчĕç, хамăр ротăрисене те тĕл пулкаларăм...

— Çăмăл теме çук çав. Уйрăмах çав Воробьевкăна илнĕ чух. Пирĕн ротăран çурри те юлмарĕ.

— Политрук мĕнле? Вăл аманнă, терĕç.

— Суранĕ йывăр пулман унăн, пуля хулне çеç чавса иртнĕ. Çапăçуран та тухмарĕ. Халь ман вырăна юлчĕ.

— Нимĕçсем чакаççĕ-и?

— Питех чакасшăн мар çав. Пĕрмай контратакăсем тăваççĕ, ӳсĕрпе ыткăнаççĕ, ниме те пăхмаççĕ. Анчах вĕсен контратакисем хыççăн пирĕн позицисем умĕнче мĕн чухлĕ виле выртса юлнине курасчĕ санăн!

— Кам виллисем?— хăрарах ыйтрĕ Римма.

— Паллах пирĕн мар, вĕсен.

Васильевпа Римма тахçанччен калаçса ларатчĕç пулĕ, анчах кăшт тăхтасан Женя чĕнчĕ:

— Атя, Римма, асатса ярам сана, атту часах пирĕн начальник килет, каҫхи обход пулать. Халь курнăҫрăр ĕнтĕ, пĕр-пĕрне тупрăр, малашне кашни кунах тĕл пулма пултаратăр...

— Питĕ пысăк тав сана куншăн, Женя, ҫав тери пысăк тав!— терĕ Васильев. Унтан Риммăна:— Эппин, май пулсан, час-часрах килсе ҫӳре эс ман патăма!— терĕ.

— Юрĕ, Иван Васильевич...

Каялла тавăннă чух Женя тӳрех ыйтрĕ Риммăран:

— Мĕнле ҫын ку? Питĕ кăмăллă-ҫке.

— Писатель вăл пирĕн... Пысăк писатель, — терĕ Римма.

— Писатель... Чăн-чăн писателех-и? Кĕнекесем ҫыраканни-и?

— Ҫавă. Нумай кĕнеке ҫырнă вăл. Хăшне-пĕрне вырăсла та куҫарса кăларнă.

— Авланнăскер-и? Е хусах?

— Икĕ ача унăн...

— Шел. Юратмастăп авланнисене. Сана ыталать, хăй ҫав вăхăтрах арăмĕ ҫинчен шухăшлать.

Римма тӳсеймерĕ, кулса ячĕ.

— Ну, Женя! Ялан пĕр юрă юрлатăн-ҫке! Пĕреххут, качча каяс пулать санăн.

— Виличчен кайса курасчĕ те ҫав, кама каятăн халь?

— Сахал-и лейтенантсем...

— Ҫук-ха, кирлĕ мар. Паян качча каятăн, ик кунтан тăлăх арăм пулса юлатăн. Ҫавăнпа пĕртте васкамастăп. Вăрҫă хыҫҫăн та тупăнĕ-ха пĕр-пĕр чăлах пире валли. Тем ан шутла эс ман ҫинчен, чĕлхепе ҫеҫ пакăлтататăп эпĕ, тепĕр чух ытла кичем пулса килнĕрен...

— Тен, санăн ҫапах та чĕрӳнте кам та пулин пур?

— Мĕнле калас сана... Пурччĕ те, кăларса ывăтрăм эп ăна чĕререн. Путсĕр ҫын пулнă вăл.

— Епле апла?

— Ҫаплах. Эс мĕн, вăрҫă пуҫланнă та — пирĕн ҫĕр-шывра сволочьсем пĕтнĕ, тетĕн-и? Пĕртте ун пек мар. Вăрҫă пуҫлансан вĕсем тата лайăхрах палăрчĕҫ... Эп ҫӳренĕ каччă лайăх спортсменччĕ, чупатчĕ, сикетчĕ, кашни ҫулах велосипедпа ăмăртса мала тухатчĕ, районри хаҫатра ҫавăн пирки унăн сăнне те кăларатчĕҫ, анчах ҫавă... вăрҫа кайма юрăхсăр пулнă иккен! Чĕри начар имĕш! Мĕнле майпа тетĕн? Йыснăшĕ, райбольница заведующийĕ, военкоматра призыв комиссин членĕ пулнипе! Ах, комисси хăйне брак-

ланă хыççăн, кaçхине ман пата больницăна чупса пычĕ çав... Эп шăпах дежурстврачăччĕ. Хĕпĕртенипе, ĕçсе лартнă хăй, чакак пек чакăлтатать, чарăнма та пĕлмест. Эп сана та вăрçа ярасран хăтарса хăварма пултаратăп, йыснана калатăп çеç, пĕр-пĕр чир тупать те санне, вара йăлт пулать, иксĕмĕр пĕрле пурăнма пуçлатпăр, тет. Тытăнчĕ çулăхма—ыталать, вăйпах чуптăвать. Йĕрĕнтерсех ситерчĕ! Пĕррех çупса ятăм вара. «Симулянт, жулик! Тухса вăркăн кунтан, курас килмест сана!» терĕм... Шутласа пăх-ха эсĕ, мĕн тери путсĕр çын! Ман ăна парăнмалла та, вăл вара мана вăрçа каяссинчен çăлса хăварать... Ирсĕр чун! Тек вара курман та эп ăна. Фронта каякан ытти спортсменсем пит лайăх хĕнесе хăварнă, тенине кăна илтсеттĕм. Темиçе кунтан пире, больницăри виç сестрана, мобилизаци листокĕсем пачĕç...

— Халь те килтех-ши вара вăл?

— Тĕрмере, тет. Спекуляципе лекнĕ. Раймаг заведующийĕ ăна дефицитлă таварсем парса тăнă, ку — аякка кайса сутаканни пулнă. Кала-ха, сысна мар-и ĕнтĕ вăл? Аçтан кăна тупăнаççĕ-тĕр çавăн пек ирсĕр чунсем! Судсăр-мĕнсĕр персе пăрахмалла ун пеккисене!

Женя тухса кайсан, Римма вăл каласа пани çинчен чылай шухăшласа выртрĕ. Чăнах та мĕнле пулма пултараççĕ ун пек çынсем? Çĕршыва калама çук хаяр та тискер тăшман килсе тапăнсан, çĕршыв умне çав тери пысăк хăрушлăх тухса тăрсан, ăна пĕтĕм вăя хурса, вилĕмрен те хăрамасăр хӳтĕлемелле чух, епле-ха аяккалла пăрăнмалла, ултавлă, намăссăр меслетсем тупса, хӳтте пытанмалла? Мĕнле чунпа, мĕнле совĕçпе? Мĕншĕн пĕрисен çĕршыва, хамăр халăха хӳтĕлесе, вут-çулăм ăшĕнче пулмалла, темтепĕр тӳсмелле, аманмалла, вилмелле, çемйисене — ашшĕамăшне, арăмĕсене, ачи-пăчине тăлăха хăвармалла, çав вăхăтрах теприсен килте, нимле хăрушлăх та çук çĕрте, ыттисем тăшмана çĕнтерсе телейлĕ пурнăçа тавăрасса кĕтсе лармалла?

Чăн та, тылра ĕçлекенсем те кирлĕ,— фронт валли хĕç-пăшал, çăкăр çителĕклĕ парса тăмалла, унсăр тăшмана çĕнтерме çук. Ун валли кирлĕ çынсене, специалистсене ятарласа уйăрса хăвараççĕ. Анчах мĕне, кама кирлĕ-ха çав Женьăн велосипедисчĕ? Вăрçа каяссинчен жуликла майпа хăтăлса юлни çитмен ăна, вăл тата халăх пурлăхне вăрласа, ăна хаклă хакпа сутса пуйма шут тытнă! Ак ăçта вăл паразит, халăх тăшманĕ! Ун пеккисем пытанса пурăнма мар, Тăван çĕршыва та çăмăллăнах сутма пултараççĕ. Ни-

мĕçсем вăхăтлăха тытса илнĕ вырăнсенчи тĕрлĕ старостăсем, полицайсем шăпах çавăн йышшисем ĕнтĕ!

Питĕ пăлханса кайрĕ Римма. Нумай курчĕ-çке вăл çак кунсенче. Чи лайăх çынсем тăшманпа çапăçса вилеççĕ, хăрушла аманаççĕ. Ак, халь кăна ытармалла мар Таньăна пытарчĕç, Володя Аруткин йывăр аманчĕ... Мĕн чухлĕ ун пеккисем! Çав вăхăтрах фронта каяссинчен тĕрлĕ меслетсемпе пăрăнса юлакансем çинчен илтсен, чĕре çурăлсах каять мар-и!..

Тепĕр виçĕ кунтан Римма каллех ĕçлеме тытăнчĕ. Иван Васильевич патне вăл унччен те ик-виçĕ хут кĕрсе тухнăччĕ, халь вара ăна кашни кунах курчĕ. Ак, паян та ирхи апат хыççăнах кĕчĕ ун патне.

— Суран мĕнле, Иван Васильевич? Тӳрленсе пырать-и? Пит кансĕрлемест-и?

— Иртет, Римма, кĕçех ротăна таврăнатăп ĕнтĕ. Çынсем лере çапăçнă чух кунта выртма та аван мар пек...

— Эсир хăвăрăн ирĕкпе мар-çке.

Римма пынă чух вăл, урисене койка çинчен усса, хулăн тетрадь çине тем çырса ларатчĕ.

— Кĕнеке пуçламарăр пулĕ те, Иван Васильевич?— ыйтрĕ Римма.

— Эй, кĕнеке çинчен каларăн-ха!— куларах ал сулчĕ писатель.— Ахаль çеç, манасран, мĕн курни-илтнине паллă туса пыратăп. Сан çинчен те çырса хутăм-ха. Тен, кирлĕ кунра кирлĕ пулĕ.

— Ман çинчен?— тĕлĕнчĕ Римма.— Мĕн çырма пулать ман çинчен? Эп çапăçусенче пулмастăп, нимĕçсене вĕлерместĕп, нимле паттăрла ĕç те туман...

— Туман пекех туйăнать-и?— куçĕсене хĕссе пăхрĕ ун çине писатель.

— Мĕн паттăрлăхĕ пултăр ман çумра?

— Володя Аруткина çавăн чухлĕ юн парса çăлнине ăçта хуратăн?

— Э-э, вăл ара... мĕн вăл?

— Мĕн мар çав, йăмăкăм, пысăк ĕç вăл санăн! Ак, тытатăп та паянах Шупашкарти хаçата çырса яратăп ун çинчен.

— Ан тĕлĕнтерĕр-ха! Мĕн тума кирлĕ вăл?—хĕрелсех кайрĕ хĕр.

— Епле мĕн тума пулать? Пĕлтĕр чăваш халăхĕ хăйĕн паттăр хĕрĕ çинчен. Çамрăккисемшĕн пример пулать... Питĕ лайăх пример!

— Тархасшăн ан çырăр, Иван Васильевич! Паллакансем: мухтанчăк, вĕçкĕн, тейĕç. Аван мар...

— Сана мухтанчăк теме — сăлтав çук. Эсĕ хăв çырмастăн вĕт-ха, эп çыратăп сан çинчен.

— Пурпĕрех ан çырăр! Кирлĕ мар!

— Юрĕ, эппин, питех килĕшместĕн пулсан — çырмăп,— терĕ Васильев, кăмăллăн кулкаласа.— Тепри пулсан, хăй çинчен хаçатра çырса кăларнăшăн тем пекех хĕпĕртет те-ха...

— Юрĕ, Иван Васильевич, калаçмăпăр ун çинчен,— ал сулчĕ Римма.— Кашни çыннăн хăйĕн характер, хăйне майлă кăмăл...

Анчах Иван Васильевич çапах та çырса янă иккен. Ун çинчен Римма чылай вăхăт иртсен тин пĕлчĕ...

## 6

— Ман пурнăçра пысăк улшăну пулать, Римма,— терĕ ăна Васильев икĕ кунтан.

— Мĕнле улшăну, Иван Васильевич? Ротăна таврăнасси çинчен калатăр-и эсир?— ыйтрĕ Римма.

— Çук, ротăна ярасшăн мар çав-ха, дивизи хаçатĕнче ĕçлеттересшĕн. Енер начподив заместителĕпе редактор килсе кайрĕç. Темиçе кун каялла вĕсен редакци секретарĕ, малти линие кайсан, артобстрела лексе вилнĕ. Мана çавăн вырăнне илесшĕн. Рота командирĕсем пур пирĕн, тата вĕсене тупасси те проблема мар, анчах редакцире ĕçлеме тултаракансем çук, теççĕ... Мĕнле шутлатăн эс çакăн пирки, землячка?

— Ой, питĕ шутсăр аван пулать ку, Иван Васильевич!— хавасланса, аллисене хире-хирĕç çупсах илчĕ Римма.— Эсир — паллă писатель, сирĕн вырăн шăпах редакцинче пулмалла!

— Хăйсем те çаплах каларĕç. Эп писательсен союзĕн членĕнче тăнине политотдела медсанбат комиссарĕ пĕлтернĕ те...

— Килĕшрĕр пуль эсир?

— Килĕшрĕм. Ыран каятăп ĕнтĕ. Ура тӳрленчĕ, тавтапуç сире хăвăрт сыватнăшăн...

— Мана ан манăр вара, Иван Васильевич, килкелесе курăр. Сирĕнсĕр пуçне пĕтĕм дивизийĕпе те палланă çын çук манăн. Сире эпĕ халь тăван пичче вырăннех шутлатăп... Чи сывăх çын эсир маншăн!

— Тавтапуç, Римма. Эсĕ те маншăн тăван йăмăк пекех!

Тепĕр кунне вĕсем сывпуллашрĕç. Иван Васильевич медсанбатран тухса кайнă хыççăн малтанхи кунсенче Риммăна тем çитмен пек туйăнчĕ, вăхăчĕ-вăхăчĕпе ăна питĕ кичем пулчĕ. Женя çакна сисрĕ те чăнласа калană пекех ыйтрĕ:

— Эсĕ леш хăвăрăн писатель пирки тунсăхлатăн вĕт, хура куç? Ăнсăртран, юратсах пăрахмарăн-и ăна?

— Ухмах пуль эсĕ,— терĕ ăна хирĕç Римма,— вăл манран вунултă çул аслă. Ку пĕрре. Унсăр пуçне тата Иван Васильевич çил вĕçтерекен çын та мар, нихçан та çăмăлттайланас çук, ун арăмĕ те хăй пекех ятлă çын — тава тивĕçлĕ артистка. Манран çĕр хут лайăхрах. Иван Васильевич ăна никампа та улăштарас çук. Лĕпĕртететĕн çав кирлĕ мара!

— Юрĕ, юрĕ,— аван мар пулса кайрĕ Женьăна,— шўтлесе çеç каларăм-çке. Шўт тунине ăнланмастăн пулсан — шарламастăп урăх...

Вĕсем час тĕл пулаймарĕç. Дивизи нимĕçсене хĕссе малаллах кайса пынипе медсанбат та тепĕр эрнерен малалла, фронт линийĕ çывăхнерех, куçрĕ. Гитлеровецсем хăйсен çулĕ çинче пĕр ял та хăварман пирки медсанбатăн вăрманта палаткăсем карса вырнаçма тиврĕ. Питĕ кансĕр пулчĕ, çапăçусем тăтăш пынипе аманнисем килсех тăчĕç. Çанталăкĕ шăнтса лартрĕ, палаткăсенче выртма та, операцисем тума та сивĕччĕ. Тухтăрсене те, сестрасене те питĕ йывăр килчĕ.

Анчах мĕн тăвассу пур? Тўсес пулать...

Çав кунсенче тата пĕтĕм медсанбата пăлхатса янă ĕненмелле мар хăрушла ĕç пулса иртрĕ...

Аманнисем нумай пухăннипе хирургсем икĕ талăк пĕр канмасăр ĕçлерĕç, операци тумалли сĕтелсем умĕнче аран тăракан пулчĕç. Сестрасем те халран кайса çитрĕç. Анчах ĕç çаплах пĕтмерĕ. Виççĕмĕш талăк пуçлансан, ирхине ирех, çил-тăман витĕр, медсанбат палаткисем вырнаçнă çĕре малти лини енчен пĕр çуна хуллен кăна çитсе чарăнчĕ. Çуна çинче пĕтĕмпе те пĕр çын çеç выртать, ăна носилка çине хунă. Лав хыççăн, ездовойпа пĕрле, полкри санрота фельдшерĕ килет. Лава палаткăсенчен чылай аякра чарса, фельдшер тўрех операци тăвакан палаткăна кĕрсе кайрĕ. Тепĕр икĕ минутран вăл унтан Басов подполковникпа пĕрле тухрĕ.

— Мĕнле секрет тата санăн, мĕншĕн шалта каламарăн?— кăмăлсăртарах ыйтрĕ хирург.

— Çынсем умĕнче калама юрамасть пуль, терĕм,— шăппăн тавăрчĕ фельдшер.

— Ăнланмастăп. Мĕн пулнă? Эсĕ аманнисене турттарса килнĕ пуль? Илсе кĕрĕр, эппин, часрах сортировкăна. Миçе çын санăн?

— Пĕр çын çеç. Анчах сортировкăна илсе кĕме юрамасть ăна.

— Мĕншĕн?

— Хускатма хăрушă.

— Бомба мар пулĕ-çке вăл, çурăлса каймасть пулĕ вĕт? Мĕн минретсе тăратăн эс ман пуçа?

Фельдшер, такам илтесрен хăранă пек, ун-кун пăхса илчĕ.

— Мина, полковник юлташ...

— Мĕнле мина? Ăçта мина? Ăнланмалларах калама çук-и?

— Аманнин пĕççине мина кĕрсе ларнă...

— Кĕрсе ларнă та — çурăлман-и?

— Çурăлман. Анчах кашни самантрах, кăшт çеç асăрханмасăр тыткаласанах, сиксе кайма пултарать.

Подполковник сăнĕ тӳрех улшăнчĕ, вăл куçĕсене часчас мăчлаттарса илчĕ, пирус кăларса хыпрĕ, анчах тивертме манса кайрĕ.

— Задача...— терĕ унтан.— Епле илсе çитернĕ-ха эс ăна? Тата çынни хăй мĕнле туять?

— Питĕ вăраххăн, лашана пуçĕнчен çавăтса, çунине сулăнчăксене ямасăр, уттарса илсе килтĕмĕр. Çынни хăй ним хускалмасăр выртать. Каланă эп ăна — кăшт хускалсанах ху та пĕтетĕн, пире те пĕтеретĕн, тенĕ...

— Мĕн тăвăпăр-ха ĕнтĕ эпир унпа?— ассăн сывласа ячĕ Басов.— Виççĕмĕш вăрçăра çӳретĕп — Халхин-Гол, Финлянди, халь ку вăрçă, анчах кун пекки пулманччĕ-ха ман практикăра. Илтмен те кун пекки çинчен, вуласа та курман...

— Епле те пулсан, ӳтне касса минине кăларса илес пулать, урăх ним тума та май çук,— терĕ фельдшер.

— Тăхта, эппин...

Подполковник палаткăна кĕчĕ. Темиçе минутранах сестрасемпе санитарсем каллĕ-маллĕ чупкалама тытăнчĕç, халь çеç операци тунисене çĕклесе тухрĕç. Вĕсемех юнашар тăракан палаткăсене те пушатрĕç. Сăлтавне пурте пĕлчĕç—

мина! Миналла çынна операци тăваççĕ! Мини ăнсăртран çурăлса кайсан, питĕ пысăк инкек сиксе тухма пултарать, çавăнпа сыхланас пулать...

— Халех, çак самантрах, пĕр-пĕр опытлă минометчик е сапер тупас пулать,— терĕ Басов батальон комиссарне, аяккалла чĕнсе илсе.— Мина текен теттесемпе выляса курман эпĕ, тахăш тĕлтен тытсан тем пулать...

Комиссар — Мускав патĕнче уринчен аманнă пирки паян кун та кăштах уксахлакан ватăрах çын — сывалма медсанбатра хăварнисем выртакан палаткăна чупрĕ. Вĕсен телейне, çăмăл аманнисем хушшинче миномет ротин командирĕ пулнă лейтенант тупăнчĕ.

— Минăсене сиенсĕрлетме пĕлетĕн-и?— тӳрех ыйтрĕ унран Басов подполковник.

— Чухлакалатăп, —терĕ лейтенант.

Çакăн хыççăн тин, Басов хушнипе, полкран килнĕ фельдшерпа ездовой минăллă боеца ерипен кăна çĕклесе килсе, носилки-мĕнĕпех сĕтел çине хучĕç. Басов пурне те халех тухса кайма хушрĕ. Палаткăра вăл хăй, фельдшер, икĕ сестра тата лейтенант-минометчик çеç юлчĕç.

— Сылтăм йĕм пĕççине касса çурăр!— хушрĕ Басов сестрана.

Сестра сĕтел патнелле пĕр утăм ярса пусрĕ те урăх хускалаймарĕ. Ун аллинчи хачă çил çинчи çулçă пек чĕтренчĕ.

— Мĕн эсĕ, Шура? Кас!— татах хушрĕ Басов.

— Пултараймастăп...

— Марш палатăран! Зоя, тыт хачă!— хушрĕ хирург тепĕр сестрана.— Хăвăртрах!

— Эп те хăратăп...— Ку вара вырăнтан та хускалаймарĕ.

— Кĕселсем эсир, фронтри сестрасем мар!— кăшкăрса пăрахрĕ Басов.— Иксĕре та паянах кухньăна паранкă шуратма хăваласа яратăп! Куçа ан курăнăр! Комиссар! Чĕнсе кил урăххисене! Фельдшер, кас!

Полкри фельдшер аманнин брюкине пĕçĕ тăрăх хачăпа ерипен çурса кăларчĕ. Халь ĕнтĕ пĕççе кĕрсе ларнă мина пит лайăх курăнчĕ. Пысăк мар вăл, аллă миллиметрлă минометран пемелли çеç, анчах, çурăлса каяс пулсан, аманнă салтакпа пĕрле çакăнта тăракансене пурне те пĕтерсе хума пултарать.

— Ну, халех леш тĕнчене ăсанас мар тесен, мĕн ту-

малла пирĕн?— ыйтрĕ Басов лейтенант-минометчикран.— Пăх лайăхрах...

Лейтенант сывăхарах пырса тăчĕ. Çын пĕççине пырса тăрăннă минăна пур енчен те пăхкаларĕ, ассăн сывласа илчĕ.

— Ку минăн взрывателĕ ун вĕçĕнче,— терĕ вăл.— Çавăнпа та ăна унталла-кунталла пăркалама юрамасть, пуçĕ ан хускалтăр унăн. Мĕнле пырса тăрăннă, çаплипех тăтăр.

— Пуçне хускатмасăр, мĕнле кăларса илĕпĕр-ха ăна ӳт ăшĕнчен? Кĕскерех кала.

— Ӳте кĕнĕ шăрпăк пек туртса кăларас пулать... Варринчентерех тытмалла та... ррaз! Çав кăна.

— Эпир ăна ррaз! тăвăпăр, вăл кĕрс! тăвĕ. Çав кăна пулать вара. Çапла-и? Е пулмасть-и ун пек?

— Шутласан, ун пек пулмалла мар. Эпир туртса кăларнă чух ун пуçне ниçта та çапăнтармастпăр-çке. Паллах, асăрханмалла ĕнтĕ...

— Пĕлетпĕр-ха асăрханмаллине.— Басов çамки çинчи тарне халат çаннипех шăлса илчĕ.

Çав вăхăтра палаткăна медсанбат комиссарĕпе пĕрле Риммăпа тепĕр ватăрах сестра кĕчĕç. Ватти шăпах операцисем тунă çĕрте ĕçлекенскер, анчах халь, икĕ талăк пĕр канмасăр ĕçленĕ хыççăн, ăна кăштах канма ирĕк панă-мĕн. Риммăна вăл ăнсăртран тĕл пулса, хăйне пулăшма илсе пынă.

— Васкас пулать, Зоя Павловна, килĕр часрах,—терĕ Басов, кăчăк туртса.

— Тур çырлах!— тăпах чарăнса тăчĕ лешĕ, аманни патне пырсан. Анчах хăраса ӳкни пĕртте палăрмарĕ. Римма ун хыçĕнче тăчĕ. Ӳтри мина çине пăхса, темиçе самантлăха хытнă пек пулчĕ вăл, çапах та хăйне хăй алла илме пултарчĕ: «Эп пĕччен мар вĕт кунта...»

Палаткăра шăп пулчĕ, халь ĕнтĕ Басов хушнисем çеç илтĕнчĕ:

— Иодлă патак! Новокаин!

Касма палăртнă вырăна, иодпа сĕрсе, новокаинпа укол тунă хыççăн, Басов, каялла пăхмасăрах, аллине тăсрĕ:

— Скальпель!*

Пит те ăста ĕçлет иккен Басов. Çын пĕççине вăл скальпельпе пĕрре сĕрсех касса çурчĕ. Аманни йынăшса ячĕ, анчах Басов ăна çав самантрах чарчĕ:

---

*Операци тумалли пĕчĕк çĕçĕ.

— Тӗк вырт! Ан хускал! Пӗлетӗн вӗт...

— Ç-çук, хускалмастӑп... пӗлетӗп...— терӗ аманнӑ çын шӑппӑн.

Каснӑ вырӑнтан юн тапса тухрӗ, Зоя Павловнӑпа хирург халачӗсем çине те сирпӗнчӗ.

— Римма, часрах тампон пар!—терӗ сестра.

Римма панӑ тампона вӑл юн юхакан тӗле пусрӗ. Унтан вӗтӗ юн тымарӗсене пӗчӗк пинцетсемпе пӑчӑртаса, юнне чарма пикенчӗ.

— Суранне сарӑр!— терӗ Басов.— Хӑвӑртрах!

Сестра, çап-çутӑ хурçӑ çекӗлсемпе ик енчен çаклатса, сурана сарчӗ. Çав самантрах вара Басов, минӑна варринчен тытса, ниçталла пӑркаламасӑр, ерипен шутарса кӑларчӗ.

— Тыт, лейтенант...

Миномётчик, юнпа йӗпенсе йӑпӑлкаланнӑ минӑна илсе, палаткӑран хӑвӑрт кӑна тухса кайрӗ.

— Урӑх кирлӗ мар эс пире,— тесе юлчӗ ун хыçӗнчен Басов, унтан тӳрех сестра енне çаврӑнчӗ:—Тампон! Бинт!

Çапла каларӗ те, çавӑнтах пукан çине ӳкнӗ пек ларчӗ.

— Ывӑнтӑм пулмалла эпӗ, Зоя Павловна...

— Ывӑнма мар, ухмаха ермелле кун пеккипе,— ассӑн сывласа ячӗ сестра.— Çырлахтӑр турӑ! Ӑçтан кӑна пулма пултарнӑ пуль... Тӗлӗнсе хытсах каймалла!

Минӑна кӑларса илнӗ вырӑнта халь тем пысӑкӑш суран пулса юлнӑ. Риммӑпа Зоя Павловна тени ун таврашӗнчи юна спиртпа тасатрӗç те, тампон хурса, çыхма тытӑнчӗç.

— Хӑрарӑн-и?— шӑппӑн ыйтрӗ аслӑ сестра Риммӑран.

— Хӑрамасӑр...— пӑшӑлтатрӗ Римма.— Мина та-ха вӑл...

— Эп хам та хӑрарӑм çав... Анчах тӳсес пулать, мӗн тӑвас тетӗн, вӑрçӑра вӗт эпир...

Иван Васильевича медсанбатран тухса кайнӑ хыççӑн пӗрремӗш хут курсанах, Римма ӑна çакӑн çинчен каласа пачӗ.

— Ак, тата тепӗр паттӑрла ӗç пулчӗ,— терӗ писатель.— Пуянлансах пырать санӑн фронтри биографи! Çырса пырасчӗ санӑн çавсем çинчен!

— Çук ӗнтӗ, манранах çырса пырасси пулас çук,— терӗ Римма.— Тата... мӗне кирлӗ вӑл? Мӗн пулнине эпӗ ахаль те лайӑх астӑватӑп. Кунта курни-тӳснине ӗмӗрне те манас çук пуль.

— Ну, ку вăл хăвăн ирĕкў, çапах та эп сана кăштах та пулин çырса пыма сĕнĕттĕм.

Римма писателе хăйсем пурăнакан палаткăна илсе кайса чей ĕçтерчĕ, çав хушăрах хăйĕн çинчен ыйтса пĕлме тытăнчĕ.

— Мĕнле вырнаçрăр унта, редакцинче? Пурнăç еплерех пырать?

— Аптрамасть, тавтапуç. Пит лайăх йышăнчĕç мана. Çыннисем те лайăх. Чăн та ĕнтĕ, хаçат ĕçне пĕлсех каймасçĕ, çавăнпа та мана йывăртарах лекет.— Писатель хуллен кулса илчĕ.— Редакторĕ юлашки вунă çул хушшинче пĕр редакцире снабжени начальникĕ пулнă, ĕмĕрне те çырман хăй, çапах та фронта ăна редактор туса янă...

— Мĕнле пулма пултарнă-ха вара ун пек?— тĕлĕнчĕ Римма.

— Çĕнĕ дивизи йĕркеленĕ чух çын çитмен пуль. Анчах пĕр наборщикĕ — доцент. Ялхуçалăх институтĕнче кафедра заведующийĕ пулнă...

— Епле лекнĕ-ха вăл наборщике?

— Çамрăк чух типографинче ĕçленĕ. Ну, çарти звани тавраш̆е çук унăн, рядовой. Çынни вара калама та çук аванскер... Хаçачĕ пирĕн ик кунта пĕрре тухать, пĕр кун малти линире материал пухса çӳретпĕр, тепĕр кун хаçат тăватпăр... Унтан каллех тухса утатпăр. Халь те малти линирен таврăнатăп, артиллеристсем патĕнче пултăм, çула май сан патна кĕрсе курас килчĕ. Тунсăхларăм мар-и!

— Тавтапуçах куншăн, Иван Васильевич! Ман хамăн та сире курас килекен пулчĕ.

— Тата мĕнле çĕн хыпарсем пур санăн? Килтен çырусем илкелетĕн пуль?

— Килĕ-мĕнĕ... Тăвансенчен пĕр ватӑ мăнаппа çеç манăн. Вăл çырсах тăрать. Ватăлнипе ĕçлеме пăрахнăччĕ, анчах халĕ каллех ĕçлет. Учительница вăл. Эвакуированнăй ачасене вĕрентетĕп, тет.

— Питĕ ырă ĕç тăвать. Вĕсене вĕрентмесĕр хăвармалла мар вĕт.

— Сирĕн хăвăрăн мĕнле тата? Çыраççĕ пуль?

— Фронта килнĕренпе темиçе те илтĕм ĕнтĕ. Арăм театртах, республика тăрăх патриотла спектакльсем кăтартса çӳреççĕ. Театр директорĕ манран пьеса ыйтать. Такăш вăхăтра çырмалла-ха ăна кунта! Писательсен союзĕнчен Семен Васильевич Эльгер те фронтри паттăрсем çинчен журнал валли очерксем яма хушать. Вĕсене çырма

пулĕ-ха хуть. Тĕлĕнмелле хыпар пĕлтерчĕ: Данилов-Чалдун хăйĕн ирĕкĕпе фронта кайнă, тет...

— Чим-ха, вăл çамрăк мар вĕт-ха!— тĕлĕнчĕ Римма.— Эп унăн биографине ялти шкултах вĕреннĕ: вăл граждан вăрçи вăхăтĕнчех Çĕпĕрте партизанра çӳренĕ!

— Тĕрĕс, çамрăк мар, аллăран иртнĕ. Анчах фашистсем вăрçăра хăйĕн ывăлне вĕлерни çинчен пĕлнĕ те килте ларайман, военкоматра вăрçа-вăрçах тухса кайнă фронта.

— Патриот...

— Патриот çав. Чăн-чăн патриот. Совет çынни.

— Апла, Шупашкарта халь Эльгерсĕр пуçне писательсем юлман та пуль? Пурте вăрçăра пуль?

— Пур-ха темиçе çын. Ваттисем, чирлисем. Анчах вĕсем те çине тăрсах çĕнтерӳ валли ĕçлеççĕ. Кам алăсене усса лартăр халь? Пурин те пĕр ĕмĕт — тăшмана аркатасси.

— Çав ĕнтĕ. Мĕнле ĕмĕт пулма пултартăр урăх?

Римма сасартăк тем аса илчĕ те писателе куçĕнчен пăхрĕ:

— Иван Васильевич! Сире пĕр япала кăтартам-и?

— Мĕнле япала? Кăтарт ара... кăмăлу пулсан. Тем, ытла хăрушă япалах мар пуль-çке?— кулса илчĕ Васильев.

Хĕр пĕшкĕнчĕ те койка айĕнчи чăматанран нимĕçсен хура-кăвак тĕслĕ пистолетне туртса кăларчĕ.

— Ак, курăр...

— Ăçтан тупрăн эс ку теттене?— тĕлĕнсех кайрĕ писатель.— «Вальтер» ку. Нимĕç офицерĕсен пистолечĕ...

— Пĕр аманнă çамрăк капитан парса хăварчĕ. Малтан вăл хăйне тыла ăсатаççĕ тесе шутламан та, кĕçех каяллла таврăнасса шанса, пăшалне санротăра парса хăварман. Тыла ямалла тунине пĕлсен вара мана чĕнсе илчĕ те вăрттăн тыттарчĕ: ме сана асăнмалăх, эп ăна хам вĕлернĕ нимĕç офицерĕнне кăларса илтĕм, усра, хăçан та пулсан кирлĕ пулĕ тен, терĕ... Илтĕм вара...

— Тĕрĕс тунă. Çапах та эс салтак, хĕçпăшал тытма тивĕç. Патронĕсем пур-и-ха? Çук пулсан, тупса пама пултаратăп.

— Пур, пур патронĕсем. Ик обойма туллиех.

— Усра, эппин, кирлĕ пуличчен.

— Нивушлĕ вăл мана хăçан та пулин кирлĕ пулма пултарать? Эпир малти линирен чылай аякра, иккĕмĕш эшелонра пурăнатпăр. Пирĕн пĕтĕм хĕçпăшал — скальпель те пинцет, шприц та бинт...

— Çавах усра. Вăрçăра тем пулма та пултарать, пĕл-

ме çук. Калăпăр, нимĕçсем сасартăк çак таврашра десант антарчĕç-тĕк? Мĕн тăватăн? Вĕсем сана автоматсенчен çунтараççĕ, эс вĕсене хирĕç пинцетпа тухатăн-и?

— Ан пултăрах ун пекки!

— Вăрçă, Римма! Теме те хатĕр пулас пулать. Тимлĕх, сисĕмлĕх çинчен эпир ахаль калатпăр-и кашни кун?

— Вăл тĕрĕс...

Çак вăхăтра Риммăна «сортировкăран» пырса чĕнчĕç те, вĕсен сăмах-юмахĕ татăлчĕ.

— Тепре куриччен, эппин, йăмăкăм....— Васильев хĕр аллине тытса чăмăртарĕ.— Чипер пурăн. Еçӳсем ăнса пыччăр.

— Сире те телей пултăр, Иван Васильевич! Шупашкара çырусем çырнă чух писательсене манран та салам ярăр!

— Юрать, Римма!

## 7

Пистолет чăнах та кирлĕ пулчĕ. Кирлĕ пулчĕ çеç те мар, вăл Риммăна вилĕмрен çăлса хăварчĕ.

Март уйăхĕн вĕçĕнче дивизин пĕр полкĕ пысăках мар юханшывăн сулахай енче ларакан чиркӳллĕ ялшăн çапăçрĕ. Икĕ талăк хушшинче çав ял темиçе хут та аларан алла куçрĕ. Нимĕн те юлмарĕ ĕнтĕ ялĕнче, вăл пĕтĕмпех ишĕлсе, çунса пĕтрĕ. Çуртсем мар, тĕрĕс-тĕкĕл йывăççем те юлмарĕç унта, кăмакасем те çунăк кирпĕч куписем çеç пулса вырт-рĕç. Нимĕçсен те, пирĕн те аманнисемпе вилнисем тем чухлех пулчĕ. Пуринчен ытларах пире тăшман авиацийĕ хытă аптратрĕ, «юнкерссемпе» «мессершмитсем» пирĕн малти линири боевой йĕркесене çеç мар, тылсене те пысăк сиен кӳчĕç. Пирĕн енчен вара самолетсем çукпа пĕрех...

Каçхине медсанбатри хĕрсене пурне те хăйсем пурăнакан палаткăна пухрĕç те, батальон комиссарĕ çапла каларĕ:

— Юлташсем, темиçе сехет каялла 182-мĕш полк санротине икĕ бомба лекнĕ. Пĕр фельдшерпа икĕ санинструктор вилнĕ, темиçе çын — вăл шутра рота командирĕ те — аманнă. Тĕрĕссипе, унта ĕçлекенсем те юлман, çапăçу хирĕнчен илсе тухнисене пулăшу паракан та çук. Çавăнпа та пире пĕр минут тăхтамасăрах 182-мĕш полка темиçе çын яма хушрĕç. Паллах, эпир хуть те кама та приказпа яма пултаратпăр, анчах пирĕн ун пек тăвас килмест. Пирĕн шутпа, полка хăйсен ирĕкĕпе каякансем тупăнсан аванта-

рах пулать. Хăвăрах пĕлетĕр, унта ĕçлеме кунтинчен йывăртарах, тен, çапăçу хирне тухса, аманнисене çавăнтах пулăшма, вĕсене çĕклесе тухма та тивĕ...

Хĕрсем комиссар сăмахĕсене питĕ тимлĕн, ним хускалмасăр итлесе ларчĕç. Вăл каласа пĕтерсен, пĕр-пĕринчен: «Эс, мĕнле? Мĕн шутлатăн?» тесе ыйтнă пек пăха-пăха илчĕç.

— Ну, камăн полка пулăшма каяс кăмăл пур?— ыйтрĕ комиссар, кăшт тăрсан.— Яланлăхах ямастпăр сире унта, ĕçсем йĕркене кĕрсенех каялла чĕнсе илетпĕр, мĕншĕн тесен кунта та çынсем çитмеççĕ.

— Эп каятăп!— никамран малтан ал çĕклесе ура çине тăчĕ хĕрлĕ çӳçпуçлă мăнтăркка Женя.— Епле пултăр-ха тата? Кирлĕ çĕре каясах пулать...

— Эп те каятăп,— ун хыççăн тăчĕ Римма.

Комиссар васкасах вĕсен хушамачĕсене хут çине çырса хучĕ.

— Маслова, Сурская... Так, так... Тата кам?

— Эпĕ!— Палатка варринчи тимĕр кăмака хыçĕнчен Пĕчĕк Вера сиксе тăрса ал çĕклерĕ.

— Пичужкина?— ыйтрĕ комиссар.

— Пичужкина мар ман хушамат, Пичугина, комиссар юлташ,— терĕ ăна хирĕç Вера.— Хĕрсем манран юри тăрăхласа «пичужка»* тесе чĕнеççĕ, тĕрĕс каламаççĕ...

— Тăрăхласа мар, юратса вăл, айван!— терĕ тахăшĕ.

Шкула çӳрекен хĕрача пек çеç курăнакан Вера çине комиссар пĕр хушă иккĕленсе пăхса тăчĕ.

— Сана йывăртарах пулать пуль унта, Пичугина,— терĕ унтан.— Аманнă çынсене çапăçу хирĕнчен йăтса тухма вăй нумай кирлĕ...

— Эсир мĕн, манăн вăй çук, тесшĕн-и? Эп пĕчĕкки çине ан пăхăр, вăй çитет манăн! Ак, Женьăран ыйтăр-ха, нумай пулмасть вăл мана çулăхрĕ те, эп ăна раз! çаврăса çапрăм. Çапла вĕт, Женя?

Пурте кулса ячĕç.

— Çивĕччи çивĕч ĕнтĕ хĕрачи,— çирĕплетрĕ мăнтăркка Женя.

— Тата эсир çакна шута илĕр, комиссар юлташ,— малалла хăвăрт каларĕ Вера.— Çапăçу хирĕнче унта ман пеккисем усăллăрах та пулма пултараççĕ. Пĕчĕкскер, эпĕ çĕр çумне йăпшăнатăп та, шăши пек таçта та кĕр-

---

*Пĕчĕк вĕçен кайăк.

се кайма пултаратăп, мана ниměнле снайпер та кураймасть, анчах Женя пекки пулсан... Пăхăр-ха, мěн пысăкăш мишень вăл, çухрăмран курма пулать!

Каллех кулса ячěç хěрсем.

— Юрě, эппин, ěнентертěн,— терě те комиссар, ун хушаматне те çырса хучě.

Пěчěк Вера хыççăн тата ик-виçě хěр аллисене тăратрěç.

Вěсене вара тепěр сехетренех полкри санротăран пынă лавпа малти лини еннелле илсе кайрěç. Тухса каяс умěн Римма, хăй чăматанěнчи «вальтер» çинчен аса илсе, ăна кěрěк çинчен çыхнă чěн пиçиххирен çакрě.

— Мěн тума илетěн эс ку гаубицăна? Нивушлě пăшаллах çапăçма ěмěтленетěн?— ыйтрě вěсене ăсатакан Ирина.—Е... унти офицерсем умěнче мухтанас килет-и? Тем тесен те, «вальтер» кашнинех лекмест...

— Кам пěлет, Иришка, кам пěлет!— терě ăна хирěç Римма. — Туя каймастпăр-çке...

— Ваттисен йăлипе, çула тухас умěн кăштах ларса илер-ха,— сěнчě Женя.— Тен, урăх эпир çакăн пек пěрле пухăнса калаçса та лараймăпăр!

— Тухатмăш эсě, Женя! Пăрах кирлě мара калаçма!— пўлчě ăна Пěчěк Вера.— Ялан çавăн пек эсě! Те чăнах вилессӳ килет? Ун пек кăмăлпа малти линие кайма килěшмелле те марччě санăн!

— Юрě, юрě, Верунька, тек хăратмăп сана. Кайрăмăр.

Полка вěсем çур çěр иртсен пěр сехетре çитрěç. Санрота халь çěнě çěрте, вěтлěх вăрман хěррине алтнă виçě пысăкăх мар çěрпӳртре иккен. Хěрсене аманнă аллине мăйěнчен çакса янă санрота командирě кěтсе илчě.

— Питě вăхăтлă çитрěр,— терě вăл.— Каç пуласпа фрицсем каллех вăйлă контратака турěç, пире çав шуйттан ялěнчен хěссе кăларчěç. Юханшыв урлă каçма та тытăнчěç, юрать-ха пире пулăшма çěн батальон çитрě те, вěсене каялла хăваласа кайрě. Ял халě каллех пирěн алăра, эпир ун леш вěçěнче оборона тытатпăр. Пирěн санитарсем аманнисене нумай илсе тухрěç, чылайăшне тыла яма ěлкěртěмěр...

— Кунта килнě чух улт-çичě лав та тěл пултăмăр, çавсем пуль ěнтě,— терě тӳсěмсěр Женя.

— Çавсем. Анчах аманнисене пурне те пуçтарса тухнă теме çук. Вилнисем хушшинче йывăр аманнисем, тăнран кайнисем выртма пултараççě. Тул çутăличчен çавсене йăлт тупса илсе тухмалла. Çавăнпа та сирěн халех малти линие

кайма тивет. Кашни ҫынна тӗрӗслесе пӑхӑр. Кашнине! Ан тив, ҫын хускалмасть пултӑр, сас та кӑлараймасть, ҫапах та тен, сывлать-ха, вилмен! Пирӗншӗн кашни ҫын хаклӑ. Сирӗн пурин те волокушӑсем пулаҫҫӗ, чӗррисем тупӑнсанах хурса килетӗр. Унта, тӗттӗмре, курӑнсах кайман суран-сене тупса ҫыхма май килмӗ, мӗн тумаллине кунта тӑвӑпӑр, ҫыннисене чӗррӗн илсе ҫитересчӗ кӑна. Ыйтмаллисем пур-и?

— Ҫук, пӗтӗмпех паллӑ,— терӗ Женя пуриншӗн те.

— Эппин, сире халех пирӗн старшина ертсе каять. Анӑҫлӑ ӗҫлемелле пултӑр!

Тепӗр ҫур сехетрен хӗрсем вӑрман хӗррине тухрӗҫ. Малта — юрпа пӗр тикӗссӗн витӗннӗ уй, тӗттӗмре юрӗ хура-кӑваккӑн курӑнать, лерен, малтан, хӗвеланӑҫ енчен, пӗр вӗҫӗм пулеметсем тӑкӑртатни илтӗнет — вӗсем инҫетре те мар, юнашарах пулнӑн туйӑнать. Каҫхи сасӑ уктавлӑ-ҫке. Ҫӗрлехи тӗттӗме тек-текех тӳпенелле чашкӑрса хӑпа-ракан ракетӑсем ҫураҫҫӗ, пӗр хушӑ пӑр-пӑр-пӑр! туса ҫу-татса тӑраҫҫӗ те сӳнеҫҫӗ. Тавралӑх вара унчченхинчен те тӗттӗмрех пулса каять.

Вӑрмантан малти лини еннелле самаях сарлака, та-кӑрлатнӑ кукӑр-макӑр сукмак каять иккен. Унӑн ик енӗпе те юр купаланӑран, вӑл халӗ траншея манерлӗрех. Анчах пур ҫӗрте те апла мар вӑл, хӑшпӗр вырӑнсенче купаланӑ юр снаряд е мина лекнипе ишӗлсе аннӑ, унта вара хуп-ху-рах. Сукмак хӗрринче, унта-кунта, чӑрӑш лӑссисем курӑ-наҫҫӗ — вӗсене ҫӗрле ҫӳрекенсем аташса каясран чиккелесе тухнӑ пулмалла.

Санрота старшини ним чӗнмесӗр, малта пырать. Вӑ-хӑт-вӑхӑт каялла ҫаврӑна-ҫаврӑна пӑхать: юлман-и вӑл ертсе пыракансем? Хӗрӗсем те чӗнмеҫҫӗ, вӗсем ытларах ҫӗ-релле, ура айнелле пӑхса пыраҫҫӗ — такӑнса ӳкесрен.

Сукмак анаталла сулӑнни сисӗнчӗ.

— Каймалли тата инҫе-и-ха?— ыйтрӗ старшина хыҫ-ҫӑнах утакан Женя.

— Ҫитетпӗр ӗнтӗ,— терӗ лешӗ.— Кӗҫех ҫырма пулать, юханшыв, ун леш енче чӑнках мар сӑрт, сӑрт ҫинче — ял. Пирӗннисем ҫав ялӑн тепӗр вӗҫӗнче — унта каллех ҫырма. Шутсӑр кансӗрлеҫҫӗ пире вӑл ҫырмасем. Аҫта ҫырма — фриц унта яланах оборона линийӗ тӑвать, шуйттан.

Умри сукмак сасартӑк юплеНсе кайрӗ. Старшина хӗр-сене тӳрӗ каяканнипе илсе пычӗ те пӑртак кайсан, чарӑнса тӑчӗ.

— Юлашки çапăçу çакăнта пулнă,— терĕ вăл.— Куратăр-и, юр çинче хурасем пур? Вилесем вĕсем...

— Пирĕннисем-и?— ыйтрĕ Пĕчĕк Вера шăппăн.

— Пирĕннисем çеç мар, тăшмансем те пулма пултараççĕ. Патне çитсен, куратăр унта...

— Эс ху каятăн-и халь?

— Пушăллах каймастăп ĕнтĕ. Чĕррисем тупăнчĕç-тĕк...

Çав самантра хура тӳпере ракета çуталса кайрĕ. Аялта, инçетрех те мар, çын мĕлкисем шуни курăнчĕ.

— Пирĕн санитарсем пулас. Атьăр!— аллипе малалла сулчĕ те старшина, сăртран чупсах анса кайрĕ.

Лапамра чăнах та санитарсем пулнă-мĕн. Волокушисем çине икшер çын хунă та тăвалла хăпараççĕ.

— Чĕррисем пуль?— ыйтрĕ старшина, вĕсемпе танлашсан.

— Вилнисене музыкантсем пуçтараççĕ,— аллипе ту еннелле сулчĕ санитарсенчен пĕри.

— Аманнисем, пуçтарса тухманнисем, татах пур-ши? Эп сире валли помощниксем илсе килтĕм...

— Пулма пултараççĕ, старшина юлташ, анаталла кайса пăхас пулать. Эпир кĕпертен малалла кайман-ха.

— Юрĕ, уттарăр, эппин, кусем шăнса кайма пултараççĕ, часрах илсе çитерес пулать.

Санитарсем тăвалла утрĕç, старшина хĕрсене хăшин ăçтарах каймаллине кăтартрĕ. Хăй Пĕчĕк Верăпа пĕрле юлчĕ.

Улăхра та, çырма тĕпĕнчи пăр çинче те, шыв леш енче те вилесем нумай иккен. Ĕнер каçпа пулса иртнĕ хаяр тытăçу хыççăн пуçтарайман-ха вĕсене. Старшина хушнипе, Женьăпа Римма кĕпертен анатараха кайрĕç. Хăрушă, салху пулчĕ вилесем хушшипе пыма. Женя кун пеккисене унччен те тĕл пулнă-ха, хăнăхнă («Э-э, тусăм, Мускав патĕнче çапăçнă чух эпир кунран та хăрушăраххине курнă, унта хăш чух виле çинче виле выртатчĕ»), анчах Римма вара пĕрремĕш хут курать. Вилесем тĕрлĕ майлă выртаççĕ: хăшĕсем, месерле ӳксе, аллисене сарса пăрахнă, теприсем малалла тирĕннĕ, пуçĕсене юр ăшне чикнĕ. Анчах пурне те вĕсене атакăна ыткăннă чух çапса антарнă ĕнтĕ — пичĕсем пурин те малалла, хĕвеланăç еннелле...

Санрота командирĕ хушнă пек, Риммăпа Женя хăйсем тĕл пулакан кашни кĕлетке умнех пĕшкĕнчĕç, вĕсен алтымарĕсене тытса пăхрĕç, сывлани-сыламаннине итлерĕç. Пĕр çур сехет ытла çӳрерĕç çапла, анчах чĕррисем пĕрре те тĕл

пулмарĕç. Шыв хĕррипе пырсан-пырсан, Римма сасартăк таçта çын йынăшнине илтрĕ.

— Илтетĕн-и?— шăппăн ыйтрĕ вăл Женьăран.

— Илтетĕп.

— Хăш тĕлте-ши?

— Ав, çыран айĕнче пек...

Вĕсем хăйсен çăмăл волокушисене пĕр виç метр çӳллĕш сĕвекрех çыранран сиктерчĕç, унтан хăйсем те çунашкапа ярăннă пек шуса анчĕç. Чăнах та, çывăхрах çын выртать-мĕн. Ӳппĕн. Пĕр аллине çамки айне хунă, теприне аяккалла янă. Хĕрсем тӳрех ун умне пĕшкĕнчĕç, Женя алтымарне тытрĕ.

— Чĕрĕ... Ăçтан аманнă-ши, мăнтарăн?— терĕ вăл, çав тери хĕрхенсе. Хăй çавăнтах ун-кун пăхкаласа илчĕ:— Татах çук-ши кун пеккисем çак таврара? Шыракала-ха.

Римма пăр çинче кăшт аяккарах выртакан кĕлеткесем патнелле чупрĕ. Пĕрне пăхрĕ, теприне... Виççĕмĕшĕн алтымарĕ тапать иккен.

— Женя-а! Ки-ил!

— Пур-и мĕн?— сас пачĕ те ăна хирĕç Женя, ун патне кайрĕ.

— Сывлать...

— Турра шĕкĕр! Ман валли пулчĕ, тен сан валли те тупăнĕ-ха. Вара халех каялла каятпăр...

Женя хăйĕн волокушине туртса пычĕ. Хĕрсем ним пĕлми выртакан çынна, ерипен çĕклесе, ун çине хучĕç.

— Эс куна лешин патне илсе кай, эп тата ав çавăнталла çитсе пăхам. Тем курăннă пек туйăнать унта.—Римма анаталла чупсах кайрĕ.

Каллех пĕрин патне кукленчĕ, теприн патне... Сывламаççĕ-ши хăшĕ те пулин?

Çук, кусем вилнĕ.

Унтан тата малалла пăхрĕ те, нимĕçсем янă ракета çуталса илнĕ самантра пĕр хура кĕлетке упаленнине курах кайрĕ. Кунталла мар, малти лини еннелле упаленет. Ăспуçĕ арканса кайнă пуль ĕнтĕ, ăçталла каймаллине те чухлаймасть, шеремет!

— Юлта-аш! Унталла каймалла ма-ар! Тăхта, халех пырса пулăшатăп сана-а!— кăшкăрчĕ ăна Римма. Унтан, çумĕнчи санитари сумкине çурăмĕ хыçнелле ывăтса, ун патнелле чупрĕ. Анчах вунă утăм та тăваймарĕ — сылтăм ури пĕçĕ кăкĕ таранах шыва анса кайрĕ те вăл пăр çине хайрăлса ӳкрĕ: ун çулĕ çинче мина шăтарнă вакă пекки пулнă-мĕн.

— Ы-ых, ш-шуйттан!— вăрçса илчĕ те Римма, урине часрах шывран туртса кăлармасăр пикенчĕ. Юрать-ха, мамăк хурса çĕлетнĕ шалавар тăхăннă та, шыв çăматă кунчинчен кĕреймен те. Пăр çине сиксе тухсан, Римма çиелтен йĕпеннĕ йĕм пĕççипе çăматтине алсишпе сăтăра-сăтăра илчĕ.

«Юрать-ха, шăтăкĕ пысăках мар, атту пĕтеттĕм вĕт»,— сехĕрленсе ӳкрĕ хĕр.

Çитменнине тата ӳкнĕ чух вăл чĕркуççине ыраттарнă иккен — уксахлать. Пулать те вĕт кĕтмен инкек! Мĕнле çӳрес капла?

Вăл малалла пăхрĕ. Аçта-ха ара леш, халь кăна упаленнĕ çын? Малта ик-виçĕ хускалман кĕлетке выртать. Халран кайнипе, çавсем хушшине ӳкрĕ-ши? Анчах хăшĕха вăл?

Римма, хуллен уксахласа, çывăхарах пычĕ. Пĕрин умне пĕшкĕнчĕ — вилнĕ çын. Тепри те. Виççĕмĕшĕ кăшт аяккарах выртать. Пичĕпе юр ăшне тăраннă. Римма ун патне пырса тăчĕ.

— Юлташ! Юлташ, тетĕп... Эс чĕрĕ-и? Эс мар-и халь çеç упаленеттĕн?— самаях хыттăн ыйтрĕ вăл.

Выртаканни хирĕç чĕнмерĕ. Тен ку та вилнĕскер пулчĕ? Тен, упаленекенни лешĕ, тата кăшт аяккарахри? Çапах та, куна та тĕрĕслесе пăхас пулать...

Римма, ыратман ури çине чĕркуçленсе, выртакан çыннăн аллине тытса пăхма тăчĕ. Çав самантра кĕлетке, сасартăк хускалса, вăрт! çаврăнчĕ те, пĕрре куç хупса иличчен тенĕ пек, ик аллине пĕр харăсах Римма патнелле тăсрĕ, хăй тем мăкăртатса илчĕ.

«Нимĕç!..» — шухăш пырса çапрĕ Римма пуçне.

Вăл пĕтĕм пĕвĕпе каялла сулăнса кайрĕ.

Çапла çав, ун умĕнче хамăр çын мар, фашист пулнă иккен! Римма ун сăнне уйăрса илеймерĕ, вăл пуçне хĕрарăм тутăрĕпе чĕркенине çеç курма ĕлкĕрчĕ. Нимĕç ăна тӳрех пырĕнчен ярса илме шутланă пулмалла та — пулаймарĕ унăн: пĕр аллипе кĕрĕк çухавинчен çеç тытма ĕлкĕрчĕ. Анчах Римма йăпăр-япăр ура çине сиксе тăнипе çухави те ун аллинчен вĕçерĕнсе кайрĕ.

— Женя-а!— кăшкăрса ячĕ Римма, çав тери хăраса ӳксе.

Хăрамасăр! Кам шутлама, кам кĕтме пултарнă çакнашкал пулса тухасса! Сĕм-çĕрле, никам çук çĕрте, пĕрпĕччен, фашистпа куçа-куçăн...

Нимĕç, чĕркуççисем çине çĕкленсе, аллисене тăсса, Римма патнелле хăвăрт шуса пычĕ. Унăн урине аманнă пулмалла, ура çине тăраймасть.

— Руссиш швайн... болшевик... убивайт!— хăйăлтатрĕ нимĕç.— Убивайт Иван! Зейчас...

Римма хăвăрт кăна темиçе утăм каялла чакрĕ те çав самантрах хăй çумĕнче нимĕçсен «вальтерĕ» пуррине аса илчĕ. Сылтăм аллине кобур патнелле ячĕ... Ун хыççăн мĕн пулнине хăй те лайăххăн астăваймарĕ вăл. Темле, тахăш самантра... икĕ хутчен пăшал сасси кĕрслетсе илчĕ. Нимĕç, аллисене Римма патнелле тăснă халлĕнех юр çине йăванчĕ.

— Женя-а!..

Римма тек каялла та çаврăнса пăхмарĕ, хăйĕн тусĕ юлнă çĕрелле чупрĕ. Анчах Женя та, вăл кăшкăрнине илтсе, ун патнелле чупнă-мĕн. Ăна тĕл пулсан, Римма тӳрех ун мăйĕнчен уртăнчĕ, хăй вара сивчир тытнă пек чĕтрерĕ.

— Мĕн эсĕ, Римма? Мĕн пулчĕ капла?— хыпăнса ыйтрĕ Женя.

— Нимĕç унта...— аран тавăрчĕ Римма.

— Нимĕç? Мĕнле нимĕç? Ан калаç-ха кирлĕ мара, мĕн нимĕçĕ пултăр кунта, пирĕннисем ав ăçта çити кайнă та! Хăранипе çавăн пек туйăнчĕ пуль сана!— ĕненесшĕн пулмарĕ Женя.

— Туйăнмарĕ çав! Вăл мана çулса илесшĕн пулчĕ... Амансан, тăнне çухатса выртса юлнă пулмалла та, халь тăна кĕнĕ... Эп вăл упаленнине асăрхарăм. Кунталла мар, лерелле каятчĕ... Пулăшас тесе пытăм та — чут аллине лекеттĕм...

Хĕрсем патне старшина чупса çитрĕ.

— Мĕн пулчĕ сирĕн кунта? Эп пăшал сассисем илтрĕм...

Риммăн мĕн пулнине тепĕр хут каласа пама тиврĕ.

— Чĕррипех юлчĕ-и вăл халь?— ыйтрĕ старшина.

— Петĕм эп ăна...

— Мĕнпе петĕн? Сан пистолет пулнă-им?

— Пулнă...

— Лектертĕн-и хуть?

— Лекрĕ пуль. Виç утăмранах петĕм те-ха...

— Атьăр, эппин, кайса пăхатпăр ăна!

— Мĕн тума? Мĕне кирлĕ ăна кайса пăхни?— тĕлĕнчĕ Женя.

— Айван хĕрача! Нивушлĕ чухлаймастăн? Ун çумĕнче мĕнле хут-документ пур, йăлт кăларса илес пулать! Пĕл-

местĕн-им эс çав йĕркене? Вĕрентмен-им сире? Атьăр, атьăр!

Вĕсем каялла çавăнса пынă чух нимĕç вăрăм аллисене ик еннелле сарса пăрахса выртатчĕ. Риммăпа Женя ун çывăхне те пымарĕç, старшина вара пур кĕсйисене те ухтарчĕ. Тĕрлĕ хутсем нумай пулнă иккен ун çумĕнче. Вĕсене старшина хăй сумкине чикрĕ.

— Таврăнсанах особăй отдела паратпăр...

Волокушăсем çине икшер çын хурса, тул çутăласпа вĕсем ротăна таврăнчĕç. Ытти хĕрсем, старшинапа пĕрле, вĕсенчен кăшт маларах çитнĕ-мĕн. Пĕчĕк Вера та икĕ çын илсе килнĕ. Питĕ ывăннă хăй, ура çинче аран тăрать, анчах никама та палăртасшăн мар çакна. Паттăр мар-и! Сестрасене уйăрса панă пĕчĕк çĕрпӳрте кĕрсен вара нар çине выртнă-выртманах вилнĕ пек çывăрса кайрĕ...

Риммăпа Женя талăк ытла çывăрман тата, çĕрĕпе çӳресе, халран кайса çитнĕ пулсан та, тӳрех канма выртаймарĕç-ха, вĕсен чылай хушă санрота командирĕ патĕнче лармалла пулчĕ. Малтан лере, малти линире, мĕн пулса иртни çинчен каласа пачĕç вĕсем, унтан рота командирĕпе, старшинапа пĕрле Римма вĕлернĕ нимĕç япалисене пăхма тытăнчĕç.

Мĕн кăна çук вăл çынçиенĕн! Пĕр çыхă çыру,—килĕнчен янăскерсем пулмалла. Латинла саспаллисене пĕлекен хĕрсем конвертсем çине çырнисене çăмăллăнах вуларĕç: çӳлерехре хирти почта номерĕпе салтакăн ятне-хушаматне çырнă — Ганс Клаус ятлă пулнă иккен вăл. Аяларахра килти адресне кăтартнă: Брауншвейг, Гитлерштрассе, 92. Эппин, ку нимĕç Брауншвейг хулинче, Гитлер урамĕнче пурăннă. Питĕ инçетрен килнĕ хăйне валли «пурнăç ирĕклĕхĕ» шырама! Тепĕр çыхăра — фотоӳкерчĕксем. Тем тĕрли те пур! Килте çемйипе пĕрле ӳкернисем, çамрăкрах хĕрарăмпа ик ача уйрăммăн ӳкерĕннисем — арăмĕпе ачисем пулмалла ĕнтĕ. Стройра тăнă чух ӳкернисем... Акă, вăл пĕччен тăрать — пилоткине чалăш лартнă, китель çухавине вĕçертсе янă, çаннисене тавăрнă, умĕнче автомат, хăй касса кайса кулать... Ун çурăмĕ хыçĕнче — пушар, тĕтĕм палкаса хăпарать. Ку ĕнтĕ фронтра, пирĕн çĕр çинче ӳкернĕскер. Савăнать фашист совет хулине пырса кĕрсе ăна вут хыптарнăшăн!

Аяларахран тата хăрушăрах ӳкерчĕксем туха пуçларĕç. Акă тыткăна лекнĕ совет салтакĕсен колонни. Нумайăшĕ пуçĕсене, аллисене бинтланă. Хăшĕсене, халтан кайса çит-

нисене, юлташӗсем ик енчен ҫавӑтнӑ. Юнашарах конвоирсем пыраҫҫӗ. Чи малта — вӑл фотограф умӗнченех утса иртнӗ ӗнтӗ — ҫак Ганс Клаус пырать. Автоматне кӑвапа тӗлне тытнӑ, пӳрнисем спусковой крючок ҫинче, кашни самантрах персе яма пултарать... Кам пӗлет, тен, пирӗн ҫынсене персе вӗлерме илсе кайнӑ чух ӳкерттернӗ? Тен, ҫак фотоӳкерчӗк ҫинчи пӗр совет салтакӗ те ҫук халь ҫут тӗнчере?

Акӑ, хӗллехи ӳкерчӗк. Икӗ пысӑк йывӑҫ хушшинче — хулӑн кашта, ҫав каштаран виҫӗ ҫын ҫакнӑ. Варринче ҫамрӑк кӑна хӗрарӑм. Тен, хӗрарӑм та мар, хӗр пулӗ. Вӗсем вилнӗ ӗнтӗ. Кашни кӑкри ҫинчех — фанер татки, ун ҫине «партизан» тесе ҫырни палӑрать. Аялта, ҫакса вӗлернисен урисенчен инҫе те мар, нимӗҫ офицерӗсемпе салтакӗсем тӑраҫҫӗ. Хӑшӗсем кулаҫҫӗ... Ганс Клаус та кулать. Савӑннӑ!

— Кайран хӑйсен «паттӑрлӑхӗ» ҫинчен аса илсе пурӑнма ӳкерттернӗ ӗнтӗ, ҫынҫиенсем!— ассӑн сывласа илчӗ санрота командирӗ.— Анчах пирӗншӗн ку вӗсене ӗмӗр-ӗмӗр айӑпласа пурӑнмалли документ пулать. Истори докуменчӗ. Истори судӗнчен пурӗпӗр пӑрӑнса юлаймаҫҫӗ вӑл каннибалсем!..

Унтан Клаус хучӗсем хушшинчен пӗчӗк кӑна кӗнеке сиксе тухрӗ. Ҫиелтен шыв яман хутпа чӗркенӗ ӑна. Кӗнеки хура сӑран хуплашкаллӑскер. Хуплашки ҫинче — ылтӑнпа пусса ӳкернӗ свастика. Член билечӗ иккен... Гитлер партийӗн член билечӗ. Ятне, хушаматне, национал-социалистсен—фашистсен—партине 1935 ҫулта кӗнине ҫырнӑ. Фотографи ҫинчен ҫав тери сивӗ сӑнлӑ этем шӑтарасла пӑхать, сӳҫне те, Гитлер пек, ҫамки ҫинелле тураса хунӑ.

— Чӑн-чӑн кашкӑрах тирпейленӗ эсӗ, хӗрача! Урнӑ кашкӑра!— терӗ санрота командирӗ Риммӑна.— Икҫӗр процентлӑ фашист пулнӑ ку экземпляр!

— Ҫавӑнпа Римма ҫине сикнӗ те вӑл,— терӗ Женя.— Хам пӗтес умӗн тепӗр совет ҫыннине те пулин вӗлерсе юлам, терӗ пуль, сатана!

Ҫӗрпӳрте кӗтмен ҫӗртен особӑй отдел уполномоченнӑйӗ кӗрсе тӑчӗ. Санротӑна вӑл хӑйӗн ӗҫӗсемпе пынӑ пуль те-ха, халь ҫынсем темле ӳкерчӗксем пӑхса ларнине курчӗ те тӳрех ыйтрӗ:

— Мӗнле картинкӑсем пӑхатӑр ара?

— Хӑрушӑ картинкӑсем,— терӗ те ӑна хирӗҫ санрота командирӗ, ҫак фотографисем кунта мӗнле лекни ҫинчен каласа пачӗ.

— Шел, питĕ шел...— терĕ уполномоченнăй, хутсемпе ӳкерчĕксене, унтан фашистсен партин член билетне хăвăрт тыткаласа пăхнă хыççăн.— Чăн та шел!

— Мĕн шел? Кама шел?— тĕлĕнчĕ санрота командирĕ. Хĕрсем те ун çине тĕлĕнерех пăхрĕç.

— Ку кайăка чĕрĕлле тытмалла пулнă. Чĕрĕлле тытни ăна вĕлернинчен темиçе хут усăллăрах пулатчĕ. Рядовой та мар вĕт-ха, фельдфебель. Пит лайăх «чĕлхе» пулма пултарнă вăл, эпир унран хамăра кирлĕ сведенисем илме пултараттăмăр!

Пĕр хушă нихăшĕ те чĕнмерĕç.

— Чĕрĕлле тытмалла-мĕн...— мăкăртатса илчĕ унтан Женя, уполномоченнăй çине кăмăлсăр пăхса.— Калама кăна çăмăл! Вăл пирĕн Риммăна вĕлерме танăннă вĕт-ха, Римма пĕччен мĕн тума пултарнă? Фрицне вĕлернĕшĕн те, хăй пурнăçне çăлса хăварнăшăн та тав тумалла çеç ăна, эсир пур — тиркеме пăхатăр! Сире валли «чĕлхесем» сĕтĕресси хĕрарăм ĕçĕ те мар вăл. Тепĕр тесен...

— Эс тĕрĕсрех калаçма тăрăш, хĕрача,— Женьăна пӳлчĕ уполномоченнăй,— «чĕлхе» пире кăна мар, пуриншĕн те кирлĕ. Эп тиркесе те каламастăп тата, чĕрĕлле тытма май килменшĕн кулянса кăна.

— Тепринче хамăрпа пĕрле сире илсе кайăпăр-ха,— татах мăкăртатса илчĕ Женя.— Пĕр «чĕлхе» мар, хуть те виççĕ сĕтĕрсе килĕр. Хуть те вэвочĕпех...

Уполномоченнăй, ун çине пăхса, кулса илчĕ:

— Ай-ай, йĕплĕ те иккен эсĕ, хитре хĕрача! Чăн-чăн чĕрĕп, чăнах!

— Кушак çури мар ĕнтĕ!— тӳрех тавăрчĕ Женя.

— Аçта çуралса ӳснĕ-ши эсĕ, кун пекскер?

— Мĕн, евчĕсем ярас тетĕр-им? Адресăма калама пултаратăп, сире кирлех пулсан: Совет Союзĕнче çуралса ӳснĕ!— Халь Женя хăй те кулса ячĕ.— Чĕрĕп пирки вара эсир тĕрĕс те каларăр пуль: пирĕн ялĕ Ежовка ятлă...

...Виçĕ кунтан хĕрсем медсанбата таврăнчĕç. Тек кирлĕ пулмарĕç полкра—хаяр çапăçусем пĕтрĕç. Нимĕçсен çав юлашки опорнăй пунктне çĕмĕрсе тăкнă хыççăн, полк, пĕтĕм дивизи пекех, оборонăна тăчĕ. Подразделенисем хăйсем йышăннă позицисене çирĕплетме тытăнчĕç.

Медсанбата çитсен Ирина Риммăна хулăн çыру тыттарчĕ. Фронта яракан çыру пек те мар — маркăллă, çитменнине заказной тата. Тĕлĕнсех кайрĕ Римма: камран пулма пултарать ку çыру? Адресне пачах палламан по-

черкпа çырнă. Хĕр почеркĕ — шултра, çаврака, кăшт каялла сулăннă саспаллисем. Конверт çинчи почта штампĕ çине пăхрĕ: Мариинский Посад, тенĕ.

— Ак япала! Сĕнтĕрвăрринче манăн пĕр паллаnă çын та çук-çке! Хам та пулса курман вăл хулара, Хусана кайса килнĕ чух пăрахутпа çеç иртнĕ ун тĕлĕпе...— çырăва аллинче çавăркаласа шухăшларĕ хĕр.

— Кам çырать ун пекех пысăк çыру?— ыйтрĕ Ирина.

— Ниепле те тавçăрса илейместĕп-ха,—хулпуççисене хускаткаласа илчĕ Римма.

— Уçса вула часрах, ун пысăкăш пакетра интерессем пурах ĕнтĕ! Манăн та пĕлес килет...

Хĕрсен йăли çавăн пек: килекен кашни çырăвах пурте пĕрле вулаççĕ. Хуть те камран пултăр çырăвĕ — ашшĕ-амăшĕнчен-и, тăванĕсенчен-и, чун савнинчен-и, пурпĕрех. Çырура савăнмалли хыпарсем пулсан — пурте савăнаççĕ, хуйхăрмалли пулсан та йышпа куляннаççĕ. Ответсем çырнă чух та пурин ячĕпе те саламсем яраççĕ...

Римма конверта уçрĕ те чи малтан хаçат туртса кăларчĕ. Шупашкарта тухакан «Чăваш коммуни»* иккен. Хаçатне сӳтме пуçласанах ун варринчен икĕ сăнӳкерчĕк тухса ӳкрĕ.

— Айтурух... хĕрсем! Хĕрсем ярса панă!— фотографисене алла илсенех кăшкăрса ячĕ Римма çав тери савăнăçлăн.

— Мĕнле хĕрсем?— Ирина та куçĕсемпе ӳкерчĕксем çине тăрăнчĕ.

— Пирĕн хĕрсем! Хампа пĕрле вĕреннĕ студенткăсем!..

— Пĕрре те студенткăсем пек мар-çке...

Чăн та çав, ӳкерчĕксем çинчи хĕрсене пĕртте студенткăсем темелле мар. Пĕринче вĕсем темле уйра паранкă кăлараççĕ. Хăшĕсем кĕреçесемпе ĕçлеççĕ, хăшĕсем кăларнă паранкине пуçтарма пĕшкĕннĕ, теприсем михĕсем çĕклеççĕ. Тепĕр ӳкерчĕкне хĕлле, вăрманта тунă. Студенткăсем вăрман касаççĕ. Аллисенче пăчкă, пуртă. Хăшĕсем, хатĕрлесе çитернĕ пĕренесене пĕр çĕрелле кустарма, рычаксем тытнă. Хĕрĕсем хăйсем хăшĕ мамăк хурса çĕлетнĕ фуфайка тăхăннă, хăшĕ — кĕске кĕрĕк, кивĕ пальто. Тутăрлисем сахал, пу-

---

*Вăрçă вăхăтĕнче хальхи «Коммунизм ялавĕ» çавăн пек ятпа тухса тăнă.

ринчен ытла ҫӗлӗксемпе... Укерчӗкӗсем тӗксӗмрех пулин те, Римма нумайӑшне палласа илчӗ.

— Надя Фомина, Шура Авксентьева, Лиза Ямашева...— пӳрнипе тӗлле-тӗлле, йӗркипе каласа пычӗ вӑл.—Ав епле пуранатӑр-ха, эппин, эсир, тусӑмсем! Ялан парта хушшинче лармастӑр. Сире те ҫӑмӑлах мар унта...

— Хаҫатне мӗн тума ярса панӑ-ши тата?— сӑмах хушрӗ Ирина.— Пӑхса тух-ха!

Римма васкасах хаҫата алла илчӗ. Вӑл икӗ страницӑллӑ кӑна иккен. Хут ҫитменнипе пуль ӗнтӗ... Малти страницинче умстатья — «Пӗтӗм вӑя фронта пулӑшма парар!» Ыттине пӗтӗмпех Совинформбюро пӗлтерӗвӗсемпе тултарнӑ. Иккӗмӗш страницӑра вара нимрен малтан йӗритавра хӗрлӗ кӑранташпа чӗрсе тухнӑ пысӑках мар статья куҫа курӑнса кайрӗ. Мӗн ку? Мӗн ҫинчен? «Фронтри патриотка...» Кам ҫырнӑ? «Иван Актай, писатель-фронтовик...»

Римма пичӗ тӑрук пӗҫерсе кайрӗ, чӗри хӑвӑрт-хӑвӑрт тапма тытӑнчӗ. Тавҫӑрса илчӗ вӑл: хушман пулсан та, Иван Васильевич ун ҫинчен ҫырса янах иккен хаҫата! Ну, тепре тӗл пулсан ӑна куншӑн пит лайӑх лекет-ха!

Вӑл хӑвӑрт вулама пуҫларӗ. Чӑваш хӗрӗ, Римма Сурская, Етӗрне тӑрӑхӗнче ҫуралса тӑлӑххӑн ӳснӗскер... Хӗрӳ чӗреллӗ комсомолка («Ман чӗрене уҫса пӑхнӑ-им вӑл?!»)... Пединститутра вӗреннӗ ҫӗртенех хӑйӗн ирӗкӗпе фронта кайнӑ...

— Мӗншӗн ҫав териех хӗрелсе кайрӑн эсӗ?— ыйтрӗ Ирина. — Сан ҫинчен ҫырнӑ-им? Мӗн тенӗ? Кала-ха ӗнтӗ! Ан пытар!

Римма пуҫне пӑркаласа илчӗ:

— Ҫук, ӑҫтан ман ҫинчен пултӑр? Пирӗнпе пӗрле вӗреннӗ студент ҫинчен... Фронта хӑй ирӗкӗпе кайнӑ та вӑл, питӗ паттӑр ҫапӑҫать, тет...

— Ма-ха, эппин, заглавинче «патриотка» тенӗ, арҫын пулсан — «патриот» темелле-ҫке?— хӑпмарӗ Ирина.

— Вӑл... мӗн... чӑвашла ҫапла калаҫҫӗ. Нумайлӑ хисеппе... Кунта икӗ ҫын ҫинчен ҫырнӑ,— суйрӗ Римма.

— Ҫыраканӗ кам? Мӗнле писатель-фронтовик, эс паллатӑн-и ӑна?

— Ҫук, палламастӑп.

— Пирӗн патра та нумай пулмасть сирӗн пӗр писатель выртрӗ вӗт. Кайран ӑна хаҫата илнӗ, терӗн эсӗ. Ҫав мар-и?

— Мар пуль... мар...— каллех тӗрӗссине каламарӗ

Римма. Вăл хăйне мухтанчăк тесе шутласран хăрарĕ. Нимех те туман-ҫке вăл вăрҫăра, мĕнех ҫырмалли пур ун ҫинчен? Темме хăтланнă-ҫке Иван Васильевичĕ!

«Чăваш коммунинче» Римма, хăй юнне парса, Володя Аруткин пурнăҫне ҫăлса хăварни ҫинчен ҫырнă иккен. Статья айне хирти почта номерне те лартнă. Вăрҫă пуҫлансанах Шупашкартан Сĕнтĕрвăррине куҫарса кайнă пединститут хĕрĕсем хаҫатра хăйсен тус-юлташĕ ҫинчен вуланă та уншăн питĕ хĕпĕртенĕ, хаҫатри статьяна коридорти витрина ҫине, фронтра паттăррăн ҫапăҫакан ытти студентсен сăнĕсемпе пĕрле ҫыпăҫтарса хунă. Тахăшĕн Римма сăнĕ те тупăннă ун валли. Унтан, вуннăн-вуниккĕн пухăнса, ун патне пысăк ҫыру ҫырнă, хăйсем халь мĕнле вĕренни, мĕн ĕҫлени ҫинчен пĕлтернĕ, Риммăна пĕтĕм чунтан ырлăх-сывлăх суннă...

— Пирĕн хĕрӳллĕ юрату сана тăшман пулинчен хăтартăр, тăшмана ҫĕнтернĕ хыҫҫăн ҫуралнă ҫĕршыва чипер таврăнса килмелле пултăр санăн! Пурте ыталаса чуптăватпăр сана...

Питĕ хаклă, чуна хускатакан, кăмăла ҫĕклесе яракан ҫыру пулчĕ вăл Риммăшăн. Хăй пăлханнине Ирина умĕнче питех палăртмарĕ, анчах кайран, юлташĕ дежурствăна тухса кайсан, ҫырăва тата темиҫе хут вуларĕ вăл. Сăнӳкерчĕксем ҫине вăрахчен пăхса ларчĕ, ҫав хĕрсемпе пĕрле пулнă вăхăтсене аса илсе кăштах хурланчĕ те.

Каҫхине вара вĕсем патне пысăк ҫыру ҫырчĕ.

## 8

Ҫутҫанталăк йĕркисем ҫирĕп—пурте хăй вăхăтĕнче пулса пырать.

Сивĕ хĕл иртсе кайрĕ, нумай кĕтсе пурăннă ҫуркунне ҫитрĕ. Ҫӳлтен ҫӳле хăпарса пынă хĕвел кăҫал уйрăмах нумай ҫунă юра кăпăшкалатса ирĕлтерчĕ, уйсем кунран кун улаланчĕҫ, унтан ҫул-йĕрсем епресе кайрĕҫ — машинпа мар, ҫурран та иртме ҫук. Апрель вĕҫĕнче вара тĕнчене йăлт урăх сăн ҫапрĕ, ҫемҫе симĕс курăк тапса тухрĕ, пирвайхи ҫеҫпĕлсем курăнчĕҫ...

Совинформбюро пĕлтерĕвĕсем кĕскелчĕҫ: «Ҫав-ҫав районра вырăнти ҫапăҫусем пулса иртнĕ», «ĕнерхи кун фронтра уйрăмах палăрмалли ĕҫсем пулман...»

Майăн пĕрремĕшĕччен темиҫе кун малтан Риммăсен дивизине малти линирен пĕр вунпилĕк-ҫирĕм километра

канма илсе тухрĕç. Çапăçава декабрь пуçламăшĕнчех, нимĕçсене Мускав патĕнче аркатма тытăннă кунсенче, кĕнĕскер, дивизи ыванна ĕнтĕ, пополнени илсех тăнă пулин те, çынсем те сахалланса юлнă унта. Тата техники те нумай чакнă унăн, тумĕ-юмĕ те çĕтĕлсе пĕтнĕ. Çитменнине тата хĕллехи тумтир вырăнне çуллахине илмелле пулнă.

Медсанбат халь питĕ лайăх çĕре, ват юманлăхри пысăк кӳлĕ хĕрринчи икĕ хутлă чул кермене вырнаçрĕ,— ку вăл революциччен темле шутсăр пуян граф имени́йĕ пулнă-мĕн. Кӳллĕн тепĕр енче пĕр хутлă темиçе чул çурт ларать, вĕсенчен иккĕшне дивизи хаçачĕ йышăнчĕ: пĕринче редакци, тепринче — типографи.

Римма Иван Васильевича чылайранпа курманччĕ. Вăл хай, паллах, медсанбатран ниçта та тухса çӳреме пултараймарĕ, писателĕн те ун патне пырса курма вăхăт пулмарĕ ахăр. Анчах вăл чĕрри-сыввине Римма тăтăшах пĕлсе тăчĕ — дивизи хаçачĕн кашни номерĕнчех унăн статйисемпе очеркĕсем тухрĕç. Пĕрисем айне «Аслă лейтенант И. Васильев» тесе çырать, тепĕр чух хăйĕн писатель псевдонимĕпех кăларать — «Ив. Актай». Римма вĕсене пĕрне те вуламасăр ирттермерĕ, хăшне-пĕрне, уйрăмах фашистсем тискер кайăкла хăрушă ĕçсем туни çинчен çырнисене, мăнаппăшне ярса пачĕ.

— Вуласа кăтарт ял çыннисене, пĕлччĕр вĕсем Гитлер хурахĕсем пирĕн çĕр çинче мĕн хăтланнине, пĕлччĕр те— фронта тата ытларах пулăшма тăрăшчăр...

Халь вара, хăйсене канма илсе тухнă хыççăн, медсанбатпа редакци пĕр çĕрте пулнипе, вĕсем кашни кун тенĕ пекех тĕл пулчĕç.

Çĕнĕ çĕре куçса килнĕ хыççăн чи малтан ăна Римма тепĕр ирхине, кӳлĕ хĕррине пит çума чупса тухсан, курчĕ. Писатель те пит çăвать-мĕн унта. Тĕл пулнăшăн хĕпĕртесе, пĕр-пĕрин аллисене хытă чăмăртарĕç, ыйтса пĕлме тытăнчĕç: пурнăç, кăмăлсем мĕнле? Çĕнни мĕн пур, килтен мĕн çыраççĕ?

Васильев çăваннă чух хывса хунă гимнастеркине тăхăнса тӳмелеме тытăнсан, Римма унăн петлицисем çинче виçĕ кубик мар, пĕр «шпал» пулнине асăрхарĕ.

— Иван Васильевич, сире саламламалла апла?— терĕ вăл.

— Мĕн пирки?— ăнланаймарĕ Актай.

— Ара, сирĕн звани пысăкланнă-иç!

— Э-э, çапла çав...— именнĕ пекрех кулса илчĕ писатель.— Капитан пулса тăтăм, ан та кала!

— Пит аван ку! Чунтан саламлатăп! Малашне татах ӳсме ырă сунатăп сире. Тен, вăрçă пĕтиччен, полковника та çитĕр-ха...— Римма та кулса ячĕ.

— Писателе кирлех те мар пуль вăл,— терĕ Васильев.— Петлицăсем çинче шпалсем хушăннă май талант ӳссе пынă пулсан — татахчĕ хуть...

Вĕсем хуллен кăна кӳлĕ хĕррипе утрĕç.

— Кĕнеке çырма тытăнмарăр-и-ха?—ыйтрĕ Римма.

— Кĕнеке çинчен калаçма иртерех-ха, анчах журнал валли икĕ калав ярса патăм,— терĕ Актай.— Вăхăт çук, халь тата дивизи историне çыртараççĕ. Документсемпе паллашатăп, çынсемпе калаçатăп. Аскатаççĕ, дивизи пĕр çулталăк тултарнă тĕле çырса пĕтермелле, теççĕ.

— Ку та пит аван! Материал нумай пухатăр эсир. Епле пулсан та, манăн сире вăрçă çинчен пысăк кĕнеке çыртарас килет, Иван Васильевич! Халь май килмесен те, каярахпа та пулин çыратăрах ĕнтĕ, çапла-и? Халăх çав тери тав тăвĕ сире уншăн!

— Хам та çавăн çинчен ĕмĕтленетĕп-ха та çав, мĕн пулĕ ĕнтĕ. Пуç сывă юлсан, тен, ĕмĕтленни харама каймĕ.

Римма сасартăк тăп! чарăнса тăчĕ те писателе куçĕнчен шăтарасла пăхрĕ.

— Мансах кайнă... Манăн сирĕнпе ятлаçмалли пур, Иван Васильевич! Питĕ хытă вăрçмалли...

— Ай-уй тата, мĕншĕн-ши?— пуçне шӳтле чалăштарса, куçĕсене хĕсрĕ Актай.— Мĕнпе çылăха кĕтĕм-ши сан умăнта ун пекех.

— Эсир хăвăрăн сăмахăра тытма пĕлместĕр.

— Мĕнле сăмаха тытман вара эпĕ? Кама улталанă пулать?

— Мана.

— Сана?! Ан тĕлĕнтер-ха, землячка! Эп сана хамăн тăван йăмăка юратнă пек юратса пурăнатăп пулать те, епле улталама пултарам?

— Пултарнă çав. Эсир пĕркун хаçата çырмастăп, тесе сăмах патăр, анчах хăвăр...

— Э-э, ав мĕн çинчен иккен эсĕ!— кулса ячĕ Васильев.— Ну, уншăнах хăрамастăп, ку вăл темех мар-ха. Малашне ун пек те мар çырăпăр, тен. Эп сан çинчен татах илтрĕм-ха, анчах тĕплĕрех хĕн пĕлме вăхăт пулмарĕ.

— Мĕн илтрĕр, камран?

— Пĕр характеристика куртăм политотдела.

— Мĕнле характеристика? Мĕн валли?

— Секрет. Калама юрамасть халлĕхе. Анчах пĕр питĕ аван япала пулма пултарать — ăна пытармастăп.

— Каллех мĕн те пулин шухăшласа кăлартăр пуль-ха...

— Эп мĕн, хаçатра хам шухăшласа кăларнине çырнăим вара?

— Хăçан та пулин каллех çавăн пек тусан — тупата çилленетĕп, Иван Васильевич! Хам сире тем пекех хисеплетĕп пулин те...

— Эс çилленетĕн, анчах халăх тав тăвать.

— Çапах та, мĕнле характеристика çинчен асăнтăр эсир? Пĕр пуçланă сăмаха каласа пĕтерĕр, эппин, тата. Пĕлес килсе кайрĕ.

— Çын нумай пĕлсен час ваталать, теççĕ, анчах ман сана час ваталтарас килмест, Римма.. Санăн ну-умай пурăнас пулать-ха çак çылăхлă çĕр çинче!

Çапла кула-кулах ирттерсе ячĕ капитан калаçава.

Вăл мĕн пирки систерни тепĕр темиçе кунтан паллă пулчĕ.

Шăп Майăн пĕрремĕшĕнче, ир-ирех, Актай, медсанбата пырса, хĕрсем пурăнакан пӳлĕм алăкне хуллен шаккарĕ. Ăна хирĕç мăнтăрккка Женя тухрĕ. Вăл çĕрлехи дежурствăран тин çеç килнĕччĕ те сывăрма выртма ĕлкĕрейменччĕ.

— Эсир мĕн, капитан юлташ, тул çутăлнă-çутăлман хăйма вăрлама тухнă кушак аçи пек çӳретĕр?— кăмăлсăр ыйтрĕ вăл.

— Каçарăр, анчах мана Римма Сурская кирлĕ пулчĕ,— терĕ Актай.

— Пĕлетĕп ĕнтĕ, ман пата килмен эсир. Тăхтăр пăртак, халех вăратса тухатăп.

Актай хăйĕн аллинчи тин çеç пичетленĕ хаçата уçса пăхкаласа тăчĕ, темшĕн йăл та йăл кулкаласа илчĕ.

Тепĕр ик минутранах пӳлĕмрен халат пекки тăхăнса янă, çӳçне-пуçне тураман, ыйхăллă Римма тухрĕ, Актай çине питĕ шиклĕн пăхса, хăвăрт ыйтрĕ:

— Мĕн пулнă, Иван Васильевич? Мĕншĕн кун пек ирех... калăр, мĕн?

— Еç пур, Римма, кил-ха кунтарах,— кăчăк туртрĕ лешĕ, вырăнтах тăрса.

— Кай, мĕнле ĕç? Çав териех васкавлă-и? Чимĕр, эппин, эп тумланса тухам...— каялла кĕме пикенчĕ Римма.

— Кирлĕ мар, кирлĕ мар тумланма! Эп сана нумай тытса тăмастăп, халех каятăп, сăмахĕ кĕске манăн...

Римма, халатне лайăхрах хупласа, ун патнелле утрĕ. Çитсен, Актай ăна аллинчи хаçатне сарса тыттарчĕ.

— Паянхи хаçат, Римма... Тин çеç пичетлесе пĕтертĕмĕр. Ак çакна вула-ха...— пӳрнипе хаçат варрине кăтартрĕ вăл. Хăй каллех йăл кулса илчĕ.

— «Награждение бойцов, командиров и политработников нашей части...— çурма сасăпа вулама тытăнчĕ Римма.— За образцовое выполнение боевых заданий командования и проявленные при этом доблесть и мужество, Военный Совет наградил... Орденом Красного Знамени... майора...

— Ак çакăнта вула,— пӳрнипе аялараха тĕллерĕ капитан.

— Медалью «За отвагу»... Лейтенанта Кочетова...

— Вула, хăюллăрах вула!

— Красноармейца Сурскую Римму Назаровну...

— Малалла вуламасан та юрать,— терĕ Актай.— Ну, мĕнле?

Римма хытнă пек пулса тăчĕ.

— Ĕненес те килмест-им?— ун куçĕнчен пăхрĕ Актай.

— Кай, ку ытла та...— пăшăлтатса илчĕ Римма,— ытла та тĕлĕнмелле-çке, Иван Васильевич!— Вăл Актая мăйĕнчен ыталаса илчĕ те питĕнчен чап-чап! тутарчĕ.

— Пит ир пуçларăр-çке эсир чуптума, кун пек ĕçсене каçалапа, кăшт тĕттĕмленсен тăваççĕ,— илтĕнчĕ хысалта Женя сасси. Тем çинчен те пĕлме тăрăшаканскер, вăл, алăка кăшт уçса, вĕсене пăхсах тăнă иккен.

— Женя! Эс нимĕн те пĕлместĕн!— ун патнелле ыткăнчĕ Римма.

— Пĕлессе пĕлместĕп те, чуптунине çавах куртăм-çке...

— Эп халь пурне те чуптума пултаратăп!— Римма Женьăна хăйне ыталаса чуптума тытăнчĕ.

— Мĕн эсĕ... мĕн пулчĕ капла тăруках?— тĕлĕнчĕ Женя.

— Акă мĕн, Маслова!— Писатель ăна хаçат уçса кăтартрĕ.— Çавăнпа ирех килтĕм эпĕ, эс каланă пек хăйма шырама мар.

Женя хаçатра мĕн çырнине вуласа тухрĕ те тӳрех «урра-а!» кăшкăрса ячĕ.

— Хуллентерех эсĕ, хĕрсене вăрататăн!— ун çăварне хуплама тăчĕ Римма. Анчах мăнтăркка хĕр пуçне аякка-

лла пӑрчӗ те, аллинчи хаҫата ҫӗклесе, хӑйсен пӳлӗмнелле ыткӑнчӗ.

— Подъе-ом! — ҫухӑрчӗ вӑл унта. — Пурте итлӗр Военный Совет приказне! Хӑлхасене чӑнк! тӑратӑр!..

...Унтан хӗрсем пурте сиксе тӑчӗҫ те Риммӑна ытала-ма, чуптума, такам хуйхатнӑ кайӑк кӗтӗвӗ пек янрама ты-тӑнчӗҫ. Вӗсем ирех шавлама тытӑннине илтсе, старшина чупса пычӗ.

— Мӗнле туй кунта сирӗн?— ҫилӗллӗн ыйтрӗ вӑл, алӑка уҫсанах.

— Римма туйне тӑватпӑр!— кӑшкӑрчӗ ӑна хирӗҫ Женя.—НЗ-ра эрех юлман-и санӑн? Илсе кил-ха пӗр ко-телок та пулин!

Старшина ним ӑнланмасӑр тӑчӗ.

— Римма медальне ҫумалла пирӗн, ӑнлантӑн-и? Ме-дале ҫав кӳлӗри шывпа ҫӑвайmaстӑн ӗнтӗ, хыткукар! Шыв-па ҫусан тутӑхать вӑл!

Ҫав вӑхӑтра пӳлӗме аслӑ хирург Басов кӗчӗ те, пурне те пӗрле сывлӑх суннӑ хыҫҫӑн, тӳрех Римма патне пычӗ, ӑна ал пачӗ, унтан ҫамкинчен чуптурӗ.

— Савӑнсах саламлатӑп сана, Сурская. Пӗрремӗш на-града хыҫҫӑн иккӗмӗш те, виҫҫӗмӗш те пуласса шанатӑп...

## 9

Унтанпа икӗ ҫула яхӑн иртрӗ...

Ах, вӑрӑм-ҫке вӗсем, вӑрҫӑри ҫулсем! Вӗҫӗ-хӗрри те ҫук пек туйӑнать, мӗншӗн тесен ним те пӗлместӗн — хӑҫан пӗтет ку вӑрҫӑ, ху ӑнсӑртран сывӑ юлас пулсан та, санӑн киле таврӑнмалли телейлӗ самант хӑҫан килсе ҫитет? Ӑна никам та пӗлмест, никам та каласа пама пултараймасть.

Пӗр сӑмах ҫеҫ илтме пулать: тӑшмана хӑҫан ҫӗнте-ретпӗр, ҫав кун вӑрҫӑ та пӗтет...

Кунӗсем те питӗ вӑрӑм: ир-ирех вӑранатӑн та, каҫчен тем те пулса иртет — бомбежки те, артобстрелӗ те. Юнне те куратӑн, ҫынсем вилнине те. Эрнисем уйӑх пек, уйӑхсем ҫулталӑк пек туйӑнаҫҫӗ. Пӗрмай, кашни сехетре, кашни кун вилӗмпе юнашар пурӑнатӑн тата. Анчах ҫын вӑрҫӑра та хӑнӑхса ҫитет иккен, чи хӑрушӑ япаласене те питех асӑр-хами пулать. Вӑрҫӑри кашни ҫыннӑн, вӑл сывӑ пулсан, хӑ-йӗн ӗҫӗ пур, унӑн ҫав ӗҫе куллен, пӗтӗм вӑйне хурса туса пымалла. Унӑн урӑххи ҫинчен шухӑшлама та кирлӗ мар, шухӑш аяккалла кайни сиен кӑна кӳме пултарать.

Римма та фронтри пурнăçа хăнăхса çитрĕ, вăрçăсăр пуçне урăх нимĕн те курман, ниçта та пулман, тейĕн. Малтан вăрçăченхи пурнăç час-часах аса килетчĕ, пыра-киле вăл манăçа пуçларĕ пулмалла. Чăн та, юлташĕсем кил çинчен калаçма тапратсан, Римма та шухăшĕпе киле куçатчĕ, мăнаппăшĕпе мĕнле пурăннине, ялти шкулта мĕнле вĕреннине, унтан икĕ хĕл Шупашкарта епле иртнине, пединститутри тусĕсене аса илетчĕ. Анчах кусем пурте тахçантахçан пулнă пек туйăнатчĕ ăна...

Кăштах ерçӳллĕ вăхăтра пĕрле пухăнса ларсан, хĕрсем хăйсен каччисем çинчен, пирвайхи юратăвĕсем çинчен аса илсе калаçатчĕç. Фронтри арçынсем пирки те сăмах пулкалатчĕ. Ун пек чух вара Римма куçĕ умне те хăйĕн чи çывăх тусĕ пулнă, хăй юратнă Сергей Петухов сăнарĕ тухса тăратчĕ. Ытла та ырă çынччĕ-çке вăл!

Вĕсен 1940 çулхи хĕлле, филфак студенчĕсемпе пĕрле йĕлтĕрпе похода кайсан, паллашма тӳр килчĕ, пĕр сăртран ярăнса аннă чух ӳксе, Римма ури мăкăлтаннă пек пулчĕ те, Сергей—пединститут командин капитанĕ пулнăскер — ăна, çурăмĕ çине хурса, шоссе патне тухиччен пĕр икĕ километр таран çĕклесе пычĕ. Иртсе пыракан пĕр лавпа хулана çитерсен, вăл ăна тӳрех больницăна вырнаçтарчĕ, кайран пĕр эрне хушши кашни кун ун патне çӳрерĕ. Пушă алăпа та мар тата, ялан мĕн те пулин илсе пырать...

Сергей унран аслăччĕ, тăваттăмĕш курсра вĕренетчĕ, Римма икĕмĕшĕнче кăначчĕ-ха, анчах ку вĕсене туслă пулма кансĕрлемерĕ. Ытла час-час та тĕл пулаймарĕç вĕсем, хутран-ситрен театрсене, кинона çӳрежелерĕç кăна, юрату çинчен сăмах та пулмарĕ, анчах Римма хăй чĕринче çав таса туйăм вăйлансах пынине куллен сисрĕ. Унăн пĕрмай Сергее курас, ун çывăхнерех пулас килчĕ. Сергей урăххисемпе ытла кăмăллăн калаçнине е вечерсенче ытти хĕрсемпе ташланине курсан, питĕ пăлханса каятчĕ.

— Çук, пăхмасть вăл ман çине, кирлĕ мар эп ăна...

Мартăн саккăрмĕшĕнче пулнă вечерта Сергей хăйсен курсĕнчи мечĕк пек чăмăркка хура хĕрпе умлăн-хыçлăн ик-виç хут та ташласан, Римма тӳсеймерĕ, никама систермесĕр тухса кайрĕ те, чунĕ кӳтсе килнипе, общежитире пĕрпĕчченех тем тери макăрса выртрĕ. Тепĕр кунне институт коридорĕнче Сергее ăнсăртран тĕл пулсан, ăна юри курмăш пулса иртрĕ, лешĕ ăна хуса çитсе аллинчен тытсан та вăрт çаврăнса малалла утрĕ.

— Мĕн пулнă, Римма? Эс мана çиленнĕ мар-и?—ма-

ла тухса уи çулне пӳлчӗ Сергей.— Мӗнщӗн? Мӗнпе айăпа кӗтӗм-ши?

— Ан калаçса тăр манпа...— каллех вӗçерӗнчӗ Римма. Унтан, сасартăк макăрса ярас патне çитсе, хăйне чарайма-сăр персе ячӗ: — Кай хăвăн Раечка Чернова хыççăн, ав утать, унпа йӗпӗлтет!

Çавăнтах коридор тăрăх чупса кайрӗ.

Анчах каçхине Сергей общежитине пырсан — пӳлӗмре шăпах никам та çукчӗ — çур сехетренех çилленесси иртсе кайрӗ. Çав каçхине вӗсем пӗрремӗш хут чуптурӗç...

Çуркунне Сергей институт пӗтерчӗ. Вăл дипломлă ӗçне епле хӳтӗленине итлеме Римма та кайрӗ — питӗ интереслӗ темăпа çырнăччӗ ăна Сергей, хамăрăн чи ватă поэт Шелепи фольклорпа мӗнле усă курнине тишкерсе тухнăччӗ. Преподавательсем пӗрин хыççăн тепри тăрса ырларӗç ун ӗçне, вӗсен кашни сăмахӗ Риммăна хӗпӗртеттерчӗ — вӗсем Сергее мар, ăна хăйне мухтанă пекех! Сергей «диплом с отличием» илчӗ, ăна институтрах, кафедра çумӗнче ӗçлемелле турӗç, Римма тата ытларах савăнчӗ — эппин, вӗсен уйрăлмалла пулмасть, пӗр-пӗрне кашни кунах курма пултараççӗ... Анчах кӗркунне Сергей Хӗрлӗ Çара тухса кайрӗ.

— Сана институтра ӗçлеме хăварнă-çке, льгота памаççӗ-им?—хăюсăртарах ыйтрӗ Римма Сергейрен, вăл Çара каясси çинчен пӗлнӗ хыççăн институтра тӗл пулсан.

— Юлташсенчен намăс льготăсем илме,— терӗ ăна хирӗç Сергей.— Кайма тивӗçлисем пурте каяççӗ, манăн вӗсенчен мӗншӗн уйрăм пулмалла-ха апла? Тата... Ман шутăмпа, тусăм, кашни çамрăк арçыннăннах, вăл сывă, уксахчăлах мар пулсан, салтак пăттине çисе курас пулать. Унсăр арçын та мар вăл.

— Вăрçă пуçланчӗ-тӗк?

— Апла — пушшех каймалла: пирӗн пурин те пăшал тытма пӗлмелле. Вăрçи ан пултăр та-ха, анчах пӗр пуçлансан — истори хальччен курман хăрушă тытăçу пулма пултарать. Вăл вăрçăра, ӗлӗкхи пек, патшалăхпа патшалăх, пӗр халăхпа тепӗр халăх мар, пӗр-пӗринпе нихçан килӗштерме пултарайман икӗ вăй, икӗ система, икӗ обществăллă строй — социализмпа империализм çапăçаççӗ. Паллах, социализм çӗнтермелле, вăл епле пулсан та çӗнтеретех, анчах вăй нумай кирлӗ пулать. Куран, урнă Гитлер мӗн хăтланать, халь çур Европăна хăй айне персе чикрӗ...

— Хăрушă вăхăтра пурăнатпăр çав,— ассăн сывласа илчӗ Римма.

Нумай çӳрерӗç вӗсем çав каçхине. Институтран тухса, Атӑл хӗррине анчӗç, йӑлӑм еннелле вӑрахчен пӑхса тӑчӗç, бульвар тӑрӑх хӑпарса, «юрату хысакӗнче» пулчӗç, унтан, уялла тухса, Етӗрне çулӗпе вӑрман патнех çитрӗç те тӗттӗм пулсан тин хулана анчӗç.

Сергей тӑван Шупашкарпа, унӑн чи илемлӗ вырӑнӗсемпе ятарласа сывпуллашса çӳренӗ пекех пулчӗ вӑл. Юлашки хут... Вӗсем хушшинчи калаçӑва кам та пулин аякран итлесе пырас пулсан, нихçан та вӗсем пӗр-пӗрне чӗререн юратса пурӑнакан çамрӑксем тес çукчӗ çав. Тӗнчере мӗн пулса пынине лайӑх чухлаканскерсем, вӗсем ытларах хӑйсем çинчен, хӑйсен пулас пурнӑçӗ, телейӗ çинчен мар, çӗршыв, халӑх пурнӑçӗ çинчен калаçрӗç, мӗншӗн тесен вӗсен телейӗ çӗршыв телейӗнчен килнӗ-çке!

Виç кунтан Сергей призывниксен пысӑк ушкӑнӗпе пӗрле тухса кайрӗ. Ӑна ӑсатма военкомата нумайӑн пычӗç, кафедра заведующийӗ, ватӑрах доцент та хашкаса çитрӗ те ал тытса ыр сунчӗ. Кунта Риммӑн Сергейпе калаçма та май килмерӗ. Призывниксене строя тӑма хушакан команда илтӗнсен тин Сергей ӑна мӑйӗнчен ыталаса тутинченех чуптуса илчӗ.

— Чипер пурӑн, тусӑм. Телей пултӑр сана...

— Сана хӑвна телей пултӑр, Сережа!— куççулӗсене çӑта-çӑта аран хирӗç каларӗ Римма.

— Ан ман. Кӗт, пирӗн пӗтӗм пурнӑç — малта.

Çапла çеç пулчӗç унӑн юлашки сӑмахӗсем.

Тепӗр ик эрнерен çырусем килме пуçларӗç. Анчах хӑй патне çырмалли адрес тӑруках пулмарӗ-ха. Пӗр хуларан çырса ярать, тепринчен. Инçетрен инçете кайса пырать иккен, хӗвеланӑçнелле, Польша еннелле. Унтан вара Брестран çыра пуçларӗ. Тӑтӑшах çырчӗ. Чӗре патне пыракан ӑшӑ сӑмахсем нумайччӗ унӑн çырӑвӗсенче. Пӗрле пулнӑ чух ун пеккисене нихçан та каламан Сергей. «Сан пек хаклӑ, сан пек юратнӑ çын никам та çук манӑн, пӗр сана асӑнса, иксӗмӗр ӳкернӗ фото çине пӑхса, чуна йӑпатса пурӑнатӑп...»

Ун пек ӳкерчӗк Риммӑн та пур, ӑна вӑл пӗрмаях — ак халь те — хӑйпе пӗрле илсе çӳрет, комсомол билечӗн хытӑ хуплашки айӗнче. Тунсӑхласан, кичем пулсан, çын курман чух кӑларса, вӑрахчен пӑхса ларать ун çине, пӗрле пулнӑ кунсене аса илет...

Вӑрçӑ пуçланнӑранпа вара Сергейрен пӗр çыру та пулмарӗ. Чылай вӑхӑт иртсен тин Брест крепоçӗнче унпа пӗрле пулнӑ çын унӑн йӑмӑкӗ Анюта патне çыру янӑ-мӗн. Унта

вăл Сергей фашистсене хирĕç контратака тунă чух вилни çинчен пĕлтернĕ. Анюта çав çырăва вулаттарсан, Римма питĕ хытă макăрчĕ, темиçе кун хушши çут тĕнчене курмасăр тенĕ пек çӳрерĕ. Савнийĕ вилнине ниепле те ĕненес килмерĕ унăн—çук, пулма пултараймасть кун пекки! Тен, аманнă çеç вăл? Аманнă та тăшман аллине лекнĕ? Тепĕр тесен тата тыткăна лекни те вилнипе пĕрех-çке...

Çавăнпа фронта кайма çирĕп шут тытрĕ те вара Римма. Çавăнпа салтак пулса тăчĕ те вăл. Начар мар салтак. Фронтра икĕ çула яхăн пĕтĕм вăйне парса ĕçлерĕ. Çĕрне-кунне пĕлмесĕр, бомбăсем, снарядсем, пульăсем айĕнче...

Анчах халь вăл тыла каять акă... Аманнă пирки. Унăн сулахай хулĕ сусăрланнă. Снаряд осколокĕ пырса çапнипе шăмми пат хуçăлнă. Суранне тасатса, гипс хурса янăранпа темиçе кун çеç иртнĕ-ха. Санитарнăй пуйăс çине ларнăранпа вара икĕ талăк çитет. Тата мĕн чухлĕ каймалла пулассипаллă мар. Ăçта çитмеллине, ăçти госпитальте выртма тӳр килессине те пĕлмест вăл. Çапах та ытлашши инçе илсе каймалла мар пек, тухтăрсем каланă тăрăх, кун пек сурансем пĕр-икĕ уйăхра тӳрленеççĕ, вара каллех строя тăма пулать.

Сываласчĕ хăвăртрах. Каллех таврăнасчĕ фронта...

Лере, вăрçăра, тепĕр чух тахçанхине мар, ĕнер мĕн пулса иртнине аса илме вăхăт çукчĕ. Пулнă — иртнĕ, ăна манса та кайнă. Паян тата тем сиксе тухать-ха, тен, ĕнерхинчен те хăрушăраххи пулать? Уйрăмах, пирĕннисем наступлени тунă, тăшман çав тери хаяррăн хирĕç тăнă чухне...

Халь вара, кивĕ вакунăн çӳлĕкĕ çинче выртса килнĕ чух, фронтран аякран аякка кайса пынă май, Римма иртнĕ икĕ çул хушшинче пулнă нумай-нумай ĕçсене аса илме пултарчĕ. Ятарласа та мар,— асаилӳсем темле хăйсем тĕллĕнех çуралса пычĕç. Пĕрин хыççăн тепри, вĕçĕ-хĕррисĕр...

Икĕ çул хушшинче вĕсен дивизийĕ таçта та çитрĕ. Хĕрĕх иккĕмĕш çулхи çуркунне, малти линирен илсе тухса, пĕр уйăх пек кантарнă, подразделенисене çĕнĕ çынсем, хĕçпăшал парса тепĕр хут вăйлатнă хыççăн, дивизие Ржев еннелле ячĕç. Июль пуçламăшĕнче Зубцово — Карманово — Сычевка тăрăхĕнче калама çук вăйлă çапăçусем пулчĕç,— пирĕннисем, тăшман оборонине çĕр километр сарлакăш çĕмĕрсе, темиçе кун хушшинчех вăтăр-хĕрĕх километр малалла

кайрĕç. Анчах сасартăк вĕçĕмсĕр çумăр пуçланчĕ, çулсем епресе кайрĕç, шурлăхлă çĕрсенче пачах иртсе çӳремелле мар пулса тăчĕ те наступлени чарăнса ларчĕ. Нимĕçсем, унччен тухса тарма тивнĕ вырăнсене каялла тавăрас тесе, вĕçĕмсĕр контратакăсем турĕç. Анчах хамăр çапăçса илнĕ пĕр икçĕр аллă ял пирĕн аларах юлчĕç, фашист пусмăрĕнчен хăтăлчĕç.

Мĕн кăна курмарĕç, мĕн кăна илтмерĕç пулĕ çав тин çеç ирĕке кăларнă ялсенче пирĕн боецсем! Чăнах та тамăкри пурнăç пулнă совет çыннисен. Ытла та хăрушă! Нимĕçсем пĕлтĕр кĕркуннех, пирвайхи хут пырса кĕрсенех, ним те хăварман кунта, йăлт шăлса тухса кайнă — тырри-пулли, выльăхĕ-кайăкĕ, тумĕ-юмĕ, тӳшекĕ-сытарĕ. Мĕнле тӳссе пурăнкаланă çынсем — ăнланма та çук. Тĕрĕссипе, пурăннă темелле те мар çав. Нумайăшне çакса вĕлернĕ, персе пăрахнă, çамрăкраххисене, ĕçлеме пултараканнисене, Германие чуралăха хăваласа кайнă, килте юлнисем выçса, тем тĕрлĕ чирсемпе чирлесе вилнĕ,— чирлисене никам та пулăшман.

Наступленин виççĕмĕш кунĕнче медсанбат Вазуза ятлă пысăках мар юханшыв хĕрринчи Мякотино ялне вырнаçрĕ. Питĕ хитре ял пулнă вăл. Çав тери хăварт тухса тармалла пулнипе, нимĕçсем ăна çунтарма ĕлкĕреймен. Ялти уйрăм-уйрăм çуртсене çеç çунтарса янă, анчах вĕсене те хальмар, пĕлтĕрех: ялти коммунистсен, активистсен, партизанра çӳрекен çынсен килĕсем пулнă вĕсем.

Медсанбат, ытти нумай çĕрти пекех, шкулăн самаях пысăк чул çуртне йышăнчĕ, медперсонал çывăхри пӳртсене, виçшерĕн-тăватшарăн, хуçисемпе пĕрле вырнаçрĕ. Риммăсем, яланхи пекех, виççĕн пулчĕç: вăл, Ирина тата Пĕчĕк Вера. Çырма хĕрринчи лутрарах пӳртре пĕр карчăкпа унăн Липа ятлă мăнукĕ, начарланса, типсех ларнă вунтăватвунпилĕк çулхи хĕрача, пурăннă. Çавсем патне хваттере кĕчĕç хĕр-туссем. Кил хуçисем питĕ ăшă кăмăлпа йышăнчĕç вĕсене. Пырсанах çăвăнма шыв ăшăтса пачĕç, каçалапа çĕн çĕрулми кăларса пĕçерчĕç. Хĕрачи малтанах ютшăннă пекрех пулчĕ, пăт-пат кăна калаçкаларĕ,— кашни кун, кашни самантра хăраса пурăннипе чĕмсĕр пулсах çитнĕ иккен пусмăрти çынсем,— анчах кăшт хăнăхсан, уйрăмах унăн тăхăнма çуккине кура Пĕчĕк Вера хăйĕн чăматанĕнче ахалех выртса çӳрекен платйине парсан, чĕвĕлти кайăк пекех пулса кайрĕ.

Пĕрле çĕрулми çиме ларсан, Риммăпа унăн юлташĕсем

карчăкпа хĕрачаран хăйсем ҫинчен, вĕсем нимĕҫсем хуҫаланнă вăхăтра мĕнле пурăнни ҫинчен ыйтса пĕлме тытăнчĕҫ. Кил хуҫи — Липа ашшĕ — ытти вăйпитти арҫынсемпе пĕрле, вăрҫă пуҫлансанах фронта тухса кайнă та унран нимĕнле хыпар та пулман.

— Килте юлнă арҫынсем нимĕҫсем ҫитсе кĕриччен-ех вăрмана кайрĕҫ. Манран ик ҫул кăна аслă пичче те кайрĕ вĕсемпе. Вăл комсомол секретарĕччĕ, кайман пулсан, ăна ҫакатчĕҫ ĕнтĕ,—терĕ Липа.— Анчах вăл халь ăҫтине те, чĕрри-вилнине те пĕлместпĕр. Тен, пурăнать те-и... Нимĕҫсем, килсе кĕрсен ик кунтанах, шкул умĕнче ял Совет председателĕпе учительницăна ҫакрĕҫ, вĕсем коммунистсемччĕ, анчах вăрмана каяйман, председателĕ хăрах ури ҫуккипе, учительница йывăр сынччĕ... Унтан тимĕрҫе, вата Назара ҫакрĕҫ — такам шуйттанĕ унăн ывăлĕ Хĕрлĕ Ҫарта пысăк командир пулнине пĕлтернĕ. Ҫынсене ҫакнă чух кашнинчех пĕтĕм ял халăхне хăвалаcа пухаҫҫĕ — пурте курччăр! Пăхса тăма шутсăр хăрушă, чĕре ҫурăлсах каять, куҫҫульне чарма ҫук, анчах макăрма юрамасть — хĕнеҫҫĕ... Тыткăнран тарса тухакан хамăр салтаксене персе вĕлернине пăхма та вăйпах илсе кайрĕҫ. Пĕр ҫирĕм сын ытлаччĕ вĕсем, пурте ҫамрăкскерсем... Малтан колхоз ферми хыҫĕнче хăйсенех пысăк шăтăк алттарчĕҫ, унтан ҫав шăтăк хĕррине тăратрĕҫ те пере-пере пăрахрĕҫ. Хăшĕсем вилсе те ҫитеймерĕҫ пулмалла, эпир шăтăка ӳкекенсем кăшкăрнине илтрĕмĕр, анчах нимĕҫсем шăтăкне ҫаплипех питĕрчĕҫ. Каҫхине, карательсем кайсан, пирĕн хĕрарăмсем ҫав шăтăка уҫса темиҫе сынна ҫăлнă, терĕҫ...

Хуҫа хĕрачин чуна ҫӳҫентерекен калавне итлесе ларнă вăхăтра пӳрт алăкĕнчен темле арҫын ача питĕ хуллен кĕрсе тăчĕ. Пурте ун еннелле ҫаврăнса пăхрĕҫ.

— А-а, Тимка, кил, кил, ачам,— терĕ ăна кил хуҫи карчăкĕ йăвашшăн.—Сĕт патне килтĕн пуль те-ха, качакине сăваймарăм-ҫке, кĕтме тивет пăртак...

Риммăпа унăн тусĕсем, тĕлĕннипе, сывлайми пулса ларчĕҫ: вĕсем умĕнче чĕрĕ сын мар, кăшт кăна сывлакан виле тăрать. Ачи пĕчĕкех мар, пĕр вуниккĕсенче пулин те — йĕмсĕр, кăвапа таран ҫĕтĕк кĕпепе ҫеҫ. Сăнĕ-пичĕ, пĕтĕм ӳчĕ кăвак тăпра тĕслĕ, кĕлеткинче пĕр тумлам юн та юлман пек. Хулĕсем хăрăк йывăҫ тураттисем пек ҫакăнса тăраҫҫĕ, пĕҫҫисем те шăмă ҫеҫ, анчах аллисемпе урисем тукмак пек шыҫса ларнă. Ҫапах та пĕр аллипе пушă консерва банки

тытнă хăй. Чарăлса кайнă кăвак куçĕсем ним тĕлсĕр пăхаççĕ, хăй йывăррăн сывлать...

— Ларсам, Тима, ура çинче тăма кансĕр вĕт сана,— терĕ карчăк малтанхи пекех ачашшăн.

— Сĕт çиес килет...— аллинчи консерва банкине аран çĕклесе, пăшăлтатнă пек кăна каларĕ ача.

— Халех, ачам, халех...

Кил хуçи-карчăк пĕчĕк тăм чӳлмек илсе тула тухрĕ. Çав тери тĕлĕннĕ Римма ун мăнукĕнчен хуллен ыйтрĕ:

— Мĕнле ача ку, Липа?

— Тăлăхскер. Кӳршĕри ялтан. Ашшĕ çук, амăшне пирĕн аннепе пĕр вăхăтрах Германие хуса кайнă, ку вара пирĕн яла, кукамăшĕ патне, килнĕ. Анчах кукамăшĕ хĕллех выçăпа вилчĕ те, ку халь тепĕр карчăк патĕнче пурăнать, çимелли çуккипе çакăн пек килтен-киле ыйткаласа çӳрет...

— Ма-ха вăл... йĕмсĕр? Нивушлĕ кам та пулин пĕр-пĕр кивĕ йĕм тупса параймасть ăна?

— Тăхăнмаллисем пур унăн, хăй тăхăнмасть. Нимĕçсем туртса илессĕ тесе пытарса усрать. Выçăпа тăнран туха пуçланă. Вăтанма та пĕлмест авă...

— Турăçăм, мĕн кăна кăтартмаççĕ фашист çынçиенĕсем пирĕн халăха!— ассăн сывласа ярса, пуçне ик енчен пăчăртаса лартрĕ Пĕчĕк Вера.— Мĕншĕн асапланмалла ĕнтĕ çак мĕскĕн ачан!..

— Çитерер-ха ăна часрах мĕн те пулин, сахăр парар, чей ĕçтерер,— терĕ Ирина. Çавăнтах ача патнелле пырса, ăна пуçĕнчен ачашларĕ.— Тима, атя сĕтел хушшине, пирĕнпе ларса çи... Эпир нимĕç мар, ан хăра пиртен...

Ача, тăй-тай тайкаланса, тĕпелелле утрĕ.

— Дистрофи унăн, чи вăйлă дистрофи *, астăвăр, тăрук нумай çитерме юрамасть ăна,— асăрхаттарчĕ Пĕчĕк Вера.

Ачи хăех нумай çимерĕ. Пĕр-икĕ пĕчĕк çĕрулми çирĕ, пĕр стакан тутлă чей ĕçрĕ кăна. Кил хуçи-карчăк качака суса кĕрсен тепĕр çур стакан сĕт ĕçрĕ. Унтан, ним каламасăрах, кĕтеселле пăхса сăхсăхрĕ те алăк патнелле утрĕ.

— Ыран ирхине татах кил, Тима, татах сĕт ĕçтерĕп,— терĕ кил хуçи, ачана алăкран тухма пулăшса.

Анчах ирхине пымарĕ вăл. Кăнтăрла çитеспе кил хуçи хĕрачи хăрушă хыпар пĕлтерчĕ:

---

*Нумай хушă выçлă-тутлă пурăннипе организм çав тери начарланса, вăйсăрланса çитни.

— Вилнӗ пирӗн Тимка, кунтан киле ҫиткелесе выртнӑ та урӑх тӑрайман...

— Эх, мӗскӗн!— хуйхӑрса ячӗ асламӑшӗ.— Хамӑр ирӗке тухнине кӗтсе илчӗ, анчах ирӗклӗ пурнӑҫпа виҫӗ кун ҫеҫ пурӑнса юлчӗ пулать мӑнтарӑн!— Вӑл куҫҫулӗсене шӑлса илчӗ. — Ҫавӑн пек сылӑхсӑр миҫе чун пӗтрӗ пуль ҫак шуйттансем килсе кӗнӗренпе!

— Ку ача пек вилнисем татах пулнӑ-и?— ыйтрӗ Римма.

— Тем чухлех... Вилнисем те, вӗлернисем те... Никама та хӗрхенсе тӑмастчӗҫ, ватӑ-и, ҫамрӑк-и...

Липа ҫавӑнтах темиҫе хӑрушӑ истори каласа кӑтартрӗ. Пӗр арҫын ача, чирлӗ амӑшӗ вилес патне ҫитсен, темле майпа нимӗҫсен кухнинчен ҫур ҫӑкӑр вӑрланӑ. Повар ҫакна асӑрханӑ та, ачана хуса ҫитсе, пӗрех хырӑмӗнчен тапнӑ. Ача ҫавӑнтах вилсе выртнӑ... Ҫуркунне ик ача ҫывӑхри вӑрмана шӑлан ҫырли пухма ҫеҫ кайнӑ, анчах ҫавсене каялла таврӑннӑ чух тытнӑ та, партизансемпе ҫыхӑнма кайнӑ тесе, пӗр талӑк асаплантарнӑ, унтан ҫакса вӗлернӗ. Тепӗр ачана совет самолечӗ ҫинчен пӑрахнӑ листовкӑна ҫынсене вуласа кӑтартнӑшӑн комендатурӑра ним пӗлми пуличчен хӗненӗ, кайран ҫав ача та вилсе кайрӗ...

Ик кунтан Римма дивизи хаҫатӗнче Иван Актайӑн пысӑк статйине курчӗ: «Фашистсем — ҫынсем мар, вӗсем— ҫынҫиенсем!» Унта, нимӗҫсем ҫак тӑрӑхра тунӑ ытти тискер ӗҫсемпе пӗрле, Римма кил хуҫи хӗрачинчен илтнӗ фактсене те асӑннӑ. Такамран илтнӗ ӗнтӗ вӑл та. Анчах писатель пуринчен ытларах нимӗҫсем тунӑ тепӗр тискер ӗҫ ҫинчен ҫырнӑ...

Ҫакӑнти пӗр пысӑк ял хыҫӗнче, вӑрҫӑччен МТС пулнӑ ҫӗрте, йӗри-тавра йӗплӗ пралук карса, тыткӑна лекнӗ совет салтакӗсене — виҫҫӗр ҫын таран — хупса усранӑ иккен. Вӗсене кунти юманлӑхра чи чаплӑ йывӑҫсене кастарса Германие ӑсатма хатӗрлеттернӗ. Апатне ҫитерменпе пӗрех, ӗҫлеттерессе хӗвел тухнӑ вӑхӑтран пуҫласа хӗвел аничченех ӗҫлеттернӗ. Ӗҫлейми, утайми пулнисене вара ним шухӑшласа тӑмасӑрах пере-пере пӑрахнӑ. Эпир сасартӑк наступлени пуҫласан (кун пек наступлени пулма пултарассине нимӗҫсем пачах та кӗтмен), вӗсем ҫак лагерьти пирӗн салтаксене пӗр вӑрӑм йывӑҫ сарайне хупнӑ та, алӑкӗсене, чӳречисене питӗрсе лартса, стенисем ҫине бензин сапса, тивертсе янӑ. Хӑйсем сарай тавра автоматсемпе тӑнӑ. Хӑшӗ те пулин ҫунакан сарайӗнчен сиксе тухма пултарсан, ҫав самантрах

пульасем айне лекнĕ. Пĕтĕмпе те пилĕк-улта сын çеç сăланса юлнă çав тамăкран, вĕсем те çунса, аманса пĕтнĕ...

— Нихçан та ан ман çакăн çинчен, боец! Асту хăвăн юлташусене епле асаплантарса вĕлернине! Тавăр фашистсене! Кашни кун, кашни сехетре, кашни утăмра тавăр! Вилĕм нимĕç оккупанчĕсене, вилĕм Гитлер хурахĕсене!— тесе пĕтернĕччĕ писатель хăйĕн çав тери хĕрӳллĕ статйине.

Юлташĕсемпе пĕрле Римма та çитсе курчĕ унта. МТСăн вăрăм картишне вилесене йĕркипе хурса тухнăччĕ. Çакăнтан хăрушши çĕр çинче нимĕн те пулма пултараймасть пуль!.. Этем кĕлеткисем мар, çунса хуралнă пысăк вутпуççисем выртаççĕ. Хăшĕсен урисем татăлса ӳкнĕ, хăшĕсен — аллисем. Пуççăррисем те пур... Мĕнле чунлă пулмалла-ши чĕрĕ çынсене çапла çунтарса яма! Вăтам ĕмĕрсенчи инквизиторсем те хал çитереймен пуль кун пек тума!..

Пысăк хисеппе пытарчĕç боецсене. Тăванла масар шăтăкĕ умĕнче дивизи командирĕ, политотдел начальникĕ тата ыттисем сăмах каларĕç, фашистсене ним хĕрхенмесĕр тавăрма, вĕсене пирĕн çĕр çинче пĕр çын юлмиччен пĕтерме, çапăçусенче арăслансем пек паттăр пулма чĕнчĕç. Оркестр хурлăхлă музыка каларĕ... Пытарнă çĕре салтаксем çеç мар, таврари ялсенчен ахаль çынсем те — куринчен ытларах хĕрарăмсем — нумай пухăннăччĕ те, вĕсем ӳлесех макăрчĕç. Риммăпа унăн юлташĕсем те куççульне чарайма рĕç...

Медсанбата таврăнсан, Римма гимнастеркăн шал енне çĕлесе хунă кĕсйинчен комсомол билетне кăларчĕ те, ун хуплашки айĕнчен Сергейпе пĕрле ӳкерттернĕ фотографине илсе, вăрахчен пăхса ларчĕ.

— Сережа, тусăм... Тен, сана та çавăн пек хăрушла асаплантарса вĕлернĕ тискер тăшман?— пăшăлтатрĕç ун тутисем.— Ах, эсĕ чĕрĕ пулинччĕ!..

## 10

Аçтан-ха пурне те аса илетĕн? Тем те курнă, тем те тӳснĕ... Чылайăшĕ манăç пулаççĕ, мĕншĕн тесен пĕр йывăр та хăрушă ĕç хыççăн çийĕнчех тепри сиксе тухать те — малтанхи хыçа юлать, ун çинчен ытла шухăшлаймастăн та вара.

Анчах нихçан манма çуккисем те нумай çав. Вĕсем асра ĕмĕрлĕхех юлаççĕ пулĕ. Пуртăпа касса паллă туса хă-

варнă пек. Тĕлĕкре те час-часах курăнаççĕ. Вăхăт нумай иртнĕ пулин те, хăшĕ-пĕрисем çинчен паян кун та аса илме йывăр. Тата хăшĕсем çинчен çынсене каласа парсан та ĕненес çук. Ытла та ĕненмелле мар çав. Анчах пулнă ун пекки, пулнă!..

Хĕрĕх иккĕмĕш çулта, дивизи Калинин облаçĕнче çапăçнă чух, медсанбат вырнаçнă яла «юнкерссем» тапăнчĕç. Аманнисем выртакан улт-çич пӳрте пĕр харăсах вут хыпса илчĕ. Ура çине тăма, хускалма пултараканнисем çав пӳртсенчен хăйсемех тухса çăлăнкаларĕç, анчах йывăр аманнисене çĕклесе тухмалла пулчĕ. Ытти сестрасемпе, санитарсемпе пĕрле Римма та вĕсем патне ыткăнчĕ, вут-çулăм ăшнех кĕрсе кайрĕ, питне, аллисене пĕçертрĕ, фуфайки йăсăрланма пуçларĕ, анчах вăл ăна-кăна пăхмарĕ, йӳçĕ тĕтĕмпе чыхăна-чыхăна, пурне те çăлса хăвариччченех ĕçлерĕ. Юлашкинчен вара, халтан кайса çитсе, урам варринчех тăнсăр пулса ӳкнĕ. Пĕтĕм ял çунма тытăннă пулин те, «юнкерссем» вĕçсе кайман-ха, каллĕ-маллĕ вирхĕнсе пулеметсенчен сапнă. Вутра çунасран хăтарнисенчен те чылайăшне тепĕр хут амантнă, вилнисем те пулнă, анчах темле майпа-çке Риммăна лекмен. Телейĕ çавăн пек пулнă-ши ĕнтĕ?..

Унтан, дивизие кăнтăралла, Орелпа Курск тăрăхне куçарсан, хĕрĕх виççĕмĕш çулхи çуркунне, хаклă медикаментсем тиенĕ лав шыва путма тапратрĕ те, вăл, ездовойпа пĕрле, ăна çăлма кăкăр таранах пăрлă шыва кĕрсе кайрĕ. Вăрахчен пулчĕç вĕсем шывра, çапах та лава çырана илсе тухрĕç-тухрĕçех. Тĕлĕнмелле: чирлемен те вĕт-ха çавăн хыççăн!

— Çĕр çул пурăнатăн ĕнтĕ эс, Римма! Вутра та çунмастăн, шывра та путмастăн! Тек санăн нимрен те хăрамалли çук!— терĕ ун чух мăнтăркка Женя.

«Хăрамалли çук...»

Епле хăрамалли çук пултăр вăрçăра? Вăл тупăнсах пырать-çке! Кашни кун, кашни утăмрах. Пĕр кĕтмен çĕртен... Акă, сăмахран, Белоруссире епле хăрушă япала пулса иртрĕ. Медсанбат Терюха ятлă питĕ пысăк ялта вырнаçнăччĕ. Пирĕннисем ун чух Сож шывĕ урлă каçасшăн çапăçатчĕç. Аманнисем нумайччĕ, вĕсем хушшинче йывăррисем те сахал марччĕ. Пĕтĕм медперсонал ураран ӳкесле ĕçлерĕ...

Пĕрре, кăнтăрла иртсен, осколокпа кăкăртан аманнă капитана илсе пычĕç те тӳрех операци сĕтелĕ çине хучĕç.

Римма ун чухне сортировкăра мар, операционнăйĕнче ĕçлетчĕ, хирурги сестрине пулăшатчĕ. Аслă хирург Басов операци тума тытăнчĕ, капитанăн кăкăрне касса уçрĕ. Унăн шалта юлнă осколока часрах тупса кăларса илмелле пулнă. Çав вăхăтра сасартăк калама çук вăйлă бомбежка тапранчĕ. Пӳрт кисренсе кăна тăчĕ, кĕçех, взрыв хумĕ çапнипе, кантăксем чăл-пар саланчĕç. Кун пек чух хăвăртрах ăçта та пулин пытанмалла ĕнтĕ, пĕр-пĕр шăтăк тупса йăпшăнмалла. Анчах хирург та, ăна пулăшакан сестрасем те пӳртрен тухма пултарайман. Ун пек тума тивĕç пулман вĕсен. Операци сĕтелĕ çинче аманнă çын выртнă. Ăна хускатма та юраман. Епле пулсан та операцие вĕçне çитермелле пулнă. Çавăнпа та никам та вырăнтан хускалмарĕ. Хирург операци турĕ. Сестрасем ăна пулăшрĕç...

Бомбежка çаплах чарăнмарĕ. Ĕнтĕ ялта нумай-нумай çурт ишĕлчĕ, темиçе çĕрте пушар пуçланчĕ, çапах та «юнкерссем» ял çинчех явăнчĕç-ха, пĕрин хыççăн тепри аялалла чăма-чăма, бомбăсем ывăтрĕç, пулеметсенчен сапрĕç. Бомбăсем шартлатса çурăлни хăлхасене илтми турĕ. Ваннă чӳречесенчен пӳрте тол тĕтĕмĕн шăрши палкаса кĕчĕ. Хирург операци тума чарăнмарĕ. Вăл капитан ӳпкинчен пӳрне вĕçĕ пысăкăш осколок кăларчĕ, шалти суранне çĕлеме тытăнчĕ, сестрасем ун çине хытнă пек пулса пăхса тăчĕç...

Çав вăхăтра вара операци пыракан пӳрте бомба лекрĕ, вăл, самантрах çивитти, мачча хăмисене хуçса, аманнă капитан выртакан сĕтел çине ӳкрĕ, капитанăн пĕр урине хуçса, сĕтеле çĕмĕрчĕ, унтан урай хăмисем витĕр тĕпсакайне анса кайрĕ те... çурăлмарĕ. Тахăш самантра урайне ӳкнĕ Римма куçне уçрĕ те пӳртре тусан йăсăрланнине, урайĕнче тата икĕ сестра выртнине, Басов сĕтел умĕнчех пĕшкĕнсе тăнине курчĕ. Унтан хирург хыттăн кăшкăрса хушнине илтрĕ:

— Сестрасем! Сĕтел патне! Халех сĕтел патне!..

Кайран çакă паллă пулчĕ. Пӳрт тăрри шатăртатни илтĕнсенех, вăл, сĕтел çинче выртакан аманнă çынна çăлас пек, ăна хăйĕн кĕлеткипе хупланă иккен. Паллах ĕнтĕ, енчен те пӳрте лекнĕ бомба сиксе кайнă пулсан, унта нимĕн те юлмастчĕ, пӳрчĕ те турпас пулатчĕ, çынсем те...

Хирург сассине илтсен, Римма сиксе тăчĕ те ун патнелле ыткăнчĕ. Аманнă капитанăн урисем юнашар лартнă иккĕмĕш сĕтел çинчеччĕ, çав сĕтел халĕ урайĕнче сапаланса выртать, пĕрремĕш сĕтел çинчен капитанăн хăрах ури усăн-

са аннă, тепри чĕркуççи таран çеç юлнă, унтан юн палкать...

— Иод! Бинт! Юнне чарăр, урине çыхăр!— кăшкăрчĕ хирург.

Çав самантра пӳрте медсанбат командирĕпе пĕрле икĕ врач хашкаса чупса кĕчĕç.

— Эсир чĕрĕ-и?— кăшкăрса ыйтрĕ тахăшĕ.

— Куратăр пуль — вилмен-ха,— терĕ Басов, вĕсем çине пăхмасăрах.— Аманнине часрах пулăшас пулать...

Вăл ассăн сывласа илчĕ те хăй ĕçне тытăнчĕ.

Çакăн çинчен кайран нумайччен асăнса пурăнчĕç. Аçтан манатăн-ха ун пеккине?!

Унтан Днепр... Мĕн тери хаяр çапăçусем пулчĕç унта! Хăватлă юханшывăн сылтăм енчи çӳллĕ çыранĕнче çав тери вăйлăн çирĕпленсе ларнă гитлеровецсем хытă шаннă: совет салтакĕсем çакăнта лакса лараççĕ, тек малалла каяймаççĕ!

Анчах каçрăмăр эпир Атăл пекех хăватлă Днепр урлă. Тем пек урса кайса хирĕç тăрсан та, тӳсеймерĕç фашистсем. Тарма тытăнчĕç...

Медсанбат Днепрăн ку енче, çыранран пĕр километрта çеç, хыр вăрманне вырнаçнăччĕ. Римма хăйсен пуçĕ урлă кунĕн-çĕрĕн хамăрăн йывăр бомбардировщиксемпе штурмовиксем аллăшарăн та çĕршерĕн пĕр чарăнмасăр вĕçнине, вĕсен бомбисем çĕре те, сывлăша та пĕр вĕçĕм кисретнине, артиллери татти-сыпписĕр хаяр аслати пек кĕрленине, таçтан, вăрман хыçĕнчен, «катюшăсен» вут-хĕмлĕ снарячĕсем вăркăнса тăнине пит лайăх аставать-çке! Аçтан манатăн ăна? Мĕн тери савăннă ушăн пурте! Пĕтĕм тавралăх кĕмсĕртетсе тăнипе час-часах юнашар тăракан çынпа та кăшкăрса çеç калаçма тиветчĕ.

Пĕр икĕ кунтан шутсăр ырă хыпар çитрĕ.

— Пирĕн икĕ батальон Днепр леш енче плацдарм йышăннă...

Вăрçăра пулнă çынсем пĕлеççĕ: тăшман çирĕпленсе ларнă çырана каçса унта плацдарм йышăнма питĕ йывăр, анчах ăна хамăрăн тĕп вăйсем каçиччен тытса тăрасси темиçе хут йывăртарах! Тăшман йышлă, унăн тем тĕрлĕ хĕçпăшал та пур; шыв урлă кимĕсемпе, пĕчĕк сулăсемпе çеç каçнă пирĕн салтаксем сахаллăн-ха, вĕсен малтанхи самантсенче пулеметсем, автоматсемпе гранатăсемсĕр пуçне урăх нимĕн те çук. Кирлех пулсан, тăшман чакма та пултарать — ун хыçĕнче темĕн чухлĕ çĕр, малтанах хатĕрленĕ

траншейăсем, иккĕмĕш, виççĕмĕш оборона линийĕсем; плацдарм йышăнакансен вара ниçта чакмалли те çук, вĕсен хыçĕнче шыв кăна. Тăшман, пĕтĕм вăйне пухса, пирĕн харсăр салтаксене вĕсем йышăннă пĕчĕк çĕр лаптăкĕ çинчен çапса кăларма, шыва хуса кĕртсе путарма тăрăшать. Çапăнпа та пирĕннисен унта юлашки юн тумламĕ, юлашки патрон, юлашки граната юлмиччен çапăçма тивет. Миçе паттăр хăйсен пуçĕсене хунă пуль çав плацдармсенче!..

Дивизин икĕ батальонĕ Днепр леш енче плацдарм йышăнни çинчен хыпар çитнĕ кунах, каçалапа, медсанбат хĕрĕсене пĕр палаткăна пухса çапла каларĕç:

— Плацдармра çухатусем пысăк, аманнисем нумай. Халлĕхе вĕсене ку енне каçарма май çук, çавăнтах пулăшас пулать. Санинструкторсем, санитарсем çитмеççĕ унта — чылайăшĕ хăйсем амански пĕтнĕ. Кĕçĕр, тĕттĕмленсен, плацдарма тата тепĕр икĕ батальон каçараççĕ, комдив пире çавсемпе пĕрле темиçе çын яма хушнă... Кам хăйĕн ирĕкĕпе плацдарма кайма кăмăл тăвать?

...Пилĕк-ултă хĕр алă çĕклерĕç. Вĕсем хушшинче — Риммăпа хĕрлĕ çÿçлĕ Женя.

Каçĕ ăмăр, сивĕ, çумăрлă пулчĕ. Анат енчен вĕрекен самаях вăйлă çил Днепр çийĕн пысăк хумсем сиктерет. Пăч-тĕттĕм, юнашар тăракан çын сăнне те уйăрса илме çук. Анчах кашни темиçе минутранах — пĕрре пĕр тĕлтен, тепре тепĕр тĕлтен — нимĕç ракетисем вĕçсе хăпараççĕ те умри тикĕт пек хура шыв çийĕ çуталса илет. Леш енче паян кунĕпех çапăçу кĕрлерĕ,— тăшман, паллах, пирĕннисене лутăркаса тăкма, плацдарма пĕтерме тăрăшрĕ ĕнтĕ. Халь те, сĕм-тĕттĕмре те, çапăçу чарăнман унта — пĕрмай пулеметсем тăкăртатаççĕ, минăсемпе снарядсем шартлатаççĕ. Кам пĕлет, тен, тăшман çĕрле те контратакăсем тăвать, пирĕннисене шыва путарма тăрăшать? Тен, унта пирĕн çынсем нумай та юлман, юлашки патронĕсемпе переççĕ, юлашки гранатисене ывăтаççĕ? Часрах, хăвăртрах çитес пулать вĕсем патне, пулăшас пулать, хамăр йышăннă плацдарма тытса тăмалла çеç мар, ăна сармалла, аслăлатмалла, гитлеровецсене Днепртан аякран аякка хăваламалла...

Кĕçĕр леш енне каçмалли салтаксем — икĕ батальон таран — вĕтлĕх вăрман хÿттипе лутра çыран хĕррине пĕр сассăр, никам сисмелле мар пырса, малтанах хатĕрленĕ сулăсемпе пулăç киммисем çине вырнаçрĕç. Хăшпĕр сулăсем çине пĕрер «сорокопятка» — танксене хирĕç перекен пĕчĕк тупăсем те лартрĕç. Унччен пирĕн леш енче нимĕнле арти-

ллери те пулман. Унтан сулăсемпе кимĕсем, пĕрин хыççăн тепри, каллех пĕр сассăр, леш çыран еннелле çул тытрĕç. Таврара шăп, кĕсменсем шыва шăмпăртаттарни çеç илтĕнет.

Риммăпа Женя пĕр кимĕ çинче, пĕр-пĕрин çумне йăпшăнса ларса пычĕç. Ним те чĕнмерĕç. Тĕрĕссипе, мĕн çинчен калаçма пулать-ха çакăн пек самантра? Каç пулнăранпах çăвакан вĕтĕ çумăр хытăрах чашлаттарма пуçларĕ, çил вăйланчĕ, хумсем кимĕ хĕррине хытăран хытă çапăнчĕç.

— Лайăх-ха ку,— терĕ Женя шăппăн.

— Мĕн лайăх?— ăнланмасăр ыйтрĕ Римма.

— Çумăр вăйланни.

— Мĕн лайăххи пултăр? Лачкам шыв пулатпăр. Кайран шăнатпăр акă.

— Айван эсĕ. Ракетăсемпе çутатса тăрсан та, çумăр витĕр вĕсем пире ытлах кураймаççĕ. Çырана чиперех çитме пултаратпăр. Шăнасси пирки ан хăра, лере, ак, пиçсе каймаллах вĕри пулать...

Ракетисене нимĕçсем хĕрхенмеççĕ. Çине-çинех вĕçтереççĕ. Ялт та ялт тăваççĕ вĕсем тĕттĕм тӳпере, çумăр витĕр пит вăйлах пулмасан та, тавралăха пурĕпĕр çутатса илеççĕ. Сулăсемпе кимĕсем Днепр варрине çитсен, тăшман наблюдателĕсем çапах та вĕсене асăрхарĕç пулмалла çав. Малтан темиçе мина çеç килсе ӳкрĕ вĕсем хушшине, унтан, кăшт тăхтасан, сасартăк минăсем çумăрпа хутăш пĕлĕтрен ӳкнĕ пекех тăкăнма тытăнчĕç. Малта, кайра, сулахайра, сылтăмра... Пĕр-пĕрин çумне тата хытăрах çыпăçса ларнă Риммăпа Женя хаьь пĕр самантлăха та сӳнмен ракетăсен çутинче тем çӳллĕш шыв юписем çĕкленнине курчĕç, вĕсем аялалла аннă чух пур еннелле те витререн сапнă пек шыв сирпĕнчĕ. Таврари шыв хуранти пекех вĕреме тытăнчĕ.

— Хытăрах ишĕр! Хăвăртрах!— кăшкăрчĕç командирсем кĕсменсемпе ĕçлекенсене. Анчах лешсем ахаль те пĕтĕм вăйран, шăнăрĕсене татса пăрахас пек карăнтарса, сывлăшĕсем пӳлĕнсе лариччен, кĕсменсене кĕçех хуçса пăрахмалла ишрĕç.

Хĕрсем ни чĕрĕ, ни вилĕ ларчĕç. Ытла та хăрамаллаçке! Çĕр çинчи мар вĕт кунта... Ак, халех пĕр-пĕр мина çитсе çапать те — кимĕ арканать, вара — сывпул, çут тĕнче! Чул пекех анса каятăн сивĕ Днепр тĕпнелле. Ишсе тухасси пулас çук. Çыран сывăхĕнче пулсан татахчĕ хуть. Анчах таçта-ха вăл, çыранĕ. Ним те курăнмасть. Снарядсемпе ми-

нăсем çаплах ӳкеççĕ, пĕр вĕçĕм, чаш та чаш шыв сирпĕнет, кимĕ сиккелет, хăш чух вăл тӳнсе каяссăнах туйăнать. Çитме пулĕ-ши çырана, урасемпе хытă çĕр çине пусма май килĕ-ши?

Риммăсен кимминчен инçех те мар пыракан сулла лекрĕ пулмалла, тĕттĕмре кăшкăрнисем илтĕнчĕç:

— Путатăп! Пулăшă-ăр!..

Унччен те пулмарĕ, Риммăсемпе юнашарах — пĕр икĕ хăлаçран та ытла мар пуль — шыв чашкăрса хăпарчĕ, çав самантрах кимĕ сулахаялла тайăлса кайрĕ те ӳппĕн çаврăнса выртрĕ.

— Пĕтрĕм...— çиçĕм пек шухăш вĕçсе илчĕ Римма пуçĕнче, хăй шыва путнă май.— Пĕтрĕм, эппин...

Анчах кунта ытла тарăнах мар иккен! Римма шывра пĕрре çаврăнса илчĕ те шыв çинелле ишсе тухма урисене тăсса ячĕ çеç — вĕсем çĕре перĕнчĕç. Вăл пуçне шывран кăларчĕ. Тăчĕ. Шывĕ мăй таран çеç.

— Çăлăнатăп... çăлăнатăп...— терĕ хăйне хăй. Çавăнтах хĕр-тусĕ çинчен аса илсе кăшкăрчĕ:

— Женя-я!.. Женя, ăçта эсĕ?!

— Кунта-а!— кĕçех илтĕнчĕ ăна хирĕç.

— Çырана, Женя! Кил ман пата, пĕрле пулăпăр!

Вĕсем пĕр-пĕрине хирĕç пырса пĕрлешрĕç те, шыва аллисемпе ик еннелле сире-сире, çыран патнелле шурĕç. Шыв ăшăхлансах пычĕ: кăкăр таран, пилĕк таран... Кимĕрен тухса ӳкнĕ ытти салтаксем те хĕрсемпе пĕрлех çыран еннелле пычĕç. Сылтăмра, сулахайра кимĕсем шуни курăнчĕ. Анчах вĕсем çинче ларса пыракансем те çыран патне çитиччен шыва сиксе анчĕç — унта ăшăх пулнă. Нимĕçсен минисемпе снарячĕсем халь чылай кайра ӳксе шыва пăлхатрĕç, ку ĕнтĕ хăрушă пулман. Кунта, çыран хĕрринче, пĕр снаряд та ӳкмерĕ — аякран перекен орудисемпе минометсемшĕн ку «мертвое пространство» пулнă...

Çапла вара вĕсем Днепр леш енне йĕркеллех каçса çитрĕç темелле. Кайран пĕлчĕç: салтаксем пурте тĕрĕс-тĕкĕлех пулнă, нимĕçсем пĕр суллине лектерсен те никам та шыва кайман. Пĕр пысăк çухату çеç пулнă: çав сулă çинчи хĕрĕх пилĕк миллиметрлă тупăпа тулли снаряд ещĕкĕ путнă, вĕсене, паллах, никам та çăлма пултарайман. Мĕн тăвас тетĕн, шывсем урлă вут-çулăм витĕр каçнă чух ун пекки çеç пулать-и!

Салтаксене хăвăрт кăна ротăн-ротăн йĕркелесе тăратмă хыççăн пĕр минут та тытса тăмарĕç, тӳрех сăртри шыр-

лан тăрăх лере, ĕнер кăнтăрла та, каç та çапăçу кĕрленĕ çĕре ячĕç, хĕрсене (Риммăпа Женьăсăр пуçне вĕсем тата виççĕннччĕ) батальон медпунктне илсе кайрĕç. Медпункт кимĕсем каçнă тĕлтен инçе те мар, çӳллĕ çыранри тем пысăкăш шăтăкрачччĕ — вăрçăччен кунтан чул, тăм е хăйăр кăларнă пулмалла. Чылай çĕрте çырана кăмака пекех чавса кĕрсе кайнă иккен те, аманнисене çавăнта вырнаçтарнă. Нумай пулнă вĕсем унта, анчах пăхаканĕсем — пĕр фельдшерпа тепĕр санинструктор çеç. Икĕ çын ним туса та çитереймен...

— Йывăр аманнисене, епле пулсан та, халех леш енне ăсатмалла, унсăрăн пĕтеççĕ вĕсем,— терĕ сасси çĕтсе ларнă ватăрах фельдшер.— Хăшĕсен гангрена пуçланать пулмалла. Персе пăрахаççĕ пире уншăн...

Сĕм-тĕттĕмрех вара йывăр аманнисене, пĕрерĕн-пĕрерĕн çĕклесе, халь çеç леш енчен килнĕ кимĕсем çине вырнаçтарма тытăнчĕç. Хĕрсен каллех пилĕк таран сивĕ шыва кĕрсе ĕçлемелле пулчĕ — унсăрăн носилкăсене ниепле те кимĕсем патне илсе пыма çук. Çур çĕр иртсен пĕр виç сехетре аманнисене хунă кимĕсем сулахайри çыраналла кайрĕç.

— Телей пултăр сире, йĕркеллĕ çитмелле пултăр,— тесе юлчĕç хĕрсем, кимĕсене вырăнтан хускалма пулăшса.

— Хăвăра та телей сунатпăр,— терĕç аманнисем.

Вĕсем çĕрĕпех сывăрмарĕç, çыранри шăтăксене кĕрсе, ларнă çĕртех кăшт тĕлĕрнĕ пек турĕç кăна. Тул çутăлнăçутăлман плацдармра калама çук хаяр çапăçу пуçланса кайрĕ. Нимĕçсем каллех пирĕннисене çыран хĕрринелле хĕссе шыва путарма ĕмĕтленнĕ ĕнтĕ. Кĕçех «юнкерссем» ӳлесе çитрĕç. Бомбăсем çине-çине çурăлнипе медпункт вырнаçнă тем çӳллĕш сăрт та кисренме тытăнчĕ.

Хĕрсене вара çав таттисĕр кĕрлекен, ялкăшакан, тĕтĕмхăрăм палкакан тамăк ăшне кĕрсе кайма тиврĕ. Вĕсем аманнисене çыха-çыха ячĕç, пирĕн боецсем алтма ĕлкĕрнĕ ансăр траншея тăрăх пĕр çырма пуçне илсе тухса хучĕç, унтан каллех çапăçу кĕрленĕ çĕрелле упаленсе таврăнчĕç. Кун каçа нимĕçсем улт-çичĕ хут контратака турĕç, хăш чух пирĕн траншейăсем çывăхнех çитрĕç, анчах кашнинчех, хăйсен вилнĕ-аманнă салтакĕсене пăрахса, каялла чакрĕç. Юрать-ха, пирĕн штурмовиксем лайăх ĕçлерĕç вăл кун, кашни çур сехетрен тенĕ пек ушкăнăн-ушкăнăн вăркăнса пырса, нимĕçсен пуçĕсем çийĕн аялтанах — пĕр çĕр-çĕр аллă метртан та çӳлте мар — вĕçсе тупă-пулеметсенчен печĕç, бомбăсем ывăтса хăварчĕç. Днепрăн сулахай енчен артилле-

ри те хытă пулăшрĕ çав, пĕрмай кисретрĕ тăшмана, ахалĕн пирĕн салтаксене питĕ йывăр пулатчĕ...

Аманнисем нумайччĕ. Римма малтанах хăй миçе çынна пулăшу парса хӳтĕ вырăна илсе тухнине шутласа пычĕ, каярахпа ун çинчен манса та кайрĕ. Вăхăт та пулмарĕ ун çинчен аса илме. Аманнисене çăласчĕ, вĕсен асапне çăмăллатасчĕ кăна. Хăшĕсем çине пăхсан, куççулĕ тухса каять, ытла та хĕрхенмелле-çке вĕсене! Акă, пĕр çамрăк халь те куç умĕнче. Сап-сар çӳçлĕ, пысăк кăвак куçлăскер. Хăй валли алтнă пĕчĕкçеç окопран пуçне кăшт çеç кăларса кăшкăрчĕ вăл: «Сестра! Сестра! Пулăшăр!..» Тепри суранне хăех тупса çыхма пикеннĕ пулĕччĕ, анчах ку, çамрăкскер, çын пырса пулăшасса кĕтет, хăрани-мĕнĕпе çухалсах кайнă курăнать. Римма ун патне хырăмпа шуса пырса юнашар выртрĕ.

— Ăçтан амантрĕç сана?— хăвăрт ыйтрĕ вăл.

— Ура... сылтăм ура, татăлчĕ пулмалла...— йынăшрĕ йĕкĕт, Римма çине куççулĕпе тулнă куçĕсемпе хурлăхлăн пăхса.

Унăн сылтăм йĕм пĕççи чĕп-чĕр юн иккен. Витрене чиксе кăларнă пекех йĕпе. Çиеле тухнă юнĕ, кĕвĕлсе, хурала та пуçланă. Римма сумкинчен часрах хачă кăларчĕ те ун брюкине касса çурчĕ. Суранĕ пысăк, «çĕтĕк суран» иккен — мина е снаряд осколокĕ лекнĕ.

— Ура... татăлман-и?— хуллен ыйтрĕ çамрăк салтак, суранĕ çине пăхма та хал çитерейменскер.

— Ухмах пуль эсĕ,— терĕ ăна хирĕç Римма, ун суранне васкасах çыхма тытăнса.— Чип-чипер ура ма татăлтăр? Е вăл саншăн ытлашши-и?

— Ыратать, сестра...

— Ыратмасăр! Осколок тивни — анну ачашлани мар...

Тепĕр пилĕк минутран Римма йĕкĕте окопран хуллен кăларса хăйĕн çурăмĕ çине çавăрса хучĕ те шăтăк-путăкла, снарядсем çĕмĕрсе пĕтернĕ çерем тăрăх тылалла упаленме тытăнчĕ. Питĕ йывăр пулчĕ ăна, вăл хашка пуçларĕ, вăхăчĕ-вăхăчĕпе унăн сывлăшĕ те пӳлĕнсе ларчĕ. Таврара, унта та кунта, час-часах снарядсем, минăсем çурăлчĕç, тĕтĕм, тусан йăсăрланчĕ, пульăсем шăхăрчĕç. Римма çăварне тăппа тулчĕ, анчах вăл пĕтĕм вăйран малаллах, малаллах шума тăрăшрĕ. Аманнисене пухнă çырма пуçне çитсе, салтака ыттисемпе пĕрле хурсан вара хăй те, тăнне çухатнă пек, куçĕсене хупса, йывăррăн сывласа выртрĕ. Пуç çийĕпех пирĕн штурмовиксен пысăк ушкăнĕ кĕрлесе иртрĕ, çы-

вăхрах снарядсем ухлатрĕç, минăсем шартлатрĕç — Римма çавсене тĕлĕкри пек çеç илтрĕ...

Анчах нумая пымарĕ ку, вăл тепĕр вунă минутранах тăрса ларчĕ. Каллех лере каяс пулать-çке, унта аманнисем татах пур вĕт. Пĕрисене вут-çулăм ăшĕнчен илсе тухнă хушăра çĕнĕрен аманнисем пулаççĕ. Пурне те пулăшмалла. Пурне те çăлмалла. Нихăшне те пĕтме памалла мар. Пирĕн сынсем, нимрен хаклă çынсем-çке вĕсем...

Римма хăй халь çеç çĕклесе килнĕ сап-сар йĕкĕт çине пăхрĕ. Вăл куçĕсене хупнă, аллисене кăкри çине хунă та йывăррăн сывласа, хуллен йынăшса выртать. Паллах, суранĕ ыратать унăн. Пĕçĕ шăмми те хуçăлнă-и тен. Хуçăлнах пулсан, пушшех ыратмалла ĕнтĕ. Мăнтарăн... Миçе çулта-ши вăл?

Римма хăй çине хĕрхенсе пăхнине туйнă пекех, йĕкĕт куçне уçрĕ. Темиçе самант хушши вĕсем пĕр-пĕрин çине ним чĕнмесĕр чăрлаттарса пăхрĕç.

— Сестра, шыв ĕçесчĕ...— терĕ унтан йĕкĕт, кушăрканă тутине çулласа илсе.

Римма аманнисене пăхакан салтак патне пычĕ.

— Шыв пур-и сирĕн?

— Ав, термос тĕпĕнче пур пăртак, курки те патĕнчех,— терĕ лешĕ.

Римма васкасах шыв ăсса пырса аманни умне куклёнчĕ те хăрах аллипе ун пуçне кăшт çĕклесе ĕçтерме тытăнчĕ.

— Тавтапуç, сестра...— ассăн сывласа ячĕ йĕкĕт, шыв ĕçсе тăрансан.

— Сывлăха пултăр.

— Мĕн ятлă эсир, сестра?— Йĕкĕт хĕр сăнне ĕмĕрлĕх астуса юлма тăрăшнă пек пăхрĕ.

— Римма, теççĕ мана, шăллăм. Анчах мĕн тума кирлĕ сана ман ятăм? Качча илес теместĕн пулĕ-çке?—кулам пекки турĕ хĕр.

— Уншăн мар-ха, сестра... Эп художник. Ан тĕлĕнĕр, чăннине калатăп. Ман пуçа пĕр шухăш пырса кĕчĕ...

— Мĕнле шухăш?

— Сывалма тӳр килсен... хăçан та пулин... эп пысăк картина ӳкеретĕп. «Санитарка» ятлă пулать вăл. Унта эсир паян мана мĕнле çăлнине кăтартса паратăп. Епле пулсан та ӳкеретĕпех çавăн пек картина... Çавăнпа та манăн сирĕн сăна астуса юлас килет. Тата эсир мана хăвăрăн хушаматăрпа адреса калăр,— картинне мар пулсан та, репродукцине ярса паратăпах сирĕн пата... Тĕрĕсне калатăп, сестра!

— Питĕ лайăх, мухтамалла ĕмĕт ку,— терĕ Римма.— Анчах санитаркине ман пеккине мар, хитререххине ӳкерес пулать, шăллăм. Ман пек сарлака янахлине, хĕсĕк куçлине ӳкерсен, сан картинуна илекен те пулмĕ...—кулса илчĕ вăл унтан.

— Тĕрĕс мар калаçатăр, сестра,—пуçне пăркаларĕ йĕкĕт.— Эсир питĕ хитре, çав тери, сире такам та юратмалла... Хытă юратмалла...

— Юрату çинчен халь мар, вăрçă пĕтсен калаçас пулать, шăллăм!

— Каллех тĕрĕс мар, сестра. Юрату пур чухне те пулмалла, мĕншĕн тесен çĕр çинче чи хăватлă вăй вăл, юрату тени. Ун вĕçĕ те, хĕрри те çук. Çынна юрату малалла илсе пырать. Юратман çын — çын та мар...

Хĕр ун çине тĕлĕнерех пăхса тăчĕ.

— Çамрăк пулин те, философ иккен эсĕ...

Çав вăхăтра çыран хĕррине йывăр снаряд ӳксе çурăлчĕ. Аялта выртакансем çинелле кĕпсĕр-р! тăпра сирпĕнчĕ, таврара пĕр хушă куçпуç курăнми тусан йăсăрланчĕ. Вăл сирĕлсенех Римма ура çине сиксе тăчĕ.

— Ну, манăн лере каяс пулать,— аллипе малалла сулса кăтартрĕ вăл салтак-художнике. — Часрах сывалма ыр сунатăп. Каç пулсан, сире леш енне каçараççĕ ĕнтĕ, унтан тылри госпитале яраççĕ.

— Хушаматăра каласамăрччĕ, вăрçă хыççăн та пулин тупатăпах вара эп сире,— ун куçĕнчен пăхрĕ салтак.

— Горькинчен анатарахра Атăла юхса кĕрекен Сăр шывĕ çинчен илтнĕ-и? Çав шыва аса илсенех ман хушамат та пулать,— терĕ Римма.— Сурская...

— Килти адрес тата?

— Килти адрес... Вăрçăран чипер сывă таврăнсан эпĕ Шупашкарти пединститутран вĕренсе тухма ĕмĕтленетĕп. Унтан тĕрĕсрех адрес пулмасть те пуль манăн...

— Тавтапуç, сестра... Виличчен те манассăм çук эп сире!

— Хăвна тавтапуç ыр сăмахшăн!

Римма аманнă салтак-художник çине тепре пăхса илчĕ те сăрталла хăпара пуçларĕ. Анчах нумай та каймарĕ, каялла таврăнса пычĕ:

— Ман çинчен пĕлтĕн, анчах хăвăн ятна каламарăнçке эсĕ?

— Виктор эпĕ... Виктор Огнев. Ан манăр!— терĕ салтак.

— Манмастăп!— Римма, аллипе вĕл-вĕл сулса, каялла чупрĕ. Огнев, хуллен хăрах чавси çине çĕкленсе, вăл сăрт хысакĕ хыçĕнче çухалнчченех пăхса юлчĕ, унтан ассăн сывласа илсе месерле выртрĕ.

«Каллех вут-çулăм ăшне кайрĕ...— шухăшларĕ вăл. — Тем те пулма пултарать унта... Сывă юлтăрах!..»

Римма мал еннелле чупрĕ. Унта çаплах çапăçу кĕрлет. Тăшман тапăнать, пирĕннисен, темле йывăр пулсан та, пĕр шит те чакмалла мар! Тăван çĕршыв приказĕ çапла. Тивĕçĕ çавăн пек. Пурнăç саккунĕ вăл.

Сасартăк Римма хăйĕнчен инçе те мар, кăшт сылтăмарахра, икĕ кĕлетке выртнине курчĕ. Пуçĕсем кунталла, тыл еннелле. Мĕне пĕлтерет ку? Аманнисем-ши? Е вилнисем? Халь кăна иртсе килчĕ-çке вăл кунтан, никам та çукчĕ! Вăл енче минăсем çурăлни çине пăхмасăрах, Римма çав кĕлеткесем патнелле ыткăнчĕ. Тепĕр минутранах çитрĕ те, чут тăнсăр пулатчĕ: тин çеç алтăннă çĕнĕ воронкăран пĕр пилĕк-ултă метрта уссиллĕ арçын месерле выртать, вăл вилнĕ, унпа юнашарах — Женя, унăн вăрçări чи çывăх тус-юлташĕ Женя! Вăл пичĕпе çĕре тăрăннă, хăрах алли пуçĕ айĕнче, теприне аякалла янă...

Турăçăм, нивушлĕ вилнĕ вăл?!

Пулма путараймасть ун пекки!..

— Женя, Женя, Женечка!..— пăшăлтатрĕ Римма тăрукак кăвакарса кайнă тутисемпе; ун умне кукленсе ларчĕ те ал тымарне тытса пăхрĕ: тапать иккен-ха.— Женя! Тусăм, ăçтан лекрĕ сана, ăçтан тиврĕ, чунăм?— Римма, куççулĕпе чыхăнса, чĕтрекен аллисемпе юлташĕн кĕлеткине хăвăрт-хăвăрт хыпалама тытăнчĕ, унтан ăна ерипен çурăмĕ çине çавăрса хума пикенчĕ. Çав вăхăтра вара Римма алли йĕпенчĕ: Женя суранĕ сылтăм пĕçĕ кăкĕнче пулнă. Юн нумай кайнă пирки унăн сăнĕ-пичĕ хăрушла шурса кайнă.

— Женя, Женечка...— кĕç ӳлесе ярас пекех нăшăкласа сыхма тытăнчĕ ун суранне Римма.

Хытăрах туртса çыхнă чух Женя вăрăммăн йынăшса ячĕ, унтан йăпăртлăха куçĕсене уçрĕ те каллех хупрĕ. Юлташне те паллаймарĕ пулмалла вăл, шеремет.

Питĕ хăрарĕ Римма уншăн: нивушлĕ вилсех кайĕ, нивушлĕ çăлса хăварма май килмĕ ăна? Женьăна плащ-палатка çине хурса туртса кайнă чух та çавăн çинчен çеç шутларĕ вăл. Кăштах сывлăш çавăрса илме, аллисене кантарма чарăнса выртсан, кашнинчех тусĕн ал тымарне тыта-тыта пăхрĕ, вăл мĕнлерех сывланине итлерĕ.

— Ан парăн вилĕме, Женя... ан парăн... эс маттур хĕрача пирĕн, çав тери маттур!— пăшăлтатрĕ хăй.

Чăнах та маттур пулнă çав Женя. Римма ăна ытти аманнисем выртакан çырма пуçне илсе çитерне тĕле вăл тăна кĕчĕ. Куçĕсемпе чиперех пăхрĕ. Риммăна палларĕ. Анчах хăйне мĕн каланине илтмерĕ — хăлхасăр пулса ларнă. Калаçма çăвар уçрĕ — пĕр сăмах та чĕнеймерĕ: чĕлхесĕр пулнă. Питçăмартисем тăрăх хăйĕн куççулĕ юхать... Эппин, аманнисĕр пуçне, питĕ вăйлă контузи пулнă ăна.

— Ах, Женя, Женечка, чунăм... Мĕнле-ха капла?—унпа пĕрле тепĕр хут макăрса ячĕ Римма. Унтан тусне ыталаса илсе, чуптăва-чуптăва йăпатма тытăнчĕ:— Ан хăра, Женя, ан хуйхăр, иртет вăл, пĕтĕмпех иртет... Суранĕ те тӳрленет, илтекен те, калаçакан та пулатăн...

Женя ун сăмахĕсене илтмерĕ, анчах вăл мĕн çинчен каланине пĕтĕмпех ăнланчĕ те куççулĕ витĕрех кулам пекки турĕ.

## 11

Тепĕр каçхине Днепрăн сылтăм енне полк таранах каçарчĕç, пехотăпа пĕрле халь çăмăлтарах артиллери те, пулеметчиксем те, бронебойщиксем те çителĕклех пулчĕç. Плацдарм сарăлса, анлăланса пычĕ. Ăна сарма, гитлеровецсене Днепр патĕнчен аяккалла хăвалама хамăрăн авиаци питĕ пулăшрĕ. Сывлăшра иртнĕ çулсенчи пек нимĕç çăханĕсем мар, пирĕн ăмăрткайăксем хуçа пулчĕç çав! Кĕçех Днепр урлă кĕпер те хыврĕç, ун тăрăх танксем те, йывăр тупăсем те, «катюшăсем» те каçрĕç. Вĕсем хыççăн тылсем те шума тытăнчĕç, медсанбат та хăйĕн пĕтĕм хуçалăхне тиесе каçрĕ.

Риммăсен дивизийĕ пекех, çав кунсенче пирĕн çарсем Днепр урлă нумай çĕрте каçнă. Фашистсем никам çĕнейми крепость выраннне хурса мухтаннă «Днепр валĕ» ишĕлчĕ, хăрăк туратсенчен тукаласа лартнă хӳшĕ пекех арканчĕ, фашистсен хăйсен пĕрмай чакма, тепĕр чух ним йĕркесĕр тарма тӳр килчĕ...

Питĕ савăнăçлă пулчĕç вăл кунсем!

Хаçатра Днепр урлă каçнă чух паттăр пулнăшăн дивизири вуникĕ çынна Совет Союзĕн Геройĕ ятне памалла туни, нумай салтакпа офицера орденсем пани çинчен каласкан приказ тухрĕ. Хĕрлĕ Çăлтăр памалла тунисем хушшинче Риммăпа Женя хушамачĕсем те пулчĕç. Женя ун чух дивизире çукчĕ, ăна ĕнтĕ тыла илсе кайнăччĕ, Римма вара

çав приказа вуланă хыççăн савăннипе, калама çук пăлханнипе çĕрĕпех çывăраймарĕ...

Дивизири полксем кашни кун вуншар, çирĕмшер, вăтăршар яла ирĕке кăларчĕç, икĕ çул çурă фашистсен пусмăрĕнче асапланнă совет çыннисем хăйсене çăлнă салтаксене калама çук хавасланса, пĕтĕм чĕререн тав туса, савăнăç куççулĕпе кĕтсе илчĕç. Полксем малтан мала кайса пынă май, вĕсене хирĕç сĕм вăрмансенчен (çав тери нумай-çке Белоруссире вăрман!) пинĕ-пинĕпе партизансем тухрĕç. Римма вĕсене пĕрре кăна мар курчĕ. Мĕн тĕрлĕ халăх пулман иккен партизансен отрячĕсенче! Вăйпитти арçынсемпе пĕрлех кăвак сухаллă стариксем, хĕрарăмсем, хĕрсем, вунтăватвунпилĕк çулхи арçын ачасем... Пурте пăшалсемпе — пĕрин вырăс винтовки, теприн нимĕç автоматĕ, хăшĕсен — итальянецсен кукăр курокла пăшалĕ... Тумĕсем те çĕр тĕрлĕ — хăшĕсем килти кĕрĕк-сăхмансемпе, теприсем хамăрăн кивелсе кайнă шинельсемпе, нумайăшĕ нимĕç курткисемпе, итальянецсен кĕске хура шинелĕсемпе...

Уйрăмах Римма пĕр çирĕм çулхи партизана лайăх астуса юлчĕ. Ăна медсанбат хăйĕн палаткисене пĕр вăрман кĕррине вырнаçтарнă кунах юлташĕсем носилкăпа çĕклесе пычĕç,— вăл ураран хытă аманнăччĕ. Хăй хĕр пек хитре, калаçнă чух тикĕс шăлĕсем ахах шăрçасем евĕр курăнаççĕ. Тумĕ вара ытла та тĕлĕнмеллеччĕ: пуçĕнче кăвак фетр шлепке, çийĕнче хăмăр тĕслĕ лайăх драп пальто. Ун тÿмисем татăлса пĕтнипе, вăл пилĕкне пушăт çыхнă, хулпуççисем урлă хĕреслесе патрон лентисем çакнă, шалаварĕ — нимĕçсен, уринче вара... чĕн хăюсенчен тунă çăпата.

Операци хыççăн «эвако» палаткине хурсан, хĕрсем унран уйрăлма та пĕлмерĕç, кашниех, пĕр-пĕр сăлтав тупса, кĕрсе тухрĕ çав палаткăна, пĕр-икĕ сăмах та пулин калаçса илчĕ унпа. Каçхине вара ун койки патне харăсах пиллĕкĕн-улттăн пухăнса ларчĕç, пĕр-пĕрне пÿлсех, хăй çинчен, вĕсен отрячĕ мĕн-мĕн туни çинчен ыйтса пĕлме тапратрĕç. Каччи студент иккен, вăрçă умĕн Минскри университетăн филологи факультетĕнче вĕреннĕ, виççĕмĕш курса куçнă, фашистсем пырсан подпольщик пулса тăнă, анчах темле сутăнчăк пулăшнипе гестапо вĕсен организацийĕ йĕрĕ çине ÿксе пĕрин хыççăн теприне тытса хупма пуçласан, вăл, Михаç Земчук, хăйĕн çывăх юлташĕсемпе пĕрле, партизансем патне тарнă...

Тăватă кун пурăнчĕ Михаç медсанбатра, унтан вара ăна тылри госпитале ăсатрĕç. Мĕн кăна каласа кăтартмарĕ

пуль вăл çав хушăра партизансем çинчеп! Ăна итленĕ чух хĕрсен сывлăшĕ те пӳлĕнчĕ. Ытла та хăюллă, çав тери харсăр пулнă-çке вĕсем!..

Пĕр каçхине хĕрсен партизансен юррисене итлесси килчĕ. Михаç килĕшсенех, Пĕчĕк Вера хăйĕн чĕркеленсе пĕтнĕ гитарине илсе пычĕ. Ах тур, хаваслă такмаксем юрласа пачĕ вара çамрăк партизан! Каçса кайсах итлерĕç хĕрсем:

Партизаны, партизаны,
Белые халатики!
Партизаны, люди наши,
Русские солдатики...

Я иду, а ветер клонит
Черную смородину,
Мой миленок партизан,
Сражается за Родину!

Полицаи, полицаи,
Плохо вы воюете,
Все равно от партизан
Пули не минуете!

Полицаи, полицаи,
Будете натешены,
Скоро, скоро на березах
Будете повешены!

Питĕ килĕшрĕ хĕрсене вăл гитара каласа юрлани. Кашни куплет хыççăнах гитарăна вĕлт! тӳнтер енне çаварса хурать те, сылтăм аллин пӳрнисемпе тăкăртаттарса «аккомпанимент» тăвать, хăй çав вăхăтрах шăпчăк юрланă пек шăхăркаласа илет, пуçне пăркаласа, куçĕсене вылятать. Чăн-чăн артист!

— Йăлăхтармарăм-и?— ыйтрĕ вăл такмаксене юрласа пĕтерсен.— Тата пире кун пек янраса ларнăшăн аслисенчен лекмест-и? Ятламаççĕ-и?

— Çук, çук, мĕн эсир! Никам та ятламасть! Тархасшăн тата мĕн те пулин юрласа парăр! Паллах — хăвăрăнне, партизансенне!— шавласа илчĕç хĕрсем.

— Эппин... хĕрсем çинчен итлес килет-и?

— Килет, килет, юрлăр!

Михаç Земчук ик-виçĕ аккорд туса илчĕ те, хĕрсен пуçĕсем çийĕн аяккалла, маччаналла пăхса, майĕпе юрлама тытăнчĕ:

Молодые девушки немцам улыбаются,
Позабыли девушки о своих друзьях.
Наших гордых соколов скоро позабыли вы
И за пайку черствую немцам отдались...

Михаҫ гитарӑн пур хӗлӗхӗсене тӑрук янратса пуҫӗпе сулчӗ, сӑнне хаярлатса хытӑрах юрласа ячӗ:

Под немецких куколок вы прически сделали,
Красками покрасились, вертитесь порой,
Но не нужны соколам кудри, краски, локоны,
И пройдет с презрением парень молодой!

Ку юрра хӗрсем темле пусӑрӑнса итлерӗҫ. Вӗсен кӑмӑлӗ хуҫӑлни уҫҫӑнах палӑрчӗ. Тахӑшӗ ассӑн сывласа ячӗ.

— Эсир ун пек хӗрсене хӑвӑр курнӑ-и, юлташ? — ыйтрӗ хуллен Пӗчӗк Вера.

— Мӗнле хӗрсене? — гитара хӗлӗхӗсене аллипе хупларӗ Михаҫ.

— Ну, эсир юрланӑ юрӑра каланӑ пеккисене... Нимӗҫсемпе явӑҫнисене! Чӑнах пулнӑ-и ун пеккисем? — Вера сасси чӗтрерӗ.

— Ун ҫинчен калама йывӑр, анчах хӗрсем хушшинче те сутӑнчӑксем пулнӑ ҫав. Нумай мар, тен темиҫе пинте пӗрре, анчах тӗл пулкалатчӗҫ. Эпир хамӑрах иккӗшне отряда илсе пырса пӗтӗм партизансен стройӗ умӗнче персе пӑрахрӑмӑр,— терӗ Михаҫ.

— Мӗн туна вара вӗсем ун пекех?

— Пӗри комендантпа арлӑ-арӑмлӑ пекех пурӑннӑ, лешӗ пирӗн ҫынсенчен туртса илнӗ хаклӑ тумтирсене тӑхӑнса, капӑрланса ҫӳренӗ, ҫынсене нумай кӳрентернӗ, тепри хӑйне юратнӑ ҫамрӑк партизана гестапона сутнӑ...

— Тен, хӑйсен ирӗкӗпе туман вӗсем? Хӑратса, ирӗксӗрлесе пӗтернӗ вӗсене? Хӗненӗ, асаплантарнӑ?

— Асаплантарнӑ хӗр тӑшманпа пӗр сӗтел хушшинче ӗҫсе те супмасть, унпа юнашар машина ҫине ларса катаччи те чупмасть, пӗр утиял айне те кӗрсе выртмасть пуль, йӑмӑкӑм! Чӑн-чӑн совет ҫыннисем хӑйсене ҫакмалли такан айне тӑратсан та, мӑйкӑҫласан та никама та сутман. Хӑйсем вилнӗ, анчах юлташӗсен ятне каламан. Ун пек тӗслӗхсене тем чухлех пӗлетпӗр эпир. Ҫамрӑккисем, ватӑпиттисем кӑна мар, утмӑл-ҫитмӗл ҫулхи карчӑксем те хӑйсен вилӗмӗпе ыттисене вилӗмрен ҫӑлса хӑварнӑ...

Питӗ пӑлханчӗ, тарӑн шухӑша ячӗ хӗрсене ҫак калаҫу. Вӗсем, пурте тенӗ пекех фронта хӑйсен ирӗкӗпе килнӗскер-

сем, икӗ ҫул ҫурӑ хушшинче нумай юн курчӗҫ, ҫӗр хут та вилӗм умӗнче пулчӗҫ, тӑшмана ҫӗнтересси ҫинчен ҫеҫ ӗмӗтленсе пурӑннӑскерсем, ниепле те ӑнланма пултараймарӗҫ: тӑшмана чунпа та, ӳтпе те епле парӑнма пулать-ха? Епле-ха хамӑр ҫынсене, хамӑр ирӗклӗхшӗн, телейшӗн ҫапӑҫакансене тӑшмана сутма пулать?! Ҫук, ҫук... Ытла та тискер, ирсӗр, хӑрушӑ япала ку! Ун пек ҫынсемшӗн чӑнах та нимӗнле каҫару та пулма пултараймасть!..

Хӗйсем пурӑнакан палаткӑна таврӑнсан та чылайччен калаҫса выртрӗҫ хӗрсем ҫакӑн ҫинчен.

— Луччӑ касчӑр, пусчӑр, татӑкӑн-татӑкӑн ваклаччӑр мана, анчах фашистпа пӗр вырӑн ҫине выртмастӑпах!— терӗ Ирина.

— Вӑйпа... пусмӑрласан?— ыйтрӗ Пӗчӗк Вера.

— Хыҫҫӑнах чикӗнсе вилетӗп е тӗл пулнӑ пӗрремӗш йывӑҫранах ҫакӑнатӑп! Пурӑнмастӑпах ҫавӑн хыҫҫӑн!..

Пӗр хушӑ пурте шӑпланса выртсан, Пӗчӗк Вера каллех сас пачӗ:

— Партизанӗ пит маттурскер вара...

— Юратса пӑрахрӑн та пулать? Э-э, Верочка, хӑвна ху манашкӑ пек тытатӑн пулин те, тути-масине пӗлетӗн иккен!—терӗ тахӑшӗ.

— Ҫук, уншӑн мар... Ахаль калатӑп.

— Ан тун, ан тун, ку йышши япаласем ҫинчен ахальтен калаҫмаҫҫӗ, унта яланах сӑлтавӗ пулать!

— Мӗнле япаласем ҫинчен тата?

— Ҫак партизан пек ытармалла мар каччӑсем ҫинчен!

Ку таранччен Пӗчӗк Вера каччӑсем ҫинчен калаҫнине пӗрре те илтмен хӗрсем халь ӑна хупӑрласа илчӗҫ, унтан юри кулнӑ пек, тӑрӑхланӑ пек турӗҫ:

— Кала тӗрӗссипе, юратса пӑрахрӑн вӗт? Чӗрӳ качака хӳри пекех вӗтӗлтетет пуль-ха, ҫапла-и?

— Ҫынна пӗрре курсанах юратса пӑрахма эпӗ Женя мар!— персе ячӗ вара Пӗчӗк Вера вӗсене хирӗҫ.— Женя пулнӑ пулсан, ку партизана чӑнах та тӳрех тытса чуптӑватчӗ ӗнтӗ...

— Эс ҫын ҫине ан яр, чунӑм!

— Никам ҫук ҫӗрте эс ху та чуптума хирӗҫ пулас ҫук-ха!—ҫаплах лӑпланмарӗҫ хӗрсем.

— Мӗн тата, эп те пурин пекех ҫын мар-им?!—ҫилленнӗ пекрех тавӑрса хучӗ Пӗчӗк Вера.— Мана та чултан туман пуль? Эп пӗчӗккӗ пулни ниме те пӗлтермест вӑл. Ман анне те пӗчӗккӗ, анчах сакӑр ача тунӑ...

Пурте ахăлтатса кулса ячĕç.

— О! Ку тĕрĕс ответ вара! Куна хирĕç нимĕн те калаймастăн!

— Маттур, Верочка! Тахçанах чунна çакăн пек уçса памалла!

...Пĕчĕк Вера асăнса илнĕ мăнтăркка Женя çав вăхăтра ытла инçетре те мар, пĕр вунпилĕк километрта кăна, арми госпиталĕнче выртнă. Шок тени (тытса пăрахнă пек пулни) часах иртсе кайнă унăн, хăйне эмеллеме тытăнсан темиçе кунтанах илтекен те, калаçакан та пулнă. Пĕр эрне каялла, медсанбат командирĕ ирĕк панипе, йывăр аманнисене тыла ăсатнă май, Риммăпа Ирина кайса килчĕç ун патне. Ах, савăнчĕ вăл уншăн! Упа пек вăйлăскер, выртнă çĕртех ытала-ытала, антăхтарсах яратчĕ хĕрсене.

— Тавтапуçах сире, тавтапуçах килсе курнăшăн!

Ăна арми госпиталĕнчен тыла яма тăнă иккен, анчах вăл ним тусан та килĕшмен.

— Питĕ хытă скандал турăм,— терĕ Женя,— аран-аран хăтăлкаласа юлтăм! Пирĕн кунта вырăн çитмест, медсанбатсенчен йывăр аманнисене кашни кунах ярса тăраççĕ, вĕсем валли вырăн пушатас пулать, теççĕ. Вăйпах таçта шуйттан майраки тăрне ярасшăн мана! Эп вара шăртлантăм та хӳрене тăратрăм. Камăн инçетри тылсем тăрăх çапкаланса çӳрес килет — кайтăр, анчах манăн унта ĕçĕм çук, терĕм. Чăнах ара, осколок шăмма тивмен, нимĕн те çĕмĕрĕлмен манăн, çемçе ӳте çеç урлă-пирлĕ çуркаланă, мĕн тума каятăп пулать таçти тыла? Мĕн курман эп унта? Танксенчен те хулăнрах броньпа хупланă каччăсене-и? Тӳсме пултараймастăп вĕсене, асăнсан та хăсăк тухать. Чи лайăх, юратмалли каччăсем кунта вĕсем, фронтра!.. Тен, ирĕксĕрех илсе каятчĕç пуль те, госпиталь начальникĕпе тавлашнă вăхăтра шăпах генерал-майор, начсанарм* пырса кĕчĕ. Эп тӳрех ăна жалоба пама тытăнтăм. Апла та капла, сăлтавсăрах тыла ăсатаççĕ, килĕшместĕп, луччă мана каялла медсанбата ярăр, ман купарча унта та пит лайăх тӳрленме пултарать, терĕм...

— Ун пекех каламарăн пуль те генерала...— кулса илчĕç Риммăпа Ирина.— Ытла тата эс...

— Каларăм, çаплах каларăм!— чышкине чăмăртаса илчĕ Женя.— Мĕн каламалла марри пур?

— Суранне вăл хăй уçса пăхас тенĕ пулсан?

---

*Арми санитари службин начальникĕ.

— Кăтартаттăм! Генерал пулсан та — тухтăр-çке вăл, танçине пĕрле каймалли каччă мар!

— Хăюллă çав эс пирĕн, Женя! Санăн арçын пулса çуралмалла-мĕн, чăнах!

— Ан ÿпкелешĕр уншăн, хĕрсем...— Женя куçĕсем чеен çуталса илчĕç.— Эп арçын пулнă пулсан, сире хăвăрах йывăр килетчĕ!

Виççĕшĕ те каçса кайсах кулчĕç...

— Нумай выртмастăп эп кунта, туяпа утакан пулсанах хамăр пата кĕрлеттерсе пыратăп,— терĕ юлашкинчен Женя.— Пурне те салам калăр манран. Хамăрăн хыткукар-старшинана асăрхаттарăр: НЗ тытса усратăр ман ятпа, часах çуралнă кун çитет манăн, менелник тăватпăр. Ы-ых, ташлатпăр пĕрре!..

Анчах вăл декабрь пуçламăшĕнче тин таврăнма пултарчĕ. Осколок суранĕ пуля суранĕ пек мар çав, час тÿрленмест. Хăй çав тери юсанса кайнăччĕ, малтанхинчен те тачкаланнă, питçăмартисем юри пĕветнĕ пек. Куçĕсем ялкăшаççĕ кăна. Пурне те ниçта кайса кĕрейми хавассăн ыталарĕ, чуптурĕ, çурăмĕсенчен лăпкарĕ, хăшĕсене чĕпĕтсе те илчĕ. Янрарĕ кăна хĕрсен палатки, Женя пĕччен таврăнман, хăйĕнпе пĕрле тата вунă çын илсе килнĕ пек. Тус-юлташĕсемпе шавласа илсен, вăл хăй таврăнни çинчен командира кайса пĕлтерчĕ, тухтăрсен палаткине кĕрсе, пурне те сывлăх сунчĕ, старшинана тĕл пулса, унпа шÿтленĕ пек-мĕн пек каласса илчĕ:

— Эп сана хĕрсем урлă заказ панăччĕ, хыткукар! Мĕн хушнине турăн-и эсĕ, манмарăн-и? Мăйна пăратăп ман менелнике типĕлле ирттермелле пулсан!

— Юрĕ, юрĕ, ан çыпăç, паян çуралман вĕт эсĕ, ыран çуралнă! Ыранччен пурăнас пулать-ха!— ал сулчĕ старшина.

— Асту эп сана, земляк тесе тăмăп!— юнам пекки турĕ Женя.

Вăл кун çанталăк уяртса ячĕ, кăнтăрла хĕвел пăхрĕ, каçхине таса пĕлĕте çăлтăрсем тапса тухрĕç. Унччен пĕрмай юрпа хутăш çумăр çăватчĕ, хăш чух тăман вĕçтеретчĕ е пĕтĕм çĕре тĕтре хупласа илетчĕ те темиçешер кун сирĕлместчĕ. Пăр енчен лайăхчĕ ку: тăшман самолечĕсем вĕçейместчĕç.

Тахăшĕ кулса та илчĕ:

— Астăвăр-ха, хĕрсем, Женя таврăннă-таврăнман çанталăк епле юсанса кайрĕ!

— Тахçанах таврăнмаллаччĕ санăн, Женя, атту эпир кунта пылчăк ăшне путсах лартăмăр!— хушса хучĕ тепри.

— Çылăхсăр çын эпĕ, çавăнпа вăл!—кулмасăрах хуравларĕ Женя.— Ман ят та авалхи грексен «ырă кăмăл» сăмахĕнчен пулнă. Çитменнине ыран çирĕм иккĕ тултаратăп. Турă çавсене пĕтĕмпех шута илет, эппин...

Унтан пукан çине ларчĕ те аллисене хире-хирĕç шарт! çапрĕ.

— Ватăлса кайрăм-çке эпĕ, хĕрсем! Тин качча илекен те пулмĕ!

Вăрахчен шавларĕç хĕрсем. Пуринчен ытларах Женя каласрĕ. Арми госпиталĕнче пилĕк эрне выртнă та-ха вăл, çав хушăрах тем те курнă, тем те илтнĕ, тĕрлĕ-тĕрлĕ çынсемпе паллашнă. Ун çине куç хывакансем те нумай пулнă имĕш унта, майорсемпе подполковниксем таранах.

— Пĕри, кукша интендант*, мана пĕрмай «пирĕн королева» тетчĕ. Мĕлке пек, хыççăнах çӳреме тытăнчĕ. Ялан канфет çитерет мана. Аçта çитнĕ унта сĕртĕнме хăтланать, ватсупнă, йăлăхтарсах çитерчĕ. Пĕррехинче çавăнтан пурин умĕнчех: эс мана «королева» тетĕн пулсан, хăвăн килти карчăкна «царица» тетĕн пуль? тесе ыйтрăм. Ним калама аптрарĕ старик, рак пек хĕрелсе кайрĕ. Çапах та хăпмарĕха, шуйттан. Тепринче вара, сĕтел хушшинче юнашар апат çисе ларнă çĕртех, çутăлтарса ятăм çакна...

— Мĕншĕн апла? Ан тĕлĕнтер-ха!—тăн-тан пăхса илчĕç хĕрсем.

— Ашкăннăшăн! Пĕр аллинче кашăк хăйĕн, теприпе ман чĕркуççие ачашлама тытăнчĕ, намăссăр! Çат, тутартăм кӳпшек питĕнчен...

Женя хăй ватăрах интенданта еплерех çапнине туса кăтартрĕ, хĕрсем ахăлтатса ячĕç.

— Физвоспитани патăн, эппин?

— Çав кирлĕ ăна!

— Ним те пулмарĕ пуль сана уншăн?

— Мĕн пултăр?— терĕ Женя.— Мĕншĕн çутăлтарнине çавăнтах каласа патăм эпĕ. Хăйнех намăс пулчĕ, тепĕр куннех тухса кайрĕ госпитальрен. Аманнăскер те марччĕ вăл, хырăмĕ ыратни çине ӳпкелесе пырса выртнă çеç. Канма, санатори вырăнне. Çарта та ыр курма юратакансем тупăнаççĕ мар-и!

— Çамрăккисем те пурччĕ пуль?— ыйтрĕ Пĕчĕк Вера.

---

*Интендант—çарта хусалăх, снабжени енĕпе ĕçлекен.

— Паллах, пурччĕ. Лейтенантсем, капитансем... Анчах вĕсем пурте хытă аманнăскерсем, нумайăшĕ койка çинчен те тăраймаççĕ. Пĕри вара питĕ кăмăла кайрĕ мана, Михаç Земчук, партизан...

— Земчук? Партизан? Сарăскер-и?— сиксе тăчĕ Пĕчĕк Вера.— Пĕлетпĕр эпир ăна, пурте паллатпăр! Вăл пирĕн патра тăватă кун выртса кайрĕ!

— Верочка вăл качча пĕрре курсанах юратса пăрахрĕ!— терĕ Ирина.— Халь те тĕлĕкре курса пурăнать...

— Каччи чăнах та юратмалласкер те...— тунмарĕ Вера.

— Тĕрĕс, Верочка, шутсăр юратмалла çав!—пĕççине çапсах илчĕ Женя.— Ун пеккисем сайра тĕл пулаççĕ. Каччă мар... шоколад!

Калаçăва Римма хутшăнчĕ:

— Çав партизан кунта выртнă чухнех каларăмăр эпир: енчен те ку качча пирĕн Женя курас пулсан, вилеслех юратса пăрахать ĕнтĕ, терĕмĕр. Тĕрĕс шутланă иккен. Эсир чăнах та тĕл пулнă, эс юратса пăрахнă ав... Юмахри пек!

— Вăл пире пит хитре юрăсем юрласа кăтартрĕ кунта,— хушса хучĕ Пĕчĕк Вера.— Артист пекех!

— Юрлама юратать çав вăл. Эп те пĕр юррине вĕренсе юлтăм унран. Юрласа парам-и сире?

— Юрла-ха, юрла, Женя!

Пĕчĕк Вера ăнаваскасах гитара пырса тыттарчĕ. Пурте шăп пулчĕç. Женя хуллен ӳсĕрсе пырне тасатрĕ те юрлама пуçларĕ:

...Был я ранен, и капля за каплей
Кровь горячая стыла в снегу.
Наши близко, но силы иссякли
И не страшен я больше врагу.

Мне столетьем казалась минута,
Шел по-прежнему яростный бой,
Медсестра, дорогая Анюта,
Подползла, прошептала: «Живой...»

Женя сывлăш çавăрса илчĕ те, тус-юлташĕсем çине хурланнă пекрех пăхса, малалла юрларĕ:

Не сдавайся ты смертушке лютой,
Посмеемся над нею с тобой...

Çак тĕлте Женя юрри сасартăк татăлчĕ: таçта çывăхрах йывăр бомба ӳксе çурăлчĕ, брезент-палатка хăрушла

ҫил-тăвăл пырса ҫапнă пек чĕтренчĕ, провод вĕҫĕнчи электричество лампочки унăн-кунăн сулланчĕ. Унччен те пулмарĕ тата икĕ бомба юнашарах кĕрслетрĕҫ, палатка каллех сике-сике илчĕ, унтан татах... Кĕрс! шарт! кĕрс! шарт! Лампочка пат сӳнсе ларчĕ.

— Каҫхи бомбардировщиксем!— кăшкăрчĕ тахăшĕ.

— Халех урама чупăр! Шăтăксене пытанăр!..

Тĕттĕмре шинелĕсене аран тупкаласа, пĕр-пĕрине ҫапăнса, тĕрткелешсе, хĕрсем часрах палаткăран сиксе тухрĕҫ те тĕрлĕ ҫĕрелле, вăрманалла, йывăҫсем хушшинелле ыткăнчĕҫ. Унта вĕсен бомбежка е артобстрел пулас пулсан пытанма малтанах алтса янтăланă тăрăхла ансăр шăтăксем пур. Тĕттĕм ҫĕрте вĕсене тупаяс та ҫук, юрать-ха кĕҫĕр уйăх ҫути. Хĕрсем ҫав шăтăксем патне чупнă хушăра вĕсен палаткипе юнашарах бомба ӳкрĕ те палаткăран нимĕн те юлмарĕ...

Урнă пекех иртĕхрĕҫ фашист ҫăханĕсем. Пĕлнĕ пуль вĕсем ҫак вăрманта дивизи тылĕсем вырнаҫнине: кунтах медсанбат, кăшт каярахра апат-ҫимĕҫ склачĕсем, тата шаларах кайсан — патрон-снаряд склачĕ. Ҫанталăк юрлăҫумăрлă, тĕксĕм, тĕтрелле чух тăшман нимех те тăваймарĕ, халь акă, ҫанталăк уяртсан, ҫитменнине уйăхлă каҫ, кĕтĕвĕпех вĕҫсе килнĕ вĕсем... Бомба ҫине бомба, бомба ҫине бомба пăрахаҫҫĕ, пĕрре кисретсе каяҫҫĕ те татах килеҫҫĕ, шуйттансем! Ҫур сехет ытла кĕрлерĕ тавралăх, ҫĕр кисренчĕ, вут-ҫулăм ялкăшрĕ, йывăҫсем шатăртатса хуҫăлчĕҫ, сывлăшалла ҫĕкленсе, каялла персе анчĕҫ, пĕтĕм вăрман тол тĕтĕмĕ, ĕнĕк шăршипе тулса ларчĕ.

Риммăпа Пĕчĕк Вера иккĕшĕ пĕр хĕсĕк шăтăкра, айлăнҫийлĕн выртрĕҫ, Вера аялта, Римма ун ҫурăмĕ ҫинче. Кашни бомба ӳкмессеренех Вера хăйне осколок лекнĕ пек йынăшса, чĕтресе илчĕ.

— Пĕтрĕмĕр, пĕтрĕмĕр... тинех вилĕм ҫитрĕ...— пăшăлтатрĕ вăл, йăшаланкаласа.

— Вырт чипер, мана тулалла тĕксе кăларатăн!— терĕ Римма тарăхнă пек.— Бомба тӳрĕнех лекмесен, нимĕн те пулмасть!

— Ытти хĕрсем мĕнле, пурте пытанма ĕлкĕрнĕ-ши?

— Аҫтан пĕлем эпĕ? Пытанчĕҫ пуль...

— Палаткăсем мĕнле-ши? Аманнисем пĕтмерĕҫ-ши?

— Ана та сан чухлех пĕлетĕп...

Юлашки бомбăсем вĕсенчен чылай аякра ӳксе ҫурăлчĕҫ. Тавралăх шăпланчĕ. Кĕҫех такам кăшкăрни илтĕнчĕ:

— Отбо-ой! Тухăр пурте!

Римма шăтăкран вăшт кăна сиксе тухрĕ, ун хыççăн — Вера. Вĕсем тӳрех палаткăсем еннелле ыткăнчĕç. Нимрен малтан хăйсен палатки, кăкарнă вĕренсенчен вĕçерĕнсе, çĕр-те выртнине курчĕç,— çӳлтен пăрахнă пуш михĕ пек. Юнашарти палатка та çурри таран ишĕлнĕ...

— Ах тур, пĕтрĕ ĕнтĕ ман гитара!— шеллесе илчĕ Римма хыççăн чупакан Вера.

— Ухмах пуль эсĕ! Тупнă гитарăшăн хуйхăрмалли вăхăт!— каялла пăхмасăрах вăрçа илчĕ ăна Римма.— Эс çынсем çинчен шухăшла, тен, палаткăсенче выртакан аманнисем йăлт вилсе пĕтнĕ!

Çук, ун пекех мар иккен. Взрыв хумĕпе виçĕ палаткăна лутăркаса хунă, аманнисене койкăсем çинчен илсе ывăтнă, анчах вилекен пулман. Утма пултараканнисенчен хăшĕсем аяккалла тарнă, шăтăксене йăпшăннă. Халь вĕсем майĕпе каялла таврăнчĕç. Санитарсем, ездовойсем, шоферсем — çывăхра кам пулнă, пурте — ӳкнĕ палаткăсене тепĕр хут тăратма, чалăшнисене тӳрлетме тытăнчĕç, сестрасем койкăсене йĕркене кĕртсе аманнисене вырнаçтарчĕç.

— Женя ăçта пирĕн, курмарăр-и?— пĕр палатка патĕнче тăрмашакан Риммăпа Вера патне пырса хуллен ыйтрĕ вĕсен тусĕ Ирина.

— Курман эпир, ăçта та пулин урăх палаткăсем патĕнче пуль,— терĕ Римма. Анчах хăйĕн чĕри теме сиснĕ пек пăчăртанса илчĕ.

— Çук ниçта та.

— Епле çук пулать? Ăçта кайма пултарнă вăл?

— Пĕлместĕп çав.

— Бомбежка вăхăтĕнче тем пулман пуль те?—Риммăна ку хыпар пăлхатсах ячĕ.— Эс ăна кăшкăркаласа чĕнсе пăхрăн-и?

— Чĕнтĕм. Сас памасть. Куракансем те пулман ăна...

— Ак япала. Мĕнле-ха ку? Командира калас пулать, эппин! Тен, аманнă вăл? Е контузи пулса ӳкнĕ?

Римма, ĕçе пăрахсах, Иринăпа пĕрле хăйсен палатки тăнă вырăналла утрĕ. Вера та вĕсенчен юлмарĕ. Кăшт кайсанах вĕсем старшинана тĕл пулчĕç.

— Женя Масловăна курман-и эсĕ?

— Енертенпе курман. Каçхине эрехшĕн тапăнчĕ мана, ыран менелник пулать, терĕ. Анчах эп ăна: ыранччен пурăнас пулать-ха, терĕм.

— Çук-ха вăл ниçта та!

— Çывăрать пуль ăçта та пулин,— ал сулчĕ старшина.— Ун пек мăнтăрккасем — ыйхă чăптисем вĕт. Пĕр-пĕр шăтăка хĕсĕнсе выртнă пуль те. Госпитальте кунĕ-кунĕпе çывăрма хăнăхнă вăл...

— Ан сўпĕлтет! Женя ун пек çын мар, тем пулнă ăна, халех шыраса тупас пулать!— сассине хытарчĕ Римма.

— Ак тата! Здрасте сана!— аллисене ик еннелле сарса ячĕ старшина.— Кашни юбка хыççăнах ман чупмалла пуль! Шырăр, сире питех кирлĕ пулсан, манăн кĕçех арми штабне медикаментсем илме каймалла!

— Юбка мар вăл, çын! Чĕрĕ çын, ăнлантăн-и?—кăшкăрсах пăрахрĕ Римма. Анчах старшина тепре ал сулчĕ те малалла утрĕ.

Хĕрсем санбат командирне, Гладков майора шыраса тупрĕç.

— Женя çук пирĕн...

— Мĕнле Женя? Маслова-и? Каç кăна пурччĕ-çке?— тĕлĕнчĕ мăн уссиллĕ майор.

— Бомбежка умĕн те пурччĕ... Тем пулман-и, тетпĕр.

— Шырас пулать, эппин! Бомбежка вăхăтĕнче ăçта пултăр эсир?

— Вăрманта, шăтăксенче...

— Çавăнта кайса пăхăр. Ăçта пирĕн старшина? Шыратăр!

— Эпир пĕлтертĕмĕр ăна, анчах вăл хăлхана та чикмерĕ. Ман ĕç мар, тет...

— Калăр ăна эп хушрăм тесе! Ялан хăй ăсĕпе пурăнать, тулăксăр этем! Халех шырама тытăнтăр!

...Старшинана тупма пулмарĕ, çавăнпа та Женьăна шырама хĕрсем хăйсемех кайрĕç. Ун чух тул çутăлма пуçланăччĕ ĕнтĕ, умри çирĕм-вăтăр метрта мĕн пурри лайăхах курăнатчĕ. Вĕсем вăрмана кĕчĕç те бомба-снарядсенчен пытанма алтнă шăтăксене, таврари йывăç тĕмисене йĕркипе тĕрĕслеме тытăнчĕç. Чылай çўрерĕç. Нимĕн те курăнмарĕ. Унтан Пĕчĕк Вера сасартăк кăшкăрса ячĕ:

— Хĕрсе-ем!..

Риммăпа Ирина иккĕ-виççĕ сиксех ун патне çитсе тăчĕç.

— Мĕн, Вера?

— Ак...—Вера пĕр çатрака йывăç тĕми айĕнче курăнакан урасем çине кăтартрĕ.— Женя... вилнĕ пулмалла... турăçăм!

Хĕрсем часрах ун патне пĕшкĕнчĕç.

— Женя, Женечка... Мĕн пулнă сана?!

Хирĕç сас пулмарĕ.

— Женя-я!— макăрса ячĕ вара Римма.—Мĕн турăн э-эс?! Женя, тетĕ-ĕп!..

...Ăна вĕсем йывăç тĕмĕ айĕнчен ерипен кăна кăларса çутăрах вырăна хучĕç. Ун кĕлетки сивĕннĕччĕ ĕнтĕ. Пичĕкуçĕ çине юн хытса ларнă, осколок ĕнсинчен пырса çапнă иккен. Çапах та вăл, вăйлăскер, тăруках вилмен, хÿтлĕх шыраса пилĕк таранах йывăç айнелле чавсаланса кĕрсе кайнă. Хăй кăшкăрайман та пулмалла. Тĕттĕмре ăна никам та асăрхаман. Çавăнпа та бомбежка пĕтсен те кунтах вырт-са юлнă вăл. Тен, ун чухне чĕрĕ те пулнă-и?

— Чупăр часрах, Гладков майора, хамăр хĕрсене пĕлтерĕр! Халех килччĕр!— Иринăпа Пĕчĕк Верăна хушрĕ Римма, куççулĕпе чыхăна-чыхăна.

Хĕрсем самант та тытăнса тăмарĕç, чупрĕç.

Вилнĕ хĕр-тусĕ патĕнче пĕччен юлсан, вăл пĕр хушă тăнне çухатнă пек ларчĕ. Нимĕнле туйăм та пулмарĕ унăн. Пуçĕ çаврăнса кайрĕ. Мĕн пулса иртет çĕр çинче? Пĕртте ăнланмалла мар. Ак вăрман. Тĕксĕм. Шăп. Вăл вараланса пĕтнĕ юр çинче чĕркуçленсе тăрать. Ун умĕнче Женьăн хускалман кĕлетки выртать. Мĕншĕн хускалмасть вăл? Мĕншĕн сас памасть?..

— Женя, Женечка...—пăшăлтатрĕ Римма.

Кăштах вăхăт иртсен тин унăн пуçĕнче шухăш хыççăн шухăш явăнма пуçларĕ.

— Темиçе сехет каялла кăна çав тери хаваслăччĕ-çке эсĕ, ытарайми тусăм! Пĕр чарăнмасăр калаçрăн, темтепĕр каласа кăтартрăн, ахăлтатса култăн, гитара каласа юрларăн... Кам шутланă ун чух çакăн пек пуласса! Паян эсĕ çирĕм иккĕ тултартăн, менелник тăвасшăнччĕ. Анчах менелник вырăнне ав мĕн пулса тухрĕ. Яланлăхах уйрăлтăн пирĕнтен... Женя, Женя! Мĕн-мĕн курмарăмăр пуль эпир санпа, мĕн тери йывăр самантсем пулмарĕç пуль пирĕн фронтри пурнăçра, анчах нихçан та парăнмарăмăр эпир, пуçа усмарăмăр, пулас телее шанса пурăнтăмăр. Мĕн пулса тухрĕ-ха ку халь? Мĕншĕн пĕтмелле пулчĕ сан?... Ах, Женя, Женя, тусăм, тăванăм, ылтăн çыннăм!..

...Пĕтĕм батальон хуйхăрчĕ Женя çавăн пек сарăмсăр вилсе кайнăшăн. Хĕрсемниепле чарăнаймасăр макăрчĕç. Ăна пытарнă хыççăн та эрне пуль çав тери салхуллă çÿрерĕç, каярахпа та ăна асăнман кун пулмарĕ. Час-часах вăл юлашки хут юрласа кăтартнă юрра аса илсе юрларĕç:

Не сдавайся ты смертушке лютой,
Посмеемся над нею с тобой...

Çапла çав, ырă çын ячĕ нумайлăха асра юлать. Уйрăмах эсĕ вăл çынпа пĕрле хура-шур нумай курнă пулсан...

Вăхăт шурĕ. Ак ĕнтĕ Çĕнĕ çул та çывхарса килчĕ. Дивизи участокĕнче ку яхăнта ытла нимех те пулмарĕ, хура кĕркунне, лапра-çĕпре вăхăтĕнче, оборонăна тăнăранпа «вырăнти çапăçусем» çеç кĕрлекелерĕç. Медсанбат халь пĕр пысăк ялта, питĕ тĕлĕнмелле çĕре вырнаçнăччĕ. Кунта нимĕç «карателĕсен» отрячĕ тăнă-мĕн. Вĕсемпе пĕрле полицайсем те йышлăн пулнă. Вĕсем партизансене хирĕç кĕрешнĕ, облавăсем, налетсем тунă, анчах хăйсемех партизансенчен вилесле хăраса пурăннă. «Халăхшăн таварăкансем» хăйсене сасартăк пырса тапăнасран сехрисем хăпнипе, вĕсем, пирĕн çынсене ĕçлеттерсе, ял варринче ларакан вăтам шкул, клуб, ялпо магазинĕн çурчĕсене шала хăварса, ытама кĕмен юман пĕренесенчен тем çӳллĕш крепость тунă. Крепость стенисем икĕ хутлă, вĕсен варрине — икĕ стена хушшине — тăпра тултарнă, кашни стенинчех вара темиçешер амбразура, пăшал-пулеметран пемелли ансăр шăтăксем пур. Ку та çитмест: крепость тавра икĕ рет йĕплĕ пралук карнă. Тăруках пырса çулăхаймăн! Шкул çуртĕнче нимĕç салтакĕсем пурăннă, клубра — полицайсем. Магазин пулнă çуртра йытăсемпе вĕсене пăхакансене усранă. Виçĕ кухня пулнă кунта — нимĕçсем валли, полицайсем тата йытăсем валли. Совет самолечĕсем пырса тапăнас пулсан хăтăлса юлма крепость варринчех темиçе накатлă* блиндажсем туса тултарнă. Хытă сыхланă хăйсен ирсĕр пуçĕсене фашистсемпе вĕсен сутăнчăк тарçисем!

Пурте çав тери тĕлĕнсе пăхса тухрĕç çак крепоçе.

— Вăт, шуйттансем! Вунултăмĕш-вунçиччĕмĕш ĕмĕрти архитектурăпа усă курнă-ха!— кулчĕç хăшĕсем.

— Тĕрĕс, Иван Грозный вăхăтĕнчи укрепленисем пекех ку!

Анчах ĕмĕрхи юмансенчен тунă крепость те, нимĕнле блиндажсем те çăлайман вĕсене. Пирĕн салтаксем сĕмçĕрле тăрук пырса тапăнсан, вĕсене ăшă вырăнсем çинчен сике-сике тăрса мулкачсем пекех тухса тарма тивнĕ, хăшĕсем йĕмĕсене те тăхăнайман. Ир валли пиçекен апат та хурансенче вĕресех юлнă. Ытти нумай çĕрти пек ялне те вут хыптарайман...

*Накат — блиндаж çине витнĕ хулăн пĕренесем.

Крепость ăшчиккине пăхса тухсан, медсанбат командирĕ Гладков майор тулли кăмăлпа çапла каларĕ:

— Кунта санбат мар, курорт тума пулать! Маттур пирĕн тăшман: пире валли тӳшек-çытар та, апат-çимĕç те янтăласа хăварнă. Ыр куратпăр пĕр хуша!

Унтан çуртсен ăшчиккине, вырăн çине сармалли хатĕрсене, йăлт çуса, тĕплĕ дезинфекци тума хушрĕ:

— Нимĕçсемпе полицайсен шăрши те ан пултăр!

Ик-виç кун тасатрĕç санитарсемпе сестрасем крепость ăшчиккине, гитлеровецсенчен юлнă хатĕр-хĕтĕрсене. Вара кунта питĕ лайăх, тап-таса та çап-çутă больница пулса тăчĕ.

Çав кунсенче Римма патне Иван Актай пырса тухрĕ. Нумайранпа тĕл пулманччĕ вĕсем. Юлашки вăхăтра дивизи хаçатĕнче те унăн статйисемпе очеркĕсем курăнмарĕç. Тем пулман-ши куна, тесе те пăшăрханнăччĕ Римма. Анчах вăл икĕ уйăх хушши фронт политуправленийĕнче, хаçатçăсен курсĕнче пулнă-мĕн. Пĕр-пĕрне сывлăх суннă, кутăруçăн мĕнле пурăнни çинчен ыйткаласа пĕлсен, Актай полевой сумкине уçрĕ.

— Сан валли пĕчĕк кăна парне илсе килтĕм-ха эпĕ, землячка...

— Кĕнеке тухнă пуль ĕнтĕ сирĕн, Иван Васильевич! Çапла-и?— тӳрех тавçăрса илчĕ хĕр.

— Акă, кур...—Актай ăна чăнах та кĕрен хуплашкаллă пысăках мар кĕнеке тыттарчĕ.

«Иван Актай... Çапăçу хирĕнче... фронтри калавсемпе очерксем...»— хуллен вуларĕ Римма.— Спаççипă, Иван Васильевич! Ку кĕнекене мана парнеленĕшĕн çеç мар, ăна çырса кăларнăшăн спаççипă!— хĕпĕртесе каларĕ вăл.

— Тав тума ан васка-ха эсĕ, йăмăкăм, тен кĕнеки килĕшмĕ сана, тен, япăх çырнă тесе тиркесе тăкăн?— кулса илчĕ Актай.

— Çук, çук, ун пек пулма пултараймасть! Сирĕн кĕнекесене вуланă эпĕ, эсир яланах çав тери кăмăлпа каймалла çыратăр!— парнене кăкри çумне тытрĕ Римма.

— Ерçӳ пулсан, вуласа тух, эппин...

— Вулатăп, кĕçĕрех вуласа тухатăп!

— Сăмах майĕн каласан, эс унта хăвăн ятна та тĕл пулма пултаратăн.

— Хам ята?! Мĕнле майпа? Ан тĕлĕнтерĕр!—куçĕсене чарса пăрахрĕ Римма.

— Сакăрвун иккĕмĕш страницăна уçса пăх-ха.

Чăнах иккен! Писатель хăйĕн кĕнекине иртнĕ хĕлле Римма çинчен çырнă «Фронтри патриотка» очерка та кĕртнĕ. Анчах халь хаçатра тухни пек пулман вăл, ăна чылай пысăклатнă, Римма «За отвагу» медальпе Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ мĕншĕн илни çинчен те çырнă.

Хĕр кĕрхи анис панулми пек хĕрелсе кайрĕ.

— Темле тав тумалла ĕнтĕ сире куншăн, Иван Васильевич...— пăшăлтатса илчĕ вăл.

— Вăрçă хыççăн, качча кайнă чух, туя чĕнсе кĕрекене лартатăн та какăриччен ĕçтеретĕн,— кулса илчĕ писатель.

— Унччен нумай пурăнас пулать-ха...

— Ытла нумай та юлмарĕ пуль ĕнтĕ, Римма! Пирĕн ĕçсем пур фронтсенче те епле ăнса пынине пĕлетĕн вĕт-ха. Часах хамăр патшалăх чикки патне çитетпĕр! Тăшман вăйĕ чаксах пырать, пирĕн вăй куллен хăватланать. Апла пулсан — тăшмана аркатасси те инçе мар!

— Чикĕ патне çитсен вăрçă чарăнать-ши вара?

— Çук пуль, йăмăкăм. Гитлерпа унăн союзникĕсен çарĕсене пуçĕпе аркатмасăр, вĕсене парăнтармасăр вăрçă чарăнма пултараймасть. Фашизма, унăн йăвине пĕтермесĕр, унăн тымарĕсене кăкламасăр лăпланма тивĕç çук пирĕн. Кĕскен каласан, пирĕн Берлина çитмелле-ха. Фашистсем, темле тапаçлансан та, Мускава пырса кĕреймерĕç, анчах эпир вĕсен Берлинĕнче пулатпăрах! Пĕр-икĕ эрне каялла эпĕ фронт штабĕнче Мускавран килнĕ пĕр пысăк çын лекцине итлерĕм кун çинчен. Питĕ ĕнентермелле каларĕ. Фашистсем тытса илнĕ Европăри çĕршывсенче те вĕсене хирĕç кĕрешӳ кулленех вăйланса пырать иккен. Пирĕншĕн çав тери аван вăл...

Римма, Актай сăмахĕсене итленĕ хушăра, вăл парнеленĕ кĕнекене уçкаласа ларчĕ.

— Кун пек кĕнекесем татах тухнă-ши? Чăваш писателĕсенчен нумайăшĕ фронтра, терĕр вĕт-ха эсир?— ыйтрĕ вăл, Актай калаçма чарăнсан.

— Тухнисемех çук пулмалла-ха. Фронтовик çырнă пĕрремĕш кĕнеке ку, тесе пĕлтерчĕç издательстварен. Анчах ыттисем те çыраççех ĕнтĕ. Мĕнле писатель тӳстĕр хамăрăн паттăрсем çинчен çырмасăр? Тата халăха та питĕ кирлĕ вăл. Çамрăксене кирлĕ.

— Ман шутпа, ун пек кĕнекесем пулас ăрусем валли, истори валли те кирлĕ пулаççĕ,— терĕ Римма.

— Эпĕ хам та çапла шутлатăп.

Актай нумаях лармарӗ, редакцине ҫитсе ӗнер «чӗлхе» сӗтӗрсе килнӗ разведчиксем ҫинчен ҫырмалла, терӗ. Риммӑн хӑйӗн те часах дежурствӑна тухмаллаччӗ.

— Ну, эп каям-ха, эппин...— Актай ура ҫине тӑчӗ, гимнастерки ҫийӗн ҫыхнӑ пиҫиххипе портупейне тӳрлетме кӗрӗк аркисене кӑштах сарчӗ те, ҫав самантра Римма унӑн кӑкри ҫинче вӗр-ҫӗнӗ Хӗрлӗ Ялав орденӗ ҫуталса илнине асӑрхарӗ.

— Иван Васильевич! Сире саламламалла тем?!— ун патнелле пӗр утӑм ярса пусрӗ Римма.

— Мӗн пирки-ши?— ӑнланаймарӗ Актай.

— Орден илнӗ ятпа!

— Э-э...— Актай йӑл кулса илчӗ.— Пачӗҫ ҫав.

— Пӗтӗм чунтан саламлатӑп, Иван Васильевич!—Римма ун аллине тытса чӑмӑртарӗ.

— Тавтапуҫ, йӑмӑкӑм.

— Ыйтма аван мар та...

— Ӑнланатӑп, эс ӗнтӗ: мӗншӗн пачӗҫ сана ку ордена, эс писатель кӑна, ҫапӑҫусенче пулмастӑн, статьясем ҫеҫ ҫыратӑн, тесшӗн. Тӗрӗс калатӑп-и?

— Ман шухӑша пӗлтӗр пулсан, ответне те хӑвӑрах парӑр, эппин...

— Днепр ку енчи плацдармра кӑштах тупӑран перкелеме тӳр килчӗ.

— Мӗнле вӑл... «кӑштах»?

— Нимӗҫсен пӗр контратаки вӑхӑтӗнче эпӗ шӑпах артиллеристсем патӗнче пулсаттӑм. Нимӗҫ танкӗсем пирӗн тӳрӗ наводкӑна тухнӑ батарейӑри виҫ орудирен иккӗшне расчечӗсемпе пӗрлех хупласа хучӗҫ, виҫҫӗмӗш орудин те расчетран икӗ ҫын ҫеҫ юлчӗ. Вара эпӗ ҫав оруди патне наводчик выранне тӑтӑм. Питӗ вӗри пулчӗ, ун ҫинчен каласа пама та пӗлес ҫук... Ҫапах та хамӑр ҫине ӗрӗхсе килекен виҫӗ танкран иккӗшне тивертсе яма май килчӗ-килчех, тепри вара хӳрине кӑтартрӗ, ӑна лектерейменӗмӗр...

— А-ав мӗн иккен!— Римма писатель ҫине ҫав тери ӑшшӑн, хисеплӗн пӑхрӗ.

— Ҫапла, йӑмӑкӑм. Вӑрҫӑра писателӗн те тепӗр чух перопа ҫеҫ мар, чӑн-чӑн хӗҫпӑшалпа ҫапӑҫма тивет.

Актай кӗрӗкне тӳмелесе ҫитерчӗ те, Римма умне йӑрст тӑсӑлса тӑрса, кулнӑ пек-мӗн пек честь пачӗ.

— Ну, халлӗхе сыв пулса юл, йӑмӑкӑм. Ырлӑх-сывлӑх сана. Пӗрре-пӗрре, вӑхӑт тупса, пирӗн пата пырса тух-ха, эпир юнашар ялтах, инҫе мар,— терӗ Актай.— Шупашкар-

тан ярса панă хаçатсене кăтартăп, тăван республика мĕнле пурăннине пĕлĕн... Радиопа Шупашкар сассине итлеме те пултаратпăр. Нумай пулмасть ман калава вуласа пачĕç. Çитменнине тата... хамăн арăмах вуларĕ.

— Чăнах-и?! Хăвăр арăмăн сассине илтрĕр-и?! Ытла та тĕлĕнмелле-çке ку!..

— Илтрĕм çав. Питĕ савăнтăм.

— Ой, савăнмасăр ун пек пулсан! Пиншер километртан тăван сасса илт-ха эсĕ...

— Пыр-ха, пыр, Римма. Чăваш юррисене итлĕпĕр.

— Манăн ун пек çӳреме вăхăт пулас çук çав, эсир хăвăр час-часрах кĕрсе тухăр çула май,— терĕ Римма.—Сирĕнпе курса калаçсан, мана киле кайса килнĕ пекех туйăнать...

— Эп сан патна мĕншĕн килкелетĕп тетĕн тата? Мана та çавăн пекех туйăнать çав! Иксĕмĕр чăвашла калаçни мĕне тăрать! Тутлă шерпет ĕçнипе пĕрех вăл маншăн.

Вĕсем пĕр-пĕрне ал пачĕç. Анчах Актай, тухса каяс ырăнне, тăрук хăйне çамкинчен çапса илчĕ те каллех пукан çине ларчĕ.

— Ах, ватсупнă... тăн çухатма пуçланă иккен эпĕ!— терĕ вăл.— Склероз!

— Мĕн пулнă тата, Иван Васильевич?— тĕлĕнчĕ Римма.

— Аруткина, Володьăна, хамăр связноя астăватăн-и эс?

— Ун пек ыйтса ан тĕлĕнтерĕр-ха, Иван Васильевич! Пурнăçра такама мансан та ăна астăватăпах ĕнтĕ! Ним мухтанмасăр каласан — ăна хам юна панă, тăван халь эпир унпа...

— Çапла, çапла, тĕрĕс! Пĕлетĕп ăна, эсир ĕнтĕ пиччĕшĕпе йăмăкĕ пекех, эс ун пурнăçне çăлнă...— Актай шухăша кайнă пек пулчĕ.

— Эсир мĕн, унран çыру илтĕр-и? Е... усал хыпар-и?

— Илтĕм çав, илтĕм! Усалли çук, савăнмалли кăна... Питĕ пысăк çыру çырчĕ. Çурри — сан çинчен. Пин тĕрлĕ тав туса саламлать сана. Çав хĕртен хаклă çын маншăн тĕнчере те урăх çук, те...

— Мĕншĕн ун пекех-ши?— кулса илчĕ Римма.

— Мĕншĕн тесен эс ăна хăвăн юнна парса вилĕмрен çăлса хăварнине пĕлет вăл.

— Кам пĕлтерме пултарнă ăна?— тĕлĕнчĕ Римма.

— Хаçатра эп сан çинчен çырнă очерка вулан. Ça-

вăнтан пĕлнĕ. Хаçатне ятарласа ун валли тăванĕсем упраса усранă...

Римма тулли кăмăлпа хашш! сывласа ячĕ.

— Тӳрленнĕ, эппин, çапах та. Сывалнă. Турра шĕкĕр.

— Сывалнă. Халь хăйсен районĕнче военкоматра ĕçлет. Фронта таврăнма пултарайманшăн питĕ кăмăлсăр.

— Çапах та строя тăма юрăхлах пулайман, эппин? Шел. Çавăн пек маттур каччă...

— Унăн сылтăм алли çук...

— Епле алли çук? Вăл кăкăртан аманнăччĕ-çке?

— Вĕсен санитарнăй пуйăсне çул çинче нимĕç самолечĕсем тапăнса аркатнă. Вилнисем, аманнисем нумай пулнă, Аруткина та лекнĕ. Аллине татмах тивнĕ. Кайран ăна Çĕпĕре çитиех илсе кайнă... Çичĕ уйăх выртнă госпитальте. Пирĕн адреса маннипе çыру та çырайман. Чылайран тин, ман адреса писательсен союзĕ урлă пĕлсе, çырма тытăннă, анчах пĕр çырăвĕ те çитмен пирĕн пата — унтанпа пирĕн адрес виçĕ хут та улшăнчĕ-çке! Нумай пулмасть, тем ĕçпе Шупашкара лексен, театра кайса ман арăма шыраса тупнă та хальхи адреса пĕлнĕ...

— Саламсăр пуçне мĕн çырать? Хăй мĕнле пурăнать?

— Ытлашши нимех те çырмасть. Фронт валли резервсем хатĕрлетпĕр, тет.

— Авланман-и?

Актай кулса ячĕ:

— Çук пулмалла. Вăл та эс качча кайман-и, тесе ыйтать. Астăватăп эпĕ, Дубинино ялĕнче, эпир пирвайхи хут малти линие кайма тухнă чух, сана вăл: «Вăрçă пĕтсен тепĕр куннех евчĕсем яратăп»,—терĕ. Тен, халь те çавăн çинчен ĕмĕтленсе пурăнать?

Римма та хуллен кулчĕ.

— Пит лайăх качча парасçĕ кунта. Ав, манăн тусăм Женя та пĕрмай каччăсем пирки шӳтлесе пурăнчĕ те,,, пĕр наччасра, кĕтмен-туман çĕртен вилсе выртрĕ. Халь те куç умĕнчех ун сăнĕ. Ĕмĕрне те манас çук ăна...

— Астăватăп вăл хĕре. Питĕ маттурскерччĕ. Эп медсанбатра выртнă чух мана лайăх пăхрĕ. Вилни çинчен пĕлсен, çав тери хĕрхентĕм.

— Мĕн тăвас тетĕн. Кашниннех пулма пултарать ун пекки...

— Пирĕнпе ун пек пулмĕ тесе шанăпăр-ха, йăмăкăм. Пурăнасчĕ-ха, тăшмана аркатасчĕ, унтан киле таврăнса пы-ысăк ĕçсем тăвасчĕ, хамăр хыççăн çĕр çинче йĕр хă-

ӑкарасчӗ. Ҫапла-и?— Актай хӗр кусӗнчен ӑшшӑн пахрӗ те каллех ура ҫине тӑчӗ.

— Володя Аруткин патне ҫырнӑ чух манран салам калӑр. Эсӗ евчӗсем ярасса кӗтсе пурӑнать, тейӗр!— кулса илчӗ юлашкинчен Римма.

— Ну, тепре куриччен, эппин!

...Анчах та пӗр-пӗрне тек кураймарӗҫ вӗсем. Ку вӗсен фронтри юлашки курнӑҫӑвӗ пулчӗ.

Тепӗр виҫӗ эрнерен Римма йывӑр аманчӗ. Таҫта малти линие кайса та мар, кунтах, медсанбат вырнаҫнӑ ялтах. Пӗр каҫхине вӗсем, дежурствӑра пулман хӗрсем, ҫиччӗнсаккӑрӑн ҫак ялӑн тепӗр вӗҫне, вӑрҫӑччен колхозӑн ялхуҫалӑх машинисем упраннӑ вӑрӑм сарайне, кино курма кайрӗҫ. Хутран-ситрен ҫеҫ килсе ҫӳрекен передвижка вӑл кун «Фронтовые подруги» ятлӑ фильм илсе пынӑччӗ. Хӗрсем ӑна курмасӑр юлма пултарайман ӗнтӗ — хӑйсем ҫинчен, фронтри паттӑр хӗрсем ҫинчен-ҫке вӑл! Картина пурне те питӗ килӗшрӗ. Тӗрӗс кӑтартнӑ-мӗн вӑрҫӑри хӗрсен пурнӑҫне. Артисчӗсем те хӑйсем чӑн-чӑн фронтовиксем пулса курнӑ пекех выляҫҫӗ, ҫав тери ӗненмелле. Тав тумалла ҫеҫ ку фильма лартакансене!

Тӗттӗм урампа каялла, полицайсен «крепоҫне» таврӑннӑ чух сасартӑк ял хыҫӗнче, вӑрманта, тулӑ персе янӑ сасӑ илтӗнчӗ. Фронт енчен мар, хамӑр енчен. Пирӗннисем тӑшмана аякран переҫҫӗ, темелле пек. Анчах тепӗр секундран тенӗ пекех снаряд урам варрине, хӗрсенчен нумай та мар маларах ӳксе ҫурӑлчӗ. Кӗҫех тепӗр снаряд шӑхӑрса килни илтӗнчӗ.

— Выртӑр!— кӑшкӑрчӗ тахӑшӗ хыҫалтан.

Хӗрсем юр ҫине ӳкрӗҫ. Снаряд халь вӗсенчен хыҫаларахра ҫурӑлчӗ. Унтан тата тепре, тата. Осколоксем унталла та кунталла чашкӑрса вирхӗнчӗҫ. Юрпа хутӑш тӑпра сирпӗнчӗ...

Ҫӗр ҫумне пӑчӑртанса, пуҫне ик аллипе хупласа выртакан Римма самантранах аса илчӗ: юлашки кунсенче ку тӑрӑхра, пирӗн тылра, нимӗҫсен «фердинанд» текен самоходка-туппиcем куҫса ҫӳрени ҫинчен каласрӗҫ. Темле майпа фронт линийӗ урлӑ каҫнӑ та вӗсем (тӗрӗссипе каласан, кунта, шурлӑхлӑ-лачакаллӑ вӑрмансенче, пӗр хушӑ ҫирӗп фронт линийӗ те пулмарӗ)—кӑнтӑрла чӑтлӑхсенче пытанса ларасҫӗ, каҫ пулсан вара засадӑран тухаҫҫӗ те таврари ялсем, хуторсем, местечкӑсем ҫине пеме тапратаҫҫӗ имӗш. Пур ҫӗрте те пирӗн ҫынсем пурӑннине пӗлнӗ-ҫке-ха тӑшман!

Тытма питĕ йывăр иккен вĕсене, мĕншĕн тесен «фердинанд» пĕр çĕртен темиçе персенех тепĕр вырана куçать. Вара каллех перет.

— Çав ĕнтĕ ку... «çĕрлехи сунарçă» тени...

Çапла шутлама çеç ĕлкĕрчĕ Римма — çывăхрах тепĕр снаряд ӳксе шартлатрĕ, айри шăннă çĕр те сиккелесе илнĕн туйăнчĕ. Çав самантрах Риммăн сулахай хулне йывăр япала калама çук хытă пырса çапрĕ. Лĕнчĕрех турĕ унăн алли, çур шăмшак хуçăлса ӳкнĕн туйăнчĕ...

Юлашки снаряд пулчĕ ку. «Фердинанд» урăх пемерĕ. Юр çинче выртакан хĕрсем сике-сике тăчĕç.

— Пурте чĕрĕ-и? Никама та лекмерĕ-и? Атьăр, часрах тарар кунтан, атту татах пеме тытăнĕ, явăл!— кăшкăрчĕ тахăш хĕрĕ.

Ыттисем пекех, Римма та ура çине тăма пикенчĕ. Анчах пуçĕ çаврăнса кайнипе тăраймарĕ, ӳкрĕ.

— Пулăшăр...—аран тухрĕ ун сасси.

Хĕрсем ун патне чупса пычĕç...

Медсанбатра ун суранне аслă хирург Басов пăхрĕ, тасатса эмел сĕртерчĕ те тӳрех гипс хума хушрĕ.

— Питĕ шел,— терĕ вăл Римма çине хĕрхенерех пăхса,— анчах ним тума та çук: сана тыла ăсатмалла пулать...

## 12

Ирхине, пĕр тăхăр сехетре, пуйăс Сухиничи станцине çитрĕ. Выртса йăлăхнă Риммăн пăчă, тĕрлĕ йывăр шăршсемпе тулнă вакунран уçă сывлăша тухасси килчĕ. Çӳлти сак çинчи сержант-музыкант Сарьялов та, аялта выртакан лейтенант разведчик Кованый та çывăратчĕç-ха. Вĕсене вăратас мар тесе, Римма хăйĕн вырăнĕ çинчен хуллен кăна шуса анчĕ те, малтан çĕлĕкне, унтан кĕрĕкĕн хăрах çаннине тăхăнса, аманнă аллине кĕрĕк аркипе ахаль çеç хупласа, перрон çине тухрĕ. Çанталăкĕ сивех мар-мĕн, лăпкă, анчах сывлăшĕ питĕ ырă, таса, çăмăл. Темиçе хут тарăннăн сывласа илсенех, пĕтĕм кăкăр уçăлса кайрĕ.

Хĕр каллĕ-маллĕ уткалама тытăнчĕ, кăшт аяккарах пăрăнса хăйсене илсе килнĕ пуйăс çине пăхрĕ. Пысăк мар иккен вăл, пĕтĕмпе те пĕр вуна-вуникĕ вакун çеç, анчах пурте тĕрлĕ тĕслĕ: пассажирскисем те, ахаль «теплушкасем» те, «пульмансем» те пур. Ал айне мĕн лекнĕ, çавна тытса «кăкарнă» пулмалла фронт çывăхĕнче. Унта тиркесех

тамалли çук: çил ан вĕртĕр те кустăрмисем тĕрĕс-тĕкел пулччăр.

— «Летучка» ку, инçетри тыла каяс çук,— шухăшларĕ Римма.— Пĕр-пĕр станцире пире урăххи çине куçарса ларттарĕ пуль-ха.

Ытти вакунсенчен те çÿреме пултаракан аманнисем чылай тухрĕç. Пурин те кăшт та пулин уçă сывлăшпа сывласа илес, шăмма-шакка пăртак хускаткалас, уткалас килет çав. Çав вăхăтрах вакунсем умĕпе витресем, пысăк кастрюльсем, хутаçсем йăтнă «граждански» хĕрарăмсем васкаса утни курăнчĕ.

— Картошечки! Кому картошечки?

— Шти! Шти горячие! Подходи, подходи... Раз хлебнешь — обожжешься, два хлебнешь — сыт будешь!

— А ну, покурим, потянем, всех родителей помянем!— янрама тытăнчĕç вĕсем.

Пĕри, мăнтăр та хĕп-хĕрлĕ питлĕскер, унталла-кунталла пăхкаласа, юрланă пекех такмакласа утса пычĕ:

— Самосадик я садила, сама буду продавать...

Салтаксем спекулянткăсене хупăрласа илчĕç. Çимеллисемшĕн мар, пуринчен ытла туртмаллишĕн. Санитарнăй пуйăсра апат-çимĕç лайăх, табак-пирус çеç памаççĕ, çавăнпа вăйлă туртакансем аптрасах çитнĕ. Халь вара вĕсем хакĕшĕн тытăнса тăмарĕç — пĕр стакан «крошонкăна» вунăвунпилĕк тенкĕ парса илчĕç. Хăшĕсем тата урăххине те шырарĕç:

— Мамаша, а как насчет... тово, ась?— пырĕсене шаклатса кăтартрĕç спекулянткăсене.— Смерть как выпить хоцца, удружи!

Вăл та пур иккен. Римма темиçе салтак кĕленчесене хĕве пытарса вакунсем еннелле чупнине асăрхарĕ.

Пуйăс пăравуссăр тăнине курса («эппин, халех тапранмасть-ха вăл...»), хĕр состав çумĕпе ун вĕçне çитиччене утрĕ. Станцире вăрçă йĕрĕсем, ун паллисем тем чухлех мĕн. Кăшт сылтăмарахра, запасра лини çинче, тахçан пулнă бомбежка вăхăтĕнче арканса, çунса кайнă вакунсен «шăмми-шакки» урлă-пирлĕ сапаланса выртать. Вăл тĕлти рельссем те, шпалсем те тăпăлса тухнă. Халь çав çула юсама, унти тимĕр-тăмăра пуçтарма тытăннă иккен — Римма унта ваткăллă кивĕ фуфайка, брезент шăлавар тăхăннă хĕрсен ушкăнĕ ĕçленине курчĕ. Аллисенче лумсем, йывăр мăлатуксем, пуртăсем. Мирлĕ вăхăтра пулсан, ку ĕçе нихçан та хĕрсем тăвас çук та-ха ĕнтĕ... Анчах хĕрĕсем хăнăх-

на пулмалла ӗнтӗ, хавассӑн каласса, кула-кула ӗҫлеҫҫӗ. Акӑ пӗри, кивӗ салтак ҫӗлӗкӗ айӗнчен хуп-хура кӑтра ҫӳҫне кӑларса янӑскер, сасартӑк питӗ янравлӑ уҫӑ сасӑпа юрлама тапратрӗ:

Мой миленок линтинант
И ремень через плячо,
Получаит денег много
И цалуит горячо...

Ҫавӑнтах вара темиҫен пӗр харӑс хутшӑнчӗҫ:

Приходи, милок, под вечер —
Угощу тебя винцом,
Поллитровка первача
Будет нам с тобой венцом...

Римма хӑй ӑшӗнче кулса илчӗ:

— Ак хайхи, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи фольклор...

Унтан, хӑй шӑнса вӗттӗн-вӗттӗн чӗтреме тытӑннине туйса, вакуна таврӑнма шут турӗ. Хыҫалта ҫаплах хӗр-ремонтниксен юрри янрарӗ.

«Тӗлӗнмелле халӑх пирӗн ҫапах та...— шухӑшларӗ Римма утнӑ май.— Темле йывӑр пулсан та, пуҫне усмасть. Ак ҫак хӗрсем, тен, паян тӑраниччен ҫимен те пулӗ-ха. Ӗҫӗ те шутсӑр йывӑр вӗсен,—хӗр пуҫҫӑн ҫавӑн пысӑкӑш мӑлатуксемпе тӳнклеттер-ха эсӗ!— ҫапах вӗсемшӗн ку ним те мар пек, юрлаҫҫӗ кӑна! Чӑнах та, юрри ухмахла ӗнтӗ, ниме тӑмансҡер, анчах кунта юрӑ сӑмахӗсем те мар, хӗрсем хӑйсем ю р л а н и, юрлама пултарни паха!»

Вакуна кӗрсен, Римма хӑй вырӑнӗ патне тӳрех пыраймарӗ — санитарка урай ҫӑватчӗ. Анчах ҫав вӑхӑтрах малалла пӑхрӗ те питӗ тӗлӗнмелле япала курчӗ: Ковановйпа Сарьялов аялти саксем ҫине хире-хирӗҫ ларнӑ та ҫур литр кӗрекен хура кӗленчерен кружкӑсене темле шӗвек яра-яра ӗҫеҫҫӗ.

«Турӑҫӑм, мӗн тӑваҫҫӗ кусем! Нивушлӗ сӑмакун ӗҫеҫҫӗ?— йӗрӗннипе, ҫӳҫенсе илчӗ хӗр.— Ӑҫтан тупнӑ-ши? Кам илсе килсе панӑ? Сержанчӗн нервисем ахаль те арканса кайнӑ, ӗҫсен татах хытӑ пӑлханса макӑрма тытӑнать акӑ! Ну, ку лейтенанта!»

Лешсем Римма хӑйсем ҫине аякран пӑхса тӑнине сисмерӗҫ. Лейтенанчӗ кӑштах хӗрме те ӗлкӗрнӗ пулмалла, тем тӑршшӗ чикарккине пашлаттарса, Сарьялова хӗрсе кайсах каласа парать:

— Пурне те аса илсен, ман взвод мĕн-мĕн туни ҫинчен кĕнеке ҫырма пулать. Шел, хам ҫырма пултараймастăп. Хăҫан та пулин пĕр-пĕр писателе тĕл пуласчĕ. Эпĕ ăна тĕпĕ-йĕрĕпе каласа парăттăм та, вăл майлаштарса ҫырĕччĕ... Никам ĕненмелле мар ĕҫсем пулатчĕҫ вĕт! Акă, сăмахран, пĕр факт. Пĕррехинче пире тăшман тылне ячĕҫ. Нимĕҫсен ку участокри вăйне, вĕсем мĕн тунине пĕлме. Таврăннă чух пирĕн «чĕлхе» те тытса килмеллеччĕ. Икĕ талăк ҫӳрерĕмĕр, нумай пĕлтĕмĕр, анчах «чĕлхе» пулаймарĕ-ха. Май ҫук тытма, мĕн тăвас тетĕн! Яланах ăнăҫлă пулмасть-ҫке вăл! Таврăнас, терĕмĕр. Сĕм-ҫĕрле, вăрман, куҫран чиксен те курăнмасть. Питĕ асăрханса, кушаксем пек шăппăн утатпăр... Сасартăк эпĕ, малта пыраканскер, ик урапа пĕр харăсах путрăм лартăм. Тĕттĕмре темле таран шăтăк тĕлне пултăм пуль тетĕп. Часрах ик алăпа ҫĕре тĕренсе урасене туртса кăларма пикентĕм те... атте турă!.. хама такам урасенчен тытса аялалла туртнине туйрăм. Туртать те туртать! Пĕтрĕ пуҫ! Мĕн шуйттанĕ? Лекрĕм-иҫ капла! Сылтăм урана пĕтĕм вăйпа карт! туртса хайхи такам аллинчен вĕҫертрĕм те, ҫав самантрах каялла питĕ хытă тапса ятăм. Ман айра ҫын йынăшни илтĕнчĕ, сулахай ура та вĕҫерĕннине туйрăм, вара йăпăрт кăна ҫиеле сиксе тухрăм. Тин тавҫăрса илтĕм: эпĕ фрицсен ҫĕрпӳртне анса кайнă иккен!.. Унччен те пулмарĕ, ҫĕрпӳртрен виҫ-тăват нимĕҫ сиксе тухрĕҫ, пĕри тухнă-тухман автоматран ним тĕлсĕр шăтăртаттарчĕ, анчах ҫав вăхăтрах ман юлташсем вĕсем ҫине сиксе ӳкрĕҫ — автоматсемпе мар, ҫĕҫĕсемпе... «Пĕрне хăварăр, «чĕлхе» кирлĕ!» тесе аран кăшкăрма ĕлкĕртĕм эпĕ. Чăн та, вара пĕрне тытса ҫыхрăмăр, ҫăварне кипке татăкĕпе пăкăларăмăр та хамăрпа пĕрле илсе кайрăмăр. Чиперех утрĕ фриц, мĕншĕн тесен ман йĕкĕтсенчен пĕри ăна ҫурăмĕнчен автомат кĕпҫипе тĕртсех пычĕ-ҫке-ха! Анчах разведчикăн хамăрăн траншейăсене ҫитсе ӳкиччен те лăпланма юрамасть ҫав, чи юлашки самантсенче те пач кĕтмен япаласем пулма пултараҫҫĕ... Халь те сиксе тухрĕ ҫавăн пекки. Хăйсен боевой охранени окопĕ патне ҫитеспе ҫак пирĕн «лăпкă» фриц сасартăк каялла ҫаврăнать те, хăйне сыхласа пыракан разведчика икĕ пĕҫĕ хушшинчен тапса ӳкерет, ҫăварĕнчи пăккине темле майпа кăларса пăрахса арҫурилле кăшкăрса ярать, хăй тĕттĕмелле тарма тапратать... Паллах, эпир ăна инҫе тарма памарăмăр, темиҫе самантранах хуса ҫитсе ҫапса ӳкертĕмĕр, анчах вăл кăшкăрса пăлхатнă нимĕҫсем ҫӳлелле харăсах темиҫе ракета вĕҫтерчĕҫ, пирĕн еннелле автомат-

сенчен сапма тытăнчĕç. Кĕçех пулемет ĕçлеме тытăнчĕ, минăсем ÿлеме тапратрĕç... Тамăк! Хирĕç çапăçнинчен усси пулас çук. Çавăнпа та эпир, ниме пăхмасăрах, тыткăна илнĕ нимĕçе сĕтĕрсе, хамăр еннелле ыткăнтăмăр. «Ничейнăй» çĕр* варринче мана сасартăк ура хырăмĕнчен мина осколокĕ пырса çапрĕ. Анчах хамăр пата çитиччен те шарламарăм ун çинчен, мĕншĕн тесен пирĕн самантлăха та чарăнса тăма юраман...

Кованый кĕленчери юлашки эрехе пайларĕ.

— Э-эй, пурне те аса илес пулсан...— ал сулчĕ вăл,— леш Шахразада пекех çĕрĕ-çĕрĕпе каласа кăтартас пулать. Разведкăна эпĕ хĕрĕх пĕрремĕш çулта, Мускав патĕнчех çÿреме тытăннă вĕт. Мĕн курман пуль! «Ничейнăй» çĕр çинче виçшер талăк хускалмасăр выртни те, яра кун шывра, хăмăш витĕр сывласа ларни те пулнă... Ак, ку акă ман — улттăмĕш суран,— аллипе гипсри урине шăлкаласа илчĕ лейтенант,— анчах каллех разведкăна таврăнас шанчăка çухатмастăп-ха. Мĕн тăвас тетĕн — чун туртать, професси вăл манăн! Ну, ĕçсе ярар çак шăршлă шыва, ан пултăр вăл ирсĕр япала çĕр çинче...

Римма тинех вĕсем патне пырса тăчĕ.

— Ырă кун пултăр, юлташсем...

— А-а, сестричка! Ирхи салам!— пуç тайса илчĕ Кованый.— Эпир сире çухатрăмăр паян...

— Уçăлса çÿрерĕм пĕртак. Çанталăкĕ пит лайăх.

— Çĕнни мĕн пур унта? Информбюро сводкине пĕлмерĕç-и?

— Çук, радио сасси илтĕнмерĕ.

— А эпир сержантпа иксĕмĕр хамăра хамăр кăштах хăна турăмăр-ха. Ытла кичем пуласран.

— Куртăм. Аçтан тупрăр эсир вăл усал шĕвеке?

— Пĕр ырă чунлă карчăк кунта кĕрсех тыттарчĕ. Иксĕр аллă тенкĕ — пĕр пус пекех. Малтан виççĕр ыйтрĕ, тухатмăш!

— Хам тĕл пулнă пулсан, эп ăна тапсах кăларса яраттăм!— терĕ Римма çилĕпе. — Аманнă воинсене наркăмăшлă шыв ĕçтерсе çÿреççĕ, намăссăрсем! Эсир те çав... тупнă ырлăх!

— Мĕн тăвас тетĕн, сестричка...— Лейтенант аллисене ик еннелле сарса пăрахрĕ.— Нарком порцине памаççĕ кунта, анчах та чун ыйтать... Хăнăхнă. Заданирен тĕрĕс-тĕкел

---

*Тăшман позицийĕпе пирĕн позици хушшинчи пушă вырăн.

тавраҫсан, уйрӑмах «чӗлхе» сӗтӗрсе килсен, старшина пире икщер-виҫшер порци те паратчӗ, хӗрхенсе тӑмастчӗ. Халь вӑл вӑхӑтсем иртрӗҫ, ирӗксӗрех художествӑллӑ пултарулӑх енӗпе кайма тивет...

— Ун пек алкоголика тухма пулать, лейтенант!

— А-а!— ал сулчӗ Кованый.— Лӑпкӑ пурнӑҫпа пурӑннӑ чух вӑл мана ахаль парсан та кирлӗ мар! Вӑрҫа киличчен эп пӗрре те ӳсӗр пулса курман.— Вӑл пуҫӗпе Сарьялов еннелле сулса кӑтартрӗ.— Ман шутпа сержант та ҫавӑн пекех пулнӑ. Чӑн та, искусство ҫыннисем хушшинче богема вайлӑ, теҫҫӗ, хӑйсене турӑ вырӑнне хурса, ӗҫсе-супса иртӗнеҫҫӗ, тенине илтнӗ эпӗ, анчах пурте мар пуль? Эс пӗлмелле ӗнтӗ, сержант...

— Кам нимӗнле ӗмӗтсӗр пурӑнать, малалла каяссси, ӳсесси ҫинчен шутламасть, ҫав кӑна ухмахланать,— терӗ ку таранччен ним чӗнмесӗр, чӳречерен пӑхса ларнӑ Сарьялов.— Ун пеккисем, богемӑна ерсе кайнисем, часах искусство ҫыннисем пулма пӑрахаҫҫӗ, чи мӗскӗн ремесленниксем пулса юлаҫҫӗ...

— Вӑхӑтсӑр, сӑлтавсӑр мӑнаҫланса кайнисем, ӳсме пӑрахнисем искусствӑра ҫеҫ мар, ҫар ӗҫӗнче те юрӑхсӑра тухаҫҫӗ пулас,— терӗ Римма, Кованӑя хирӗҫ сак ҫине ларса.— «Правдӑра» эсир Корнейчукӑн «Фронт» пьесине вуланӑ пуль?

— Пӗррехинче, задани хыҫҫӑн каннӑ чух, пӗтӗм взвода вуласа патӑм,— терӗ лейтенант.— Вӑйлӑ ҫырнӑ. Горлов унта... ватӑ генерал, фронт командующийӗ, хӑйне ҫав тери маннa хуракансскер... Ун йӑнӑшӗсене пула тем чухлӗ салтак, техника усӑсӑр пӗтет. Кайран ун вырӑнне пултаруллӑ ҫамрӑк генерал Огнев йышӑнать...

— Ҫапла ҫав. Кӗскен каласан, «ӗмӗр пурӑн — ӗмӗр вӗрен», тени пур чухне те, пур ҫынсемшӗн те тӗрӗс пулса тухать.

— Анчах хӑшӗсен вӗренме май ҫук пулсан?— терӗ Сарьялов, Риммӑпа Кованый ҫине пӑхмасӑрах.— Сӑмахран, эпӗ халь тин мӗне вӗренме пултаратӑп? Творчество ҫынни мар, ремесленник та пулаймастӑп! Калаҫатӑр ҫав! —Вӑл чӳрече патӗнчен вӑрт! пӑрӑнчӗ те вакун вӗҫнелле утрӗ.

— Лейтенант юлташ,— терӗ Римма кӑшт тӑхтасан,— мӗн тума ӗҫтеретӗр эсир ӑна? Епле пулсан та, халь унӑн нервисене лӑплантармалла, ӑна суранӗ ҫинчен мантармалла, эсир пур — ҫав усал сӑмакуна хыптаратӑр...

— Каçарăр, сестричка, кунта эпĕ пĕртте айăплă мар,— пуçне пăркаларĕ Кованый,— сăмакунне вăл хăй илчĕ, укçине те хăех тÿлерĕ, эп кружкăсем çине яраканни çеç пултăм. Суранĕ çинчен аса илтерес мар тесе, юри тĕрлĕ историсем каласа пама тытăнтăм...

— Илтрĕм ăна. Анчах ытлашширех ÿсĕрĕлсен вăл тем те туса хума пултарать. Хуйхăпа ĕçнĕ эрех тата йÿçĕрех пулать, теççĕ. Тухĕ те выртĕ рельс çине,— каçхине каларĕ вĕт-ха?

— Юрĕ, сестра. Асăрхасах тăрăп ăна. Госпитале унпа пĕрле лекесчĕ-ха, çын тăваттăм эп унран!

Пуйăс пур буферĕсемпе чăнкăртатса вырăнтан хускалчĕ. Малтан ерипен-ерипен шурĕ, унтан хăвăртрах кайма пуçларĕ. Пилĕк минут, вунă минут... Акă, сестрасем ирхи апат та илсе пычĕç. Сарьялов çаплах таврăнмарĕ.

— Ăçта çухалчĕ ку каччă?— тăрук хыпăнса ÿкрĕ Римма.— Сиксе юлмарĕ-и пуйăсран? Хăш еннелле кайрĕ вăл?

— Сылтăмалла пулас,— терĕ Кованый.

Римма васкасах Сарьялова шырама кайрĕ. Вăл вакун вĕçĕнче чи юлашки чÿрече умĕнче, хытнă пек пулса, тулаллла пăхса тăрать-мĕн. Кам пĕлет, тем çинчен шухăшланă вăл çав самантра. Пурнăç çинчен-и е вилĕм çинчен?

— Эп сана шыратăп, земляк,— терĕ Римма йăвашшăн, ун çумне йăпăш пырса тăрса.

— Мĕн тума кирлĕ пултăм-ши?— ун çине хулпуççи урлă пăхса илчĕ Сарьялов.— Ачаш сăмахсемпе йăпатас тетĕр пулсан — тăрăшни ахалех пулать. Эпĕ хам та чĕчĕ ачи мар, мĕнрен мĕн пулнине йăлтах ăнланатăп, çын каламасăрах...

— Мĕншĕн йăпатам эп сана? Унта ирхи апат сивĕнсе каять. Атя çиме! Хырăм тутă чух кăмăл та юсанать. —Римма ăна сывă хулĕнчен тытрĕ.— Пĕр-пĕрне юратакан мăшăр пек пулар-ха...

Апат çисе чей ĕçкеленĕ хыççăн Сарьялов хăйĕн вырăнĕ çине хăпарса выртрĕ те Калугăна çитиччен те хускалмарĕ, пĕр сăмах та каламарĕ. Анчах хăй çывăрмарĕ курăнать, вăхăт-вăхăт ассăн сывла-сывла яни илтĕнчĕ. Çывăракан çын ун пек сывламасть.

«Асапланать, мăнтарăн...— шухăшларĕ Римма.—Мĕн тери шел ачана! Анчах хăплантармалли май та çук...»

Ирхине, Сухиничире, Римма тĕрĕс шухăшларĕ-мĕн: ку пуйăс фронтпа çывăхри тыл хушшинче çÿрекен «летучка»

çеç пулнă. Кăнтăрла иртсен вăл Калугăна çитрĕ те малалла каймарĕ. Ăна запаслă çул çине илсе кĕртрĕç, аманнисене юнашар тăракан таса, çутă, йăлтах пассажирсем çӳрекен вакунсенчен пуçтарнă, электричествăллă, радиола чăн-чăн санитарнăй пуйăс çине куçарчĕç. Лейтенант-разведчик çине тăнипе, вĕсем виççĕшĕ те каллех пĕр вакуна, пĕр купене лекрĕç.

— Ну, кун пек экспресспа тĕнче хĕррине çити те кайма пулать, эп пĕртте хирĕç мар,—терĕ Кованый, çĕнĕ вакунри пружина сеткăллă вырăнсене, чăтăр-чăтăр тăвакан крахмалланă простыньсене, салфеткăсене тыта-тыта пăхса. Унтан кулса ячĕ:— Атьсемĕр, тен, кун пек чаплă пуйăс çинче вакун-ресторан та пулĕ, э? Вăт, пурнăç каятчĕ вара пирĕн!

Анчах çак пуйăс та вĕсене тĕнче хĕррине илсе каймарĕ, сĕм-çĕрле Мускава çитрĕ те, пĕр хушă питĕ вăраххăн пырса, темле çул çинче чарăнчĕ. Аманнисем пысăк кăвак уссиллĕ проводникран ыйтса тĕпчеме тытăнчĕç:

— Мускав-и ку, асатте?

— Мускав, ачамсем, Мускав, хамăрăн юратнă столица...

— Хăш вокзал патĕнче тăратпăр?

— Нимĕле вокзал та мар ку.

— Ăçта, эппин, эпир?

— Окружной çул çине илсе килчĕç.

«Окружной» сăмаха илтсен, хальхинче аялти вырăн çинче выртакан Римма тӳрех тăрса ларчĕ.

«Окружной çул...— аса илчĕ вăл.—Çирĕм ултă уйăх каялла, фронта кайнă чух, пирĕн эшелон çак çул çинче чарăнса тăнăччĕ. Çакăн пекех çĕрле. Шултра та йĕпе юр çăватчĕ. Салтаксене темле питĕ пысăк столовăя ротăн-ротăн илсе кĕртсе апат çитертĕмĕр. Тул çутăлнă чух эшелон хĕвеланăçнелле тухса кайрĕ. Унтан Можайск... фронт... Тĕлĕнмелле шăпа, пăх-ха эс ăна! Ăçтан тухса кайнă, çав вырăнах çаврăнса çитме тӳр килчĕ, эппин! Анчах кунтан тухса кайнă чух йышлăнччĕ эпир. Ротăра çĕр çынна яхăн. Ăçта халь вĕсем? Нумайăшĕ çапăçу хирĕнчех юлнă. Теприсем, аманса, тыла ăсаннă. Пĕрле кайнисенчен Иван Актай писатель дивизире юлчĕ те Володя Аруткин таçта военкоматра ĕçлет имĕш. Кунта халь эпĕ пĕчченех...»

Римма, кĕрĕкне хулпуççи çине уртса ярса, перрон çине тухрĕ. Анчах нимех те курăймарĕ. Тăшмана кунтан питĕ инçе хăваласа янă пулсан та, столица çĕрлесенче халь те тĕттĕмре пурăнать иккен-ха. Унта-кунта çеç çуттине çӳ-

лĕлле ямалла мар тунă кăвак лампочкăсем куранаççĕ. Кичем, салху. Хăçан пĕтĕ ку вăрçă, хăçан этемле, ирĕклĕн, нимрен шикленмесĕр, тулли кăмăлпа пурăнма пуçлăпăр-ши?!.

Куç тĕттĕме хăнăхсан, Римма вакун тĕлĕпе шур халатлă çынсем вунă-вуник носилка çĕклесе иртнине курчĕ.

«Хăшне-пĕрне Мускаври госпитальсене хăвараççĕ пулмалла,— шухăшларĕ вăл.— Пире ăçта илсе каяççĕ-ши? Нивушлĕ Çĕпĕрех çитмелле пулĕ? Шутласан, ман суран ытлашши йывăрах та мар-çке, пĕр-икĕ уйăхран тӳрленмелле... Мĕн тума каяс манăн Çĕпĕре çити?»

Çур талăк ытла тăчĕ пуйăс окружной çул çинче. Вăл хăçан тапранасси çинчен никам та пĕлмерĕ. Кунтан вăл ăçта каясси пирки ыйтакан та пулмарĕ — пурĕпĕр каламаççĕ, хуть ыйт, хуть ан ыйт. Тен, проводниксемпе сестрасем хăйсем те пĕлмеççĕ? Вĕсем те аслă пуçлăхсене пăхăнса пурăнаççĕ-çке: ăçта яраççĕ, çавăнта каяççĕ.

Кăнтăрла иртсен вакуна сасартăк кĕске кĕрĕк çийĕн шур халат тăхăннă самăртарах хĕрарăмпа носилкăсем тытнă санитарсем пырса кĕчĕç.

— Юлташсем, камăн мĕнле япаласем пур — пуçтарăр, сирĕн урăх пуйăс çине куçма тивет. Ак, юнашарах... Хăй тĕллĕн утайманнисене хамăр çĕклесе каятпăр,— терĕ çав хĕрарăм. Калаçнă чух унăн темиçе ылтăн шăл курăнчĕ.

— Каллех куçмалла-и?— тарăхса ыйтрĕ Кованый. —Мĕн вара пирĕнпе пуканесемпе вылянă пек выляççĕ? Мĕншĕн пĕрмай пуйăс çинчен пуйăс çине сĕтĕреççĕ?

— Нимĕн те пĕлместĕп, шăллăм... Анчах ку состава каялла, фронт еннелле янине пĕлетĕп.

— Ну, апла пулсан хуть... ăнланатăп,— ал сулчĕ Кованый. Çавăнтах хĕрарăм çине тӳррĕн пăхса ыйтрĕ: — Эсир пĕлетĕр ĕнтĕ, калăр-ха, военврач юлташ...

— Военфельдшер. Медицина службин лейтенанчĕ,— тӳрлетрĕ ун сăмахне хĕрарăм.

— Каçарăр, пĕлеймерĕм. Калăр-ха, пире ăçта илсе каяççĕ?

— Ана никам та пĕлмест. Анчах та çывăхах мар пуль, тетĕп. Пирĕн пуйăс яланах аякка каять. Юлашки хутĕнче эпир Барабинскра пултăмăр, питĕ инçе вăл...

— Тĕрĕс, шуйттан майраки тăрринчех,— килĕшрĕ Кованый.

— Çапла çав, пĕрре чупсах çитейместĕн унта. Ну, хатĕрленер, юлташсем, хускалар. Вунпилĕк те ноль-нольре

тухса каймалла пирĕн.— Хĕрарăмпа санитарсем вакун тăрăх малалла иртрĕç.

«Эппин, Çĕпĕреллех илсе каяççĕ пире...— шухăшларĕ çак калаçăва хутшăнмасăр итлесе ларнă Римма.— Ну, мĕнех вара... Хальччен курман вырăнсене çитсе курăпăр. Сивĕ пулать теççĕ унта, çавăнтан çеç хăрамалла. Çапах та шăнтсах вĕлермĕç-ха...»

Çапла лăплантарчĕ вăл хăйне хăй, урăх пуйăс çине куçса вырнаçсан.

— Э-эх, пирĕн ĕнтĕ хĕллехи упасем пек çывăрас та çывăрас пулать çеç,— терĕ Кованый, хальхинче çӳлти вырăн çине хăпарса.— Мĕн тăвас урăх? Çĕпĕр çулĕ вăрăм...

— Çапах та, хăш хулана çитерсе тăкаççĕ-ши пире?— терĕ ун айĕнчи вырăн çине ларнă Сарьялов.

— Пурĕпĕр мар-и сана? Омск, Томск е Улан-Удэ... Пурте хамăрăн, пур çĕрте те совет çыннисем, фрицсем мар, пĕтме парас çук, сыватаççĕ.

— Çапах та, Свердловска е Челябинска лексен аванччĕ...

— Мĕн пур унта сан валли уйрăмах?

— Вăл хуласенче опера театрĕсем вăйлă, Мускавринчен те кая мар. Кайса итлеме пулатчĕ... Хăçантанпа оперăра пулман ĕнтĕ эпĕ! Хăçантанпа симфониллĕ музыка итлемен!—ассăн сывласа ячĕ Сарьялов.

— Уншăн урăх йышши симфонисене нумай итленĕ эпир,— терĕ Кованый.— Хăлхасем хупланса ларичченех. Пĕр артобстрел мĕне тăрать! Е çирĕм-вăтăр «юнкерс» пырса тапăнни...

— Ун йышши музыкăпа тăраннă ĕнтĕ!

Римма паян Сарьялов кăмăлĕ кăштах улшăннине асăрхаса юлчĕ. Çын опера çинчен, симфониллĕ музыка çинчен калаçать пулсан — пурăнасшăн вăл, унăн чĕринче малашнехи пирки ĕмĕтленни пур. Пит аван ку! Ĕмĕт пулсан, çын нихçан та аптрамасть, пуçне те усмасть...

...Мускавран пуйăс вунпилĕк те ноль-нольре мар, вунтахăр сехетре, пăч-тĕттĕм пулсан тин, тухса кайрĕ. Тепĕр çур сехетрен аманнисене лайăх кăна касхи апат çитерчĕç, унтан санпуйăс начальникĕпе икĕ тухтăр — иккĕшĕ те пит хитре хĕрарăмсем — кашнин умĕнче чарăнса тăрса, сывлăх çинчен, харпăр хăйне мĕнле туйни çинчен ыйтса пĕлчĕç, вĕсем хыççăн пыракан сестрасем пурине те температура виçрĕç. Ытла йывăррисем çук иккен. Хăшне-пĕрне çеç ыратнине чакаракан, лăпланса çывăрмалли эмелсем пачĕç.

Часах вакунра шăп пулчĕ, пурте лăпкăн çывăрса кайрĕç. Пĕр çутăсăр пуйăс Хусан çулĕпе хĕвелтухăçнелле ыткăнчĕ. Вăхăт-вăхăт пăравус трубинчен тĕтĕмпе хутăш хĕм сирпĕнчĕ, рельссем пĕрлешнĕ тĕлте вакун кустăрмисем шакăлтатрĕç, вакунĕ хăй чĕтренкелесе илчĕ.

Аçта илсе çитерĕ-ши вăл Риммăпа унăн тусĕсене?

## 13

Фронт еннелле каякан тулли эшелонсене ирттерсе яма санитарнăй пуйăсăн чылай станцисенче вăрахчен тăмалла пулчĕ. Талăкран тин Арзамаса çитрĕ вăл. Каллех каç пулса ларчĕ, пăч-тĕттĕм. Аманнисем пуйăс кунтан тапранса каясса та кĕтсе илеймерĕç,— нумай тăчĕ вăл, каçхи апат çирĕç те çывăрма выртрĕç.

Çуралса ӳснĕ тăван вырăнсем патнелле çывхарса пынă май Римма хытă пăлханма пуçларĕ. Акă, темиçе сехетрен Сăр шывĕ пулать, унтан — тăван Чăваш республики... Унта вăл запаслă полкра икĕ уйăх ытла ĕçлерĕ, таврари ялсем тăрăх çӳрерĕ, вăрçа кайма хатĕрленекен салтаксемпе калаçрĕ, унтан хăй те çавăнтанах фронта тухса кайрĕ. Çак çулпах. Хĕвеланăçнелле. Халь акă, вăрçă пĕтмен пулин те, каялла таврăнать. Анчах туншăн вăл айăплă мар-çке. Аманнă пирки пин-пин салтака тыла сывалма ярaççĕ. Нумайăшĕ кайран фронта таврăнаççĕ те каллех вут-çулăм ăшне кĕреççĕ. Тен, вăл та кайĕ-ха. Каяс пулсан, çав дивизиех лекесчĕ. Тус-юлташĕсем патне. Пĕчĕк Вера унта, Ирина... Басов хирург... Иван Актай... Пурте çав тери лайăх çынсем ĕнтĕ! Мĕн тăваççĕ-ши вĕсем çак самантра? Пĕчĕк Вера... айван-çке çав! Женьăна вĕлернĕ каçхине. бомбежка хыççăн каялла, палаткăсем патнелле чупнă чух, хăйĕн гитари пирки хыпăнса ӳкрĕ! Тĕл пулĕ-ши Римма вĕсене?.. Пĕлме çук. Тахçан таврăнма тӳр килет-ха? Тата унччен дивизи те таçта çитет! Тен, унччен вăрçи те пĕтĕ? Пĕттĕрччĕ часрах...

Тул çутăлнă чух вăл темскер çав тери хытă — «катюшăсем» персе янă чухнехи пекех — кĕмсĕртетнине илтсе вăранчĕ. Пуйăс Сăр кĕперĕ урлă каçать-мĕн. Хĕр васкасах вакунăн сулахай енчи чӳречи умне кайса тăчĕ.

— Ах, тур, кунта çитнĕ-çке эпир...

Ун чĕри хыттăн-хыттăн тапма тытăнчĕ. Эппин, пуйăс халь Чăваш çĕршывĕпе пырать. Ак халех, çак сайра вăрмантан тухсанах, чăваш ялĕсем, уй-хирĕсем, çырми-çатрисем курăнма пуçлаççĕ. Чĕререн юратнă тăван çĕршыв!..

Пур çерте те лайах, анчах темшĕн-çке çав çуралса ÿснĕ вырăнсем пуринчен те хаклăрах, чун унталлах туртăнать. Тĕрĕс калаççĕ: хамăрăн аслă Тăван Çĕршыва юратасси аттеанне килне, çуралнă яла, ху ÿснĕ тавралăха юратнинчен пуçланать, теççĕ... Юласчĕ халь çак çĕршывра, пурăнасчĕ мăнаппа патне яла кайса! Ăна курманни икĕ çул ытла. Мĕнле кăштăртаткаласа пурăнать-ши вăл? Ĕçлет ĕнтĕ, шеремет, яланхи пекех, ир-ирех шкула тухса утать пуль. Эвакуаципе пынă ачасене те вĕрентетпĕр, тесе çырнăччĕ-ха. Ватă хăй, кĕçех çитмĕле те çитет пуль. Институтран вĕренсе тухсан Римма ăна хăй патне илме ĕмĕтленнĕччĕ...

— Сестра, ăçта эпир халь?— ыйтрĕ унран тин çеç вăраннă Сарьялов.— Ăçта çитнĕ?

— Кил-ха кил, сержант, кур хамăрăн Чăваш çĕршывне!— терĕ ăна хирĕç Римма.

— Чăнах-и?!

— Чăнах пулмасăр... Пĕр вунă минут каялла Сăр урлă каçрăмăр!

Çакăнтан вара вĕсем иккĕшĕ те сывăрмарĕç, пĕрмай чÿречерен пăхса пычĕç.

— Шел, çуралнă çĕршыва чÿрече витĕр çеç курса иртетпĕр,— терĕ Римма чылайран.— Пире Çĕпĕреллех илсе каяççĕ курăнать. Ĕнер... çук, ĕнер мар, виçĕмкун пулать ĕнтĕ халь, леш ылтăн шăллă фельдшерица каларĕ-çке-ха, иртнĕ рейспа Барабинска çитрĕмĕр, терĕ.

— Сирĕн мĕн, инçене каяс килмест-им?

— Паллах, каяс килмест.

— Анчах маншăн пурĕпĕр,—ассăн сывларĕ Сарьялов.— Инçерех кайни лайăх та пулĕ. Никам та пĕлмест, курмасть. Тĕрĕссипе каласан манăн халь пуçĕпех çухалас килет. «Без вести»...

— Тăвансене те пĕлтерес теместĕн-и?

— Çук манăн никам та. Пичче пурччĕ те, вăл хĕрĕх пĕрремĕшĕнчех пĕтнĕ. Арăмĕ унтанпа качча кайма та ĕлкĕрнĕ. Мĕнле тăван пултăр вăл маншăн?

Пĕр хушă чĕнмерĕç. Майĕпе тул çутăлса çитрĕ. Çанталăк уяр тăрать. Чÿречерен юрпа витĕннĕ шап-шур уйсем, вĕсем урлă тăсăлакан ансăр çулсем, ялсем пит лайăх курăнаççĕ. Акă, чугун çул çумĕпех, тен, хăйсемех таптаса тунă сукмакпа, çич-сакăр ача утаççĕ. Пурте çурăмĕсем хыçне килти пиртен çĕленĕ сумкăсем çакнă — пĕр ялтан тепĕр яла шкула каяççĕ ĕнтĕ. Хăшĕ кĕске кĕрĕкпе, хăшĕ сăхманпа, пĕрисен уринче тĕпленĕ кивĕ çăматă, теприсен çăпата.

Утнă çĕртех хăйсен тĕлĕпе иртекен вакунсем çине пăхса ал сулаççĕ — саламлаççĕ. Кулаççĕ хăйсем. Хаваслă. Римма çав самантрах хăй те виçĕ хĕл çакăн пек кашни кун, ăшшисиввине пăхмасăр, тăватă çухрăмра ларакан тепĕр яла шкула çӳренине аса илчĕ. Телейлĕ вăхăтчĕ вăл...

Акă тата, çул тăрăх çапă тиенĕ икĕ лав пырать. Лаша вырăнне те вăкăр, те ĕне кӳлнĕ. Вăрçăччен Чăваш çĕршывĕнче кун пекки — ĕне-вăкăр кӳлни — нихçан та пулман çав! Лавсем хыççăн иккĕн утаççĕ: пĕри пуçне кăвак шаль çыхнă хĕрарăм, тепри пĕр вуниккĕсене çитнĕ арçын ача. Ырă пурнăçран мар ку. Хĕрарăмĕн — упăшки, ачин — ашшĕ çук ĕнтĕ. Вĕсем, паллах, вăрçăра. Тен, вилнĕ те-и? Колхозĕнче кӳлмелĕх лашисем те çук пулмалла çав. Ахальтен ĕне кӳлеççĕ-и?

«Мĕн тери асап курать халăх...— ассăн сывласа илчĕ Римма.— Вăйпитти арçынĕсем лере, фронтра, темтепĕр тӳсеççĕ, хĕрарăмсемпе ачи-пăчи — килте... Мĕншĕн? Мĕн айăпшăн? Йăлтах фашизм туса хучĕ çакна. Ылханнă фашизм! Тулĕ-ха унăн шăпи те... «Фашистсем темле тапаçлансан та Мускава пырса кĕреймерĕç, анчах эпир вĕсен Берлинĕнче пулатпăрах», терĕ Актай писатель юлашки хут тĕл пулса калаçнă чух. Тĕрĕс каларĕ пуль. Пирĕн çарсем халь кашни кун малалла каяççĕ...

...Пуйăс пĕр станцинче чарăнчĕ.

— Ав, çав тăрăхла çурт çине пăхăр-ха,—Риммăна хулĕнчен тĕртсе, пӳрнепе тĕллесе кăтартрĕ Сарьялов.— Куратăр-и, ун умĕнче виçĕ тополь ларать.

— Куратăп-çке.

— Хĕрĕх пĕрмĕш çулхи декабрĕн виççĕмĕшĕнче эпир хамăран тин çеç йĕркеленĕ оркестрпа пĕртен-пĕр концерт патăмăр. Нихçан та манас çук вăл концерта. Тепĕр кунне ирех эшелонсем çине тиентĕмĕр...

— Емĕрне манмалла мар япаласем пулаççĕ çав пурнăçра. Эпĕ, сăмахран, хам çинелле ыткăннă пĕр фашиста хам алăпах персе пăрахнине нихçан та манассăм çук. Халь те куç умĕнчех, шуйттан...— терĕ Римма.

Сарьялов ун çине питĕ тĕлĕнсе пăхрĕ.

— Ун пекки те... пулнă-и сирĕн?

— Пулнă çав. Эп персе яма ĕлкĕреймен пулсан, вăл хăй мана пăвса пăрахатчĕ пуль.

— Вăрçă саккунĕ çавăн пек ĕнтĕ: е эсĕ тăшмана пĕтеретĕн, е вăл сана тĕп тăвать. Çурмалла виçе çук унта. Кам кама!

Вĕсене ирхи апат ҫиме чĕнчĕҫ. Кованый, тин ҫеҫ вăранса, аяла анса ларчĕ.

— Вăт, шуйттан,— пуҫне пăркаласа илчĕ вăл.— Пулать те вĕт ирсĕр тĕлĕк! Тьфу!

— Мĕн куртăр вара ун пекех?— ыйтрĕ Римма.

— Мĕн курăнтăр мана... Ҫĕрĕпех поискра* пултăм. Темле шыв урлă каҫрăмăр пек. Темшĕн шывĕ сап-сарă. «Фрицсем ăна юри юнпа хутăштарнă, ҫавăнпа сарă вăл», тет ман пĕр юлташ Ҫӳрерĕмĕр-ҫӳрерĕмĕр... Темле чаплă ҫурта пырса кĕтĕмĕр. Генерал ларать. Нимĕҫ генералĕ. Эпир: «Хенде хох!» тетпĕр. Анчах вăл пире хăйпе пĕрле коньяк ĕҫме сĕнет. Эсир килни пит лайăх-ха, эп хамах пырасшăнччĕ сирĕн патна, тет. Тек сирĕнпе ҫапăҫас кăмăл ҫук манăн, Гитлер капут, тет. Лартăмăр ҫакăнпа. Ĕҫетпĕр, анчах коньякĕ хытса ларнă, ниепле те пыра анмасть. Унтан ҫак генерал ман ура аманнине курчĕ те халех тӳрлететĕп тесе урана пăрма тытăнчĕ. Шутсăр хытă ыраттарчĕ...

— Кансĕр выртнă ĕнтĕ эсир, ҫавăнпа ыратнă вăл сирĕн,— терĕ Римма.

— Ҫапла пулнă пуль ҫав... Унтан сасартăк мачча ишĕлме тытăнчĕ, ҫурчĕ тайăлса кайрĕ. «Ан хăрăр, ку вăл ҫак ҫурт мар, Германи ишĕлет», терĕ генерал. Кайран кимĕпе пытăмăр пек... Сасартăк генерал шыва сикрĕ. «Сирĕн командовани патне хăвăртрах ҫитсе хам ирĕкпе парăннă пек тăватăп, унсăрăн мана персе пăрахма пултараççĕ», терĕ пире. Хăй ҫавăнтах путрĕ...

— Лайăх тĕлĕк-ҫке ку, ма кӳренетĕр?— кулса илчĕ Римма.

— Мĕн лайăххи пур унта? Тăнпуҫа ҫухатса, анăрашса выртни ҫеҫ! Хам йĕп-йĕпе тара ӳкнĕ... Тьфу!

— Ун пек те мар усал тĕлĕксем курăнĕҫ-ха пире,— хаш! сывласа илчĕ Сарьялов.— Эп, авă, пĕрмай хам тавра минăсем ҫурăлнине куратăп.

— Нервсем лăплансан иртет вăл,— терĕ Римма.

— Ĕненместĕп эп ăна,— ал сулчĕ Сарьялов.— Мана хама илес пулсан... ăҫтан лăпланччăр ман нервăсем? Ак ҫакна ăҫта чикетĕн?— Вăл сулахай аллине хускатса илчĕ. Пӳрнесем ӳссе лармаççĕ вĕт манăн!

— Эс ун ҫинчен ан шутла, сержант,— терĕ Кованый.— Шанчăка ҫухатма кирлĕ мар, чипер сынах пулатăн

*Разведкăра.

ака. Есенина вулана пуль эс? Мĕнле каланăччĕ-ха вал? «Все пройдет, как с белых яблонь дым...»

— Вал урăхла калани те пур, лейтенант: «Может, завтра больничная койка успокоит меня навсегда...»

— Ну, ку вăл пустуй сăмах. Пÿрнесем татăлнăшăн салтак вилни нихçан та пулман-ха. Пÿрне — пуç мар. Пуç тĕрĕс-тĕкел пулсан, çын пурăнатех. Тата пирĕн çĕршывра яланах пурин валли те ĕç пур. Темле пулсан та аптрамăпăр-ха, сержант!

Пуйăс питĕ лайăх пычĕ. Чÿречесем тĕлĕпе вĕçĕмсĕр шур юр юхрĕ, телефон юписем, обходчиксен пĕчĕкçеç сарă будкисем вĕлтлетсе иртрĕç. Ирхине кăшт кăна пĕлĕтлĕрехчĕ, анчах, вĕсем майĕпе сирĕлсен, хĕвел пăха пуçларĕ те çутçанталăк калама çук илемленсе кайрĕ.

Вăрнарта пуйăс виçĕ минут та тăмарĕ пулмалла, каллех малалла ыткăнчĕ. Риммăпа Сарьялов апат çинĕ хыççăн каллех сулахайри чÿрече патне пырса тăчĕç.

— Мĕн çине çав териех ытараймасăр пăхса пыратăр эсир, хаклă юлташсем?— ыйтрĕ кăшт тăрсан Ковaный. — Эпĕ те ак ку чÿрече витĕр пăхкалатăп та, ытлашши нимех те курмастăп-çке?

— Хамăр çуралса ÿснĕ çĕршыв çине пăхатпăр, лейтенант юлташ... Тăван ырăнсемпе, Чăваш республикипе пыратпăр-çке!—хуравларĕ Римма, каялла çаврăнса пăхмасăрах.

— Э-э, авă мĕн иккен! Пит аван! Çуралса ÿснĕ çĕршыва нимĕн те çитмест çав. Анчах эп çуралса ÿснĕ çĕршывра халь те фашистсем хуçаланаççĕ-ха. Шутласан, чĕре çурăлса тухать те... мĕн тăвас тетĕн!

— Аçтисем вара эсир, лейтенант?

— Херсонран. Илтнĕ пуль? Чаплă хула. Икĕ порт: юханшыв порчĕ, тинĕс порчĕ. Карапсем тăвакан завод, темтепĕр. Пирĕнни пек хитре хуласем сайра пулаççĕ.

Вăл хăйсен Херсонĕнче мĕн-мĕн пурри çинчен каçса кайсах каласа пама тытăнчĕ. Питĕ юратать иккен çуралса ÿснĕ тăван хулине! Анчах юлашкинчен ассăн сывласа ячĕ те пĕççине çапса илчĕ:

— Эхх!.. Кам пĕлет, тен, нимĕçсем унта нимĕн те хăварман!

— Ан пăшăрханăр, лейтенант, часах ирĕке кăлараççĕ ак сирĕн хулана та. Юлашки сводкăсене шута илсен...

— Часрах, часрах ирĕке кăларасчĕ çав! Аннепе йăмăк юлнă ман унта. Те чĕрĕ, те вилĕ — кам пĕлет. Шанма йывăр, çапах та шанатăп-ха: тен, пурăнаççĕ? Мана кĕтеççĕ?

— Паллах, шанас пулать, лейтенант...

Çапла калаçса пынипе вăхăт мĕнле иртни те сисĕнмерĕ.

— Сестра, Канаш! Канаш!— терĕ чӳречерен уйрăлмасăр пăхса тăнă Сарьялов.

— Çитрĕмĕр те-и?!— Римма каллех чӳрече патнелле ыткăнчĕ.

— Çитрĕмĕр... Анса юлма пултаратăр. Сирĕн Çĕпĕре каяс килмест вĕт-ха?— Сарьялов хĕр çине чалăшшăн пăхса кулам пекки турĕ.—Çĕпĕрте унта сивĕ, упасем, кашкăрсем нумай...

— Çук ĕнтĕ, сирĕнпе пĕрлех пырас пуль, пĕртте уйрăлас килмест лайăх каччăсенчен. Тен, çул çинче хăшне те пулин кăмăла кайăп-и-ха...— шӳтлерех хуравларĕ Римма.

Пуйăс чуппи чаксах пычĕ. Акă вĕсен вакунĕ лутра кăна станци çурчĕ тĕлĕпе иртрĕ. Миçе хут кĕрсе тухнă пуль Римма çав сăнсăрланса ларнă çурта, миçе хут уçса хупнă пуль ун йывăр алăкне! Акă хĕрлĕ кирпĕчрен купаланă водокачка. Ун тĕлĕпе те Римма çĕр хут та иртнĕ...

«Пуйăс чарăнсан тухса куратăп-ха. Кам пĕлет, тăрук пĕр-пĕр палланă çын тĕл пулчĕ-тĕк? Тен, леш запаслă полк халь те кунтах? Пуйăс мĕн вăхăт тăрассине пĕлсе, санчаçе çитсе курма пулать, аякра мар вăл, çул урлă каçмалла çеç»,— шухăшларĕ Римма. Хăй чăннипех пăлханчĕ.

Анчах пуйăс, хулан тепĕр вĕçне тухса, иккĕмĕш Канашра тин чарăнчĕ. Инçе! Кунтан ниçта та каяймастăн. Çапах та Римма тӳсеймерĕ, кĕрĕкне хулпуççи çине уртса ячĕ те вакунран тухрĕ. Йĕри-тавралла пăхкаларĕ. Хула вĕçĕнчи пĕчĕк çуртсем юрпа хупланнă. Пĕр_çын та курăнмасть. Сылтăмра — инçе те мар — вакунсем юсакан заводăн тем çӳллĕш трубинчен тĕтĕм палкаса тухать. Ана та Римма кунта пурăннă чух пин хут та курнă. Ĕçлет, эппин, завод. Паллах, фронт валли. Халь пурте фронт валли ĕçлеççĕ. Çĕнтерӳ валли. Урăхла епле пултăр-ха тата? Халăхăн пĕтĕм ĕмĕчĕ-шухăшĕ çавăн çинче.

— Шăнса пăсăласран хăрамастăн-и, хитре пике?— тенине илтрĕ те Римма, каялла çаврăнса пăхрĕ.

Ун патнелле пичĕ-куçĕ хăрампа вараланса пĕтнĕ, хуралса сăранлансах ларнă кĕске кĕрĕк тăхăннă пĕр вунçичвунсакăр çулхи йĕкĕт утса пырать иккен. Тем пирки савăннă-çке хăй, шап-шур шăлĕсене кăтартса кулать.

— Çук-ха, хăрамастăп. Вакунра пăчă та...

— Кăштах уçăлас терĕн-и?— Йĕкĕт Римма умĕнче чарăнса тăрса чикаркка чĕркеме тытăнчĕ.
— Çапла терĕм çав. Эсĕ... ку пуйăс çинче ĕçлетĕн-и?
— Пăравус çинче. Машинист помощникĕ. Эс фронтран килетĕн ĕнтĕ, çапла-и?
— Çавăнтан.
— Тĕлĕнмелле...— Йĕкĕт зажигалка çутса чикаркине тивертрĕ.
— Мĕн тĕлĕнмелле?
— Турттаратпăр-турттаратпăр аманнисене... çаплах турттарса пĕтерейместпĕр.
— Аманнисем кашни кунах пулаççĕ-çке. Фронт вăл— хăрушла арман чулĕ пекех, лутăркать те лутăркать çын пурнăçне.
— Пĕлетĕп. Манăн та аттепе икĕ пичче пĕтрĕç.
— Нумайранпа ĕçлетĕн-и пăравус çинче?
— Ик çул çитет ĕнтĕ. Куккапа пĕрле ĕçлетпĕр. Вăл машинист, эп тăлăха юлсан пурăнма мана хăй патне илчĕ те — вĕрентме тытăнчĕ. Малтан ученик вырăнĕнче çӳрерĕм, кайран экзамен тытрăм.
— Пит лайăх тунă. Професси туяннă. Ĕçне юрататăн-и?
— Юратмасăр!— Йĕкĕт шăл витĕр сурса илчĕ.— Вăрçă пĕтсен чугун çул техникумне вĕренме кĕретĕп. Унтан, тен, институтга кĕме те май килĕ-ха.
— Хитре ĕмĕтсем санăн! Мухтамалла...
— Ĕмĕтсĕр мĕнле пурăнатăн?— Йĕкĕт кулса ячĕ.— Эсĕ те вăрçă хыççăнах тухтăр пулма шутлатăн пуль-ха!
— Çук, эп учительница пулатăп.
— Вăл та япăх мар.
— Итле-ха, каччă...— Римма ун çине куçĕсене хĕсерех пăхрĕ.— Эс пĕлетĕн ĕнтĕ, кала-ха... Тен, юрамасть те пулĕ те...
— Мĕн çинчен ыйтасшăн вара эс?— Йĕкĕт сăнĕ тăруках улшăнчĕ, вăл çĕлĕкне тӳрлетсе лартрĕ.— Эп нимĕн те пĕлместĕп!
— Пирĕн пуйăс ăçта çити каяссине пĕлетĕнех пуль. Инçе-и?
— Э-э...— Йĕкĕт каллех кулса ячĕ.— Эп пĕр-пĕр калама юраман япала çинчен ыйтатăн тесе! Инçе каймастпăр, Шупашкара çеç, кунтан çĕр километр ытларах кăна юлчĕ. Лайăх кайсан — тăват-пилĕк сехет...
Римма кĕлетки тăрăх ток янă пекех пулчĕ.

— Шупашкара?! Чăнах-и?!

— Ха! Ма улталам ĕнтĕ сана!

— Тавтапуç, каччă!

— Мĕн тав тумалли пур уншăн?— тĕлĕннĕ пек пулчĕ йĕкĕт.

— Пур, каччă, пур!— терĕ Римма хавассăн.— Мĕншĕн тесен, вăл хула — манăн тăван кил!

— Анланатăп...— Каччă татах кулчĕ.— Савни те пур ĕнтĕ унта, вăл нимçта кайса кĕрейми кĕтет сана, çапла-и?

— Савнисем ку чухне тылра лармаççĕ,— пуçне пăркаласа илчĕ Римма— Вĕсем лере...

## 14

Хĕрĕх тăваттăмĕш çулхи февраль уйăхĕн вунулттăмĕшĕнче, ирхине ирех, Шупашкар станцийĕ умне хула енчен имшеркке лашасем кӳлнĕ пĕр çирĕм çуна пырса чарăнчĕ. Лавсем инçетрен килнĕ пулмалла: лашисем çĕрĕпе юртăман айĕнче пулнă пекех пасарса ларнă. Кам пĕлет, тен, лавçисем, станцие хăйсене хушнă вăхăта çитес тесе, çĕрĕпех хăваланă-и вĕсене? Лаша-выльăха та питĕ йывăр килнĕ çав ун чухне...

Станци умне çитсенех, малти çуна çинчен Хĕрлĕ Çар командирĕ пек тумланнă хĕрарăм сиксе анчĕ те кайри лавсем еннелле пăхса хыттăн кăшкăрчĕ:

— Старшина! Асламасов! Матрацсемпе утиялсене халех шала илсе кĕрт, ăшăнччăр! Лавçăсем те кĕрсе ăшăнччăр пăртак!

— Есть!— илтĕнчĕ ăна хирĕç.

Çакăн хыççăн хĕрарăм васкасах картлашкасем тăрăх чупса хăпарчĕ те темиçе самантран «Начальник станции» тесе çырнă алăка карт! уçса шала кĕрсе тăчĕ.

— Салам, Никита Петрович!

— Салам, салам, майор юлташ...— Сĕтел хушшинче кĕрĕкпе-çĕлĕкпе ларакан кӳпшекрех питлĕ арçын, ура çине тăрса, хĕрарăма пĕртен-пĕр сулахай аллине тăсса пачĕ.

— Эшелон çитеймерĕ-и-ха?— ыйтрĕ хĕрарăм.

— Çук-ха. Анчах кĕçех çитмелле, Ишлейрен халь кăна шăнкăравларĕç. Кĕтетпĕр.

Вĕсем пĕр-пĕрне тахçантанпах паллаççĕ пулмалла. Хĕрарăм-майор хыççăр пукан çине ларчĕ те, кĕсйинчен пирус коробки кăларса, малтан пĕр пирусне хăй хыпрĕ, унтан

станци начальникне сĕнчĕ. Пирусне чĕртсен вара йывăррăн сывласа ячĕ.

— Лавсем вăхăтра çитеймесрен чун юлмарĕ паян! Вĕсем госпиталь патне кaçах килмеллеччĕ — çук та çук... Çĕрĕпе сывăраймарăм çавăншăн. Мĕн тăвас пулатчĕ-ха лавсем поезд килнĕ тĕле çитмен пулсан? Колхоз председательне хытă çунтартăм вара... Анчах вăл та айăплă мар. Çак лашасемпех ĕнер вĕсем Сĕнтĕрти больница валли вутă турттарнă, унтан çĕрĕпех Шупашкара килнĕ.

Хĕрарăм çурри çеç туртнă пирусне катăк тăм чашăк çине пусса сӳнтерчĕ.

— Йывăр, Никита Петрович, питĕ йывăр!— Вăл питкуçне икĕ ал лаппипе сăтăркаласа илчĕ.— Кĕçĕр эпĕ чăлкăм та куç хупман-ха, паян та кунĕпех пукан çине ларса курас çук. Аманнисене йышăннă кун уйрăмах ĕç нумай пулать пирĕн. Ураран ӳкичченех ĕçлеме тивет пурин те!

— Анланатăп, Зоя Григорьевна,— терĕ станци начальникĕ,— çăмăл мар сире. Тӳсес пулать ĕнтĕ. Пĕтĕм халăх тӳсет. Эпир те...

— Ӳпкелешсе каламастăп эпĕ. Паллах, тӳсетпĕр. Аякран пыракан хĕрарăмсем, комсомолкăсем нумай пулăшаççĕ пире, тавтапуçах вĕсене! Пырсан, пит тăрăшса ĕçлеççĕ.

— Урăхла мĕнле пултăр-ха. Пулăшас пулать çав. Хамăршăн юн тăкнă çынсемшĕн тăрăшмасан — камшăн тăрăшмалла?

Нумай та калаçса лармарĕç вĕсем, перрон çине тухрĕç. Тепĕр пилĕк минутран вакунсем çине хĕрлĕ хĕрессем ӳкернĕ пуйăс та чашлатса çитсе тăчĕ. Хĕрарăм-майор васкасах санитарнăй пуйăс начальникĕн вакунне кĕрсе кайрĕ. Вара вăхăт нумай та иртмерĕ, хулари госпитальтен пынă санитарсемпе сандружинницăсем вакунсенчен аманнисене кăларма тытăнчĕç. Утма пултараканнисене çавăтса, мăйĕсенчен уртăнтарса, утайманнисене носилкăсемпе çĕклесе тухрĕç.

Пуйăс пырса чарăннă чух перрон çинче ахаль çынсенчен никамах та çукчĕ пек, тепĕр вунă-вунпилĕк минутран вара халăх тем чухлех пухăнчĕ. Малтан колхозран килнĕ лавçăсем тухрĕç, унтан — темле стариксем, карчăксем, хĕрарăмсем, вуник-вунпилĕк çулхи ачасем. Те малтанах пĕлнĕ вĕсем паян аманнисен эшелонĕ килесси çинчен?

Çав çынсем пĕр вырăнта тăмарĕç тата, тек каллĕмаллĕ, пĕр вакун патĕнчен теприн патне, пуйăсăн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне кумрĕç. Аманнисем хушшинче вĕсем

хайсен таванĕсене, ашшĕсене, упăшкисене, ывăлĕсене шырарĕç... Госпитальте ĕçлекенсем кун пеккине хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ, çавăнпа çынсем хăйсене самаях кансĕрлеççĕ пулин те, питех шарламарĕç.

— Пăрăнăр, пăрăнăр, çул парăр...— терĕç кăна вĕсем.

Аманнисенчен тĕрлисем пур — хăшĕнне пуçне, хăшĕнне ал-урине, кăкăрне бинтланă. Хăшĕн вара тути çеç курăнать,— пĕтĕм кӳлепи бинт айĕнче. Пĕрисем, хăйсене перрон çине анма пулăшсан, костыльсемпе хăйсемех утаççĕ, теприсем тата, пĕр алли çеç аманнă пулсан, юлташĕсене те пулăшма хăтланаççĕ. Ик урараН аманнисене станци çуртне носилкăсемпе йăтса кĕртсе лартаççĕ.

Йывăр пулчĕ çынсене çакăн çине пăхса тăма. Ытла та хĕрхенмелле-çке! Мĕн курман, мĕн тӳсмен пуль вĕсем, мăнтарăнсем! Çап-çамрăккисем те, пĕрре сухал хырса курманнисем те пур-çке!..

Хĕрарăмсем тӳсеймерĕç. Унта та кунта нăшăклани илтĕнчĕ. Пĕр карчăк вара кăшкăрсах макăрма тытăнчĕ:

— Мишша! Ывăлă-ăм! Ăçта-ши эсĕ, чунăм? Ма çук-ши эсĕ, ма килместĕн-ши? Хам çĕре кĕриччен куç хĕррипе те пулин курса юласчĕ-çке сана-а...

Вăл, станцирен инçех те мар пурăнаканскер, кашни санитарнăй пуйăсах кĕтсе илет те хăйĕн пĕр хыпарсăр сухалнă ывăлне шырать-мĕн, кашнинчех çавăн пек кăшкăрса макăрать иккен. Хĕрарăмсем ăна аяккалла çавăтса кайрĕç.

...Кованый лейтенанта вакунран икĕ сандружинница ик енчен тытса илсе тухса кайрĕç, анчах Риммăпа Сарьялов, хăйсемех утма пултараканскерсем, тăрса юлчĕç.

— Ĕлкĕрĕпĕр-ха, ыттисене вырнаçтарччăр малтан,— терĕ Римма.

Вăл пĕрре куç илмесĕр тулалла, перрон çинчи çынсем çине пăхрĕ. Тен, ăнсăртран, пĕр-пĕр паллакă çын курăнĕ? Вара тӳрех тухма пулатчĕ. Анчах, тепĕр тесен, камах пултăр? Институт Шупашкарта мар. Эппин, юлташсем те çук.

Сарьяловпа иккĕшĕ те вăрахчен чĕнмерĕç. Кашнин хăйĕн шухăшĕ ĕнтĕ. Римма госпитале çитсе вырнаçсанах мăнаппăшĕ патне çыру çыраССи, Сергей йăмăкне, Анютăна, шыраса тупасси çинчен шухăшларĕ. Тен, Сергей пирки мĕнле те пулин урăх хыпар пур? Брест крепоçĕнчи çапăçура пĕрле пулнă юлташĕ янă çырусăр пуçне Сергей шăпи çинчен нимĕнле хут та килменччĕ вĕт-ха. Тен, кам пĕлет... Пурнăçра тепĕр чух калама çук тĕлĕнмелле япаласем пулаççĕ...

Сарьялов мĕн ҫинчен шухăшлана-ши?

Вăл темиҫе хут та ассăн сывласа илнине сиссе, Римма ăнланчĕ: пăлханать йĕкĕт, хытă шухăшлать, хăй ăшĕнче асапланать те пулмалла. Анчах, ăнсăртран ăна тата ытларах пăлхатса ярас мар тесе, унран нимĕн те ыйтас темерĕ.

— Ну, кайрăмăр, сержант...— хулпуҫҫинчен тĕртсе илчĕ тата пăртак тăнă хыҫҫăн.

Аманнисене малтанлăха станцин «кĕтмелли залне» илсе кĕртнĕ иккен. Лараканĕсем лараҫҫĕ, выртаканĕсем выртаҫҫĕ. Махорка тĕтĕмĕ мăкăрланать. Ытла калаҫакан, шавлаканах ҫук, пĕр-пĕринпе хуллен мăкăртатни ҫеҫ илтĕнет. Хулана, госпитале, илсе каясса кĕтеҫҫĕ. Хулăн тумтирсем ҫийĕн тăхăнса янă вараланчăк халатлă санитарсем чи малтан носилкăсем ҫинче выртакансене илсе тухса ҫунасем ҫине вырнаҫтарма тытăннă. Ҫуна ҫине матрац сараҫҫĕ, пуҫ айне ҫӳлерех тăваҫҫĕ те аманнисене хураҫҫĕ, ҫиелтен икшер утиялпа витеҫҫĕ. Май килсен, икшерĕн те вырнаҫтараҫҫĕ. Вара лав тапранса каять. Тайлăк-тейлĕк ҫулпа, сив ҫил шăмма тивмеллех вĕрекен уй урлă, аналалла...

Риммăпа Сарьялов, залри ҫӳллĕ хыҫлă йывăҫ дивансем хушшипе пăхкаласа ҫӳресе, хăйсен тусне, Кованый лейтенанта, тупрĕҫ. Вăл гипсри урине диван ҫине тăсса хунă та пирус пашлаттарса ларать.

— Ну, лейтенант юлташ, Ҫĕпĕре ҫитрĕмĕр-и? Омск, Томск е Улан-Удэ... Ҫапла каланăччĕ-и-ха эсир?— кулакула ун ҫумне ларчĕ Римма.

— Ҫитеймен-ха, лимузин ярса парасса кĕтетĕп,—хуравларĕ Кованый.— Хули инҫе-и кунтан?

— Инҫе мар, анчах лимузинĕсем пурте шĕвĕр хӳреллĕ кунта, «Сивка-бурка» маркăллă, кузовĕсене хупран тунă,— терĕ Сарьялов.

— Маншăн пулсан — качака таки кӳлсен те пурĕпĕр, часрах ҫитесчĕ кăна,— ал сулчĕ Кованый.— Темскер, температура хăпарнă пек туйăнать-ха. Тата акă мĕн, сержант: госпитальте пирĕн пĕр пӳлĕме лекме тăрăшасчĕ, ҫавăнпа та эс манпа пĕрле пыр. Палламан ҫынсемпе лексен питĕ кичем пулать. Асту ҫавна.

— Юрĕ. Ун ҫинчен эп хам та шухăшларăм-ха,— терĕ Сарьялов.

Кованый, Римма ҫине пăхса, куҫне хĕсрĕ. Ку ĕнтĕ санитарнăй пуйăс Сухиничире тăнă чух вĕсем иккĕшĕ мĕн калаҫнине аса илтерни пулчĕ:

«Госпитале пĕрле лекесчĕ-ха, ҫын тăваттăм эп унран».

Римма аманнисем хушшипе васкаса каллĕ-маллĕ çӳрекен, санитарсемпе сандружинницăсене приказсем паракан хурарах сăнлă хĕрарăм-майора сăнама тытăнчĕ. Питĕ ӳрĕк, вăрт-варт çаврăнкалакан çын иккен. Хăй çамрăк-ха, вăтăра та çитмен-и тен. Пысăк чакăр куçĕсем çынна витĕр шăтарасла пăхаççĕ. Сасси хулăнрах, анчах çемçе, кăмăллă. Пĕр сăмахпа каласан, юратмалла хĕрарăм пек туйăнчĕ.

— Çав хĕрарăм-майор... кам-ши вăл?— ыйтрĕ Римма Кованăйран.— Эсир кунта маларах кĕтĕр, тен, илтнĕ?

— Вăл пирĕншĕн патша та, турă та пулать,—терĕ лейтенант.

— Мĕнле ăнланмалла куна?

— Эпир кĕрсе выртас госпиталь начальникĕ, эппин.

— Мĕншĕн патша, мĕншĕн турă?

— Патша — мĕншĕн тесен пĕтĕм власть ун аллинче, турă — мĕншĕн тесен унăн пирĕн чунсене çăлса, чĕрĕ сывлăш вĕрсе кĕртсе, пăр-пăр-пăр... каялла, фронта вĕçтерсе ямалла. Унăн тивĕçĕ çавăн пек.

— Шӳт тума, аллегорисемпе калаçма юрататăр иккен эсир. Пĕлмен.

— Ялан хуйхăрса, тунсăхласа пурăнсан, этемĕн чунĕ йӳçсе кайма пултарать. Çапла-и, сержант?—Сарьялова чавсипе тĕртсе илчĕ Кованый.— Пурнăçра чи кирли вăл — пуça усманни. Ытти, хамăра пӳрнĕ таран, хăех пулса пырать. Куна эпĕ хамăн пурнăçри опыта шута илсе калатăп. Куркаланă сахал мар...

...Аманнисене хулана пурне те пĕр харăс илсе кайма лавсем çитмерĕç, çавăнпа пĕр ушкăнне ăсатнă хыççăн теприсен лавсем таврăнасса кĕтсе ларма тиврĕ. Станци çуртĕнче сивĕ, ăна чылайранпа хутман пулмалла. Аманнисем шăна пуçларĕç. Çавăнпа кунтах юлнă госпиталь начальникĕ, медицина службин майорĕ Зоя Григорьевна Фимова, станци çумĕнчи столовăя хăех кайса икĕ пысăк чейникпе вĕретнĕ шыв çĕклесе пычĕ. Риммăна вăл паçăрах асăрханă-мĕн те, халь пĕр чейникне тӳрех ун умне пырса лартрĕ.

— Сестра, сан пĕр аллу сывă пулас?— ыйтрĕ вăл.

— Сылтăм алă чиперех.

— Эппин, салтаксене вĕри шывпа хăнала. Аманнисене пăхса курнă пуль? Эп халех кружкăсем илсе килетĕп.

Çапла вара аманнă Риммăн госпитале çитиччен ехтепĕр хут медсестра ĕçне тытăнмалла пулчĕ.

Лавсем таврăнсан, хĕрарăм-майор ăна хăйпе пĕрле пĕр

çуна çине лартса кайрĕ, çул çинче Римма хăш фронтра пулни, мĕнпе аманни çинчен ыйтса пĕлчĕ.

— Ан хуйхăр, часах сывалатăн, пирĕн врачсем лайăх, условисем те начар мар,— терĕ майор юлашкинчен.— Сан пек аманса килнĕ хĕрсем пирĕн татах пур, виççĕн тан выртаççĕ. Эпир вĕсене уйрăм палата панă. Эсĕ тăваттăмĕш пулатăн.

— Мĕнлескерсем вĕсем? Хăш фронтсенчен килнĕ? Нумайранпа-и сирĕн патра?— тăрук çине-çине ыйтма тытăнса кайрĕ Римма. Шупашкарти госпитальте те аманнă хĕрсем пурри ăна çав тери интереслентерсе ячĕ-çке-ха!

— Çитсен куратăн акă,— терĕ майор.— Лайăх хĕрсем. Пурте майĕпе сывалса пыраççĕ. Чăн та, пĕрин ĕçсем йывăртарах ĕнтĕ...

— Мĕн пирки-ши?

— Фронтран йывăр сын пулса килнĕ. Кĕçех çуратмалли вăхăчĕ çитет. Хăйĕн сылтăм ури çук...

— Ку кансĕр вара...— Римма тутине çыртса лартрĕ. Аван мар пулса кайрĕ ăна. Темшĕн хăйсене çирĕп тытма пĕлмеççĕ-çке хăшпĕрисем! Арçынĕн килте çемье пуррине пĕле тăркачах, унпа арлă-арăмлă пекех пурăнаççĕ. Йĕрĕнмелле япала. Ку та çавăн йышши пуль. Ури мĕнле татăлнă-ши тата хăйĕн?

Риммăн ун çинчен питĕ пĕлес килчĕ, анчах майортан ыйтма хăймарĕ вăл.

...Госпиталь хула варринчи тăвата хутлă пысăк çурта вырнаçнă. Хулари чи лайăх çуртсенчен пĕри ку. Римма астăвать — вăрçăччен унта вăтам шкулччĕ, пединститут студенчĕсем практикăна çӳретчĕç. Римма хăй те темиçе урок ирттернĕ. Халь вăл çурт — тăвата хучĕпех — вăрçăран темĕн тĕрлĕ аманса килнĕ воинсемпе тулнă.

Станцирен çитсе, хĕрарăм-майорпа пĕрле алăкран кĕрсенех, Римма сăмсине эмел-имçам шăрши пырса çапрĕ. Кăшт маларах иртрĕ те халь çеç пуйăс çинчен антарса килнисем коридорти вăрăм саксем çинче ларнине курчĕ. Носилкăсем çинче выртакансем те çавăнтах. Сестрасем, санитарсемпе сандружинницăсем вĕсене — пĕрин хыççăн теприне — коридор вĕçĕнчи пысăк пӳлĕме илсе кайса çаратмаслантараççĕ те тӳрех ваннăя кĕртсе çăваççĕ иккен, туммтирне дезинфекцие параççĕ. Унтан, тап-таса кĕпе-йĕм тăхăнтарса, палатăсене вырнаçтараççĕ. Госпитальте йĕрки çапла.

Римма та сак çине ларчĕ. Унăн та, ыттисем пекех,

фронтри кĕпе-тумтирне хывса пăрахас, çăвăнас, госпиталь тумтирне тăхăнас пулать. Анчах унăн нумай кĕтме тивет ĕнтĕ — халь арçынсене çăваççĕ.

Ним тума пĕлмесĕр, вăл ун-кун пăхкаласа ларчĕ. Коридор тăрăх госпиталь çыннисем каллĕ-маллĕ чупнă пекех çӳреççĕ. Кашнин хăйĕн ĕçĕ. Акă, шур халатлă, шур калпаклă пĕчĕкрех хура хĕр коридорăн ку вĕçĕнчи пӳлĕмрен пĕр çĕклем таса кĕпе-йĕм çĕклесе тухрĕ те Римма тĕлĕпе хăвăрт утса иртрĕ. Çав тери паллана çын пек туйăнчĕ вăл. Кам пулчĕ-ши? Курнă-çке ăна, пĕрре кăна мар курнă! Анчах ниепле те астуса илме çук.

«Чарса тăратмаллаччĕ иккен... Тен, вăл хăй те палласа илетчĕ мана!»— ӳкĕнсе илчĕ Римма.

Тепĕр темиçе минутран çав хура хĕр каялла çаврăнса пычĕ. Халь пушăлла. Каллех кĕпе-йĕм складне каять пулмалла. Римма тинкерсе пăхрĕ те тăрук аса илчĕ: ара, ку Райка Чернова-çке, физмат факультетĕнче вĕреннĕскер! Вечерсенче ташлама питĕ юрататчĕ. Кĕлетки пуклак, хăй мăнтăркка пулнăшăн студенткăсем ăна «сĕлĕ кĕлти» тетчĕç. Хĕрĕхмĕш çулхи мартăн саккăрмĕшĕнче Сергей унпа темиçе хут та ташларĕ те, Римма, çавăншăн кĕвĕçсе, вечертан тухса тарнăччĕ, минтер йĕпеничченех макăрнăччĕ. Ах, ухмах пулнă-çке! Çавă ку, тем тесен те çавă! Ним чухлĕ те улшăнман, кăшт начарланнă çеç.

Хура хĕр хăй тĕлне çитеспе Римма, сак çинчен тăрса, пĕр-икĕ утăм малалла ярса пусрĕ.

— Итлĕр-ха, сестра... каçарăр та-ха... Эсир Рая Чернова мар-и?

— Çавă. Эсир мана ăçтан паллатăр?— тĕлĕнерех ыйтрĕ хĕр.

— Паллатăп çав. Эсир мана паллаймастăр-и?

— Каçарăр, уйăрсах илейместĕп...

— Паллах, çынна ку тумпа паллама йывăр, çитменнине тата вăхăчĕ те нумай иртрĕ — виçĕ çула яхăн...— кăмăлсăрланнă пек пулчĕ Римма.

— Курасси курнă пек те...— куçĕсене мăчлаттарса илчĕ хура хĕр.— Чимĕр-ха, чимĕр! Эсир филфакра вĕренеттĕрччĕ пулас! Сережка Пастуховпа час-часах пĕрле пулаттăрччĕ... Çапла-и?

— Тĕрĕс, çапла,— пуçне сулса илчĕ Римма. «Сергее эсĕ те астăватăн иккен-ха...»— шухăшларĕ хăй çавăнтах.

— Салам апла пулсан, хĕрӳллĕ салам! Каçарăр тăрукках палласа илейменшĕн!— Чернова Римма аллине ик ал-

липех ярса тытса пăчăртарĕ.— Питĕ хавас сире курма! Фронтра пултăр, эппин?

— Пултăм та вăхăтсăр таврăнма тиврĕ ав.

— Мĕн тăвас тетĕн! Аманнисем нумай килеççĕ. Тепĕр чух хума выран пулмасть. Койкăсене коридора лартма та тивет. Ашталанатпăр кăна.

— Эсир... мĕн ĕçре кунта?

— Кĕпе-йĕм комиссарĕ тесе кулаççĕ манран. Кастелянша эпĕ. Пин-пин простынь, пин-пин çитар пичĕ, салфетка, кĕпе-йĕм ман алăра. Питĕ час вараланаççĕ, вĕсене çутармалла, якаттармалла... тăн тухса каять!

— Институт... пĕтертĕр-и?

— Çу-ук!— ал сулчĕ Чернова.— Пирĕннисем Сĕнтĕрвăррине куçса кайсанах пăрахмалла пулчĕ. Аттене пичче вăрçăра, анне сывă мар, ăçтан вĕренетĕн? Çăкăршăнах çаканта килсе кĕтĕм. Пурăнас пулать-çке!

— Çапла çав, пурăнас пулать...— Римма хура хĕр çине хĕрхенерех пăхрĕ: ĕлĕкхи пек ташласси иртнĕ пулĕ çав ĕнтĕ унăн. Авать çынна йывăр пурнăç, авать...—Хамăр институтра вĕреннисенчен кунта эсир кăна-и?— тесе ыйтрĕ унтан.

— Ку госпитальте эп пĕчченех, анчах тепринче виççĕн ĕçлеççĕ.

— Апла-ха, эппин. Сĕнтĕрвăрринче пирĕннисем мĕнле пурăнкалаççĕ-ши?

— Ырриех сахал пулмалла. Питĕ тăвăр, тет. Апатçимĕç енчен те... хăвăрах чухламалла хальхи пурнăçа.

— Тӳскелĕç епле те пулсан. Вăрçă пĕтсен институт каллех кунта таврăнать акă. Ун чухне эпир те вĕренĕпĕр-ха.

— Епле пулсан та вĕренесчĕ çав. Çын пуласчĕ. Халь эпир çур çул çинче чарăнса тăтăмăр та... çул вĕçне тухасахчĕ.

— Тухатпăр пулĕ-ха. Эп те çавна шанса пурăнатăп.

Пĕр вăхăтлăха шăпланчĕç. Чернова хĕр-салтак çине куç илмесĕр пăхса тăчĕ.

— Улшăннă эсир...

— Ватăлнă пек туйăнать-и?— çемçен кулса илчĕ Римма.

— Пĕртте ватăлман. Патварланнă. Елĕк имшерккерех пулнă пек астăватăп.

— Ун чухне хĕрача кăна пулнă та-ха. Халь мăн çын.

— Качча кайман пуль те?

— Шутламан та. Ма ун пек ыйтатăр?

— Хăшĕсем унтан арăм пулса таврăнаççĕ.

— Ухмахсемшĕн саккун çырман теççĕ вĕт. Вăрçă пĕтмесĕр вăл шухăш пуçа та пырса кĕрес çук-ха.

— Леш Сережка... Пастухов ăçта халь, пĕлместĕр-и?— ыйтрĕ те унтан Чернова, тăруках хĕрелсе кайрĕ.

— Пĕлместĕп çав. Тен, эсир пĕлетĕр мĕн те пулин?— Римма хăйĕн чĕри тăрук хыттăн тапма тытăннине туйрĕ.

— Çук, илтмен ун çинчен. Эсир унпа туслă пулнине астунипе çеç ыйтрăм. Çыхăну тытмастăр-и халь?

— Вăл вăрçă пуçлансанах хыпарсăр çухалнă. Ним сас-хура та çук ун пирки.

— Шел апла... Мĕн тери лайăх йĕкĕтсем пĕтрĕç!— ассăн сывласа ячĕ Чернова.— Манăн та пĕр тус пурччĕ... техник-строитель. Çавăн пекех ним хыпарсăр çухалчĕ. Вилнĕ хучĕ те çук. Те плена лекнĕ...

— Ун çинчен вăрçă пĕтмесĕр те пĕлме çук ĕнтĕ.

— Кĕтетĕп-ха. Манăн кĕтесех пулать. Пирĕн ача пур...

— Паллах, кĕтесех пулать. Эп те кĕтетĕп, телей пуласса шанса пурăнатăп. Пирĕн хушăра нимĕн те пулман, çапах та...

Калаçу татăлчĕ— коридор вĕçĕнчен тахăшĕ хытă кăшкăрчĕ:

— Рая-а! Ăçта çухалтăн эсĕ?!

— Ну, тĕл пулăпăр-ха сирĕнпе, халлĕхе сыв пулăр!— терĕ те Чернова, хăйне чĕннĕ çĕрелле чупрĕ.

«Ав мĕнле пурăнатăн иккен-ха эсĕ... Анне пулма та ĕлкĕрнĕ! Çапах Сергее асăнатăн тата...»— шухăшласа илчĕ Римма.

Тепĕр икĕ сехетрен тин ватăрах санитарка Риммăна хĕрарăмсен палатине илсе кайрĕ. Вăл палата чи çӳлте, тăваттăмĕш хутра, коридор вĕçĕнчех иккен. «Юри арçынсенчен аяккарах вырнаçтарнă пуль-ха», терĕ Римма хăй ăшĕнче. Пӳлĕмре тăвата койка, вĕсенчен пĕри пушă. Кĕрсенех Римма кунти хĕрарăмсене сывлăх сунчĕ. Лешсем те ăна ăшшăн саламларĕç.

— Вырнаç çакăнта, хĕрĕм,— пушă вырăн çине кăтартрĕ санитарка.— Мунча хыççăн сывăрса та илĕн-и, тен. Ан имен, килти пек пул,— хăйĕн ачипе калаçнă пекех йăвашшăн та кăмăллăн калаçрĕ вăл.

— Тавтапуç, аппа...

Санитарка тухса кайсанах малти койка ҫинчи хурарах сăнлă, типшĕмрех ҫамрăк хĕр, Римма пекех сулахай аллинчен аманнăскер, урайне анса ун патнелле пычĕ.

— Паллашар, эппин, юлташ... сержант-и, лейтенант-и?— терĕ вăл сывă аллине тăсса.

— Рядовой, Римма Сурская...

— Ҫарти специальность енĕпе кам?

— Медсестра.

— Ăҫтан кĕрлеттерсе килтĕн?

— Белоруссии фронтĕнчен, Мозырь тăрăхĕнчен.

— Апла пирĕн палатăра «вилĕме пулăшакансем»* иккĕн пулчĕҫ, аптрамастпăр.

— Эсир хăвăр...

— Гварди ефрейторĕ Наташа Тимкина, снайпер. Волхов фронтĕнчен.— Вăл койкăсем ҫинче выртакансем еннелле ҫаврăнса тăчĕ.— Ак, ку пирĕн, кăтра луҫ, Варя Тополева санинструктор, ман пекех Волхов фронтĕнчен, ку— Катя Хорькова, Пĕрремĕш Украина фронтĕнчен, дивизи хаҫатĕнче наборщик пулнă, фашистсене ҫурăлакан пульăран та хытăрах пырса тивекен статьясем пичетлесе кăларнă...

— Питĕ хавас сирĕнпе паллашма,— йăл кулса пуҫне тайрĕ Римма. Ҫав вăхăтрах: «Хăшĕ урасăр-ха вĕсенчен, хăшĕ йывăр сын?»— тесе шухăшларĕ. Лешсем утиялсемпе витĕнсе выртнă пирки ăна тăруках пĕлме пулмарĕ.

Пурин ҫинчен те каласа панă хĕр-снайпер Наташа Тимкина Риммăна кăшт вĕҫкĕнрех, мухтанчăкрах пек туйăнчĕ, кунпа пĕрлех тата вăл фронтри сарăмсăр вилнĕ хаклă тусне, Женя Масловăна аса илтерчĕ: лешĕ те хăш чух ытларах калаҫма юрататчĕ, анчах хăй ылтăн сынччĕ-ҫке! Ҫапăҫу хирĕнче те паттăрччĕ, туслăх енчен те калама ҫук шанчăклăччĕ, йывăрлăха лексен те нихҫан та пăрахас ҫукчĕ. Тен, ҫак Наташа та ҫавăн йышши хĕр?

## 15

Хăйсен дивизийĕнчи медсанбатрах васкаса хурса янă гипса илсе пăрахнă хыҫҫăн Римма хулне госпиталь начальникĕпе — хайхи хĕрарăм-майорпа — пĕрле тата икĕ хирург пăхрĕҫ. Хулĕ питĕ хытă шыҫнă иккен, ўчĕ, ҫĕрсе, хуп-хура кăвакарсаларнă, пăхма та хăрушă. Анчах суранĕ пысăках мар, пĕр тăват пўрне сарлакăш кăна, вăл ҫиелтен хыта та пуҫланă.

---

*Фронтри салтаксем, шўтлесе, медработниксене ҫапла калатчĕҫ.

— Пӳрнӳсене вылятса пăх-ха,— терĕ пĕр тухтăрĕ.
Пӳрнесем чиперех хускалаççĕ иккен.

— Пит аван ку... маттур!

Çавăнтах Риммăна рентгена илсе кайрĕç. Рентген ӳкерчĕкĕ ыррине кăтартман вара: хĕрĕн сулахай хул шăмми пĕр çĕртен кăна мар, ик çĕртен хуçăлнă иккен. Ахальтен мар «фердинанд» снарячĕн осколокĕ пырса çапнă самантра Риммăн çур кĕлетки катăлса ӳкнĕ пекех туйăнчĕ...

Кун çинчен ăна тухтăрсем ним пытармасăр каларĕç:

— Чылай кĕтмелле пулать санăн аллу тӳрленсе çитессе. Анчах эс ан пăлхан, ан хуйхăр. Шăмму чип-чиперех сыпăнать те, ним палли те юлмасть. Аманни çинчен манса та каятăн: хуть волейболла выля, хут кимĕпе ярăннă чух кĕсменпе иш...

Суранне тасатса çыхнă, унтан хулĕ çумне ик енчен темле пластинкăсем хурса, лайăх кăна гипсласа лартнă хыççăн Римма палатăна лăпкă кăмăлпах таврăнчĕ.

— Ну, мĕнле, мĕн турĕç?— вăл алăкран кĕрсенех ыйтма тытăнчĕ Наташа-снайпер.

— Тӳрленет, анчах тăруках мар, терĕç...

— Тăрук тӳрленменни паллă ĕнтĕ вăл,— ассăн сывласа ячĕ те Наташа, тумбочкинчен тем пысăкăш пирус пачки кăларса, пĕр пирусне çăвара хыпрĕ, çавăнтах тивертме пикенчĕ.

— Тархасшăн палатăра ан турт, Наташа, табак тĕтĕмне тӳсме пултараймастăп,— терĕ Римма койкипе хирĕçех выртакан Катя-наборщица,— ăш пăтранать...

— Сестрасем килсен те вăрçаççĕ,— хушса хучĕ Варя-санинструктор.— Нивушлĕ санăн вĕсем мăртлатнине итлес килет?

Наташа ним те чĕнмерĕ, аллинчи шăрпăк коробкине шăкăртаттарса коридоралла тухрĕ. Римма вăл тумбочка çине пăрахса хăварнă пирус пачки çине пăхрĕ те тĕлĕнсех кайрĕ: пачкăн пит енне тем пысăкăш кĕрен саспаллисемпе «Нарспи» тесе çырнă. Типографинчех пичетленĕ!

«Турăçăм, кам ухмахĕ ăс çитернĕ-ши ача куççулĕ пек таса чунлă Нарспи ятне шăршлă табакпа хутăштарма!— çилĕпе шухăшларĕ вăл.— Кун пек пулсан, часах «Сетнер» ятлă эрех те кăларма пуçлаççĕ пуль!»

Çавăнтах аса илчĕ: вăрçăччен пĕр колхозра ăратлă вăкăра Сетнер ятне панă, тесе кулатчĕç...

«Мăйĕсене тепĕр майлă пăрса лартăттăм çавăн пек этемсене!»— шухăшларĕ Римма хăй ăшĕнче.

Ана ыйхă пусма пуçларĕ. Ешенсе çитнĕ-çке вăл, хăçантанпа йĕркеллĕ çывăрман! Анчах çав вăхăтра коридортан Наташа-снайпер таврăнчĕ.

— Апата кайрăмăр, хĕрсем!— терĕ вăл.— Темшĕн, паян шутсăр хырăм выçрĕ-ха манăн. Пĕччен пĕр така пĕçси çисе яма пултаратăп пуль.

— Аппетит пирки нихçан та аптраман-ха эсĕ, арман пекех авăртатăн,— кулса илчĕ Варя-санинструктор.—Анчах усси çук-ха сана çитернинчен, çав-çавах хăма пек çӳретĕн. Ни малти, ни кайри, тенĕ пек...

— Маншăн ан хуйхăр, Варенька,— пӳрнисемпе шаклатса илчĕ Наташа,— эп илтнĕ тăрăх, хальхи арçынсем сан пек кӳпшексене мар, ман пек хытканнисене ытларах саваççĕ!

— Ах, тур! Мĕншĕн-ши вăл?— тутине тăсрĕ Варя.

— Хытканнисен юратăвĕ вĕрирех, тет.

Коридорта кăнтăрлахи апата йыхăракан шăнкăрав сасси янрарĕ.

— Юрĕ, выçă хырăмпа тавлашмăпăр,— ал сулчĕ Наташа. Унтан вырăн çинче выртакан Катя Хорькова патне пычĕ:— Сан валли апатне хамăрах илсе килетпĕр, Катюша...

— Юрать,— кушăрканă тутине çуласа илчĕ лешĕ.

Вĕсем виççĕн — Наташа, Варя, Римма — палатăран тухса коридор тăрăх утрĕç. Столовăй коридорăн тепĕр вĕçĕнче-мĕн. Аманнă хĕрсене пурте паллаççĕ иккен, пурте пуç таяççĕ, сывлăх сунаççĕ. Шӳтлесе илекенсем те пур.

— Хăçан сывалса çитетĕр? Сирĕн пата хăçан евчĕсем яма пулать-ши?

— Васкăр, хĕрсем: вăрçă пĕтсен тăрăлса юлатăр, ун чух пире граждански хĕрсем туртса илме пултараççĕ!

Вĕсене хирĕç Наташа тавăрса каларĕ:

— Эпир хамăр та гражданскисене каясшăн-ха, сирĕн пек унтан-кунтан сапланă солдафонсене мар!

Тахăшĕ Риммăна асăрхарĕ:

— Хĕрсем, сирĕн йыш хутшăнлă тем?

— Ятне пĕлме юрать-и?

— Пĕр килограмм канфетсăр каламастпăр!— тавăрчĕ Наташа.

— Канфетне ăçтан тупас? Канфет вырăнне вир пăтти-концентрат е комбижир юрамасть-и?

— Эс ăна хăвăн арăмна кайса çитер, унăн шăлĕсем çук пуль-ха!— парăнмарĕ Наташа.

Коридор тăршшипех çапла кулкаласа пычĕç вĕсем.

— Хаваслă халăх кунта сирĕн,— терĕ Римма столовăя çитсен.

— Ахăраççĕ çав ĕççĕр аптранипе,— ал сулчĕ Наташа.

Хĕрсен хăйсен яланхи вырăнĕ пур иккен, сылтăм енчи кăмака çумĕнче. Вĕсем сĕтел хушшине ларсан, Римма ункун пăхкалама тытăнчĕ. Тем тĕрлĕ çын та пур иккен аманнисем хушшинче. Кукшаланнă, çӳçĕсене кĕмĕл тĕс çапма пуçланисем те, тĕреклĕ, вăтам çулхисем те, çап-çамрăккисем те. Хăшĕсем пуçĕсене çыхнă, хăшĕсем гипса хывнă аллисене марлĕпе мăйран çакса янă, нумайăшĕ хăйсем ларакан пукансем çумне клюшкăсем, туясем тăратнă — вĕсен урисем аманнă, эппин..

Римма столовăйри çынсене йĕркипе пăхса пычĕ-пычĕ те пĕр сĕтел хушшинче Сарьялова курах кайрĕ. Куçĕсемпе сĕтел çинелле тăрăннă та ним хускалмасăр ларать.

— Каллех кăмăлĕ пăсăлнă кунăн... хуйхăрать...—шухăшларĕ Римма.— Апат çинĕ хыççăн пырса калаçас-ха. Кованый мĕнле-ши?

— Кам çине ун пекех пăхатăн эс? Хăшĕ тăрукках кăмăла кайрĕ, хăшне суйласа илтĕн?— шӳтлесе ыйтрĕ Наташа Риммăран.— Кăтарт-ха, тен, эпĕ те юратса пăрахăп...

— Ав, стена çумĕнчи виççĕмĕш сĕтел çине тинкер,— терĕ ăна хирĕç Римма,— унта сар çӳçлĕ йĕкĕт ларать...

— Куратăп... çав имшерккескер-и? Мĕн тупрăн эс ун çумĕнче? Хитре те мар...

— Эпир унпа пĕр пуйăспа, пĕр вакунра килнĕ.

— Мĕн вара уншăн?

— Шăпи питĕ йывăр унăн. Трагеди.

— Мĕнле трагеди тата?

Римма хĕрсене кĕскен кăна Сарьяловăн историне каласа пачĕ.

— Шел качча... Чăнах та трагеди ку!— ассăн сывласа ячĕ Наташа, Сарьялов çинчен куç илмесĕр.

— Пăх-ха эс: пĕтĕм пурнăçне музыкăна панă пулать те... ак сана финал! Тьфу, шуйттан вăрçи!— терĕ вĕсен калаçуне илтсе ларнă Варя та.

Апат çисе тухсан, Риммăпа унăн çĕнĕ тусĕсем ăна коридорта кĕтсе илчĕç.

— Салам, сержант. Иртенпех курман сана,— терĕ Римма.

— Салам, сестра. Мĕнле вырнаçкаларăр?— ячĕшĕн тенĕ пек ыйтрĕ Сарьялов.

— Пит аван вырнаҫрӑм. Ак, ҫак хӗрсемпе пӗрле.

Римма Сарьялова юлташӗсемпе паллаштарчӗ.

— Лейтенант-разведчик мӗнле пурӑнать унта?— ыйтрӗ ҫавӑнтах.

— Вӑрҫса выртать. Ҫӗтӗлет кӑна.

— Мӗн тупӑннӑ тата ун пекех вӑрҫмалли?

— Аманнӑ ури йӗркеллӗ мар тет. Тухтӑрсем пӑхнӑ та, операци тумалла пулать пуль, тенӗ имӗш.

— Ак тата! Ҫул ҫинче ури питех ыратни ҫинчен те каламарӗ-ҫке? Ӑнсӑртран, гангрена пуҫланман пуль те?— хӑрасах ыйтрӗ Римма.

— Пӗлместӗп. Вӑхӑт пулсан пырса курӑр, эпир виҫҫӗмӗш хутра, аллӑ ҫиччӗмӗш пӳлӗм. Халлӗхе сыв пулӑр.

Сарьялов уйрӑлса кайсан, Наташа хӑйне ҫамкинчен ҫапса илчӗ.

— Э-эй, тӑнсӑр сурӑх! Ку качча пула мансах кайнӑ!

— Мӗн?

— Ара, Катюша валли апат илсе каймалла-иҫ! Хамӑр ҫирӗмӗр, вӑл выҫӑ кӗтсе выртать... Атьӑр!

Вӗсем столовӑя каялла кӗрсе виҫ тӗслӗ апат, ҫӑкӑр илсе тухрӗҫ те хӑйсен палатине васкарӗҫ.

— Ме, Катюша, ҫи часрах, сивӗнсе кайиччен...

Анчах Хорькова апат ҫине ҫаврӑнса та пӑхмарӗ. Темшӗн унӑн сӑнӗ паҫӑрхинчен те ытларах шуралнӑ, куҫӗсем путнӑ, ҫамки йӗп-йӗпе тар, хӑй йывӑррӑн сывласа выртать.

— Хӗрсем... тархасшӑн... тухтӑра кайса чӗнӗр. Е сестрасем пулаҫҫӗ-и унта...— асаплӑ сасӑпа ыйтрӗ вӑл.

— Мӗн эсӗ, Катюша, мӗн пулчӗ тӑруках?— Хӗрсем ун пуҫ вӗҫне пырса тӑчӗҫ.

— Ҫитет пулмалла... вӑхӑчӗ...

— Эс тепӗр ик-виҫ эрнерен тин пулмалла, теттӗн-ҫке?

— Пӗлместӗп...

Ҫивӗч Наташа палатӑран пуля пек тухса вӑркӑнчӗ. Хорькова йынӑшма пуҫларӗ. Риммӑпа Варя ним тума пӗлмесӗр тӑчӗҫ. Тепӗр ик-виҫ минутранах палатӑна Наташӑпа пӗрле госпиталь начальникӗ Зоя Григорьевна тата носилка ҫӗкленӗ икӗ ҫамрӑк санитарка чупса кӗчӗҫ.

— Пуҫланчӗ-им, Катюша?— ыйтрӗ начальник.

— Пӗлместӗп... эп хальччен ҫуратса курман вӗт...— аран хуравларӗ Хорькова.

— Ан пӑлхан, тусӑм, лӑпкӑ пул, халех сана роддома леҫетпӗр! Унти тухтӑрсем хӑйсен ӗҫне пӗлеҫҫӗ, пулӑшаҫҫӗ сана.

— Хăратăп эпĕ, Зоя Григорьевна...— макăрса ячĕ пулас ача амăшĕ.— Вилсе кайăп-и...

— Ним хăрамалли те çук, Катюша. Пĕр паттăр кăна гвардеец çуратса паратăн акă.

— Ун ашшĕ те гвардеец пулнăччĕ.

— Вăт, пĕр гвардеец вырăнне тепĕр гвардеец пулать те акă,— калаçăва хутшăнчĕ Наташа.—Хăвăншăн та телей, çĕршывшăн та тупăш... Савăнмалла çеç уншăн.

— Ах, темле-çке, темле пулĕ...

— Хĕр çуралсан та лайăх, хăвна валли юлташ пулать,— хушса хучĕ Варя Тополева.

— Тепĕр тесен — çавах мар-и!— ал сулчĕ Наташа.

Çапла калаçнă хушăра санитаркăсем носилка çине матрац, çитар, икĕ утиял хучĕç, унтан Хорькована илсе вырттарчĕç те питĕ тĕплĕ, ниçтан сывлăш кĕмелле мар чĕркесе çĕклесе тухса кайрĕç. Утакан хĕрсем ăна аялти вестибюле çитиччен ăсатса, ырă сунса кăларса ячĕç.

Каялла хуллен утса хăпарнă чух Римма хĕрсенчен кăшт именнĕ пекрех ыйтрĕ:

— Кампа пулнă унăн? Ансăртран мар пуль те?

— Ой, çук, çук, Катюша çинчен ун пек ан шухăшла,— терĕ Наташа,— фронтра унăн чăн-чăн упăшки пулнă. Иккĕшĕ те редакцинче ĕçленĕ вĕсем — ку наборщица, упăшки шофер. Катюша йывăр çын пулни сакăр уйăх çине кайсан, ăна киле ямалла тунă. Ун чух вĕсем таçта Житомир тăрăхĕнче тăнă. Катюшăна çывăхри чугун çул станцине ăсатма машинăпа упăшки хăй кайнă — шофер та-ха. Каçчен каялла çаврăнса çитес тесе упăшки васканă, анчах çул пушă пулман — тягачсем çĕмрĕлнĕ танксене, ремонта яма, станци еннелле туртнă. Катя упăшки вара, нумай шухăшласа тăмасăрах, машинăна тĕп çул çинчен пăрнă та çул хĕррипе пырса, лешсенчен иртсе кайма пиконнĕ. Анчах нумай та каяйман — «студебеккер» пĕр кустăрмипе нимĕçсем лартса хăварнă противотанковăй мина çине пырса кĕнĕ те сывлăшалла çĕкленсе çаврăнса ӳкнĕ. Тягачсен водителĕсем çунма тытăннă машина патне чупса пырса Катьăпа упăшкине кабинăран туртса кăларнă, анчах упăшки вилнĕ пулнă ĕнтĕ, Катьăн сулахай ури мина осколокĕ лекнипе пакăлчак таранах арканнă. Вăл тăнне çухатнă, тягач водителĕсем хăйне станцие мĕнле илсе çитернине те астумасть, станцири медпунктра тин тăна кĕнĕ. Ăна станци тĕлĕпе иртсе пыракан пĕрремĕш санитарнăй пуйăс çинех хурса янă. Тахăш госпитальте урине татнă, унтан тылалла ăсатнă...

Çаван пек пулнă Катюшăн телейсĕр шăпи. Питĕ хĕрхенмелле. Хăй вара тĕлĕнмелле лайăх çын!

— Апла иккен...— йывăррăн сывласа ячĕ Римма.

— Ачине чипер çуратсан юратчĕ-ха хуть. Хăй вăл ывăл кĕтет, ывăл пулсан ашшĕ ятне паратăп — Володя вырăнне Володя пултăр, тесе пурăнчĕ.

— Кĕтнĕ пек пулсан аванччĕ...

Палатăна таврăнсан хĕрсем, госпитальти йĕрке тăрăх, çывăрма выртрĕç. Римма, ĕшенсе çитнĕскер, çур сĕрчченех çывăрнă вара. Наташăпа Варя ăна каçхи апата кайма та вăратман, апатне хăйсем илсе килсе ун патне лартнă. Ăна Римма çĕрле вăрансан çирĕ.

Питĕ килĕшрĕç Риммăна çĕнĕ тус-юлташĕсем. Çав тери ырă кăмăллă иккĕшĕ те. Чăн та ĕнтĕ, характерĕсем пĕр пек мар. Наташи шутсăр çивĕч, правур, чĕлхи те хачă пек— хăйне мĕн те пулин килĕшмесен çавăнтах касса татма пултарать, арçынсем ытлашши калаçма пуçласан та çăварĕсене наччасрах хупласа лартать. Ун çумне тăруках çулăхаймăн. Варя хăйне пур чухне те лăпкă тытать, нихçан та васкамасть, тĕплĕн шухăшламасăр пĕр сăмах та каламасть, çынна тăрук пӳлсе лартас йăла та çук унăн. Анчах ытти енчен пĕрешкелех вара, иккĕшĕ те тĕрĕслĕхе юратаççĕ, юлташĕсемшĕн чунĕсене кăларса пама хатĕр, кам та пулсан йывăрлăха лексен, ăна хăйсен вăйĕ çитнĕ таран пулăшмасăр иртсе каяс çуках.

Мĕн каласси пур ĕнтĕ — фронт хĕрĕсем!

Катя Хорьковăна ача çуратмалли çурта ăсатсан, пĕрикĕ кун хушши ун çинчен кăна калаçрĕç: мĕнпе пулăшас ăна, мĕнпе кăшт та пулин савăнтарас? Ан туйтăрччĕ вăл хăй тăлăх арăм пулса юлнине, хăйĕн кунта тăванĕсем те, никам та çуккине!

Наташа шухăшласа тупрĕ:

— Хĕрупраç! Ара, унăн ачи çуралсан тытма пĕр кипке те, тăхăнтарма пĕр кĕпе те çук вĕт-ха! Атьăр çĕлесе паратпăр!

— Мĕнрен çĕлетĕн? Хăвăн айăнти простыньрен-и?— иккĕленчĕ Варя.

— Ма хамăр простыньрен? Кастеляншăран ыйтатпăр! Унăн юрăхсăра тухнă, списать тумалли хатĕр-хĕтĕр тем чухлех ĕнтĕ! Парать!

— Кастеляншăна палатăп эпĕ, пирĕнпе вĕреннĕскер вăл,— терĕ Римма, Наташа шухăшĕпе килĕшсе.— Вăл хăй

те ача амăшĕ, ăнланма тивĕç! Хамах каласса пăхатăп унпа...

Тепĕр виçĕ кунтан халлĕхе çуралма та ĕлкĕреймен «гвардеец» валли ултă кĕпе, темиçе ача çитти, икĕ ăшă утиял хатĕр пулчĕ.

Сержант-музыкант Сарьялов хурлăхĕ çинчен пĕлсен те Наташа ăна питĕ хĕрхенчĕ, час-часах аса илсе калаçрĕ ун пирки.

— Ма-ха çав шуйттан осколокĕн шăп сулахай алă пўрнисенчен пырса тивмелле пулнă? Лекес ăçтан та пулин урăх çĕртен! Мĕнле пурăнать ĕнтĕ вăл каччă? Тем парăттăм ăна пулăшма...

Наташа Мускав çывăхĕнчи Химки станцинче, депора ĕçлекен рабочи çемйинче çуралса ўснĕ, çамрăклах ашшĕсĕр тăрса юлнă, пурнăçĕ çăмăл пулман, çавăнпа вăл вунултăрах ФЗОран вĕренсе тухнă та ĕçлеме тытăннă. Вăрçă пуçланнă хыççăн тепĕр уйăхран, нимĕçсем Мускав çине вĕçме тытăнсан, каç-каç ытти комсомолецсемпе пĕрле çуртсем тăрринче дежурствăра тăнă, фашист летчикĕсем пăрахакан «зажигалкăсене» сўнтернĕ. Хĕрĕх виççĕмĕш çул пуçламăшĕнче комсомол Тĕп Комитечĕ пуçарнипе уçнă снайперсен шкулне кайса кĕнĕ — вăл шкулта хĕрсене кăна вĕрентнĕ. Унтан фронта кайнă...

Нумай тĕлĕнмелли историсем каласа кăтартрĕ Наташа хăйĕн фронтри пурнăçĕ çинчен. Пĕрремĕш хут «ухутана» кайни, пирвайхи фрица вĕлерни, унтан «счет» мĕнле ўссе пыни, тăшман снайперĕсемпе «дуэльсем» туни, унăн икĕ «напарници»* епле вилни, хăйне мĕнле амантни...

— Вăл кун «ухутара» эпир Люся Мариновăпа иксĕмĕр пулсаттăмăр. Çанталăк уярччĕ, тĕтре-мĕн çук, лайăх курăнать. Пирĕн ячейка — ну, снайперсен окопĕ — тăшман траншейисенчен виççĕр метрта кăна. Анчах тăшман курмасть пире — маскировкине тума вĕренсе çитнĕ ĕнтĕ. Кăнтăрлаччен нимĕн те курмарăмăр, пĕрре те пемерĕмĕр. Унтан пиртен сулахаярахра фрицсен пулемечĕ — МГ—34 текенскер — лăкăртатма тытăнчĕ. Перкелет те чарăнать. Кăшт тăрсан, татах перет. Окуляр витĕр пăхсан-пăхсан, тупрăм çакна. Пулемет щитĕнчи хушăк витĕр пулеметчикне хăйне те куртăм. Вăл хамран миçе метрта пулнине тĕрĕслерĕм, прицела тўрлетрĕм. Тĕллеме тытăнтăм. Пулемет татах лăкăртатса илчĕ те каллех чарăнчĕ. Пулеметчикĕ пирĕн

*Снайперсем «ухутана» мăшăрăн-мăшăрăн çўреççĕ.

еннелле пăхать. Эп вара, сывлама чарăнса, ерипен кăна спусковой крючок ҫине пусрăм. Пулеметчик пуҫĕ ҫĕре ӳкрĕ. Лектертĕм, эппин! Пиҫрĕ манăн вунсаккăрмĕш фриц! Анчах пĕр минут те иртрĕ, те иртмерĕ... пуҫланчĕ ахăрсамана! Тытăнчĕҫ пире минăсемпе ăшалама, ниҫта кайса кĕме ҫук! «Часрах запаслă позицие куҫас пулать!»— кăшкăртăм Люсьăна. Хам, хырăмпа шуса чакас вырăнне, кăшт ҫĕкленетĕм пулмалла ҫав, ухмах! Осколок сулахай хулпуҫҫирен пырса ҫапрĕ, тирĕнсе кайрăм, окоп тĕпне ӳкрĕм, тăма пикенетĕп — тăраймастăп. Самантлăха тăна та ҫухатрăм пулмалла. Люся мана траншея тĕпĕпе сĕтĕрсе кайнă...

Наташăн «снайпер кĕнекинче» вăл вунсакăр фашиста вĕлерни ҫинчен ҫырнине командирсем алă пусса, пичет хурса ҫирĕплетсе панă иккен. Римма ҫав лутăрканса пĕтнĕ пĕчĕк кĕнекене вăрахчен уҫкаласа пăхса ларчĕ.

— Усрас пулать ку хаклă япалана, Наташа,— терĕ вăл.— Пулас ачусем валли ҫеҫ мар... мăнукусем валли те!

— Хам та ҫапла шутлатăп ҫав,— кулса илчĕ Наташа. Ҫавăнтах хушса хучĕ:— Анчах ман ачасен те, мăнуксен те ҫакăн пек кĕнекесем ан пулччăрччĕ!

Наташа, хаваслă кăмăлласкер, час-часах юрласа илет. Унăн хыҫҫăн, никам пĕлмен юрăсем нумай. Кăшт тунсăхланă чух пĕр юрă:

В темную ночь, в ту, которую можно поспать,
Снайпера на разведку идут и про сон забывают...

Кăмăлĕ лайăх чухне такмаклама тытăнать:

Командир меня ругает
Что я милого люблю,
Все равно любить я буду,
Хоть посадит на губу...

Неужели пуля-дура
Меня, девушку, убьет?
Пуля — влево, пуля — вправо,
Пуля, делай перелет!

Юрланă май ташлакаласа та илет. Мĕн тери лайăх ҫакăн пек ҫынсемпе пурăнма! Темле хуйхă пулсан та аптрамастăн вĕсемпе, пуҫа усмастăн, чĕрене ыраттармастăн, малашнехи пурнăҫ ырă та телейлĕ пулассине шанма пăрахмастăн!

Варя Тополева вăрҫă умĕн Рязань облаҫĕнчи пĕр район больницинче ĕҫленĕ-мĕн, мобилизаци хыҫҫăн, Римма

пекех, пĕр хушă тылри госпитальте ĕçленĕ, фронта хĕрĕх виççĕмĕшĕнче Курск хысакĕ çинчи çапăçусем пуçланас умĕн лекнĕ. Аллă çын ытла çĕклесе тухнă вăл вут-çулăм ăшĕнчен, аллă çын ытла çăлнă. Икĕ хутчен аманнă, анчах суранĕсем йывăрах пулманнипе медсанбатран аякка кайман. Сывалнă та каллех хăй ĕçне тытăннă. Юлашкинчен вара çурăлакан пуля унăн хул калакне çĕмĕрсе пăрахнă та ирĕксĕрех тыла кайма тивнĕ...

Ун çинчен Варя çапла каласа кăтартрĕ:

— Çĕнĕ çул кунĕ, каçалапа, пирĕн батальон позицийĕсем тĕлĕнче сывлăшри çапăçу пулса иртрĕ. Пирĕн икĕ «яка» пилĕк «мессер» тапăнчĕç. Турăçăм, мĕн хăтланмарĕç пуль вĕсем! Кутăн та пуçăн чăмаççĕ, урлă та пирлĕ ыткăнаççĕ, пĕр чарăнмасăр пулеметсем шатăртатаççĕ... Акă, пĕр «мессерне» вут хыпса илчĕ те вăл чул пекех аялалла анса кайрĕ, ун хыççăн тепри... Вăхăт нумай та иртмерĕ — виççĕмĕшĕ! Анчах çав вăхăтра пирĕннисенчен те пĕри ӳкме пуçларĕ. Летчикĕ парашютпа сикрĕ. Парашючĕ уçăлнă-уçăлман пĕр «мессерĕ» ун тавра çаврăнса пулеметран кĕскекĕске черетсем сапма тытăнчĕ. «Ну, пĕтерчĕ куна, çăлăнма пултарнăскерех вĕлерчĕ ĕнтĕ, шуйттан!» тесе, чĕтресех пăхса тăратпăр çав... «Нейтралка» çине ӳкрĕ, уй варринчи икĕ йывăç патне»,— тесе пĕлтерчĕ хыр тăрринчен бинокльпе пăхса ларакан пĕр сержант. «Хускалмасть-и?»— кăшкăрчĕ тахăшĕ. «Çук, хускални палăрмасть...» «Вилчĕ пуль, эппин...» Тӳпери самолетсем çав вăхăтра пирĕн куçран çухалчĕç. Мĕн тумалла? Тен, çапах та, парашютпа сикнĕ летчик вилмен, аманса кăна пĕтнĕ? Тен, ăна çăлма пулать? Ĕнтĕ каç та пула пуçларĕ, эпир çаплах летчик çинчен шухăшлатпăр. Пирĕн комбат та ун çинченех шухăшланă-мĕн. Паçăр хыр тăрне хăпарнă сержантпа иксĕмĕре хăйĕн блиндажне чĕнсе кĕртрĕ те кĕскен кăна каларĕ: «Епле пулсан та, çав летчик патне çитсе пăхас пулать, юлташсем. Чĕрĕ пулсан та, вилĕ пулсан та илсе тухас пулать ăна «нейтралкăран», тăшман кулли тума юрамасть!» Пăч-тĕттĕм пулса ларсан вара çав сержантпа иксĕмĕр тухса кайрăмăр. Пĕр виççĕр метра икĕ сехетрен кая мар упалентĕмĕр пуль çав! Нимĕç ракетăсем ярсах тăрать те малалла шунинчен ик-виç хут ытларах çĕр çумне пăталанă пек выртма тиврĕ. Çитрĕмĕр çапах та. Тупрăмăр çавна. Вилнĕ пекех выртать летчик, анчах сывлăшĕ пур. Чĕрĕ!.. Сержант парашют строписсене çĕçĕпе татса ячĕ, хулпуççи урлă чĕнсене илсе пăрахрĕ, эпĕ

летчика ун çурăмĕ çине хума пулăшрăм та каялла килме тухрăмăр... Пĕр хушă ракетăсем çуталмарĕç, лайăх пулчĕ, чылай шурăмăр, пĕр çĕр аллă метр та пулĕ. Унтан сасартăк пирĕн пуç тăрринче пĕр харăсах тăват-пилĕк ракета ялкăшса кайрĕ, уйра кăнтăрлахинчен те çутăрах пулса тăчĕ. Унччен те пулмарĕ — шултра калибрлă пулемет таклатма тапратрĕ. Асăрханă пире нимĕçсем! Сержант, летчикпа пĕрлех, умри пысăк воронкăна чăмрĕ, эпĕ, вĕсем хыççăн пыраканскер, ĕлкĕреймерĕм. Мана хул калакĕнчен тукмакпа çапнă пек туйăнчĕ, пĕтĕм çанçурăм пĕçерсе кайрĕ. Воронкăна мĕнле кĕрсе ӳкнине те астумастăп... Эп йынăшрăм пулмалла, сержант, эп аманнине ăнланса, тĕттĕм çĕртех ман сурана çыхкаларĕ, анчах çурăлакан пуля суранĕ хăрушла пысăк вĕт, юнне чарма та çук! Вăй пĕтсе килчĕ, çăвар ăшчикки типсе ларчĕ... Çапах та пирĕн малалла каймалла-çке! Кунта тул çуталиччен ларсан вуçех пĕтетпĕр. Шукаларăмăр аран-аран... Эпир час таврăнманшăн пăшăрханса. комбат пире хамăра шырама хирĕç пилĕк çын янă-мĕн. Вĕсем пире тĕл пулчĕç. Çиткелерĕмĕр вара...

— Летчикĕ мĕнле... сывалчĕ-ши?— ыйтрĕ Римма.

— Медсанбатран ăна самолетпа илсе кайрĕç. Сыватрĕç пуль. Эп вара медсанбатран арми госпитальне лекрĕм, унтан çакăнта çити илсе килчĕç.

Римма та çĕнĕ тус-юлташĕсене хăй çинчен, фронтри хĕр-тусĕсем çинчен нумай каласа пачĕ. Уйрăмах вĕсене Римма çĕрле нимĕçпе тĕл пулсан ăна персе пăрахни кăмăла кайрĕ...

Ик-виçĕ кун хушшинче калама çук лайăх туслашрĕç виçĕ хĕр — ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле пурăннă пек!

Çав кунсенче Римма виçĕ çыру çырчĕ. Пĕрне яла, мăнаппăшĕ патне — госпитальтен тухсан сана пырса куратăпах, пĕр виç кун та пулин пĕрле пулатпăр, терĕ, ват çынна ытлашши пăлхатас мар тесе, хăйĕн суранĕ пысăк мар, кĕçех тӳрленет тесе çырчĕ. Тепĕр çыруне фронта, Пĕчĕк Верăпа Ирина ячĕпе: «Телейлĕ пултăм, тусăмсем, тăван хулари госпитале лекрĕм...» Пурне те, медсанбатри тухтăрсенчен пуçласа старшина таранах, салам калама хушрĕ, телей сунчĕ. Виççĕмĕшне Сергей йăмăкĕ Анюта патне — вăл Кӳкеçри перекет кассинче бухгалтерта ĕçленине астунă Римма.

...Столовăя кайсан, хĕрсем кашнинчех Сарьялова тĕл пулчĕç, унпа сăмахларĕç, анчах лешĕ çаплах салху, кĕрхи

пĕлĕт пек тĕксĕм çӳрерĕ, питех калаçмарĕ. «Ырă кун, салам, сыв пулăр...»

— Лăпланмасть каччă, çаплах асапланать... Каплах пурăнсан, ухмаха та ерсе кайма пултарать пуль!— хĕрхенсе илчĕ ăна пур япалана та чĕре патне илекен Наташа.

— Атьăр, вĕсен палатине çӳреме пуçлатпăр!— сĕнчĕ Варя.— Хĕрсем умĕнче каччăсен кăмăлĕ çемçелекен...

— Тĕрĕс,— килĕшрĕ Римма,— атьăр паянах, ман ахаль те хампа пĕрле килнĕ лейтенанта курмалла-ха.

Каçхине вара вĕсем çӳç-пуçĕсене лайăхрах тирпейлерĕç те — Наташа тутине те кăштах пĕветрĕ — виççĕмĕш хутри аллă çиччĕмĕш пӳлĕме кайрĕç.

— Шел, чечексем çук,— кулса илчĕ Наташа,—ЗАГСа кайма хатĕрленĕ пекех пырса кĕреттĕмĕр!

Аллă çиччĕмĕш палата пысăк. Унта саккăрăн выртаççĕ, пурте ал-ураран аманнăскерсем. Тухтăр-сестрасемсĕр пуçне, унта хĕрарăмсем нихçан та пыман, çавăнпа та халь, пĕр тăрук виçĕ хĕр пырса кĕрсен, пурте ним тума аптраса ӳкнĕ пек пулчĕç. Пĕри вырăн çинчен сиксе тăрса ларчĕ, тепри утиялпа мăйĕ таранах витĕнчĕ, пӳлĕм варрине пукан лартса шахматла вылякансем, палатăна кĕтмен çĕртен пысăк начальниксем пырса кĕнĕ пек, выляма пăрахса, йăрст тăсăлса тăчĕç.

— Салам славянсене!— ал çĕклесе, кулкаласа каларĕ Наташа пӳлĕме кĕрсенех.— Каçарăр чĕнмесĕрех килсе кĕнĕшĕн...

— Килĕрех, килĕрех, хĕрсем! Иртĕр тархасшăн, ларăр! Сире питĕ хавас эпир!— шавласа кайрĕç салтаксем.

Утма пултараканнисем пурте хăйсен пуканĕсене сĕнчĕç.

Кованый чӳрече умĕнчи койка çинче выртать иккен. Вăл тăмарĕ, пуçне çĕклерĕ çеç. Римма, ун патне пырса, ал пачĕ.

— Сывлăх сунатăп, лейтенант...

— Тавтапуç... Сурская юлташ. Анчах сывлăх пирки мухтанмаллиех çук-ха çав.— Вăл Римма аллине чăмăртарĕ те тӳрех вĕçертмерĕ, хĕре куçĕнчен пăхрĕ.

— Мĕн пулчĕ тата?— пăшăрханарах ыйтрĕ Римма.

— Операци турĕç. Тем шуйттанĕшĕн суран тавра пӳр пухăннă, ура пĕрене пек пулса кайнăччĕ.

— Халь мĕнле?

— Аптрамасть пек-ха. Выртма хушрĕç.

— Иртсе каять, эппин.

— Шанатӑп-ха. Ахаль илсе килчӗҫ-им мана фронтран пин ҫурӑ километра? Сыватчӑр.

— Ҫапах та сывалассипе хамӑртан та килет-ҫке. Тухтӑрсем хушнисене йӑлт туса пырас пулать, тата... пуҫа усас пулмасть.— Римма Кованӑйран инҫе те мар, икӗ койка урлӑ ҫеҫ, куҫӗсене хупса выртакан Сарьялов ҫине кӑтартрӗ те хуллен ыйтрӗ:— Ку... мӗнле?

Ковaный аллипе сулчӗ.

— Ҫавӑн пекех. Никампа та хутшӑнмасть, калаҫмасть, ҫӗркаҫ утиял айӗнче макӑрса выртнӑ пек туйӑнчӗ.

— Ах, тур... Мӗн тумалла-ши унпа? Мӗнпе пулӑшмалла? Пӗтет вӗт капла, ҫын пулмасть унран.

— Хам та ҫавӑн ҫинчен шухӑшлатӑп та, ним те шухӑшласа тупаймастӑп-ха. Тепӗр чух хӑраса та илетӗп: тем усал шухӑш тытман-и вӑл? Кам пӗлет!

— Ку кунсенче ун патне никам та килмерӗ-и?

— Ҫук, пӗр чунта килсе курӑнман.

— Нумай вӑхӑт пулмасан та, вӑрҫӑччен кунта ӗҫленӗҫке вӑл? Филармонинче, радиора, терӗ. Тус-юлташӗсем пулмалла-ҫке унӑн! Тен... савнӑ-килӗштернӗ хӗрӗ те пур?

— Пӗлтермест пулмалла никама та. Хӑй пӗлтермест.

— Итлӗр-ха, лейтенант...— Римма тата шӑппӑнтарах калаҫа пуҫларӗ.— Атьӑр, вӑл ӗҫленӗ вырӑнсене хамӑр ҫырса яратпӑр, э? Ҫапла та ҫапла, сирӗн патра ӗҫленӗ музыкант госпитальте выртать, вӑл йывӑр аманнӑ, килсе курӑр, тейӗпӗр. Епле шутлатӑр? Килеҫҫех вара вӗсем!

— Питӗ лайӑх шухӑш ку, сестра. Килӗшетӗп. Ҫырса ярӑр!

— Ыранах ҫыратӑп...

Пӳлӗм варрине Наташӑпа Вера тавра пухӑнса тӑнӑ салтаксем ахӑлтатса кулма тытӑнчӗҫ. Чарусӑр ҫивӗч Наташа вӗсене фронтра ҫӳрекен анекдотсене каласа кӑтартать иккен.

Госпитальти йӗркесем тӑрӑх ҫывӑрмалли вӑхӑт ҫитсен тин тухса кайрӗҫ хӗрсем аллӑ ҫиччӗмӗш палатӑран.

— Тата килӗр, час-часрах ҫӳрӗр пирӗн пата, хӗрсем! Сире курсан сурансем те ыратма пӑрахаҫҫӗ!— шавласа ӑсатрӗҫ вӗсене салтаксем.

## 16

Ҫав каҫах, ҫур ҫӗр иртсен пӗр икӗ сехетре, пӗтӗм госпиталь лӑпкӑн ҫывӑрнӑ вӑхӑтра, Андрей Ковaный лейтенант, яланхи пекех ҫӑмӑл ыйхӑпа ҫывӑраканскер — развед-

чик йăли!— темле тимĕр чăнкăртатнине илтсе вăранса кайрĕ.

Палатăра тĕттĕм. Шăп. Аманнисем йывăррăн сывлани, тахăшĕ тĕлĕкре хуллен йынăшни çеç илтĕнет. Тимĕр татах чăнкăртатрĕ. Таçта, малти стена патĕнче пек. Мĕн ку? Ансăртран килсе кĕнĕ шăши пĕр-пĕр тимĕр татăкĕ тупса кустарать-ши?

Кованый, пуçне çĕклесе, чÿречесем еннелле пăхрĕ те сасартăк унăн сывлăшĕ пÿлĕнсе ларчĕ: варринчи чÿрече çинчи маскировка каррине сирнĕ, чÿрече ани çинче этем мĕлки тăрать. Вăл шалти рамисене уçнă, халĕ тата тул енчисене уçасшăн тĕрмешет. Анчах чÿречи шăнса ларнă пулмалла та — уçăлмасть...

— Эй! Мĕн тăватăн эс унта?!— хыттăн сас пачĕ Кованый.

Мĕлке чĕнмерĕ, чÿрече рамине, ал тупанĕпе çапа-çапа, часрах уçма хăтланчĕ. Вара Кованый пуçне хăрушă шухăш çиçĕм пек пырса çапрĕ:

«Ара, Сарьялов вĕт ку, чÿречерен сикесшĕн!..»

— Сержант, мĕн хăтланатăн эсĕ?! Халех аннă пултăр!— кăшкăрчĕ вăл.

Çав вăхăтра мĕлке чÿречен пĕр енне уçса ячĕ, палатăна тултан сивĕ сывлăш палкаса кĕчĕ. Тепĕр енне уçсанах сикме пулать... Тăнран тухса каяс патне çитнĕ Кованый койка çинчен хăйне çил вĕçтерсе антарнă пек вăшт кăна тăчĕ те, хăрах урипе сиксе, чÿрече патнелле ыткăнчĕ.

— Сволочь, мĕн шут тытрăн эсĕ?!

Сарьялов чÿречен тепĕр енне уçса янă самантра Кованый, ун патне çитме ĕлкĕрсе, ăна кĕпи аркинчен çатăрах ярса тытрĕ те, пĕтĕм вăйпа каялла туртса, çĕре ÿкерчĕ.

— Мĕн пулнă? Кам кĕмсĕртетет унта?— сас пачĕ аманнисенчен пĕри, вăранса кайса.

— Çутă çутăр-ха часрах! «ЧП» кунта!—кăшкăрчĕ ăна хирĕç лейтенант.— Халех çутăр!..

— Мĕнле «ЧП» пултăр? Калаçатăн кирлĕ мара...

— Çут, теççĕ сана!

Кĕçех палата ăшчикки çуталса кайрĕ. Тата темиçе çын вăранчĕç, хăшĕсем тăрсах ларчĕç.

— Мĕн пулнă, ма шавлатăр çĕр варринче?

— Тупăнать шавламалли,— терĕ çав тери пăлханса кайнă лейтенант, урайĕнче ÿпне выртакан Сарьялов çине кăтартса.— Пĕтĕмпех ак çак ухмах айăплă!

— Мĕн тунă вăл?

— Ав, пăхăр чӳрече çине! Мĕн шутпа уçнă тетĕр ăна? Сикесшĕн пулнă, идиот!

— Чăн та идиот...

Калама çук пăлханнипе чĕтреме пуçланă Кованый Сарьялова сывă урипе хытах тĕкрĕ:

— Тăр давай, пăлахая перхе ан вырт!

Сарьялов ерипен ура çине тăчĕ. Чӳрече анинчен ӳкнĕ чух вăл янахне шăйăрса янă иккен, сурамĕнчен кăштах юн та сăрхăнать.

— Кала пĕтĕм юлташсем умĕнче: мĕн хăтланма тытăнтăн эсĕ?— хаяррăн ыйтрĕ унран Кованый.— Кама хур тăвас терĕн?

Сарьялов чĕнмерĕ, çĕрелле пăхса тăчĕ. Вара хăйне тытма пултарассинчен иртсе кайнă лейтенант ăна пĕр аллипе кăкринчен ярса илчĕ те тепĕр аллипе икĕ хут çупса ячĕ.

— Негодяй! Подлец! Шăк тулчĕ-и пуçна? Сана хăвна, çакăн пек ухмаха, пĕртте шел мар, анчах саншăн миçе çынна ним айăпсăр айăплатчĕç, пĕлетĕн-и? Вĕрентĕп эп сана, тăнсăр така!

Вăл Сарьялова хăйĕн койки çине тĕксе ячĕ.

— Вырт хутланса! Шăпăрт пул!—Унтан тарăхнипе хашкакан Кованый ыттисем еннелле çаврăнчĕ те пурне те илтĕнмелле:— Акă мĕн юлташсем, итлĕр лайăххрах,— терĕ.— Пирĕн палатăра нимĕнле «ЧП» та пулман. Çак киревсĕр ĕç çинчен никам та никама та пĕр сăмах та шарламасть. Унсăрăн... пире хамăрах намăс пулать. Фронтовиксен ятне яратпăр. Ăнлантăр-и?

— Вăл паллă ĕнтĕ...

— Чăн та намăс!

— Мĕн тума палкас?— терĕç иккĕн-виççĕн.

— Начальнике кун çинчен хам пĕлтеретĕп. Халь çывăрăр.

Палатăра çутă сӳнтерчĕç, каллех шăп пулчĕ. Анчах нумайăшĕ вăрахчен çывăрмарĕç пулмалла. Кованый хăй вара ирччен те куç хупаймарĕ. Шав кĕçĕр пулса иртнĕ тискер ĕç çинчен шухăшларĕ. Сарьялов чăнах та чӳречерен сикнĕ пулсан, вăл ăна кĕпинчен ярса тытма ĕлкĕреймен пулсан —мĕн пулса тухатчĕ-ха? Ун çинчен шухăшлама та хăрушă! Мĕнле лăплантарас ку йĕкĕте, мĕнле майпа йĕркеллĕ шухăшлакан, пурнăç çине тĕрĕс пăхакан çын тăвас? Кĕçĕр çăлса хăвартăмăр-ха ĕнтĕ, лайăх пулчĕ ку, анчах вăл

хăйӗн усал шухăшне малашне те пăрахмарӗ-тӗк? Никам çук чух тăвӗ те хурӗ хăйӗн ирсӗр ӗçне!..

Ӳкӗнсе те илчӗ лейтенант: пустуй çапса ятăм ăна, тивмелле марччӗ... Темшӗн чараймарăм-çке хама хам! Пуç миминчи «тытса чаракан центрсем» ӗçлеме пăрахрӗç пулмалла çав самантра... Çынна çапни — унăн чысне ӳкерни. Юрамасть. Ӗçсем йӗркене кӗрсен, каçару ыйтас пулать. Нервă, нервă!

Вăл пирус тивертсе ячӗ.

«Эх, Сарьялов, Сарьялов! Тăшмансăр пуçне никам та айăплă мар-çке сан хурлăхушăн!..»

Ирхине пит çунă хыççăнах, хăйне тухтăрсем утса çӳреме хушман пулсан та, вăл никама ним каламасăрах, клюшкăсем тытрӗ те тăваттăмӗш хута хăпарса, хӗрсем пурăнакан палата алăкне шаккарӗ.

— Ой, лейтенант юлташ! Мӗн капла ир-ирех эсир?.. Тем пулман пуль те?— тӗлӗнсе, хăрарах ыйтрӗ Римма, вăл палатăна кӗнӗ-кӗмен.

Тӳррӗн ответ парас вырăнне, Кованый хӗрсен пӳлӗмне пăхса çаврăнчӗ те украинла шӳт туса илчӗ:

— Дивчатки, ридни мои! Ох, як любо мэнэ на вас подывиться!

Ăна часрах пукан лартса пачӗç. Вăл çамки çине тапса тухнă тарне шăлса илчӗ те ассăн сывласа ячӗ.

— Манăн санпа калаçмалли пур, сестра,— терӗ унтан Риммăна.

— Пирӗн тухмалла-и е пирӗн умрах калаçатăр?— ыйтрӗ Наташа.— Сăмах-юмах юрату çинчен мар пуль-çке?

Кованый аллипе сулчӗ.

— Юрату çинчен каларăн-ха! Хурлăх! Çынна çăлас пулать.

— Мӗн... мӗн пулнă? Лешӗнпе-и?— хыпăнсах ӳкрӗ Римма.

Кованый кӗçӗр хăйсен палатинче мӗн пулни çинчен каласа пачӗ. Хӗрсем, тӗлӗннипе, хытнă пек пулса тăчӗç. Пӗр хушă нихăшӗ те чӗнмерӗ.

Пуринчен малтан Наташа сас пачӗ:

— Ай ухма-ах...

— Ухмах та мар пуль, Наташа,— терӗ ăна хирӗç Варя.—Хăйӗн суранӗ çинчен, тек нихçан та музыкант пулаяс çукки çинчен пӗрмай шухăшласа чире ерме пуçланă вăл. Психастения, теççӗ вăл чире.

— Мӗн тăвас пулать-ха ӗнтӗ?

— Эп çапла шутлатăп, хĕрсем,— терĕ Кованый.—Палатăрисене кун çинчен çăвар уçма та чартăм. Госпиталь начальникне хамăр каласа паратпăр, халех Сарьялов нервисене тӳрлетме тытăнччăр. Ку пĕрре. Унтан... ĕнер эпир Сарьялов вăрçăччен ĕçленĕ учрежденисене çырса яраси çинчен калаçрăмăр-çке?

— Паянах, халех çыратăп,—пуçĕпе сулса илчĕ Римма.

— Çырусене почтăпа ямăпăр. Кам пĕлет, тахçан çитеççĕ-ха вĕсем, такам аллине лекеççĕ. Çухалма та пултараççĕ. Çырусене çав учрежденисен пуçлăхĕсене алăранах тыттарас пулать те сăмахпа та калас пулать: хăвăртрах килччĕр! Паян-ыранах, тăхтамасăр!

— Кама ярас-ха унта?

— Тупас пулать ун пек çын. Тен, санитаркăсенчен, сандружинницăсенчен кама та пулин...

— Чим-ха, чим, Римма,— тем аса илсе, аллисене хирехирĕç çапса илчĕ Наташа.— Санăн çывăх паллана çын пур вĕт-ха кунта, хамăра Катя ачи валли çиттисем тума простыньсем паракан кастелянша, Рая! Çавна хушас!

— Тĕрĕс, вăл кайма пултарать!— килĕшрĕ Варя та.

Филармонипе Радиокомитет пуçлăхĕсене памалли çырусене вĕсем пурĕ пĕрле ларса çырчĕç («Чĕрене пырса тивмелле çырас пулать, тӳрех чупса килччĕр», тесе вĕрентсе тăчĕ Наташа). Ирхи апат хыççăн вара Римма, кастеляншăна тупса, çак çырусене мĕншĕн хăвăртрах çитерсе памалли çинчен ăнлантарчĕ те, лешĕ пĕр сăмахсăрах килĕшрĕ:

— Юрать! Кăшт ерçенех каятăп!

Госпиталь начальникне хăйсен палатинче кĕçĕр мĕн пулса иртни çинчен Кованый ирхи апат хыççăнах каласа кăтартрĕ. Хĕрарăм-майор питĕ çирĕп кăмăллă, хăрама-тума пĕлмен çын пулнă пулин те, ку хыпара илтсен, кăвакарсах кайрĕ. Пĕр хушă тăнлавĕсене ик аллипе пусса, тутине çыртса, хăй умĕнчи чернильница çине ним хускалмасăр пăхса ларчĕ.

— Спаççипă сана, лейтенант юлташ,— терĕ унтан Кованый çине алчăранă куçĕсемпе пăхса.— Эс сисмен пулсан — мĕн куратtăмăр-ха эпир? Турăçăм, ун çинчен шухăшлама та хăрушă!..

Кованый çавăнтах вĕсем, Риммăпа иккĕшĕ, филармонипе радио пуçлăхĕсем патне çыру яма шут туни çинчен пĕлтерчĕ.

— Тен, пĕрле ĕçленĕ юлташĕсем килсен, кăмăлĕ улшăнĕ...

— Питĕ тĕрĕс тăватăр,— ырларĕ начальник,— ку унăн психикине пусăрăнтарма пултарать...

Вал госпиталь комиссарне, çӳллĕ, типшĕм, хăрах аллăллă капитана чĕнтерчĕ. Çĕрле мĕн пулни çинчен Кованăйăн тепĕр хут каласа памалла пулчĕ. Виççĕшĕ вăрахчен калаçса ларнă хыççăн çапла шут турĕç: Сарьялова кун çинчен ним те каламалла мар, аса илтерни ăна пушшех пăлхатса яма пултарать. Анчах, хăйне систермесĕрех, унăн нервисене сиплеме тытăнмалла. Филармонипе радиоран килсен, госпиталь начальникĕн вĕсемпе калаçмалла: кашни кун çӳреччĕр ун патне.

— Тата акă мĕн, комиссар,— терĕ юлашкинчен начальник, сĕтелне кăранташпа шаккаса,— кичем пурăнма пуçларĕç пирĕн салтаксем. Кино кăтартманни ик эрне те çитрĕ пулмалла, артистсем вуçех килме пăрахрĕç. Мĕнле япала ку? Çынсем доминопа шашкă-шахмăтсăр пуçне нимĕн те курмаççĕ. Мĕн тăваççĕ пирĕн шефсем?

— Кино аппарачĕ çĕмĕрĕлнĕ, майор юлташ...— тӳрре тухма пикенчĕ комиссар.

— Юсаттарас пулать! Киношниксене хытăрах тапăнăр, горком урлă хĕсĕр вĕсене! Театра хăвăр кайса калаçăр. Ахальрен броньпе хăварнă-и артистсене? Фронтовиксем валли кунта лайăхрах ĕçлеччĕр хуть!

— Юрать, майор юлташ...

Кованый палатăна таврăннă чух Сарьялов койка çинче месерле, куçне хупса, çывăрнă пек пулса выртатчĕ. Лейтенант та, çӳресе ывăннăскер, тӳрех выртрĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ, палатăна пурте «тетя Сима» тесе чĕнекен ватăрах санитарка пырса кĕчĕ.

— Сарьялов, сана тухтăрсем вуниккĕмĕш кабинета пыма хушрĕç...

— Мĕн тума?— куçĕсене уçса ыйтрĕ Сарьялов.

— Эп пĕлеппи!— ал сулчĕ санитарка.

— Пымастăп.

— Хушаççĕ пулсан, епле пымастăн пулать?

— Нимĕн тумалли те çук ман унта.

— Атя, теççĕ сана! Атту эп халех Зоя Григорьевнăна кайса калатăп!— хăпмарĕ санитарка.

— Вĕçтер, вĕçтер!

Çакна илтсе выртнă Кованый тӳсеймерĕ, сиксе тăрса ларчĕ.

— Ку мĕне пĕлтерет тата, сержант?! Чĕнеççĕ пулсан— кирлĕ, эппин, каяс пулать! Эсĕ мĕн, никама та пăхăнас

мар, тетён-и? Кам вара эсӗ, ун пекскер? Халех кайна пултӑр!

Сарьялов ӑна хирӗҫ чӗнмерӗ, тухса утрӗ.

«Эмеллеме пуҫлассӗ, эппин...— шухӑшларӗ Кованый.— Усси пулсан, юратчӗ хуть...»

Тепӗр ирхине — шӑпах вырсарникун пулчӗ ку — пӗр вунӑ сехетсем иртсен Сарьяловпа ҫав «тетя Сима» хушшинче кун пек те мар вӑйлӑ тытӑҫу пулса иртрӗ.

Санитарка, палатӑна яланхи пекех шӑппӑн кӗрсе, Сарьялов койки умне пырса тӑчӗ те хуллен кӑна:

— Сана чӗнеҫҫӗ, ывӑлӑм,— терӗ.

— Каллех тухтӑрсем-и?— ыйтрӗ Сарьялов.

— Ҫук, паян тухтӑрсем мар.

— Кам эппин, тата? Начальник-и?— Хӑй чӳречерен сикме тӑни ҫинчен госпиталь начальникне пӗлтернине туйнӑ ӗнтӗ вӑл, халь ҫавӑншӑн хӑйне «тӑн кӗртме» чӗнессе кӗтсе пурӑннӑ курӑнать.

— Начальник те мар,— пуҫне пӑркаласа илчӗ «тетя Сима»,— ик арҫынпа пӗр хӗрарӑм... Пӗлместӗп, тен хӗр-и... Пӗр арҫынӗ тем пысӑкӑш куҫлӑхпа, тепри хуп-хура сухаллӑ. Пире аллӑ ҫиччӗмӗш палатӑри Тимафи Сарьялов кирлӗ, терӗҫ...

— Ан калаҫ кирлӗ мара! Пулма пултараймасть кун пек япала!— вӑштах тӑрса ларса, аллине аяккалла сулса ячӗ Сарьялов.— Нимӗнле арҫынсене те, нимӗнле хӗрарӑма та палламастӑп. Тата эп кунта выртнине никам та пӗлмест, пӗр чун та!

— Мӗншӗн килнӗ, эппин, вӗсем сан патна?

— Пӗлместӗп! Ман пата мар пуль. Темскер пӑтраштаратӑн эсӗ, хушамата тӗрӗс илтсе юлман!

— Ним те пӑтраштармастӑп, ман хӑлхасем чиперех илтеҫҫӗ-ха, турра шӗкӗр уншӑн. Питӗ уҫӑмлӑ каларӗҫ — Тимафи Сарьялов кирлӗ, терӗҫ. Атя часрах, аялта, сосвитани пӳлӗмӗнче кӗтеҫҫӗ вӗсем.

— Мӗнле заседани пӳлӗмӗнче?

— Саҫҫетани мар, сосвитани! Тӑнна ҫухатман пулӗҫке эсӗ?

— Свидани пӳлӗмӗ пур унта,— пулӑшрӗ тахӑшӗ.— Курма килекенсемпе тӗл пулмалли вырӑн...

— Эп те ҫавна калатӑп мар-и!— хӗрелсех кайрӗ «тетя Сима».— Ну, пыратӑн-и эсӗ, ҫук-и?

— Пымастӑп.

— Мӗншӗн пымастӑн?

— Мĕншĕн тесен ман пата килмен сан çыннусем. Йăнăшатăн эсĕ.

— Йăнăшмастăп! Сан пата килнĕ!— çилленме пуçларĕ санитарка.

— Тĕрĕс мар.

— Тĕрĕс! Атя часрах! Аван мар лайăх çынсене кĕттерме. Тата мана хама та тем калĕç, улталарĕ ку ватсупнă, тейĕç!

— Эппин, кай та кала вĕсене: вăл хушаматлă çын çук, пулман та ун пекки, те. Тухчăр та кайччăр. Мана никам та кирлĕ мар!— Сарьялов аллисене кăкри çине хĕреслесе хурса куçĕсене хупрĕ. Анчах хăй çав тери хытă пăлханса кайнипа аллă пулчĕ — йывăррăн, хашкаса сывларĕ, сăмса çунаттисем сиккелерĕç.

— Ах, тур-тур...— терĕ санитарка кăшт тăрсан.— Пуçласа куратăп кун пек çын! Теприсем хăйсем патне кам та пулин килсен аялти хута вĕçсе анма хатĕр, эсĕ хăван патна ыр кăмăлпа килнĕ çынсене хуса яма хушатăн!

— Кирлĕ мар мана никам та, ăнлантăн-и? Тухса кай кунтан, ан янраса тăр!

— Юрĕ ара, мана мĕн...— алăк патнелле çаврăнса кăштăртатрĕ «тетя Сима». Анчах темиçе утăм тусанах каялла çаврăнчĕ:— Çапах та çынсене улталама пултараймастăп, тĕрĕссине калатăп,— терĕ.

— Мĕн калатăн? Мĕн?— кăшкăрчĕ Сарьялов.

— Эсĕ вĕсем патне юри анманнине. Хăвнах намăс пулать. Пултăр ара, çавă чух сана!

— Маншăн пурĕпĕр! Хуть те мĕн лăпăртат!

Санитарка тухрĕ. Çак тавлашăва пĕтĕмпех илтнĕ Ковалый ниçта кайса кĕреймесĕр выртрĕ. Тем тĕрлĕ шухăш та çаврăнса илчĕ ун пуçĕнче çав хушăра. Паллах ĕнтĕ, аялта кĕтсе ларакан çынсем — вĕсем янă çыру тăрăх килнĕскерсем. Те филармонинчен-ха, те радиоран. Тен, иккĕшĕнчен те пĕр харăсах килнĕ? Сарьялова вĕсемпе тĕл пултармаллах, унсăрăн вĕсем шухăшласа хуни, тăрăшни пĕтĕмпех сая каять. Пĕрле ĕçленĕ çынсемпе курнăçни Сарьяловшăн усăллă пулать, тесе шутланă-çке вĕсем, Риммăпа иккĕшĕ. Госпиталь начальникĕ те ырларĕ ку шухăша. Анчах Сарьялов хăй яхăнне те ямасть. Тем шут унăн. Усал та иккен ку музыкант! Е... хăйĕн нимпе тӳрлетме çук суранĕ пирки çав териех пăсăлса кайнă-ши унăн характерĕ?

— Эс ан ухмахлан-ха, тусăм, плахая персе ан вырт,—

терě Кованый, ун çине куç харшисем айěн пăхса.— Ача ваййи вылятăн! Тен, унта санăн чи çывăх туссем килнě!

— Ниměнле тус та çук манăн!— татса хучě Сарьялов.

— Пурах ěнтě кам та пулин, эс кунта ěçленě-çке?

— Пулнă пулсан та — пěтнě. Эп никама та кирлě мар. Мана хама та. Пěр тус та, пěр шуйттан та!— пуçне çěклесе, куçěсене ялкăштарса кăшкăрчě Сарьялов.

Кованый ăна хирěç тем калама тăчě, анчах ěлкěреймерě: сарлака алăк яриех уçăлчě те палатăна госпиталь начальникě Зоя Григорьевна Фимова, ун хыççăн хулпуççисем çине шурă халатсем уртса янă темле виçě арçынпа икě çамрăк хěрарăм кěрсе тăчěç.

— Сывлăх сунатăп, юлташсем!— терě начальник, палатăна пăхса çаврăнса.— Měнле пурăнкалатăр?

— Лайăх пурăнатпăр, майор юлташ! Тата лайăхраххине кěтетпěр!— терěç темиçен пěр харăс.

— Аван, апла пулсан...— Вăл пěр-икě утăм малалла ярса пусрě.— Ăçта-ха пирěн сержант Сарьялов?

— Ав выртать...— тěллесе кăтартрěç ăна.

— Çывăрать-им?

Сарьялов, палатăна çынсем кěнине курсан, çывăрса каям пек турě. Госпиталь начальникě хăй патнелле пынине туйсан вара, куçěсене уçса, тăрса ларчě те малтанах ним ăнланман пек пăхрě.

— Сарьялов юлташ, эп сирěн пата хаклă хăнасем илсе килтěм,— терě начальник, алăк патěнчех чарăнса тăнă çынсем çине кăтартса, — йышăнăр...—Унтан лешсене каларě:— Иртěр, иртěр кунталла, юлташсем, вăтанса ан тăрăр!

Сарьялов сăнě-пичě пěрре кăвакарчě, тепре хěрелчě. Унăн чěлхи çавар маччи çумне çыпăçса ларнă пек пулчě...

Пуринчен малтан ун патне лутрарах, тăп-тăп кěлеткеллě, çаврака питлě, пысăк хура куçлă, кролик тирěнчен çěлетнě шап-шур çěлěклě хěр пырса ал пачě:

— Сывлăх сунатăп, Тима... Тимофей Ананьевич!— терě те вăл, хěп-хěрлě пулса кайрě.

— Салам, Липа...— терě Сарьялов, тутине аран хускатса.

Ун хыççăнах тепěр хěрě — шуранка питлě, типшěмрехскер — ал тытрě.

— Ырă кун, Сарьялов юлташ...

Вěсем хыççăн арçынсем саламларěç. Пěри, хура су-

халне янах айне çеç хăварнăскер, Сарьялова ыталаса илсе питĕнчен чуптурĕ.

— Епле-ха капла, Тимоша? Хăçантанпа кунта эсĕ?

— Эрне ытла ĕнтĕ...— ун-кун пăхкаласа хуллен хуравларĕ Сарьялов. Ун çине куç илмесĕр пăхса ларакан Кованăя вăл читлĕхе лекнĕ мулкач пек туйăнса кайрĕ. Тухса тарĕччĕ те — майĕ çук...

— Ма килсенех пĕлтермерĕн-ха?

— Май килмерĕ, Григорий Григорьевич...

— Телефонпа шăнкăравламаллаччĕ çеç!

— Эп кунта телефон пурри-çуккине те пĕлместĕп.

— Ну, юлташсем, тĕл пулма тӳр килнĕ чух тăраниччен калаçăр ĕнтĕ, сире кансĕрлекен пулмĕ. Мана каçарма ыйтатăп — ĕç нумай,— терĕ начальник.

— Тавтапуç сире, тухтăр! Тем пысăкăш спаççипă!— пуç тайрĕ ăна хура сухалли.

«Маттур та иккен пирĕн начальник,— шухăшларĕ Кованый.— Сарьялов хăй тухманнине кура, кусене юри кунта илсе килнĕ...»

Сарьялов чăнах та пач кĕтмен çĕртен тыткăна лекнĕ пекех ларчĕ. Паллах ĕнтĕ, ку çынсем хăйĕнпе пĕрле ĕçленĕскерсем, вĕсем тӳрех ыйтса пĕлме тытăнчĕç: Шупашкартан тухса кайнăранпа ăçта-ăçта пулнă, мĕн курнă, мĕн тӳснĕ, епле аманнă. Пуринчен ытла Сарьялов çумнех ларнă çавракана питлĕ хурарах хĕр çине-çине ыйтрĕ, хăй ăна пĕрмай куçĕнчен пăхрĕ.

Пĕр-пĕрне палланă çынсем калаçнине итлесе ларма аван мар пирки Кованый клюшкисене тытрĕ те коридора тухрĕ. Тухсанах, Риммăна тĕл пулчĕ — вăл шăпах вĕсем патне пырать-мĕн.

— Никам та килмерĕ-и ун патне?— тӳрех ыйтрĕ хĕр.

— Колхозĕпех килчĕç,— терĕ Кованый йăл кулса.— Çитнĕ курăнать пирĕн çырусем. Тăпăлтараççĕ кăна йĕкĕте!

— Мĕнле тăпăлтараççĕ?— ăнланмарĕ Римма.

— Ну... йăлт ыйтса пĕлеççĕ, эппин!

— Вăл мĕнле?

— Каласа парать.

— Суранĕ пирки калаçрĕ-и?

— Ăна илтеймерĕм.

— Чи йывăрри çавă вĕт! Лешсен Сарьялова: «Хуйхăрмалли çук, кун пек те лайăхах пурăнма май пур», тесе ĕнентерес пулать. Пире çав кирлĕ!

17

Палатăна Кованый тепĕр ик сехетрен тин таврăнчĕ. унччен Ленин пӳлĕменче хаçат-журналсем пăхкаларĕ, пĕрикĕ парти шахматла выляса илчĕ, çав хушăрах радио итлерĕ. Совинформбюро Ленинград, Волхов, Иккĕмĕш Прибалтийски фронтсем, Балти тинĕс флочĕн авиацийĕпе аякка вĕçекен авиаци тата партизансем пулăшнипе Ленинград облаçне нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмпех тасатса çитерни çинчен пĕлтерчĕ. Ытти фронтсенче нимех те пулман иккен.

«Кăнтăрта хăçан çĕмĕрме тытăнаççĕ-ши? Ман Херсона хăçан çитеççĕ-ши?»— шухăшларĕ те Кованый, стена çинче çакăнса тăракан карттă умне пырса, вăрахчен пăхса тăчĕ. Унтан тин палатăна утрĕ.

Сарьялов хăнисем тухса кайма хатĕрленнĕ-мĕн, пурте ура çине тăнă, хĕрĕсем хăйсен сумкисенчен темле кĕленче банкăсем кăлараççĕ, ыттисем вĕсен ĕçĕ пĕтессе кĕтеççĕ.

— Тутанса кур, Тима, анне ялтан килсе панă типĕтнĕ панулмирен компот пĕçертĕм сан валли,—терĕ хурарах хĕрĕ.— Каçар, урăх нимĕн илсе килме те пĕлмерĕм...

— Ку та кирлĕ мар, ахалех чăрманнă, илсе юлмастăп, чик каялла!— килĕшесшĕн пулмарĕ Сарьялов.

— Çук ĕнтĕ, сан ятпа хатĕрленĕ япалана йăтса каймастăп!

— Ил, ил, Тимоша!— терĕ хура сухаллă арçынĕ.—Çисе кур та вывод ту: арăм пулма пултарать-и Липа, çук-и? Тен, вăл çăвара чикмелле мар çимĕçсем пĕçерет? Кама кирлĕ ун пек арăм?

Пурте лăх-лăх кулса илчĕç.

— Асту, Липа, ку компотпа эсĕ арăм пулас карьеруна пĕтеретĕн...

— Эпир сире валли хамăр радио коллективĕпе пыл туянтăмăр,— терĕ тепĕр хĕрĕ,— питĕ тутлă чăваш пылĕ... Çисе пăхăр, усăллă япала! Ак тата тепĕр пачка пирус...
—Хĕр тумбочка çине «Нарсли» текен пысăк пачка кăларса хучĕ.

— Ку вара тутлă та мар, çитменнине сиенлĕ тата,— шĕвĕр пӳрнине çĕклерĕ каллех хура сухалли.— Ученăйсем калană тăрăх, пĕр тумлам никотин ломовой лашана вĕлерме пултарать!

— Эп туртмастăп-çке, пачах кирлĕ мар вăл мана,— пуçне пăркаласа илчĕ Сарьялов.

— Хăвăр туртмастăр пулсан — юлташусене пултăр!

— Тавтапуç, эппин...

Хăнасем шакăлтатса, палатăри пур çынсене те хăвăртрах сывалма ыр сунса тухса кайрĕç. Сарьялов вĕсене аялти хута çитиех ăсатрĕ. Тепĕр вунă минутран таврăнчĕ те никама та сăмах хушмарĕ, каллех койки çине тăсăлса выртса куçĕсене хупрĕ. Шухăшларĕ пулмалла ĕнтĕ вăл...

— Камсем пулчĕç ку çынсем?— ыйтрĕ Кованый кăшт тăхтасан.

— Музыкантсем,— терĕ Сарьялов куçне уçмасăрах.— Телейлĕ çынсем! Ман пек мар...

— Сухалли — аслăраххи пулас?

— Филармони дирижерĕ. Тава тивĕçлĕ деятель.

— Леш хура хĕрĕ тата?

— Солистка. Сасси пит лайăх унăн. Хусанти консерваторинчен пĕр вăхăтра вĕренсе тухрăмăр.

— Качча кайман-и?

— Çук-ха. Хĕр...

— Ак хайхи... сан валли арăм тупăнчĕ те!— терĕ Кованый.

Ун пек каласан, Сарьялов вăшт! тăрса ларчĕ.

— Лейтенант! Эп сана ку таранччен ăслă çын вырăнне хунăччĕ! Йăнăшнă иккен... Питĕ ухмахла калаçатăн!

— Мĕншĕн ухмахла? Ман шутпа эсир пит лайăх мăшăр пулатăр.

— Ман пек чăлаха кам качча пытăр? Тата... эп ĕмĕрне те авланассăм çук!

— Вăт, ку вара чăнах та ухмахла сăмах! Нимĕнле чăлах та мар эсĕ, чип-чипер, çĕр процентлă маттур арçын! Пурнăçра тем те тума пултаратăн-ха. Халăха та сахал мар усă кӳрĕн, чапа та тухăн, тава тивĕçлин ятне те илĕн. Пăрах ĕнтĕ ăшчиккуна çунтарма, çитĕ!

Сарьялов чĕнмерĕ.

Тепĕр кунне, каçалапа, ăна каллех «тетя Сима» пырса чĕнчĕ:

— Сана аялта пĕр хитре пике кĕтсе ларать...

Хальхинче Сарьялов пĕр сăмахсăрах тухса утрĕ те каçхи апат умĕн тин таврăнчĕ. Ик кунтан татах пычĕ ун патне çав хĕр. Унтан тата, тата. Хăш чухне унпа пĕрле филармонири урăх музыкантсем те пыра-пыра кайрĕç. Сарьялов кăмăлĕ палăрмаллах улшăнса пычĕ. Вăл ĕнтĕ малтанхи пек кунĕ-кунĕпе шарламасăр та çӳремерĕ, хăш чух кулкаласа илни те пулчĕ унăн.

— Сая каймарĕ пулас эпир тăрăшни!— чунтан саван-

чĕç куншăн Риммăпа Кованый.— Ĕçсем малашне те кун пекех пулса пырсан... «эпир çĕнтертĕмĕр!» темелли çеç юлать!

Госпиталь начальникĕ Зоя Григорьевна та вĕсемпе ик-виçĕ хут калаçса илчĕ кун çинчен. Вăл та питĕ кăмăллă иккен Сарьялов çакăн пек улшăнса пынăшăн.

— Иртсе каять-ха унăн хуйхи-суйхи, йĕркене кĕрет вăл! Чипер çын тусах кăларса яратпăр ăна...

Çав кунсенче госпиталь начальникĕ Риммăпа унăн хĕр-тусĕсене тепĕр ырă хыпар пĕлтерчĕ: вĕсен юлташĕ Катя Хорькова ывăл çуратса панă! Хăй кĕтнĕ пекех пулнă — ывăл, Володя, гвардеец! Катьăшăн калама çук хĕпĕртесе, хĕрсем ун патне чи ăшă сăмахсемпе саламлă çыру çырчĕç.

«Малашнехишĕн ним чухлĕ те ан пăшăрхан, тусăм, пĕтĕмпех лайăх пулать,— терĕç вĕсем хăйсен çырăвĕнче,— Зоя Григорьевнăпа калаçрăмăр та, вăл сана халлĕхе госпитальтех усратăп, уру тӳрленсен кунтах ĕçлеме хăваратăп, ачине яслине вырнаçтаратăп, терĕ... Ылтăн хĕрарăм вăл Зоя Григорьевна! Ну, Володьăпа иксĕр те сывă та пат-тăр пулăр, иксĕре те пин хут чуптăватпăр...»

Хĕрсен çыруне леçме кастелянша Рая Чернова кайрĕ те Катьăран ответ илсе килчĕ:

«Ырăран та ырă, хаклăран та хаклă тусăмсем! Сирĕн çыру маншăн асамлă имçам пекех пулчĕ, пĕтĕм чуна çĕк-лентерсе, çунатлантарса ячĕ! Сирĕн пек лайăх çынсем пур чухне пурнăçра нимĕн те хăрушă мар çав! Володя — каснă-лартнă ашшĕ, çамки те, сăмси те, куçĕсем те. Телейлĕ çын тăвасчĕ ăна, урăх мана нимĕн те кирлĕ мар...»

Вăрахчен калаçса выртрĕç хĕрсем Катьăпа унăн ывăлĕ çинчен.

— Хам пулсан, вăл ачаран эпĕ çар çынни тумалла!— терĕ Наташа.— Пурăна киле генерала çиттĕр! Фронт ачи-çке вăл, ашшĕ те фронтра вилнĕ, амăшĕ та çавăнтах аманса юлнă. Кăштах ӳссен суворовски училищĕне памалла çеç!

— Кам пĕлет, тен, чăнах та çавăн пек пулĕ!—килĕш-рĕç хĕрсем.

Вĕсенчен кашниех хăй ăшĕнче амăшĕпе ывăлне ырлăх-сывлăх, телей сунчĕ. Пĕр асапсăр, хурлăхсăр пурнăç...

Питĕ лăпкă кăмăлпа çывăрса кайрĕ çав каçхине Римма, анчах тепĕр ирхине унăн чĕри çурăлса каяс пек хурланмалла, выртсах макăрмалла пулчĕ.

Вăл кашни кунах мăнаппăшĕнчен çыру кĕтсе пурăнат-чĕ. Ун патне хăй Шупашкара çитсенех çырса янăччĕ-ске

вăл, хăй çинчен пĕлтернĕччĕ. Кун хыççăн кун иртрĕ — ответ пулмарĕ. Юлашкинчен ялтан çыру килчĕ. Анчах мăнаппăшĕн аллипе мар, пачах палламан почеркпа çырнăскер. Конверта алла илсе çавăркаласа пăхсанах, Римма чĕри кăкăртан сиксе тухас пек тапма тытăнчĕ.

«Мĕне пĕлтерет ку? Тем пулман-ши?..»

Чĕри тĕрĕснех сиснĕ-мĕн...

Çырăва Римма мăнаппăшĕпе пĕр шкулта ĕçленĕ вată учитель çырнă.

«Сире кун çинчен пĕлтерме питĕ йывăр, анчах ним тума та çук, тĕрĕссине каласах пулать: сирĕн Серафима Кузьминичнăна эпир пĕр уйăх каялла пытартăмăр. Юлашки сывлăшĕ тухичченех ĕçлерĕ вăл, мăнтарăн. Ытлашши чирлени те пулманччĕ унăн, вăйĕ çитнĕ таран хăйне май кăштăртатса çӳрерĕ, эвакуаципе килнĕ ачасене пит лайăх вĕрентсе пурăнчĕ. Пурте çав тери юрататчĕç ăна. Пĕррехинче вара каçпа çывăрма выртнă та ирхине вăранайман... Серафима Кузьминична пĕрмай сире асăнатчĕ, виличчен хĕрĕме пĕрре те пулин курса юласчĕ, тетчĕ, кĕтсе илеймерĕ ав... Пытарасса чыслăн пытартăмăр, пĕтĕм халăх макăрчĕ. Çуркунне унăн масарĕ çине çырла йывăççисем, чечексем лартатпăр ак. Ырă çынна халăх нихçан та манас çук...»

...Çавăн пек калама та çук пысăк хуйхă пырса çапрĕ Риммăна. Куççулĕ юлми макăрнă хыççăн та пĕр эрне хушши лăпланаймарĕ вăл. Мăнаппăшĕ уншăн амăшĕ вырăнĕнче пулнă-çке, Риммăна вăл пăхса ӳстерсе çын тунă. Халь çук ĕнтĕ вăл... Никам та çук Риммăн урăх... Пĕр-пĕччен тăрса юлчĕ вăл. Тăлăх. Хуть те кашкăр пек ӳле. Анчах пурăнасах пулать. Темле пулсан та.

Çак хурлăхлă кунсенче ăна Кованый питĕ пулăшрĕ. Пĕррехинче, хĕрсен палатине пырса кĕрсен — халь вăл унта час-часах çӳрерĕ,—Риммăн куçĕсем макăрнипе шыçса тухнине асăрхарĕ те, мĕн пулнине пĕлсенех, лăплантарма тытăнчĕ.

— Куççулĕпе хурлăха пĕтерейместĕн, вăйна çухататăн кăна. Анчах пурнăçра пире вăй питĕ нумай кирлĕ пулатьха. Çирĕпрех пулма тăрăш, ан çунтар чĕрӳне...

Сисмен çĕртенех Риммăна çурăмĕнчен ачашласа илчĕ:

— Лăплан, йăмăк...

Римма ăна асăрхамарĕ.

Ик-виç кунтан тата тепĕр çыру илчĕ Римма. Каллех палламан почеркпа çырнă. Шултра, чалăш-тĕлĕш саспаллисемпе. Çыраканĕн алли чĕтренĕ пулмалла. Римма хăрасах

кайрĕ: ку мĕне пĕлтерет-ши тата? Кам çырнă? Мĕн çинчен?

Ăна Сергейпе Анюта амăшĕ çырнă иккен.

Римма Анюта патне Кӳкеçри перекет касси адресĕпе янă çырăва, Анюта унта çук пирки, тахăшĕ унăн амăшĕ патне, яла ярса панă. Вара лешĕ Римма çыруне вуласа тухнă та, ăна çыраканĕ хăйĕн ачисемпе туслă пулнине пĕлсе, ответ çырнă. Пĕр-пĕринпе питех çыхăнман пуплевсемпе çырнине вулама йывăр пулчĕ, çапах та Римма ăнланчĕ: Сергей çинчен паян кун та нимле хыпар та çук, Анюта 1943 çулта, радистсен курсĕнчен вĕренсе тухса, фронта кайнă, малтанах çырусем çыркаланă, анчах халь çур çул ытла ĕнтĕ нимĕнле хыпар та килмест унран...

Çак çырăва вуланă чух палатăна шăпах Кованый пырса кĕчĕ.

— Татах çыру илтĕн-и? Каллех хуйхăрмалли мар пуль те?— ыйтрĕ вăл, Римма койки умне хыççăр пукан çине ларса.

— Савăнмаллиех çук çав,— ассăн сывласа ячĕ Римма.

— Секрет мар пулсан... Кам çырать вара, мĕнле хыпарсем пĕлтерет? Каçар, эп хам вăрçă пуçланнăранпах никамран та çыру илместĕп те, ялан ыттисем илекен çырусемпе интересленетĕп.

— Мĕн секречĕ пултăр? Хамăрпа пĕрле вĕреннĕ студент амăшĕ çырать...— Вăл ват карчăк мĕн пĕлтернине каласа пачĕ.— Ывăлĕ пĕр хыпарсăр çухални çитмест, халь тата хĕрĕ те çырмасть, тет. Тен, вăл та пĕтнĕ? Мĕн тери йывăр пуль мăнтарăна!

— Хĕрĕ çырманнинчен тĕлĕнмех кирлĕ мар пуль,— терĕ Кованый кăшт шухăшласа ларсан.— Тата ун пирки ытлашши хыпăнма та кирлĕ мар пек.

— Мĕншĕн?

— Вăл радисткăна вĕреннĕ тет-и-ха? Апла пулсан, ăна ăçта та пулин партизансем патне ăсатма пултарнă. Лерен çырусем яма кăткăсрах...

— Эппин, манăн ун патне çавăн пек çырса ярас мар-и?

— Хăвăн ирĕк. Çыр, ара, тен, кăштах лăпланĕ.

Хăй сисмесĕрех, Римма Сергейпа Анютăна чунтан ырласа каласма тытăнчĕ. Ытла та лайăх çынсем иккен вĕсем. Ашшĕне колхозсем тунă вăхăтра кулаксем вĕлернĕ, çавăнпа та кусем тăлăха юлса ӳснĕ, çапах та, йывăр пулин те, вĕсем çине тăрсах вĕреннĕ, Сергей институтран «диплом с отличием» илсе тухнă, Анюта Канашри финанс техни-

кумне пӗтернӗ, Сергее институт хыççӑн кафедра çумӗнче юлма сӗннӗ, анчах вӑл çара кайма кӑмӑл тунӑ, çулталӑкран вӑрçӑ пуçланнӑ та вара... урӑх нимӗн те паллӑ мар.

— Акӑ вӑл, çара каяс умӗн ӳкерӗннӗскер...

Римма комсомол билечӗн хуплашки айӗнчен Сергей сӑнӳкерчӗкне кӑларса кӑтартрӗ. Пит маттур каччӑ йӑл кулса ларать. Хыç енне ик сӑмах çеç çырнӑ: «Риммӑна — ӗмӗрлӗх!» Кованый ӳкерчӗке тытса пӑхкаларӗ те часах каялла тавӑрса пачӗ.

— Лайӑх каччӑ...— Ун сӑнӗ палӑрмаллах тӗксӗмленчӗ, вӑл халат кӗсйинчен пирус кӑларса хыпрӗ. Унтан темле çӗтсе ларнӑ сасӑпа хуллен ыйтрӗ: — Питӗ туслӑ пулнӑ-и эсир унпа?

— Тусӗ-мӗнӗ... Лайӑх юлташчӗ вӑл,— терӗ Римма, кӑштах хӗрелсе.

— Пӗр-пӗрне сӑмах та панӑ пуль ӗнтӗ, çапла-и?

— Мӗне пӗлтерет халь çухалнӑ çынна панӑ сӑмах!

— Тупӑнма та пултарать!

— Тупӑнсан аванччӗ те, шанми пула пуçларӑм çав. Кӗçех виçӗ çул çитет те...

Кованый пирусне чӗртсе ячӗ те клюшкисене тытса ура çине тӑчӗ.

— Каяс-ха, часах апата та чӗнеççӗ пуль.

Вӑл тухса кайсанах, койка çинче кӗнеке вуласа выртнӑ Наташа сиксе тӑрса ларчӗ.

— Мӗн туса хутӑн эсӗ, Римма, ӑнланатӑн-и çавна?— терӗ вӑл çилӗпе.

— Ним те тумарӑм-çке?— тӗлӗнсе пӑхрӗ ун çине Римма.

— Мӗншӗн кӑтартрӑн Сергей фотографине?

— Ма кӑтартмалла мар вара?

— Ну, чӑн ухмах иккен эсӗ! Нивушлӗ нимӗн те сисместӗн?!

— Мӗн сисмелле манӑн?

— Юратать сана çак лейтенант! Чылайранпа асӑрхаса пурӑнатӑп — вилсе каясла юратать! Типет, хӑрать сана юратнипе, анчах эс ӑна хӑвӑн каччун ӳкерчӗкӗпе сӑмсинчен тӗкетӗн. Мӗн тума кирлӗ пулчӗ ку сана? Мухтанса илес терӗн-и? «Кур, епле каччӑсем чупнӑ ман хыççӑн! Кӑшт çеç профессор пулайманнисем!..»

— Чим-ха эс, Наташа, йӗркеллӗ калаç-ха.

— Питӗ йӗркеллӗ калаçатӑп! Чухлатӑн-и эсӗ хӑвӑн ӳкерчӗкне кӑтартнипе ун чӗрине мӗн тери ыраттарнине?

Çыннин ахаль те хуйхă — амăшĕпе йăмăкĕ нимĕçсен аллинче, кашни кун хуйхăрса асăнать вĕсене, чĕри çурăлсах тухать пуль, халь тата эс хушса патăн. Кала тӳррипе, Кованый хăвна кăмăлланине, ыттисем çине пăхнă пек мар пăхнине, ялан сан çывăхăнта пулма тăрăшнине сиснĕ вĕт эсĕ, асăрханă?

— Ним чухлĕ те асăрхаман. Кирлĕ мара калаçатăн.

— Кирлĕ мара пулмасăр! Эх, эсĕ те çав! Çирĕмрен иртнĕ, арçынсен чунне ăнланмастăн!— тиркесе, ал сулчĕ Наташа.

— Сергейсăр пуçне мана урăх никам та кирлĕ мар, çавăнпа ыттисем çине пăхмастăп.

— Эс ху пăхмасан та пултаратăн, сисмĕш пул, анчах хăвна юратакансене пуçран ан çап, ан тапта вĕсен туйăмĕсене. Шел-им сана? Юратчăр! Уншăн сана ним те пулмасть. Юнашар выртни мар вăл...

— Çитĕ, Наташа!— сассине хытарчĕ Римма.— Ытла таçталла кĕрсе кайма пуçларăн.

— Лейтенанта хĕрхентĕм эпĕ. Куртăн-и, епле тухса кайрĕ вăл кунтан? Асапланать ĕнтĕ халь... Чĕринех тиверттрĕн эс унне!

— Апла пулсан, кай та ачашла ăна, хĕрхен, лăплантар!— кăшкăрса ячĕ Римма.— Тупнă калаçмалли!

— Хама юратнă пулсан — паллах хĕрхенĕттĕм, сан пек усал пулмăттăм çав!— хирĕç касса хучĕ Наташа.

Çав вăхăтрах палатăна Варя кĕрсе тăчĕ.

— Хĕрсем, савăнăç!— терĕ вăл алăк патĕнченех.

— Мĕнле савăнăç тупса килтĕн тата?— ыйтрĕ Римма.

— Кино пулать паян! Ух, куратпăр ĕнтĕ! Кино курманни çĕр çул çитет... Шутсăр юрататăп кино курма! Килте пурăннă чух эп пĕр картин та сиктерместĕм. Кашнин ятне çырса пыраттăм тата. Пĕр тăватçĕр фильм ытла курнă эпĕ!— мухтанса илчĕ Варя.

— Мĕнле картин кăтартаççĕ?

— «Секретарь райкома». Партизансем çинчен, тет.

— Кайса курас, курас! Чăн та нумайранпа курман кино таврашĕ!

Киноне госпиталĕн иккĕмĕш хутĕнче, сарлака та вăрăм коридорта кăтартаççĕ. Экранне коридор вĕçĕнчи стена çумне çакса янă, ун çывăхне темиçе рет вăрăм тенкел лартнă, анчах тенкелĕсем пурин валли те çитмеççĕ, вĕсем çине ураран аманнисем лараççĕ, ыттисем вара тăрсах кураççĕ. Паян та çавăн пекех пулчĕ.

Риммăпа унăн тусĕсем пынă чух тенкелсене йышăннăччĕ ĕнтĕ, ура çинче тăракансем те сахал марччĕ. Хĕрсем хыçаларах кайса тăчĕç. Сеанс ытла тăрукках пуçланаймарĕ, чылай кĕтмелле пулчĕ. Анчах уншăн кӳренекенсемех пулмарĕç — госпитальте выртакансен васкамалли çук. Вăхăт иртрĕр кăна.

Тăваттăмĕш хутра пурăнакан хĕрсем аялти хутсене питех анса çӳремен, çавăнпа та Римма халь кунта палламан çынсем нумай курчĕ. Тем тĕрлĕ çын та пур иккен госпитальте! Ав, лешĕ, хура кăтра çӳçлĕ, курпун сăмсаллă йĕкĕт — грузин е эрмен пулмалла, ун çумĕнче тăракан сарлака янах шăммиллĕ, хĕсĕкрех куçли — бурят е якут, вĕсен хыçĕнчи йĕтĕн сӳсĕ пек çӳçлĕ каччă тем тесен те вырăсха вăл...

«Пĕлесчĕ, миçе чĕлхепе калаçакан пурăнать-ши çак халăх хушшинче? — шухăшларĕ Римма. — Çирĕм-вăтăр чĕлхерен те кая мар пуль. Тен, унтан та ытларах-и... Анчах вĕсем пурте пĕр шухăшлă, пĕр кăмăллă пулса, пĕр тăшманпа çапăçнă...»

Вĕсем Наташăпа, Варьăпа пĕрле, пĕр-пĕринпе хулĕсенчен çакланса пăхса тăчĕç. Сасартăк вĕсем умне клюшкăпа туя çине тĕреннĕ сап-сар çӳçлĕ, пысăк кăвак куçлă каччă пырса тăчĕ те, куçĕсене час-час мăчлаттарса, Риммăна хуллен кăна сăмах хушрĕ.

— Каçарăр, юлташ... Тен, эпĕ йăнăшатăп та пулĕ... Калăр тархасшăн: эсир Римма ятлă мар-и? Сирĕн хушаматăр Сурская мар-и?

— Çапла-çке. Анчах эсир ăçтан паллатăр мана? — питĕ хытă тĕлĕнсе пăхрĕ ун çине Римма.

Сар çӳçлĕ каччă, ответ парас вырăнне, пĕтĕм кăкрипе хашш! сывларĕ те именнĕ пек, вăтаннă пек кула-кула илчĕ.

— Епле телей ку! Эпĕ йăнăшатăп пуль тесе хăранăччĕ. Тав турра — йăнăшман иккен, куçсем улталаман мана! Сывлăх сунатăп сире, сестра! — туйине ик чĕркуççи хушшине хĕстерсе, алли тăсса пачĕ вăл.— Питĕ пысăк салам...

— Сывлăх пултăр...— каччă çине çаплах-ха тĕлĕннĕн пăхса, ал пачĕ Римма.

— Эсир... эсир мана палламастăр ĕнтĕ, çапла-и? — ыйтрĕ каччă.

— Уйăрсах илейместĕп çав,— терĕ Римма.

— Çапла пуль, çапла пуль...— Каччă тарласа кайнă çамкине халат çаннипе шăлса илчĕ.— Манма пултарнă, пултарнă... Унтанпа вăхăчĕ те нумай иртрĕ, тата... тата пур-

не те ăçтан астуса çитеретĕн? Ман пеккисем сирĕн темиçе çĕр çын та пулнă пуль те...

— Çапах та, кам пулатăр-ха эсир? — кăшт кăмăлсăр пулнă пекрех ыйтрĕ Римма. Наташăпа Варя та пĕлесшĕн çунса тăчĕç: мĕнле çын килсе çулăхрĕ вĕсен тусĕ çумне кĕтмен çĕртен?!

— Огнев эпĕ! Виктор Огнев!.. Эсир мана Днепр леш енче вут-çулăм ăшĕнчен туртса кăлартăр, вилĕмрен çăлтăр! — терĕ каччă.

— Эсир... художник-и? — аса иле пуçларĕ Римма.

— Художник çав!

— Эсир ун чухне «Санитарка» ятлă картин ўкерме пултăр...

— Халь вăл картина пулатех ĕнтĕ! Анчах малтан сирĕн портрета уйрăм ўкеретĕп. Комиссар мана ĕçре мĕн кирлине пĕтĕмпех тупса парĕ. Кунта эпĕ Ленин пўлĕмĕ валли пысăк панно турăм, халь орденоносецсен портречĕсене ўкеретĕп...

Кино пуçланичченех пĕр чарăнмасăр каласрĕ Огнев. Кунта икĕ уйăх выртать иккен, аманнă ури çаплах тўрленсе çитеймест-ха, анчах ыттисем пек пĕрмай койка çинче выртас килмест имĕш унăн, çавăнпа та ĕçлет вăл, комиссара «нагляднăй агитаци» енĕпе пулăшать...

Тепĕр куннех Огнев хĕрсен палатине пысăк альбом çĕклесе пычĕ те Риммăна ирĕксĕрлесе тенĕ пекех хăйне кирлĕ пек лартса ўкерме тытăнчĕ. Пултарать иккен ачи, чиперех тăвать хăйĕн ĕçне!

— Кайран мана та ўкермĕн-ши, Огнев юлташ? — ыйтрĕ Наташа, вăл ĕçленине пăхса тăнăскер.

— Ўкеретĕп, виççĕре те ўкеретĕп! — терĕ салтак-художник хавасланса. — Мана хамăн пулас картинăсем валли типажсем питĕ кирлĕ пулаççĕ. Тем тĕрли те!

— Эс типажа мар, мана ўкер!

— Сире ўкеретĕп çав, кама тата! Фронт хĕрĕсене шăп халь ўкерсе юлас пулать, вăрçă хыççăн пулмаççĕ вĕсем. Сирĕн сăнсем вăрçă историйĕ валли кирлĕ!

— Фронтра чухне питех ўкерме май килмерĕ пуль ĕнтĕ, услови пулмарĕ пуль унта? — ыйтрĕ ун çумне тепĕр енчен пырса тăнă Варя.

— Ўкеркеленĕ пĕртак. Дивизи клубĕнче ĕçленĕ чух чылай портретсем тунă. Сăмах майĕн каласан, эпĕ Гитлер портретне те нумай ўкернĕ. Пы-ысăк портретсем тăваттăм...

— Гитлер портретне?! Вăл шуйттана мĕн тума ӳкермелле пулнă тата?!— тĕлĕнсех кайрĕç хĕрсем.

Огнев ĕçлеме пăрахсах каласа пама тытăнчĕ.

— Э-э, тусăмсем, эсир нимĕн те пĕлместĕр-ха, анчах эпĕ вăл сатана сăнне ӳкерсе нимĕçсене нумай сиен тунă!— кулса ячĕ вăл.— Мĕнле майпа, тетĕр-и? Питĕ интереслĕ! Тăвата простыне пĕрле çĕлесе рама çине туртса паратчĕç те мана, эпĕ Гитлерăн тем пысăкăш карикатурине туса хураттăм. Пăхма та хăрушă — чăн-чăн вельзевул!* Аяла темтепĕр çыраттăм — паллах, нимĕçле, фрицсем ăнланмалла. Çĕрле çавна чи малти траншейăна илсе кайса тăрататчĕç. Тул çутăлать те, фрицсем хăйсен фюрерне курах каяççĕ. Э-эх, тытăнаççĕ вара пеме! Минометсенчен, орудисенчен! Тепĕр чух, час лектерейместĕр, темиçе çĕр минăпа снаряд кăларса яраççĕ. Эпир варсене тытса кулатпăр... Тӳнккĕр, тӳнккĕр лайăхрах, ытларах перĕр, сирĕн снарядсем шел мар пирĕншĕн! Ик-виç кунтан тата тепĕр карикатура кăларса тăрататпăр, урăх çĕрте. Каллех артналет пуçланать, тата темиçе çĕр снаряд кăларса ярать фриц. Гитлер çуралнă кун вара пĕр харăсах виç çĕрте виç карикатура кăларса тăратрăмăр фрицсене савăнтарма — пĕрин çинче Гитлера шакал пек тунăччĕ, теприн çинче çĕлен пек, виççĕмĕшĕнче — горилла евĕр. Ну, тĕпĕртеттерчĕç вара çав ӳкерчĕксене, пин снаряд та ячĕç пуль çав!..

— Эппин, фашистсене нумай тарăхтарнă эсĕ!— терĕ Наташа,

— Кам мĕнпе пултарать, çавăнпа çапăçать,— кулса илчĕ те Огнев, каллех ӳкерме тытăнчĕ.

— Клубра çавăн пек лайăх ĕçленĕскер, стрелковăй ротăна мĕнле лекнĕ вара эсĕ?— ыйтрĕ Римма.— Эпир санпа çапăçу хирĕнче паллашрăмăр вĕт-ха.

— Клубра эпĕ урăх дивизинче чух ĕçленĕ. Бомбежка вăхăтĕнче айăкран амансан пĕр уйăх ытла госпитальте выртрăм, унтан ик эрне запаслă полкра пултăм та сирĕн дивизине ячĕç. Хам художник иккенне замполита каласа пăхрăм эпĕ, анчах вăл «халь картинăсем ӳкермелли вăхăт мар, çапăçмалли вăхăт», терĕ кăна. Тĕрĕссипе калас-тăк, передовойĕнче пулнăшăн пĕртте кăмăлсăр мар эпĕ, чăн-чăн çапăçура пулса куртăм хăть. Художникĕн пурне те хăйĕн куçĕпе курма тăрăшмалла...

---

*Христос тĕнне ĕненекенсен литературинче вельзевул тесе «тамăк хуçине» каланă.

— Вĕлернĕ пулсан?

— Вилме пултараймап эпĕ,— пуçне паркаласа илчĕ Огнев.— Мана анне вилме хушман.

Хĕрсем ахăлтатса кулса ячĕç.

Питĕ килĕшрĕ вĕсене çак салтак-художник. Хăй те хаваслă, чĕлхи те çивĕч, пулчĕ-пулмарĕ култарать, интереслĕ историсем каласа парать. Хăйĕн ĕçне те пултарать иккен — темиçе кун хушшинче хĕрсен пурин сăнĕсене те питĕ хитре туса пачĕ. Хĕрсем вĕсене хăйсен койкисем тĕлне çыпăçтарса хучĕç.

Наташа вара унран уйрăлма та пĕлмерĕ. Ирĕн-каçăн унпа пĕрле пулчĕ. «Витя, Витек...» терĕн кăна.

— Мушка тăрне тытрăн куранать художнике, снайпер?— кулкаласа илчĕ унран Варя пĕррехинче, палатăра хĕрсем хăйсем кăна пулнă чух.

— Спусковой крючок çине пусмалла кăна ĕнтĕ унăн, вара художник чĕрине персе шăтарать те ЗАГСа каясси çеç юлать,— терĕ Римма та, кăмăллăн кулса.

## 18

Госпиталь пурнăçĕ хăй çеммипе, пĕр пек пычĕ. Тухтăрсем кашни ир, палатăсем тăрăх çӳресе, аманнисене пăхрĕç, тĕрĕслерĕç, кашнинчех вĕсем хăйсене мĕнле туйни çинчен ыйтса пĕлчĕç. Сестрасем çынсене паян мĕнле эмелсем памаллине, мĕн тумаллине çырса пычĕç. Унтан тухтăрсем тĕрлĕ кабинетсенче ĕçлерĕç. Утакан аманнисем перевязкăсене, процедурăсене çӳрерĕç. Вăхăт иртнĕ май пĕрисем сываласа тухса кайрĕç — хăшĕ пĕр вăхăтлăха киле, отпуска, хăшĕ сывалаканнисен батальонĕсене, запаслă полксене. Вĕсен вырăнне фронтран урăххисене, нумай пулмасть аманнисене илсе пычĕç. Медперсоналăн пĕр кунлăх та канăç пулмарĕ, вĕсен ĕçĕ чакмарĕ.

Кашни ир пĕтĕм госпиталь нимрен малтан Совинформбюро сводкине итлерĕ. Хăш фронтра мĕн пулнă-ши? Пирĕннисем малалла кайнă-ши? Тата мĕнле хуласем илнĕ-ши?

Аманнисенчен кашниех хăй çапăçнă фронтри ĕçсем çинчен пĕлесшĕн пулчĕ, вăл фронтра пĕр-пĕр ăнăçлă операци пулсан вара пĕтĕм чунтан савăнса мухтанчĕ:

— Во! Пирĕн Пĕрремĕш Белорусси фрончĕ Рогачевпа Жлобин хулисене илнĕ, çирĕм пилĕк километр малалла кайнă!..

— Вăл мĕ-ĕн! Пирĕннисем виçĕ кун хушшинче çĕр километр ытла çĕмĕрсе кĕнĕ!..

Март пуçламăшĕче Информбюро кăнтăрта çапăçакан Пĕрремĕш, Иккĕмĕш, Виççĕмĕш Украина фрончĕсенче ĕçсем питĕ ăнса пыни çинчен пĕлтерме тытăнчĕ. Хула хыççăн хула, хула хыççăн хула ирĕке кăлараççĕ вĕсем, куллен-кун малтан мала каяççĕ.

Çав кунсенче аллă çиччĕмĕш палатăра выртакан Андрей Кованый лейтенант ниçта кайса кĕрейми пăлханса пурăнчĕ. Ыйхи те çухалчĕ унăн, апат та анми пулчĕ. Пирĕн çарсем пĕрмай, пĕр чарăнмасăр ун тăван хули патнелле çывхараççĕ-çке! Инçе те юлман ĕнтĕ, кĕç çитмелле, ак халех, халех...

...Мартăн вунтăваттăмĕшĕнче Римма темшĕн питĕ ир вăранчĕ. Радио тин çеç калаçма пуçланă-мĕн-ха. Диктор Информбюро сводкине вулать. Римма тинкерсе итлеме тытăнчĕ.

— Ĕнер Пĕрремĕш Украина фрончĕн çарĕсем Скалат, Липовец, Ильинцы, Дашев хулисене ирĕке кăларнă...

— Виççĕмĕш Украина фрончĕн çарĕсем, ăнăçлă наступлени туса пырса, Днепр урлă каçнă та Херсон хулине ирĕке кăларнă...

Херсон!..

— Ара, ку Кованый хули вĕт, вăл çуралса ӳснĕ хула!— тăруках аса илчĕ те Римма, унăн пичĕ пĕçерсех кайрĕ.— Мĕн чухлĕ кĕтсе пурăнчĕ вăл çак куна! Илтрĕши хăй, çук-ши? Ах, савăнчĕ пуль илтнĕ пулсан!..

Çав вăхăтра Наташа вăранчĕ.

— Сводка итлерĕн-и?— ыйтрĕ вăл анасласа.

— Тин çеç итлесе пĕтертĕм.

— Мĕн çĕнни пур унта?

— Кованый хулине, Херсона, ирĕке кăларнă...

— Чăнах-и?! Апла пулсан, кайса саламлас пулать ăна!— Наташа утиялне сирсе пăрахса тăрса ларчĕ.—Амăшĕпе йăмăкĕ пирки пит пăшăрханса пурăнатчĕ-ха вăл. Тен, халь тупăнĕç вĕсем?— Хĕр тумланма тытăнчĕ.— Эх, Римма-Риммочка, пустуй сивĕтрĕн эс çав качча хăвăнтан! Вăрçă пĕтсен кăнтăрта, тинĕс хĕрринче ыр курса пурăнаттăн!..

— Ан тапрат-ха çавна, Наташа!— çилĕпе ал сулчĕ Римма.— Йăлăхтарчĕ! Калана вĕт сана, ик çынна пĕр харăс юратма пултараймастăп эпĕ. Эп Сергее кĕтетĕп.

— Ну, кĕт ара, кĕт, кам чарать сана...
— Чарма та пултараймасть! Кансĕрлеме те!
— Юрĕ-çке, юрĕ, ытлашши хĕрсе ан кай. Урăх шарламастăп.
Кованый патне вĕсем виççĕшĕ те кайрĕç. Вăл тин çеç тăрса ларнă-мĕн-ха. Хĕрсем вĕсен палатине чылайранпа пыманччĕ те, халь тăрук — çитменнине ирех — пырса кĕни ăна тĕлĕнтерсех ячĕ.
— Сана саламлама килтĕмĕр, лейтенант юлташ,— пуринчен малтан ал пырса пачĕ çивĕч Наташа.— Пĕтĕм чĕререн саванса саламлатпăр!
— Мĕн пирки-ши ку?— ăнланмасăр пăхрĕ ун çине Кованый.
— Радио итлемен-и эсир паян?— ыйтрĕ Римма.
— Каçхине итленĕччĕ, паян итлемен-ха. Темшĕн, пирĕн репродуктор ĕçлеми пулнă. Урăх çĕре тухса çӳреймерĕм.
— Херсона ирĕке кăларнă!
— Мĕн, мĕн? Херсона?!— кăшкăрсах ячĕ лейтенант.
— Херсона çав, сирĕн тăван хулана...
— Ой, хĕрсе-ем!..—туясăрах сиксе сăчĕ Кованый.— Çитрĕ, эппин, ман телей! Кӳрĕр-ха, чуптăвам сире!..—Çавăнтах хĕрсене виççĕшне те çăтăр-çатăр тытса çамкисенчен, пичĕсенчен чуптуса пĕтерчĕ. Наташăна вара тутинченех чуптуса илчĕ.
— Ку — çак ыр хыпара мана пуринчен малтан пĕлтернĕшĕн!
Унтан, аллисене çĕклесе палатăри юлташĕсене кăшкăрчĕ.
— Илтрĕр-и эсир, славянсем? Херсон!.. Ман хула! Ирĕклĕ! Эхх! Эрех çук, сире пурсăра та какăриччен ĕçтерĕттĕм паян, мать честная! Кун пек савăнăç сайра пулать...
Вăл койка çине ларчĕ те сасартăк çав тери хытă юрласа ячĕ:

Повий, витре, на Вкраину,
Де покинув я дивчину...

Шалт улшăнчĕ çын. Юлашки вăхăтра, уйрăмах Римма ăна Сергей сăнӳкерчĕкне кăтартнă хыççăн, сӳрĕкрех, салхуланнă пекрех çӳрерĕ, сахал калаçрĕ, вăхăта пуринчен ытларах шахматла выляса ирттерчĕ, халь вара тăруках куç-пуçĕ çуталчĕ унăн, шап-шур тикĕс шăлĕсене кăтартса, йăл та йăл кулчĕ, каллех хĕрсен палатине çӳреме тытăнчĕ. Хĕрсем патĕнчех Наташăран уйрăлма пĕлмен салтак-художник

Огнев унӑн портретне ӳкерчӗ. Пилӗк орденлӑ гимнастеркине лейтенант хӑйӗн тумбочкинчех усранӑ-мӗн те, портрет ӳкерттернӗ чух ятарласа ӑна тӑхӑнчӗ: «Пӗтӗм формӑпа пултӑр...»

Хӑйӗн хулине ирӗке кӑларни ҫинчен пӗлсенех яра кун ҫырусем ҫырса ларчӗ — амӑшӗ патне, военкомата, парти хула комитетне, исполкома. Унтан ответсем кӗтме тытӑнчӗ.

— Аннепе йӑмӑк ҫук пулсан та, хӑшӗ те пулин пӗлтереҫҫех вӗсем ҫинчен!— тесе шанчӗ вӑл.— Вилмен пулсан— тупатӑпах эп вӗсене!

Пӗр Кованӑйӑн ҫеҫ мар, пурин те кӑмӑлӗсем ҫав тери ҫӗкленчӗҫ вӑл кунсенче. Совинформбюро пӗрмай савӑнтарма тытӑнчӗ: кӑнтӑрта ҫапӑҫакан ҫарсем кашни кун пилӗк-ултӑ хула ирӗке кӑлараҫҫӗ иккен, тепӗр чух вуншар та пулать... Епле савӑнмастӑн-ха? Эппин, пурнӑҫ тӑшмана пуҫӗпех аркатасси, вӑрҫӑ пӗтесси патнелле пырать!..

Госпитальте выртакансенчен нумайӑшӗ хӑйсене хӑвӑртрах кӑларса яма ыйта пуҫларӗҫ:

— Фронта каяс килет!

— Кунта доминолла ҫапса пурӑнса, вӑрҫӑ вӗҫне те кураймасӑр юлӑн тата!

— Берлина пирӗнсӗрех ҫитсе кӗрӗҫ!Васкас пулать!..

Пӗррехинче, вырсарникуна хирӗҫ, госпитале артистсем пырасси ҫинчен пӗлтерчӗҫ.

— Пысӑк концерт пулать кӗҫӗр...

Яланхи пекех, аманнисемпе госпитальте ӗҫлекенсем иккӗмӗш хутри коридора пухӑнчӗҫ. Коридор вӗҫне хальхинче таҫтан хӑмасем тупкаласа пырса эстрада пекки тунӑ-мӗн. Артистчӗсем — пӗр вунӑ ҫын — кӑтартнӑ вӑхӑтран кӑшт каярах юлса пычӗҫ, унчченхулари тепӗр госпитальте концерт панӑ иккен. Вӗсем коридор тӑрӑх сцена патнелле утса иртнӗ чухнех курма пынисем хаклӑ хӑнасене ҫав тери хытӑ алҫупса саламларӗҫ.

Шупашкарта пурӑнма пуҫланӑранпа Римма нумай концертсенче пулнӑ. Сергейпе иккӗшӗ филармоние те ҫӳренӗ, ытти хуласенчен килекен гастролерсене те кая-кая курнӑ, анчах концерта пынӑ ҫынсем артистсене паянхи пек хапӑл туса йышӑннине, пурин ҫинчен те манса кайса, пӗтӗм чӗререн хумханса, тулли кӑмӑлпа итленине, кашни номер хыҫҫӑнах ҫапла чарусӑр алҫупнине астумасть...

Малтан артистсен асли аманнисене искусствӑра ӗҫлекенсен ячӗпе салам каларӗ — чыс та мухтав вӑрҫӑ паттӑрӗсене, Тӑван Ҫӗршыва хӳтӗлекенсене, тискер тӑшмана ар-

катакансене!— унтан эстрада ҫине икӗ баянистпа виҫӗ арҫын тухса тӑчӗҫ те пурин чӗрине те хускатакан, пӑлхатакан, кӑмӑла ҫӗклекен юрра юрласа ячӗҫ:

Вставай, страна огромная,
Вставай на смертный бой
С фашистской силой темною,
С проклятою ордой!..

Сывламасӑр итлерӗҫ аманнисем. Чӗрисем хыттӑн тапрӗҫ вӗсен. Хаярлӑхпа тулчӗҫ. Ҫапӑҫӑва кӗрес умӗнхи пекех, шӑнӑрӗсем хытрӗҫ. Халь тесен халь кашниех, сиксе тӑрса, пӑшал ярса тытмалла, атакӑна ыткӑнмалла... Кашни хӑй ӑшӗнче артистсемпе пӗрле юрларӗ:

Пусть ярость благородная
Вскипает, как волна.
Идет война народная,
Священная война!

Пӗр виҫӗ минут пуль пӗр чарӑнмасӑр ал ҫупрӗҫ салтаксем. Антӑхса каяс пек, ниҫта кайса кӗреймесӗр. Концертне ертсе пыракан конферансье аллине ҫӗкле-ҫӗкле аран лӑплантарчӗ вӗсене. Артистсем вара малтанхи юрӑ пекех кашни фронтовик чӗрине хускатакан юрра пуҫласа ячӗҫ:

Бьется в тесной печурке огонь...

Ку юрӑ итлекенсене кӑштах пусӑрӑнтарчӗ. Тӑвӑр ҫӗрпӳртсене, тимӗр пичкесенчен тунӑ кӑмакасене, снаряд гильзисенчен тунӑ «молнисене» аса илтерчӗ. Тулта, унта та кунта, снарядсем ӳксе ҫурӑлаҫҫӗ, маччаран тӑпра тӑкӑнать, тунсӑхланӑ салтак килтисене, юратнӑ арӑмне е савнӑ хӗрне аса илет...

До тебя мне дойти не легко,
А до смерти четыре шага...

Салтак чунӗ те чул мар ҫав... Ах, кашниййӗннех пулнӑҫке ун пекки! Ӗмӗрне те манас ҫук ҫав фронтри ҫӗрпӳртсене!

Ҫак юрра итленӗ чух та, унтан салтаксене сывӑрма кансӗрлекен шӑпчӑксем ҫинчен юрланӑ чух та, чылайӑшӗн куҫҫулӗ тухрӗ. Анчах артистсем тепӗр юрӑ пуҫласан вара итлекенсен кӑмӑлӗ пачах улшӑнчӗ, ҫӗкленчӗ, хӑшӗсем юрӑ ҫеммипе пӗр майлӑ урисемпе тӑпӑртаттарма та тытӑнчӗҫ:

...Вспомню я пехоту,
И родную роту,
И тебя за то, что
Дал мне закурить...
Давай закурим
По одной,
Давай закурим,
Товарищ мой!..

Пилёк-ултă юрă хыççăн та артистсене эстрада çинчен ярасшăн пулмарĕç. Фронт юррисем урăх пулманнипе вĕсем вара итлекенсене авалхи вырăс юррисемпе килентерчĕç — Стенька Разин çинчен, Атăл тăрăх баржăсем туртса хăпаракан бурлаксем çинчен, хура куçлă хитре пикесем çинчен шăрантарчĕç...

Лайăх савăнтарчĕç вĕсем вăрçă паттăрĕсене!

Арçынсем хыççăн эстрада çине йăлтăрккаллă вăрăм платье тăхăннă, çӳçне пит хитре тураса хунă хурарах сăнлă, пĕвĕпе пысăках та мар хĕр тухрĕ. Халь çеç шавлашавла тăвăллăн ал çупнă салтаксем шăпăртах пулчĕç.

Риммăпа Варя хушшинче тăракан Наташа вĕсен хулĕсене пăчăртаса илчĕ.

— Лешĕ вĕт ку, хĕрупраç...— терĕ вăл шăппăн.

— Кам — лешĕ?— ыйтрĕ Варя.

— Пӳрнесĕр юлнă музыкант патне çӳрекенни... Сарьялов патне...

— Çавă,— çирĕплетрĕ Римма.

— Ай-ай, чаплă!..

— Мĕн калăн ĕнтĕ, артистка, пирĕн пек солдафон мар...

— Ун пек тумлансан эпир те маххă памăттăмăр!— хирĕçлесе илчĕ Наташа.

Концерта ертсе пыраканни итлекенсене артисткăпа паллаштарчĕ:

— Филармони солистки Олимпиада Цветкова... Мĕн юрлассине вăл хăй каласа парĕ.

Артистка хуллен ӳсĕрсе илчĕ те, хăй умĕнче ларакантăракан çынсене пăхса çавăрăнса, лăпкă сасăпа пĕлтерчĕ:

— В лесу прифронтовом...

Çав самантрах баянсем пĕр çаврăм кĕрлесе илчĕç. Вĕсем шăплансанах хĕр сасси янраса кайрĕ:

С берез — неслышен, невесом —
Слетает желтый лист,
Старинный вальс «Осенний сон»
Играет гармонист...

Турăçăм, мĕн тери чаплă иккен ун сасси! Çепĕç шăнкăрав сасси пек янăрать, чунсем хушшипе сиккелекен таса çăлкуç шывĕ пек шăнкăртатать. Итлекенсем хăйсене сасартăк темле асамлă вăй тухатса хунă пек ларчĕç. Сывлама та хăранă пек. Кăшт хускалсанах çак тĕлĕнмелле лайăх юрă, чĕрене килентерекен сасă пăсăласран, çухаласран шикленнĕ пек.

Хĕр-юрăçă сасси вăл юрланăçемĕн çирĕпленсе, янравланса, чуна ытларах тивекен пулса пычĕ. Юрă вĕçнелле вара вăл итлекенсен чĕрисене хытăран хытă тапакан турĕ:

Так что ж, друзья, коль наш черед,
Да будет сталь крепка!
Пусть наше сердце не замрет,
Не задрожит рука.
Настал черед, пришла пора,
Идем, друзья, идем!
За все, чем жили мы вчера,
За все, что завтра ждем!..

Хыçалта тăракан сестрасемпе санитаркăсем, сандружинницăсем куçĕсене шăлкалама тытăнчĕç. Арçынсем шăлĕсене çыртса, йывăррăн сывла пуçларĕç. Тыткăна илчĕ çынсене юрă, вĕсен туйăмĕсене çеç мар, ăстăнне те хускатрĕ.

Юрă хыççăн юрă юрларĕ çамрăк артистка — «Огонек», «Синий платочек», «Темная ночь»... Пĕринчен тепри лайăхрах янрарĕ, итлекенсене килентерчĕ. Юлашкинчен вара пурне те тĕлĕнтерсе пăрахрĕ хĕр: умлă-хыçлă виçĕ чăваш юрри юрласа пачĕ. Никам та шутламан çав вăл тĕп чăваш хĕрĕ тесе!.. Чăваш юррисемшĕн пушшех хытă ал çупрĕç ăна.

Вăл хăйне çавăн пек ăшшăн йышăннăшăн тав туса пуç тайнă вăхăтра малта ларнă пĕр вату салтак клюшкисем çине тĕренчĕ те эстрада патне пырса аллине тăсрĕ:

— Тавтапуç сана, хĕрĕм, пире лайăх юрăсем юрласа панăшăн! Кун пеккине эпĕ пуçласа илтрĕм. Тĕлĕнтертĕн, савăнтартăн! Телей пултăрах сана, хĕрĕм!

Артистка ун çывăхнерех пырса аллине парсан, салтак ăна хытă чăмăртаса силлерĕ. Ытти салтаксем çав хушăра тăвăллăн ал çупрĕç. Халăхпа пĕрле Риммăпа унăн юлташĕсем те каçса кайсах ал çупса тав турĕç ăна...

Артистка эстрада çинчен анса хăйсен тумтирĕсене хывса хунă пÿлĕме кĕрсе кайсан та тăруках лăпланаймарĕç салтаксем, пĕр-пĕрин çине пăхса шавлăн калаçрĕç, хĕр-юрăçа чунтан ырларĕç.

— Ну, пултара-ать!..

— Шăпчăк, чăн-чăн шăпчăк!

Конферансье çĕнĕ номер çинчен пĕлтерчĕ:

— Халĕ, юлташсем, Чăваш республикин тава тивĕçлĕ артистки Марина Яковлевна Васильева «Амăшĕн сăмахĕ» ятлă калав вуласа парать. Ăна пирĕн писатель-фронтовик Иван Актай çырнă, чăвашларан вырăсла та хăех куçарнă...

Эстрада çине сап-сар çӳçлĕ, çинçерех кĕлеткеллĕ, хура костюм тăхăннă пĕр вăтăр-вăтăр пилĕк çулсенчи питĕ илемлĕ хĕрарăм хуллен утса тухрĕ. Çынсем ăна тӳрех алă çупса йышăнчĕç.

Римма çав тери пăлханса кайрĕ.

«Иван Актай... Иван Васильевич арăмĕ, эппин, ку!— хăвăрт шухăшласа илчĕ хĕр. Ав мĕнлерех иккен вăл! Ытармалла мар-иç! Кун пек арăмпа, чăн та, кил тулли телей пулмалла... Концерт хыççăн унпа калаçса курасчĕ-çке! Упăшки мĕнле-ши лере, мĕнле пурăнать-ши? Сывах-ши?..»

Хăрушă калав çырнă иккен Иван Актай. Пирĕн салтаксем хĕссе пынипе пĕр пысăк ялтан тухса тармалли вăхăт çитсен, фашистсем ялти тĕпсакайсенчен, нӳхрепсенчен вăтăр сакăр совет çыннине туртса кăларса пĕр пӳрте хупнă та — вĕсем хушшинче çитмĕл çулхи карчăксемпе стариксем те, виç-тăват çулхи ачасем те пулнă — чӳречесем витĕр шалалла гранатăсем ывăтнă, унтан пӳртне бензин сапса тивертсе янă. Тăрукак вилейменнисем чӳречесем патне ыткăннă, кантăкĕсене, рамисене çĕмĕрсе, çунакан пӳртрен туха-туха ӳкнĕ, анчах гитлеровецсем вĕсене çавăнтах автоматсенчен пере-пере вĕлернĕ. Ыттисемпе пĕрле утмăл çулхи карчăк та чӳречерен сикме пикеннĕ, анчах пуçне тулалла кăларсанах пуля ун çăварĕнчен пырса тивсе ĕнси витĕр тухса кайнă... Карчăк çапах та вилмен, урамалла тухса ӳкнĕ, унтан, фашистсем кайсан, суранне тутăрпа çыхса лартса, пахча витĕр упаленсе тухса, кăкăр таран шыв урлă каçнă, вăрманалла кĕрсе кайса хамăрăннисене тĕл пулнă та аманнă чĕлхине аран хускаткаласа, тăшман вĕсен ялĕнче мĕн туса хуни çинчен каласа панă, тăшмана хытăрах тавăрма чĕннĕ. Пирĕн салтаксем çавăнтах, арăсласем пек, атакăна ыткăннă...

Калама çук пысăк туйăмпа, калавра çырса кăтартни пĕтĕмпех куç умне тухса тăмалла каласа пачĕ писатель арăмĕ хăйĕн упăшкин произведенине. Авторĕ ăна çав темтепĕр тӳснĕ карчăк хăй каласа панă пек туса çырнă та, артистка вулани пушшех витĕмлĕ, хумхантармалла пулса тухрĕ. Хĕрарăмсем макăрчĕç... Риммăпа унăн тусĕсем те,

вăрçăра çынсем вилнине сахал мар курнă пулин те, ку калава итленĕ чух куççульне чараймарĕç.

Итлекенсем çав тери хытă ал çупса тав тунă хыççăн, артистка сцена çинчен кайрĕ. Римма Наташăпа Варьăна вăл кам иккенне, хăй фронтра ун упăшкипе тăтăшах тĕл пулнине васкаса каласа пачĕ. Концерт пĕтсенех вара вĕсем виççĕшĕ те артистсем йышăннă пӳлĕм кĕчĕç.

— Ырă кaç пултăр, Марина Яковлевна,— терĕ Римма, артистка умне хăюсăртараххăн пырса тăрса.— Эпир, çак госпитальте выртакан хĕрсем, сире чĕререн тав тума килтĕмĕр...

— Тавтапуç...— пуçне тайса ал пачĕ артистка. Çав вăхăтрах вăл питĕ тĕлĕнни палăрчĕ.— Кунта... хĕрсем те пур-и вара?

— Тăваттăн эпир... пĕр палатăра,— маларах тухса тăчĕ Наташа.

— Фронтра аманса килнĕ-и?!

— Ăçта пултăр-ха тата...

— Пĕлмен... Хĕрсем те аманаççĕ, эппин...

— Аманаççĕ çеç мар, вилеççĕ те вĕсем унта,— терĕ Наташа.— Тĕлĕнмелли çук, пуля никама та тиркемест.

— Турăçăм... Епле хăрушă ку!— ассăн сывласа ячĕ артистка.— Халь сывалса пыратăр-и хуть?

— Куратăр — чупатпăр.

— Ах, ку вăрçă... мĕн чухлĕ асап кӳрет халăха! Манăн хамăн упăшка та вăрçăра. Мĕн пуçланнăранпах. Халлĕхе сывах та-ха, вăрçă пĕтиччен тем пулмалăх та пур...

— Эпĕ сирĕн упăшкапа пĕр дивизире пулнă, Марина Яковлевна,— терĕ Римма. — Унпа час-часах тĕл пулнă...

Артистка сасартăк антăхса кайнă пек пулчĕ, унăн куçĕсем чарăлса кайрĕç.

— Чăнах-и?! Эс... эс ăна курнă-и?—ыйтрĕ вăл хуллен.

— Курмасăр. Эп фронта та унпа пĕрлех кайнă, унăн ротинче пулнă, анчах çапăçăва пĕрле каяймарăм, мана медсанбатра хăварчĕç, унтан вăл аманса килчĕ те пирĕн патра выртрĕ. Кайран ăна хаçата илчĕç...

— Çапла, çапла, хаçатра вăл халь... Анчах чим-ха, тăхта, хĕрĕм. Ваня пĕррехинче чăваш хĕрĕ çинчен çырнăчче ман пата, çавă пуль-ха эсĕ! Рая... Рита...—аса илме пикенчĕ хĕрарăм.

— Римма.

— Тĕрĕс, тĕрĕс, Римма. Хаçатра та çырнă вăл сан çинчен, çапла-и?

— Ун пекки ге пулнӑ...

— Тусӑм, ылтӑнӑм!— Артистка Риммӑна тӑрук ыталаса иккӗ-виҫҫӗ чуптурӗ.— Кала ӗнтӗ, кала... Юлашки хут хӑҫан куртӑн эс ӑна?

— Январь вӗҫӗнче. Вӑл ҫула май пирӗн пата кӗрсе тухрӗ те мана хӑй кӗнекине парнелерӗ.

— Ҫапла, ҫапла, кӗнекине ӑна эп хам темиҫе экземпляр ярса патӑм. Кунта мухтаҫҫӗ вӑл кӗнекене. Ну... ну, мӗнлерех вӑл? Чирлемест-и? Начарланса кайман-и? Куҫӗсем мӗнле? Пӗррехинче вӑл тӗттӗм ҫӗрте корректура вуласа куҫсем курми пулчӗҫ, тесе ҫырнӑччӗ...

— Сывлӑхӗ йӗркеллехчӗ унӑн, ӳпкелешнине пӗрре те илтмен. Сӑнран та чиперех. Хӑй ҫырать пулӗ?

— Уйӑхра виҫ-тӑват ҫыру килет-ха. Хӑш чух хӑйӗн статйисем тухнӑ хаҫатсене те ярса парать, пухса пыратӑп вӗсене... Ах, Риммочка, чунӑм! Хӑҫан тӗплӗрех калаҫма пулӗ-ши санпа? Халь васкас пулать манӑн, ачасем кӗтеҫҫӗ пуль, иккӗшех юлчӗҫ. Эсӗ ху тухса пыраймастӑн ӗнтӗ ман патӑма...

— Ун пек тума май ҫук пуль ҫав.

— Эппин, ҫитес вырсарникун хам килетӗп сан патна, ун чух вара тӑраниччене калаҫӑпӑр. Манӑн йӑлт, йӑлт ыйтса пӗлес килет! Ҫырӑвӗсенче хӑй ҫинчен нимех те ҫырмасть вӑл, хӑш чух тем пытарнӑ пек те туйӑнать...

— Тархасшӑн килӗр, Марина Яковлевна.

— Килетӗп, Риммочка!— Артистка ӑна тата тепӗр хут чуптуса илчӗ.— Вырсарникунччен, эппин...

Артистсем пурте тухса кайма хатӗрленсе ҫитрӗҫ. Хӑйсем юратса пӑрахнӑ тава тивӗҫлӗ артисткӑпа хӗрсем калама ҫук кӑмӑллӑн сывпуллашрӗҫ.

...Сарьялов сержант вара хӑй патне халь тӑтӑшах ҫӳренӗ хӗре, хӑйӗн юррисемпе кӗҫӗр пӗтӗм госпитале савӑнтарнӑ Олимпиада Цветковӑна, аялти вестибюле ҫитиех ӑсатрӗ. Тухса каяс умӗн хӗр-юрӑҫ, никамран именмесӗрех, Сарьялова питӗнчен чуптуса илчӗ.

## 19

Палатӑна таврӑнсан, хӗрсем нумайччен кӗҫӗрхи концерт ҫинчен калаҫса выртрӗҫ. Пурте питӗ килӗшрӗ-ҫке вӗсене: арҫынсем юрлани те, Сарьялов патне ҫӳрекен хӗр-юрӑҫӑ та, фронтри писатель арӑмӗ — тава тивӗҫлӗ артистка калав вуласа пани те, ташшисем те,

— Çапах та — тĕлĕнмелле япала вăл искусство!— терĕ Варя Тополева.— Манран хамран нихçан та ни артистка, ни юрăçă, ни писатель таврашĕ пулас çук, анчах эпĕ вилсе каясла юрататăп искусствăна! Хам курнă кашни кино, спектакль, вуласа тухнă кашни кĕнеке пĕтĕм чуна хускатать манăнне... Хам çинчен те, таврара мĕн пулса иртнине те йăлт манса каятăп вара!

— Чăн-чăн искусство çавăн пек пулмалла та вăл,— терĕ Римма.— Çын чĕрине пырса тивмесен, ун кăмăлне хускатаймасан, кирлĕ те мар вăл.

— Анчах тепĕр чух халтура та нумай пулать,— анаслаcа каларĕ Наташа,— спектакль-концертсенчен те тухса каяс килет, вулама тытăннă кĕнекене те вăрса яратăн...

— Тĕрĕс, ун пекки те пулкалать. Анчах паянхи концерт ирччен тăсăлнă пулсан та йăлăхтарас çукчĕ!

— Леш Сарьялов хĕрĕ вара... ай-ай, маттур! Иккĕшĕ килĕштерсех каяççĕ-ши вĕсем? Е хĕрĕ ăна хĕрхеннипе çеç çӳрет-ши ун патне?

— Кам пĕлет, тен пĕрлешĕç? Пит аван пулатчĕ...

— Мĕн каламалли! Аван пулмасăр!.

Тепĕр ирхине, апат хыççăн, хĕрсен палатине яланхи пекех Огнев пырса кĕчĕ. Художнике хĕрсем хăнăхса çитрĕç ĕнтĕ, ĕмĕртен пĕрле пурăннă çын пекех шутларĕç, ятпах— Витя, Витька, тесе чĕнчĕç. Наташа вара, лешĕ мĕн те пулин майсăртарах каласан, ăна çурăмĕнчен лăп-лап çапкаласа та илчĕ — унăн алли вăрăмрах-мĕн.

Огнев та тӳрех ĕнерхи концерт çинчен калаçма тытăнчĕ. Ăна пуринчен ытларах хĕр-юрăçă килĕшнĕ иккен.

— Кун пек сасăпа вăл пурăна киле мăн хуласенчи опера театрĕсенче пĕрремĕш партисем юрлама пултарать...

— Мĕншĕн мăн хуласенче çеç юрламалла?— терĕ ăна хирĕç Римма.— Вăрçă пĕтсен, пурнăç йĕркене кĕрсен, пирĕн Шупашкарта та опера пулĕ-ха! Чăваш юрăçисем чăвашсене хăйсене кирлĕ пулаççĕ!

Çав вăхтра питĕ тĕлĕнмелле, пачах та кĕтмен япала пулчĕ: палатăна Сарьялов кĕрсе тăчĕ. Ку тарана çити вăл хĕрсен палатине пĕрре те пыманччĕ, вĕсемпе столовăйра, коридорта çеç тĕл пулса сăмах хушкалатчĕ. Анчах хĕрсене Сарьялов тăрук пырса кĕнинчен ытла акă мĕн тĕлĕнтерчĕ: сержант-музыкант госпитальри халатпа мар, вĕр-çĕнĕ обмундированипе. Гимнастеркăпа, брюкипе, атăпа, пилĕкне брезент пиçиххипе туртса çыхнă.

— Салам сире, хитре пикесем!— терӗ вӑл алӑкран кӗрсенех аллине ҫӗклесе.

— Салам, пит пысӑк салам, Сарьялов юлташ! Килӗр, иртӗр малалла, ларӑр, хӑна пулӑр!— тӳрех шавласа кайрӗҫ хӗрсем.

Наташа маларах сиксе тухрӗ:

— Эсир мӗн, сержант юлташ... каятӑр та-им? Киле-и?

— Тек усрамастпӑр, усси ҫук санран, пӳрнӳсем пурӗпӗр ӳсмеҫҫӗ, терӗҫ мар-и!— кулса илчӗ Сарьялов.— Ҫавӑнпа та сирӗнпе сывпуллашма килтӗм...

— Тавтапуҫ ун пек чыс тунӑшӑн!

Сержант пуринчен малтан Римма аллине тытса хытӑ чӑмӑртарӗ.

— Питӗ пысӑк тав сире, Сурская юлташ...

— Мӗншӗн тав тумалла мана?

— Мӗншӗнне хӑвӑрах пӗлетӗр. Йалтах эсир шухӑшласа кӑларнӑ вӗт-ха, Кованый лейтенант каласа пачӗ мана. Эсир ҫав ҫырӑва ҫырса яман пулсан, кам пӗлет... тем пулатчӗ... Тавтапуҫ!

Унтан Сарьялов Варьӑпа Наташӑна, Огнева ал пачӗ.

— Ну, хаклӑ тусӑмсем, сире те часрах сывалса тухма ыр сунатӑп. Пурсӑра та!

— Халь ӑҫта каятӑр ӗнтӗ эсир? Шупашкартах пурӑнатӑр-и?— ыйтрӗ Римма.

— Ӑҫта каям-ха эпӗ тӑван хуларан?— тӗлӗннӗ пек пулчӗ Сарьялов.— Манӑн пӗтӗм пурнӑҫ кунта...

— Хваттер пур-и-ха сирӗн?

— Халлӗхе... пӗр юлташ патӗнче пурӑнмалла пулать.

— Ӗҫлетӗр пуль?

— Ӗҫлемесӗр кам ҫӑкӑр ҫитерет? Ну, чипер юлӑр, телейлӗ пулӑр!— Сарьялов аллипе вӗл-вӗл турӗ те алӑк патнелле чакса кайрӗ.

— Хӑвӑрӑн пурнӑҫ ӑнӑҫлӑ та телейлӗ пултӑр!

Вӑл тухса кайсанах Римма пукан ҫине ларчӗ те, хӑйне тӑрук ҫӑмӑл пулнӑ пек хашш! сывласа ячӗ.

— Мӗн эс ун пекех?—ыйтрӗ Наташа.— Шел пулчӗ-им музыкантпа уйрӑлма?

— Ним те шел мар. Вӑл каллех ҫын пулнӑшӑн савӑнатӑп. Аса ил-ха эсӗ вӑл мӗн тума шут тунине! Ҫав хӑрушӑ каҫ ӑна Кованый асӑрхаса ҫӑлман пулсан...

— Тата эпир унӑн тус-юлташӗсем патне ҫырусем яман пулсан...— хушса хучӗ Наташа.

— Паллах, вӑл ҫырусем питӗ пулӑшрӗҫ.

Сарьяловăн пĕтĕм историне Виктор Огнев та йăлт пĕлнĕ-мĕн. Халь вара вăл та калаçăва хутшăнчĕ.

— Астăватăр-и, Римма, Днепр леш енче эсир мана вут-çулăмран çăлса кăларнă хыççăн эпир... юрату çинчен калаçрăмăр...

— Аманнă хыççăнах, çапăçу хирĕнчех юрату пирки калаçу пулчĕ-и сирĕн? Ун çинчен каламан-çке эс мана?— Огнева шăтарас пек пăхса илчĕ Наташа, юри кĕвĕçнĕ пек пулса.

— Эс тĕрĕс ăнлан-ха, таçталла ан кай,—терĕ ăна Огнев.— Юрату çинчен пирĕн, епле калас... теориллĕ, философиллĕ калаçу пулчĕ унта.

— Эп пĕлнĕ тăрăх — теорипе практика тачă çыхăнса тăраççĕ, философи питех кирлĕ те мар ун чух,— парăнмарĕ Наташа.

— Тăхта-ха эсĕ, çынна калаласа пĕтерме пар,— пӳлчĕ ăна Варя.

— Калатăр ара, кам чарать! Анчах вăл паян ăслă сăмахах калассăн туйăнмасть-ха мана...

— Каласа пĕтер, Витя, хăвăн шухăшна!— терĕ Римма та.

— Ун чух эпĕ юрату çĕр çинче чи хăватлă вăй пулни çинчен каларăм,— терĕ Огнев.— Юрату çынна çĕклени, хавхалантарни, малалла илсе пыни çинчен...

— Нимĕнле Америка та уçман эсĕ, ăна кашниех пĕлет! Мĕн тума асăнтăн халь эс куна?— каллех хирĕçлерĕ Наташа.

— Ак çак сирĕн музыкант пирки калатăп! Юрату çăлса хăварчĕ-çке ăна, юрату тепĕр хут çын турĕ! Çапла мар-им? Леш хĕрĕ унăн малтанах килĕштернĕскер пулнă курăнать, анчах ку хăйĕн суранĕ пирки асапланса ăна курăнасшăн та пулман. Сирĕн çыру хыççăн хĕрĕ кунта çӳреме тытăнсан, ун юратăвĕ çĕнĕрен вут-çулăм пек ялкăшма тытăннă, каллех пурнăç хакне, унăн илемне ăнланнă вăл... Куртăр пуль, епле маттур халь, ĕмĕрне те унăн пуçĕнче тискер шухăшсем пулнă темелле мар-иç? Çапла вĕт?

— Тĕрĕс, Витя, эпир пуйăс çинче пĕрле килнĕ чух та, кунта çитсен те — малтанхи кунсенче — ун çине пăхсан чун ырататчĕ,—терĕ Римма.— Эпĕ вăл çакăн пек хаваслă пуласса шанман та!

— Юрату турĕ çавна, юрату!— пĕççине çапса илчĕ Огнев.— Тĕрĕс калана эп сире Днепр леш енче! Ун чух килĕшмерĕр манпа, юрату çинчен вăрçă хыççăн тин калаçас

пулать, терӗр. Анчах эпӗ — юрату яланах, пур чухне те ҫӗнтерекен вӑй, терӗм... Ҫак музыкантпа куҫкӗрет пулнӑ факт ман шухӑша тепӗр хут ҫирӗплетет. Тӗрӗс мар-им?

— Ах, тур, тӗлӗнтерчӗ! — тутине мӑкӑртса, пуҫне пӑркаласа илчӗ Наташа.— Пит нумай пӗлетӗн-ҫке эсӗ! Комиссара калас-ха, сана госпитальти аманнисемпе пӗтӗм медперсонал валли ҫак темӑпа лекци вуласа пама хуштӑр.

— Пултаратӑп! — сиксе тӑчӗ хӗрсе кайнӑ Огнев.— Питӗ вӑйлӑ лекци туса паратӑп. Тӗнчери чи паллӑ художниксен, писательсен произведенийӗсенчен тӗслӗхсем илсе, патриотизмпа ҫыхӑнтарса...— Огнев самантлӑха тытӑнса тӑчӗ те пӳрнипе Наташӑна хӑйне тӗллесе кӑтартрӗ.— Тӗслӗх вырӑнне сана хӑвна та илетӗп!

— Пӗтрӗм! Эп хӑш енчен тӗслӗх пулма пултаратӑп-ши тата? — кулса ячӗ Наташа.— Ку тарана ҫитсе никамах та юратса курман-ха, ерҫӳ пулман манӑн ун валли.

— Пулнӑ, юратнӑ! Халь те юрататӑн! — кӑшкӑрчӗ Огнев.

— Ой! Кама-ши? Сана хӑвна юрататӑп тесе шутламастӑн-и тата эсӗ хӑвӑн айван пуҫупа?

— Тӑван Ҫӗршыва юрататӑн! Хамӑр халӑха! Аннӳне, шӑллусене, юлташусене... Ахальтен хӑвӑн ирӗкӳпе фронта кайнӑ-им эсӗ? Ахальтен вунсакӑр нимӗҫе вӗлернӗ-и? Ахальтен юн тӑкнӑ-и?

— Ну, ку вӑл пачах урӑх япала, тусӑм...

— Нимӗн те урӑх япала мар! Юратӑва ӑна питӗ анлӑн, тарӑннӑн ӑнланас пулать, тусӑм! Анчах хӑшӗсем хӗрпе каччӑ чуптунине ҫеҫ юрату тесе шутлаҫҫӗ. Тӗрӗс мар ку. Юрату вӑл...

Художник каласа пӗтерейменрӗ, алӑк ярр! уҫӑлчӗ те палатӑна, клюшкисемпе кӗмсӗртетсе, Андрей Кованый кӗрсе тӑчӗ. Темшӗн пит пӑлханнӑ тӗслӗ хӑй, ялан тирпейлӗ тураса хуракан ҫӳҫӗ арпашнӑ, куҫӗсем йӑлтӑртатаҫҫӗ. Палатӑрисем пурте шӑпах пулчӗҫ.

— Ырӑ кун, хӗрсем! Салам, художник! — терӗ вӑл кӗнӗ-кӗмен, йывӑррӑн сывласа.

— Салам, лейтенант... Иртӗр, питӗ хавас эпир сире курма!

Кованый хыҫҫӑр пукан ҫине ларчӗ.

— Мӗнле дискусси тӑватӑр ирех? Коридорта илтӗнет...

— Халь кӑна Сарьялов сывпуллашса тухса кайрӗ те, ун ҫинчен калаҫатпӑр-ха,— терӗ Римма.

— Ҫапла ҫав... Тухса кайрĕ ман подшефнăй,— ассăн сывласа илчĕ Кованый.— Ҫын пулчĕ пек туйăнать. Тен, авланса та ярать-и-ха. Ҫавăн пекрех туйăнчĕ юлашки кунсенче. Пит лайăх пулать вара.

— Юрату яланах ҫĕнтерет,— терĕ Огнев, никам ҫине пăхмасăр, хăй тĕллĕн калаҫнă пек.

— Пирĕн художник юрату ыйтăвĕпе пысăк специалист пулса кайнă-ха, лейтенант юлташ,— куллине пытарма тăрăшса каларĕ Наташа.

— Мĕн, сана хăйĕн чĕрине уҫса пачĕ-им?— ун ҫине тĕлĕннĕ пекрех пăхрĕ Кованый.— А мĕн? Лайăх хĕр эсĕ, сана кирек кам та юратмалла. Кăшт кутăнрах пулмалла та ĕнтĕ, анчах ку темех мар, ҫирĕпрех тыткаласан йăвашланатăн...

— Пулаймасть пуль ун пекки, лейтенант, эп хам хуть те кама йăвашлатма пултаратăп. Питех итлеменни лексен — команда паратăп ҫеҫ: кругом марш, шире шаг!

— Охо! Каларăм вĕт! Туягăн-и, художник, епле телей кĕтет сана малашне.

Пурте кулса ячĕҫ. Огнев та, кулкаласа, пуҫне пăркаларĕ.

— Мĕнле ҫĕн хыпарсем пур сирĕн таврара?— ыйтрĕ унтан Римма Ковалайран, ăна хирĕҫ койка ҫине ларса.

— Хыпарсем пур-ха ҫав, питĕ лайăх хыпарсем пур, ҫавăнпа килтĕм сирĕн пата,— терĕ те Кованый тулли кăмăлпа, кĕсйинчен лутăрканса пĕтнĕ кăвакрах хут кăларчĕ.— Савăнăҫ манăн, хĕрсем!.. Килтен ҫыру илтĕм! Акă...

— Чăнах-и?! Аннӳпе йăмăку пурăнаҫҫĕ-и? Сывă-и? Мĕн ҫыраҫҫĕ?— тăрук хавхаланса кайса, пĕр-пĕрне пӳлсе ыйтма тапратрĕҫ хĕрсем.

— Пурăнаҫҫĕ, сыхланса юлнă!— аллипе хута силлесе илчĕ Кованый.— Тем те тӳссе ирттернĕ, тамăк витĕр тухнă, темелле, ҫапах та пурăнаҫҫĕ. Иккĕшĕ те! Халь мана кĕтеҫҫĕ...

— Ой, епле пысăк савăнăҫ ку!..

— Саламлатпăр, лейтенант!

— Кунтан тухсан отпуск параҫҫĕ те акă — кайса куратăр...

Пурте Кованый аллине тыта-тыта чăмăртарĕҫ.

— Манăн та ҫĕр ҫинче телей пурах-мĕн,— ассăн сывласа илчĕ вăл.— Тата эп ҫавăн чухлĕ юн тăкни ахаль пулмарĕ, тес пулать. Мухтанса каламастăп та, ҫапах...

— Тĕрĕс калатăр, лейтенант!

Чылайччен шавласа ларчĕç çамрăксем. Пуринчен ытларах вăрçă хыççăн кам мĕн тăвасси çинчен калаçрĕç. Кашнинех хăйĕн ĕмĕчĕ, суйласа илнĕ пурнăç çулĕ пулнă-çке. Çав çулпа çирĕппĕн, ним пăркаланмасăр утас пулать...

Тепĕр икĕ кунтан хĕрсемшĕн те питĕ пысăк савăнăç пулчĕ: Катя Хорькова ача çуратмалли çуртран таврăнчĕ. Унăн ури тӳрленсе çитмен пирки ăна ачи-мĕнĕпех тепĕр хут хĕрсен палатине хучĕç. Ачи ытармалла мар иккен — çав тери паттăр, мăнтăркка, хуп-хураскер.

— Упа çури ку! — терĕ Наташа ăна курсанах.— У-ух, мĕнешкел гвардеец тума пĕлнĕ эсĕ, Катюша!..

Вара пĕр-пĕринпе ăмăртса тенĕ пекех пăхма тытăнчĕç ăна. Пĕри чăпăл тăвать, тепри çиттисем çăвать, виççĕмĕшĕ алла тытса сиктерсе çӳрет. Катя патне кашни кунах пырса тĕрĕслекен госпиталь начальникĕ Зоя Григорьевна кулса та илчĕ вĕсенчен:

— Лайăх практика ку сирĕншĕн. Пурăнан пурнăçра кирлĕ пулĕ-ха ача пăхма пĕлни...

Çав кунсенчех Риммăн та пĕтĕм чунтан хĕпĕртемелли сиксе тухрĕ: вăл фронтран, медсанбат хĕрĕсенчен, пысăк çыру илчĕ. Ăна Пĕчĕк Вера аллипе çырнă, анчах хыçала «колхозĕпех» — Пĕчĕк Верăран хăйĕнчен тата Иринăран— Риммăн чи çывăх юлташĕсенчен пуçласа аслă хирург Басов таранах ал пуснă. Чи аялта, пуринчен кайра, старшина хушамачĕ те пур! Ахăртнех, çыруне çырсан Пĕчĕк Вера Риммăна астăвакансене пурне те ятарласа ал пустарса çӳренĕ пуль!

Пуринчен те салам, пуринчен те ыр сăмах: часрах сывал, хамăр патах таврăнма тăрăш! Дивизи халлĕхе малтанхи вырăнтах тăрать иккен. «Çулласăр пирĕн кунта «сабантуйсемех» пуласси курăнмасть-ха, анчах вĕсене тивĕçлипе кĕтсе илсе ирттерсе яма халех хатĕрленетпĕр... Унччен эсĕ те пирĕнпе пĕрле пулăн-ха, пирĕн хаклăран та хаклă тусăмăр...»

Анчах çыру вĕçĕнче ал пуснисем хыççăн, урăх тĕслĕ чернилпа хушса çырни вара Римма чĕрине çав тери пăлхатса, ыраттарса ячĕ: «Аманнисем халь сахал пулаççĕ,— тенĕ Пĕчĕк Вера,— анчах иртнĕ каç пирĕн пата редакцинчи капитана, сирĕн чăваш писательне, ним пĕлми илсе килчĕç. Вĕсем ОГУпа*, малти траншейăсем патне пырса, тăшман салтакĕсене агитаци тунă-мĕн, çав вăхăтра фрицсем

---

*ОГУ — (вырăсла) окопная громкоговорящая установка.

вёсене йывăр минăсемпе хупласа хунă. Кун çинчен пире çав машина шоферĕ каласа пачĕ. Вăл та аманнă, анчах капитан пекех мар. Капитана паян ирех арми госпитальне ăсатрĕç...»

Римма çакна вуласанах кăвакарса кайрĕ, чĕтреме тытăнчĕ.

«Иван Васильевич... Иван Актай, пирĕн паллă, пурте юратнă писатель, фронтра маншăн тăван пичче вырăнне пулнă сын... Нивушлĕ вилмеллех амантнă ăна? «Ним пĕлми илсе килчĕç», тенĕ Вера. Арми госпитальне илсе каяс умĕн тăна кĕни-кĕменни çинчен те каламан тата... Пĕр сăмах çырас хуть ухмах хĕрачан!»

Палатăра çав вăхăтра пĕччен пулнипе, вăл, ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр, каллĕ-маллĕ уткаласа çӳреме тытăнчĕ, çав вăхăтрах хăй тĕллĕн калаçрĕ:

— Мĕн пулса тухать-ха капла? Мĕн тумалла манăн? Вырсарникун кунта ун арăмĕ килет. Паллах, манран Иван Васильевич пирки тĕпчеме тытăнать. Вăл мĕнле те ку мĕнле... Унăн фронтри кашни утăмĕ çинчен ыйтать. Халь йывăр аманни çинчен пĕлмест-ха вăл. Çак хушăрах ăна никам та пĕлтерме пултарайман. Вилнисем çинчен çеç çийĕнчех çырса яраççĕ фронтран, аманнисем пирки çырмаççĕ... Анчах эп пĕлетĕп... Каламалла-и ăна, çук-и? Вăл ман пата упăшки çинчен ыррине илтме килет, эп ăна хăрушă хыпар пĕлтеретĕп-и? Çук, кун çинчен шарлас пулмасть. Çунтарас мар хĕрарăм чĕрине... Иван Васильевич вилсех каймасан, кăшт тăхтарахпа, тӳрленме пуçласан, хăй аманни çинчен хăех çырса ярать. Хăрушă пулмасть вара. Аманни — вилни мар. Сахал салтак аманать-и кашни кун! Сываласçĕ вĕт... Нумайăшĕ каллех строя тăрса малтанхинчен те хастарлăрах çапăçаççĕ!.. Иван Васильевич та сывалать. Çук, çук, арăмне эп халь нимĕн те каламастăп. Ыраттармастăп ун чунне. Эп фронтран çыру илнине пĕлмест вăл. Ан тив, халлĕхе лăпланса пурăнтăр. Ан пăлхантăр...

Çапла шут турĕ Римма. Хăй шухăшне хĕрсемпе Ковалая каласа пачĕ, вĕсем те халлĕхе шарлама хушмарĕç.

— Пĕлтермесен авантарах пулать. Пурăна киле хăех пĕлет вăл — е писатель хăй çырса ярать, е...

«Вăл вилни çинчен лерен пĕлтереççĕ», тесшĕн пулчĕç ĕнтĕ Римма тусĕсем, анчах çав хăрушă сăмаха каламарĕç.

Анчах ĕçсем пачах урăхла çаврăнса тухрĕç.

Вырсарникун, кăнтăрлахи апат хыççăн, ватă санитарка Риммăна аялти тĕлпулу пӳлĕмĕнче «питĕ хитре майра»

кетсе ларни ҫинчен пырса каларӗ. Кам кӗтнине Римма тӳрех тавҫӑрса илчӗ — Актай арӑмӗ, артистка ӗнтӗ, урӑх никам та пулма пултараймасть. Тӳрех ҫав тери пӑлханса кайрӗ: ак хайхи, ҫитрӗ уншӑн йывӑр самант! Мӗнле каласас унла, упӑшки ҫинчен тӗрӗссине каламасӑр мӗнле иртерсе ярас? Халиччен нихҫан та ҫынна улталаса курман...

— Атьӑр манпа пӗрле, пӗччен питӗ йывӑр пулать мана,— юлташӗсене чӗнчӗ Римма.

Наташӑпа Варя хапӑл тусах килӗшрӗҫ.

Тӗлпулу пӳлӗмӗнче паян ҫынсем нумай-мӗн. Темле шефсем пынӑ курӑнать: пӳлӗм варринчи сарлака сӗтел ҫинче кучченеҫсем майлаҫҫӗ. Пионерсем пынӑ — пӗр ҫирӗмӗн те пулӗ — тумрасемпе, балалайкӑсемпе, шӑхличсемпе. Концерт кӑтартаҫҫӗ ӗнтӗ аманнисене.

Хӗрсем ҫынсем хушшипе хӗсӗнкелесе маларах иртрӗҫ те пӗр кӗтесре, пысӑк фикус чечекӗ ҫумӗнче, хӑйсем юратнӑ артистка питӗ салхуллӑн, шухӑша кайса, ҫӗрелле пӑхса ларнине курчӗҫ.

— Ырӑ кун, Марина Яковлевна...

Артистка картах сиксе ҫӳлелле пӑхрӗ те тӳрех ура ҫине тӑчӗ.

— Сывлӑх сунатӑп, Риммочка... Салам сире, хӗрсем.

Вӑл вӗсене ал пачӗ, пичӗсенчен чуптуса илчӗ те хӑй вырӑнне ларчӗ. Хӗрсем ун умне ик пукан ҫине вӗҫҫӗн вырнаҫрӗҫ.

— Мӗнле пурӑнатӑр, пикесем, мӗнле ҫӗн хыпарсем пур сирӗн? — пусӑрӑнчӑк сасӑпа ыйтрӗ писатель арӑмӗ.

— Чиперех-ха, сывалса пыратпӑр майӗпе. Ҫӗнни нимех те ҫук... Хӑвӑр мӗнле?

— Эсир... эсир фронтран, хӑвӑрӑн юлташсенчен, ҫырусем илкелетӗр-и? Ҫыраҫҫӗ-и сирӗн пата? — Куна артистка Риммӑна куҫӗнчен пӑхса ыйтрӗ.

Риммӑн чӗри пӑчӑртанса илчӗ. Ак, ӗнтӗ, унӑн суяс, ҫак тап-таса куҫлӑ, уҫӑ сӑнлӑ ырӑ хӗрарӑма улталас пулать!..

— Ҫыркалаҫҫӗ... илкелетӗп хӑш чух, анчах халь ҫинех илмен-ха,— терӗ те вӑл, унӑн пичӗ-куҫӗ пӗҫерсе кайрӗ.

— Эппин... эппин, эсир нимӗн те пӗлместӗр?

— Ҫ-ҫук... Иван Васильевич тем ҫырса ячӗ-им? — суйнӑшӑн аван мар пулнипе хӗрелсех пычӗ Римма.

— Иван Васильевич хӑй ҫырман ҫав... ун вырӑнне вӗсен редакторӗ ҫырса ячӗ! Акӑ вулӑр...— Хӗрарӑм сумкинчен ҫыру кӑларса пачӗ те, питне ик аллипе хупласа макӑрса ячӗ.— Аманнӑ вӑл! Питӗ йывӑр аманнӑ! Хӑрушӑ...

Римма сарса тытнă çырăва хĕрсем пурте хăвăрт кăна вуласа тухрĕç. «Политотдел хушнă пĕр пысăк ĕçе тунă чух эпир те сирĕн пекех юратакан Иван Васильевича амантрĕç... Эп ăна арми госпитальне çитиех ăсатрăм, ун патĕнче пĕр талăк пурăнтăм. Çак çырăва вăл хăй хушнипе çыратăп... Эсир ытлашши ан хуйхăрăр, сывалать вăл, кĕçех акă хăй те çырса ярĕ...»

Пĕр хушă Римма хытнă пек пулса ларчĕ.

Чăн та йывăр аманнă, эппин, писатель. Ахаллĕн хаçат редакторĕ унпа пĕрле арми госпиталĕ таран каяс çук. Актайпа мĕн пулассине пĕлесшĕн пулнă вăл. Тăна кĕртессе кĕтнĕ. Тĕрĕссине çырать пулсан — кĕтсе илнĕ. «Çырăва вăл хушнипе çыратăп...» Апла, вĕсем иккĕшĕ калаçма пултарнă пулать-ха.

— Лăпланăр, Марина Яковлевна, кунта ытла хăрушшинех курмастăп эпĕ...— терĕ унтан Римма, çаплах макăракан артисткăна çав тери хĕрхенсе.

— Епле хăрушши çук пултăр?— тăртаннă куçĕсене тутăрпа шăла-шăла пăхрĕ ун çине артистка.— Çыруне те хăй çырмасть пулсан вара... Кам пĕлет, тем пулнă-ха ăна! Те суккăрланнă, те алли çук унăн, те...

Хĕрарăм каллех татăлса йĕме тытăнчĕ.

— Пĕтрĕ ман телей... Тен, хальччен вилсе те кайрĕ-и...

— Ун пек шутлама кирлĕ мар, Марина Яковлевна! Лăпланăр! Иван Васильевич темле йывăр аманнă пулсан та, тен, малтанах тăнне çухатнă пулсан та — калаçакан пулнă вĕт-ха! Çыруне вăл хушнипе çырнă... Тăна кĕнĕ, калаçнă, эппин, вăл!

— Йăпăртлăха тăна кĕнĕ пуль те, çавăнтах чунĕ тухнă пуль...— Артистка каллех куçĕсене шăлкаласа Римма çине пăхрĕ.— Чалдун писатель çинчен илтнĕ-и эсир?

— Пит лайăх пĕлетĕп ăна, вăл, ватă пулсан та, хĕрĕх пĕрремĕшĕнчех фронта хăй ирĕкĕпе кайнă, ун пирки мана Иван Васильевич каланăччĕ...

— Вилнĕ вăл халь.

— Вилнĕ?!

— Аманнă та, госпитале илсе çитерсен операци сĕтелĕ çинче вилсе кайнă. Нумай та пулмасть, мартăн иккĕмĕшĕнче. Енер писательсен председателĕ каларĕ мана. Пурте питĕ хуйхăраççĕ...

— Хуйхăрмасăр ун пек çыншăн! Питĕ лайăх писательччĕ...

— Иван Васильевич та, çавăн пек, госпитальте...

Татах тӳссе лараймарӗ артистка, макӑрса ячӗ.

— Тархасшӑн лӑпланӑр, Марина Яковлевна!— хӑй те кӗҫ-вӗҫ макӑрса ярас патне ҫитсе ӳкӗтлерӗ Римма.— Вӑл хӑрушӑ шухӑшсене кӑларса пӑрахӑр пуҫран! Сывалать акӑ сирӗн Иван Васильевич, курӑр сывалать! Эпир ӗнтӗ...— Римма юлташӗсем ҫине кӑтартрӗ,— эпир аманнисене тем чухлех курнӑ, пӗлетпӗр. Пуҫран, кӑкӑртан, хырӑмран, таҫтан-таҫтан аманса пӗтнисем те, йывӑр контузи хыҫҫӑн илтми, калаҫайми пулнисем те сывалаҫҫӗ. Пирӗн медицина халь тем те тӑвать!

— Куҫсӑр пулсан та, ал-урасӑр пулсан та киле таврӑнтӑрччӗ... Урӑх мана нимӗн те кирлӗ мар...— пӑшӑлтатрӗ артистка.— Ачасен ашшӗ пултӑр... чӗрӗ ҫын...

— Пулать, Марина Яковлевна, шанӑр, ӗненӗр, чиптипер сывӑ ҫын пулса таврӑнать акӑ Иван Васильевич! Ун пек ҫын пӗтме пултараймасть, вӑл сире ҫеҫ мар, пӗтӗм чӑваш халӑхне кирлӗ-ҫке...

Артистка пӗр минут пек шухӑша кайса чӗнмесӗр ларчӗ, унтан Римма ҫине ӑшшӑн пӑхса, ӑна пуҫӗнчен ачашласа илчӗ.

— Чӑн та «сестра милосердия» иккен эсӗ...

## 20

Вӑхӑт — чи лайӑх та ӑста тухтӑр, малалла шунӑҫемӗн сурансене тӳрлететет, ӳт илтерет, ҫынсен хуйхи-суйхине те сирет, майӗпе чи хӑрушӑ самантсене те мантарать, чун-чӗрери йывӑрлӑха ирттерсе ярать, ҫӑмӑллӑх кӳрет...

Ӗнтӗ госпитальтен нумай-нумай ҫын сывалса тухса кайрӗ. Пирӗн хӗр-туссен суранӗсем те тӳрленсе пычӗҫ. Апрелӗн малтанхи эрнинче хӗрсен палатинчен Варя Тополева санинструктор тухса кайрӗ, ун хыҫҫӑн, кӑшт тӑхтасан, медкомисси Наташа Тимкинӑна та ҫара таврӑнма юрӑхлӑ, тесе йышӑнчӗ. Вӑл каяссине пӗлсен, салтак-художник Виктор Огнев та госпиталь начальникӗн кабинетӗнчен тухма пӗлмерӗ, хӑйне фронта яма ыйтрӗ, вара вӗсем иккӗшӗ пӗр кунах документсем илсе запаслӑ полка тухса кайрӗҫ. Питӗ кӑмӑллӑ, чӗрене хускатмалла сывпуллашу пулчӗ вӑл. Хӗрсем куҫҫуль юхтарсах ыталашрӗҫ, чуптурӗҫ, пӗр-пӗрне килти адресӗсене пачӗҫ, сырусем ҫӳретме, вӑрҫӑ хыҫҫӑн тӗл пулма сӑмах пачӗҫ. Йӑваш кӑмӑллӑ Огневӑн та куҫӗсем шывланчӗҫ.

— Кунта эп шухӑшласа хунӑ «Санитарка» картина ӳкерме май килмерӗ, каҫар,—терӗ вӑл Риммӑна,— анчах

вăрçă хыççăн эп ăна ӳкеретĕпех, улталать тесе ан шутла! Халь эп сан сăнна куç хупсах ӳкерме пултаратăп...

— Асту вара, репродукцине те пулин ярса пама ан ман!

Риммăпа Кованый урама тухсах ăсатрĕç вĕсене, куçран çухаличченех ал сулса тăчĕç...

Унтан Катя Хорькова та тухса кайрĕ, ăна ватă санитарка «тетя Сима» хăй патне пурăнма илчĕ. Ун ачине Зоя Григорьевна яслине вырнаçтарчĕ, хăйне протезлă пушмак туянтарса госпиталь канцелярине ĕçлеме хăварчĕ.

Тунсăхлă пулчĕ Риммăна тусĕсем кайса пĕтсен. Вăл хăй те госпитальтен кашни минутрах тухса кайма хатĕр пулчĕ, анчах унăн хулĕ питĕ вăраххăн тӳрленсе пычĕ. Тухтăрсем ĕнтĕ ик-виç хут та гипса илсе рентгенпа пăхрĕç те каллех гипслаcа лартрĕç.

— Кĕтес пулать-ха...

Ĕççĕр ларас килменнипе, вăл перевязочнăйĕнчи сестрасемпе санитаркăсене çуса тасатнă бинтсене чĕркесе майлама, терапи сестрисене палатăсем тăрăх чирлисене эмелсем парса çӳреме пулăшма тытăнчĕ. Час-часах аманнисене хаçатсем вуласа пачĕ. Çав хушăрах Иван Актай писателе темиçе хут та аса илчĕ — мĕнле-ши вăл? Пĕррехинче театра шăнкăравларĕ, анчах ăна «Марина Яковлевна çук, гастрольте», терĕç. Ним те пĕлме пулмарĕ вара.

Совинформбюро вăл кунсенче тăтăшах ырă хыпарсем пĕлтерсе тăчĕ. Кăнтăрта пирĕн çарсем, хамăрăн вăрçăччен-хи чикĕ урлă каçса, Румыни çĕрĕ çине пырса кĕнĕ. Виççĕмĕш Украина фрончĕ çарĕсем Одессăна ирĕке кăларнă. Унтан Керчь, Тирасполь... Çурçĕртерехри фронтсенче çеç нимех те пулман.

«Çулласăр пирĕн кунта «сабантуйсемех» пуласси курăнмасть-ха»...— аса илчĕ Римма Пĕчĕк Вера çырăвĕнчи сăмахсене.

Анчах темшĕн-çке урăх çырмарĕ çав хĕрача. Пĕлме çук, тен, мĕн те пулин пулнă ăна? Унта часах вĕт...

Халь вĕсем Ковановăйпа кашни кунах тĕл пулчĕç. Столовăйра та пĕр сĕтел хушшинче ларчĕç, кино курнă чух та, лекцисем вăхăтĕнче те юнашар пулчĕç. Хăшĕсем уççăнах шак хума пуçларĕç вĕсем еннелле пуçпа сулса:

— Кунтан тухсанах ЗАГСа каяççĕ пуль кусем...

— А мĕн, шутсăр лайăх мăшăр!

Пĕррехинче вара çапла пулчĕ. (Римма, вăтаннипе, çĕр тĕпне анса каятчĕ вĕт, тупата!) Столовăйран тухсан, вĕ-

сем коридорпа пыратчĕç; Кованый ĕнтĕ клюшкăсăрах, пĕр туяпах çӳрекен пулнăччĕ. Чӳрече умĕнче каласса тăракан икĕ çамрăк тĕлĕпе иртнĕ чух Римма вĕсен хуллен кăна калана сăмахĕсене илтех кайрĕ...

— Кусем ĕç кăлараççĕ пулмалла,— терĕ пĕри.

— Çуркуние ара, турпас çине турпас...— килĕшрĕ унпа тепри.

— Çитменнине тата хĕрĕ палатăра пĕччен пурăнать пулас-ха.

— Уншăн мĕн? «Фронтовая!» Лере те...

Риммăн пичĕ-куçĕ пĕçерсе кайрĕ, анчах вăл, илтмĕш пулса, кăвăртрах малалла утрĕ çеç. Анчах çакна Кованый та илтсе юлнă-мĕн. Вăл вара малалла каймарĕ, тăрук пăрăнса, çавсем патне пычĕ те пĕрне тӳрех кăкăрĕнчен ярса тытрĕ.

— Шăлусем тĕрĕс-тĕкелех-и санăн?— çилĕллĕн ыйтрĕ вăл.

— Мĕн вара?— тĕлĕннĕ пек пулчĕ лешĕ.

— Халех ак пĕр шăл та юлмасть санăн!

— Мĕншĕн? Мĕн турăм эпĕ?

— Чĕлхӳна тытма пĕлменшĕн! Е йăтатăп та акă, чӳречерен кăларса ывăтатăп! Мĕн лăпăртатрăн эс халь, сопляк?— Кованый ăна каллĕ-маллĕ силлекелесе илчĕ.

— Эп нимĕн те каламан...— хăрасах кайрĕ лешĕ.

— Мĕнле тивĕçпе тапăнатăн эсĕ çынна?— терĕ тепри, анчах унăн та хăранипе тутисем кăвакарса пычĕç.

— Хуп çăварна, шăрка! Астăвăр, тепре çакăн пеккине илтсен, иксĕре те калаçайми тăватăп! Ĕмĕр манмăр мана!

Унтан кăкăртан тытнине стена çумнелле тĕртсе ячĕ те варт! çаврăнса утрĕ.

— Мĕншĕн ун пекех эсĕ... Аван мар апла, хулиганла пулса тухать,— терĕ ăна пăлханса кайнă Римма хуллен.

— Вĕсен лапра сăмахĕсене илтме аван-и? Çийĕнчех тăн кĕртес пулать ун пеккисене!— татса хучĕ Кованый.— Лăпăртисене тӳсме пултараймастăп!..

Çанталăк кунран-кун ăшăтса пычĕ. Иртен пуçласа каçчен хĕвел пăхать. Урамра шарласа шыв юхать. Кĕçех госпиталь умĕнчи скверта юр та юлмарĕ, çĕр курăнчĕ. Хĕвел еннелле тухакан сарлака чӳречесем кунĕпех уçă тăчĕç. Ырлăх! Сап-сар хĕвел, кăкăра уçса яракан таса сывлăш... Скверти йывăçсем çинче ывăнма пĕлмен кайăксем чĕвĕлтетеççĕ. Урамри мăн репродуктортан пĕрмай музыка илтĕнет...

Аманнисем урама, çурт умĕнчи саксем çине, хĕвел ăшшине тухса ларма пуçларĕç. Шахмăтла выляççĕ унта, домино çапаççĕ. Час-часах хăйсен процедурăсене каймалли çинчен те манаççĕ те, санитаркăсем пырса хӳтермесĕр те хускалмаççĕ.

Ку çеç те мар: утаканнисене, сестрасемпе пĕрле, хулана тухса çӳреме те ирĕк пачĕç. Атăл хĕррине, кинона, кăнтăрла кăтартакан спектакльсене.

Пĕррехинче, хула урамĕсем тăпе пуçласан, Кованый та хула курса çӳресшĕн пулчĕ.

— Эс кунти çын, экскурсие илсе кай-ха мана,— терĕ вăл Риммăна.— Виçĕ уйăха яхăн пурăнатăп сирĕн хулара, анчах хам ăна куçпа та курман...

— Утаятăн-и? Уруна сиенлĕ пулмасть-и?— иккĕленсе тăчĕ хĕр.

— Аптрамастăп. Кунсăр пуçне тата... хăнăхас пулать утма! Тренировка кирлĕ мана!

Госпиталь начальникĕ вĕсене чармарĕ. Ытлашши ĕшенме хушмарĕ çеç. Вара вĕсем тумланчĕç те, госпитальтен тухса, Карл Маркс урамĕпе ерипен кăна анаталла, Атăл еннелле утрĕç. Кованый ытларах туя çине тĕренсе пычĕ, тĕл пулакан лакăм-тĕкĕмсем урлă каçмалла пулсан, Римма ăна сывă аллипе хулĕнчен тытса пулăшрĕ.

Урамра тĕл пулакансем çак тĕлĕнмелле «мăшăра» (каччи уксахлать, хĕрĕ пĕр аллине хутлатса мăйĕнчен çакса янă...) чарăна-чарăна пăхса юлчĕç. Хĕрлĕ площаде çитеспе пĕр пĕчĕк çеç карчăк вĕсем çине вăрахчен пăхса тăчĕ те, тăрук хурланса, куççуль юхтарсах сăхсăхса илчĕ:

— Ах, тур-тур! Ытла та хĕрхенмелле-çке! Мĕнешкел çамрăксене чăлах тăваççĕ! Хăçан чарăнĕ ку шуйттан вăрçи!..

— Илтрĕн-и, пире ĕнтĕ чăлах тесе шутлаççĕ!— кулса илчĕ Кованый.— Анчах эпир хамăра хамăр кăтартăпăр-ха...

...Атăл пăртан тасалнă та тинĕс пек сарăлса выртать. Çил-мĕн çуккипе вăл питĕ лăпкă. Юхни те сисĕнмест, пĕр вырăнта тăнăн туйăнать.

— У-у! Хăватлă!— терĕ Кованый тулли кăмăлпа.— Пирĕн Днепра çитеймест те ĕнтĕ...

— Кăштах мухтанас килчĕ-им, лейтенант?— ун çине пăхса кулса илчĕ Римма.

— Пĕртте мухтанмастăп.

— Курнă-çке эп сирĕн Днепра, каçнă ун урлă... Аçтан пирĕн Атăла çиттĕр вăл?

— Хăш тĕлте каçнă?

— Гомель облаçĕнче, Лоевран çӳлерехре.
— Апла пулсан, эсĕ чăн-чăн Днепра курман-ха.
— Ăçта вара вăл, чăн-чăнни?
— Пирĕн патра, анат вĕçĕнче. Ун пек илем урăх ниçта та çук.
— Ку мĕн... хайхи «вырăнти патриотизм» тени-и?— каллех кулчĕ Римма.
— Хуть те мĕнле шутла.
— Пирĕн Атăл килĕшмест, эппин, сана?
— Ма килĕшмест пултăр? Питĕ килĕшет. Атăлĕ хăй те, Атăл çинче çуралса ӳснĕ сынсем те...— Кованый хĕр аллине чăмăртаса ун кусĕнчен пăхрĕ,— ытармалла мар... Сăмахран — эсĕ ак...
— Ытлашши каласатăн, лейтенант,— ун çине хулпуççи урлă пăхса аллине туртса илчĕ хĕр.
Вĕсем сыран хĕррипе хуллен кăна тăвалла утрĕç. Еç вăхăчĕ пулсан та, Атăл хĕрринче сынсем чылай çӳреççĕ-мĕн. Çар тумĕ тăхăннисем те тĕл пулаççĕ. Госпитальсенчен тухнисем, отпуска килнисем пуль ĕнтĕ. Вĕсем лейтенант погонĕсене çакнă Кованăя честь парса саламлаççĕ, анчах вăл хăй, сылтăм аллинче туя пулнипе, пуçĕпе çеç сула-сула илет.
Пĕр хушă чĕнмесĕр пычĕç.
Римма сасартăк тăвата çула яхăн каялла вĕсем Сергейпа иккĕшĕ çакăнта, Атăл хĕрринче, пĕрле пулнине, çакăн пекех алла-аллăн тытăнса утнине аса илчĕ. Ак, çак киселсе кайнă сак çинче те ларнăччĕ вĕсем пĕр хушă. Унтан каллех тăрса тăвалла утрĕç, «юрату хысакне» çитсе, унта вăрахчен тăчĕç... Сергей, каласнă май, пĕрмай лăпкă та çапсутă Атăл çине, ем-ешĕл йăлăм еннелле пăхрĕ. Çамрăк каччă Шупашкарпа, ун таврашĕнчи ытарма çук илемпе сывпуллашрĕ çав ун чух. Юлашки хут... Унтанпа кĕçех тăвата çул çитет ĕнтĕ...
Çаксем çинчен аса илсе шухăша путнипе, Римма Кованыйпа иккĕшĕ хайхи «юрату хысакне» çитсе тăнине те сисмерĕ.
— У-у! Хитре те иккен кунта!— терĕ Кованый, çӳллĕ сăрт çинчен йĕри-тавралла пăхса.— Мĕнешкел ирĕк!..
Римма чĕнмерĕ. Çаплах аса илчĕ... Шăп çак вырăнта тăнăччĕ вĕсем Сергейпа иккĕшĕ. Пĕр-пĕрне алăран тытса. Хăйсен чĕрисем пĕр пек тапнине илтсе, пĕр-пĕрин ăшшине туйса. Нивушлĕ тăвата çул çитет унтанпа? Мĕн тери хăвăрт иртсе пырать этем пурнăçĕ!.. Çак тăват çул хушшинче мĕн

кăна пулса иртмерĕ, мĕн кăна курма тивмерĕ пуль! Сергее çеç курман. Тен, халь тин курас та çук пуль. Пĕр хыпарсăр çухалнă. Анчах епле-ха сын, чĕрĕ сын ним хыпарсăр çухалма пултарать?!

— Римма, мĕн эсĕ? Макăратăн мар-и?— тăрук ыйтрĕ Кованый, хĕр питçăмартисем тăрăх шултра куççулĕсем юхса аннине асăрхаса.— Мĕн пулчĕ?

— Çук, ним те пулман...— пуçне пăркаларĕ те Римма, куçĕсене шăлса илчĕ.— Пĕррехинче эпир çакăнта... хамăн нумай пулмасть вилнĕ мăнаппапа килнĕччĕ, çавна аса илтĕм. Пит лайăх сынччĕ вăл, çутçанталăка çав тери юрататчĕ...

Пĕркунне, Кованăя Сергей фотографине кăтартнăшăн Наташа хăйне питĕ хытă вăрçса илнĕ хыççăн, Римма ун умĕнче Сергей ятне пĕрре те асăнман. Кам пĕлет, тен, ун çинчен асăнни чăнах ыраттарать лейтенант чĕрине? Римма хăй ăна лайăх юлташ вырăнне çеç шутлать,— сынни чăнах та лайăх ĕнтĕ!— анчах Кованый, тен, чăнах та юратать? Кам пĕлет... Кованый ăна нимĕнпе те систермест-ха, анчах пулма пултарать. Юлашки вăхăтра, палатăри хĕрсем кайса пĕтсен, вăл хăйсен Херсонĕ çинчен, хăй унта епле лайăх пурăнни, мĕнле ĕçлени, тăван килĕ, амăшĕпе йăмăкĕ çинчен пит нумай каласа кăтартрĕ. Ахалех те мар-и, тен...

Чылай тăчĕç вĕсем çӳллĕ сыранра. Çурхи Атăл илемĕпе киленчĕç. Кăкăр туллин сывларĕç.

— Çак Атăл çинче ярăнма ĕмĕтленнĕ вĕт-ха нимĕçсем!— ассăн сывласа илчĕ Кованый.— «Вольга, Вольга, муттер Вольга!» тесе те юрланă вĕсем, ĕçсе супсан...

— Сынçиенсен пуçне темле шухăш та пырса кĕме пултарнă çав,— терĕ Римма.— Анчах пирĕн халăхăн иксĕлми вăй-хăватне тивĕçлипе хаклама ăсĕ çитеймен вĕсен!..

Каялла таврăннă чух, Хресчен çуртĕнчен иртсен, Римма тăрук Кованăя хулĕнчен пăчăртаса урамăн тепĕр еннелле кăтартрĕ:

— Лейтенант, пăх-ха çав мăшăр çине! Лайăхрах пăх, палласа илме пултаратăн-и?

— Палламасăр! Ман подшефнăй!— йăл кулса илчĕ Кованый.

Тротуар тăрăх, кинотеатр еннелле, Сарьяловпа леш хĕр-юрăçă Олимпиада Цветкова утаççĕ. Хĕрĕ Сарьялова хулĕнчен тытнă, тепĕр аллипе сулкаласа тем çинчен каласа кăтартать, Сарьяловĕ, унпе килĕшсе, кула-кула пуçĕпе сулать.

— Епле телейлё машăр!— терё Римма.

— Ан та кала! Пёрре пăхма мён тăрать... Сас парам-и?— ун çине пăхрё Кованый.

— Кансёрлес мар...

— Тен, пёрлешме те ёлкёрнё вёсем? Мёнле шутлатăн?

— Кам пёлет çынсенне... Пулё те. Интересёсем пёрешкел вёсен, пёр-пёрне ăнланаççё... Мён кирлё тата?

— Сирён палатăран тухма пёлмен леш салтак-художник тёрёс калатчё çав: хăватлă вăй вăл, юрату тени! Э-эх, хăçан юратё-ши мана кам та пулин!— Кованый юриех хуйхăрнă пек сывласа илчё.— Ёмёр иртет, ватăлса кайрăм... Чи телейсёр çын эпё!

Римма ăна хирёç ним те каламарё, аяккалла пăхса йăл-йăл кулса илчё çеç.

Çакăн хыççăн вёсем хулана тек-текех тухса çÿрерёç. Пёр-икё хут кинора пулчёç, Вырăс театрне кайса курчёç. Римма сисе пуçларё: Кованый ăна чăнах юратать иккен...

Май уявё умён, пёр питё ăшă, уяр кун ирхине вёсем паромпа Атăл леш енне каçса кăнтăрлаччен вăрманта çÿрерёç. Малтан Римма, тин çеç тухса ларнă çеçпёлсене пухса, чечек çыххи турё. Кованый та пёшкёнсе, пёр чечек татса илчё. Унтан, иккёшё пёрле, Римма пуçланă юрра ёнерчёç:

Маленький, синий платочек
Падал с опущенных плеч,
Ты говорила, что не забудешь
Теплых и ласковых встреч...

Майёпе вёсем сăрт çинчи пёр пит хитре уçланкăна пырса тухса хёвел ăшшине ларчёç. Кунтан Шупашкар та лайăх курăнать, Атăл та ал тупанё çинчи пекех. Ытармалла мар! Таврара шăп, унта-кунта темле кайăксем чёвёлтетни çеç илтёнет. Кăшт ларсан, Кованый аллисене пуç айне хурса çурăмё çине тăсăлса выртрё. Кăвак кантăк пек тап-таса тÿпенелле пăхса, тем çинчен шухăшласа выртрё вăл.

— Итле-ха, Римма...— терё унтан лейтенант, çаплах пёлётелле тинкерсе,— манăн сана пёр сăмах каламалла... Тахçанах каламалла, анчах ку таранччен те хăюлăх çитерейместёп...— Çакна каланă хушăрах хёр аллине тытрё.

— Мёнле сăмах-ши вăл, хальччен каламасăр усранăскер?— ун çине йăвашшăн пăхрё хёр.

— Пёлетён-и, Римма...

— Ним те пĕлместĕп-ха.

— Эп... эп юрататăп сана, Римма... Ан тĕлĕн... Питĕ юрататăп!

— Мĕнле лирика тата ку?— йăл кулса илчĕ Римма.— Вăрманти кайăк юррисене итленипе кăмăл тулса килчĕ-им?

— Çук, кайăксем айăплă мар кунта. Хамăн чун хушнипе калатăп. Эс мана вакунра пĕрле килнĕ чухнех килĕшрĕн. Унтан юратрăм эп сана. Пĕтĕм чĕререн...

— Паллах ĕнтĕ!— каллех кулчĕ Римма.— Темиçе çĕр арçын хушшинче эпĕ пĕртен-пĕр хĕрарăм пулнă та-ха... Куç выçă...

— Пĕртте ун пек мар, Римма. Хĕрарăмшăн выçăхса çитнĕ арçын куçĕсемпе пăхман эп сан çине. Ун чухне те, кайран та. Тен, сана юратнă пек никама та юратман пуль эпĕ...

— Ман шутпа, лейтенант, ку вăл кашни арçыннăн «дежурнăй» сăмахĕ: ах, эс пуринчен те лайăххи, ах, эс маншăн пĕрререн пĕрре! Эс ху та нумайăшне каланă-ха ĕнтĕ ун пек. Çапла-и?

— Çук, Римма, дежурнăй сăмах мар ку манăн. Тата никама та каламан эп ăна. Вуннăмĕш класра вĕреннĕ чух пĕр хĕрачана, чăн та, юратнăччĕ эпĕ, анчах вăл ăнсăртран шыва путса вилчĕ. Тунмастăп, питĕ хуйхăртăм station. Лайăх хĕрачаччĕ... Кайран, заводра ĕçленĕ чух, тепĕр хĕре килĕштерсе пăрахнăччĕ, анчах вăл пăхмарĕ мана, пĕр вĕçкĕне, футболистсен командин капитанне, качча кайрĕ. Унтан вăрçă пуçланчĕ... тӳрех разведкăна лекрĕм... Эс, çар сынни, разведчиксен пурнăçне пĕлетĕн.

— Кĕске, эппин, санăн амурлă биографи!

— Санăн хăвăн та вăрăм пулнă пекех туйăнмасть. Пĕлетĕп, пĕр студента юратнă эсĕ... Пĕррехинче сăнӳкерчĕкне кăтартрăн...

— Халь те юрататăп эп ăна.

— Анчах вăл çук-çке. Çухалнă, терĕн...

— Ăçтан пĕлес, тен, тупăнать? Вăрçă пĕтмен-ха.

— Ку тĕрĕс... Çапах та вичĕ çул иртнĕ хыççăн шанма йывăртарах пулĕ-çке.

— Эп пурĕпĕр шанатăп. Ĕненес килмест вăл пĕтнине. Чĕре манма хушмасть, Андрей.— Хĕр питĕ йăвашшăн калаçрĕ. Унтан ассăн сывласа илчĕ те аллине каччă аллинчен вĕçертсе ăна пуçĕнчен ачашларĕ.

— Пытармастăп, килĕшетĕн эс мана, Андрей. Лайăх

каччă. Ăслă. Сăпай. Хăшпĕрисем пек çатăр-çатăр мар. Хăвна тытма та пĕлетĕн. Анчах...

— Юратма пултараймастăп, тесшĕн ĕнтĕ эсĕ. Ăнланатăп.

— Вăрçă пĕтессе кĕтес пулать, Андрей. Хăвах шухăшласа пăх-ха эсĕ: мĕн пулать эпир пĕр-пĕрне юратнинчен? Кĕçех иксĕмĕр те, сывалса çитсе, каллех фронта каятпăр. Леш пурте пĕлекен юрăри пек: эс пĕр еннелле, эп тепĕр çĕрелле...

— Эпир упăшкипе арăмĕ пулăттăмăр.

— Темиçе кунлăха-и? Унтан уйрăлса каятпăр та — ĕçĕ те пĕтрĕ, çапла-и?

Римма тăчĕ те тумтирĕ çумне сыпçăннă çӳп-çапсене тасатрĕ.

— Çук, Андрей, тек калаçмăпăр кун çинчен. Усăсăр вăл. Ку таранччен эпир епле лайăх юлташсем пулнă, малашне те çавăн пекех пулар... Нимĕн те ан улшăнтар...

— Эп юрататăп сана, Римма!— Кованый, тăрса ларса, хĕре ик аллинчен те тытрĕ. — Эс маншăн чи хаклă çын...

— Эп те тиркеместĕп сана, Андрей. Анчах урăх ним те калама пултараймастăп. Атя, кайрăмăр.

Хĕр Кованая ура çине тăма пулăшрĕ.

— Çавăн пек, Андрюша. Кĕтес пулать-ха пирĕн, нумай кĕтес пулать. Пирĕн çарсем тин çеç чикĕ урлă каçа пуçларĕç. Берлин сывăхах мар, уйччен тем те пулĕ...

Тек вĕсем госпитале çитиччен те сăмах хушмарĕç.

## 21

Госпитальте выртакан офицерсемпе кĕçĕн командирсене пурне те кашни эрнере тенĕ пекех комиссие чĕне-чĕне тĕрĕслеме пуçларĕç. Кашни эрнерех темиçе çынна чылай кушă пĕрле пурăннă, туслашма та ĕлкĕрнĕ юлташĕсем, салтак телейĕ сунса, ăсатса ячĕç. Ăнланма йывăр пулмарĕ: пирĕн командовани, çур пуçланнă май, фронтсенче пысăк операцисем хатĕрлет. Вĕсем валли опытлă, вут-çулăмра пулса курнă командирсем нумай кирлĕ...

Андрей Кованая та комиссие чĕнчĕç. Малтанхи хутĕнче «тăхтас пулать-ха пăртак», терĕç. Анчах иккĕмĕшĕнче лейтенант хăй хытă калаçрĕ: сывă эпĕ, каятăп, çитет тылра кун чухлĕ доминолла çапса пурăннипе!

— Тепрер ик эрне пурăнар-ха, Кованый юлташ, унтан курăпăр,— терĕ ăна госпиталь начальникĕ.— Тепĕр чух васканинчен сиен кăна пулса тухать.

— Тек пĕр кун та кĕтместĕп!
— Ӳру çирĕпленсех çитмен-ха санăн...
— Çирĕпленнĕ! «Барыня» ташласа кăтартам-и сире?
Комисси хирĕç пулмарĕ вара.

Госпиталь начальникĕн пӳлĕмĕнчен тухсанах, Кованый Риммăна шыраса тупрĕ; хĕр халь пĕрмаях сестрасемпе пĕрлеччĕ, вĕсене пулăшатчĕ.

— Саламла мана, тусăм! Кĕтни çитрĕ!— терĕ ăна Кованый.—«Наш паровоз летит вперед», тесе юрлаттăмăр эпир пионер чухне...

— Юрăхлă, терĕç-и?—пăлханма пуçласа ыйтрĕ Римма.

— Икçĕр процент!

— Хăçан... каймалла пулать вара?

— Документсене хатĕрлеççĕ те — тӳрех шире шаг! Ыран ĕнтĕ.

Риммăна унпа уйрăлма тăруках шел пулса кайрĕ. Хăнăхса çитнĕ-çке вăл ăна. Хăçантанпа пĕрле пулнă та! Фронтран вĕсем февральте килчĕç, халь — май. Виçĕ уйăх. Кашни кун тĕл пулнă...

Коридорпа пынă чух вĕсене вattă санитарка «тетя Сима» тĕл пулса чарса тăратрĕ.

— Шыраса хăшкăлтăм сире! Унта, кунта... ниçта та çук!— терĕ вăл кăмăлсăр.

— Мĕн пулнă? Ма шыратăн?

— Кĕтеççĕ сире! Лере, аялта...

— Кама кĕтеççĕ — мана-и, ăна-и?— пĕрре хăй çине, тепре Кованый çине кăтартрĕ Римма.

— Иксĕре те! Темле хĕрпе каччă...

Риммăпа Кованый пĕр-пĕрин çине питĕ тĕлĕнсе пăхрĕç. Мĕнле хĕрпе каччă чĕнме пултараççĕ вĕсене? Римма малтан хăй патне Актай писателĕн арăмĕ килмен-ши, тесе шутланăччĕ. Сăнран вăл та хĕр пекех ĕнтĕ, анчах унпа пĕрле каччă пулма пултараймасть. Кованăйăн Шупашкарта пĕр палланă çын та çук. Анчах санитарка «иксĕре те», терĕ. Чăнах та, камсем, мĕнле хĕрпе каччă килме пултарнă?

Вĕсем васкасах аяла, пĕрремĕш хута анчĕç. Тĕлпулусен пӳлĕмĕн алăкне уçсан вара калама çук тĕлĕнчĕç: вĕсене Сарьяловпа хĕр-юрăçă Олимпиада Цветкова кĕтеççĕ иккен! Килсе курас тенĕ, эппин, Сарьялов хăйĕн тусĕсене...

Пĕр-пĕрне ал парса сывлăх сунсан, мĕнле пуранни çинчен — ĕмĕрхи йăлапа — кăшт-кашт ыйткаласа пĕлнĕ хыççăн, Сарьяловпа Олимпиада пĕр-пĕрне куçран пăхса илчĕç те, Сарьялов хĕре пуçĕпе сулчĕ.

— Эпир сире, хаклă юлташсем, хăнана чĕнме килтĕмĕр,— терĕ вара юрăçă.

— Хăнана? Мĕн сăлтавпа?— тĕлĕнсе ыйтрĕ Римма.— Май праçникĕ иртсе кайрĕ ĕнтĕ...

— Сăлтавĕ пур-ха...

— Туй тумастăр-и эсир?— Сарьялова хулпуççирен ярса тытрĕ Кованый. —Кала тĕрĕссипе!

— Мĕн туйĕ...— хĕрелчĕ Сарьялов.— Темиçен пухăнса кăшт ларатпăр çеç. Никамах та пулмасть...

— Сăлтавне, сăлтавне кала эсĕ, сержант!

— Ĕнер çырăнтăмăр эпир...

— Во! Ку вара чăн та историллĕ событи! Мухтатăп, сержант! Эппин, наступлени малалла пырать?—хавасланса кайрĕ Кованый. Çавăнтах Сарьяловпа хĕр-юрăçă аллисене тыта-тыта хытă чăмăртарĕ. — Пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп! Маттур эсир... Телейлĕ пулăр!..

Римма та вĕсен аллисене чăмăртарĕ, хĕр-юрăçа çамкинчен чуптуса илчĕ.

— Чунтан савăнатăп сирĕншĕн...

— Пыратăр-и пуль?— ыйтрĕ Сарьялов именнĕ пекрех. Хăй çавăнтах йăл-йăл кулкаларĕ.

— Епле пулсан та пыратпăр!— терĕ Кованый, туйипе урайне шак! тутарса.— Анчах... Римма, мĕнле парне парăпăр-ха эпир телейлĕ мăшăра? Пирĕн иксĕмĕрĕн те нимĕн те çук вĕт-ха...

— Уй, мĕн парни хальхи вăхăтра?— ал сулчĕ çураçнă хĕр.— Эсир хăвăр пырса ыр сунни те пит лайăх парне пулать пирĕншĕн!

Хĕрпе каччă нумай лармарĕç, пирĕн çитмеллисем татах пур-ха, тесе тухса кайрĕç. Урама тухсан хĕр-юрăçă тепĕр хут, чарăнса тăрсах:

— Астăвăр, ан улталăр! Эсир пирĕн чи хаклă хăнасем пулатăр. Куç пекех кĕтетпĕр сире!— терĕ.

— Чăн та, тĕлĕнмелле япала-çке вăл, пурнăç тени...— ассăн сывласа илчĕ Кованый, Сарьяловпа Цветкова хыççăн ăшшăн пăхса юлса.— Лере...— вăл хĕвеланăç еннелле сулса кăтартрĕ,— хальччен тĕнче курман вăрçă пырать, куллен пин-пин çын пĕтет, çав вăхăтрах теприсем авланаççĕ, качча каяççĕ, ача тăваççĕ...

— Диалектика! Пурнăç нихçан та чарăнса лармасть, аталанса, малаллах пырать, кивви вырăнне çĕнни çуралать, лейтенант,— терĕ ăна хирĕç Римма.

— Философи енĕпе вăйлах мар эпĕ, анчах эс каланипе

килĕшмесĕр тăма май çук, мĕншĕн тесен вăл пĕтĕмпех куç умĕнче...— Кованый тăрук кулса ячĕ.—Ах, Сарьялов, Сарьялов! Пăх-ха эс ăна! Наймкăшса пурăнчĕ-пурăнчĕ те, сасартăк мĕн патне çитсе тухрĕ! Мĕнешкел хĕре çавăрса илчĕ! Хайхи пӳрнисем çукки те ним те мар иккен... Ку та диалектика пуль?

— Çавă, лейтенант!— терĕ Римма та йăл кулса.—Пур çĕрте те диалектика...

Иккĕмĕш хута хăпарсан, Кованый Риммăна хулĕнчен тытса чарчĕ.

— Итле-ха, тусăм... Атя-ха кун çинчен Зоя Григорьевнăна кĕрсе калатпăр! Сарьяловран çын тума вăл та нумай тăрăшрĕ вĕт. Уншăн та интереслĕ пулать ку, чăнах! Унсăр пуçне, хамăр ăçта каясси çинчен ăна пурĕпĕр пĕлтермелле-çке...

Госпиталь начальникĕ хăй кабинетĕнче пĕччен-мĕн, медкомисси членĕсем тин çеç саланнă та, вăл темле хутсене йĕркелесе ларать.

— Майор юлташ, калама ирĕк парăр...— терĕ Кованый, устав хушнă пекех «смирно» тăрса.

— Итлетĕп, лейтенант, кала,— пуçĕпе сулчĕ начальник. — Эсĕ хăвăн хăçан тухса каясси çинчен ыйтасшăн пулĕ-ха?

— Çук, майор юлташ. Ку ыйту мар, пачах урăххи... Кĕçĕр пирĕн Сурская юлташпа иксĕмĕрĕн туя каймалла...

— Туя?! Мĕнле туя?— тĕлĕнчĕ начальник.— Эсир... эсир мĕн, уйрăлас умĕн мăшăрланас темерĕр пуль те?

— Çук, майăр юлташ...— пуçне пăркаласа кулса ячĕ Кованый,— эпир унтах çитмен-ха.

— Мĕнле туй пулать, эппин, кам туйĕ?

— Сарьялов авланать, Зоя Григорьевна, лешĕ ара, аллинчен аманнă музыкант!— терĕ Римма, Кованăя пӳлсех.

— Сарьялов?! Ан тĕлĕнтерĕр-ха!— аллисене хире-хирĕç шарт! çапрĕ хĕрарăм-майор.— Тин кăна тухрĕ-çке вăл кунтан? Хĕр тупма та ĕлкĕрнĕ-и?!

— Хĕрĕ унăн малтанах пулнă курăнать...

— Кама илет вара?

— Ун патне хĕр-юрăçă çӳрерĕ-çке? Лешĕ, пĕркун пирĕн патри концертра питĕ вăйлă юрлани...

— Цветкова-и? Олимпиада Цветкова, çавна илет-и?

— Çавна çав. Халь çеç иккĕшĕ килсе чĕнчĕç пире.

— Ну, тĕлĕнмелле те вара ку!— пуçне пăркаласа илчĕ начальник.— Питĕ хăвăрт тăваççĕ-çке ĕççене!

— Салтакла, майор юлташ. Тăшмана мушка тăрнĕ тытсан спусковой крючок çине хăвăртрах пусас пулать, унсăрăн тăшман пăрăнса кайса кусран çухалма пултарать...

Пурте кулса ячĕç.

— Ну, мĕнех вара...— терĕ начальник, каллех хăй вырăнне ларса.— Телейлĕ пулччăр. Ман ятпа та саламласа ыр сунăр вĕсене.

— Кайма ирĕк паратăр, эппин, майор юлташ?

— Ун пек çĕре кайма мĕнле чаратăн? Çитменнине, ырантан пуçласа эсĕ пире пăхăнмастăн ĕнтĕ, лейтенант.

— Тавтапуç, майор юлташ.

— Манран салам калама ан манăр.

— Есть! Пырсанах калатпăр...

Кованый çапах та туя ытла пушă алăпа каяс темерĕ. Офицерăн укçа пулнă, çавăнпа та вĕсем Риммăпа иккĕшĕ малтан пасара кайрĕç.

— Толкучкăра мĕн те пулин шыраса тупатпăрах,— терĕ лейтенант.

Чылай çӳрерĕç вĕсем. Тем те сутаççĕ иккен кунта,— спичкăран пуçласа авалхи купцасен ик витре кĕрекен мăн хырăмлă кĕмĕл сăмаварĕсем таранах. Пĕри кивĕ хăмăт та йăтса тухнă — хăйĕн мăйне тăхăннă та халăха ахăртса çӳрет. Кăштах кĕрнĕскер, çухăрать кăна: «Çак хăмăта хĕрарăм илес пулсан, лаши вырăнне хам пыратăп!..» Анчах тин çеç пĕрлешекен мăшăра парнелеме юрăхли нимĕн те курăнмарĕ. Çӳресен-çӳресен, Кованый хитре кăна ача коляски сутакан, хурчăканни пек курпун сăмсаллă карчăк умĕнче чарăнса тăчĕ.

— Атя, çакна туянатпăр, Римма!

— Ан ухмахлан, лейтенант, çилленеççĕ!— терĕ Римма.

— Ним те ухмахланмастăп. Çиллентермелли япала та мар вăл, пурăна киле кирлĕ пулатех вĕсене. Хальхи вăхăтра таçта тупатăн-ха кун пек эрешлесе пĕтернĕ япала!

— Тепĕр тесен, оригиналлă пулать-ха та ку...

Карчăк коляскăшăн пин тенкĕ ыйтрĕ. Лейтенант унпа чăн-чăн сутуçă пекех хаклашма тытăнчĕ. Тавлашсан-тавлашсан, карчăк, ал сулса, çур хака юлчĕ:

— Сирĕн, салтаксен, укçăр та çукрах пуль çав...

Туйне хĕрĕн хваттерĕнче, Атăл хĕрринчи темиçе хутлă çуртри пĕр пĕчĕкçеç пӳлĕмре тăваççĕ-мĕн. Вуник-вунпилĕк çын вырнаçтарма пӳлĕмри пĕртен-пĕр койкăна та коридора

кăларса лартнă. Вара сĕтеле пӳлĕм варрине шутарнă та, ун тавра хыççăр пукансем çине хăмасем хурса, çиелтен çиттисемпе виткеленĕ. Çук çын темле те майлашать-çке вăл!

Хăйсен «парнине» Риммăпа Кованый малтанлăха пусма площадкинех лартса хăварчĕç.

— Ку «эмкăна» никам та тӳрех вăрласа каймĕ-ха,— кулса илчĕ лейтенант.

Вĕсем пыриччен хăнасем пухăннă та-мĕн. Олимпиада питĕ савăнса кайрĕ:

— Ак хайхи, тинех çитрĕç пирĕн фронтовиксем! Кĕтсе хăшкăлтăмăр сире, госпитальтен ямаççĕ пуль ĕнтĕ, тесе те хăрарăмăр... Иртĕр-ха, ларăр!—сĕтел хушшинелле ал сулса кăтартрĕ вăл.

Ахаль те пĕр-пĕрин çумне таччăн сыпăçса ларнă хăнасем тата ытларах хĕсĕнме тытăнчĕç, хăйсем пурте çар тумĕ тăхăннă хĕрпе каччă çине куç илмесĕр пăхрĕç.

— Чимĕр-ха, малтан манăн пĕр ĕç тумалла,— терĕ Кованый, Римма çине пăхса илсе.

— Хăнана килнĕ çыннăн мĕн ĕçĕ пултăр?— тĕлĕнчĕ кил хуçи.

— Эп халех, секундлăха çеç...

Лейтенант пӳлĕмрен вăшт кăна тухрĕ те кĕçех хайхи ача коляскине кустарса кĕчĕ.

— Пирĕнтен... туй парни! Çемьере кирлĕ япала, терĕмĕр...

Темиçе самант хăнасем ку «парне» çине çав тери тĕлĕнсе пăхрĕç, унтан пурте шавлама, кулма, алă çупма тапратрĕç.

— О-о, питĕ чаплă парне-çке ку!

— Чи кирли!

— Лайăх шутласа тупнă салтаксем!..

Олимпиада хĕп-хĕрлĕ пулса кайса, Кованăйпа Риммăна тав турĕ, вара хăнасемпе паллаштарма тытăнчĕ. Хăнисем пурте тенĕ пекех искусство çыннисем иккен. Музыкантсемпе артистсем хушшинче пĕр писательпе арăмĕ те пур-мĕн. Анчах писатель те театрсем енĕпе ĕçлекен «ответлă юлташ» пулчĕ. Ун çине Римма уйрăмах хытă пăхрĕ. Арăмĕпе иккĕшĕ те çамрăк, вăтăра та çитмен пулĕ-ха, сăнран пăхсан — тин кăçç курортран таврăннă пек курăнаççĕ. Иккĕшĕ те питĕ капăр тумланнă — арçынĕ вĕр-çĕнĕ хура костюмпа, пырĕ патне галстук та мар, хура «лĕпĕш» çакса янă. Арăмĕ тĕксĕмрех кăвак пан-бархат платьепе, мамăкран тунă пек курăнакан мăйĕ кăкăрĕ таранах уçă, мăйне вара темиçе ярăм йăлтăркка

шăрçа явалан̆ă, хăлхисенчен мăн алкасем çакнă, кăкăрĕ умне ал лаппи лысăкăш брошка тирнĕ, сап-сар çӳçне пит илемлĕн вырнаçтарса хунă.

«Турăçăм, кун пек пурăнакансем те пур иккен-ха халь...» шухăшларĕ те Римма, хăйĕн кивеле пуçланă гимнастерки çине пăхса илчĕ. Ку писатель çинчен вăл илткеленĕ, хăш чух ача-пăча сăввисем, хăш чух юптарусем çырать пулас-ха вăл. Анчах хăйне пуçласа тĕл пулчĕ. Питĕ чаплă çын-мĕн. Кăп-кăтра сарă çӳçне каялла тураса хунă, сăнĕпичĕ хĕрĕнни пек таса, кулнă чух шап-шурă шăлĕсем илĕртӳллĕн курăнса каяççĕ. Ун пек арçынсемшĕн хăшпĕр хĕрарăмсем чунне пама хатĕр пулаççĕ. Анчах Римма нихçан та кăмăлламан ун йышшисене. Вĕсене вăл канфет хучĕ çинчи ӳкерчĕксемпе танлаштарнă та «пылак япаласене юратмастăп эпĕ, ăш лĕкленет», тенĕ... Арăмĕ те кăмăла каймарĕ: мĕн тума çакса-тирсе тултарнă вăл çавăн чухлĕ йăлтăркка? Паллах, мухтанас шутпа ĕнтĕ! Тупнă та вĕçкĕнленмелли вăхăт...

...Туй тени туях ĕнтĕ вăл. Черккесене тултарчĕç, малтанах пурте, ура çине тăрса, çамрăк мăшăра саламларĕç, ырлăх та сывлăх, телей сунчĕç, темиçе хут та «йӳçĕ! йӳçĕ!» тесе кăшкăрчĕç, хĕрпе качча пĕр-пĕрне чуптутарчĕç. Кăштах хĕрсен вара ян-ян-ян калаçма, шӳтлеме, кулма тытăнчĕç.

Риммăн пĕр енче Кованый ларчĕ, тепĕр енче — Олимпиада тăванĕ, пĕр вунçич çулсенчи Лиза ятлă хĕр. Вăл ĕнтĕ виççĕмĕш çул пир-авăр фабрикинче ĕçлет иккен. Ку таранччен Олимпиада патĕнче пурăннă, анчах халь ăна общежитинче вырăн панă. Кĕçĕр пухăннă хăнасене вăл пурне те пит лайăх пĕлет-мĕн.

— Çав хитре писатель... вăрçăра пулман-и вăл? — хăнасем шавлама тытăнсан хуллен ыйтрĕ унран Римма.

— Çу-ук, арăмĕ çумĕнчен ниçта та кайман,— пуçне пăркаласа илчĕ Лиза.

— Сывлăхĕ питех мар-им?

— Тепĕр вăкăртан та тĕреклĕрех пуль вăл...

— Вăрçа ма кайман, эппин?

— Бронь. Театрсен пуçлăхĕ мар-и? Унăн арăмĕ калан̆ă тăрăх — «незаменимый» вăл. Искусствăна унсăр пуçне урăх никам та ертсе пыма пултараймасть. Çавăнпа хăварнă имĕш ăна.

— Ăнланатăп...

Римма тӳрех хăйĕн фронтри тусне, Актай писателеяса илчĕ: «Вăл кашни кунах бомба-снарядсем айĕнче çӳ-

рет... Пысăк писатель. Нивушлĕ вара вăл çак «канфет хучĕ çинчи ÿкерчĕк» тĕшне тăмасть? Анчах Актай вăрçă пуçланнă кунах военкомата кайнă. Ăна бронь парасшăн пулнă — вăл килĕшмен... Данилов-Чалдун та ватă пуçĕпех вăрçа кайса пуçне хунă... Епле ăнланмалла куна?»

Çамрăк мăшăра саламланă хыççăн тостсем калама пуçласан, çав «никампа улăштарма çук» хитре писатель чин енĕпе кунта чи асли пулнипе усă курса, пуринчен ытларах янрарĕ. «Пирĕн пурнăçа илемлетекен ытарайми хĕрарăмсемшĕн», «чăваш шăпчăкĕсемшĕн», «çунатлă поэзишĕн», «пирĕн искусство чечекленĕвĕшĕн» черккесем çĕклеме чĕнчĕ вăл.

Кашнинчех пурте хытă ал çупрĕç... Унтан ÿсĕрĕлме пуçланă, пукане майлăрах пуклак сăмсаллă пĕчĕкçеç хĕрарăм сиксе тăчĕ те, куçне-пуçне çутăлтарса, çухăрса ячĕ:

— Итлĕр-ха мана! Тусăмсем! Эпĕ хамăрăн хаклă Дмитрий Аркадьевичшăн, унăн таланчĕшĕн ĕçме сунатăп! Урра!

Вăл çапла кăшкăрма ĕлкĕрчĕ çеç — «никампа улăштарма çуккин» арăмĕ пуринчен малтан алă çупса сиксе тăчĕ, эрехне ĕçсе ярса упăшкине питĕнчен чап! чап! чуптурĕ. Ун хыççăн хăйсен пысăк пуçлăхне леш пуклак сăмса та çуласа илчĕ.

Çав самантрах Кованăйпа Римма куçĕсем тĕл пулчĕç. Унччен лейтенант текех хăй çумĕнчи ватăрах хĕрарăмпа калаçса ларатчĕ-ха. Унăн кăштах пуçне кайнă пулмалла, куçĕсем тĕтреленнĕ пек курăнаççĕ, анчах сăнĕ темшĕн питĕ çилленнĕ тĕслĕ.

— Эпĕ те тост калам-и?— ыйтрĕ вăл Риммăран.

— Мĕнле тост? Камшăн?

— Хамăршăн... Саншăн, маншăн!

— Эс ухмаха ертĕн пуль, Андрей! Тем шутлĕç...

Анчах Кованый ура çине тăчĕ ĕнтĕ. Аллинче — хĕррипе тан эрех тултарнă стакан. Пĕр-икĕ тоста ахалех, ĕçмесĕрех ирттерсе янă пулас. Вăл хашш! сывласа ярса пурне те пăхса çаврăнчĕ.

— Хаклă юлташсем,— терĕ унтан,— эпĕ кунта ăнсăртран лекнĕ çын, çапах та манăн та пĕр тост калас кăмăл пур...

— Калăр, калăр, итлетпĕр!

— Фронт паттăрĕсене итлеме яланах хавас эпир!— шавласа кайрĕç хĕрарăмсем.

— Эпĕ, хаклă юлташсем, çак самантра фронтра юн

юхтарса çапăçакан, фашист хурахĕсене хамăр çĕр çинчен хăвалакан паттăр совет салтакĕшĕн ĕçме ыйтатăп!

Пурте ал çупса ячĕç.

— Тĕрĕс, тĕрĕс! Салтаксемшĕн ĕçес пулать!

— Паттăрсене манмалла мар!

— Эппин, малтан хăвăр пример кăтартăр!— çухăрчĕ пуклак сăмса.

Кованый тулли стакана пĕрре сывлăш çавăрмасăр ĕçсе ячĕ. Вăл ĕçнĕ чух унăн орденĕсемпе медалĕсем чăнкăртатса тăчĕç...

Унччен те пулмарĕ, «аслă начальник» арăмĕ сĕтел урлă кармашса Кованый стаканне каллех эрех тултарчĕ.

— Халь — тылри паттăрсемшĕн, командир юлташ! Пирĕншĕн! Тархасшăн!— Çавăнтах Римма черккине те тултарма пикенчĕ, анчах Римма ăна аллипе хупларĕ.

— Çук, каçарăр, эп урăх ĕçместĕп... Ытлашши пулать.

— Кама ытлашши? Сана, фронтовичкăна-и?—тĕлĕннĕ пек пулчĕ майра.— Ан калаç! Эсир лере кашни кунах ĕçетĕр-çке! Арçынсемпе пурăнса... пурне те хăнăхнă пуль? Пĕр котелокран çиетĕр, пĕр шинель айĕнче çывăратăр, теççĕ...— Вăл темле вĕттĕн, йĕрĕнмелле кулса ячĕ.

Майра мĕн пирки сăмах тĕксе каланине Римма тӳрех ăнланчĕ те, унăн çак сăрлanса лартнă, йăлтăрккасем çакса тултарнă хĕрарăма питĕ хытă çупса ярас килсе кайрĕ. «Ах, сволочь, сана илсе каясчĕ унта, пĕр шинель айĕнче çывăрма!.. Пĕрререн пĕрре бомбежка айĕнче виç минут тытасчĕ!»

— Эс мĕншĕн ман çине ун пекех хаяррăн пăхатăн?— хăранă пекрех ыйтрĕ майра, Римма сăнĕ тăрук улшăннине сиссе.

— Стерва эсĕ, акă мĕн!— çиллине шăнараймасăр, шăлне çыртса пăшăлтатса илчĕ Римма,— пан-бархат витĕр те курăнать эсĕ епле ирсĕр стерва пулни!

Майра аллине эрех кĕленчи тытнипех лак! каялла кайса ларчĕ. Куçĕсем чарăлса кайрĕç, тутисем чĕтреме тытăнчĕç. Вăл упăшки çинелле пăхрĕ, ăна тем каласшăн пулчĕ, анчах лешĕ, халь ĕнтĕ ӳсĕрĕлсех кайнăскер, çав вăхăтра ура çине тăчĕ те, дирижер пек ик аллипе пĕр харăс сулса, çав тери хытă юрласа ячĕ:

Ан авă-ă-ăн, шĕшкĕ, ан авăн та
Ан авăн, шĕшкĕ, ан авă-ăн!.

Майра Риммăна çисе ярас пек пăхрĕ. Халь тесен халь сиксе тăрса, ăна хăйĕн хĕп-хĕрлĕ вăрăм чĕрнисемпе пичĕ-

кусӗнчен тӑрмалама тытӑнас пек. Вӑхӑт-вӑхӑт пӗветнӗ хулӑн тутисене ҫырта-ҫырта илчӗ. Ытла та вирлӗ пырса тиврӗ пулмалла ӑна хӗр-салтак сӑмахӗ. Анчах Римма та парӑнмарӗ, ӑна хирӗҫ чӑрлаттарса пӑхрӗ. Хӑйне майлӑ «психикӑллӑ дуэль» пулчӗ ку. Юлашкинчен майра тӳсеймерӗ, сӗтел хушшинчен вӑрт! тӑрса тухса кайрӗ. Римма хӑй ӑшӗнче кулса юлчӗ ҫеҫ.

— Ҫав кирлӗ сана, паразита...

Хӗрсе кайнӑ хӑнасем юрӑ хыҫҫӑн юрӑ янратма тытӑнчӗҫ, унтан «ташлас, ташлас!» теме пуҫларӗҫ. Ташлама вырӑн ҫуккипе сӗтел-пукансене коридора илсе тухма тытӑнчӗҫ. Ҫав хушӑра стена ҫумӗнче тӑракан Римма патне хайхи хитре писатель сулӑнкаласа пычӗ те ун кӑкри ҫинчи орденпа медале тыта-тыта пӑхрӗ.

— Героиня... Чӑваш хӗрӗ — вӑрҫӑ паттӑрӗ! Епле лайӑх янрать ку сӑмах, э? Итле-ха, йӑмӑк... Эп сан ҫинчен кӗнеке ҫыратӑп, килӗшетӗн-и? Иксӗмӗр темиҫе хут тӗл пулса калаҫӑпӑр та... повесть е роман пулать пирӗн!— Вӑл, кулкаласа, Риммӑна хулпуҫҫинчен лӑпкаса илчӗ.

— Ак сана роман! Акӑ!— чан! чан! ҫупса ячӗ ӑна ҫав самантрах хыҫалтан пырса тӑнӑ арӑмӗ.

Тӗттӗмрех ҫӗрте, ҫитменнине каллӗ-маллӗ кумакан ҫынсем хушшинче Римма та, писатель хӑй те асӑрхайман ӑна.

— Лара, мӗн эсӗ... Ан выля!— питне ярса тытрӗ писатель.

— Ан выля парӑп эп сана! Фронтовойне тутанса пӑхас килчӗ-им тата, йыт аҫи?! Артисткӑсем хыҫҫӑн чупни ҫитмест сана!

Римма тӳрех аяккалла пӑрӑнчӗ, мӑнтӑр майрана хӗрарӑмсем хупӑрласа илчӗҫ.

— Лариса Фирсовна... Лӑпланӑр, тӗк пулӑр! Аван мар ун пек пӗтӗм халӑх умӗнче...

— Вӑл ман умрах тӗрлӗ йӗпе аркӑсене ыталани аван-и? Аван-и?— ҫуйхашрӗ майра.

Хӗрарӑмсем ӑна кухньӑналла тӗртсе кӗртсе кайрӗҫ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн Риммӑн кунта пӗр самант та тӑрас килмерӗ. Вӗсем Кованайпа иккӗшӗ Сарьяловпа Олимпиадӑна тепӗр хут ал парса ыр сунчӗҫ, госпиталь начальникӗн саламне каларӗҫ те ыттисемпе сывпуллашмасӑрах урама тухрӗҫ.

— Мӗн пулса иртрӗ унта, эп нимӗн те ӑнланаймарӑм,— терӗ Кованый, Риммӑна аллинчен тытса. Римма каласа парсан вара аҳӑлтатса, варне тытсах кулчӗ.

— Такки парантартан пулать гранд-дамана! Пĕр сăмахпах калаçайми те, хирĕç пăхайми те турăн? Унтан, сана тарăхнипе, упăшкине хĕнеме тытăнчĕ, эппин? Çав кирлĕ вĕсене иккĕшне те...

Госпитале вĕсем час таврăнмарĕç, малтан Атăл хĕрринче, унтан шăпланнă урамсем тăрăх çӳрерĕç. Темĕн çинчен калаçмалăх та вăхăт пулчĕ вĕсен. Кованый каллех Римма уншăн çав тери хаклă çын пулни, ăна нихçан та манас çукки çинчен каларĕ.

— Эс хуть ман çырусене хирĕç ответ та пулин çыр... Маншăн сан кашни сăмаху та тем пекех хаклă пулĕ! Кам пĕлет, тен, пуçсем сывă юлсан, вăрçă хыççăн тĕл пулăпăр? Эп çапах та шанатăп-ха...

— Шанса пурăнакан телейлĕ пулать, теççĕ,— йăл кулса илчĕ ăна хирĕç Римма.

Тепĕр кунне Кованый, ун пекех строя юрăхлă пулнă темиçе офицерпа пĕрле, госпитальтен тухса кайрĕ. Ăна ăсатнă чух Римма куççульне пытараймарĕ.

— Телейлĕ пул, лейтенант... Кам пĕлет, тен чăнах та тĕл пулăпăр хăçан та пулин!

Кованăя вăл хăй ыталаса чуптурĕ.

## 22

Çакăн хыççăн темиçе кунтан Совинформбюро Европăра иккĕмĕш фронт уçăлни çинчен пĕлтерчĕ: Англипе Америка хăйсен çарĕсене Нормандие — Çурçĕр Франци çыранне кăларнă...

— Тинех хускалчĕç иккен! Мĕн чухлĕ кĕттерчĕç, мĕн чухлĕ халăх пĕтрĕ пирĕн вĕсем çак таранччен тăсса пынипе!— терĕç аманнисем хушшинче.

Çапах та ку хыпар савăнтарчĕ.

— Малашне пире тăшмана çĕмĕрме çăмăлтарах пулать ĕнтĕ...

Çав кунсенчех Ленинград фронтĕнче пысăк наступлени пуçлании çинчен хыпар çитрĕ. Пирĕннисем Карельски перешеекра «Маннергейм линине» çĕмĕрнĕ, Выборг хулине илнĕ...

Унтан радио Пĕрремĕш Прибалтийски фронтпа Пĕрремĕш, Иккĕмĕш, Виççĕмĕш Белорусси фрончĕсем малалла хускаласа кайни çинчен пĕлтерчĕ. Çакна илтсен, Римма тӳрех хĕлле Пĕчĕк Вера янă çырăва аса илчĕ. Вăл хăйсем патĕнче «сабантуйсем» çулла тин пуçланаççĕ пуль, тесе çыр-

иаччӗ. Ак ӗнтӗ, ҫулла пулчӗ те, пуҫланчӗ, эппин, «сабантуй». Унта халь кунӗн-ҫӗрӗн ҫапӑҫу кӗрлет, пирӗннисем тӑшмана пӗрмай хӗвеланӑҫнелле хӑвалаҫҫӗ...

Римма фронта таврӑнасси ҫинчен тӑтӑшах шутласа пурӑнчӗ. Халь вара ҫав кӑмӑл нихҫанхинчен те ытларах ҫӗкленчӗ: хӑвӑртрах, ним тӑхтаса тӑмасӑрах каймалла, унсӑрӑн кая юлма та пулать! Госпиталь хыҫҫӑн урӑх чаҫе лекесре шикленсе вӑл апрель уйӑхӗнчех хӑйсен медсанбат командирӗ патне ҫырса янӑччӗ: кӗҫех госпитальрен тухатӑп пулмалла, эсир мана хӑвӑр пата яма ыйтса ҫырӑр-ха кунта...

Дивизирен ун пек хут чӑнах та пычӗ, анчах госпитальти комисси кӳрентерсех пӑрахрӗ ӑна: фронта яма пултараймастпӑр, икӗ тӗлтен хуҫӑлнӑ хул шӑмми ҫирӗпленсе ҫитеймен, йывӑр ӗҫсем тума юрамасть санӑн, каллех хурлӑх пулма пултарать...

— Мӗн вара, эсир мана тек ҫарта пулма пачах юрӑхсӑр тесшӗн-и? — макӑрса ярас пекех ыйтрӗ Римма.

— Пачах юрӑхсӑр темӗпӗр, ҫартан ямӑпӑр, сана эпир хамӑр патра ӗҫлеме хӑварӑпӑр,— лӑплантарчӗ ӑна госпиталь начальникӗ.— Кунта та ҫар службиех, кунта та ҫынсем кирлӗ, эпир те хамӑр ҫӗнтерӳшӗн ӗҫлетпӗр.

— Манӑн каллех малти линие, фронта каяс киле Зоя Григорьевна!— ҫине тӑчӗ Римма.

— Ним тума та ҫук, Сурская. Юрамасть сана кун пек алӑпа унта яма. Пирӗн те хамӑрӑн саккунсем, инструкцисем пур. Пӑсаймастпӑр вӗсене. Эпир ҫар ҫыннисем.

Килӗшмеллех пулчӗ: мӗн тӑваятӑн тухтӑрсене хирӗҫ?

Аманнисен шутӗнчен кӑларчӗҫ Риммӑна, вӑл тӗрлӗ процедурӑсем тӑвакан физиотерапи кабинетӗнчи сестра вырӑнӗнче ӗҫлеме тытӑнчӗ. Хваттер пирки ӑна хайхи кастелянша Рая Чернова пулӑшрӗ. Унӑн кирпӗч завочӗ тавра шӗнчи хӑлтӑр-халтӑр йывӑҫ ҫуртра пӗр пӗчӗкҫеҫ пӳлӗм пулнӑ, унта вӑл амӑшӗпе, ачипе пурӑннӑ.

— Тӑвӑр пулин те — майлашӑпӑр, ку чухне саркаланса пурӑнасси ҫинчен калаҫмалли ҫук,— терӗ Рая, ӑна хӑй патне илсе пырса.

Темиҫе ҫул каялла, студент чухне, Сергейшӑн кӗвӗҫсе пӗр хушӑ ҫав тери кураймасӑр пурӑннӑ Райӑна Римма халь пӗтӗм чунтан тав турӗ. Чӑн та, хваттерӗнче сахал пулатчӗ вӑл, ир-ирех тухса каятчӗ те кунӗпех госпитальте ӗҫлетчӗ. Дежурнӑй пулнӑ кунсенче вара унтах ҫӗр каҫатчӗ. Канна кунсенче кӗнеке вулатчӗ, унта-кунта ниҫта та тухса ҫӳреместчӗ.

— Мĕн эсĕ ват карчăк пек пурăнатăн?— терĕ ăна пĕррехинче Рая амăшĕ.— Пирĕннин хăть арçынĕ вăрçăра, çумĕнче ачи пур, унăн килте пулас пулать, анчах эсĕ мĕншĕн хĕр пуçăнах килте пăнтăхса ларатăн? Каччăсем те тупăнма пултараççĕ сан пек ыр хĕр валли...

— Манăн та вăрçăра хамшăн никамран хаклă çын пур,— терĕ ăна хирĕç Римма.— Улăштарма пултараймастăп...

— Хăй çырать-и сан патна?

— Нимĕнле хыпар та çук.

— Çапах та кĕтетĕн пулать?

— Кĕтетĕп...

— Тĕрĕс тăватăн. Эпĕ хам та леш ĕлĕкхи вăрçă вăхăтĕнче — гражданскинче мар, нимĕçсемпе пирвайхи хут вăрçнă чухне — хамăн Энтрее виçĕ çул ытла кĕтрĕм. Кĕтсе илтĕм çапах та. Пленра пулнă, темле хуçа патĕнче чура вырăнĕнче ĕçлесе пурăннă, молотилкăпа ĕçленĕ чух хăрах алăсăр юлнă, çапах та таврăнчĕ. Тепĕр çирĕм çул пурăнтăмăр кайран. Татах пурăнаттăмăр та, ăнсăртран воспалени легки çаклатса вилсе кайрĕ... Çавăнпа Райкана та хăйĕн юлташне кĕтме хушатăп халь, тен тупăнĕ-ха вăрçă хыççăн. Эс те кĕт, кĕрĕм, кĕт, çыннине чăнах юрататăн пулсан — урлă-пирлĕ ан пăхкала. Арçынсем нумай вĕсем, шанчăклă çын тупма йывăр...

Кăлăхах каланă вăтă хĕрарăм Риммăна çак сăмахсене. «Урлă-пирлĕ пăхас» шухăш пулман унăн пĕрре те. Тĕрĕссипе, ĕçсĕр пуçне урăх ним çинчен шухăшлама та вăхăт юлман хĕрĕн. Ĕçĕ вара çителĕклĕ пулнă. Вăрçă пуçланнă хыççăн тепĕр çулхинех, çуркунне, госпитале хуларан пĕр вуник километрта, пысăках мар юханшыв хĕрринче, питĕ хитре вырăнта вунă гектар çĕр уйăрса панă-мĕн. Çав çĕр çинче кашни çулах госпиталь валли çĕрулми, тĕрлĕ пахчаçимĕç лартса ӳстернĕ. Унта госпитальти сестрасемпе, санитаркăсемпе, госпитале шефа илнĕ организацисенчи çамрăксемпе пĕрле суранĕсем тӳрлене пуçланă салтаксемпе офицерсем те кая-кая ĕçленĕ. Аманнисем, шӳтлесе, госпитале уйăрса панă çав çĕре «иккĕмĕш фронт» тенĕ. Анчах унта ĕçлеме пурте хапăл тусах кайнă, мĕншĕн тесен çак «иккĕмĕш фронт» госпитале пысăк усă кӳнĕ.

Ак кăçал та, пахча-çимĕç лартмалли вăхăт çитсен, госпитальтен унта тимĕр кĕреçесемпе, катмаксемпе хĕçпăшалланнă «десант» ячĕç. Ыттисемпе пĕрле Римма та кайрĕ. Ялта çуралса ӳснĕскер, вăл çĕрĕçне, пахчаçимĕç лартса ӳс-

терессине питĕ юратнă та, эрне ытла усă сывлăшра, хĕвел ăшшинче ывăнма пĕлмен тăрисен юррине итлесе, чăн-чăн тулли кăмăлпа ĕçлесе пурăнчĕ.

— Таçта курортра пулнă пекех тасалса кайнă-çке эсĕ, тусăм!— терĕ ăна Рая, Шупашкара таврăнсан.

— Госпитальте хлороформпа карболка шăршине çăтса пурăнни мар çав унта! Пĕтĕм çутçанталăк ырлăхĕпе усă куратăн!— кулса илчĕ Римма хавассăн.

Тепĕр ик эрнерен госпитальтен татах «десант» яма хатĕрлерĕç — хальхинче пуртăсемпе, пăчкăсемпе, Атăл лешенне, вăрман касма.

Римма кунта та хапăл тусах кайрĕ. Вунă кун хушшинче унăн сывлăхĕ татах тӳрленчĕ. Вĕсем ĕçлекен вырăн Атăлпа юнашарахчĕ те, кăнтăрла, каннă вăхăтра, ытти хĕрсемпе пĕрле вăл шыва кĕме çӳрерĕ, кăштах вĕри хăйăр çинче те выртса хĕртĕнчĕ. Унтан вĕсем хĕвел аничченех ывăннине сисмесĕр ĕçлерĕç. Питĕ лайăх пулчĕ. Каç-каç вара чăрăш лăссисенчен тунă ӳплере шăпчăк юррисене итлесе выртнă чух, ăна халь Сарьялов арăмĕ пулнă Олимпиада юрланă хитре юрă аса килчĕ:

Соловьи, соловьи, не будите солдат,
Пусть солдаты немного поспят...

Шăпчăксем... салтаксем...

Шăпчăк юррисене питех итлеме тӳр килмест çав салтаксен. Унта, лере, урăх юрăсем. Вилĕм музыки. Кунĕн-çĕрĕн. Час-часах хăлхасем те илтми пулаççĕ. Акă, кунта халь питĕ лăпкă, шăп, кайăк юррисемсĕр пусне урăх нимĕнле сасă та çук. Анчах çак самантра лере, çĕрле пулин те, пĕлĕтре бомбардировщиксем ӳлеççĕ, артиллери перет, бомбăсемпе снарядсем, минăсем шартлатса çурăлаççĕ, пулеметсем тăкăртатаççĕ. Илтейместĕн унта шăпчăк юррине!

Кованый ăçта-ши халь? Хăш еннелле ячĕç-ши ăна? Сыратăп, терĕ, анчах вăл кайни кĕçех уйăх çитет ĕнтĕ, пĕр хыпар та çук-ха унран.

Медсанбатри хĕрсем мĕнле пурăнаççĕ-ши? Пĕрремĕш Белоруссии фрончĕ малаллах каять, дивизи ăçта çитрĕ-ши?

Иван Актай писатель ăçта-ши тата? Мĕнле-ши? Сывалса пырать-ши? Ун арăмне ниепле те курма тӳр килмерĕ юлашки вăхăтра. Пĕрмай гастрольте, теççĕ. Вĕсен ĕçĕ те çăмăл мар çав...

Кĕтмен япала сахал пулать-и çĕр çинче! Каçхине çавăн пек шухăшласа выртнă хыççăн тепĕр ирхинех, Атăл

хĕррине пит çума кайсан, Римма Актай арăмне тел пулчĕ.

— Марина Яковлевна! Эсир мĕнле лекнĕ кунта?—тĕлĕнсе ыйтрĕ вăл унран.

— Эсĕ ху мĕнле лекнĕ — эпĕ те çавăн пекех пуль!— йăл кулчĕ тин çеç шыва кĕрсе тухнă артистка, йĕпе çӳçне тураса.— Вăрман касатпăр, вутă хатĕрлетпĕр!

— Сире те кастараççĕ-и?!

— Эпир мĕн вара, ыттисем пекех ĕççыннисем мар-им? Хĕлле хамăрăн театра хутса ăшăтмалла-çке! Кам вутă хатĕрлесе парать пире ку чухне? Виçĕмкун гастрольтен таврăнтăмăр та, ĕнер кунта кĕрлеттерсе çитрĕмĕр — канмалли çурт вырăнне.

— Иван Васильевич мĕнле? Сырать-и?

— Кашни эрнерех илетĕп. Калининра выртать. Курма кайса килесшĕнччĕ те, вăл еннелле пропусксăр ямаççĕ. Облвоенкоматра калаçрăм-ха, пулăшатпăр, терĕç.

— Ун сывлăхĕ...

— Тӳрленет! Сывалать пирĕн Иван Васильевич!— хитре шăлĕсене кăтартса кулса илчĕ артистка. Куçĕсем савăнăçпа çиçрĕç унăн.

Атăл хĕрринчен вĕсем пĕрле хăпарчĕç. Актай арăмĕ пĕр чарăнмасăр калаçрĕ, колхозсем тăрăх мĕнле çӳрени çинчен каласа кăтартрĕ. «Çĕкленсех пырать халăх кăмăлĕ, çарсем малалла ярса пуснă кашни утăм хавхалантарать çынсене, пурте вăрçă кĕçех пĕтессе кĕтеççĕ...»

Артисткăн хăйĕн кăмăлĕ те çав тери улшăннă çав. Пĕртте пĕркунхи, Актай йывăр аманни çинчен тин çеç пĕлнĕ чухнехи пек мар. Упăшки сывалса пынăшăн савăнать ĕнтĕ вăл. Унпа пĕрле Римма та чунтан хĕпĕртерĕ...

Каçхине, хĕвел аннă вăхăтра, вĕсем каллех тĕл пулса шыва кĕчĕç те пĕчĕкçеç юханшыв хĕрринче, лăпсăркка шĕшкĕ тĕми айĕнче вăрахчен калаçса ларчĕç вара. Артистка Римма пурнăçĕ çинчен тĕплĕрех ыйтса пĕлме тытăнсан, Римма ăна хăй юратнă Сергей çинчен те, Кованăйпа туслă пурăнни çинчен те каласа пачĕ.

— Пирвайхи юратуран хакли нимĕн те çук, тусăм, тĕрĕс тăватăн, кĕт, хытă кĕт хăвăн салтакна!— терĕ артистка хĕр калавне итлесе пĕтерсен, ăна çурăмĕнчен лăпкаса.

Ку сăмаха Римма темиçе хĕрарăмран та илтрĕ ĕнтĕ. Никам та ăна «ан кĕт халь тин, мĕн усси?» темерĕ. Анчах ун пек калакансем пулнă пулсан та Римма пурĕпĕр Сергее хăйĕн чĕринчен кăларса пăрахман, шанчăкне сӳнтермен пу-

лĕччĕ. Вăрçă пĕтесси çывхарса пынă май çав шанчăк çирĕпленсе, вăйлансах пычĕ унăн, мĕншĕн тесен халăх хушшинче халь çавăн пек «хыпарсăр çухалнисем» сасартăк тупăнни, сывă пулни çинчен час-часах калаçрĕç. Вĕсем, çав «хыпарсăр çухалнисем», икшер-виçшер çул таран фронт леш енче, партизансен отрячĕсенче çапăçнă иккен...

Сергей те çавăнта пулма пултараймасть-им?

Анчах пурнăç — чăркăш япала. Тем тĕрлĕ те çаврăнать, çынна пачах кĕтменнине туса парать. Хăш чух савăнтарать вăл, тепĕр чух ĕмĕр манмалла мар хуйхă кӳрет.

Вăрмантан таврăнсан хваттере кĕрсенех, Римма хайĕн хальхи тусĕ Рая Чернова вырăн çинче макăрса выртнине курчĕ. Римма питĕ тĕлĕнчĕ: Рая нумай макăрнă пулмалла — пичĕ-куçĕ хĕрелсе шыççах ларнă, çӳçĕ-пуçĕ арпашăнса кайнă, сасси те çĕтнĕ, сывласса та чирлĕ çын пек йынăшса сывлать.

— Мĕн пулчĕ, Рая? Чирлесе ӳкрĕн-и? — пăшăрханарах ыйтрĕ Римма, ун патнелле пырса.

— Ах, тусăм, пĕтрĕ ман пурнăç...— Рая тепĕр хут пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе макăрма тытăнчĕ.

— Ай-уй, мĕн апла? Чиперех юлтăн-çке манран? Ачуна тем пулмарĕ пуль те?

— Ача мар... Максимова вĕлернĕ!

— Мĕнле Максимова? — ăнланаймарĕ Римма.

— Павлике ара, ман упăшкана, ман ача ашшĕне! — пичĕпе çытар çине тăрăнчĕ Рая.

— Епле... вĕлернĕ? Ăçтан пĕлтĕн? — Халь Римма сасси те тăруках улшăнчĕ.

— Ав, сĕтел çинче çыру выртать...

Римма лутăрканса пĕтнĕ, темиçе тĕлте куççулĕ паллисем юлнă кăвак хут таткине илсе хăвăрт вулама тытăнчĕ. Ăна темле Роман Панасович Прокопчук çырнă: «Хаклă Раиса юлташ, манăн сире хурлăхлă хыпар пĕлтерме тивет... Эпир сирĕн упăшкăрпа, Павел Максимовпа, фашистсен пĕр лагерĕнчен тарнă хыççăн икĕ çул ытла Белоруссi вăрманĕсенче партизанра çӳрерĕмĕр, унпа тăвансем пекех пурăнтăмăр. Питĕ паттăр партизанччĕ вăл. Пурте юрататчĕç ăна. Юлашки çулталăк хушшинче пирĕн взвод командирĕ пулчĕ. Анчах та уйăх каялла, пĕр хаяр çапăçу вăхăтĕнче, тăшман пули ун пурнăçне татрĕ. Ăна эпир Могилев облаçĕнчи Городище салинчен инçе те мар, Друть шывĕ хĕрринче, тăванла масарта пытартăмăр. Эпир иксĕмĕр те пĕр-пĕрне хамăрăн килтисен адресĕсене панăччĕ, хăшне те пулин тем пулсан

ӳн ҫинчен таванӗсене пӗлтерме калаҫса таталнӑччӗ. Халӗ ак манӑн ун ҫинчен ҫырма тивет... Эпир ӗнтӗ Хӗрлӗ Ҫарпа пӗрлешрӗмӗр, тӑшмана пӗр чарӑнса тӑма памасӑр хӗвеланӑҫнелле хӑвалатпӑр. Сывӑ пулӑр, Раиса юлташ, ҫак пысӑк хурлӑха епле те пулсан тӳссе ирттерӗр, ывӑлӑра ашшӗ пекех Тӑван Ҫӗршыва юратакан паттӑр патриот пулма вӗрентсе ӳстерӗр...»

Ҫырӑва вуланӑ май Риммӑн куҫӗсем шывланчӗҫ. Таҫти инҫетри, ним палламан ҫын Рая упӑшки ҫинчен мар, Сергей ҫинчен пӗлтернӗ пек туйӑнчӗ ӑна. Уйрӑмлӑхӗ ҫук вӗт: Рая тусӗ Максимов та вӑрҫӑ пуҫлансанах хыпарсӑр ҫухалнӑ, Сергей та. Максимов лагерьте пулнӑ, унтан тарса партизансем патне лекнӗ, вӗсемпе пӗрле тӑшманпа ҫапӑҫса пурӑннӑ. Анчах юлашкинчен, шӑпах Хӗрлӗ Ҫар хӑйсем патне ҫитес чух телей пулман унӑн, вилнӗ. Сергей шӑпи те ҫавӑн пекех пулма пултарнӑ. Йывӑр аманса тыткӑна лекнӗ, ӑна лагере янӑ... Сергей пек хастар чӗреллӗ ҫын унта тӳссе пурӑнас ҫук ӗнтӗ. Вилмен пулсан — тарнах вӑл. Кайран... Аҫтан пӗлес, тем пулнӑ кайран! Пин тӗрлӗ шутласан та тӗрӗссине пӗлес ҫук. Тен, кӑлӑхах шанса пурӑнать-и Римма? Тен, Сергей тахҫанах ҫук ҫӗр ҫинче? Унпа пӗрле Брест крепоҫӗнче пулнӑ юлташӗ ҫырса янӑччӗ вӗт-ха Сергей контратака вӑхӑтӗнче пӗтрӗ тесе!

Римма ҫаплах макӑракан Райӑна епле те пулсан лӑплантарас тесе унпа юнашар кравать ҫине ларчӗ. Анчах нимех те калаймарӗ ӑна, тусӗпе пӗрлех хӑй те пӗтӗм чунтан хурланса макӑрса ячӗ...

...Шӑп ҫав вӑхӑтра Шупашкартан темиҫе пин километрта, инҫетри Бельгире, Голланди чикки ҫывӑхӗнчи ҫӑра вӑрмантан вырӑс партизанӗсен «Тӑван Ҫӗршывшӑн» ятлӑ бригадин пӗр пысӑк ушкӑнӗ Мивэ — Брей хулисем хушшинчи шоссе хӗррипче засада тума тухнӑ. Вӗсен американецсемпе акӑлчансем хӗвеланӑҫ енчен хӗснипе чакса килекен гитлеровецсен ҫулне пӳлмелле, шоссепе ун ҫывӑхӗнчи ахаль ҫулсем ҫине минӑсем лартмалла, тӑшман салтакӗсен колоннисене аркатмалла пулнӑ. Партизансене ҫак вырӑнсене лайӑх пӗлекен бельгиец, сарлака улӑм шлепке тӑхӑннӑ, пысӑк кӑвак уссиллӗ ватӑрах ҫын ертсе пынӑ. Ун хыҫӗнчен партизансен командирӗ Серж, пӗр ҫирӗм пилӗк ҫулсенчи хурарах сӑнлӑ, сарлакарах питлӗ, сӑран пиншакпа кепка тӑхӑннӑ питӗ патвар каччӑ нимӗҫсен ручной пулеметне ҫӗклесе утнӑ. Ҫав «Серж» — чӑваш каччи Сергей Пастухов пулнӑ...

Уйăх хыççăн уйăх иртрĕ. Пирĕн çарсем, хамăр çĕршыва тăшмантан тасатса, чикĕ урлă каçса кайрĕç, вăрçă Германи çĕрĕ çинче — Хĕвелтухăç Пруссире, Венгрире, Румынире, Югославире, Чехословакире кĕрле пуçларĕ.

Фронт аякран аякка шунă пулин те, госпитальте ĕç чакмарĕ, аманнисене илсе килсех тăчĕç. Пĕр хушă пуринчен ытларах Хĕвелтухăç Пруссире аманнисем пулчĕç. Питех те йывăр çапăçусем пулнă иккен унта. Кашни хулана, кашни яла çеç мар, кашни çурта фашистсем крепость туса хунă-мĕн.

— Пире хирĕç автомат-пулеметран сапса тăман çурт та çук, кашни утăмра тенĕ пекех минăсем лартса тултарнă,— каласа пачĕç унта аманса килнисем.

— Сусăртнă кашкăр яланах питĕ хытă хирĕç тăрать, теççĕ çав...

Пур çĕрте те — çуртсем, хӳмесем, хапхасем çине, ятарласа кăларса тăратнă щитсем çине тем пысăкăш плакатсем çакса тултарнă имĕш. «Аслă Германие çĕнтерме пултаракан вăй çук!», «Аслă Германи çĕрне вырăс таптаймĕ!», «Паттăрлăх, паттăрлăх тата тепĕр хут паттăрлăх!», «Çĕнтерӳ е Çĕпĕр!» тенĕ çав плакатсенче.

Анчах Совинформбюро кашни кунах пирĕн çарсем Германи çĕрĕ çине шалтан шала кĕрсе пыни, хула хыççăн хула илни çинчен пĕлтерсе савăнтарчĕ.

Çак хушăра Римма Кованăйран темиçе кĕске çыру илчĕ. Хăй хăш çĕршывра çапăçни çинчен вăл «эпĕ халь Ярослав Гашек патĕнче хăнара, Швейк та пирĕнпе пĕр сĕтел хушшинче», тесе пĕлтерчĕ. Ăнланма йывăр пулмарĕ: Чехословакире вăл. Чехсем те пирĕнпе пĕрле çапăçаççĕ.. Кашни çырăвĕнчех Кованый Шупашкарта Риммăпа пĕрле иртternĕ вăхăта час-часах аса илни, хăйсем мĕнле сывпуллашнине нихçан та манас çукки, вăрçă хыççăн тĕл пулма ĕмĕтленни çинчен çырчĕ. Питĕ кăмăллă пулчĕç унăн çырăвĕсем, Римма вĕсене темиçешер хут та вуласа пуçтарса хучĕ...

Пĕр çырăвĕпе лейтенант фото та ярса пачĕ: вăл тепĕр совет офицерĕпе пĕрле чех хĕрĕсем хушшинче тăрать. Пурте питĕ телейлĕн кулаççĕ. Фото тепĕр енне лейтенант, шӳтлесе, çапла çырса хунă: «Ан кĕвĕç, эп ют çĕршыв хĕрĕсемпе юнашар ӳкерĕнни сана маннине пĕлтермест, эп сана тĕлĕкре те час-часах куратăп...»

...Хăйсем тĕллĕн çул çӳреме пултарайман алăсăр е урасăр инвалидсене госпитальтен киле леçме кунти сестрасем е санитарсем кайнă. Риммăн та икĕ хутчен кайса килме тиврĕ çавăн пек. Пĕррехинче — ку декабрь пуçламăшĕнче, шартлама сивĕре пулчĕ — вăл урине пĕçĕ кăкĕ таранах татнă ватăрах салтака Çĕпĕре, Кокчетав хулине çитиех ăсатрĕ. Питĕ кансĕр çул пулчĕ вăл. Темиçе пересадка, пуйăсĕсем тăптулли, вырăнсем çук, ларма çав тери йывăр. Çитменнине тата инваличĕ, темиçе уйăх пӳлĕмрен тухмасăр пурăннăскер, станцисенче нумай кĕтмелле пулнипе шăнса пăсăлчĕ пулмалла, ӳсĕрме тапратрĕ, ăна пĕçертсе пăрахрĕ. Римма чирлĕ сынна пĕр-пĕр станцинчи çар госпитальне парса хăварма та шутларĕ, анчах лешĕ макăра-макăрах ятлаçма тытăнчĕ:

— Юлмастăп ниçта та, анмастăп пуйăс çинчен! Вилмелле пулсан та, киле çитсе ачамсене курса вилем!..

Ирĕксĕрех килĕшмелле пулчĕ.

Ачисем унăн улттă тан пулнă, чăн асли нумай пулмасть вунсаккăр тултарнă та ăна вăрçа илсе кайнă, ыттисем вара — пĕринчен тепри пĕчĕкрех. Римма пĕр станцирен панă телеграмма тăрăх вĕсем пурте Кокчетав вокзалне тухнă-мĕн те, урасăр ашшĕне хур чĕпписем пекех хупăрласа илчĕç. Вĕсем çине пăхсан, Риммăн та куççулĕ тухса кайрĕ: мĕнле пăхса ӳстерес, мĕнле çын тăвас пулать ĕнтĕ вĕсене çак чăлах çыннăн? Ах, вăрçă, вăрçă, мĕн чухлĕ халăха телейсĕр турăн эсĕ, мĕн чухлĕ хурлăх кӳтĕн çынсене!..

Анчах савăнмаллине те курчĕ Римма ун чухне. Çул тăршшипех, мĕн Канашран пуçласа инçетри Çĕпĕре çитиччenех вĕсене хирĕç тем вăрăмăш çар эшелонĕсем иртсе пычĕç: хисепсĕр йышлă танк, тĕрлĕ йышши тупă, самоходка, бронетранспортер, автомашина тиенĕ вĕсем...

«Юлашки татăклă çапăçусем валли ĕнтĕ ку пĕтĕм техника...— шухăшларĕ Римма.— Фашизма тĕппипе, ним юлмиччен аркатма...»

Унтан Риммăн пачах урăх енне каймалла, тепĕр инвалида Мускав облаçĕнчи Уваровка станци хыçĕнчи пĕр яла леçсе килмелле пулчĕ. Шăп хăйсем хĕрĕх иккĕмĕш çул пуçламăшĕнче фронта кайнă çулпа пычĕ вăл: Мускав—Одинцово—Апрелевка—Дорохово—Можайск... Ниçта кайса кĕрейми пăлханса тинкерчĕ Римма вакун чӳречи витĕр. Ун чухне, виçĕ çул каялла, тин çеç вăрçă кĕрлесе иртнĕччĕ кунта, таврара кĕл те кăмрăкчĕ, çапăçусен йывăр йĕрĕ кашни утăмрах палăратчĕ, анчах виçĕ çул хушшинче нумашăйне

юсанӑ. Ҫапӑҫнӑ вӑхӑтрах ӗҫлеме те ӗлкӗрет пирӗн халӑх! Унӑн вӑй-хӑвачӗ иксӗлми ҫав!

Каялла таврӑннӑ чух Римма, Хусан пуйӑсӗ каҫпа тин пулнипе, кунӗпех Мускав курса ҫӳрерӗ. Кунта вӑл темиҫе хут та пулнӑ, ҫулне-йӗрне пӗлкелет. Столица чиперех пуранать-мӗн, ним вӑрҫӑ палли те ҫук. Ирхине ҫынсем ӗҫе васкаҫҫӗ, ачасем шкула каяҫҫӗ, магазинсем уҫӑлаҫҫӗ, каҫхине театрсем ӗҫлеҫҫӗ — пур ҫӗрте те капӑр афишӑсем ҫӗнӗ спектакльсене, кинофильмсене пырса курма йыхӑраҫҫӗ. Тротуарсем тӑрӑх вӑрҫӑчченхи пекех халӑх каллӗ-маллӗ кумать, пурте васкаҫҫӗ, урам варрипе ҫӑмӑл машинӑсем, автобуссем, троллейбуссем чупаҫҫӗ...

Римма, ытларах курса ҫӳрес тесе, метрона анмарӗ, Хусан вокзалӗнчен Хӗрлӗ площаде ҫити ҫурранах утрӗ. Ленин мавзолейӗ умӗнче кӑштах чарӑнса тӑчӗ те Кремль ҫуммипе Мускав шывӗ еннелле анчӗ, унтан, мавзолей тӗлӗпе тепре иртме шутласа, каялла ҫаврӑнчӗ. Спасски башня ҫинчи сехет вуниккӗ ҫапрӗ. Шӑп ҫав вӑхӑтра Кремль хапхинчен ҫар ҫыннисен пысӑках мар ушкӑнӗ тухрӗ. Стройпа мар, ахалех. Тумланасса та тӗрлӗрен тумланнӑ — хӑшӗ шинельпе, хӑшӗ кӗрӗкпе, пӗрисем сӑран атӑ тӑхӑннӑ, теприсем ҫӑматӑпах. Хӑшӗ-пӗрисем туясемпе. Уксахлани те палӑрать. Мӗнле ҫынсем вара кусем?

Римма хӑвӑртрах утрӗ. Ушкӑнра арҫынсем кӑна мар, хӗрарӑмсем те пур-мӗн. Ав, сылтӑм енче иккӗн утаҫҫӗ. Пӗри ҫӳллӗрех, яштака, пит хитре шинельпе,— ятарласа хӑйӗн кӗлеткипе виҫтерсе ҫӗлетнӗ пулмалла, тепри лутрарах та чӑмӑрккаскер, кивелерех панӑ кӗрӗкпе, сылтӑм аллинче туя, пусмассеренех кӑшт уксахласа илет. Шинелли ӑна сулахай хулӗнчен тытнӑ. Иккӗшӗ те пит хавассӑн калаҫаҫҫӗ, кулкаласа та илеҫҫӗ... Акӑ, пӗри ҫип-ҫинҫе сасӑпа кӑлтӑртатса кулса ячӗ. Чим-ха, мӗнле паллана кулӑ ку? Шӑп та шай вӗсен дивизи медсанбатӗнчи Пӗчӗк Вера кулли...

Римма чӗри хӑвӑрт-хӑвӑрт тапма тытӑнчӗ. Тата хытӑрах утрӗ вӑл. Малти хӗр тепӗр хут кулса ячӗ: кӑлтӑр-кӑлтӑр... Ҫавӑ! Тем тесен те, ҫавӑ!..

— Вера! Пичугина!— тӳсеймесӗр кӑшкӑрчӗ Римма.

Кӗрӗклӗ лутра хӗр тӑп! чарӑнчӗ те каялла ҫаврӑнса пӑхрӗ. Унӑн куҫӗсем тӑрук чарӑлса кайрӗҫ.

— Римма! Тӗлӗк пуль ку...— пӑшӑлтатса илчӗ Вера.

— Тӗлӗк мар, тусӑм, тӗлӗк мар!— ун патнелле чупрӗ Римма. Вӗсем ыталанса чуптума тытӑнчӗҫ. Верӑпа юнашар

ғына хигре шинеллĕ хĕр те, ушканри арçынсем те тарук макăрма тытăннă хĕрсем çине тĕлĕнсе пăхса тăчĕç.
— Пĕр полкрисем-и мĕн?— ыйтрĕ тахăшĕ.
— Мускав патĕнчен пуçласа Белоруссие çити пĕрле пулнă!— терĕ Пĕчĕк Вера пурне те илтĕнмелле.— Ах, турă, пулать те çĕр çинче телей!..
— Чăн та телейлĕ тĕлпулу,— кăмăллăн кула-кула илчĕç арçынсем.— Паллă тăвас пулать куна сирĕн...
Ушкăн малалла утрĕ. Халь ĕнтĕ Римма та, Верăна хулĕнчен тытса, пĕрле пычĕ.
— Эсир Кремльтен тухрăр, куртăм эпĕ... Мĕнле майпа лекрĕр унта, мĕн турăр?— ыйтрĕ Римма Вера çинчен куç илмесĕр.
— Орденсем пачĕç... Акă, кур!— Вера кĕрĕкне кăштах уçса кăкăрĕ çинчи вĕр-çĕнĕ Хĕрлĕ Çăлтăра кăтартрĕ.
— Кремльтех пачĕç-и?— тĕлĕнчĕ Римма.— Орденсене халь фронтрах, чаçрех параççĕ-çке?
— Эп чаçрен тухни нумай пулать çав, аманнă хыççăн виçĕ уйăх Мускаври госпитальте выртрăм та, мана орденне кунтах памалла тунă... Шверник юлташ аллинчен илтĕм!
— Маттур... Амсанатăп!
— Эс мĕн туса çӳретĕн тата кунта? Мĕншĕн дивизие таврăнмарăн?
— Вăл манран килмест, тусăм. Тиркерĕç, юрамасть, терĕç...
— Санăн ăна пăхса тăмалла марччĕ! Тухмалла та вĕçмелле! Вăрçа каякан çынна кам айăплать? Фронтран шăвăнни мар-иç вăл? Сăмахран каласан, эп, епле пулсан та, хамăр дивизиех каятăп! Маншăн хамăр дивизи — тăван кил!
— Пултараймарăм çав ун пек тума...
Истори музейĕ çуммипе иртсе «Мускав» гостиница патне çитсен, ушкăн саланса кайрĕ. Риммăпа Вера иккĕшех тăрса юлчĕç.
— Аçталла çул тытатпăр ĕнтĕ, Верочка? Эпĕ хуть каçченех çӳреме пултаратăп, эс мĕнле?
— Эп тăваттăччен. Итле-ха, çав арçынсем халь пурте орденĕсене çума кайрĕç ĕнтĕ, атя-ха эпир те тĕл пулнă ятпа ăçта та пулин пĕрер курка сăра тупса ĕçер!— тăрук сĕнчĕ Вера.— Кăшт хаяртараххи тупăнсан та çылăх пулмасть паян...
Вĕсем Горький урамĕпе тăвалла утрĕç те пĕр буфет пеккине кĕрсе ларчĕç. Сăра илчĕç, ик-виç бутерброд. Вĕçĕм-

сер каласу пуçланса кайрĕ вара хĕрсен. Ыйтса пĕлмелли, пĕр-пĕрне каласа памалли пит нумай-çке...

Пĕчĕк Вера самаях улшăннă. Малтанхинчен хăюллăрах, çивĕчрех пек, кăштах ӳснĕ пек те туйăнать. Вăл пĕрремĕш Белоруссии фрончĕ Бобруйск еннелле наступлени тунă чух аманнă иккен. Темиçе госпитале çитнĕ. Халь ăна пĕр уйăхлăх отпуск панă та, вăл тăванĕсем патне Пензăна кайма хатĕрленнĕ. Римма ăна Курск вокзалне ăсатса вакун çинех лартса ячĕ.

— Хамăр дивизие таврăнма тӳр килсен, манран пурне те салам кала!— ал сулса кăшкăрчĕ вăл юлашкинчен, пуйăс тапранса хытăран хытă кайма пуçласан.

— Юра-ать!..

...Шупашкара çитсен Риммăшăн тата тепĕр тĕлĕнмелли япала пулчĕ. Станцирен тӳрех госпитале пычĕ те, нимрен малтан начальник патне кĕрсе хăй таврăнни, аманнă салтака килне йĕркеллех çитерсе хăварни çинчен пĕлтерчĕ.

— Ыр хыпаршăн тав, Сурская, халь ĕнтĕ пĕр-икĕ кун канма та пултаратăн,— терĕ начальник кăмăллăн.

— Мĕн канмалли... Ывăнман эпĕ, майор юлташ, усăлса çӳренĕ пек çеç пулчĕ ку маншăн,— терĕ Римма ăна хирĕç. Çав самантрах начальник погонĕсем çинче пĕрер мăн çăлтăр мар, икшер çăлтăр пулнине асăрхарĕ те хĕрелсех кайрĕ.— Каçарăр, подполковник юлташ! Çĕнĕ звани илнĕ ятпа саламлама ирĕк парăр...

— Тавтапуç...— йăл кулса илчĕ начальник.— Мускав мĕнле пурăнать унта, курса çӳрерĕн-и хуть?

— Çӳрерĕм. Пит лайăх пурăнать Мускав. Унта манăн çав тери телейлĕ тĕлпулу пулса иртрĕ тата...

— Кама куртăн?

Римма хăвăрт кăна хăй Хĕрлĕ площадьре Пĕчĕк Верăпа епле тĕл пулни çинчен каласа кăтартрĕ.

— Пит аван пулнă-çке ку! Вăрçăра пĕрле пулнă çынна курнишĕн хĕпĕртемелле çав!— терĕ начальник. Унтан тăруках тем аса илчĕ.— Э-э, мансах кайнă калама! Паян ирхине сан патна театртан шăнкăравларĕç... Ак, кунта çырсах кунă-ха эпĕ...

— Кам шăнкăравларĕ?— хăвăрт ыйтрĕ Римма.

— Васильева. Тава тивĕçлĕ артистка.

— Марина Яковлевна-и?! Мĕн терĕ вăл? Мĕн каларĕ?

— Питĕ курмаллаччĕ, терĕ. Таврăнсанах пĕлтерме хушрĕ.

— Ах, тур, мĕн пулнă-ши тата?— пăлханма пуçларĕ

Римма.— Унӑн упӑшки аманнӑ, Калининра выртать, тенӗччӗ... Унпа тем инкек пулман-ши?

— Ана-кӑна шарламарӗ, курмаллаччӗ, терӗ çеç.

Римма çавӑнтах телефон трубкине тытса театра шӑнкӑравларӗ. Анчах унта ирхи репетици пӗтнӗ те артистсем касс̌ӑр пымасс̌ӗ, терӗç. Çитменнине тата Васильева кӗçӗр вылямасть те иккен.

Тӳсеймерӗ вара Римма, госпитальтен тӳрех артистка патне кайрӗ. Ун хваттерне пӗлет вӑл — артистка Карл Маркс урамӗнче, банка хирӗç, илемсӗр чул çуртра пурӑнать. Çулла вӑрманта вутӑ хатӗрленӗ чухнех Марина Яковлевна хӑй патне пырса курма чӗннӗччӗ ӑна, анчах темле-çке тӳр килмерӗ.

Питӗ пӑлханса хӑпарчӗ Римма ансӑр пусма картлашкисем тӑрӑх. Çаплах шухӑш тухмарӗ ун пуçӗнчен: мӗн пирки шыранӑ-ши ӑна çак паллӑ артистка?

Кирлӗ хваттер тӗлне çитсен, вӑл, çур минутлӑха чарӑнса, сывлӑш çавӑрса ячӗ, шинельне, çӗлӗкне тӳрлетрӗ, унтан хуллен кӑна алӑкран шаккарӗ. Самантранах алӑк уçӑлчӗ те, вӑл... Иван Васильевича, Актай писателе курах кайрӗ! Тӑпах чарӑнса тӑчӗ вара, урисене такам тӑлласа лартнӑ пек.

— А-а, Римма! Килех, тусӑм, килех!— йӑл кулса, алӑка яриех уçса ячӗ кил хуçи.— Тупӑнтӑн-и çапах та? Эпир сана ӗнертенпех шыратпӑр, çук та çук пирӗн хӗр...

Вӑл тӑрук чӗлхесӗр пулнӑ, тӗлӗннипе ним чӗнеймен Риммӑна хулпуççисенчен тытса питӗнчен чуптуса илчӗ.

— Ирт, ирт малалла, хывӑн, лар, хӑна пулӑн!

— Эсир... эсир хӑçан килтӗр?— кӑштах лӑпланса диван çине ларсан тин ыйтрӗ Римма.

— Ӗнер çитрӗм. Талӑк пурӑнатӑп ӗнтӗ килте.

— Сывлӑхӑр мӗнле? Эсир пит йывӑр аманнӑ вӗт-ха...

— Аптрамастӑп халь. Унтан-кунтан сапласа ячӗç-ха тухтӑрсем, çӗтӗлнӗ пыршӑсене ик метр тӑршшӗ касса илсе сыпрӗç, çапах та çын турӗç, тавах вӗсене!

— Эсир... хырӑмран аманнӑччӗ-и вара?— хӑрарах ыйтрӗ Римма, мӗншӗн тесен ун йышши сурансем çыншӑн питӗ йывӑррине пӗлет-çке вӑл: нумайӑшӗ вилеççӗ, çӑлӑнни сахал пулать...

— Çапла пулчӗ çав, йӑмӑкӑм,— ал сулчӗ Актай,— хырӑмран та, ураран та, кӑкӑртан та пӗр харӑс, пӗр минӑпа çӗмӗрсе тӑкрӗ. Хам та тӗлӗнетӗп, темле чӗрӗ юлнӑ!

— Мӗн тери асап...

— Юрĕ-ха, ун çинчен калаçмăпăр халь, вăл иртнĕ япала. Эсĕ ху мĕнле пурăнатăн? Чăн та, Марина Яковлевна кăштах каласа пачĕ мана сан çинчен...

— Пурăнатăп-ха... майĕпе. Ĕçлетĕп. Тин çеç командировкăран таврăнтăм. Сирĕнпе пĕрле пулнă вырăнсене куртăм...

— Мĕнле вырăнсене?

— Можайскра пултăм. Астăватăр пуль, унта çитсен тепĕр куннех курса çӳрерĕмĕр хула тăрăх? Нимĕçсен персе ӳкернĕ самолетне кайса пăхрăмăр, вĕсен вилнĕ летчикĕсене куртăмăр...

— Астумасăр! Хӳме çинчен çырса илнĕ сăвва та астăватăп: «Лети, Адольф, отныне вспять... Можайск освобожден опять...» Питĕ инçе тарчĕ унтанпа Адольф! Халь ăна хăйĕн йăвинче тӳпелетпĕр, ав. Шутласан, питĕ тĕлĕнмелле вĕт, Римма?

— Ан та калăр, Иван Васильевич... Чудо, вырăсла каласан.

Актай сĕтел çинчи мăн пачкăран пирус илсе тивертрĕ.

— Çапла, йăмăкăм, тĕрĕс калатăн,— ассăн сывласа ячĕ писатель, çăварĕнчен çăра тĕтĕм кăларса,— чудăсем нумай пулаççĕ ку вăрçă вăхăтĕнче. Эпир чĕрĕ пулни те чудо, мĕншĕн тесен, пин хут та вилме пултарнă çак таранччен, иксĕмĕр çакăн пек тĕл пулса калаçса ларни те чудо. Кĕçех акă эс тата тепĕр чудо куратăн...— Вăл чеереххĕн йăл-йăл кулса илчĕ.

— Мĕн тата?— тĕлĕнсе, хĕрелме тытăнса ыйтрĕ Римма.— Мĕнле чудо пулма пултартăр килте ларнă çĕрте?

— Каламастăп. Вăхăчĕ çитсен, хăвах куратăн. Кĕт пĕртак.

— Темскер шӳтлетĕр эсир, Иван Васильевич...— ал сулчĕ Римма.— Марина Яковлевна ăçта вара сирĕн?— ыйтрĕ унтан. — Эп театра шăнкăравларăм та, вăл киле кайнă, терĕç...

— Пасарта, халех таврăнать. Сан валли чудо илсе килет хăйĕнпе пĕрле.— Актай каллех кулса илчĕ.

— Кай, нимĕн те ăнланмастăп, Иван Васильевич! Темле шарада пекех ку маншăн.

— Ан хăра, вăл шарадăн тупсăмĕ кăткăс мар...

Вĕсем тепĕр çур сехет пек иккĕшех ларчĕç. Римма Мускавра Пĕчĕк Верăпа тĕл пулни çинчен каласа пачĕ, писатель ăна хăй госпитальте выртнă вăхăтрах çырнă калавĕсене кăтартрĕ.

— Хальхинче вӑрҫӑри ачасем ҫинчен ҫыртӑм-ха, фактсем нумайччӗ те... Пӗр пӗчӗк кӗнеке туса кӑларас тетӗп.

— О, питӗ кирлӗ ӗҫ тунӑ эсир, ҫав тери ырӑ ӗҫ!— терӗ Римма хавасланса.— Ҫак вӑрҫӑри паттӑрсем ҫинчен каласа парса, пин-пин патгӑр ӳстерес пулать пирӗн!

— Ку ӗнтӗ пулас учительница сӑмахӗ, ҫапла-и?— кулса ячӗ Актай.

Ҫак вӑхӑтра коридорта алӑк уҫӑлса хупӑнни илтӗнчӗ.

— Ҫитрӗҫ пирӗннисем,— терӗ писатель.— Атя, кӗтсе илер...

Римма ун хыҫҫӑн коридора тухрӗ. Алӑк патӗнче Актай арӑмӗпе ҫар тумӗ тӑхӑннӑ, хура уссиллӗ темле арҫын тӑраҫҫӗ.

— Ырӑ кун пултӑр, Марина Яковлевна! Эсир ман пата шӑнкӑравланӑ терӗҫ те, чупсах килтӗм...— терӗ Римма, ӑна ал парса.

— Питӗ тӗрӗс тунӑ!— Артистка тумтирне хывса ҫакрӗ те пӗрре Римма ҫине, тепре алӑк патӗнчех хускалмасӑр тӑракан арҫын ҫине пӑхса илчӗ.— Эсир пӗр-пӗрне паллаймастӑр пулас-ха, ҫапла-и? Паллаштарас-и?— ыйтрӗ унтан. Хӑй темшӗн ҫав вӑхӑтрах кулса ярасран тутине пӑчӑртаса ларткӗ.

— Эп паллатӑп та, хӑшӗ-пӗрисем палласшӑнах мар курӑнать,— терӗ арҫын.— Салам, Римма!— Вӑл хӗр патнелле ик-виҫ утӑм туса сулахай аллине тӑсрӗ.

— Аруткин... Володя!— чут ҫеҫ кӑшкӑрса ямарӗ Римма.

— Абсолютно тӗрӗс,— терӗ арҫын.

— Мӗнле майпа лекнӗ эс кунта?

— Канашлӑва килсеттӗм. Марина Яковлевна патне театра кайрӑм та, вӑл мана Иван Васильевич таврӑнни ҫинчен каларӗ. Унтан пӗр фронтовичка ҫинчен...

— Сана паллама та ҫук-иҫ!— ун аллине тытса силлерӗ те Римма, кӑштах каялла чакса кулса ячӗ:— Ку нӗрсӗр уссие мӗн тума ҫитӗнтертӗн, явӑл? Запорожец мар вӗт эсӗ, Хӗрлӗ Чутай вӗҫкӗнӗ ҫеҫ!

— Хӗрарӑмсем умӗнче авторитетлӑрах пулма,— кулчӗ Аруткин та.

— Йӑнӑшатӑн! Ним майӗ ҫук эс капла. Морж пек! Паянах хырса пӑрах, унсӑр хуть те мӗнле хӗрарӑм та хӑраса тарать санран, тусӑм! Е... тен, тупрӑн та пуль-ха хальччен? Тен, пӗр-пӗр пуян хусах матка патне киле кӗтӗн-и? Хӑшӗ-пӗрисем ҫавӑн пек тӑваҫҫӗ, тет, халь.

— Çук-ха, тăванăм, ун пек фокус туман. Сана кĕтсе пурăнатăп. Астăватăн пуль леш Дубинино ялĕнче уйрăлнă чух калаçнине? Вăрçă пĕтсенех евчĕ яратăп, терĕм...

— Тĕрĕс ку, эп свидетель!— хушса хучĕ Актай.

— Анчах вăрçи пĕтмен-çке-ха?

— Пĕтет ĕнтĕ вăл, кĕтмелли нумай юлмарĕ.

— Çапах та кĕтес пулать-ха! Вăрçă вăхăтĕнче кашни минутрах тем те сиксе тухма пултарать...

Марина Яковлевна хăнасене малти пӳлĕме ирттерсе, хăй кухньăна кайрĕ. Пĕр-пĕрне нумайранпа курман, халь ăнсăртран тĕл пулнă виçĕ фронтовик пĕр хушă шăпăрт ларчĕç. Тем çинчен те калаçмалла ĕнтĕ вĕсем, анчах чăн малтанхи сăмах тупăнмасть...

— Кай, ĕненес те килмест... Эпирех-ши ку?— кăмăллăн кулса, пуçне пăркаласа илчĕ унтан Актай.

— Хам та çавăн çинчен шухăшлатăп-ха,— терĕ Аруткин.— Мĕн-мĕн пулнине аса илсен — чăнах та ĕненмелле мар çав!

Кĕçех Марина Яковлевна сĕтел çине çимелли-ĕçмелли пырса лартрĕ, хăй те йышпа пĕрле ларчĕ. Пирвайхи черккене çывхарсах килекен çĕнтерӳшĕн, иккĕмĕшне малашнехи телейлĕ пурнăçшăн ĕçрĕç те, сăмах çăмхи салтăнса кайрĕ вара. Питсем хĕрелсен, Марина Яковлевна пианино умне ларса темиçе аккорд туса илнĕ хыççăн çемçе, кăмăллă сасăпа юрласа ячĕ:

Жди меня, и я вернусь,
Только очень жди...

Пит хитре юрларĕ вăл. Чĕре патнех пымалла, чун хĕлĕхĕсене тивсе хускатмалла юрларĕ. Риммăн куçĕсем шывланчĕç: вăл Сергее аса илчĕ.

Жди меня, и я вернусь
Всем смертям назло...

Ах, çавăн пек пулинччĕ!..

Кĕтет-çке вăл хăйĕн савнă çыннине, тăваттăмĕш çул кĕтет пĕтĕм чунтан, чĕререн, çĕр çинчи чи пысăк телее кĕтнĕ пек...

...Унтан фронтовиксем хăйсем юрларĕç, çамăл шăмшаклă Аруткин сиксе тăрса ташă кĕвви калама ыйтрĕ, хăйĕнпе пĕрле ташлама Риммăна туртсах тăратрĕ. Линккалинкка кĕввипе ташша тӳрĕç кăна вара вĕсем, Çамрăксем,

хашкакан пулсан, вырăна ларсан, Актай Риммăна хулпуççирен лăпкаса ыйтрĕ:

— Чудо мар-и ĕнтĕ çак, йăмăкăм? Эсĕ операци сĕтелĕ çинче ним пĕлми выртакан Володьăна хăвăн юнна панă чух хăçан та пулин унпа çакăн пек ташласси çинчен шухăшлама пултарнă-и?!

## 24

Çакăн хыççăн Римма, ерçнĕ вăхăт пулсанах, Актайсем патне çӳрерĕ. Марина Яковлевна гастрольте чух та кая-кая ларчĕ унта. Иван Васильевич халлĕхе килтех пулчĕ-ха, анчах кашни пымассеренех Римма вăл сĕтел хушшинче çырса ларнине курчĕ.

— Эсир ытла нумай ĕçлетĕр-çке, сиенлĕ мар-и ку? Сывлăхăр çирĕпленсе çитмен-ха сирĕн,— терĕ Римма пĕрремĕш хинче.

— Ĕçлени маншăн — чи лайăх эмел, часрах сывалма пулăшать кăна вăл,— терĕ ăна хирĕç Актай.— Тата... васкас та пулать, йăмăкăм, вулакансем кĕтеççĕ, вăрçă çинчен эпир вĕсене нимех те каласа паман вĕт-ха!

— Ахалех чăрмантаратăп эп сире...

— Мĕн чăрмавĕ? Эс килсен канатăп çеç. Атту, пĕччен чух, чарăнма пĕлместĕп эпĕ. Ну, мĕнле çĕн хыпарсем пур унта сирĕн «ремонт мастерскойĕнче»?

«Ремонт мастерскойĕ» тесе писатель госпиталь пирки шӳтлет.

— Çĕнни мĕнех пултăр ĕнтĕ пирĕн? Пурнăç пĕр пекех пырать. Сывалаканнисене ăсатса яратпăр, вĕсем вырăнне çĕннисене йышăнатпăр. Виçĕмкун çеç аллă çын ытла илсе килчĕç. Йывăррисем нумай. Кенигсберг патĕнчен, теççĕ.

— Çапла-ха çав,— терĕ Актай ассăн сывласа,— тăкăнать-ха пирĕн юн, халь те нумай тăкăнать... Ним тума та çук. Анчах нумай юлмарĕ ĕнтĕ тӳсесси. Часах пĕтет ку хурлăх... Эс паян сводка итлерĕн-и?

— Итлерĕм, анчах юлашки вăхăтра илекен хуласен ячĕсене пĕрне те астуса юлаймастăп... Ытла кăткăс, каланă чух чĕлхене хуçсах пăрахмалла!

— Çавăн пекрех çав,— кулса илчĕ Актай,— пĕртте эпир хăнăхнă ятсем мар: Эстергем, Фельше-Галла, Зорау, Лослау, Целлдемалк, Яношхазе...

— Ку юлашки вара Янсакасси тенĕ пекех илтĕнет,— кулса ячĕ Римма та.

Вĕсем патне тепрер эрнерен пырсан, Римма кĕтмен çĕртен питĕ тĕлĕнмелли хыпар пĕлчĕ: Сарьяловсен туйĕнче пĕрле пулнă кăпăшка майра упăшкине, артистсен леш «ытарайми начальникне», ĕçрен, партирен кăларса, хупса лартнă, ун арăмĕ çавăн хыççăн темиçе кунтанах военторгра ĕçленĕ темле майорпа Одессăна тухса кайнă, тет...

— Мĕншĕн хупнă вара ăна? — ыйтрĕ Римма.

— Алли вăрăм пулнăшăн,— терĕ Марина Яковлевна.— Театрсем валли паракан дефицитлă материалсене йăлтах арăмĕн гардеробне тултарнă имĕш. Театрти хаклă кавирсене юрăхсăра тухнă тесе акт çыртарнă та хăйĕн хваттерне кайса çакнă. Нумай унта!

— Çынсем юн тăкнă вăхăтра пуйса юлас тенĕ, эппин? Çав кирлĕ ăна апла пулсан!— тăрук тарăхса кайрĕ Римма.

— Йăлтах арăмĕ айăплă, çав пĕтернĕ ăна...

— Унăн хăйĕн ăсĕ пулман-им? Пĕлмен-и вăл халăх пурлăхне тивме юраманнине? Вăрланă вĕт вăл, кăнтăр кунĕнче çаратнă!

— Каласмалли те çук ун çинчен,— ал сулчĕ Иван Васильевич,— пĕтĕмпех пĕлсе тунă. Подлец вăл, мародер, урăх ним те мар!

— Эп ăна ним чухлĕ те хĕрхенсе каламастăп,— терĕ унтан Марина Яковлевна,— тăватă çул хушшинче вăл мĕн тери ирсĕр этем пулнине пурте пит лайăх пĕлсе çитрĕмĕр, хăйне пĕр-пĕр граф пекех тыткаларĕ ĕнтĕ, çавă кирлĕ ăна! Анчах унпа çакăн пек пулса тухни пире чăрмантарать-ха... Çав тери чăрмантарать, мур илесшĕ!

— Епле... чăрмантарать? Мĕнле майпа, хăш енчен тивет вăл сире?— тĕлĕнчĕ Римма.

— Ун вырăнне халь пирĕн Иван Васильевича лартасшăн! Эп питĕ хирĕç — Иван Васильевич суранĕсем тӳрленсе çитмен-ха, унăн халь те пĕрмай процедурăсене çӳремелле, унсăр пуçне тата килте те ĕçĕ тем чухлех унăн — пуçланă повеçне пĕтермелле, унтан пьеса валли питĕ вăйлă сюжет пур унăн. Анчах Иван Васильевич хăйне обкома чĕнсен манпа малтан каласмасăрах килĕшнĕ. Шутсăр çиллентĕм çавăншăн! Енертенпе тавлашатпăр мар-и...

— Тавлашса вĕçне тухрăмăр-çке ĕнтĕ, Марина, мĕн тепĕр хут тапратмалли пур ун çинчен?— терĕ Актай.— Вăхăтлăх, вăрçă пĕтиччен ĕçлеме çеç сăмах патăм эпĕ. Вăрçă пĕтсен малтанхи начальник, леш Шашкаров, таврăнать те каллех хăйĕн пуканĕ çине ларать. Пĕтĕм ĕçĕ те çав кăна.

— Таврăнмасан?

— Таврăнать, обкомра пĕлессĕ — сывă вăл, ман пекех дивизи хаçатĕнче ĕçлет...

— Таврăнсан та ку вырăнта ĕçлеме килĕшмесен?

— Епле килĕшмест пулать? Çав вырăнтан кайнă таха вăл вăрçине! Пĕлетĕп эпĕ вăл сынна — административлă ĕçе юрататъ, эс ăна çăкăр ан çитер те — власть пар. Çавăнпа та... вĕреме те, пăс кăларма та кирлĕ мар.— Актай арăмĕ çине ăшшăн пăхса илчĕ.— Нервăсене упрас пулать, Марина Яковлевна!

— Лешин майри епле ун пекех хăвăрт вырнаçма пултарнă-ха?— куларах ыйтрĕ Римма, Сарьялов туйĕнче пулса иртнĕ кулăшла историе аса илсе.— Упăшкине — хупассĕ, вăл — качча каять...

— Пĕртен-пĕр тĕрĕс çул пулнă ку уншăн,— терĕ Марина Яковлевна,— мĕншĕн тесен вăл ĕмĕр тăршшĕпех арăм çес пулса пурăннă, ниçта та ĕçлемен, ĕçлеме те пултарайман. Виçĕ класс пĕтернĕ, теççĕ-и... Тен, ĕçлесси те килмен пуль, ун пеккисем те пулаççĕ!

— Хăйне питĕ чаплă тытатчĕ-ха.

— Мĕн чапĕ унăн? Тумланма пĕлетчĕ ĕнтĕ. Тата упăшкине кĕвĕçме ăстаччĕ. Театра миçе пырса ним айăпсăр артисткăсене кӳрентерчĕ пуль вăл ухмах!

— Анчах хăй авă упăшкине хупнă-хупман...

— Ун йышшисем яланах çавăн пек: хăйсем çăмăл та, ыттисене те хăйсем майлă шутлаççĕ. Пĕррехинче сан çумма та çулăхнă, тенине илтрĕм-ха эпĕ. Туйра пулнă, тет-и...

— Эп ăна пит лайăх ответ патăм. Кайран упăшкине лектерчĕ вара.

— Выльăх,— йĕрĕнсе ал сулчĕ артистка.

— Ун пеккисем сахалах мар-ха пурнăçра.

— Вĕсем мана уйри ешĕл калча хушшинче ӳсекен талпиçен пек туйăнаççĕ. Кăкласа пĕтерме те йывăр шуйттансене—тымарĕсем çирĕп, тăпăлтарсан та шăтсах пыраççĕ.

— Тарăнрах сухаласан хуть те мĕнле çумкурăк та пĕтет,— терĕ Актай хĕрарăмсен калаçуне хутшăнса.— Тытăнатпăр акă сухалама, хирте те пиçен юлмасть, пирĕн хушăра та харам пыр пулмасть. Тунеядецсене ыр кăтартма тăкман эпир çакăн чухлĕ юн...

Ĕнтĕ çуркунне çывхарса килчĕ. Кунсем тĕлĕнмелле хитре пулчĕç. Иртен пуçласа каçчен хĕвел пăхать. Ăшă. Кăнтăрла çурт тăррисенчен шăпăртатса тумла юхать. Çурхи ырлăх сынсен кăмăлне те çĕклет, хуйха-суйха мантарать.

Пӗррехинче, хӗвел ӑшшипе тулнӑ площадь ҫине уҫа чӳрече витӗр пӑхса тӑнӑ май, Римма хӑй те сисмерӗ, мӗн пӗчӗкренех асра юлнӑ «Нарспи» сыпӑкне сасӑпах калама тытӑнчӗ:

Килчӗ ырӑ ҫуркунне,
Килчӗ ячӗ ӑшӑтса.
Хӗвел савать тӗнчене,
Хӗл ыйхинчен вӑратса.

Тӗттӗм вӑрман чӗрӗлет,
Ешӗл тумтир тӑхӑнать.
Ҫеҫенхир те ешерет,
Илемӗпе мухтанать.

Тӗрлӗ-тӗрлӗ чечексен
Ырӑ шӑрши сарӑлать.
Пур ҫӗрте те кайӑксен
Лайӑх юрри янӑрать...

Сӑвва малалла та каласа каятчӗ пулӗ вӑл, анчах ҫав вӑхӑтра ун ҫумне ватӑ санитарка пырса тӑчӗ. Римма йӑпӑрт кӑна ун ҫине ҫаврӑнса пӑхрӗ те тӗлӗнсе кайрӗ: хӗрарӑм куҫҫулӗпех макӑрать иккен. Шӑлать, шӑлать куҫӗсене, анчах куҫҫулӗсем ҫаплах шӑпӑртатса анаҫҫӗ унӑн.

— Мӗн эсӗ, тетя Сима? Мӗн пулчӗ, ма макӑратӑн?— хӑраса ыйтрӗ Римма.

— Ах, хӗрӗм... Хуйхӑ вӗт, шутсӑр пысӑк хуйхӑ!

— Мӗнле хуйхӑ? Мӗн пирки?

— Пирӗн начальникӑн... Зоя Григорьевнӑн упӑшкине вӑрҫӑра вӗлернӗ! Халь кӑна вилнӗ хутне килсе панӑ та ӑна, ниҫта кайса кӗме пӗлмест ҫын...

— Макӑрать-и?

— Макӑрмасӑр! Вӑрҫи паян-ыран пӗтес пек... Ҫыннине тӑватӑ ҫула яхӑн тур хӑтарса пынӑ, халь ак, юлашкинчен...— Санитарка тата хытӑрах макӑрса ячӗ.— Паллатӑп эп ун упӑшкине, вӗсем ман кӗрӳпе пӗрле сунара ҫӳретчӗҫ те, пирӗн пата час-часах пыратчӗ вӑл. Ытармалла мар ҫынччӗ! Зоя Григорьевна пекех тухтӑрччӗ...

Римма тек ӑна итлесе тӑмарӗ, часрах коридора тухса начальник кабинечӗ еннелле васкарӗ. Тем шут пулчӗ унӑн, ӑна хӑй те пӗлмерӗ. Начальника лӑплантарма та, ӑна мӗнпе те пулин пулӑшма та пултарас ҫук вӗт-ха вӑл. Ҫапах та кайрӗ. Начальник кабинечӗн алӑкӗ умӗнче темиҫе сестрапа санитарка тӑраҫҫӗ. Пурте хурлӑхлӑ. Иккӗш-виҫҫӗшӗ куҫӗсене шӑлкалаҫҫӗ — макӑрнӑ ӗнтӗ.

— Эпӗ унпа пӗрле хула больницинче сакӑр ҫул ӗҫле-

нĕ, нихçан пĕр сив сăмах илтмен...— терĕ пĕри.— Кăмăлĕ ылтăнччĕ унăн!

— Хăй... кунта-и халь?— хуллен ыйтрĕ Римма.

— Комиссарпа лараççĕ. Кĕçех комисси пулать.

— Мĕн комиссийĕ ĕнтĕ ун пек чухне? Çыннин пимпе танлаштарма çук хуйхă, чĕри çурăлсах тухать пуль!

— Ыран вунпилĕк çын кăларса ямалла, теççĕ...

Сасартăк пӳлĕм алăкĕ уçăлчĕ те коридора Зоя Григорьевна хăй тухса тăчĕ. Пурте шăпăрт пулчĕç, ун çине тинкерсе пăхрĕç. Начальник куçĕсем питĕ тăртаннă. Анчах халь вĕсем тип-типех. Куççулĕ йĕрĕсем палăрасран пулас, пичĕ çине кăштах пудра хунă.

— Эсир мĕн тума пухăнса тăнă кунта, сирĕн мĕн, ĕç çук-и?— терĕ вăл кăштах урмăшнă сасăпа. Унтан Риммăна каларĕ:— Сурская, халех кабинетсем тăрăх кайса хирургсене, терапевтсене, невропатолога ман пата чĕн.

Вăл каялла кĕчĕ, Римма хăйне хушнине тума кайрĕ.

«Мĕн тери çирĕп чĕреллĕ çын...— шухăшларĕ хăй. —Тепри пулсан, юратнă упăшкине вĕлерни çинчен пĕлсен, тăнне те çухатмалла, ку вара çакăн пек йывăр самантра та ĕçлеме пултарать...»

Кун çинчен Римма тепре Актайсем патне кайсан та ăшă кăмăлпа каласа пачĕ.

— Пĕлетĕп эп вăл хĕрарăма, питĕ хастарлă çын, ун пеккине йăпăр-япăрах тĕл пулаймастăн. Упăшки те ун майлахчĕ—тӳрĕ кăмăллă, çирĕп принциплă çынччĕ,—терĕ Иван Васильевич.

— Телейлĕ мăшăр пулнă, эппин...

— «Пулнă» çав. Шăла çыртсах, вăл сăмаха нумай çемьесем пирки иртнĕ вăхăтпа калама тивет,—ассăн сывласа ячĕ Марина Яковлевна.— Шутласан, мĕн чухлĕ хĕрарăм юратнă çыннине çухатрĕ, мĕн чухлĕ ача тăлăха юлчĕ! Нивушлĕ çакăн хыççăн та хăçан та пулин татах вăрçă пулĕши, этемлĕхе ăс кĕмĕ-ши?!

...Аманнисем унччен те Информбюро сводкисене ир те, кăнтăрла та, каç та репродукторсем çумне çыпăççах итлетчĕç, сводкăри кашни сăмаха ăнланса, астуса юлма тăрăшатчĕç, итлесе пĕтернĕ хыççăн пит шавлăн сӳтсе яватчĕç, анчах юлашки вăхăтра вара радио калаçма тытăнасса кĕтсех ларакан пулчĕç. Мускав станцийĕн позывнойĕсем янраса илнĕ хыççăн пурте хăнăхса çитнĕ арçын сасси: «Юлашки сехетре... Совет информбюровĕнчен...» тени ил-

тĕнсен вара пурте шăпăртах пулаççĕ, сывлама та хăраççĕ темелле. Кам та пулин ăнсăртран ӳсĕрме тытăнсан, ăна çавăнтах вăрçса тăкаççĕ: хупла çăварна, шуйттан!

Апрель пуçламăшĕнче радио Пĕрремĕшпе Иккĕмĕш Белорусси фрончĕсем Хĕвелтухăç Померанине йышăнни çинчен пĕлтерчĕ.

«Ав ăçта çитнĕ халь ман тусăмсем! Эх, мĕншĕн эпĕ вĕсемпе пĕрле мар-ши!»— кулянса илчĕ Римма çакна илтсен.

Лайăхран лайăх хыпарсем килекен пулчĕç...

Иккĕмĕшпе Виççĕмĕш Украина фрончĕсем пĕтĕм Венгрие гитлеровецсенчен тасатса çитерчĕ. Югославире те малаллах пыраççĕ пирĕн салтаксем. Белорусси фрончĕн çарĕсем Кенигсберг хулипе крепоçне илнĕ, Земландски çурутрав çине кĕрсе кайнă...

Пирĕн çарсем Шпрее, Одер хĕррине пырса тăнă...

Берлин патне çитсе тухнă...

Берлин! Фашизм тĕп йăви! Кисренет вăл халь, çунать, ишĕлет... Мĕн тери пысăк савăнăç ку!..

— Астăватăр-и, Иван Васильевич, пĕррехинче фронтра эсир мана çапла каларăр: «Фашистсем темле тапаçлансан та Мускава çитеймерĕç, анчах эпир вĕсен Берлинĕнче пулатпăрах!» терĕр. Çитрĕ вĕт çав вăхăт, тĕрĕс каларăр эсир, ун чух Берлин питĕ инçе пулнă пулин те!— терĕ Римма Актая, çак савăнăçлă кунсенче вĕсем патне пырсан.

— Мĕншĕн тесен урăхла пулма та пултарайман, йăмăкăм!— терĕ ăна хирĕç писатель.— Пирĕн халăх чи йывăр самантсенче те çак вăрçăра эпир тăшмана çапса аркатас шанчăка пĕр самантлăха та çухатман. Эпир çавна шаннипе, пĕтĕм чĕререн ĕненнипе çунатлanса, вăй илсе пынă!..

Майăн пĕрремĕшĕ умĕн Марина Яковлевна Риммăна театра уяв вечерне кайма икĕ билет пачĕ. Кайса кур, доклад хыççăн пысăк концерт пулать, терĕ. Хаваслансах илчĕ те Римма билетсене, хăйне халь те хваттерте усракан Рая Чернована чĕнчĕ.

— Çитĕ сана кун чухлĕ ниçта тухмасăр пурăннипе, пĕрмай хуйхăрнинчен те усси пулас çук, атя-ха, пĕрре халăх хушшине тухса уçăлар хуть,— терĕ ăна.— Çынсене курар, хамăра кăтартар, тенĕ пек...

— Манăн хама кăтартасси иртнĕ ĕнтĕ,— хурлăхлăн сывласа илчĕ Рая.— Тата... çакăнсăр пуçне манăн халь никама та курас килмест,— урайĕнче выляакан ачи çине кăтартрĕ вăл.— Пĕртен-пĕр савăнăç маншăн...

— Аҥ калаç кирлĕ мара, хĕрĕм,— пӳлчĕ ăна амăшĕ,—

кашни тăлăха юлнă хĕрарăм сан пек каласçан — пĕтес пулать, пурнăç пулмарĕ вара! Çирĕпрех тыт хăвна, санăн та телей пулĕ-ха. Кай, кай, çынсенчен ан юл!

Театр умĕнче вĕсем Катя Хорькована тĕл пулчĕç. Вăл ĕнтĕ чылайранпа протезпа çӳрет, уксахлани те кăшт çеç палăрать унăн, аллинче туя пулман пулсан, пĕлес те çук вăл инвалид иккенне.

— Эп те килсе курас терĕм-ха, госпиталь комиссарĕ пĕр билет пачĕ те мана...— терĕ Катя, хăйĕн ĕçри тусĕсене курнăшăн хĕпĕртесе.— Лайăх пулчĕ-ха ку, атту эп палланă пĕр çын та çук, ют çынсемпе пĕччен ларма кичем...

Вĕсем, маларах иртсе, виççĕшĕ юнашар ларчĕç те залри çынсене пăхма тытăнчĕç. Çар çыннисем чылай иккен, анчах пуринчен ытларах — ахаль тум тăхăннă халăх. Рабочисем пуль ĕнтĕ, служащисем. Çамрăксем курăнсах каймаççĕ. Ăçтан пулччăр-ха вĕсем? Пăшал тытма пултараканнисем лере, вут-çулăмра...

Пурте хаваслă паян, пурин те кăмăлĕсем çав тери çĕкленни палăрать — пĕр-пĕринпе шавлăн калаçаççĕ, кулаççĕ. Кĕçех сцена çинчи хĕрлĕ пуставпа витнĕ сĕтел хушшине президиум тухса ларчĕ, арçынсемпе пĕрле хĕрарăмсем те чылай-мĕн. Иккĕмĕш ретре Римма хăйсен госпиталь начальникне асăрхарĕ те хĕр-тусĕсене шăппăн каларĕ:

— Пăхăр-ха, пирĕн Зоя Григорьевна та пур!

— Пулмасăр! Пĕчĕк çын-им вăл?— терĕ Катя Хорькова. — Хĕрарăм пуççăн ултçĕр аманнă салтак выртакан госпитале тытса тăр-ха эсĕ! Шел, вăрçăн юлашки кунĕсенче ман пекех тăлăх арăм пулса юлчĕ...

— Çапах та хăйĕн хуйхине палăртмасть, иртен пуçласа каçчен, пĕрмай ĕçре çунать,— хушса хучĕ Рая Чернова.

— Тĕлĕнмелле вăйлă характер...

Савăнăçлă ларури доклада парти обкомĕн секретарĕ турĕ. Вăл пирĕн халăх кăçалхи май уявне чи савăнăçлă кунсенче, паттăр Совет Çарĕ фашизмăн тĕп йăвине, Берлина пырса кĕнĕ вăхăтра, тăватă çула яхăн пыракан хăрушла хаяр вăрçă пирĕн историллĕ çĕнтерӳпе пĕтес кунсенче уявлани çинчен каласанах пĕтĕм зал кĕрр! сиксе тăрса пĕр виçĕ минут чарăнаймасăр алă çупрĕ. Халăхпа пĕрле Риммăпа унăн тусĕсем те пĕтĕм кăмăлтан ал çупрĕç...

Доклад хыççăн пĕр вунпилĕк-çирĕм минутран пуçланнă концертра вара хĕр-туссемшĕн калама та çук тĕлĕнмелле япала пулчĕ. Чаршав уçăлсанах сцена çине вырнаçнă юрă ансамблĕ пысăках мар симфониллĕ оркестрпа пĕрле Тăван

Çĕршыва, Ленин партине, Совет Çарне мухтакан темиçе юрра пысăк çĕкленӳпе юрласа панă хыççăн концерта ертсе пыраканĕ çапла пĕлтерчĕ:

— Глинка. «Иван Сусанин» опера вĕçĕ. Дирижерĕ...

Залри халăх тӳрех шапăр-шапăр ал çупса ячĕ те, хĕрсем дирижер ячĕпе хушаматне уйăрса илеймерĕç. Малтанхи юрăсене госпитале аманнă Сарьялов сержант патне иквиç хут та пырса кайнă кĕске хура сухаллă, кăштах кукшаланнă çын юрлаттарчĕ, халь вара сцена çине урăххи, хитре хура костюм тăхăннă, сарăрах çӳçне сылтăмалла тураса хунă çамрăк çын тухрĕ. Вăл, оркестр умне пырса тăрса, залри халăха пуç тайрĕ те Римма чутах кăшкăрса яратчĕ.

— Хĕрсем! Пăхăр-ха эсир... пăхăрсам, паллатăр-и?! Сарьялов вĕт ку, пирĕн патра выртнă сержант Сарьялов!

— Леш хайхи-и? Пӳрнисем çукки-и?— васкаса ыйтрĕ Рая Чернова.

— Çавă çав! Çавă!— пукан çинче сиксех илчĕ Римма.

Сарьялов пичĕпе оркестр еннелле çаврăнса тăрса ик аллипе пĕр харăс сулчĕ те театрта Глинкăн чун-чĕрене хăпартлантарса яракан хăватлă музыки янраса кайрĕ.

Хăш-хăш çынсем концертсене музыка итлеме çеç мар, дирижер ĕçне, унăн искусствине курса киленме çӳреççĕ, тенине илтнĕччĕ Римма тахçан. Анланманччĕ вăл—мĕнле киленме пулать дирижер çине пăхса? Çитменнине тата ăна çурăмĕ енчен çеç куратăн. Сулать те сулать вăл аллисемпе. Анчах тĕрĕс мар иккен ку. Дирижер мĕн тери ăстарах, хĕрӳллĕрех—оркестр та çав тери лайăхрах янрать, музыкăн хăвачĕ итлекенсем патне лайăхрах, витĕмлĕрех çитет! Сарьялов дирижер ĕçне пит хитре туса пычĕ. Пĕтĕм чун хавалне парса, çунса кăна тăчĕ вăл. Калама çук вăйлă, чĕрене тивмелле, пурне те хаваслантармалла янрарĕç хорпа оркестр...

«Енenмелле те мар... Çакăн пек талантлă, пултаруллă музыкант çĕр çинче пурăнасшăн пулман вĕт-ха!—шухăшларĕ Римма, Сарьялов çинчен куç илмесĕр.— Çав каçхине, вăл тăваттăмĕш хутран сикме тăнă чух, Кованый лейтенант ăнсăртран асăрхаса ăна çăлман пулсан?..»

Римма чĕри çатăрах пăчăртанса илчĕ, анчах тепĕр самантранах вăл тулли кăкăрпа çăмăллăн сывласа ячĕ.

— Кованыйпа иксĕмĕр тăрăшни харама каймарĕ... Çын пулчĕ çавăн чух шанчăкне çухатнă каччă! Арлă-арăмлă та пулчĕ, ĕçлеме те тытăннă... Вилме тăнине аса илсен, хăйне те аван мар пулать пуль халь...

Кашни номер хыççанах залри халах çĕнĕ дирижера пӗтĕ хытă ал çупса тав турĕ. Унăн пирвайхи ĕçех çакăн пек ăнăçлă пулнăшăн Римма пĕтĕм чĕререн хĕпĕртерĕ. Концертăн пĕрремĕш пайĕ пĕтнĕ май чаршав хупăннă хыççăн алă çупнисем лăплансан, вăл хăйĕн хыçĕнче ларакан икĕ ватăрах çын калаçнине илтрĕ:

— Ку дирижер пит ăста скрипач пулнă, анчах вăрçăра сулахай аллин пӳрнисем таталнă та сĕрмекупăс тытаймасть, çавăнпа дирижер ĕçне панă ăна. Çапах та парăнасшăн мар имĕш: сĕрмекупăса сылтăм аллипе тытса калама хăнăхать, тет...

— Ун пекки пулма пултарать-ши вара?

— Халь тем те пулма пултарать. «Правдăра» вуламан-и эсĕ: ик урине те пакăлчак таранах татнă летчик-истребитель каллех вĕçме тытăннă, нимĕçсен темиçе самолетне çапса антарнă, тет. Кĕскен каласан, пирĕн хальхи çамрăксене парăнтараймастăн! Ку вăрçăра вĕсем хальччен тĕнче курманнине кăтартрĕç...

Питĕ кăмăла кайрĕ Риммăна çак калаçу.

«Пирĕн хальхи çамрăксене парăнтараймастăн..» Тĕрĕс çав ку, шутсăр тĕрĕс. Парăнман эпир, парăнас та çук. Нихçан та. Темле йывăр килсен те. Вилмелле пулсан та.

Киле таврăнса сывăрма выртсан та аса илчĕ вăл икĕ ват çын Сарьялов пирки калаçнине. «Сĕрмекупăса сылтăм аллипе тытса калама хăнăхать...» Эппин, каллех скрипач пуласшăн, пăрахасшăн мар хăйĕн юратнă ĕçне! Маттур, Сарьялов сержант! Ĕмĕтӳ çиттĕрех санăн...

Тĕлĕкре вăл Сергее курчĕ. Вĕсем таçта çӳллĕ-çӳллĕ ту çинче тăраççĕ пек. Сенкер тӳпере хĕвел ялкăшать. Йĕритавра пин-пин чечек. Мĕн тĕсли çук пуль! Вĕсем вут пек çунаççĕ те куçсене йăмăхтарсах яраççĕ. Сергей сĕрмекупăс калать. Пит хитре кĕвĕ...

— Мĕнле кĕвĕ ку? Нихçан та илтмен-çке эп ăна?— ыйтать Римма.

— Телей кĕвви ку,— тет Сергей,— эп ăна ятарласа сан валли упраса усранă, чунăм...

1969—1970.
Шупашкар.

# ХАМĂН ПУРНĂÇĂМПА ĔÇĔМСЕМ ÇИНЧЕН

*(Автобиографи вырăнне)*

Ватăлса пынă май, çын ытларах иртни çинчен аса илме тытăнать, теççĕ. Тĕрĕс те пуль вăл. Çынна уншăн тиркемелли те çук пуль. Утмăла çитнĕ е унтан та иртме ĕлкĕрнĕ çын хăй пурнăçĕнче сахал мар курнă ĕнтĕ — хурине те, шуррине те. Паллах, ĕмĕр тăршшĕнче савăнмалли-хĕпĕртемелли те, хуйхăрмалли-хурланмалли те пулнă унăн: пурнăç никамăн та пĕр тикĕс пулмасть. Ĕмĕр сакки сарлака тата...

Манпа пĕр çулсенчи çынсен хăйсен пурнăçĕнче уйрăмах нумай курма тиврĕ. Тĕрĕссипе, Совет государствин пĕтĕм историйĕ, совет халăхĕн пĕтĕм паттăр кĕрешĕвĕ пирĕн куç умĕнче пулса иртрĕ. Эпир хамăр та çав кĕрешӳрен аякра тăман — пионер çулне çитсессĕнех общество пурнăçне хĕрӳллĕн хутшăннă, вăхăт çитсен — Тăван Çĕршыва алла хĕçпăшал тытса хӳтĕленĕ.

Эпĕ Октябрьти социализмла Аслă революци пуличчен çичĕ çул малтан—1910 çулта—çуралнă. Пĕр сăмахпа, революцичченхи çын. Пĕчĕккĕ пулнă пулин те, яла урядниксем пынине, куланай тӳлеменшĕн чухăнсене хĕненине, шкулта пуп «закон божий» вĕрентнине астуса юлнă (учитель ачи пулнă май, эпĕ парта хушшине питĕ çамрăкла ларнă — ултă çул тултаричченех). Ял çыннисене пĕрремĕш тĕнче вăрçине мĕнле ăсатнине, хĕрарăмсем епле ӳксе макăрнине, салтака каяссинчен пăрăнса юлакансен чӳречисене «некрутсем» епле «чăнкăртаттарнине» те, фронтран уксах-чăлахсем мĕнле таврăннине те астăватăп.

Пирĕн атте те вăрçăраччĕ, эпĕ ун патне хам алăпах çырусем çыраттăм. Киле вăл Февральти революци хыççăн таврăнчĕ. Пирĕн пата хутран-ситрен таврари учительсем пухăнатчĕç те вăрахчен калаçса ларатчĕç. Çавăн чух эпĕ, çичĕ çулхи ача, пуçласа «Ленин», «большевик» сăмахсене илтрĕм. Атте хăйĕн «хăнисемпе» хытă тавлашатчĕ. Каярахпа çав «хăнасем» çӳреме пăрахрĕç, аттепе килĕштермерĕç пулмалла: атте большевиксем майлă пулнă...

Ун чухне эпир Çĕрпӳ уесĕнчи Ачакасси вулăсĕнче, Вăтакас Татмăшра пурăнаттăмăр. Çураласса эпĕ атте ялĕнче, Етĕрне уесĕнчи Çуткассинче çуралнă, ун чухне атте Çухра ялĕнче çамрăк кăна учитель пулнă, анчах пупсемпе хирĕçсе кайнăшăн ăна урăх уеса хăваласа янă-мĕн. Октябрьти революци хыççăн — 1918 çулхи çулла — пирĕн килйыш Çуткассине куçрĕ. Çавăн чухнехине вара эпĕ лайăхах астăватăп. Атте ялĕнче патша вăхăтĕнче шкул нихçан та пулман. Халь,

атте çине тăрса тăрăшнипе, шкул уçăлчĕ. Шкул валли çурт çуккипе ьăл пĕр хресченĕн ултă кĕтеслĕ пӳртĕнче, малти пӳлĕмре, ĕçлерĕ. Иркине кĕçĕннисем вĕренетчĕç, кăнтăрла иртсен — аслăраххисем.

Октябрь революцийĕ пулнăранпа пĕр çулталăк çитсе пынă май, пире революци юррисене вĕрентме тытăнчĕç — «Интернационал», «Марсельеза», «Смело, товарищи, в ногу»... Ялти ачасем вырăсла пелместчĕç, çапах та юрăсен сăмахĕсене вĕренчĕç, вара ноябрĕн 7-мĕшĕнче эпир хĕрлĕ ялавсем çĕклесе тухрăмăр та, çав юрăсене юрласа, ял урамĕсем тăрăх утрăмăр. Чăн-чăн революциллĕ демонстраци пулчĕ вăл. Шкул ачисемпе пĕрле мăн çынсем те нумайăн пычĕç. Юрласа пыратпăр-пыратпăр та чарăнса тăратпăр. Сăран пиншаклă çынсем (вулăсран е уесранах пынăскерсем пулмалла), нумай пулмасть салтакран таврăннисем, учительсем (аттесĕр пуçне тата тепĕр учитель пурччĕ), мĕн çине те пулин хăпарса тăрса, хĕрӳллĕ сăмахсем калаççĕ. Халăх ирĕке тухни, пусмăртан хăтăлни, малашне пурте çутта тухасси çинчен...

Ĕмĕрлĕхех асра юлчĕ ялти çав демонстраци. Унтанпа аллă икĕ çул иртрĕ, анчах эп ăна паян пулнă пекех астăватăп...

Асра юлмаллисем нумай пулчĕç ун чухне. Аттене комбед секретарĕ тунăччĕ те, пирĕн патран çын татăлма пĕлмерĕ. Вулăсран, уесран пынă тĕрлĕ агитаторсем, «продотрядсем» яланах пирĕн патра вырт:а тăратчĕç. Пуянсенчен мĕн чухлĕ тырă, контрибуци илмелли, камăнкамăн ытлашши выльăх-чĕрлĕхне, çурт-йĕрĕсене конфискаци туса чухăнсене памалли списоксене те пирĕн патрах тунине астăватăп. Нумайăшĕ (пуян таврашĕсем) аттене çав тери курайми пулчĕç: «Пĕтĕмпех çав Анали Яккăвĕ тăвать, çав пĕтерет!..» Юнама та тытăнчĕç: «Шалчу тулать-ха, санăн та макăрмалла пулĕ!..» Анчах та ун чухне «тавăру» чӳречерен чулпа пенинчен мала каймарĕ, кулаксем аттене каярахпа, 1922 çулхи çуркунне, тавăрчĕç.

1918—1920 çулсенче, граждан вăрçи вăхăтĕнче, çамрăксене Хĕрлĕ Çара мĕнле ăсатнине астăватăп,— чылайăшĕ хăйсен ирĕкĕпе каятчĕç. Паллах, вĕсем пуян таврашĕсем мар, чухăнсем пулнă. Çав çулсенчех хут пĕлмен мăн çынсене — арçынĕ-хĕрарăмĕ мĕнĕпех — епле вĕрентни асра юлчĕ. Ку ĕçе эпĕ хам та хутшăннă — «уроксем» умĕн эпĕ, атте хушнипе, çынсене хаçатсем вуласа параттăм.

1920 çулхи кĕркунне мана Етĕрнене вĕренме кайса ячĕç: тăватă класс программинчен малалла вĕрентекен шкул таврара урăх çукчĕ. Хулара та мана тăваттăмĕш класах лартрĕç: вырăсла пĕлсех каймастăм. Анчах хулара пĕр çул çеç вĕренме тиврĕ — тепĕр çулхине выçлăх пулчĕ. Хамăр ялтан виç çухрăмра, Кăкшăмра, ултă çул вĕренмелли шкул туса хунăччĕ те, эпĕ, хулари шкулта тăватă класс пĕтернĕскер, кунта тӳрех улттăмĕш класа лартăм.

Çак шкулти учительницăсем (вĕсем иккĕнччĕ) питĕ лайăхчĕ, ĕмĕрне те манас çук. Вĕсем пире кĕнеке — илемлĕ литература — ытларах вулама хушатчĕç. Кĕнекисем хăйсенччĕ вĕсен — Толстой, Тургенев, Чехов, Короленко, Горький тата ыттисем те. Литературăна юратасси çавăнтан пуçланчĕ те манăн...

Ваттисем 1921 çулхи выçлăха, халăха ун чухне мĕн тери йывăр килнине астăваççĕ ĕнтĕ. Йĕкел те, мăян та, тем те çинĕ. Çав выçлăх вăхăтĕнче пирĕн килйыш пурнăçĕнче питĕ хăрушă япала пулса иртрĕ. Халăх пирĕн аттене ачасен столовăйне шанса панăччĕ. Йĕркеллех ĕçлерĕ вăл, ялти выçă ачасем кунне пĕрре тăраничченех çиетчĕç. Анчах 1922 çулхи çуркунне, хуларан юлашки продуктсене тиесе килсен,

çав каçах темле вăрă-хурахсем, кĕлет тăррине пахча енчен шăтарса кĕрсе, ним юлмиччен çаратса тухса кайнă. Ирхине вара, халăх пухăнса, аттене «эсĕ ху вăрлаттарса янă», тесе, кăшт çеç çапса пăрахмарĕç. Пуян таврашĕсем, аттене нумайранпа кураймасăр пурăннисем, выçă çынсене хĕтĕртсе тăчĕç:

— Якку хăех тунă, урăх никам та мар! Тытса хĕнес, вĕлерес пулать ăна!..

Çавăн чух хăрана пек эпĕ, тен, нихçан та хăраман пулĕ. Юрать-ха хута кĕрекенсем пулчĕç, вĕлерме памарĕç аттене.

Çакăн хыççăн тепрер уйăхран пулас, нумай пулмасть çартан таврăннă хĕрлĕ салтак пĕр лаша вăррине ыраш хушшинче хуса çитсе тытнă. Ăна яла илсе пырсан, хăрушла «самосуд» тума (хĕнеме) тытăнчĕç, вĕлерсех пăрахатчĕç пуль, анчах ман аттепе ытти активистсем вăрра вĕлерттермерĕç. Вăл хăйсен шайккинчи чылай «тусĕсене» кăтартса пачĕ. Вĕсем хушшинче хамăр ялсем те пулнăччĕ...

Нумай çулсем иртсен, çавăн чухнехи фактсем пурте тенĕ пекех «Пĕрре, çуркунне...» повеçе кĕрсе вырнаçрĕç. Паллах, вăл повесть — фотографи мар, ăна çырнă чух хамăр тăрăхра çав çулсенче пулса иртнĕ ытти фактсемте те усă курнă, автор хăйĕнчен хушнисем те пур. Çак савăнтарать мана: «Пĕрре çуркуннене» çырнăранпа вăтăр çул ытла иртрĕ (эп ăна 1938—1939 çулсенче, хам Хĕрлĕ Çарта службăра пулнă чух, чирленĕ пирки икĕ хут чылай хушă лазаретра выртнă вăхăтра çырнă), анчах повесть паян та кивелмен, вулакансен кăмăлне кайнă пек туйăнать. 1967 çулта эпир В. Яковлевпа — талантлă çамрăк режиссерпа иксĕмĕр — вăл повесть тăрăх пьеса çыртăмăр та, куракансем ăна питĕ лайăх йышăнчĕç.

Выçлăх хыççăн эпĕ вĕренме каллех Етĕрнене кайрăм. Ун чухне «иккĕмĕш сыпăклă шкул» тени пурччĕ, хальхипе танлаштарсан, вăл вăтам шкул пулать ĕнтĕ. Ытла çамрăк пирки (эп вунвиççĕре çеç пулнă) мана илесшĕн марччĕ, анчах экзаменра сочинени (вырăсла тата!) пĕр йăнăшсăр çырни çăлчĕ мана. Пĕр-ик çултан «иккĕмĕш сыпăклă шкултан» педтехникум туса хучĕç, вара эпĕ çав техникумран учитель ятне илсе тухиччен Етĕрнере вĕрентĕм — 1928 çулхи çуркуннеччен.

Ырăпа çеç асăнатăп эпĕ Етĕрнере вĕреннĕ çулсене.

Унта мана литературăна ытларах та ытларах юратма вĕрентрĕç— вырăслине кăна мар, чăвашлине те. Питĕ нумай вулаттăм эпĕ, вырăс классикĕсемсĕр пуçне Жюль Верн, Майн Рид, Фенимор Купер кĕнекисене «çăтаттăм». Пĕр хушă Шерлок Холмс тата ытти сыщиксем çинчен çырнă детективсем пуçа çавăрсах яратчĕç. Тен, çавăнпа та-и эпĕ приключениллĕ жанра паян кун та юрататăп, хам та, вăй çитнĕ таран, çав жанрпа ĕçлеме тăрăшатăп.

Чăваш литературине пире И. Т. Трофимов — «Нарспи» авторĕпе, К. В. Ивановпа Чĕмпĕр шкулĕнче пĕрле вĕреннĕ, унпа пĕрлех чăвашсен пĕрремĕш букварьне туса кăларнă çын — вĕрентетчĕ. Çав çынна пулах, вăл сĕннипе, эпĕ Шупашкарти хаçатсене, каярахпа журналсене те çырма тытăнтăм. Манăн пирвайхи заметкăсемпе пĕчĕк очерк пеккисем Шупашкарта 1925—1926 çулсенче пичетленме пуçларĕç. Унтанпа хĕрĕх пилĕк çул иртрĕ...

Етĕрнерех эпĕ чи малтанхи пионерсенчен пĕри пулнă. Хула урамĕсем тăрăх стройпа, пăтăр-пăтăр параппан çапса, хавассăн юрласа урнисем халь те куç умĕнчех. Юрă сăмахĕсене те астăватăп:

Взвейтесь кострами,
Синие ночи!
Мы — пионеры,
Дети рабочих!

1925 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче, Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе пĕр çулталăк çитнĕ кун, пире, шкулти пĕр 10—15 активлă пионера, комсомола куçарчĕç. Эпир ĕмĕр-ĕмĕр тӳрĕ кăмăллă ленинецсем пулма тупа турăмăр.

Çав çулах мана шкулти стена хаçачĕн редакторĕ турĕç те, эп вара техникумран вĕренсе тухиччен те çав «должнăçран» хăтăлаймарăм.

Шупашкарти хаçатсене эпĕ тăтăшах çырса тăнă. Эп çырнисем «Канашра» та, «Çамрăк хресченре» те, «Пирĕн ялта» та пĕрмаях тухатчĕç. 1926 çулта пулас, «Канашра» ĕçленĕ, ун чухнех паллă писатель пулнă Лашман Çтаппанĕ «сана юнкорсен шутне илетпĕр» тесе çырса ячĕ те, эпĕ хĕпĕртенипе ниçта кайса кĕме пĕлмерĕм çав! Ун хыççăн манăн «активлăх» татах та ӳсрĕ, эпĕ Шупашкарти хаçатсемшĕн Етĕрнери «хамăр корр.» пекех пулса тăтăм — мана заданисем пара пуçларĕç.

Техникумра вĕреннĕ чух эпир обществăллă ĕçсем нумай тăваттăмăр. Уйрăмах каникулсем вăхăтĕнче, -киле, ялсене кайсан, хытă ĕçлеттĕмĕр: ял çыннисем хушшинче хаçат-журнал сараттăмăр, çамрăксемпе тĕрлĕ калаçусем ирттереттĕмĕр, спектакльсем лартаттăмăр. Çакна лайăх астăватăп: 1926 çулта хĕллехи каникула пырсан (атте ун чухне Кăкшăмри шкулта ĕçлетчĕ) эпир, хулара вĕренекен темиçе арçын ачапа хĕрача, спектакль лартма шут тытрăмăр. Паллах, ял çыннисем валли чăвашла лартмалла. Анчах ачасем вылямалли чăваш пьесисем çук. Вара эпĕ, атте сĕннипе, вырăссен ун чухнехи паллă писателĕ А. Неверов çырнă «Молодые побеги» ятлă пĕчĕк пьесăна тытрăм та чăвашла куçартăм. Лартрăмăр çавна. Спектакль питĕ ăнăçлă пулчĕ. Темиçе кунтан Кăкшăмран вулăс центрне, Палтая кайса кăтартрăмăр. «Волотнароб» (волостной отдел народного образования) пуçлăхĕ пире тав туса пĕрер хулăн тетрадьпе пĕрер коробка тĕрлĕ тĕслĕ кăранташ пачĕ. Ах, тур, савăнтăмăр çавăншăн!..

Çакă вăл ман пурнăçри пĕрремĕш куçару пулнă. Тахăшĕ ăс панипе эп ăна Шупашкара ятăм та, вăл «Сунтал» журналта пичетленсе тухрĕ. Ку та хытă савăнтарчĕ мана...

Çавăн чухнех эпĕ Кăкшăм шкулĕнче пионер отрячĕ йĕркелерĕм.

1927 çулта манăн «Капкăнра» пĕрремĕш фельетон тухрĕ. Вăл фельетона пула эпĕ чутах «мăя хуçаттăм» — эпĕ ăна хамăран техникумри пĕр пуçтах преподаватель çинчен çырнăччĕ. Хĕсме тытăнчĕ çав мана — тӳсме çук, вĕренсе тухас умĕнхи юлашки экзаменра, чăркăша-чăркăша, чут çеç «неуд» лартса паратчĕ. Анчах Иван Мучие çав фельетон питĕ килĕшнĕччĕ. Унпа пĕрремĕш хут курнăçсанах (вĕренсе тухиччен пулчĕ-ха ку) вăл мана «санăн перу çивĕч, култармалла, йĕплесе çырма пултарни курăнать, «Капкăн» валли тăтăшах çыр», терĕ. Çак ăшă калаçу мана сатирăпа юмор çулĕ çине тăратрĕ, тесе шутлатăп.

Сатирăпа юмор çинчен асăннă май, манăн пĕр калав историне каласа парас килет. Çарта действительнăй службăра пулнă вăхăтра, 1939 çулхи çулла, Ленинград çывăхĕнчи лагерьте, эпĕ пĕррехинче, çĕрле, ротăри дежурнăй пултăм. Çанталăк лайăх, каçĕ çап-çутă, кăнтăрлахи пекех, вулама та, çырма та пулать. Пурте çывăраççĕ, эпĕ палаткăсем хушшинче пĕчченех каллĕ-маллĕ çӳретĕп. Сасартăк унччен малтан çуралнă сюжет аса килчĕ кайрĕ... Мĕн тăвас? Пушă вăхăт пур

чух — çырас çавна! Çумра хутпа кăранташ яланах пулнă манăн. Пĕр «грибок» айне лартăм та — калав ятне çырса хутăм: «Сахар мучи — чемпион...» Малтанхи пуплев те тӳрех тупăнчĕ. Унтан ыттисем те... Питĕ ăнса пычĕ ман ĕç! Ирччен калав пулса та тăчĕ. Тепĕр кунне тэса хут çине куçарса Иван Мучине ярса патăм. Эрнерен çыру илтĕм: аьан калав, каять «Капкăна»! Ăçта çитмерĕ пуль кайран çав ман Сахар! Вăрçă хыççăн чăвашла кĕнекесенче тăват-пилĕк хут тухнисĕр пуçне, Сахар мучи епле майпа чемпион пулни çинчен çырнине вырăсла темиçе хут кăларчĕç (Мускаврa виçĕ хут), Мускаври радиопа пачĕç, вăл калава пушкăртла, мăкшăлла, таджикла, узбекла, удмуртла куçарса кăларчĕç, унтан вăл Болгарие çитрĕ (болгарла ăна паллă писатель Ангел Тодоров куçарнă), нумай пулмасть акă Венгрири Эгер хулинче тухакан хаçата ярса пачĕç — унта та чупса çитнĕ иккен Сахар мучи...

...1928 çулта, техникумра вĕренӳ пĕтес умĕн, эпĕ Шупашкара килсе кайрăм. Манпа «Канаш» хаçатăн ун чухнехи редакторĕ А. И. Золотов ăшшăн калаçрĕ. Вăл мана вĕренсе пĕтерсенех редакцие пыма хушрĕ.

— Еç питĕ нумай, çынсем çитмеççĕ. Тата пирĕн çамрăксенчен хаçатра ĕçлеме пултаракан журналистсем хатĕрлемелле...

Тепĕр уйăхран эпĕ редакци сотрудникĕ пулса тăтăм. Питĕ пултаруллă çынсем ĕçлетчĕç унта — С. Эльгер, Н. Патман, Н. Васанкка, С. Лашман, Ç. Шăпчăк, А. Этмен, Иван Мучи... Пурте паллă писательсем. Пурнăç пурăнса курнă, опытлă çынсем. Вĕсенчен вĕренмелли нумайччĕ.

Малтан, пĕр çулталăк хушши, эпĕ хаçатра ĕçлерĕм. Республика тăрах нумай çӳрерĕм, пĕрремĕш пилĕкçуллăх стройкисенче, пирвайхи колхозсенче пултăм. Питĕ усăллă пулчĕ вăл маншăн. Очерксем нумай çыртăм. Калавсем çуралчĕç...

1930 ç. манăн пĕрремĕш кĕнеке тухрĕ—«Волонтер» комунăн пурнăçĕ». Республикăри коллективлă хуçалăхсем çинчен çырса кăларнă пĕрремĕш кĕнеке пулнă вăл. Стройкăсенче пулни (пуринчен ытла Чулхулари — хальхи Горький хулинчи — автозавода тунă çĕре кайса курни, унта ĕçлекен чăваш çамрăкĕсемпе паллашни) мана «Хăват» ятла драма çырма пулăшрĕ.

Унтан мана пионерсемпе шкул ачисем валли кăларакан «Хатĕр пул» журналăн секретарĕ туса хучĕç. Ун чух эпĕ ача-пăча калавĕсем çырма тытăннăччĕ. 1931 çулта Мускаврa, СССРти халăхсен Тĕп издательствинче, манăн ачасем валли çырнă кĕнекесем харăсах иккĕ тухрĕç — «Вĕтлĕхри отряд» тата «Юлашки юмах».

Журналта пĕр çулталăк ытларах ĕçленĕ хыççăн мана Чăваш кĕнеке издательствине куçарчĕç—илемлĕ литература тата ача-пăча кĕнекисен редакторĕ пулма. Пĕтĕм вăя хурса ĕçлерĕм унта. Анчах хам сахалтарах вĕреннине туйрăм. Писатель пулма та, редактор пулма та нумай вĕренни, нумай пĕлекен çын пулни кирлĕ. Пĕррехинче мана Иван Мучи питĕ хытă хăтăрчĕ:

— Эс мĕншĕн хăвăн çамрăк ĕмĕрне сая яратăн? Мĕншĕн вĕренме каймастăн? Малалла вĕренмесен — çын пулмасть санран! Кăçалах кайнă пултăр, унсăрăн эп сана...— Юлашкине каласа пĕтермерĕ вăл.

1932 çулхи кĕркунне эпĕ Мускава тухса кайрăм. Еçрен час хăтарман пирки кая юлса çитрĕм — институтсенче вĕренме пуçланăччĕ ĕнтĕ. Ирĕксĕрех пединститутăн хам пĕртте кăмăлламан факультетне вырнаçмалла пулчĕ — унта çын çитмен, пушă вырăнсем пулнă. «Кал-

рахпа епле те пулсан литература факультетне куҫатӑпах, халь «ҫакӑланса юлса» пултӑр», терӗм.

Анчах ӗҫсем пачах урӑхла ҫаврӑнса тухрӗҫ. Эпӗ Мускаври театр искусствин институтӗнче драматурги факультечӗ уҫӑлнине пӗлтӗм. Унта театрта лартнӑ е пичетленсе тухнӑ пьесӑсен авторӗсене (паллах, ҫамрӑксене) илеҫҫӗ-мӗн. Манӑн «Хӑват» пьесӑна театрта та лартнӑччӗ, вӑл кӗнеке пулса та тухнӑччӗ ӗнтӗ. Шиклене-шикленех ҫав института кайрӑм. Ним те мар-ҫке уншӑн. Илмесен — ку институтрах вӗренетӗп халлӗхе... Мана институт директорӗ — Дмитрий Фурманов писателӗн («Чапаев» авторӗн) арӑмӗ, унпа пӗрле нумай фронтсенче пулнӑ Анна Никитична Фурманова питӗ лайӑх йышӑнчӗ, хам ҫинчен ыйтса пӗлчӗ, ман кӗнекесене уҫкаласа пӑхрӗ (пьесӑсӑр пуҫне, манӑн хампа пӗрле тата виҫӗ кӗнеке пулнӑ), унтан факультет деканне чӗнсе илсе: «Этого парня из Чувашии, по-моему, можно зачислить», терӗ.

Ҫапла эпӗ театр институчӗн студенчӗ пулса тӑтӑм. Анчах стипендине пире институт мар, СССРти писательсен Союзӗ паратчӗ.

Вӗренӳ питӗ лайӑх пычӗ. Литература, театр, искусство историсене паллӑ профессорсем вӗрентетчӗҫ. Эрнере пӗрре Мускаври чи чаплӑ театрсене каяттӑмӑр (ку вӑл пирӗн вӗренӳ шутне кӗнӗ), час-часах пирӗн пата пысӑк писательсем пырса хӑйсен творчестви ҫинчен каласа кӑтартатчӗҫ. Эпир А. Афиногенов, Н. Погодин, Вс. Вишневский, В. Катаев, Л. Славин, В. Шкваркин тата ыттисем каласа панисене итленӗ. Писательсен Союзне тӗрлӗ дискуссисене итлеме ҫӳреттӗмӗр— вӑл та усӑллӑччӗ пирӗншӗн.

Шупашкара эпӗ 1935 ҫулта таврӑнтӑм. Мана тӳрех театрсен инспекторӗ вырӑнне лартрӗҫ, театр техникумӗнче тӗнчери театр историйӗпе литература историне вӗрентекен преподаватель турӗҫ. Ҫав вӑхӑтрах тата Чӑваш писателӗсен Союзӗнчи драмсекцие ертсе пыма шанса пачӗҫ.

1937 ҫулхи кӗркуннерен пуҫласа пӗр ҫулталӑка яхӑн манӑн К. В. Иванов ҫуралса ӳснӗ вырӑнсенче — Пушкӑрт республикинчи чӑвашсем патӗнче, Пишпӳлекри колхоз театрӗн художествӑллӑ руководителӗ пулса ӗҫлеме тиврӗ. Тепӗр ҫулхине мана Хӗрлӗ Ҫара илчӗҫ. Малтан служба Ленинградра иртрӗ. Унта эпӗ «Пӗрре, ҫуркунне...» ҫыртӑм. Ҫав повеҫе ҫырнӑ хыҫҫӑн мана СССРти писательсен Союзӗн членне йышӑнчӗҫ,— ку 1939 ҫулхи май уйӑхӗнче пулчӗ.

1939 ҫулхи ноябрӗн 30-мӗшӗнче Совет Союзӗпе Финлянди хушшинче вӑрҫӑ пуҫланчӗ. Эпӗ ҫав вӑрҫӑра рядовой стрелок пулнӑ.

«Маннергейм линине» штурмланӑ чух мана амантрӗҫ. Ленинградри пӗр госпитальте выртса кӑшт сывала пуҫласанах эпӗ «Разведчик Джунгали» ятлӑ калав ҫыртӑм. Сывалса ҫитме киле ярсан, хам вӑрҫӑра тин курнисене аса илсе, «Пулеметчик юрлать» тата «Приказ» ятлӑ калавсем ҫыртӑм. Вӗсем пурте пичетленсех пычӗҫ. Унтан эпӗ каллех Ҫара таврӑнтӑм — манӑн служба срокӗ тухманччӗ-ха. Хальхинче Эстонире, Сааремаа (Эзель) утравӗ ҫинче пултӑм. 1940 ҫулхи хура кӗркунне вара демобилизацие киле таврӑнтӑм.

— Ну, халь ӗнтӗ ҫанна тавӑрсах ӗҫлетӗп! Ҫырмалли нумай, темиҫе ҫула та ҫитмелле!— терӗм.

Анчах нумай ӗҫлеме тивмерӗ. Отечественнӑй вӑрҫӑ пуҫланчӗ. Издательство ыйтнипе, эпӗ Финлянди вӑрҫи ҫинчен ҫырнӑ калавсене темиҫе кун хушшинчех ҫӗнӗрен пӑхса тухрӑм та «Манӑн туссем» ятлӑ пысӑках мар кӗнеке туса патӑм. Унтан мана Мускав ҫывӑхӗнчи пӗр хулана, вӑтам командирсен курсне, ячӗҫ. Пӗр уйӑх ҫурӑран кӗҫӗн лей-

тенант званине пачĕç те (унччен эпĕ техник-интендант пулнă) запасра таракан бригадăна ячĕç. Эпир фронт валли резервсем хатĕрлерĕмĕр.

Командирсен курсĕнче вĕреннĕ чух, унта тин çеç тăшман ункинчен тухнă çынсем йышлăн пычĕç. Вĕсене те вĕрентрĕç ĕнтĕ. Çав çынсем пире фашистсем вăхăтлăха тытса илнĕ пирĕн çĕр çинче мĕн тери тискер ĕçсем туни, тăшмана хирĕç унăн тылĕнче те совет патриочĕсем — вăйпиттисем çеç мар, ватти-вĕттисем те—мĕн тери хăюллăн, паттăррăн кĕрешни çинчен нумай каласа кăтартрĕç. Ун çинчен хаçатсенче те нумай çыратчĕç. Çавăн чух вара манăн çамрăк патриотсем çинчен кĕнеке çырас шухăш çуралчĕ. Шухăш çуралчĕ çеç мар, эп ăна çавăнтах çырма тытăнтăм. Вăл кĕнеке — «Партизан Мурат» повесть пулчĕ.

«Партизан Мурат» «Илемлĕ литература» альманахра пичетленсе тухрĕ, тепĕр çулталăкран, хам вăрçăра нумай курнă-илтнĕ, партизансемпе те сахал мар тĕл пулса калаçнă хыççăн, эпĕ вăл повеçе çĕнĕ материалсем хушса, тĕпренех юсаса, «Тăван юншăн» ятпа кăлартăм. Вăл кайран та икĕ хутчен пичетленчĕ, юлашки хут — 1966 çулта, каллех «Партизан Мурат» ятпа.

Фронта эпĕ 1942 çулхи февралĕн юлашки кунĕсенче, маршевăй рота командирĕ пулса пытăм. Пирĕн пополнени пырса кĕнĕ дивизи ун чух Смоленск облаçĕнче, Гжатск (халь — Гагарин) хулинчен инçетре мар çапăçнă. Ман ротăна пĕр кун кантарнă хыççăн тӳрех нимĕçсен опорнăй пунктне штурмлама ячĕç. Тăвата талăк пĕр чарăнмасăр пычĕ çапăçу. Опорнăй пункта çĕмĕртĕмĕр, нимĕçсем йышăнса тăнă сăртри яла илтĕмĕр (чăн юлашкинчен пире çĕнĕ рота пырса пулăшрĕ), анчах ман ротăран вунă-вунпилĕк çын çеç юлнăччĕ. Эп хам та, тăвата талăк йĕплĕ пралук карти умĕнче юр ăшĕнче выртнипе сывлайми пула пусланăскер, медсанбата лекрĕм.

Эпĕ СССРти писательсен Союзĕн членĕ иккенне пĕлсен, врачсем ман çинчен дивизи политотделне пĕлтернĕ — ун чухне дивизи хаçатне шăпах çын кирлĕ пулнă-мĕн. Вара эпĕ медсанбатран сывалса тухсанах хаçатра ĕçлеме тытăнтăм. Çур çултан мана КПСС членĕн кандидатне илчĕç — пуху вăрманти пĕр пĕчĕк уçланкăра пулчĕ те, таçтан мурĕнчен сиксе тухнă «мессершмитт» ăна виçĕ хут пырса тапăнчĕ, пулеметсенчен сапрĕ, чăн юлашкинчен пуху секретарьне амантса хăварчĕ. Парти членне вара 1943 çулхи октябрьте, эпир Днепр урлă каçсан, Белоруссире кĕтĕм.

Фронтри хаçатçăсен ĕçĕ çăмăл марри çинчен калама та кирлĕ мар пулĕ. Пĕр кун малти линире, окопсемпе траншейăсенче çӳретĕн, час-часах бомбежка айне те, артобстрел айне те пулатăн, асăрханма пĕлмесен — тăшман снайперĕ те мушка тăрне «лартма» пултарать сана. Тепĕр кун малти линирен пĕр-ик километрта, пĕр-пĕр çунса кайнă ялта ăнсăртран упранса юлнă çĕтĕк-çатăк çуртра е блиндажсенче вырнаçнă редакцире хаçат кăларатăн. Хаçат тухать те — каллех передовойне, çĕнĕ материалсем тупма утэттăн...

Вăрçăра совет писателĕсем пин çын таран пулнă. Вĕсем пурте тенĕ пекех хаçатсенче — фронт, арми, корпус, дивизи хаçачĕсенче ĕçленĕ. Пин çынран çуррине яхăн киле таврăнайман. Чăваш писателĕсенчен те фронтра çирĕм çын ытла пулнă. Вĕсенчен чылайăшĕ çапăçу хирĕнче паттăрсен вилĕмĕпе вилчĕç. Анчах сывă таврăннисем кайран вăрçă паттăрĕсем çинчен сахал мар кĕнеке çырса кăларчĕç, халь те çыраççĕ, мĕншĕн тесен Отечественнăй вăрçă теми вăл — нихçан иксĕлми, ĕмĕре пымалли тема.

Вăрçă хыççăн эпĕ те чылай произведени çыртăм. Ячĕсене асăнма кирлĕ те мар пуль — вулакансем пĕлеççĕ вĕсене. Çав повеçсене, калавсене, çак кĕнекене кĕнĕ «Шанчăк» ятлă çĕнĕ романа та эпĕ, паллах, вăрçăра пулнă чух пухнă материалсемпе, хам курни-илтнисемпе усă курса çырнă. Хамăн вăрçăри биографире пулса иртнĕ фактсем те сахал мар кĕрсе юлнă вăл произведенисене. Сывлăх пулсан, тен, татах та çырăп-ха вăрçă çинчен. Фронтри дневниксенче, блокнотсенче материалсем питĕ нумай-ха. Сая ярас марччĕ вĕсене. Манăн хальхи çамрăксене, пулас воин-патриотсене хăйсен аслашшĕсемпе ашшĕсем, аслă пиччĕшĕсем Тăван Çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн, халăх телейĕшĕн епле паттăррăн, пурнăçĕсене те хĕрхенмесĕр çапăçни çинчен тата ытларах, витĕмлĕрех, ĕнентерӳллĕ, чĕре патне пымалла каласа кăтартас килет...

Вăрçă хыççăн эпĕ тĕрлĕ вăхăтра Чăваш кĕнеке издательствин главнăй редакторĕ, Чăваш писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ, «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн, «Капкăн» журналăн литература пайĕн заведующийĕ, «Тăван Атăл» журналăн редакторĕ пулса ĕçленĕ. Çав вăхăтрах хамăн пурнăçри тĕп ĕçе — произведенисем çырассине — пĕр кунлăх та манман. Манăн çулсеренех пĕрер-икшер кĕнеке тухнă. Эпĕ вăрçă çинчен кăна мар, вăрçă хыççăнхи пурнăç çинчен, ĕçри паттăрсем çинчен те çырнă. Вĕсем çинчен çырнă калавсемпе очерксене уйрăм кĕнекесем туса кăларнă.

Сатирăпа юмор жанрне те пăрахман эпĕ. Ку йышши кĕнекесем манăн саккăр тухнă. Вулакансем вĕсене ытла тиркенинех илтмен. Юлашки çулсенче пĕр пайлă комедисем вунна яхăн çыртăм. Вĕсене телевиденипе кăтартаççĕ, радиопа параççĕ, ялсенче лартаççĕ. Питĕ савăнтарать ку.

Малтах каларăм: приключениллĕ жанра юрататăп. Ăна вулакансем те юратаççĕ. Манăн «Юманлăхра çапла пулнă» повесть, 1964 çулта 7 пинлĕ тиражпа кăларнăскер, часах сутăнса пĕтрĕ. Кăçал вара ăна çĕнĕрен кăларчĕç. Халĕ эп «Вырăс каччи» ятлă приключениллĕ роман кăларма хатĕрлетĕп. Унăн пĕрремĕш пайĕ пĕлтĕрхи «Ялавра» тухрĕ те, иккĕмĕш пайне часрах кăларма ыйтакан çырусем нумай килчĕç. Вулакансен кăмăлне тивĕçтерес пулать.

Ытти халăхсен писателĕсем çырнă кĕнекесене чăвашла нумай куçарнă тата эпĕ — пурĕ хĕрĕх кĕнеке ытла.

...Кăçал эпĕ утмăл çул тултартăм. Çамрăк мар ĕнтĕ — нумай пурăннă, нумай курнă, сахал ĕçленĕ тесе те калас килмест: хĕрĕх пилĕк кĕнеке кăларнă, ак ку вара — хĕрĕх улттăмĕш пулчĕ. Анчах хама çав териех ватă теме шутăм çук-ха. Пуçĕпех «отставкăна» тухма та килĕшместĕп. Вăй пуррине, пуç ĕçлеме пултарнине туятăп. Çавăнпа та ĕçлетĕп. Ĕçлемен кун та çук. Тăван халăха усă кӳрес килет. Татах та çĕнĕ кĕнекесем çырас килет. Çамрăксене коммунизмла воспитани пама пулăшакан, Тăван Çĕршыва юратма вĕрентекен, халăхшăн, унăн телейлĕ те ырă пурнăçĕшĕн пĕтĕм чуна парса ĕçлеме чĕнекен кĕнекесем çырасчĕ.

Çавăн пек ĕмĕтпе çеç пурăнатăп.

**Леонид АГАКОВ.**

1970, ноябрь.

## ТУПМАЛЛИ


Пӗрре, ҫуркунне... . . . . . 3
Шанчӑк . . . . . . . 165



АГАКОВ ЛЕОНИД ЯКОВЛЕВИЧ

ОДНАЖДЫ ВЕСНОЙ
(Повесть)

НАДЕЖДА
(Роман)

На чувашском языке

Редакторы: **В. Л. Садай, В. О. Максимов**
Художник **В. Л. Агаков**
Худ. редактор **М. А. Ильин**
Тех. редактор **В. И. Павлова**
Корректоры **Р. А. Верхилеева, Н. З. Романова**

НТ 03009. Сдано в набор 26/V-1970 г. Подписано к печати 12/I-1971 г. Формат 84×108/32. Типографская № 1. Физ. печ. л. 13,0. (Услов. печ. л. 21,84). Учетно-изд. л. 22,21. Заказ № 3333. Тираж 9000 экз. Цена 1 руб. 14 коп.

Чувашкнигоиздат, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1. Управления по печати при Совете Министров Чувашской АССР Чебоксары, Володарского, 5.